К А23
3792-чув

ЛЕОНИД АГАКОВ

# Этем телейĕ



Национальная библиотека ЧР
4-003792

3792

ЛЕОНИД АГАКОВ

А23



# Эмел телейӗ

*Повеҫсемпе калавсем*

Чӑваш АССР Государство Издательстви
Шупашкар 1959

С (Чув)

## ИЗДАТЕЛЬСТВАРАН

*Леонид Яковлевич Агаков — чăвашсен хальхи паллă прозаикĕсенчен пĕри. Литературăра вăл вăтăр çул ĕçлет ĕнтĕ, унăн чи малтанхи кĕнеки («Волонтĕр» комунĕн пурнăçĕ») 1930 çулта пичетленсе тухнă. Унтанпа вăл пурĕ 31 кĕнеке кăларнă, çак кĕнеке — вăтăр иккĕмĕш пулать.*

*Иртнĕ вăтăр çул хушшинче Л. Я. Агаков тĕрлĕ жанрсенче ĕçленĕ, вăл повеçсемпе калавсем, пьесăсемпе очерксем, сатирăлла калавсемпе фельетонсем, публицистикăлла тата критикăлла статьясем сахал мар çырнă, вырăсларан нумай писательсен кĕнекисене куçарнă.*

*Ку кĕнеке Л. Я. Агаков аллă çул тултарнă ятпа тухать. Кĕнекене кĕртнĕ произведенисене пурне те автор çĕнĕрен пăхса тухса тӳрлетнĕ, «Пĕрре, çуркунне» повеçе чылай çĕнетсе пысăклатнă.*

ПРОВЕРЕНО
20 10 09 ОКТ 2017

3792. Чув.

ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ
БИБЛИОТЕКА
им. Горького

# Пĕрре, суркунне...





## 1. САЛТАК КИЛЕ ТАВРӐНАТЬ

Садсем чечекре...

Яштак чиесем, ҫӗмӗрт йывӑҫҫисем, ҫатрака туратлӑ улмуҫҫисем — пурте шап-шурӑ та ҫемҫе тумпа витӗннӗ. Аякран пӑхсан, садсем ҫине кӑпӑшка ӑшӑ юр ҫуса лартнӑ пекех туйӑнать. Вӗсем ытармалла мар тутлӑ, кӑмӑла йӑпатакан шӑршӑ сарса лараҫҫӗ. Ҫӑнтӑрла ку ырлӑха пит асӑрхасах каймастӑн, анчах каҫхине вара, хӗвел анса ларсан, улӑхсенчи ешерекен курӑк сывлӑмпа нӳрелме пуҫланӑ чух, кирек кам та киленет ҫурхи чечексен шӑршипе, вӗсен тутипе тулнӑ сывлӑша пӗтӗм кӑкрипе сывласа ҫӑтать.

Аван-ҫке ҫав садсем чечекленнӗ вӑхӑтра!..

Анчах та пин те тӑхӑрҫӗр ҫирӗм иккӗмӗш ҫулхи ҫуркунне чечекленнӗ садсем никама та савӑнтармарӗҫ, никам кӑмӑлне те ҫӗклентермерӗҫ, вӗсем саракан ытарма ҫук шӑршӑ килентермерӗ. Вӑл ҫуркунне ҫынсен сӑнсӑпачӗсем ҫутӑлмарӗҫ, вӗсем ҫинче кулӑ-савӑнӑҫ курӑн-

марĕ. Выçăллă-тутăлла, унччен нихçан та çăвара чикмен апатсем çисе аран-аран хĕл каçкаланă çынсем халĕ пушшех аптраса çитрĕç. Мăянпа, сĕлĕпе хутăштарса авăртнă çăнăх çеç мар, кĕркунне пухнă йĕкел те, çу заводĕнчен илсе килкеленĕ турантă та тахçанах пĕтнĕ, пур-çук выльăха пусса çисе янă, халь урăх нимĕн те юлман ĕнтĕ... Килрен киле вилĕм шаккаса çӳрет, хăйĕн тискер те хыткан аллипе çынсене, ватти-вĕттине тиркемесĕрех, пăвапăва пăрахать. Юнашар ялти кивĕ йывăç чиркӳре вилĕм кĕлли тумасăр пĕр кун та иртмест, çурăк чан сасси кулленех тата кам та пулин çĕре кĕресси çинчен пĕлтерет. Чиркӳрен çĕклесе тухнă тупăксене çынсем чечекленекен садсем тĕлĕпе пуçĕсене усса, ним чĕнмесĕр, вăй çуккипе сулăна-сулăна утса, масар çине кайса чикеççĕ. Вилнисем пирки йĕрекен-макăракан та, ытлашши хуйхăракан та çук. Выçăпа аптраса халран кайнă çынсен туйăмĕсем те мăкалнă, йĕркеллĕн тавçăрса шухăшлама та пултараймаççĕ ĕнтĕ вĕсем. Кам пĕлет, тен, паян тупăк çĕклесе пыракансен ыран е тепĕр кунне хăйсен те çак çулпах масар çине кайса выртмалла пулĕ?..

Каçхине, кĕтӳ хăваласа кĕртсенех (кĕтĕвĕнче те выльăхĕ вăтăр-хĕрĕх пуçран ытла мар), ял тӳрех вилнĕ пек пулать. Каччăсемпе хĕрсем вăййа тухмаççĕ, юрă-сăвă, купăс сасси тавраш̆ĕ илтĕнмест, ниçта та ним сас-чĕв те çук. Сайра хутра ăçта та пулин выçăхса çитнĕ йытă вĕрсе ярать те, ял хуралçи хăйĕн шăкăрчакне ерипен шăкăртаттарса илет. Чечекпе витĕннĕ садсем çеç яланхи пекех сывлăша тутлă шăршăпа тултарса лараççĕ, вĕсенче каçхи кайăксем хаваслăн чĕвĕлтетни илтĕнет. Çав кăна çĕр çинче пурнăç пурри çинчен систерет.

... Çавăн пек каçсенчен пĕринче Энтриялĕн вăта урамĕнчен çырманалла анакан тăкăрлăкри пĕчĕк пӳртре пĕр хĕрарăм, аран сывласа, пĕр вĕçĕм ахлатса выртрĕ. Тапхăр-тапхăр вăл ăнран тухсах кайрĕ, унтан майĕпе тăна кĕрсе пычĕ, кăштах вăхăт иртсен, каллех улшу калаçрĕ. Çурçĕр тĕлĕнче таçта инçетре автансем пĕр-пĕринпе сас пама тытăннă вăхăтра, вăл юлашки вăйĕпе ерипен йынăшса ячĕ:

— Ахх... Микуль... ывăлăм... шыв парсамччĕ, ăш хыпса тухать...

Стена çумĕнчи тăрăхла сак çине выртса халь çеç тĕлĕрсе кайнă вунвиç çулхи арçын ача, амăшĕн сассине илтсе, йăпăртах тăрса ларчĕ.

— Пĕрмай шыв ĕçме юрамасть пуль сана, анне! Кĕçĕр миçе хут ĕçтертĕм ĕнтĕ сана...

— Çук, ачам... Тӳсейместĕп, пар...

Микуль тĕттĕм çенĕхе тухса йывăç куркапа шыв ăсса кĕчĕ. Амăшĕ ăна çавăнтах ланкăртаттарса ĕçсе ячĕ те, йынăша-йынăша, пуçне хытса ларнă минтер çине лак! хучĕ. Темиçе самантран, сывлăш çавăрам пекки туса, вăл хăй ăшĕнчен аран темиçе сăмах пăчăртаса кăларчĕ:

— Вилетĕп пуль эп кĕçĕр... Питĕ йывăр... Ĕнерсем кун пекех пулманччĕ, паян ытла та... ахх... Шел, Тараса кураймасăрах вилетĕп. Таçта ĕнтĕ вăл халь... Те вăл та вилнĕ? Унпа пĕрле кайнисем пурте таврăнса пĕтрĕç, вăл кăна çухалчĕ, ним сас-хура та çук... Кураймастăпах мăнтарăна...

Макăрас патнех çитнĕ ывăлĕ чирлĕ амăшне лăплантарма тăрăшрĕ:

— Апла ан кала-ха, аннеçĕм, тен, иртсе кайĕ! Авă, Çтенккисен амăшĕ те, сан пекех йывăр чирлесе выртрĕ те, кайран чиперех тӳрленчĕ-иç? Эс те сывалатăн акă...

— Çтенккисем çинчен мĕн калăн... — ассăн сывласа ячĕ амăшĕ. — Вĕсем çимелли тупаççĕ. Пирĕн иксĕмĕрĕн мĕн пур?

— Ыран столовăйран илсе килнине хам çиместĕп, пĕтĕмпех сана паратăп, анне...

— Ҫирлĕ мар, ывăлăм. Санăн хăвăн пурăнас пулать, эп хамăнне пурăнса ирттернĕ ĕнтĕ... Тараса курасшăнччĕ те — пулмарĕ... Вăл таврăнсан, тен, чиперех пурăнăр-и-ха. Ҫăçал тырă пулать, теççĕ. Пирĕн акни те çукпа пĕрех те... Ял çинче çын вилмест, теççĕ... Ҫил-çурта юсаттарăр, выльăх-чĕрлĕх туянăр. Тарас ĕçе юрататъ, аллисем ылтăн унăн, ашшĕ пекех ĕçчен... Ҫураймарăм...

Хĕрарăм сасси вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланса пычĕ, юлашки сăмаххисене вăл таçта шала кайнă сасăпа çеç каларĕ. Унтан тата тепре йынăшса илчĕ те шăпах пулчĕ.

— Анне, анне, мĕн эсĕ?

Микуль амăшне хулпуççинчен тытрĕ. Питĕнчен пăхма тăчĕ, анчах пӳртре тĕттĕм пирки нимĕн те кураймарĕ. Лампа çутас — ни краççын, ни шăрпăк çук...

— Анне! Анне! — хытăраххăн чĕнчĕ Микуль, çав тери хăрама пуçласа.— Анне тетĕп, сас пар ĕнтĕ! Анне-е!

Амăшĕ чĕнмерĕ. Вара Микуль, амăшĕ вилсе кайрĕ пуль тесе, шари! кăшкăрса макăрса ячĕ те урама сиксе

тухрĕ. Унталла пăхрĕ, çунталла... Ним тума аптранипе, часрах анат енчи кӳршĕсем патне чупса кайса вĕсен чӳречинчен чышкăпа шанлаттарма тытăнчĕ:

— Павăл пичче! Марфа аппа! Тăрăр-ха, атьăр-ха пирĕн пата хăвăртрах, пирĕн анне вилет пулмалла!

Хăй çавăнтах килнелле ыткăнчĕ. Амăшĕ малтанхи пекех выртать, чĕнсе те чĕнмест. Кĕçех кӳршĕсем чупса çитрĕç. Марфа аппа тени ним сассăр выртакан хĕрарăм çинчи çĕтĕк çивиттине сирсе пăрахрĕ, ал тымарне тытса пăхрĕ, чĕрине итлерĕ.

— Çук-ха, вилмен... — терĕ вăл шăппăн. — Чĕри тапать, сывлăшĕ те пур. Чуп-ха, Павăл, çенĕхри сентре çинче каç сунă сĕт пурччĕ, илсе кил, парса пăхăпăр, тен, кăштах усси пулĕ... Тата çутмалли илсе кил мĕн те пулин.

Унăн упăшки хăвăрт тухса кайрĕ. Кӳршĕ арăмĕ Микуль çине пăхрĕ те ăна йăвашшăн йăпатма пуçларĕ:

— Ан макăр, ачам, ан макăр... Хăрамалли нимех те çук. Халран кайнă çеç вăл. Акă, сĕт ĕçтеретпĕр те ăна, хаманланать сан аннӳ, вăй кĕрет ăна. Лăплан...

* * *

Çав каçах Етĕрне хули енчен кăнтăралла, авалхи хурăнлă çул тăрăх, пĕр çын питĕ васкаса утрĕ. Вăл хĕрлĕармеец тумĕ тăхăннă — çăлтăрлă шлемпа, гимнастеркăпа, атăпа. Çурăмĕ çинче — чылай пысăк кутамкка, шинельне хулĕ урлă уртса янă. Утнă май вăл шинельне пĕр аллинчен тепри çине куçарса хурать. Ниçта та чарăнса тăмарĕ, пĕрмай малалла, пĕрмай малалла утрĕ. Сайра хутра çеç чĕлĕм чĕркесе тивертмешкĕн йăпăртлăха чарăнкаласа тăчĕ, унтан каллех васкарĕ. Сăр шывĕ тăрăх çӳрекен «Чайка» ятлă пĕчĕкçеç пăрахут çинчен аннăран вара вăл чылай ялсем витĕр тухрĕ, сырма-çатрасем урлă каçрĕ (çырмисем ку тăрăхра ытла та нумай-çке!); хыçĕнчи кутамкки самаях каялла туртрĕ ăна, тарланипе аялти кĕпи çурăмĕ çумне çыпăçсах ларчĕ, анчах вăл кун çине çаврăнса та пăхмарĕ. Хурăнлă çулпа пĕр çирĕм çухрама яхăн пырсан, вара вăл, сылтăмалла пăрăнса, ыраш калчи хушшипе авкаланакан сукмакпа Энтрияль еннелле кайрĕ.

Çак çын — Энтриялĕнчи тăлăх Хветуç ывăлĕ Тарас, хут çинчи пек каласан, Тарас Николаев пулнă. Вăл Хĕрлĕ Çартан демобилизаципе киле таврăннă, ватă амăшĕпе

пĕчĕк шăллĕне епле пулсан та часрах çитсе курас ĕмет-пе васканă...

Çур çул ытла Тарас вĕсем çинчен нимĕн те пĕлмен: те чĕрĕ вĕсем, те тахçанах вилнĕ? Кам калама пултартăр, тен, вилнĕ те-и, Атăл тăрăхĕнче выçлăхĕ ытла та хăрушă пулнă-çке кăçал! Килнĕ чухнех курчĕ Тарас: пристаньсенче, чугун çул станцийĕсенче халăх вĕçĕмсĕр йăшăлтатать — ватти, вĕтти, арçынĕ, хĕрарăмĕ; ахăртнех, вĕсем çăкăрлă вырăнсене, ăçта та пулин Çĕпĕрелле, Украинăналла кайма тухнă пулĕ, анчах ниçтах та çитеймен. Пăрахутсемпе пуйăссем çине лараймасăр эрни-эрнипе выртаççĕ имĕш вĕсем, çавăнтах хăйсен мĕн пур-çуккине çиеççĕ, çав таврашрах тула каяççĕ, çавăнтах вилеççĕ...

«Çимелли нимĕн те пулман ĕнтĕ кăçал аннепе Микульăн, ватăпа вĕтĕ ăçтан тупчăр?» — Çак шиклĕ шухăш Тарас пуçĕнчен пĕрре те тухма пĕлмерĕ.

Ыраш хушшипе пыракан сукмак анкартисем хыçне тухрĕ. Мĕн тери паллалă вырăнсем! Акă Кĕске вар пуçĕ, кунта вăл пĕчĕк чух яланах выртмара пулнă, акă кукăр хурама — ун айĕнче текех «çĕçĕлле», «тăлă тартмалла» вылянă... Лере, сылтăмарахра, Автан çырминче, кашни кĕркуннех пĕве туса амăшĕпе пĕрле кантăр хутнă. Кунта вара, Мăрсуксен арпалăхĕ çумĕнчи кив каска çинче, пĕрремĕш хут Варука хăй юратни çинчен каласа панă та ăна çав тери хăюсăррăн ыталанă... Мĕнле-ши вăл халь? Епле пурăнать-ши? Виçĕ çул хушшинче тăват-пилĕк çыру çеç ячĕ. Тен, качча кайнă-и? Кайнах пулсан, кама-ши? Кам телейлĕ пулчĕ-ши ăна илсе? Пĕлесчĕ часрах ун çинчен те. Çав тери лайăх калаçса уйрăлсаттăмăр, вăл мана вунă çул кĕтмелле пулсан та кĕтсе илетĕпех, тенĕччĕ...

Пуçра шухăшсем, асаилӳсем пĕрин хыççăн тепри çуралаççĕ, пĕр-пĕринпе çыхăнса тăсăлаççĕ.

Тарас, сукмакпа çырмана чупса анса, тăкăрлăкалла пăрăнчĕ. Акă ĕнтĕ вăл пĕчĕкрен ӳснĕ вырăн. Миçе хутчен анса хăпарнă-ши вăл çак çырмана? Хĕллехи кунсенче çунашкапа мĕн чухлĕ ярăннă-ши çак сăрт çинчен? Эх, тăван вырăнсем, ытла та нумай аса илтеретĕр-çке эсир, пĕтĕм чун-чĕрене хускататăр!..

Ик енчен те ватă лăпсăркка йăмрасем хупласа тănипе, тăкăрлăкра куçран чиксен те курас çук. Сăрт хĕрринчи çуртсем нĕрсĕр хура капансем пек курăнаççĕ, темле чĕрене çӳçентермелле тĕслĕ. Ăçта та пулин пĕр хăйă çути

пулсанччĕ! Çук, тĕттĕм... Сас-чĕв те çук, чăннипех кунта пурте вилсе пĕтнĕ пек туйăнать. Çĕрлехи тĕттĕмлĕхпе шăплăхра чечексен шăрши çеç сисĕнет. Тарас вĕсен ырă тутипе тулнă сывлăша кăкри туличчен çăтса пычĕ.

Акă вĕсен килĕ курăнчĕ. Ыттисенчен раснах, пӳртре темшĕн хăй çути пур. Мĕне пĕлтерет-ши тата ку? Часрах çитес, пĕлес... Тайăлса кайнă вĕрлĕк алăка Тарас уçса та тăмарĕ, ун урлă вăштах сиксе каçрĕ, унтан картлашкасем тăрăх чупса хăпарса алăка пĕрех туртса уçрĕ те пӳрте кĕрсе тăчĕ.

Сĕтел çинче шăши куçĕ пысăкăш çутă çеç мĕлтлетсе ларать, çавăнпа та пӳртре тĕттĕмпе пĕрех. Кутнĕк сакки çинче тахăшĕ сывăрать — палламалла мар, пуçĕ çинченех витĕннĕ. Тăрăхла сак çинче тепĕр сын...

«Иккĕшĕ те чĕрĕ пулас-ха хуть», — савăнăçлă шухăш вĕçсе илчĕ Тарас пуçĕнче.— «Чĕрĕ пулсан, урăх нимĕн те кирлĕ мар, ытти — пулĕ».

Вăл шинелĕпе шлемне алăк патĕнчи йывăç пăта çине çакрĕ, кутамккине хывса малти сак çине хучĕ те, амăшĕпе шăллĕне вăратмасăрах, сĕтел пуçĕнчи каска пуканĕ çине ларчĕ. Халь васкамалли çук ĕнтĕ, халь килте, тăван килте! Курас тенĕ çынсем — ун умĕнче, çак пӳртрех, унран икĕ утăмра çеç. Çывăраççĕ... Тен, ывăннă пуль вĕсем, тен, хырăм выççине манас тесе, юри часрах çывăрнă пулĕ. Тивес мар-ха, çывăрччăр.

Тарас чĕри кăкăртан сиксе тухас пек тапрĕ. Вăл хăвăрт кăна татах чĕлĕм тивертсе туртма тытăнчĕ, анчах нумай тӳссе лараймарĕ, çурри таран та çунман пирусне таптаса сӳнтерчĕ те, кутнĕк патне пырса, амăшĕн пуçĕ çинчен çивиттине хуллен кăна сирчĕ.

— Анне!.. аннеçĕм...

Амăшĕ ăна илтмерĕ те, чĕнмерĕ те.

— Анне, анне, вăран-ха, вăран,— хытăрах сас пачĕ те Тарас, ăна хыткан хулпуççийĕнчен ерипен лăскарĕ. Лешĕ малтан йынăшса илчĕ, тарăннăн ахлатса сывласа ячĕ, унтан куçне уçмасăрах ыйтрĕ:

— Мĕн ара?

— Вăрансам, анне...

— Ах, вăй çук, Микуль...

— Микуль мар ку, анне, ку — эпĕ!

— Кам?

— Тарас... Тарас эпĕ!

Çакна илтсен, чирлĕ хĕрарăм мĕнпур вăйне пухса те-

пĕр аякĕ çине çаврăнчĕ те тăрса ларчĕ. Пĕр хушă вăл çакăн пек кĕтмен çĕртен килсе кĕнĕ аслă ывăлĕ çине ăнран тухса кайнă çын пек, куçне час-час мăчлаттарса пăхрĕ. Малтанах ăна хăй çак самантра тĕлĕк курнă пек туйăнчĕ пулмалла. Тарас тепре сас парсан тин вара, ăна чăннипех палласа илсе, вăрăммăн йынăшса ячĕ те, унăн пуçĕ минтер çине ӳкрĕ.

— А-ах, ывăлă-ăм, вилетĕп вĕт! Сана та кураймастăп пуль, тенĕччĕ... Сăпаççипах, пытарма та пулин çитрĕн хуть...

Амăшĕ ӳлесех макăрса янипе Микуль те вăранса сиксе тăчĕ. Тарас ăна хыттăн ыталаса чуптуса илчĕ, унтан амăшĕ çумне пырса ларчĕ.

— Ан макăр, анне, халĕ санăн хуйху-суйху пĕтрĕ ĕнтĕ, куратăн: эп чиперех, тĕрĕс-тĕкелех таврăнтăм! — амăшне çурăмĕнчен ачашла-ачашла йăпатрĕ Тарас. — Ыранах тухтăр чĕнетĕп сан валли. Сывалатăн та, пит лайăх пурăнма пуçлатпăр. Халĕ ак виççĕмĕр пĕрле ларса хăна пулăпăр, ман кутамккара сире валли кăштах кучченеç пур...

Амăшĕ майĕпе лăпланма пуçларĕ. Тарас Микуле часрах хуранпа шыв вĕретме хушрĕ, хăй çав хушăрах кутамккинчен çăкăр, сухари, сахăр кăларчĕ. Қалаçма вăйĕ çук пулин те, амăшĕ Тарасран вăл юлашки вăхăтсенче мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Амăшне ним чухлĕ те пăшăрхантарас мар тесе, Тарас пурне те хитрелетсе каласа пачĕ. Хăй йывăр аманса çур çула яхăн госпитальсем тăрăх çӳрени çинчен те каламарĕ. «Сывалсан та калама пулĕ-ха ун çинчен»,— шухăшларĕ хăй ăшĕнче.

Тепĕр çур сехетрен Хветуç килйышĕ чей ĕçме ларчĕ. Выçăхса çитнĕ, тахçантанпах чăн-чăн çăкăр çисе курман амăшĕпе шăлнĕне Тарас хăй илсе килнĕ çимĕçсемпе хăналарĕ. Тем пекех чирлĕ, тĕрексĕр пулин те, Хветуç хăйĕн ывăлĕсем — хăйĕн телейĕ çине пăхса пĕр-икĕ хутчен вăйсăррăн кулса илчĕ. Унăн хĕрелнĕ куçĕнчен чей чашки çине савăнăç куççулĕсем тумларĕç.

— Этемлех пурăнăпăр-и-ха, тен, малашне... — пăшăлтатрĕç унăн кушăркаса пĕркеленнĕ тутисем.

## 2. АСТАВАТЬ ТАРАС...

Тул çутăлнă чух тин выртнă пулин те, Тарас ирех тăчĕ. Мĕн тăвас тетĕн — салтак йăли! Вăл кĕпине хывса пилĕк таран çăвăнчĕ, алшăллипе ӳчĕ хĕреличченех лу-

тăркаласа шăлăнчĕ, унтан тумланчĕ те, чĕлĕм тивертсе ярса, çенĕх алăкĕ умне тухса тăчĕ. Ирхи хитре хĕвел йăмра тăррисемпе те танлашайман-мĕн-ха, килхушшинчи кĕççе пек курăк çинче сывлăм тумламĕсем ахах пĕрчисем пек курăнаççĕ. Пĕлĕт — кăвак кантăк пек, тап-таса. Çил-мĕн çук. Лăпкă, ăшă. Таçта çӳлте, сенкер тӳпе айĕнче, нихçан ывăнма пĕлмен тăри хăй юррине шăрантарать. Ытармалла мар çанталăк!

Тарас тутлăн карăнса илчĕ те килхушшине йĕри-таврa пăхса çаврăнчĕ. Пĕтĕмпех, пĕтĕмпех юхăнса кайнă иккен кил тавраше...

Выльăх карти тăрри ик-виç çĕртен ишĕлсе аннă, тытăнса юлнă çĕрĕк улăм çиййĕнче: вĕлтрен, мăян, хупах— тем те пĕр ӳсет. Тахçан хăмаран çапса тунă алăк тăписенчен вĕçерĕнсе кайнă та хăяккăн выртать, лаç пекки те тӳнес патнех çитнĕ. Килхушши варринче кустăрмасăр урапа ларать, хӳме çумне хăрах тупанлă çара çунана тайăлтарса тăратнă. Урăх нимĕн те çук.

Тарас крыльца картлашки çине ларчĕ те шухăша кайрĕ. Мĕнрен пуçламалла-ши ĕнтĕ пурнăçа юсама? Хăш кĕтесрен тытăнмалла? Пӳрчĕ те кивĕ, ăна та юсас пулать, никĕсĕсем веçех çĕрсе кайнă. Германи вăрçинче пулнă ашшĕ 1915 çул вĕçĕнче Галицире йывăр аманса, госпиталь хыççăн икĕ уйăх килте пурăннă чух юсаса хăварнă кĕлет çеç йĕркеллĕ ларать.

«Эх, атте, атте!— хаштах сывласа ячĕ Тарас.— Юлашки хут куртăмăр-çке эпир сана çавăн чух! Тухса кайрăн та, урăх таврăнмарăн. Ăçти çĕршывра пуçна хутăн-ши? Мĕн чухлĕ хĕн-хур, мĕн чухлĕ асап курмарăн пуль эсĕ хăвăн вăрăмах та мар ĕмĕрӳнте! Пурне каласа та пĕтерес çук çав!.. Юлашкинчен — пĕтрĕн... Мĕншĕн, камшăн?..»

... Питĕ лайăх астăвать Тарас: ытла та чухăн пурăнатчĕç вĕсем. Лаша та, ĕне те çукчĕ. Килти тырă çăварниччен те çитместчĕ. Çĕнĕ тырăччен тесе пуянсенчен кивçен илетчĕç — пĕр пăт вырăнне икĕ пăт памалла. Анчах ун пек ăçтан тăранса пурăнатăн? Вара амăшĕ ăна, çич-сакăр çулхи Тараса, çавăтатчĕ те, вĕсем иккĕшĕ инçетререхри ялсене ыйткалама тухса каятчĕç. Тепрер эрнерен, кăвакарма пуçланă çăкăр таткисемпе паранкă тултарнă кутамккасене çĕклесе, киле анкарти хыçĕсемпе çĕрле пырса кĕретчĕç — ял çыннисенчен намăс пуласран. Анчах çынсем пурпĕрех пĕлетчĕç çав вĕсем ыйткаласа

çӳрени çинчен. Урама выляма тухсан, пуянтарах çынсен ачисем пулчĕ-пулмарĕ мăшкăллатчĕç унран:

— Эй, Тарас-карас! Христарати парать-и, кутран тапса ярать-и?

Хăйсенчен вăйлăрах пулнă Тарас вĕсене хăвалама тытăнсан, ăна аякран чулсемпе персе кăшкăратчĕç:

— Кĕлмĕçĕ! Ыйткалакан, п... хыпакан!

Нумай тарăхтарнă пуян ачисем Тараса, тепĕр чух вĕсене вăл тытса çурма та хатĕр пулнă, анчах нимĕнех те тăвайман, лешсем яланах нумаййăн пулнă.

Унтан Тарассен ашшĕ кӳршĕ ялне кĕтӳ кĕтме кĕрĕшрĕ. Виçĕ çул çӳрерĕç вĕсем Тараспа иккĕшĕ уйсем, çырма-çатрасем тăрăх вăрăм пушăсем сĕтĕрсе. Хĕвел тухнă-тухманах ăшă ыйхăран вăрататчĕ Тараса ашшĕ. Çав тери тăрас килместчĕ, анчах мĕн тăвăн-ха ĕнтĕ? Тухса утасах пулать кĕтӳ хыççăн, ир пуçласа хĕвел аничченех çӳрес пулать. Пăрлă çумăр айĕнче те пĕрре кăна мар пулнă, кĕрхи сивĕ çанталăкра та сахал мар шăнса кӳтнĕ, тем те курнă! Уйри тырăсене пуçтарса кĕртсе авăн çапма тытăннă вăхăтра çынсен ачисем, Тарас тантăшĕсем, шкула çӳреме тытăнатчĕç, анчах унăн çаплах-ха кĕтӳ хыççăн чупмаллаччĕ. Ытти ачасем уйăх ытла вĕренсен тин шкула çӳреме тытăнатчĕ Тарас. Çуркунне пулсан та, ыттисенчен пĕр уйăх малтан çӳреме пăрахатчĕ — каллех кĕтӳ кĕтме каймалла. Питĕ кӳрентеретчĕ ку. Унăн çав тери вĕренес килетчĕ, çав тери! Юрать-ха ун чухнехи учитель Яков Петрович питĕ лайăх çынччĕ, чухăн çын ачисене хĕрхенекенскерччĕ. Тарас кĕркунне шкула кая юлса пынăшăн та, çуркунне час тухса кайнăшăн та вăрçмастчĕ. Вăрçма мар — яланах пулăшатчĕ ăна, çулла кĕтӳре çӳренĕ чух та кĕнекесем парса яратчĕ.

— Вула, Тарас, ытларах вула, вуласан çын пулатăн, санăн ăсу-пуçу çивĕч, — тетчĕ вăл. Тарас вара хăйĕн хутаççинче яланах е Пушкин, е Некрасов, е Лермонтов кĕнекисене илсе çӳретчĕ. Кăшт пушă вăхăт пулсанах ларать те — вулать. Ăнлансах çитменнисене кайран Яков Петровичран ыйтса пĕлет. Мĕн каламалли пур, нумай усă кӳчĕ Тараса çав учитель! Питĕ шел вăл çынна, тăрук чахоткăпа чирлесе ик-виç уйăхрах вилсе кайрĕ. Пĕтĕм ял пычĕ унăн тупăкĕ хыççăн, кайран масарĕ çине сиреньсем лартса карта тытрĕç. Паян кун та чечекленеççĕ пуль-ха вăл йывăççем...

Мăшкăл та сахал мар тӳсме тӳр килнĕ кĕтӳре çӳренĕ

вăхăтра. Кĕтӳçе никам та çын вырăнне хуман вĕт-ха ун чухне. Пуринчен ытла çакна лайăх астăвать Тарас: пĕррехинче, сасартăк пăрлă çумăр килсе çапсан, кĕтĕве васкасах яла хăваласа кĕртмелле пулчĕ. Каçхине, Тараспа ашшĕ хăйсем черетпе апат çимелли çын патĕнче çывăрма выртсан, унта çак ялти çĕрме пуян, Мăклă Якур тенĕскер, питĕ тĕреклĕ, хăйĕн вăйĕпе пурне те хăратса пурăнакан çын пычĕ те шавлама тапратрĕ.

— Кĕтӳçĕ кунта-и?

— Аслăк çинче çывăраççĕ,— терĕ кил хуçи арăмĕ.

— Чĕнсе ан-ха ăна, калаçмалли пур манăн вăл эсрелĕпе!

Çакна илтсе, нимĕн те ăнланман Тарас ашшĕ пусма тăрăх çĕре анчĕ. Тем ырă мар пуласса сиснĕ пекех, Тарас та унран юлмарĕ. Мăклă Якур вара тӳрех сиксе ӳкрĕ Тарас ашшĕ çине:

— Ăçта чикрĕн эсĕ ман пăрăва, кĕлмĕçĕ?

— Мĕнле пăрăва? — ыйтрĕ Тарас ашшĕ.

— Пушмак пăрăва, пĕлместĕн-им, уласкере!

— Киле пымарĕ-им?

— Пынă пулсан, килместĕп те эпĕ сан пек сысна патне! Кала тавай, ăçта чикрĕн? Пусса çиме пытартăн-и, сутса ятăн-и? Халех тупса панă пултăр, унсăрăн эп сан майна наччас каялла пăрса лартатăп!..

— Эпĕ уйра пĕр выльăх та хăварман, пурне те яла хуса кĕртнĕ,— терĕ Тарас ашшĕ чĕтреме пуçланă сасăпа.

— Ăçта-ха эппин ман пăру? Кала, ăçта?! — тата хытăрах çухăрчĕ Мăклă Якур.

— Эп ăçтан пĕлем-ха ăна халь... Тен, пĕр-пĕр çын патне кĕнĕ-и? Ирхине кĕтӳ хăваланă чух тупăнĕ-ха, таçтах каяс çук... Тепĕр тесен, эпĕ кашни пăрăвах хӳререн тытса çӳреместĕп вĕт, кĕтӳре нумай вĕсем!

Çакăн пек кăшт хăюллăрах калани Мăклă Якура уртарсах ячĕ курăнать.

— А-а, çын выльăхне çухататăн та, çийĕнчен тата урлă калаçатăн-и эсĕ? Шăршлă çăвар, вĕрентĕп эп сана манпа мĕнлерех калаçмаллине! — тесе, Тарас ашшĕне кăкринчен тытса пĕррех хăлха чиккинчен янлаттарчĕ вăл.

— Ма çапатăн? — йынăшса илчĕ Тарас ашшĕ.

— Çавăншăн! Сана, ухмаха, тăн кĕртме! — татах кăшкăрчĕ кулак, Тарас ашшĕн кĕпине аллинчен вĕçертмесĕрех ăна пуçĕнчен, сăмсинчен, хырăмĕнчен чыша-чыша.

Вилесле хăраса кайнă Тарас, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе, кăшкăрса макăрса ячĕ.

— Ан тив аттене-е!..

Çав вăхăтрах пӳртрен кил хуçи арăмĕ сиксе тухрĕ.

— Ара, Якур хăта, мĕн хăтланатăн? Ма тиветĕн çынна?— Вăл Мăклă Якур патне чупса пычĕ, анчах нимĕн те тăваймарĕ.

— Кĕлмĕçĕ, çапкаланчăк, вĕрентĕп эп сана пăрусем çухатма! Санăн хăвăн ĕмĕрне те выльăх пулас çук, йытă!..

Тарас ашшĕ малтанах «ан çап, ан çап, ан вĕлер, тархасшăн, ан вĕлер», тесе кăшкăркаларĕ, анчах кайран сас та пами пулчĕ. Вара ним тума аптранă Тарас, хăйне хăй астумасăр, Мăклă Якур çине хыçалтан кушак пек ыткăнчĕ те, ăна хулпуççинчен шатăрр! çыртса лартрĕ. Унăн çивĕч шăлĕсем ӳт ăшнех кĕрсе ларчĕç пулмалла. Якур çавăнтах ы-ых! терĕ те ача ашшĕ çинчен йăванса анчĕ. Шăп çав вăхăтра килхушшине ик арçын чупса кĕчĕç — вĕсене кил хуçи арăмĕ Якура чарма чĕнсе пынă иккен...

— Эс мĕн ашкăнатăн кунта, Якур Хомич? — çилĕпе кăшкăрчĕ пĕри, çамрăкраххи, ун патне хăвăрт пырса тăрса. — Мĕншĕн хĕнетĕн кĕтӳçе? Вăл санăн тарçу мар вĕт, ăна халăх тара тытнă!

— Ан йăсла, атту хăвна та тыттарса яратăп акă! — терĕ Якур сиввĕн. Вăл çĕртен тăчĕ те сулăнса кайрĕ. Ӳсĕр пулнă иккен, эсремет, ӳсĕрпе урса кайса ахăрнă!

— Ытла пурне те ан юна, Якур Хомич, саншăн та суд тупăнма пултарать, асту! — хăраса тăмарĕ çамрăкки.

— Су-уд?.. Кĕсре хӳри мар-и? — вăкăр пек пăхса илчĕ ун çине Якур.— Мана суд тума пултаракан çын çуралман-ха, пĕлетĕн-и эс çавна? Апчхи эпĕ сирĕн пеккисем çине, манкасем!

Урăх нимĕн те каламарĕ вара, енчен енне сулланкаласа, килхушшинчен тухса кайрĕ.

— У-у, шуйттан, урнă йытă аçи! — терĕ ун хыççăн пăхса юлнă кил хуçи арăмĕ.— Кама-кама макăртман-ши вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче! Нихçан та шалчи тулмасть пуль çав...

— Тулатех-ха хăçан та пулин,— терĕ çамрăк арçынĕ.

— Тура чăннине куратех, теççĕ те...— ассăн сывласа илчĕ тепри, ватăраххи.

Вĕсем Тарас ашшĕне ик енчен тытса ура çине тăратрĕç те пӳрте çавăтса кĕрсе кутнĕк сакки çине вырттарчĕç.

Пӳртре кил хуҫи арӑмӗ лампа ҫутса ярсан, Тарас тата ытларах хӑраса кайрӗ: ашшӗн пичӗ чӗп-чӗр юн иккен, унтан та кунтан шыҫса, кӑвакарса ларнӑ, сулахай куҫӗ уҫӑлмиех пулнӑ...

— У-у, вӗриҫӗлен, тискер чунилли! Ҫынна ним айӑпсӑрах ҫапса пӑрахма хатӗр вӗт вӑл! Хӑйне ҫакӑн пек тытса хӗнесчӗ пӗрре камӑн та пулин! Тур куртӑрах ӑна, киремет тыттӑрах эсреле!— ылханчӗ кил хуҫи.

Тарас ашшӗ йывӑррӑн сывласа выртрӗ. Кил хуҫи арӑмӗ унӑн пичӗ ҫинчи юна шӑлса тасатрӗ, унтан таса алшӑлли тупса ӑна сивӗ шывпа йӗпетрӗ те аманнӑ ҫыннӑн пӗтӗм питне хупласа хучӗ.

— Капла хамантарах пулаканччӗ-ха...

Ирхине вӗсем пурпӗрех кӗтӳ кӗтме тухрӗҫ. Тарас ашшӗн пӗтӗм шӑмшакӗ ыратрӗ, пуҫӗ ҫаврӑнчӗ куранать, ахальтен мар вӑл ирхи апата темиҫе кашӑк ҫеҫ сыпкаларӗ, анчах хӑй асапланнине ывӑлне кӑтартасшӑн пулмарӗ. Тарас ӑна: «Атте, тен, эсӗ паянлӑха выртӑн, кӗтӗвӗпе эпӗ пӗчченех ҫӳрӗп», тесен, вӑл ӑна хирӗҫ: «Ҫук-ҫук, епле юратӑр ун пек, манӑн нимӗн те ыратмасть вӗт, иксӗмӗр те каятпӑр», терӗ. Анчах уя тухсан хӑй аран ҫӳрерӗ, кӑшт май пулсанах выртрӗ. Хытӑ асапланчӗ ҫав вӑл, Тарас ӑна питӗ лайӑх сисрӗ...

Кӑнтӑрла хайхи кил хуҫи арӑмӗ вӗсене апат ҫитерме уя пычӗ те тӗлӗнмелле хыпар пӗлтерчӗ:

— Леш шуйттанӗн пӑрушӗ килтех пулнӑ вӗт! Ытти выльӑхсенчен уйӑмрах витене кӗрсе выртнӑ, тет те, ӑна вӗсем киле пыман тесе шутланӑ. Арӑмӗ: «Пирӗн пӑру ҫук-ха», тесенех, Якурӗ, ӳсӗрскер, сана хӗнеме тухса чупнӑ. Кун ҫинчен мана вӗсен пускилӗ, Макар арӑмӗ каласа пачӗ, ӑна Якур арӑмӗ хӑй каланӑ. Этемсем-и ӗнтӗ вӗсем ҫавӑн хыҫҫӑн? Чисти чуниллисемех ӗнтӗ! Ним айӑпсӑр ҫынна ҫапса ҫӗмӗрсе тӑкаҫҫӗ те... Суда пар эс ӑна, явӑла, тыт та суда пар! Хам та ҫвиситлӗ пулатӑп, ним те хӑраса тӑмастӑп!

Тарас ашшӗ ӑна хирӗҫ малтанах ним те каламарӗ, унтан, кӑшт ларсан, ассӑн сывласа илчӗ те:

— Айван эсӗ, тӑхлачӑ,— терӗ.— Мӗн, эп ӑна суда парса ҫӗнтерме пултаратӑп-и? Элеклет, тесе, хамах хупса хурӗҫ... Уретникӗ те, старшини те, сутйисем те ӗмӗрне те кӗтӳҫ майлӑ пулас ҫук. Вӗсем пурте сирӗн Мӑклӑ Якур пек пуянсемпе пӗр майлӑ вӗт, пурте халӑх ӗнси ҫинче ла-

раççĕ, халăх юнне ĕмсе пурăнаççĕ. Пирĕн ялти учитель Яков Петрович яланах çапла калатчĕ...

Ашшĕн çак хурлăхлă сăмахĕсене пĕчĕк Тарас яланлăхах астуса юлчĕ. Чухăнсене темле кӳрентерсен те, вĕлерес пек хĕнесен те, вĕсен хутне никам та кĕмест иккен. Мĕншĕн апла-ши вăл? Чухăнсем те çынсемех вĕт-ха!

... Çăвĕ-çăвĕпе кĕтӳ патĕнче çӳресе, хĕллехи вăрăм каçсенче пуянсем валли чăпта çапса, Тарассен килйышĕ малтан юпах тиха, унтан пĕр хĕл каçнă пăру туянчĕç-туянчĕçех.

— Савăнăр, ачасем, тепрер çултан пирĕн лаша та, ĕне те пулать ĕнтĕ, эсир вĕсене лайăхрах çитерме тăрăшăр, курăк ытларах татса парăр, хăвăртрах çитĕнччĕр. Лашапа ĕне пулсан вара эпир те çынсем пекех пурăнма тытăнăпăр-ха,— тетчĕ амăшĕ.

Анчах та пулаймарĕ вĕсен «çынсем пек пурăнасси». Вăрçă тапранса кайрĕ. Германи пирĕн патшалăха ним систермесĕр тапăннă, терĕç. Вăйпитти арçынсене хĕрсе ыраш вырнă çĕртенех пухса илсе кайрĕç...

Хальхи пекех астăвать Тарас: пĕр виçĕ кун хушши пĕтĕм ял, уйри ĕçсене пăрахсах, асар та писер кĕрлерĕ, çĕрĕн-кунĕн ӳсĕр çынсем чуна ыраттаракан хурлăхлă салтак юррисене юрларĕç, çĕтĕк купăс сассипе хутăш вĕçĕмсĕр кăшкăрашу та макрашу илтĕнчĕ. Ытла та пысăк хуйхă пырса çапрĕ-çке ун чух халăха!

Виçĕ кунтан вăрçа каякансене ăсатма униче карти хыçне пĕтĕм ял халăхĕ йăтăнса тухрĕ. Пуян таврашĕсем çеç пĕр çын та çукчĕ ăсатакансем хушшинче. Темшĕн-çке, вĕсенчен пĕрине те салтака илмен. Кун пирки кайран тин халăх хушшине сăмах тухрĕ: вĕсем пурте вулăс старшинипе воински начальнике пысăк укçа парса хăтăлса юлнă, терĕç.

Халăхпа пĕрле çав кун Тарас ашшĕ те, унăн куккăшĕ Сар Мирун та вăрçа тухса кайрĕç. Вĕсем пĕр урапа çине ларнăччĕ. Хуйха ӳкнипе Тарас ашшĕн сăн-пичĕ çул çинчи тусан тĕслĕ пулса кайнăччĕ, вăл ыттисем пек ӳсĕр те марччĕ, урапа ӳречинчен тытса утакан, макăрнипе халран кайса калаçайми те пулса çитнĕ амăшне кĕске-кĕске сăмахсемпе вĕрентсе пычĕ вăл:

— Çăкри-тăварне тирпейлĕ тыт. Йывăр килсен, тихине сут. Пăрушне усрама тăрăш. Ачасене сĕт кирлĕ. Та-



ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ

расне шкула ҫӳреме ан пӑрахтар. Хамӑр хӑрахла сём суккӑр ҫын пек ан пултӑрччӗ...

— Юрӗ, Петӗр, юрӗ, пӗтӗмпех эс каланӑ пек туса пырӑп...— терӗ амӑшӗ, куҫҫулӗсене ҫӑта-ҫӑта.— Пирӗншӗн ан хыпӑн, эпир килте епле те пулин пурӑнкалӑпӑр, хӑвӑн пуҫна турӑ упраса хӑвартӑрччӗ кӑна... Эй, мӑнтарӑн, ӑҫтан мурӗнчен сиксе тухрӗ ку вӑрҫӑ!..

Куккӑшӗ Мирун вара, тӗреклӗ, сап-сар ҫӳҫлӗ, шатра питлӗ ҫын, темиҫе ҫул хушши Атӑл ҫинче пурлакра ҫӳренипе вырӑсла самаях вӗреннӗскер, ҫав тери ӗҫсе лартнӑччӗ те, урапа ҫинче унӑн-кунӑн сулкаланса, пӗрмай пӗр юрра кӑшкӑрса юрларӗ:

> Последний нынешний денече-ек
> Гуляю с вами я, друзья...
> А завтра, рано чуть светоче-ек
> Заплачет вся моя семья-а...

Нихҫан манмалла мар йывӑр ӑсату пулчӗ вӑл. Пур лавсем ҫинче те вӑрҫа каякансем акӑш-макӑш шавларӗҫ: хӑшӗ юрлать, хӑшӗ макӑрать, тахӑшӗ такама юнать, ылханать, хӗрарӑмсем шари! шари! кӑшкӑрса яраҫҫӗ те чарӑнма пӗлмесӗр ӳлеҫҫӗ, ачисем те ҫухӑраҫҫӗ... Хӗвелӗ тӳсмелле мар хӗртет, пурте йӗп-йӗпе тара ӳкнӗ, ыраш хушшипе пыракан ҫул ҫинче тусанӗ пӗлӗт пек йӑсӑрланать, пиҫсе ҫитнӗ ырашӗ, хӑйӗн хуҫисемпе юлашки хут сывпуллашнӑ пек, тулли пучахӗсемпе ҫӗрелле сулӑнасулӑна илет...

Хурӑнлӑ ҫул ҫине тухсан, ял халӑхӗ салтаксене лартса каякан лавсенчен уйрӑлса юлчӗ, анчах вӗсем куҫран ҫухаличченех вырӑнтан хускалмарӗ, ҫӗр ҫын ҫӗр сасӑпа макӑрчӗ.

* * *

...Ашшӗнчен вӗсем пиллӗкӗн юлчӗҫ: амӑшӗ, Тарас, унӑн ултӑ ҫулхи шӑлнӗ Микуль тата икӗ пӗчӗк йӑмӑкӗ, Анюкпа Раис, иккӗшӗ те виҫҫӗрискерсем. Уйри тырпула халӑхпа пӗрле чиперех пуҫтаркаласа кӗртрӗҫ, килес ҫул валли те аккаласа хӑварчӗҫ. Тарас, вунпилӗке кайнӑскер, пур арҫын ӗҫӗсене те туса пычӗ.

Пӗр виҫӗ уйӑхран вӑрҫа кайнисем пирки хыпарсем килме пуҫларӗҫ — пӗринчен тепри хӑрушӑрах. Пӗрисем вилнӗ, теприсем ал-урасӑр юлнӑ, виҫҫӗмӗшӗсем ним сассӑр ҫухалнӑ,— тыткӑна лекнӗ пуль ӗнтӗ. Ялта хутла

пĕлекенсем сахал пулнипе, салтак арăмĕсем вăрçăри упăшкисенчен килекен çырусене вулаттарма та, каялла çырусем çыртарма та вĕçĕмех Тарас патне пыратчĕç. Макăра-макăра каласа паратчĕç вĕсем мĕн-мĕн çырмаллине...

Хăйсен ашшĕ пит сайра çыратчĕ — хутла пĕлмен-çкеха вăл, çыру çырса пама кашнинчех çынна тархасламалла пулнă упăн. Тарасĕ вара ун патне тăтăшах çырса тăратчĕ: пурăнатпăр-ха, выçă лармастпăр, сана ырлăхсывлăх сунатпăр, тетчĕ, ялти пур хыпарсене те пĕлтеретчĕ.

Чăн та, малтанах аптрамарĕç вĕсем, йĕркеллех хĕл каçрĕç, анчах çур енне тăрук инкек çине синкек пырса çапрĕ. Яла темле «вĕри чир» пырса кĕчĕ те, вĕсем пĕтĕм çемйипех урараи ӳкрĕç, пурте питĕ йывăр выртрĕç. Çавăн чух вара Тарасăн пĕчĕк йăмăкĕсем тӳсеймерĕç, иккĕшĕ те умлăн-хыçлăнах вилсе кайрĕç, паян пĕри, виç кунтан тепри...

Çав вăхăтрах тата ашшĕнчен çырусем килме пăрахрĕç, ик-виç уйăх пĕр хыпар та пулмарĕ унран. «Пĕтнех ĕнтĕ вăл, вилнех, мăнтарăн!» — терĕ амăшĕ, ирĕн те каçăн татăлсах макăрса. Хуйхи-суйхипе хăй типсе хăрсах ларчĕ, час та часах чирлекен пулса кайрĕ.

Кĕркунне тихана сутса ямалла пулчĕ: апат çук, ăçтан хĕл каçаратăн? Тихи çав тери ӳссе, лайăхланса кайнăччĕ, ăна ĕнтĕ кĕçех кӳлме пуçламаллаччĕ, çавăнпа та Пуян Лявасен кĕрӳшĕ Мамун ăна тăватă пăт тырăлла илсе çавăтса тухса кайнă чух вĕсем пĕтĕм килйышĕпех йĕрсе юлчĕç...

Малтанхи сивĕсем пуçлансан, ашшĕнчен нумайранпа кĕтнĕ çыру тинех килчĕ. Вăл урараи йывăр аманнă та, халь темле Каменец-Подольск хулинче госпитальте выртнă. Кăшт тӳрленсен, тен, пĕр вăхăтлăха киле ярĕç-и-ха, тенĕ çырăвĕнче. Ку хыпар хытă савăнтарчĕ: вилмен иккен ашшĕ, вилмен, вăл чĕрĕ!

— Ал-ури çук пулсан та, киле çиттĕрччĕ мĕнле те пулин,— макăрчĕ амăшĕ, Тараса ашшĕн çырăвне темиçе хут та вулаттарса.

Сурхури иртсен, шартлама сивĕ кун, каçалапа, ашшĕ чăнах та киле çитрĕ. Шĕвĕр башлыкпа, кивĕ шинельпе, кăкăрĕ таранах ӳссе кайнă сухалĕ пăрланса ларнă, икĕ хулĕ айĕнче икĕ вăрăм туя. Пĕр ури çине аран пусать. Вăл килтисене пурне те ыталаса чуптунă хыççăн шинель-

не хывсанах, Тарас унӑн кӑкри ҫинче, вӗр-ҫӗнӗ капӑр хӑю вӗҫӗнче илемлӗ хӗрес ҫакӑнса тӑнине курчӗ.

— Георги хӗресӗ... — тӳрех тавҫӑрса илчӗ Тарас. Ун пек хӗрессене вӑрҫӑра чи паттӑр салтаксене панине вӑл унчченех пӗлнӗ те халӗ уншӑн питӗ хытӑ хӗпӗртерӗ.

— Манӑн атте — паттӑр! Паттӑр! Ӑна хӗрес панӑ!..

Анчах ашшӗ хӑйӗн ҫавнашкал хӗрес пулнӑшӑн нимӗн чухлӗ те савӑнман пек туйӑнчӗ ӑна. Вӑл, уксахласа, малалла иртсе ларчӗ те салхуллӑн ыйтрӗ:

— Пурӑнкалатӑр пулать-ха?

— Пурӑнкалатпӑр майӗпе... — терӗ амӑшӗ, аллисене кӑкӑр умӗнче хӗреслесе тытса тӑрса.

— Ачасене ҫын шутлах пытартӑр-и хуть?

— Пытаркаларӑмӑр...

Пӗчӗккисем вилни ҫинчен Тарас ҫырса янӑ ҫырӑва вӑл илсе вуланӑ иккен.

— Мана хама та чутах пытаратчӗҫ. Ҫӗр айнех пулаттӑм та, чакаласа кӑларчӗҫ...

Хӑй кайран каласа панӑ тӑрӑх, ӑна пӗр наступлени вӑхӑтӗнче амантнӑ. Вӗсен роти атакӑна кайма ҫӗкленсен, ҫывӑхрах йывӑр снаряд ӳксе ҫурӑлнӑ, темиҫе ҫынна аяккалла ывтӑнтарса ҫиелтен тӑпрапа хупласа хунӑ, ҫав вӑхӑтрах пӗр мӑн осколок Тарас ашшӗн ҫур пӗҫҫине ҫурса кӑларнӑ. Сехете яхӑн ҫӗр айӗнче юн юхтарса выртнӑ вӑл, унтан санитарсем асӑрхаса чавса кӑларнӑ та лазарета ӑсатнӑ.

... Часах «салтак курма» пускилсем, пуринчен ытла салтак арӑмӗсемпе ача-пӑчасем пухӑнма пуҫларӗҫ. Таҫтан-ҫке, амӑшӗ пӗр шкальккӑ «каҫонккӑ» тупса пычӗ. Кам пӗлет, тен вӑл, упӑшки таврӑнасса кӗтсе, тахҫанах илсе хатӗрлесе лартнӑ пуль ӑна...

Ашшӗ кӑштах хӗрчӗ те, ҫынсем ыйтнипе, вӑрҫӑ ҫинчен каласа пама пуҫларӗ. Тем те курнӑ, тем те тӳснӗ иккен вӑл, итлесе ларнипех хӑраса каймалла! Нумай-нумай ҫапӑҫусенче пулнӑ, ҫапӑҫу хирӗнче этем виллисем тӑрӑх ҫӳренӗ, пульӑсем тивесрен вилесем хыҫӗнче те пытанса выртнӑ, Карпат тӑвӗсем умӗнче вӗсем пиллӗкӗн «чӗлхе» тытма кайсан иккӗн ҫеҫ таврӑннӑ, ҫапах та «чӗлхине» тытса килнӗ, ҫавӑншӑн ӑна «Георгий» панӑ, темиҫе хутчен атакӑна кайсан, нимӗҫсен электричество токӗ янӑ йӗплӗ пралукӗ ҫине пырса тӑрӑннӑ та нумайӑшӗ ҫавӑнтах пӗтнӗ, унтан нимӗҫсем газсем ярса пирӗн салтаксене

пит нумай чыхантарса вĕлернĕ, Тарас ашшĕ хăй те кăшт çеç вилсе кайман.

Тата темĕн тĕрлĕ хăрушă япаласем çинчен каласа пачĕ аманнă салтак. Итлесе ларакан хĕрарăмсенчен нумайăшĕ ӳлесех макăрчĕç...

Тарас хайĕн ашшĕ çумĕнчех ун çинчен куç илмесĕр пăхса ларчĕ те унăн сулахай питçăмарти çинче, сухал айĕнче вăрăм çĕвек пуррине асăрхарĕ.

«Кунтан та лекнĕ пулмалла ăна...» — шухăшларĕ Тарас. Темшĕн кун çинчен тăруках ыйтма хăяймарĕ вăл, çынсем тухса кайсан, çывăрма выртас умĕн тин ыйтрĕ:

— Санăн питне мĕн пулнă тата, атте? Пуля лекнĕ-и?

— Çук, пуля йĕрĕ мар вăл,— терĕ те ăна хирĕç ашшĕ, ассăн сывласа илчĕ.

— Мĕн йĕрĕ эппин вăл санăн?

— Хамăрăн ротнăй комадир, Бугаев капитан нухаляпа туртса çапрĕ мана...

— Мĕншĕн? — тĕлĕнсе, хăраса кайрĕ Тарас.

— Çулпа пынă чух манăн обмотка салтăнса кайрĕ те, эп кăштах кая юлтăм. Вăл юланпа пыратчĕ. Эп юлнине асăрхаса, вăл лашине чарсах кĕтсе тăнă. Эп ун тĕлне çитсен вара: «Ма юлатăн, сысна?!»—тесе кăшкăрчĕ те тӳрех аллинчи нухалипе пит урлă ячĕ. Шăпăрах юн юхса анчĕ манăн. Пĕр хушă куç та курми пулчĕ...

Тарас тата ытларах тĕлĕнчĕ, унăн чĕри хыттăн-хыттăн тапма тытăнса кайрĕ.

— Неушлĕ вара хамăрăннисем хамăрăннисене хĕнеççĕ?!

— Эй, ачам, епле хĕнеççĕ-шшă! Хĕне-хĕне ăнран кăларсах яраççĕ! — терĕ ашшĕ.— Офицерсем вĕсем пирĕн пек хура халăх мар вĕт, пурте улпут таврашĕсем, помещиксем те дворянсем, пире выльăх вырăнне çеç хураççĕ! Пĕр-пĕр пĕчĕк сăлтав тупăнсанах, тепĕр чух тата ним сăлтавсăрах тем тĕрлĕ асаплантарса пĕтереççĕ пирĕн йышшисене... Пуринчен ытла вырăс мар халăхсенчен мăшкăллаççĕ — ман пек чăвашсенчен, тутарсенчен, мăкшăсенчен... Чышкăпа кăна мар, мĕн алла лекнĕ, çавăнпа тыттарса яраççĕ, чĕп-чĕр юн тăваççĕ хĕнесе. «Под ружье» тăратса тăна яраççĕ тата — винтовкăран икĕ пăт туртакан хăйăр миххи çакса яраççĕ те икĕ сехет хушши ним хускалмасăр тăратаççĕ. Шутсăр йывăр вăл! Хускалсан, татах тăратаççĕ...

— Эсӗ те тӑрса курна-и вара ҫаван пек? — ашшӗне хӗрхеннипе макӑрас патнех ҫитсе ыйтрӗ Тарас.

— Тӑнӑ, темиҫе те тӑнӑ... Малтанах, запаснӑй полка лексен, хамӑра вӑрҫӑ вӑрҫма вӗрентме тытӑнсан, чун тухать пуль, тесеттӗм. Нимрен ытла словеснӑҫшӑн лекетчӗ. Эпир вырӑсла пӗлместпӗр те, офицерсем мӗн вуласа панине ӑнланаймастпӑр, каласа пама вуҫех те пӗлместпӗр, ҫавӑншӑн вара тӳрех хӗнеме тытӑнаҫҫӗ. Қашни ҫапмассеренех: «Азиат! Свиная морда! Кишки выпущу!» тесе кӑшкӑрнине илтетӗн, анчах хӑвна темле хӗнесен те, санӑн вырӑнтан хускалма юрамасть, пурпӗрех «смирно» тӑрас пулать... «Дурак, баран!» теҫҫӗ сана, эсӗ ӑна хирӗҫ: «Так точно!» тетӗн, хӑвӑн ҫав вӑхӑтра сӑмсунтан та, ҫӑварӑнтан та юн юхать... Хӑшӗ-пӗрисем тӳсейместчӗҫ, пирӗн ротӑра пӗр мӑкшӑ ҫакӑнса вилчӗ, тепӗр тутар пӑшал пеме вӗренме кайсан хӑйне хӑй печӗ.

— Вилчӗ-и вара вӑл?

— Вилчӗ ҫав. Хӑйне ҫӑварӗнчен пенӗ те...

— Хӑйсене... офицерсене эппин, нимӗн тума та май ҫукчӗ-и?

— Вӑрҫа пырса кӗрсен, хӑшӗсене, ытла та тарӑхтарса ҫитернисене, тавӑрчӗҫ вара.

— Персе пӑрахрӗҫ-и?

— Печӗҫ ҫав.

— Ҫав кирлӗ те вӗсене! — терӗ Тарас тулли кӑмӑлпа.

Майӗпе пурте ҫывӑрса кайрӗҫ, анчах Тарас тахҫанччене шухӑша кайса выртрӗ. Ашшӗ каласа панисем пӗтӗмпех куҫ умне тухса тӑчӗҫ: офицерсем ним айӑпсӑр салтаксене хӗненисем те, вӑрҫӑра ашшӗпе мӗн-мӗн пулнисем те...

— Епле-ха апла,— шухӑшларӗ Тарас офицерсем пирки,— хӑйсем ҫынсене вилме хӑваласа каяҫҫӗ, хӑйсемех вӗсене хӗнеҫҫӗ... Мӗнле япала вара вӑл? Хам пулсан, ун пек офицерсене эпӗ итлес те ҫук. Ҫапӑҫчӑр хӑйсем!

Тепӗр ирхине вӗсем патне татах ҫынсем пычӗҫ. Ватӑ тимӗрҫӗ Хура Тимахви, юнашар пурӑнакан Павӑл — пӗчӗклех уксах юлнӑскер, Ҫӗтӗк Якку тенӗ хӑрах куҫлӑ ҫын, вӑрҫӑран ҫуллах сулахай алӑсӑр таврӑннӑ Платтун — пурте ялти чухӑнсем, нихҫан ыр пурнӑҫ курманскерсем. Сӑмах, ӗнерхи пекех, каллех вӑрҫӑ ҫинчен, фронтри йывӑрлӑхсем ҫинчен пуҫланса кайрӗ. Чӑн малтан вӑрҫӑра пулса курнӑ Платтун тӗпчеме тытӑнчӗ:

— Мĕнле унта, халĕ те ик çын пуçне пĕр винтовка тивет-и? Халĕ те нимĕçсен вунă-вунпилĕк снарядне хирĕç пĕр снаряд яраççĕ-и пирĕннисем? Эпир çавăнпах пĕтрĕмĕр вĕт, малтан темĕн чухлĕ юн юхтарса çапăçса илнĕ Галицирен пире сурăх кĕтӳне хăвалană пек хӳтерсе ячĕç...

— Çавăн майлах çав,— терĕ Тарас ашшĕ.

— Эппин, яппун вăрçинчи манерлех? Пире унта патронсем выранне вакунĕ-вакунĕпе иконăсем ярса паратчĕç,— хушса хучĕ Хура Тимахви.— Патша майри хăй ярса пана тет вĕсене... Яппунсем пире тупăсемпе кисретеççĕ, пирĕн вĕсене хирĕç иконăсемпе пымалла пулнă имĕш...

— Халĕ патша майри нимĕçсене пулăшать, вĕсен шпийонĕ пулса тăрать, теççĕ... Вăл хăй нимĕç хĕрарăмĕ тет те-ха... — шăппăнрах каларĕ Тарас ашшĕ.

— Пулĕ, тем те пулĕ! Çавăнпа ĕçсем ăнмаççĕ те ĕнтĕ пирĕн...

— Салтаксен кăмăлĕ мĕнлерех? — ыйтрĕ Платтун.

— Ăна эсĕ хăвах пĕлме тивĕç,— терĕ Тарас ашшĕ.— Паллах, салтаксен вăрçас килмест. Қамăн-ха йĕпе окопсенче пыйтăсене кăшлаттарса, уйăхĕ-уйăхĕпе çĕрсе пурăнас, юлашкинчен вилсе выртас килтĕр? Салтаксен те куçĕ уçăлма тытăнчĕ çав, халăхшăн мар, пуян хуçасемшĕн вилетпĕр, теççĕ. Окопсенче вăрттăн хутсем вулама пуçларĕç, вăл хутсенче вăрçа хирĕç çыраççĕ, çитет кун чухлĕ халăх юнне тăкнипе, теççĕ...

— Анчах вăрçин вĕçĕ курăнмасть, тата темĕн чухлĕ халăх пĕтмелле-ха, вăл паллă мар,— ассăн сывласа илчĕ Тимахви.

Çав вăхăтра алăкран ял старости Çемен Лявонч, Пуян Лява таврашĕсенчен пĕри, утмăлтан иртнĕ пулин те питĕ тĕреклĕ, хĕрлĕ питлĕ, самаях кăвакарнă мăн сухаллă çын пырса кĕчĕ.

— Ыр кун пултăр пурне те! — терĕ те вăл кĕнĕ-кĕменех, малтан виçĕ хутчен хĕрес хурса илчĕ, унтан сĕтел пуçĕнче ларакан Тарас ашшĕне ală пырса пачĕ.— Салам патша салтакне!— Ыттисене ал пама мар, вĕсем çине пăхмарĕ те.

— Килех, Çемен Лявонч, лар...— хыççăр пукан çине кăтартрĕ Тарас ашшĕ.

Староста ларчĕ те, кăкри умне тĕрлĕ тĕслĕ çипсемпе кукрашкасем туса илемлетнĕ вăрăм хура кĕрĕкĕн тӳми-

сене вӗҫертсе, йывӑрран сывласа ячӗ. Тарас унран эрех шӑрши кӗнине туйрӗ.

— Ҫитрӗн пулать-ха, Петӗр Николайччӑ, э? Аван, пите аван ку, пӗрмай ҫапӑҫса та ӗҫ тухмасть, килтисене те килсе курас пулать... Эпир те кунта кунӗн-ҫӗрӗн тенӗ пек кӗлтӑватпӑр, ҫав эсрелӗ нимӗҫне ҫӗнтерме турӑран пулӑшу ыйтса пуҫ ҫапатпӑр...

Тарас ашшӗ те, ыттисем те нимӗн те чӗнмерӗҫ. Пит те лайӑх пӗлнӗ-ҫке вӗсем Ҫемен Лявонч йышши ҫӗрме пуянсем камшӑн тата мӗншӗн кӗлтунине. Вӑрҫӑ вӗсене нимӗнле сиен те, хурлӑх та кӳмен, пуйтарнӑ та ыр кӑтартнӑ ҫеҫ. Ҫак Ҫемен Лявонч хӑй те ҫар валли тырӑ-пулӑ, аш-пӑш, тир-сӑран пухса леҫсе тем териех пуйнӑ. Вӑрҫӑ пуҫланнӑ хыҫҫӑн ҫулталӑк ҫурӑ хушшинче вӑл икӗ чуллӑ ҫил арманӗ, петтистеннӑй ҫӗнӗ ҫурт лартрӗ, салтак арӑмӗсен анисене тара илчӗ, ҫӗрӗ ҫинче хӑйсенех ӗҫлеттерчӗ, ял хыҫӗнчи Чечек ҫаранне халӑха вӑйпа тенӗ пекех хӑйне суттарчӗ. Сӑвӑс пекех ӗмет халӑх юнне!..

— Эп сан патна ырӑ кӑмӑлпа килтӗм, Петӗр Николайччӑ,— терӗ староста малалла.— Эсӗ сывӑ таврӑннӑ ятпа ҫакна пушатар пулӗ...— Вӑл кӗрӗк кӗсйинчен пулштух кӑларса сӗтел ҫине лартрӗ.

— Сывви сывах мар-ха эпӗ, урана хытӑ ҫӗмӗрсе ячӗҫ,— терӗ Тарас ашшӗ. Анчах староста ӑна илтмен пек пулчӗ.

— Пурнӑҫ ҫав тери йывӑрланса кайрӗ, эрех те юлмарӗ, юрать-ха ӗнер хулара паллану вырӑссем тупса пачӗҫ...

Малтан вӑл хӑй тултарса ӗҫрӗ те: эх, лайӑх та ҫак шуйттан! тесе тутине сарлака ывҫипе шӑлса илчӗ, унтан Тарас ашшӗне тултарса пачӗ:

— Ӗҫсе пар, патша салтакӗ, хӑвӑн сывлӑхушӑн! Сывлӑхушӑн! Куратӑп: паттӑр ҫапӑҫнӑ эсӗ хамӑрӑн Христос тӗнӗшӗн, патша-аттешӗн тата хамӑрӑн таса Раҫҫейшӗн. Хӗрес те туянса килнӗ авӑ... Ӗҫ, тӑванӑм!

— Хӗресне унта часах туянтараҫҫӗ, сиссе те юлаймастӑн!— темле шӑл витӗртерех каласа хучӗ Платтун.

— Паттӑр ӗҫ тумасӑрах памаҫҫӗ ӗнтӗ,— ун еннелле ҫаврӑнса пӑхрӗ староста.— Сана паман авӑ...

— Эп ҫакӑн пек кӗмӗлтен тунӑ пӗчӗк хӗрессем ҫинчен мар, йывӑҫран тунисем ҫинчен калатӑп,— ӑнлантарчӗ Платтун.

— Пурте турă аллинче, шăллăм,— сассине юриех ачашлантарса каларĕ Çемен Лявонч. Унтан ăна та кăштах эрех ярса пачĕ.— Ĕç, эсĕ те патша салтакĕ пулнă çын...

Платтун ĕçрĕ, анчах тав тăвас вырăнне тӳрех темле урлăрах калаçма тытăнса кайрĕ.

— «Пулнă çын» çав! — терĕ вăл.— Тĕрĕс калатăн, этем пулнă çын эпĕ. Халь акă никам та мар, пурнăçа юрăхсăр чăлах кăна. Никама та кирлĕ мар ĕнтĕ эп урăх... Вăрçăра пĕр çулталăка яхăн, пĕрмай вут ăшĕнче пултăм, алла татса пăрахрĕç, чĕркуççие ватрĕç, анчах хам мĕншĕн çапăçнине ăнланаймарăм çавăнта... Киле таврăнатăп та — куратăп: пĕри арман лартнă, тепри сутă тăвать, виççĕмĕшĕ çур ял çĕрне хăй аллине çавăрса илнĕ, ватă пуçĕпе вунсакăр çулхи хĕре арăм тунă, анчах ман çемье пур — юлашки ĕнене сутса çисе янă та выçă ларать. Турри те пулăшман ăна, патши те. Тин кăштах ăнланса илтĕм вара хам мĕншĕн çапăçнине. Тăнсăр патшапа пуянсемшĕн кăна юн юхтарнă иккен эпĕ, урăх нимшĕн те мар...

Пуçне Платтун еннелле чалăштарса итлесе ларнă староста малтан хĕрелсе пычĕ, унтан кăвакарса кайрĕ, унăн сарлака сухалĕ palăрмаллах чĕтреме тытăнчĕ.

— Эсĕ мĕн... мĕн калаçатăн, пӳтсĕр?! — сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ вăл.— Патшана хирĕç палкатăн-и?! Кун пек сăмахсемшĕн мĕн пулнине чухлатăн-и эсĕ? Эп сана... инвалит тесе пăхса тăмăп!

Староста ура çине сиксе тăрса ывçипе сĕтел çине чант! тутарчĕ.

— Пăлхавçă! Хам алăпа тытса кайса хуптаратăп, тĕрмере çĕртетĕп сана, некотнăй!

Анчах Платтун пĕртте хăрамарĕ. Вăл та сиксе тăчĕ те, староста умнех пырса, ăна питĕнченех кăшкăрчĕ:

— Хуптар ара! Çĕрт! Окопра çĕрнĕ çыншăн тĕрмере çĕресси ним те мар вăл! Акă, юлашки аллăма та таттар! Анчах та эп сана тĕрĕссине калатăп: эпир вăрçăра хĕн курнă вăхăтра эсир кунта эрешменсем пек пурăннă, халăх юнне ĕмсе кӳпшесе кайнă! Эсĕ те, сан шăлнусем те, тăванусем те, пурте!

— Чарăн, Платтун! — сĕтел çине тата хаяртараххăн çапса илчĕ староста.— Ырра мар ахăратăн! Асту!

— Ан юна!— парăнмарĕ Платтун.— Маншăн ырри хальччен те пулман, малашне те пулас çук, эпир çак тĕн-

чене ыр пурнăç курма çуралман! Çавăнпа та нимрен тĕ хăрамастăп... Хăрамастăп!

Ĕç ытла чĕрре кĕрсе кайма пуçланине курса, Тарас ашшĕ вĕсене майлаштарма пикенчĕ:

— Чарăнăр ĕнтĕ, мĕн эсир... çăвăр автансем пек сиксе ӳкрĕр пĕр-пĕрин çине? Ним çукранах тапратса ятăр...

Нумай хушă хытă чупнă лаша пек хашкама ернĕ Платтун старостăна тата тем каласшăнччĕ, анчах, çăварне уçнăскерех, каламарĕ, пĕртен-пĕр аллипе сывлăша касса: эх! терĕ те, пӳртрен хыттăн утса тухса кайрĕ.

Староста ун хыçĕнчен чышкипе юнаса илчĕ:

— Лекетĕнех-ха эс пĕрре!..

— Унăн чунĕ тăвăнса çитнĕ,— терĕ ку таранччен те çăвар уçман Çĕтĕк Якку.— Арăмĕ вилес пек выртать, ачисем улттăн, çиме çăкри çук, тип паранкăпа пурăнаççĕ. Вăл та пĕтет, терĕ-ха...

— Патша айăплă-имуншăн? Çуратса ан тултар! Патшана усалпа ма асăнать вăл? — çаплах лăпланмарĕ староста.

— Ара, патши çинчен вăл нимех те каламарĕ-çке,— терĕ Тарас ашшĕ, хăй те староста çине çилĕпе пăхса.

— Каламарĕ! Пĕлетĕп эпĕ унăн шухăшĕсене! Пĕркунне те Яккусем патĕнче тем те пĕр лăпăртатнă-ха вăл. Ухмах пуçĕпех пирĕн янаралсемпе ахвицерсене тиркеме хăйнă... Тыткалатăпах эп ăна пĕрре!

Староста кĕленчери эрехе хăпăл-хапăл ĕçсе ячĕ те никампа сывпуллашмасăрах тухса кайрĕ.

— Йытă,— терĕ ун хыççăн Тимахви.— Патша йытти!

Старостăпа хăрах аллăллă Платтун çакăн пек тытăçса илнине те яланлăхах астуса юлчĕ çамрăк Тарас. Пуянсем чухăнсене çын вырăнне шутламаннине, чухăн çынсем вăрçăра юн тăкса, чăлахланса килсен те вĕсене ним хисепĕ те çуккине тата тепĕр хут курчĕ вăл.

... Килте пĕр уйăх пурăннă хыççăн Тарас ашшĕ хулана комиссине кайса килчĕ. Пĕççинчи суранне ӳт илсе çитменнипе ăна тата тепĕр уйăх отпуск панă. Çавăн чух вара Тараспа ашшĕ хăйсен тӳнсе кайма пуçланă кĕлетне сӳтсе юсарĕç. Ашшĕ килте тунă юлашки ĕç пулчĕ вăл. Шыв-шур пуçланас умĕн ăна каллех вăрçа каймалла турĕç. Хăй текех киле таврăнас çуккине тĕп-тĕрĕс пĕлсе тăнă пекех, вăл кăштах ĕçсе ӳсĕрĕлчĕ те выртса йăвансах макăрчĕ.

Чăнах та, таврăнмарĕ вара. Кайсанах малтанхи уйăхĕнче пĕр-икĕ çыру ячĕ те унтан шăпах пулчĕ.

Вăрçи çаплах чарăнмарĕ, пурнăç йывăрланнăçемĕн йывăрланса пычĕ. Çăва тухсан, пĕррехинче, Тарассем патне Хура Тимахви пычĕ те çакăн пек калаçу тапратса ячĕ:

— Пыр-ха, Тарас, ман пата тимĕрç лаççине, мана пулăшаканни пулăн,— терĕ вăл.— Пурнăçра хуть те мĕнле ĕçе хăнăхни те усăллă, вăл нихçан та сая каймасть. Аçу пирки хыпар çук авă, кам пĕлет — тем пулнă-ха унпа... Тен, санăн çемьене тăрантараканни пулма тивĕ? Пĕрле ĕçлесен, кăштах çимелли те тупăпăр, укçа та пулĕ пирĕн, выçах лармăпăр...

— Чăнах, ывăлăм, кай Тимахви мучу патне, усси пулатех...— терĕ амăшĕ те.

Тарас вара тимĕрç лаççинче ĕçлеме тытăнчĕ. Çынсем илсе пыракан ĕçсем нумаях марччĕ, çавăнпа та вĕсем кивĕ çавасенчен, тутăхнă шуç-тимĕр таткисенчен çĕçĕсем, куркасем, пĕчĕк чашкăсем туса тултаратчĕç те, Тимахви мучи вĕсене кашни шăматкун тенĕ пекех хула пасарне — Етĕрнене кайса сутатчĕ. Унтан вăл яланах çĕнĕ хыпарсем пĕлсе килетчĕ — вăрçă çинчен, çут тĕнчере мĕн-мĕн пулса иртни çинчен... Тимĕрç лаççинче каннă вăхăтра чĕлĕм туртса ларнă чух вара çав хыпарсене хăйне майлă сӳтсе яватчĕ:

— Пирĕн халĕ пĕтĕм вăрçа патша хăй ертсе пырать. Верховни главнокомандующи... Пуринчен те асли ĕнтĕ, янаралсен янаралĕ... Анчах пире пур фронтсенче те хĕнеççĕ. Сăмсаран юн каймаллах, пуç çурăлмаллах тӳнккеççĕ. Апла пулсан, пирĕн патши ăслах мар эппин вăл... Ма йĕркеллĕ вăрçма пĕлмест? Ма кермана çĕнтереймест? Лешĕсем чеерех, ăслăрах... Тепĕр тесен, патшан ăсĕ кĕске пулнине эпир Порт-Артур патĕнчех пит лайăх куртăмăр та-ха...

— Патшине ăна пире турă панă тет-çке, Тимахви мучи, мĕнле-ха вăл кĕске ăслă çынна патша тума пултарнă?..— ыйтрĕ пĕррехинче Тарас.

— Юмах ку, патша таврашĕсем хăйсем шухăшласа кăларнă халап кăна,— аллипе сулчĕ Тимахви мучи.— Порт-Артурта аманнă хыççăн лазаретра выртнă чух пĕр вырăс, студент пулнăскер, ун çинчен пит лайăх ăнлантарса пачĕ пире... Çак патша ратти вырăс çĕрне пĕрре хăй аллине çавăрса илнĕ те виççĕр çул тытса тăрать. Аш-

шĕ вилет — ывăлĕ патша пулать, ывăлĕ вилсен — унăн ывăлĕ, тепĕр чух арăмĕ ларать престол çине. Патша пулма нимĕн те чармасть вĕсене: çынни ăслă пулать-и, ухмах-и, пьянчук-и, аскăн-и,— пурпĕр патша! Халăх тÿсет... Халĕ те авă, халăх мĕн кăна тÿсмест пулĕ! Пĕрисем вăрçăра пинĕ-пинĕпе пĕтеççĕ, теприсем кунта асапланаççĕ. Тур çырлахтăрах! Тата темĕн курмалла-ха! Пĕрре-пĕрре, халăх ытла та пит тарăхса çитсен, унăн тÿсĕмĕ пĕтетех пулĕ те-ха...

Çак калаçу хыççăн вăхăт нумаях та иртмерĕ, Тимахви мучи пĕррехинче, яланхи пекех, хăйсем тунă япаласене сутма хулана кайрĕ те тĕлĕнсе хытса каймалла хыпар илсе килчĕ:

— Патшана сирпĕтнĕ...

Кун çинчен ялта малтанах питĕ вăрттăн, хăраса калеçрĕç, патшана престол çинчен хăваласа янине никам та ĕненесшĕн пулмарĕ, пурне те ку ытла та пулма пултарайман япала пек туйăнчĕ. Анчах кăшт тăхтасан, юнашар ялти чиркÿре аллаппи пек сарлака сăмсаллă уксах пуп кун пирки амвон çинченех каласа парсан, пурте ĕненчĕç вара.

Унтан яла салтаксем таврăнма пуçларĕç. Хăшĕсем госпитальсенче выртса тухнă хыççăн, хăшĕсем ахалех, сыввипех. Чылайăшĕ пăшалсемпех килетчĕç. Вĕсем патшапа унăн майринчен темĕн тĕрлĕ кулăшсем каласа паратчĕç, вĕсенчен мăшкăлласа такмаклатчĕç. Тарас уйрăмах пĕр юрра астуса юлчĕ, унăн кашни сыпăкĕ:

Царь Николашка,
Жена его Машка...—

тенипе пуçланатчĕ. Малалла вара намăс сăмахсемпе юрлатчĕç.

Ялти сывлăш та темле тăруках урăхланчĕ, халăх хавaслăрах пулма пуçларĕ, хăюлланчĕ, хурал пÿртĕнчен çын татăлма пĕлмерĕ — унта ялан вăрçă хăçан пĕтесси çинчен, чиркÿпе мăнастир, хуттăр çĕрĕсене валеçесси çинчен, малашне пурин те пĕр тан пуласси çинчен калаçрĕç, пĕр-пĕринпе тавлашрĕç, пуринчен ытла вăрçăран аманса килнĕ салтаксем туйисемпе юна-юнах кăшкăрчĕç:

— Слобода! Мĕншĕн юн тăкнă эпир?!

Пĕррехинче Пуян Лявасен кĕрÿшĕ, чикан пек хура та уртмах пек вăрăм Мамун вĕсене хирĕç калаçкаларĕ те, ăна чут çеç тытса çурса тăкмарĕç.

— Тылри йӗкехӳре!

— Сăвăс! Эсӗ çăвар уçатăн-и тата?!.

— Çитет халăх юнне кун чухлӗ ӗмсе пурăннипе, малашне хамăрăн пурнăçăн хуçисем эпир хамăр пулатпăр!

— Слобода!..

Анчах вăрçи çаплах пӗтмерӗ, халăх юнӗ çаплах юхрӗ. Уксах пуп турра ӗненекенсене Вăхăтлăх правительство чӗнсе каланине ăнлантарса пачӗ: «Вăрçă тăшмана çӗнтеричченех пулмалла!» Вăлах вăрçăран тарса килекенсене, халăхăн шухăш-кăмăлне пăтратакансене ылханчӗ, вӗсене Христос тӗнне сутакансем, терӗ. Çав кунсенчех килӗсене сывă пуçпах таврăннă салтаксене, староста тӗллеттернипе, икшерӗн те виçшерӗн тыта-тыта тухса кайрӗç. Хăрушă хыпарсем çӳреме пуçларӗç: хăшпӗр ялсенче хресченсем чиркӳсемпе хуттăрсен çӗрӗсене тытса илме тапратнă тет те, пупсемпе хуттăр хуçисем, часрах салтаксене чӗнсе илсе, чылай çынсене пертерсе пăрахнă, нумайăшне саламатсемпе хӗнеттерсе, тӗрмене тыттарса янă, тет. Персе пăрахнисем хушшинче хӗрарăмсемпе ачасем те пулнă, тет, мӗншӗн тесен вӗсем те арçынсемпе пӗрле уя тухнă пулнă...

Çав кунсенче юнашар ял çынни фронтран питӗ тӗлӗнмелле çыру яни çинчен калаçма пуçларӗç: салтаксем вăрçасшăн мар, офицерсене итлемеççӗ, анчах уншăн вӗсене тыта-тыта тачка хулăсемпе хӗнеççӗ, харсăртараххисене персе вӗлереççӗ имӗш.

— Ак сана слобода! — терӗ Тимахви мучи çак хыпарсене илтнӗ хыççăн.— Ак сана тăванлăхпа пӗртанлăх!.. Çук, ачам, кунта темле йăнăш пулнă... Улталанă халăха, чавса тăршшех лартнă! Кун пеккине мар кӗтнӗччӗ эпир... Пурăнса пăхар-ха, тен, улшăнӗ пурнăç. Улшăнмаллах вăл, кун пекех пулма пултараймасть, çук! Халăх хăйӗншӗн тăратех... Самана улшăнмаллах!

Çав улшăнусем кайран чăнах та пулчӗç. Хура кӗркунне, çӗр шăнтса лартса вӗттӗн-вӗттӗн юр çума тытăнсан пулчӗç вӗсем. Ӗççыннисем влаçа хăйсен аллине илчӗç те, пурнăç пӗтӗмпех урăхланса кайрӗ, чăннипех çӗнӗ самана пуçланчӗ.

Анчах Тарас ашшӗ çав саманана кураймарӗ.

Таврăнмарӗ вăл, пуçӗпех, ӗмӗрлӗхех çухалчӗ вăрçă хирӗнче. Нимӗнле хыпар та килмерӗ ун çинчен...

## 3. ЯЛТИ ХЫПАРСЕМ

Крыльца ҫинче чӗлӗм туртса ларакан Тарас сасартӑк хӑйне такам ятпа чӗннине илтрӗ.

— Тарас! Тарас Петровччӑ! Эсех-и ку? Хӑҫан персе ҫитме ӗлкӗртӗн?!.

Ку — Павӑл пичче, хӑйсемпе юнашар пурӑнакан кӳршӗ иккен. Вӑл, хӑй лутра кӑна тата уксах пулин те, карта урлӑ вӑшт ҫеҫ сиксе каҫрӗ те Тарас патнелле хӑвӑрт утса пырса ун аллине хыттӑн чӑмӑртаса силлерӗ, унтан вара каҫса кайсах калаҫма тытӑнчӗ:

— Ай-ай-ай, пӑх-ха, епле пулса кайнӑ эсӗ! Чӑн-чӑн арҫын! Ерой! Салтака тухса кайнӑ чух ачаччӗ вӗт-ха, сухал йӗрӗ те ҫукчӗ... Ну, мӗнле, чиперех-и, тӗрӗс-тӗкелех-и, ҫӗмӗрсе ямарӗҫ-и?

— Ҫӗмӗркелерӗҫ те, чӑлаха кӑлараймарӗҫ,— терӗ Тарас.— Тухтӑрсем пулӑшрӗҫ...

— Анчах эпир кунта сана кӗте-кӗте шалт хӑшкӑлтӑмӑр вӗт, Тарас Петровччӑ... Ниепле те пурнӑҫ малалла каймасть, ху куратӑн. Микулӗ сирӗн ачарах-ха, мӑн ӗҫ патнех пыраймасть, аннӳ чирлӗ ав. Кӗҫӗр пире хӑратсах пӑрахрӗ, вилсех каять пуль, терӗмӗр, анчах кайран кӑшт хаманланчӗ... Ну, халь эс таврӑнтӑн-ха ӗнтӗ, халь аптрамастӑр!

Калаҫнӑ май вӑл Тараспа юнашар ларчӗ те, чӗлӗмне кӑларса, шултран туранӑ килти табак тунине тултарма пикенчӗ. Ҫавна кура, Тарас галифе кӗсйинчен хӑйӗн табак хутаҫҫине кӑларчӗ.

— Ме, фабричнӑйне турт...

— А-а, ку аван вара,—терӗ Павӑл пичче.— Хапричнӑйне туртса курманни пит нумай пулать. Сӑпаҫҫипех!— Вӑл чӗлӗмне чӗртсе ячӗ те ҫӑра кӑвак тӗтӗме темиҫе хутчен ҫине-ҫине ҫӑтрӗ.— Канхвет пекех пулчӗ ку маншӑн... Тӗлӗнмелле! Табак та кӑларайми пулчӗ пирӗн патшалӑх! Хӑвах курма тивӗҫ, Тарас Петровччӑ, ытла та нимӗн те ҫук вӗт-ха пирӗн патра. Табак вырӑнне ҫӳҫе хуппи типӗтсе туртатпӑр, краҫҫын вырӑнне тахҫан авалхи пек хӑйӑ ҫунтаратпӑр, спичка вырӑнне — вут чуль ӗҫлет. Ытти таварсем пирки каламастӑп та ӗнтӗ. Мӗнле вӑл, хуласенче те ҫавӑн пекех-и?

— Халлӗхе пур ҫӗрте те ҫавӑн пекрех-ха, Павӑл пичче.

— Тата нумайччен пурӑнӑпӑр-ши эпир капла? Кансӗр вӗт питӗ, шутсӑр кансӗр!

— Нумай мар ёнтĕ халь. Часах пĕтĕм пурнăç юсанма пуçлать, Павăл пичче.

Çав вăхăтра Тарассен тĕлĕпе анаталла иртсе пыракан икĕ ватăрах хресчен вĕсене курчĕç те тĕлĕннипе чарăнса тăчĕç, унтан тӳрех килхушшине кĕрсе ал тытрĕç.

— Епле çиткелерĕн, шăллăм? — ыйтрĕ пĕри, Тяпук ятлă çӳлĕ хура çын.

— Аванах çиткелерĕм-ха,— терĕ Тарас.

— Аннӳне манмарăн пулать çапах та,— хушса хучĕ тепри, урисем кукăртарах пирки Хăмăт тенĕскер.

— Ма апла калан?

— Ара, эс коммунист пуль?

— Коммунист. Мĕн вара уншăн?

— Мĕнле калас... Эпĕ коммунистсем ашшĕ-амăшне те, арăмĕсене те пăрахаççĕ тенине илтнĕччĕ те...

— Калакансем тем те калĕç вĕсем. Ун пек элексене пирĕн тăшмансем сараççĕ. Сахалтарах итлес пулать вĕсене,— терĕ Тарас ăна хирĕç.

Павăл пичче татăлнă калаçăва каллех хускатса ячĕ.

— Çапах та, хăçан тавульнă пулать-ха вăл тавар тени, Тарас Петровччă? Пире, хресченсене, ытла темех кирлĕ мар, пире краççын, тăвар, кăшт-кашт тимĕр хатĕрсем, тĕрлĕ ăпăр-тапăр пулсан çитетчĕ-ха халь. Атту ытла пĕтсе çитрĕмĕр.

— Вăл çеç мар, Павăл пичче, пурте пулать,— ёнентерӳллĕн татса пачĕ Тарас.— Халь халăха кирлĕ таварсене те майĕпе туса кăларма тытăннă ёнтĕ... Юлашки иквиçĕ çул хушшинче мĕн пулса пынине хăвăрах пĕлетĕр-çке ёнтĕ. Пĕтĕм вăй тăшмансемпе çапăçнă çĕре кайса пычĕ. Шуткă мар вĕт — пирĕн çине пĕр харăсах вунă патшалăх ытла тапăнчĕç, анчах эпир вĕсене пурпĕр хăваласа ятăмăр... Пуриншĕн те — рабочишĕн те, хресченшĕн те питĕ йывăр пулчĕ вăл, эпир те фронтра сахал мар нуша куртăмăр, анчах та — мĕн тăвас тетĕн? Камăн ĕлĕкхине тавăрас килтĕр, камăн каллех уретникпе страшниксен нухалине çиесси килтĕр? Чăнах та, ĕлĕк хура халăх ёнси çинче ларса пурăннисем вăл пурнăçа тем пекех тавăрасшăн пулчĕç, анчах та сирпĕнчĕç вĕсем... Мĕн ёнтĕ малалла? Хамăра тапăннă тăшмансенчен тасалтăмăр, вăрçă пĕтрĕ, халь пурнăçа юсаса ярасси çеç юлчĕ. Çак выçлăх питĕ кансĕрлет те-ха пире, анчах ăна тӳсесси те нумаях юлмарĕ. Хуласенче заводсемпе фабрикăсене йĕркене кĕртеççĕ, эпир тырă ытларах тăвăпăр.

Курăр акă, тепрер ик-виç çултан пурнăç еплелле пулě... Унтан малашнехи çинчен каламастăп та халь, вăл расна сăмах! Пирěн пек вăйлă патшалăх та пулмě тěнчере, пирěн пек лайăх пурăнакансем те пулмěç. Курăр акă. Ленин çапла каланă...

— Аван пуплетěн те эс,— терě Хăмăт, пуçне хыçса,— анчах темле... пулассăн туйăнмасть вăл мана... Ěненес килмест.

— Měншěн ěненес килмест?

— Ку таранччен пěрмаях япăхса пытăмăр та-ха ара. Měн акса тунă тыррине парса тăтăмăр, ялта пěр манерлě выльăх юлмарě. Юлашкинчен çак выçлăх хавшатса çитерчě, халăхăн ним вăйě юлмарě.

— Ку тěрěс ěнтě, Тарас Петровччă,— хушса хучě Павăл пичче.— Чăн сăмахăн суйи çук. Шалт аптраса çитрěмěр вěт. Чылайăшě вилчěç, вилме патне çитнисем те сахал мар...

— Пěтěмпех пěлетěп,— терě Тарас.— Анчах та měншěн ун пек пулнине ăнланас пулать.

Унтан, хăй сисмесěрех, хăйěн патне ăнсăртран пырса тухнă çынсене хěрӳллěн ăнлантарма тытăнчě. Патша вăрçи çěршыва юхăнтарса яни çинчен, интервенци çинчен, ялти тăшмансем měнешкел чăрмантарни, çамрăк Совет республикине хăтармашкăн çěршыври пур вăя пухма кирлě пулни çинчен, çавăн пирки вăрçăллă коммунизм, продразверстка тумалла пулни çинчен, малашне пурнăçа епле майпа юсаса пымалли çинчен каларě...

— Çакна ăнланăр эсир: иртнě йывăрлăхсем вěсем пурте вăхăтлăх пулнă, вěсем иртсе кайрěç ěнтě. Продразверсткăна пěр çулталăк çурра яхăн каялла пăрахăça кăларнă, çěршывра суту-илӳ пуçланчě, заводсемпе фабрикăсем ěçлеме тапратаççě... Пурнăça çěнěрен пурăнма пуçлатпăр!

Вăл калаçнă хушăра килхушшине пěрин хыççăн теп-ри ял çыннисем пухăнса пычěç. Паллă мар, такам калаçа çӳренě, анчах та Тарас таврăнни çинчен пурте тенě пекех пěлме ěлкěрнě. Арçынсем пычěç ăна курма, хěрарăмсем, çамрăксем. Măннисем Тараса ал пырса параççě те ăçта та пулин вырнаçса лараççě, çамрăкраххисем аяккарах тăрса măннисем сăмахланине итлеççě.

Пěр пуçланнă калаçу чылай вăхăта тăсăлчě. Ял çыннисем пурин çинчен те пěлесшěн пулчěç: вăрçă měнле пěтнě, шуррисене епле хăваласа янă, хуласенче епле пу-

рӑнаççӗ, малашне хресченсене епле çӑмӑллӑхсем пулмалла... Тӗпӗ-йӗрӗпех каласа пачӗ Тарас, картин çине ӳкернӗ пекех кӑтартса пачӗ малашне пурнӑç епле пулассине. Чухӑнсене, лашасӑррисене — тӗрлӗрен çӑмӑллӑх, кивçенле вӑрлӑх, машинсем параççӗ,— ӑна валли юлташлӑхсем, пулӑшу комитечӗсем пулаççӗ. Коопераци урлӑ пысӑк пулӑшу илмелле. Питех те тимлӗн, ним шарламасӑр итлерӗç ӑна пухӑннӑ çынсем, анчах çапах та иккӗленерех ӗненсе пычӗç унӑн сӑмахӗсене.

Унтан Тарас хӑй ыйтса пӗлме пуçларӗ:

— Хӑвӑр мӗнле пурӑнкалатӑр кунта эсир? Мӗнле уйрӑмах çӗнӗ хыпарсем пур? Эп нимӗн те пӗлместӗп-ха вӗт.

— Мӗн çӗн хыпарӗ пирӗн... — терӗ Павӑл пичче, чӗлӗмне кукӑртнӑ пӑхӑр пралукпа чакаласа.— Выçӑ ӗнтӗ пурте, мӗн тата урӑх... Куратӑн, пӗрин те çын сӑнӗ çук.

— Вӑл паллӑ-ха,— килӗшрӗ Тарас. — Ну, ытти енчен мӗнле? Пурнӑç лӑпкӑ-и халь? Пӗринче ман пата ку тӑрӑхра бандитсем алхасаççӗ, тесе çырнӑччӗ. Халь епле? Йлтӗнмест-и?

— Халь те пур çав,— хулӑн сасӑпа мӑкӑртатса илчӗ Тяпук.— Çав Кӑрмӑш пӑлхавӗ вӑхӑтӗнче пӑшал-патрон тавраш туянса юлчӗç те, тек ашкӑнаççӗ унпа.

— Хытах-и вара?

— Хытах çав. Час-часах илтӗнет: кунта лаша вӑрланӑ, лере ӗне пуснӑ, кӗлет çаратнӑ... Хӗрарӑмсем вӑрман çывӑхне те кайма хӑраççӗ ӗнтӗ. Пӗр эрне каялла Хучаш вӑрманӗнче, çултан инçе те мар, икӗ çамрӑк хӗрачана пусмӑрланӑ та алли-урисенчен çыхса пӑрахса хӑварнӑ... Пӗри намӑса чӑтайман вара, çав кунах çакӑнса вилнӗ.

— Епле-ха апла? Чаракансем çук-и-мӗн?

— Кам чартӑр? Милицисем хӑйсем те вӑрмантан аяккарах пӑрӑнса çӳреме тӑрӑшаççӗ, тенӗ хыпар пур та...

— Бандичӗсен нимрен хӑраман утаманӗ пур тет, Махорка ятлӑскер, тӗмле капкӑна лексен те хӑтӑлса тухса тарать, тет...

— Пур халӑхпа тӑрсан, тытма пулать те-ха ӑна, халӑхӗ хӑрать-çке,— хушса хучӗ Тарасран инçетре те мар таракан пӗр çамрӑк йӗкӗт.

— Хӑрӑн! — кӑшкӑрса пӑрахрӗ ӑна Хӑмӑт.— Авӑ, Матякассинчи Совет председателӗ халӑха облава тума пухса илсе кайнӑ та, кайран вара Махорка ӑна мӗн туса хунӑ, пӗлетӗн-и?

— Мӗн? — ыйтрӗ Тарас.

— Тепĕр каçхинех пĕтĕм çемйипе пусса тухнă. Алăкĕ çине хут çырса çапса хăварнă, тет: «Кам пире хирĕç пырать, пурне те çапла тавăратпăр». Çавăн хыççăн кам килĕштĕр-ха облавсене çӳреме? Пурин те пурăнас килет вĕт!

— Вĕсен кашни ялтах хăйсен çыннисем пур, тет. Çавăнпа тытма йывăр. Кăшт сас-хура пулсанах, кайса пĕлтереççĕ, тет те...

— Агентсем ĕнтĕ.

— Ара çав...

Çынсем калаçнă хушăрах Тарас шухăшласа ларчĕ... Паллах, вăл бандитсем ним хӳтлĕхсĕр, хĕçпăшалсăр çынсене чылаях сиенлеме, вĕсене сăтăр тума пултараççĕ. Пухăннă ĕнтĕ тĕрлĕрен дезертир пулнисем, уголовниксем, тахçан офицер пекки пулнисем, пĕр сăмахпа каласан, пурнăç картинчен тухса ӳкнĕ этемсем. Ялсенче вĕсене кулак таврашĕсем пулăшаççĕ, Совета хирĕç пăлхавмĕн пулас пулсан, кирлĕ пулĕç, тесе шутлаççĕ вĕсене...

Çавăнтах киле таврăннă чух çул çинче пулса иртнĕ историе аса илчĕ. Хусана çитесси пĕр аллă-утмăл çухрăм юлсан, поезд темле пĕчĕк полустанокра чарăнса тăчĕ. Çĕрлеччĕ ун чух, пăч тĕттĕмччĕ. Сасартăк вакунра шăри-шари, шăй-шай! кăшкăрни илтĕнчĕ.

— Хура-ах! Çаратаççĕ!

— Çăлăр, япаласене туртса илеççĕ! — çухăрса ячĕç хĕрарăмсем. Тĕттĕм вакунра тĕпĕртетме, кĕрешме тапратрĕç. Тахăшĕ ӳкрĕ, тахăшĕ ыратнипе йынăшса ячĕ.

Вакуна темиçе бандит сиксе кĕрсе çаратма тапратнă иккен...

Ним юлмичченех çаратса тухатчĕç пулĕ çынсене, юрать вăл вакунра Тарас пек киле таврăнакан хĕрлĕармеецсем чылайăнччĕ. Вĕсем сиксе тăрсанах бандитсем каялла туха-туха тарчĕç. Шел, вакунра ахаль халăх нумаййипе нихăшне те тытма пулмарĕ. Тахăшĕ спичка çутса янă вăхăтра Тарас вĕсенчен пĕрине çеç курса юлчĕ: сарă кăтра çӳçлĕ, тăрăхларах питлĕ, пысăк кăвак куçлă, çамки çинче, сулахай енче, пысăк çĕвĕк пур. Çав тери тискеррĕн пăхса илчĕ вăл хăйне çанăран ярса тытнă Тарас çине, унтан ăна пуçĕпе янахĕнчен çапрĕ те, вĕçерĕнсе, çĕре ӳкнĕ çынсем çийĕпех чупса тухса кайрĕ...

Çавăн пеккисем çӳреççĕ ĕнтĕ кунта та! Пĕтерес пулать вĕсене, епле пулсан та часрах тĕп тăвас пулать!

— Темĕн пек вăйлă ют патшалăх çарĕсене çĕнтернĕскер, килти вăрă-хурахсенченех хăраса тăмăпăр-çке,— терĕ вăл юлашкинчен, халăх майĕпе саланма пуçласан.—Ĕçлеме, хамăр пурнăçа юсама кансĕрлеттермĕпĕр!

... Қаçалапа, амăшне çитеркелесе чей ĕçтернĕ хыççăн (çинĕ пирки пулас, вăл паян кăштах самайланчĕ), Тарас унтан-кунтан пĕр вунă пăта тупса килкарти алăкне тӳрлетме тухрĕ. Вăл ĕçленĕ çĕре икĕ çамрăк йĕкĕт — Микишпа Исай пырса тăчĕç. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр çулсенче, Тарас Хĕрлĕ Çара кайнă чухне вунтăват-вунпилĕк çулхи ачасем çеç пулнă, анчах ку хушăра нумай ӳснĕ иккен, тĕрекленнĕ, мăн çын сăнĕ кĕнĕ. Ют çĕрте курсан, паллас та çук.

— Вăй патăр...

— Спаççипă.

— Тӳрлетес терĕн-и?

— Ара, ытла та юхăнса выртать-çке...

Çамрăксем Тараса ал пачĕç те, ун çывăхнерех пырса, курăк çине ларчĕç.

— Эпир сан патна пĕр ĕç пирки ятарласа килтĕмĕр. Чăрмантарнăшăн каçар та-ха эс пире...

— Мĕн чăрмавĕ? Эсир килни пит аван-ха вăл! Ман хамăн та каçхине кам патне те пулин калаçма кайса ларас шут пурччĕ-ха...

— Акă мĕн, Тарас,— терĕ Микиш ятлă çамрăкĕ, кăшт тăхтасан.— Эп паян вулăсра пултăм. Манпа волкомри Арасланов, леш Тренькасси ачи калаçрĕ. Тин çеç хуларан вĕренсе килнĕ вăл. Ялта пурнăç мĕнле пыни, çамрăксем мĕн туни çинчен ыйтса пĕлчĕ. РКСМ* ячейки тумашкăн çамрăксене пухмалла, ытти ялсенче РКСМ-ра тăракан нумай, сирĕн кăна çук, терĕ... Çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте комсомол пысăк вăй пулмалла, çавăнпа та чухăнсемпе вăтамсен ывăлĕ-хĕрĕсене комсомола пĕрлештерме тытăнмалла, терĕ. Паян эс килни çинчен пĕлтĕм те, малтан санпа сăмахласа пăхас, терĕм... Хамăр эпир пит чухласах каймастпăр-çке-ха, çав касать. Мĕнле шутлатăн эс, май килĕ-ши пирĕн?

Тарас алăка тăратса лартрĕ те кĕпи-йĕмне çыпăçнă тусан-турпаса силлесе тасатрĕ. Унтан шлемне тӳрлетсе тăхăнчĕ те:

— Питĕ кирлĕ ĕç тапрататăр, юлташсем,— терĕ.— Кун çинчен тĕплĕн калаçас пулать. Айтăр-ха, кĕрер...

* Российский Коммунистический Союз Молодежи.

Пӳртре вара вăл Микишпа Исая комсомол мĕн иккенне, вăл мĕн тума кирли, унăн мĕн-мĕн тумалли, уйрăммăнах ялта мĕн ĕçлемелли çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех ăнлантарса пачĕ. Микишпа Исай ăна çав тери тимлĕн итлесе ларчĕç.

— Çамрăксене кирлĕ таран пухма пулать-и сирĕн шутпа? — ыйтрĕ Тарас юлашкинчен.— Малтанлăха пĕр пилĕк-ултă çын пулсан та çитет пире.

— Ун чухлĕ тупăнать пулĕ,— терĕ Исай,— вăл нумай мар...

— Тата çакна астăвас пулать, юлташсем,— асăрхаттарчĕ Тарас.— Пули-пулми, унталла-кунталла сулăнакансене пухма юрамасть. Пирĕн халь чăн малтан чухăн ачисене пĕрлештерме тăрăшас пулать. Шанчăклă çынсем, хамăр çынсем, пуянсен танатине лекменнисем пулччăр... Эпир ача вăййи мар, çирĕп ушкăн тăватпăр, унăн пĕтĕм ял пурнăçне ертсе пымалла пулать.

— Пире ертсе пыраканĕ эс пулатăн ĕнтĕ...

— Унта курăнĕ, туман тиха пилĕкне малтанах хуçмаççĕ. Малтан ячейкине тăвас пулать. Ну, кам-кам пур-ха сирĕн шутпа?

Микиш шутлама тытăнчĕ:

— Калăпăр, эпĕ — пĕрре, Исай — иккĕ... Унтан Арçукпа Шăнкăрч кĕме пултараççĕ...

— Леш енчи Риван,— хушса хучĕ Исай.

— Тĕрĕс, Риван...

— Антун...

— Çук, унпа ĕç тухас çук, ытла хăравçă...

— Малтанлăха çитет те,— чарчĕ Тарас.— Тăруках нумая хапсăнмăпăр. Кайран хăйсемех килме пуçлĕç. Пĕр-ик хĕрача тупăнсан, пит аван пулмалла та ĕнтĕ..

Микишпа Исай пĕрне-пĕри куçран пăхса илчĕç. Микиш пуçне пăркаларĕ:

— Хĕрсем тупăнмаççĕ пуль... Хăюсăр халăх. Сăмахюмах тухасран хăрĕç, тем...

— Халь тăруках май килмесен те, малашне хутшăнтарасах пулать вĕсене. Пĕлетĕр-и, Ленин хĕрарăм çинчен мĕн каланă? Кашни кухаркăн патшалăха тытса тăма пĕлмелле, тенĕ. Халăх хушшинчи ĕçе хутшăнтарса пымасан, ăçта вĕренччĕр вĕсем?

— Пĕрре пур та ĕнтĕ...— сас пачĕ Исай.

— Кам?

— Учительница, Катя.

— Э-э,— аллипе сулчĕ Микиш.— Тем тумалла пуль вăл пуп таврашĕпе! Халăх хушшине тухса та курмасть вăл, кунĕ-кунĕпе пахчара кĕнеке вуласа выртать, мĕн усси пултăр унтан? Кирлĕ мар...

— Чим-ха, чим,— терĕ Тарас, шĕвĕр пӳрнине ҫĕклесе.— Астăватăп эп ăна... Пуп хĕрĕ мар вĕт вăл, унăн тарҫин, нянькин ачи! Чăн-чăн трудовой класс! Пуп хĕрĕсемпе пĕрле ӳснипе кăна вĕренме ерсе кайнă, гимназие лекнĕ. Тепĕр енчен, вĕреннĕ ҫынсем пире малашне питĕ кирлĕ пулаҫҫĕ-ха. Хăҫан пухăнса калаҫăпăр? Ĕҫе тытăнас пулсан, вăраха ярас марччĕ...

— Ыранах пухма пулать. Каҫхине.

— Ăҫта?

— Хуть те ăҫта. Шкулта та пухăнма пулать.

— Систерĕр эппин. Кусемпе калаҫса татăлсан, кайран пур ҫамрăксене те пухăпăр.

Сăмах татăлчĕ. Микишпа Исай тухса кайма ура ҫине тăчĕҫ.

— Чимĕр-ха, ан васкăр,— каллех ларма сĕнсе пуҫĕпе сак еннелле сулчĕ Тарас,— манăн сирĕнтен ыйтса пĕлмелли пур-ха. Микульрен ыйткаларăм та, йĕркине тупаймарăм. Советра кам-кам халь?

— Советра пит чаплă халăх-ха унта,— терĕ Микиш.— Председателĕ — Каҫăр Куҫма, секретарĕ — Иливан. Кирлĕ чух нихҫан та тупма ҫук вара вĕсене. Таҫта ҫӳреҫҫĕ...

Тарас тĕлĕнсе пуҫне пăркаласа илчĕ.

— Ну, тупнă та вара халăх! Мĕнле пуҫпа, кам суйланă вара вĕсене? Каҫăр Куҫма ĕлĕк урядник пулнă мар-и вăл?

— Илтмен...

— А Иливанĕ тахҫантанпах уезчĕпе паллă жулик. Кам кăна пулман пуль вăл, судпа-темпе муталашса мĕн чухлĕ ҫынна макăртнă пуль! Революци хыҫҫăнах ялта Совета хирĕҫ кăшкăраканни самăй ҫавăччĕ вĕт, ҫавăншăн ăна пĕр хушă тĕрмере те лартрĕҫ, анчах халь — пăх та кур!— хăй влаҫ пулса ларнă. Ай-ай... Ăнран тухса каймалли ĕҫсем пулса иртеҫҫĕ иккен сирĕн кунта!

— Мĕн тăвас тетĕн, пĕлекен ҫынсем ҫук та, пуҫ тăрне хăпарса лараҫҫĕ ҫав...

Тарас каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ.

— Кун пек «власть» пулсан, ял пурнăҫĕ, паллах, нихҫан та малалла каяс ҫук. Мĕн, вĕсем халăхшăн тăраша-

кан çынсем-и? Вĕсемшĕн пулсан, хуть те паян пурте вилсе пĕтчĕр.

— Ку тĕрĕс вара,— терĕ Микиш.— Акă, ытти ялсенче выççисене валли тунă столовăйсем чиперех ĕçлеççĕ, йĕркеллех çитереççĕ, пирĕн пур — кашни кун харкашу. Чип-чипер çăнăхранах тем шуйттанла çăкăр туса параççĕ. Апачĕ те ним майĕ çук — темскер, мăшкăлтăк шывĕ...

— Кам асли унта?

— Мамун, Лявасен кĕрÿшĕ...

Тарас лач! сурчĕ.

— Хысна паракан апата та пуянсемсĕр пĕçерсе çиеймеççĕ эппин! Эх, шереметсем!

— Халăха апат çитерме унăн пÿрчĕ аслă, терĕç пулас пухура...

— Вĕсен пÿрчĕ аслă та — пырĕ те аслă çав! Мăннăн çăтаççĕ! Столовăйĕ уçăлнăран вара ăна пĕрре те пулин тĕрĕслесе пăхнă-ши?

— Илтмен ăна. Ахаль, халăх питĕ кăмăлсăр...

Тарас сĕтел пуçне пырса ларчĕ.

— Итлĕр, юлташсем. Пирĕн чăнах та часрах пĕр çĕрелле чăмăртанас пулать. Унсăрăн пурнăçа юсаймастпăр эпир. Каçăр Куçмасемпе, Иливансемпе нумаях малалла шăваймăпăр. Тем тесен те, вĕсем пирĕн çынсем мар, пире пулăшас çук, чăрмантарма çеç пултараççĕ.

— Эпир хамăр та çапла шутлатпăр çав,— терĕ Микиш.— Вĕсем халăха ĕлĕкхи пекех хăйсен аллинче пăчăртаса усрасси çинчен çеç ĕмĕтленеççĕ...

— Тĕрĕс калатăн. Çавăнпаваскас пулать те ĕнтĕ пирĕн, Каçăр Куçмасене хăйсен пуçĕсене ытлашши каçăртма парас пулмасть!

Микишпа Исай тухса кайрĕç.

«Ку каччăсемпе ĕç тума пулать, тĕрĕс çул кăтартса памалла çеç вĕсене»,— шухăшларĕ Тарас.— «Пуянсем илĕртнĕ хыççăн каяс çук кусем, тутлине йÿççинчен уйăрма пĕлеççĕ курăнать...»

Ял пурнăçне тĕпренех улăштарма, çĕнетме, чухăнсене ĕлĕкхи пек выçлăн-тутлăн мар, этем шутлах пурăнакан тума питĕ нумай ĕçлемеллине, кĕрешмеллине, çав кĕрешÿ çăмăл пулас çуккине Тарас халĕ питĕ лайăх курса тăчĕ. Анчах ку ăна пĕртте шиклентермерĕ. Çав тери пысăк нушара пурăнса, пуянсен мăшкăлне тÿссе ÿснĕ, нумай çапăçусенче пулса вилĕме хирĕç ним хăрамасăр

пынă, вут-çулăмра пиçнĕ, вăрçăрах партине кĕнĕ çын, вăл халĕ мĕншĕн кĕрешмеллине, кама хӳтĕлесе кама хирĕç пымаллине лайăх чухланă. Умра тăракан ĕçсене тума унăн ăс та, вăй та çителĕклĕ пулнă. Çав ĕçсене пĕр-пĕччен тума çуккине те пĕлнĕ вăл: ăна валли чухăнсене хăйсене çĕклемелле, вăтам хресченсемпе таччăн çыхăнса тăмалла, вĕсене кулаксем майлă çаврăнса кайма памалла мар. Кун çинчен Ленин мĕн каланине киле тухса килес умĕн вĕсене полк комиссарĕ питĕ лайăх ăнлантарса панăччĕ...

Кĕрешĕве Тарас çамрăклах хутшăннă.

Октябрьти революци пулни, Питĕрте Вăхăтлăх правительствăна арестленĕ хыççăн çĕршыври пĕтĕм власть Советсен аллине куçни çинчен яла хыпар çитсенех, Тарас хăйне майлă агитатор пулса тăнă. Кашни каçах ăна хурал пӳртĕнче хаçатсем вулаттарнă, вуланă чух çынсем ăнланайманнине хăй пĕлнĕ таран ăнлантарса панă вăл.

Халăха ытла та хĕпĕртеттерекен хыпарсем пĕлтерчĕ Тарас çав хаçатсене вуласа: вăрçа халех пĕтермелле, мир тумалла, заводсене — рабочисен аллине, пĕтĕм çĕре — хресченсене памалла, хĕрарăмсем арçынсемпе пĕр тан пулмалла...

Çĕр хут та каласа пачĕ пуль çаксем çинчен Тарас ял çыннисене!

1918 çулта, çуртыррисем вырнă вăхăтра, Тарасăн куккăшĕ Сар Мирун киле таврăнчĕ. Вăрçă пуçлансанах вăл Тарас ашшĕпе пĕрле тухса кайнăччĕ те унтанпа киле пĕрре те килсе курманччĕ. Малтанхи каçах Тарассем патне пычĕ те питĕ нумай каласа кăтартрĕ хăй çинчен. Вăл Питĕрти Хĕллехи двореца штурмланă çĕрте пулнă иккен. Тепĕр виçĕ уйăхран, нимĕçсен кайзерĕ* Вильгельм çарĕсем Питĕр еннелле çĕмĕрсе пыма тапратсан, вăл Нарва хули патĕнчи хăватлă çапăçура пулнă. Çав çапăçура хĕрлĕгвардеецсем, хăйсен хĕçпăшал çителĕксĕр пулнă пулин те, нимĕç полкĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкнă, анчах çавăнтах Тарас куккăшĕ темиçе çĕртен — хулпуççирен, ураран, хулран аманнă. Вара вăл нумай хушă госпитальте выртнă. Халĕ те тӳрленсех çитейменччĕ-ха, сылтăм ури çине çирĕппĕн пусайманнипе шĕвĕр вĕçлĕ тимĕр туя çине ытларах таянса çӳретчĕ.

Вăл коммунист пулнă. Вăрçăран таврăнакан ытти хăшпĕр çынсем пек эрех те ĕçместчĕ, нихçан та ытлаш-

---

* Нимĕçсен императорне (патшине) кайзер тенĕ.

ши вĕриленместчĕ, калаҫасса та питĕ йĕркеллĕ калаҫатчĕ, сăпайлă, лăпкă. Унăн кашни сăмахĕ вырăнлăччĕ.

Сар Мирун таврăннă хыҫҫăн темиҫе кунтанах яла сăран пиншак тăхăннă икĕ ҫын пычĕҫ те — пĕри вулăсран, тепри хуларанах терĕҫ — ялти пур чухăнсене шкула пуҫтарчĕҫ. Тарас та пулчĕ ҫав пухура. Хуларан килни питĕ хаяррăн, хĕрӳллĕн калаҫрĕ унта.

— Республикăна унтан та кунтан тăшмансем тапăнаҫҫĕ, тĕнчери мул хуҫисемпе хамăр ҫĕршыври тăшмансем пире каллех пыртан ярса тытасшăн, пăвса пăрахасшăн, пире каллех, ĕлĕкхи пекех, чурасем, чĕлхесĕр выльăхсем туса, пирĕн юнпа, пирĕн тарпа пуйса, ыр курса пурăнасшăн... Ҫавăнпа та пирĕн халĕ питĕ ҫирĕп чăмăртанас, хамăрăн пĕтĕм вăя пĕр ҫĕре пухас пулать. Хуласенче рабочисем выҫă ĕҫлеҫҫĕ, кунне пĕр воҫмушка ҫăкăр илеҫҫĕ, пирĕн Хĕрлĕ Ҫар та выҫлă-тутлă ҫапăҫать. Анчах ялсенчи пуянсем, пирĕн килти тăшмансем, тырă памаҫҫĕ, ăна пытараҫҫĕ, ҫĕртеҫҫĕ, хăшĕсем ҫунтарса яма та хатĕр. Чарас пулать вĕсене пирĕн, ҫăварлăхлас пулать! Кулаксен пĕтĕм ытлашши тыррине, укҫине рабочисем валли, Хĕрлĕ Ҫар валли ямалла, чухăнсен вăйĕпе тунă ытлашши пурлăхне чухăнсенех валеҫсе памалла...

— Тĕрĕс!

— Тахҫанах ҫапла тумалла!

— Лайăх саккун ку!.. Тĕрĕс саккун!..— кăшкăрчĕҫ пухăва пынисем.

Тахҫанчченех кĕрлерĕ пуху. Юлашкинчен чухăнсен комитетне суйларĕҫ. Унта Тарассен куккăшне — Сар Мируна, вăрҫăран урасăр таврăннă Платтуна, Ҫĕтĕк Яккăва, ватă тимĕрҫĕ Хура Тимахвине, хĕрарăмсенчен пӳрт тулли вĕт-шак ачасемпе тертленсе пурăнакан салтак арăмĕ Кулинене, вĕсемсĕр пуҫне тата виҫ-тăватă ҫынна кĕртрĕҫ. Тарассен куккăшне, Сар Мируна, председатель тума килĕшрĕҫ.

Пуху автансем иккĕмĕш хут авăтсан тин пĕтрĕ, анчах комитета суйланисене хуларан килнĕ ҫын пуху хыҫҫăн та киле яман-ха, ĕҫе мĕнрен тытăнасси, малашне мĕн тăвасси ҫинчен калаҫса татăлма хăварнă. Ирччене ларнă вара унта вĕсем: пуян таврашĕсенчен патшалăх валли камран миҫе пăт тырă тытса илмеллине, мĕн чухлĕ укҫа тӳлеттермеллине, хăшинне мĕнле ытлашши выльăхĕсене, ҫурт-йĕрĕсене чухăнсене илсе памаллине палăртнă.

Кун çинчен Тарас тепĕр кунне пĕлчĕ. Акă мĕнле пулчĕ вăл. Куккăшĕ вĕсем патне ирхине ирех пычĕ те:

— Тарас, манăн сана хамăн писарь тăвас шухăш пур, килĕшетĕн-и?— терĕ.

— Мĕнле писарь?— тĕлĕнчĕ Тарас.

— Секретарь ара. Чухăнсен комитечĕн секретарĕ, пурне те çырса пыраканни. Шалу пулать сана уншăн, уйăхне пĕр пăт çăнăх паратпăр.

— Темле-çке...— иккĕленчĕ Тарас.

— Темле мар, çаплах!— çиленнĕ пек пулсах туйипе урайне шаккаса илчĕ куккăшĕ.— Ан кутăнланса тăр! Пĕлетĕн-и, комитетра пирĕн секретарь пулма пултаракан пĕр çын та çук. Анчах çырмалли нумай пулать. Кам патне кайса тархаслас-ха манăн? Эс — чухăн ачи, хутла лайăх пĕлетĕн. Акă, çак ĕнерхи протокола халех тепĕр хут çине куçарса çырмалла. Лар та — çыр!

Çапла, кĕтмен-туман çĕртенех, Тарас ялти комбед секретарĕ пулса тăчĕ. Вара малтанхи протокола çырнă чухнех пуянсене малашне мĕн тери хĕссе лартасси çинчен пĕлчĕ...

Ой, мĕн тери вĕри çанталăк пуçланса кайрĕ ялта комбед туса хунă хыççăн! Вăрçăринчен те кая мар çав!

Таçтан-çке, пуянсем хăйсемпе мĕн пулассине пĕтĕмпех пĕлнĕ. Чухăнсен пуххи пулнă каçах вĕсем хăйсен тырри-пуллине, хаклăрах япалисене, укçа-тенкине питĕ тĕплĕн, никам шыраса тупмалла мар пытарма, май килнĕ таран тĕрлĕ çĕрелле ăсатма тытăннă.

— Пĕр пĕрчĕ тырă та, пĕр пус укçа та памастпăр кĕлмĕçсене!— тенĕ вĕсем...

Кулăшла япаласем те пулса иртрĕç. Мăнттай Иванĕ тенĕ арман хуçи, пурлăхне çăлас тесе, тепĕр куннех хăйĕн хăрах куçне шур илнĕ тăмсайрах хĕрне мунча пек пӳртре пĕр-пĕччен пурăнакан ватă урçана, Энтти Микулине качча пама тытăннă, Совета пырса: «Кĕрĕве пахчари пӳрте, кĕлете, тимĕр витнĕ шур лаççа, çӳрен лашапа ула ĕнене, виçĕ сурăха, ик сыснана халалласа паратăп», тесе евит тунă.

Ахăлтатсах кулчĕç ял çыннисем:

— Юмахри пекех, пĕр кун хушшинчех пуйса кайрĕ пирĕн Энтти! Акă ăçта вăл телей!..

Пуян Лявасен кĕрӳшĕ Мамун та пĕр лашипе ĕнине хăйне хирĕç пурăнакан Макар арăмĕ патне çавăтса каçнă:

— Совет влаçĕ чухăнсене пулăшма хушать пулсан, хам ирĕкпе, ыр кăмăлпа паратăп!

Ытти хăшпĕр пуянсем те çавăн кек чылай тукаланă, хăйсен пурлăхне, выльăх-чĕрлĕхне чухăнсене «валеçсе» пама тытăннă. Паллах, çакă вăл чееленни кăна пулнă. Ҫайран, комбедсен вăхăчĕ иртсен, çав «ырă кăмăлпа» панă пурлăха пĕтĕмпех каялла илнĕ, выльăхсене е япаласене тавăрса памасăр хирĕçсе тăнисенчен хăшпĕрисене хĕнесех илсе тухса кайнă. Энтти Микули те каллех ялти чи мĕскĕн урçа пулса юлнă: Мăнттай Иванĕ хăйĕн суккăр хĕрне те, лашипе ĕнине те ун патĕнчен çавăтса тухса кайнă, пуян хуçа çурт-йĕрĕсем те Энттишĕн телейлĕ тĕлĕк кăна пулса юлнă...

Анчах çакăн пек хăтланни те пулăшаймарĕ пуянсене. Чухăнсен комитечĕ вĕсене хĕрхенсе тăмарĕ, пытарма ĕлкĕрнĕ тыррисене те, выльăхĕсене те, тĕрлĕ хаклă япаласене те нумай тупса илсе тухрĕ, укçан та сахал мар тӳлеттерчĕ. Тарăхса çурăлса каяс патнех çитрĕç пуянсем, комбед членĕсем хăйсем патне пырса кĕрсенех вĕсене çурса тăкма хатĕр пулчĕç, анчах нимех те тăваймарĕç. Пĕр Мăнттай Иванĕн аслă ывăлĕ çеç, комбед председателĕ Сар Мирун вĕсен пахчари улмуççисем айĕнче пысăк пусă алтса пытарнă тыррине тупсан, ун çинелле пуртăпа ыткăнчĕ. Ҫассах пăрахатчĕ пулĕ, юрать-ха Тарас çакна вăхăтра асăрхаса, унăн пуртă тытнă аллине каялла пăрса лартрĕ. Мăнттай ывăлне вара çав кунах вулăса ăсатрĕç...

Паллах ĕнтĕ, ялта яланах пуç пулса, пурне те хăратса пурăнма хăнăхнă кулаксем хăйсене çакăн пек «сиплленĕшĕн» ниепле те каçарма пултарайман. Вĕсем чухăнсен комитетĕнче ĕçлекенсене кăна мар, хăйсене хирĕç пыракан ахаль çынсене те пур майсемпе те тавăрма тăрăшнă.

Тем те хăтланчĕç çав вĕсем!..

Ҫулаксен тыррине пирвайхи хут пухса хулана тиесе ярсан ик-виç кунтанах, тĕттĕм пулсан, Тарас куккăшĕн çемйи каçхи апат çисе ларнă чух тахăшĕ чӳречерен пăшалпа пенĕ. Бандитсем комбед председательне тĕлленĕ ĕнтĕ, анчах перекеннин алли чĕтренĕ курăнать, пульли Мируна хăйне мар, унпа юнашар ларакан ултă çулхи ывăлне пырса тивнĕ. Ача сак çинчен палтах йăванса кайнă, ашшĕпе амăшĕ ăна вилчĕ пулĕ, тенĕ, анчах вăл вилмен иккен—пуля сулахай хулпуççине çеç шăтарса кайнă.

Суранне ҫавӑнтах ҫыхса лартса, ҫав каҫах хулари больницӑна илсе кайса ҫеҫ ҫӑлкаласа хӑварнӑ ачана.

Темиҫе кунтанах комитетӑн тепӗр членне, Ҫӗтӗк Яккӑва тӗттӗм урамра хупӑрласа илсе хӗнесе тӑкнӑ. Уйӑх ытла чирлесе выртрӗ вӑл.

Шӑп ҫав вӑхӑтра яла Питӗрти рабочисем пырса ҫитрӗҫ, каллех кашни каҫ тенӗ пекех пухусем пулчӗҫ. Ҫав пухусенче кулаксен сассисем питех илтӗнеймерӗҫ вара— Совет йӗркисене хирӗҫ уҫҫӑнах тӑма шикленчӗҫ пулмалла...

Анчах каярахпа, ҫӗршывра граждан вӑрҫи пуҫланса кайсан, унтан та кунтан тӑшмансем тапӑнни ҫинчен хыпарсем киле пуҫласан, вӗсем каллех хӑюлланма тытӑнчӗҫ.

Пуринчен ытларах Ҫӗпӗр енчен темле Колчак адмирал питӗ пысӑк ҫарпа ҫӗмӗрсе килни ҫинчен калаҫатчӗҫ. Ялти ҫамрӑксене «салтак вӑйӑи» вӗрентме пуҫларӗҫ, аслӑраххисене кӑшт вӗрентсенех фронта ӑсатрӗҫ.

1919 ҫулхи ҫуркунне ялти ытти ҫамрӑксемпе пӗрле Тарас та Хӗрлӗ Ҫара тухса кайрӗ. Малтанах вӑл Ёпхӳ хули патӗнче Колчак ҫарӗсемпе ҫапӑҫрӗ, вӗсене Ҫӗпӗрелле хӑваланӑ ҫӗрте пулчӗ, унта аманса пӗр хушӑ госпитальте выртнӑ хыҫҫӑн Деникинпа Врангель генералсен ҫарӗсемпе ҫапӑҫма тиврӗ ӑна, Перекопа илнӗ чух Сиваш шывӗнче путассинчен аран хӑтӑлса юлчӗ. Унтан вӑл Инҫетри Хӗвелтухӑҫне, Япони интервенчӗсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ ҫӗре лекрӗ. Унта чи юлашки ҫапӑҫусенчен пӗринче хытӑ аманнипе ҫур ҫул ытла госпитальте выртрӗ. Вӑрҫӑ пӗтсен тин киле ҫитрӗ вӑл...

Халӗ ӗнтӗ пӗтӗм пурнӑҫа йӗркене кӗртме тытӑнмалла.

Авланас та пулать пулӗ, ҫемьеллӗ пулма та вӑхӑт ӗнтӗ. Амӑшӗн сывлӑхӗ те начар, нумаях ӗҫлеме пултараймӗ, хуҫалӑха тытса пыраяс ҫук...

Варука курасчӗ... Мӗнле-ши вӑл? Манман-ши?

... Тарас вӗсен тӗлнелле кайса курма шут турӗ. Шӑп ҫак вӑхӑтра урамран Микуль хашкаса чупса кӗчӗ.

— Пичче, сана валли ҫыру илсе килтӗм эпӗ!

— Мӗнле ҫыру?

— Курӑн унта... Акӑ...

Микуль Тараса лутӑрканса пӗтнӗ хут татки тыттарчӗ. Пӳртре самаях тӗттӗмленнӗ пирки ку тӗлӗнмелле ҫырӑва вулама Тарас чӳрече патнерех пычӗ. Хут ҫине чалӑштӗлӗш саспаллисемпе темиҫе сӑмах ҫеҫ ҫырнӑ иккен:

«Ман сана каламаллисем нумай. Кĕҫĕр пирĕн тĕле пыр. Варук».

Тарас ҫемҫен кулса илчĕ те алăк патĕнче ура салтса ларакан Микуль еннелле ҫаврăнчĕ:

— Кам пачĕ сана ку хута?

— Хăех... Эс пĕлместĕн пуль-ха, пичче, эс вăрҫăра пулнă чухне вăл манран пĕрмаях ыйтатчĕ: пиччу ҫыру ямарĕ-и, мĕн ҫырать, хăҫан килет, тетчĕ. Вăл сана качча тухасшăн пулмалла.

— Ытлашши калаҫатăн!— чарчĕ ăна Тарас.— Ав, анне валли шыв вĕрет те, ҫитер.

— Мĕн пулать вара апла каланăшăн? — кăмăлсăр пулчĕ Микуль.— Эп анчах мар, пурте ҫапла калаҫҫĕ. Пĕрре анне те игларĕ...

— Ну, юрĕ, юрĕ. Ту мĕн хушнине.

Тарас ҫийĕнчи тумне тӳрлетсе пиҫиххине хытăрах ҫыхрĕ те килĕнчен тухрĕ.

## 4. ҪАШҪĂРСЕМ

Энтрияльне сарлака та тарăн ҫырма икке уйăрать. Ҫав ҫырман сулахай енче, ял вĕҫнерех, икĕ хутлă пысăк ҫурт сарăлса ларать. Аялти хутне кирпĕчрен тунă, ҫӳлтине — ҫын ытамне кĕмен шултра хыр пĕренесенчен, хӳмесене варринчен ҫурнă юман пĕренесемпе тытнă, вĕсем ҫӳлĕ, йăпăр-япăрах никам та сиксе каҫас ҫук. Иртенҫӳренсем яланах тĕлĕнсе, темшĕн кăшт хăранă пекрех пăхса иртеҫҫĕ ҫак «хула пек» кил-ҫурт ҫине.

— Лява таврашсен ку...

Ĕмĕртен пуян пурăннă ҫак килĕн хуҫисем, уезчĕпех пĕлсе тăнă вĕсене. Ляви хăй темиҫе арман тытнă, чăпта ҫаптарнă, ҫăмарта, панулми, ҫăм, ҫĕтĕк-ҫатăк кипке — темĕн те пĕр пухнă, килĕнче унăн пысăк лавкка пулнă. Ватă ҫынсем каланă тăрăх, вăл темле сасартăк, тĕлĕнмелле хăвăрт пуйнă: ҫамрăк чухне ялтан тухса кайса пĕр ҫулталăк ҫурă таҫта аякра ҫӳренĕ те, киле таврăнсанах лавкка уҫнă. Ҫавăнпа та ун пирки халăх хушшинче тĕрлĕ сăмахсем ҫӳренĕ. Пĕрисем ҫак Лява мăн ҫул ҫинчи хурахсемпе пĕрле почтăна ҫаратса пуйнă, тенĕ, теприсем вăл тахăш хулара пĕр ватă купца патĕнче тарҫăра пурăнса унăн ҫамрăк майрипе явăҫса кайнă та, лешĕ ăна укҫа нумай тыттарса янă, тенĕ. Те тĕрĕс пулнă ҫав сăмахсем, те суя — ăна никам та пĕлмен, анчах та

Лява кĕске вăхăтрах лавкка уçмалăх укçа ĕçлесе илме пултарайманни пуриншĕн те паллă пулнă.

Этем майсăр хытă та чеескер, Лява кунтан-кун пуйса пынă. Ытларах та ытларах пуйма тăрăшса вăл мĕн тĕрлĕ ултавлă ĕçсем туни, çынсене мĕн чухлĕ тарăхтарни, макăртни çинчен халăх хушшинче çав тери хăрушă сăмахсем çӳренĕ.

— Çын мар çав, чăн кашкăр, тискер кайăк!..

Ляван виçĕ ывăл пулнă: асли—Çемен, вăталăхĕ—Уртем, кĕçĕнни — Матви. Вĕсем пурте упа çурисем пекех тĕреклĕ ӳснĕ, кăмăлĕсемпе вара ашшĕ евĕрлех, кашкăрласкерсем пулнă. Ашшĕ хăех вĕрентсе пынă ĕнтĕ вĕсене çавăн пек пулма.

Ывăлĕсене Лява çине тăрсах хутла вĕрентнĕ, мĕншĕн тесен хăй вулама та, çырма та пĕлменни пурнăçра ăна питĕ тарăхтарнă, хутла пĕлменнипе пĕрре кăна мар улталанса шар курнă вăл. Ачисем кăшт ураланма пуçласанах, вĕсене суту-илӳ ĕçне хăнăхтарма тытăннă. Ӳссе çитсен вара вĕсем Атăл тăрăх тăвалла — Чулхулапа Рыбинска çити, анаталла — Аçтăрхана çити, чугун çулпа Мускавпа Питĕр таран çӳреме пуçланă. Темиçе пар лаша, карта тулли выльăх, кайăк-кĕшĕк усранă Лява, виçтăват тарçă ĕçлесе пурăннă ун патĕнче. Энтрияль çыннисем çеç мар, таврари ялсем те ăна курсан иçетренех пуç тайса иртнĕ. Уездри пуçлăхсем уншăн çывăх тăвансем пекех пулнă, тем тусан та, Ляванa хирĕç пыман, ун патĕнче, кирек те хăçан пырсан та, çăвартан каялла тухичченех ĕçсе çинĕ...

Çав тери пуйса кайсан, Лява «кĕçех чăваш патши пулатăп», теме пуçланă, дворян ятне сутăн илме тăрăшнă. Государство Думине лекесси çинчен ĕмĕтленсе пурăннă. Анчах ĕмĕчĕ çитеймен унăн: тĕнче вăрçи тухиччен шăп пĕр çулталăк малтан вилсе кайнă. Питĕ хăвăрт пуçтарăннă вăл: каçхине таçти ярмăрккаран таврăннă та ирччен хытса та выртнă. Ялти халап тăрăх, Лява çав ярмăрккара ватă пуçĕпех темле вырăс улшуçисен ăйăрне вăрланă пулнă. Лешсем, çакна сиссе, ăна хăваласа çитнĕ, питĕ шутсăр хытă хĕненĕ, юлашкинчен, ăнран кайнăскере, хыçалтан вăрăм хулăпа йăкăрланă та хăйĕн тăрантасĕ çине пăрахса янă.

Ăна никам та хĕрхенмен, мĕншĕн тесен хăй пурнăçĕнче вăл кашнинех мĕнпе те пулин кӳрентернĕ.

— Çавă чух ăна, эсреле ытла та тăранма пĕлейместчĕ-ха, тинех шалчи тулчĕ явăлăн!— тенĕ нумайăшĕсем, çăмăллăн сывласа илсе.

Анчах «улми улмуççинчен инçе ӳкмест», халăха çаратма ашшĕнчен пит ăста вĕренсе юлса, унăн ывăлĕсем çав çулпах пынă, темĕн тĕрлĕ май та тупса, улталаса, çынсене макăртса, пуйнăçемĕн пуйнă, пĕр тенкĕрен çийĕнчех вунă тенкĕ тунă. Кĕçех аслă ывăлĕ — Çемен Лявонч — ял старости пулса тăнă, ăна пулах кĕçĕннисем, Уртемпе Матви, вăрçа каяссинчен укçапа хăтăлнă, вара хĕрарăмсемпе пур вată та вĕтĕ çеç тăрса юлнă ялта хăйсене чăн патшасем пекех тыткалама пуçланă. Пурте вĕсен аллинче пулнă-çке-ха! Камран хăрас?..

Старостăна кĕнĕ Çемен, ыттисенчен ытларах ĕçме юратаканскер, кашни ӳсĕрĕлмессеренех урам тăрăх кăкрине чышкипе çапса кăшкăрса çӳренĕ:

— Я хто-о?.. Ял патши-и!.. Çыхланăр-ха эсир манпа! Вĕлере-еп! Тыттарса яра-ап! Тĕрмере çĕрте-еп!..

Мĕн чухлĕ куççулĕ тăктарнă пуль вĕсем тăлăх арăмсене, мĕн чухлĕ ĕçлеттернĕ пуль... Çур ял çĕрĕ вĕсен аллинче пулнă, обозĕ-обозĕпе тырă ăсатнă. Нумай пуйтарнă çав вĕсене вăрçă!

Февральти революцие вĕсем часах ăнланса илнĕ; Матвийĕ кăкри çине хĕрлĕ бантик çаксах кайнă вулăсри «хресченсен пуххине», мĕншĕн тесен Лява таврашĕ пеккисен пурнăçĕ ун чухне нимĕн чухлĕ те улшăнман. Çав пухура та кулаксемпе вĕсене майлисем çеç пулнă.

Анчах та Октябрь тăвăлĕ хытă силленĕ вара Лявасене. Чăнах, вĕсем нумай япала пытарма ĕлкĕрнĕ, çапах та комбед вăхăтĕнче вĕсенне çĕр лава яхăн тырă, темĕн чухлĕ хаклă япаласем тиесе тухнă, икĕ кĕлет турттарса кайнă, выльăх-чĕрлĕхсене чухăнсене салатса панă, çиелтен пысăк контрибуци хурса тӳлеттернĕ. Кашкăрсем пекех шатăртаттарнă вĕсем хăйсен шăлĕсене, анчах нимĕн те тăвайман, çилле ирĕксĕрех шăнарма тивнĕ...

Тепрер çултан, Кăрмăш тăрăхĕнче кулакла-эсерла пăлхав тапрансан, Лява ывăлĕсем кашни самантрах обрезсем тытса сиксе тухма хатĕр тăнă, пупа чиркӳре амвол çинчен Совета хирĕçле проповедьсем калаттарнă, хăйсем тарăхса пурăннă çынсене уççăнах юнама тытăннă, анчах ĕмĕчĕ каллех татăлнă вĕсен: пăлхав нумая пыман, ăна хытă путарса лартнă. Каллех шăла çыртса пусăрăнма тӳр килнĕ кусен.

Унтан вĕсен сасартăк инкек çине синкек пырса тухнă. Асли, Çеменĕ, пĕрре шартлама сивĕре таçти тăванĕсем патĕнчен питĕ ӳсĕр таврăннă та, Кашкăр варĕ тенĕ çырмари сулăнкăра çуна çинчен ӳксе юлса, ирччен шăнса хытнă.

Çав хĕлтех Матвийĕ те пĕтнĕ. Вăл, юнашар ялти кулак таврашĕсемпе пĕрле, продотряд хулари рабочисем валли илсе каякан тырă обозне туртса илме тапăннă. Продотрядчиксемпе кулаксем хушшинче самаях вăйлă перкелешӳ пуçланса кайнă. Обоза тапăнакансенчен виççĕшне вĕлернĕ, вĕсенчен пĕри — Лява Матвийĕ пулнă.

— Йытта — йытă вилĕмĕ,— тенĕ çеç ун пирки ял çыннисем. Ăна пытарма та никам та кайман.

Çапла Пуян Ляван виçĕ ывăлĕнчен вăталăхĕ — Уртем çеç тăрса юлнă. Вăл вара чăн-чăн кашкăрлах пурăнма тытăннă, никампа та хутшăнман, калаçман, анчах унăн чĕринче чи хаяр тархă вĕресе тăнă. Вăл çаплах-ха Советсем пĕтессе кĕтнĕ.

Вăхăт шунă; уйăх хыççăн уйăх, унтан çулталăксем те иртнĕ. Советсем пĕтмен, республика хăйĕн тăшманĕсене аякран аякка хăваласа пынă, унтан пуçĕпех аркатса тăкнă. Лява Уртемĕпе унăн тăванĕсене ку хытă кӳрентернĕ, анчах 1921 çулта хăрушла выçлăх çитсе пуссан, чунĕсем каллех çĕкленнĕ вĕсен. Сӳнме пуçланă шанчăк тепĕр хут çунатланса хăпарнă:

— Пурпĕр выçса вилсе пĕтеççĕ...

Çур енне, хирсенче çулсем хуралса шывланма пуçланă вăхăтра, Уртем патне кĕтмен çĕртен унăн арăмĕн шăлнĕ Василий Разумов пырса тухнă. Вăл этем тĕнче вăрçи вăхăтĕнче прапорщик пулнă, февральти революци хыççăн кулаксен çĕрĕсемпе чиркӳ çĕрĕсене тытса илнĕ хресченсене персе вĕлерсе çӳренĕ. Октябрь хыççăн ăна пурте çухалнă тесе шутланă пулнă, анчах вăл бандитсен шайккипе çыхăнса тĕрлĕ çĕрте çаратса çӳренĕ иккен, хăш чух вĕсем поездсене те тапăннă, пассажирсене пăшалсемпе хăратса ним юлмиччен çарамаслантарнă. Юлашкинчен, пĕр çар складне çаратма тăрсан, вĕсем пурте тенĕ пекех тĕрмене лекнĕ. Чылай ларнă унта çак прапорщик пулнă вăрă. Анчах халĕ, хăйне пĕр хуларан тепĕр хулана илсе кайнă чух, конвойран тарнă та йыснăшĕсем патне çитсе ӳкнĕ.

Пĕр четвĕрт сăмакунпа çур витре кăрчама кутĕнче вĕсем тахçанчченех çын илтмелле мар мăкăртатса лар-

чĕç. Иртнĕ вăхăтсене шеллесе аса илчĕç, хальхи çинчен шăл витĕр калаçрĕç... Иртни çинчен калаçнă чух чылаях ӳсĕрĕлнĕ офицер шăнса пăсăлнă сассипе юрласа ячĕ:

— Эх, на плечах погоны,
На грудях кресты...

Уртем ăна малалла юрлама памарĕ, чарса лартрĕ, вара вăл сиксе тăчĕ те кăкрине çапса кăшкăрма тапратрĕ:

— Василий Разумова пĕтертĕмĕр, терĕç пуль вĕсем! Нет, шалишь, брат, ăна часах пĕтереймĕн!.. Вăл чĕрĕ-ха, пурăнать, так вашу эдак! Кăтартĕ-ха вăл хăйне! Таваратăп, пуриншĕн те таваратăп!.. Хама чинсăр хăварнăшăн та, тĕрмере хупса усранăшăн та, аттен пĕтĕм пурлăхне туртса илнĕшĕн те... Пирĕн пеккисем нумай-ха Раççейре. Эпир пухăнатпăрах, пухăнса никам çĕнейми çар тăватпăр!.. Часах акă вĕсене пурне те касма, çакма, вĕлерме, çунтарма пуçлатпăр... Манăн хамăн çар пулать... Полк! Пуç касакансен, ятарласа коммунистсене вĕлерме вĕреннисен полкĕ! А эп — полковник пулатăп... Анчах та эп халь Разумов мар, эп халь — Махорка...

Прапорщик тата темле ăнланмалла мар сăмахсем кăшкăрса, çил арманĕ пек хăлаçланчĕ, пĕр енчен тепĕр енне сулăнма пуçларĕ те — тӳнчĕ. Уртемпе арăмĕ ăна аллипе уринчен тытса алăк патĕнчи сак çине кайса пăрахрĕç.

... Махорка полковник пулаймарĕ, анчах та çĕршыв типе пуçласан, Уртемпе унăн кĕрӳшĕ Мамун кăтартнипе унта-кунта çӳресе, хăйне тавра пĕр ушкăн вăрă-хурах пухрĕ. Вара вăл Сăр вăрманĕнче, этем çӳремен вырăнта «штаб» туса, тавраri халăха террорлама тытăнчĕ. Малтан иртен-çӳренсене çаратрĕ, выльăхсене тыта-тыта пусрĕ, унтан унăн «молодчикĕсем» кашни каçах таврари ялсене пыра-пыра тапăнма тытăнчĕç. Çыхăнусем кулленех вăйланса пычĕç вĕсен: Советсем çине шăл хăйракансем кашни ялтах пур-мĕн... Çаратасса та çавсем кăтартса панă тăрăх çаратнă Махорка банди: пуринчен ытларах коммунистсене, Советра ĕçлекенсене, халăха çутта кăларасшăн пур вăя хурса ĕçлекен учительсене...

Пĕр уйăх хушшинче унран пĕтĕм тавралăх хăракан пулса çитнĕ. Бандăна хирĕç янă милици отрячĕ те ним те тăвайман, вĕсенчен темиçе çыннине бандитсем персе пăрахнă, ыгтисем аран хăтăлнă... Пĕринче çывăхри ялсем

облава тума тытăннă-мĕн, анчах бандитсем пĕр-икĕ граната пăрахсанах, хĕçпăшалсăр халăх пăрça пекех саланнă.

Нумай кĕлетсем пушатрĕ Махорка, темĕн чухлĕ лаша вăрласа тарса, тĕрлĕ çĕрелле ăсатрĕ, нумай выльăх пусса çирĕ, иртен-çӳренсене çаратрĕ, хĕрарăмсене пусмăрларĕ. Анчах ялсенче нумайăшĕ Махоркăран шар курса, вĕри куççуль юхтарни çине теприсем сивĕ тарăхупа пăхса тăчĕç.

— Çапла кирлĕ-ха сире, кĕлмĕçсене... Чимĕр акă, ку çеç те мар пулĕ-ха!

Çапах та, вĕсем нумаях савăнса пурăнаймарĕç. Милицисен отрячĕ тарса таврăннă хыççăн тепĕр вунă кунтан, бандăна тытмашкăн уездран лайăх хĕçпăшалланнă рота янă. Вара çав рота, пĕр-ик кун хушши вăрман тăрăх çӳресе банда йăви тĕлнех пырса тухнă та ăна пуçĕпех аркатнă. Бандăн пысăк пайне патĕнчех вĕлернĕ, нумайăшне çавăрса илнĕ, «штабран» сутма ăсатайман темĕн тĕрлĕ пурлăх тупса турттарса кайнă.

Анчах Махоркине хăйне тытайман...

* * *

... Çурçĕр çитеспе çенĕх алăкне хуллен кăна шаккани илтĕнчĕ. Нумаях та пулмасть çывăрма выртнă Лява Уртемĕ минтер çинчен пуçне çĕклерĕ те пĕр хушă сывламан пек пулса итлерĕ. Алăкран каллех шăкăртаттарчĕç.

Уртем çенĕхелле шăппăн утса тухрĕ те хуллен кăна ыйтрĕ:

— Кам унта?

— Эпĕ, уç-ха часрах,— илтĕнчĕ алăк хыçĕнчен.

— Кам эсĕ?

— Махорка çынни...

— Ятна кала?

— Пăшатан... Ниушлĕ паллаймастăн, Уртем Лявонч?

Уртем, чĕтреме тытăннă аллисемпе алăка уçса, кĕтмен хăнана çенĕхе кĕртрĕ. Сентре çинчен шăрпăк тупса çутса пăхрĕ. Ку чăнах та Пăшатан иккен — Махорка помощникĕ. Çара пуçăн, хура çӳçĕ арпашса кайнă, кĕпи тăр лапра, сылтăм пĕççи çинче шалаварĕ тăршшипех çурăлса тухнă.

— Ма килтĕн?— кăмăлсăр ыйтрĕ Уртем, тем ырă маррине туйса.

— Махорка ячĕ...

— Атя, кĕр эппин пӳрте.

Пӳрте кĕрсен Уртем лампа çутрĕ те, сĕтел çине чавсаланса ларса, Махорка çынни çине каллех сиввĕн, шăтарасла пăхрĕ. Тĕрĕссипе каласан, йăлăхтара пуçларĕç ăна бандитсем: чăрмавĕ нумай, усси сахал.

— Мĕн ĕçпе килтĕн?

— Пĕтрĕмĕр ача эпир, Уртем Лявонч,— куçне мăчлаттарса кала пуçларĕ Пăшатан.— Кĕтмен çĕртенех аркатса тăкрĕç...

— Епле апла тата?— вăштах сикрĕ Уртем.

— Çаплах вăт... Аркатрĕç. Виçĕмкун каçхине эпир виççĕн — Махорка, эпĕ тата Чалăшкуç Мăн Хатнара тухса кайсаттăмăр. Унта Хветле ятлă пĕр хусах арăм пур. Ну ĕнтĕ, чиперех çитрĕмĕр, ĕçрĕмĕр, çирĕмĕр. Хветле пире валли тата ик арăм илсе пычĕ. Пит виççолăй çĕр каçрăмăр. Ун пек, кун пек пуласси асра та çукчĕ.

Пăшатан чарăнчĕ те пырне тытрĕ.

— Итле-ха, Уртем Лявонч, турă пул — пĕр стакан пар, шутсăр ăш çунать...

Уртем чăлантан пуçланă пулштухпа чей стаканĕ тата хăпарту татăкĕ илсе тухрĕ.

— Ĕç.

Пăшатан пĕр стакан туллиех ярса ĕçрĕ те малалла калама тытăнчĕ.

— Тул çутăлас умĕн лашасем çине утлантăмăр та каялла вĕçтертĕмĕр. Вăрмана çитсен, ерипен юрлакаласа уттартăмăр. Хамăр пата çитесси нумаях та юлманччĕ — сасартăк пăшал сассисем илтĕнме пуçларĕç. Чухласа та илме çук — таçта переççĕ... Малта та, кайра та, пур енче те... Манпа юнашар пыракан Махорка ним шутласа тăмасăрах чĕлпĕрне туртрĕ те йăăрне пĕррех малалла сиктерчĕ. Эпир — ун хыççăн. Пĕр уçланкăна ыткăнса тухрăмăр кăна — тăруках йывăççем хушшинчен пирĕн еннелле ручной пулемет шатăртаттарма тапратрĕ, тĕмесен хыçĕпе салтаксем чупни курăнчĕ. Махорка йăăра тăрук чарса лартса ик ура çине тăратрĕ те каялла çаврăнса пĕрĕхтерчĕ. Эпир те ун хыççăн вĕçтертĕмĕр. Ну, тартăмăр та вара... Пульăсем хăлха çуммипе вжи! вжи-и!.. туса иртеççĕ, кĕç лекет, кĕç вилетпĕр, тесе пыратпăр. Темле майпа, ни мана, ни Чалăшкуçа лекмерĕ, анчах та Махоркăна сулахай уринчен хытах лекнĕ иккен... Çапах та — çирĕп вĕт!— пĕр-ик çухрăм ытла ларса пынă вăл, унтан тин, юн нумай юхнипе халран кайма пуçласа,

пĕр шĕшкĕ тĕми ăшне кĕрсе ӳкрĕ. Айăрĕ малалла тапса сикрĕ. Эпир, хамăрăн вĕриленсе кайнă лашасене аран чаркаласа, ун патне чупса пытăмăр. Вăл вилнĕ çын тĕслех пулса кайнă, аран сывласа выртать...

Пăшатан типсе ларнă пырне йĕпетме тата тепĕр çур стакан тултарса ĕçрĕ.

— Часрах кĕпе аркине çурса, çакăн суранне çыхкаларăмăр та, аллисемпе урисенчен тытса, чăтлăх ăшнелле çĕклесе кĕрсе кайрăмăр...

— Унтан мĕн пулчĕ?

— Нумай утрăмăр... Пăшал сассисем çаплах чарăнмаççĕ. Чун юлмарĕ, пирĕн пата пырса тухассăнах туйăнчĕ. Ну, тупнах пулсан, чĕррĕнех парăнмастăмăр çав пурпĕрех... Унтан ик талăка яхăн ниçта хускалмасăр выртрăмăр чăтлăхра. Хветле патĕнчен Чалăшкуç виç пулштух чиксе тухнă-мĕн те, Махоркăна çавăнпа çеç усрарăмăр. Темиçе çăвар сыпать те пĕлми пулса çывăрать, сыпать те çывăрать. Ыйхă витĕр аташать хăй, тем те каласа вăрçать, командăсем парать. Унтан вара...

Пăшатан куçне час-час мĕлтлеттерсе илчĕ.

— Хам та хĕрхентĕм...

— Мĕн апла? Вилчĕ-и?

— Çук, вилмен... Ĕнер ирпе юлашки эрехе ĕçрĕ те урсах кайрĕ. Пирпĕр вилетĕп, халех хĕрарăм тупса килсе парăр мана, хĕрарăмпа ачашланса вилем, тет. Эпир тытăнса тăтăмăр, а вăл маузерне* кăларса юнама тапратрĕ. Халех хĕрарăм илсе килĕр, унсăрăн сире те, хама та вĕлеретĕп, тет... Қарăмăр вара шырама, мĕн тăвас тетĕн?

Куçхарши айĕпе сиввĕн пăхса ларакан Уртемĕн сăнĕ татах тĕксĕмленчĕ. Пăшатан пĕр самантлăха чарăнчĕ те каллех ĕçрĕ.

— Чутай çулĕ çине тухрăмăр та, пĕр çухрăм та çурă пек кайсан, канав хĕррипе пĕр хĕрача ĕне çитерсе çӳренине куртăмăр. Так, пĕчĕкскер, çап-çаврака питлĕ, тем тесен те, пĕр вунултă çултан ытла мар. Çатан карта çумне тайăннă та хуллен кăна юрласа тăрать... Пире курсан, картах сикрĕ çак. Патнерех пырсан шуралсах кайрĕ, тути хĕррисем сикме пуçларĕç, куçне чарса пăрахрĕ. Сисрĕ пулас, мĕскĕн. Хамăн та чĕре темле сăрлатса кайрĕ... Чăннипех калатăп, хĕрхентĕм. Чалăшкуç мĕн кала-

* Пысăк револьвер.

маллине малтанах шухăшласа хунă пулмалла: пынăпыман кăшкăрса пăрахрĕ ун çине. «Кам çитерме хушрĕ сана кунта?» — «Юрамасть-и вара?» — чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ хĕрача, пирĕн çине макăрас пек пăхса.— «Юрамасть, конешнă! Атя-ха лесник патне, унта калаçăпăр!» Хĕрачана çавăнтах хулĕнчен тытса карт! туртрĕ те — канав урлă сиктерчĕ. Лешĕ макăрса ячĕ. «Хăлха чикки çиес килмест пулсан — шăп пул! Атту халех тыттаратăп!» — терĕ ăна Чалăшкуç шăл витĕр. Хулĕнчен çирĕпрех тытрĕ те, ни вилĕ, ни чĕрĕ хĕрачана вăрман ăшнелле илсе кĕртсе, йывăç тĕмисем хушшипе хăвăрт уттарчĕ. Эп хыçалтан пытăм. Тыткăна лекнĕ хĕр чĕлхесĕр пекех пулчĕ, хушăран çеç нăшăклатса илчĕ...

Çитрĕмĕр Махорка патне: пĕр урине теприн çине хунă та, кашкăр пек пăхса, чĕлĕм мăкăрлантарса, хăяккăн выртать. Чалăшкуç хĕре ун еннелле тĕксе ячĕ. Хĕр темрен такăнчĕ те ӳкрĕ.

— Твой приказ сполнял!— терĕ Чалăшкуç, хĕрача еннелле куç хĕссе илсе. Махорка ним те чĕнмерĕ, пирĕн çине пăхса, пуçĕпе аяккалла сулчĕ çеç. Эпир ăнлантăмăр та вăрманалла кĕрсе кайрăмăр. Пĕр хушă шăпах пулчĕ... Унтан хĕрача сасартăк икĕ хутчен кăшкăрса ячĕ, самантранах пăшал сасси кĕрслетрĕ. Эпир часрах чупса тухрăмăр... Пĕчĕк çеç уçланкă варринче хайхи хĕрача хăрăлтатса, халь çеç пуснă чĕпĕ пек тапкаланса выртать, унăн пичĕ тăрăх, çăварĕнчен çăра юн юхать. Махорка ун патнелле çурăмĕпе çаврăнса тăнă, хăрах аллипе питне тытнă, тепĕр аллинче — йăсăрланакан маузер. Эпир пырса тухнине илтсен, каялла çаврăнса пăхмасăрах, револьверĕпе малалла кăтартрĕ: «Айтăр». «Кунпа мĕн тумалла?» — ыйтрĕ Чалăшкуç. «Вырттăр, сволочь». Çапла каларĕ те вăрманалла уксакласа кĕрсе кайрĕ.

— Ма вĕлернĕ-ха ăна вăл? — ыйтмасăр чăтаймарĕ Уртем, хăйне валли те стакан тултарса.

— Парăнман курăнать лешĕ. Кĕрешнĕ чух питне çыртса татнă та, пӳрнипе куçĕнчен чикнĕ. Махоркăн куçĕ халь те çара какаях, тӳрленмест те пуль...

— Кайран ăçта кайрăр?

— Каç пуличчен вăрман хĕррине тухса выртрăмăр. Çĕрле Махорка кунта çитсе ӳкесшĕнччĕ, анчах, аманнă ури ытла ыратнипе, кивĕ утар пӳртне вырнаçмалла пулчĕ. Вара мана сан патна ячĕ. Патрон парса яма хушрĕ тата укçа... Кам пĕлет, тен, урăх çĕрелле тармалла пулать-и,

терĕ. Эс пĕркун килсе панă япаласене сутрăн пуль вĕт, Уртем Лявонч?

— Сутайман-ха.

— Эх, халь пирĕн тупра та нумайччĕ! Мĕн чухлĕ пуянлăхчĕ! Илсе кайрĕç пуль ĕнтĕ шуйттан отрячĕсем... Шутсăр хĕрхенмелле!

Уртем стакана пушатса лартрĕ.

— Апла иккен-ха сирĕн пурнăçсем...

— Çапларах çав.

— Ни унталла, ни кунталла эппин? Хăй мĕн тума шутлать-ха малашне?

— Парăнмастăп, тет. Çĕнĕрен вăй пухатăп та каллех çĕмĕрме пуçлатăп, тет. Анчах...— Пăшатан пуçне усрĕ.— Усси те пулать, тем... Эп хам та... пустуй çыхлантăм пулмалла. Хама мĕн чухлĕ суд тунине лармаллаччĕ те çур çултан тухаттăмччĕ... Халь каялла таврăнма та май çук ĕнтĕ...

— Но! Кун пек калаçас йăлана пăрахас пулать,— сасартăк сассине хăпартрĕ Уртем.— Хамăра шар кăтартса кӳрентернисене таварса пĕтермен-ха эпир! Чим, вăхăт килĕ...

— Мана никам та кӳрентермен. Эп хам...

— Çитĕ! — сĕтел çине çапса илчĕ Уртем.— Атя, вĕçтер каялла. Патрон мĕн чухлĕ кирлĕ?..

— Пĕр виççĕр штук.

— Укçа тата?

— Пĕр-ик мĕльюн.

— Çимелли илсе каймастăн-и?

— Вăл та кирлĕ...

Пурне те хатерлесе çитерсе çурăм хыçне кутамккаласа çаксан, Пăшатан пулштухри юлашки сăмакуна ярса ĕçрĕ те татах ларчĕ.

— Итле-ха, Уртем Лявонч,— терĕ вăл кăштах çыхланакан чĕлхепе.— Манăн каймалли инçе-ха, сахалтан та пĕр вун-вуник çухрăм пур. Пĕр-пĕр лаша тупса пулмасть-ши, э?

— Лаша? Мĕн тума?

— Лаша çав, утланса кайма... Наччас çитеттĕмччĕ эп унпа. Тата халĕ халăхĕ те усалланса кайрĕ, нисашто тытма пултараççĕ. Калама мантăм эп сана: халь кунта килнĕ чух та Мăнъял ыраш пуссинче иккĕн чупрĕç ман хыççăн. Волĕ-новолĕ ик хутчен персе хăвармалла пулчĕ... Åçта тупса утланас-ши?

Уртем пĕр вăхăт шухăша кайса тăчĕ. Унтан пуçĕпе урам еннелле кăтартрĕ:

— Çырма леш енче, уй хапхинчен анатарах, виççĕмĕш киле кĕрсе пăх-ха... Çавсен лаши килтех пулмалла, арăмĕ каç пулсан тин таçтан таврăнчĕ. Килхушшине кĕме анкарти енчен алăк пур унта. Анчах та асту, асăрханарах хăтлан. Тем пулсан — эп сана курман, илтмен, палламастăп. Хăвах пĕлетĕн...

— Ну, каларĕ тата!— терĕ хĕрсе кайнă Пăшатан, аллипе сулса.

— Махоркине кала: çанталăк лăпланиччен ан шавлатăр, ку яхăнта пурăнма хамăр патра та вырăн тупăпăр.

— Юрĕ.

## 5. ВАРУК

Тарас урам тăрăх тăвалла хуллен кăна шăхăркаласа утрĕ...

Киле таврăннă каçхи пекех, кĕçĕр те урамра питĕ шăп, ним сас-чĕв те çук. Çынсем каç пулнă-пулманах çывăрма кĕрсе выртнă курăнать. Тарас хурал пӳрчĕ тĕлĕпе иртнĕ чух пĕр хĕрарăм çухалса кайнă путеке хăваласа кайнине курчĕ çеç, урăх никам та тĕл пулмарĕ ăна.

«Мĕн калать-ши ĕнтĕ ку мана?» — шухăшласа пычĕ вăл Варук çинчен.

Варуксен килĕ — ял хĕрринчех, уничерен виççĕмĕш, лупашкаллăрах вырăнта ларать. Пӳрчĕ умĕнче пĕчĕкçеç сад, унта Варукăн ĕçчен ашшĕ-амăшĕ чие йывăççисем, акаци, сирень лартса тултарнă. Урам хапхи, хӳмисем, çурт-йĕрсем — пурте йĕркеллĕ вĕсен, пурне те лайăх шухăшласа тирпейлĕ тунă. Варуксен ашшĕне хуçалăха тытса пыма пĕлнĕшĕн ял çыннисем яланах ырланă...

Тарас юриех урамăн сылтăм енĕпе пычĕ. Виç-тăват кил урлах вăл Варуксен лаçĕ пуçĕнче такам ларнине курчĕ.

«Кĕтет пулас...»

Ку чăнах та Варук пулнă. Тутрине майралла, каялла çавăрса çыхнă, хулпуççинчен сăхман уртса янă, мăйăр катса ларать.

— Ырă каç пултăр, Варук,— ал пачĕ ăна Тарас.

— Килех... Васкамастăн пулсан, лар.

— Васкамаллиех çук-ха...

Тарас каска ҫине Варукпа юнашар ларчӗ.

— Мӑйӑр ҫиетӗн-и?— ывӑҫласа пачӗ Варук.

— Ҫисе пӑхас...

Пӗр-ик минут хушши ним те шарламарӗҫ вӗсем. Пӗр-не-пӗри нумай вӑхат курмасӑр пурансан, яланах ҫапла пулать вӑл: каламалли нумай, анчах та нимрен пуҫлама пӗлместӗн...

— Ну, Варук, каласа кӑтарт, мӗнле пурӑнтӑн ҫак ҫулсенче? — аран пуҫларӗ Тарас, епле те пулин сӑмах хускатас тесе...

— Мӗнле пурӑннӑ пултӑр? Хуллен, майӗпе... Унта-кунта питех тухса ҫӳремен, ҫынсемпе те пит хутшӑнсах кайман.

— Ҫырусем ҫырма ма пӑрахрӑн?

— Ара, ху текех пӗр ҫӗртен тепӗр ҫӗре куҫса ҫӳрерӗн те, адрессене патратса ятам эп. Ҫынсенчен ыйтма аван мар пулчӗ.

— Эп сана качча кайнӑ тесе.

— Теме кирлӗ пуль пит... Ыйткалакансем ку чухне ахаль те нумай. Пӗччен хырӑма та тӑрантараймастпӑр та...

— А вӑл яланах апла пулмасть вӗт. Тӑхта акӑ пӑртак, пурнӑҫ епле юсанса кайӗ...

— Юсансан тем пекехчӗ. Атту шалт йӑлӑхтарса ҫитерчӗ ку ҫити-ҫитми пурнӑҫ. Эсир таҫта аякра ҫӳресе ӑна сиссех те каймарӑр-и тен, анчах кунта пит те сисӗнчӗ вӑл.

— Эпир сиртен те ытларах тӳсрӗмӗр пуль, тусӑм,— терӗ Тарас, хӑй сисмесӗрех Варук аллисене тытса.— Виҫшер кун ҫимесӗр те, икшер уйӑх кӗпе-йӗм улӑштармасӑр та, эрни-эрнипе ура типӗтмесӗр те пурӑннӑ. Кашни кун вилӗм куҫӗнчен пӑхнӑ, вилӗм пирӗнпе юнашарах ҫӳренӗ...

— Ара, вӑл апла пуль те-ха...

— Ҫавӑн пек чухне вара килти пурнӑҫ шутсӑр аса килетчӗ. Ашӑ пӳрт, вӗри апат, тӑвансем, палланӑ ҫынсем... Сана та аса илеттӗм час-часах...

Тарас Варук аллине чӑмӑртарӗ те ун куҫӗнчен пӑхрӗ.

— Чӑн калатӑп.

Варук нимле мар пулса кайрӗ, ҫӗрелле пӑхрӗ.

— Эп те яланах аса илнӗ...— терӗ вӑл хуллен.

— Уйрӑлнӑ чух калаҫнисене манмарӑн-и?

— Ма манас... Эпӗ ҫавна асра тытса ҫеҫ пурӑнтӑм.

Леш хĕлте çураçсах çитернĕччĕ мана аттесем, анчах эпĕ ним тусан та каймастăп, терĕм те, вара тинех тупкăчсем килме пăрахрĕç...

Вăл пуçне Тарас еннелле çавăрчĕ. Тарас сылтăм аллине унăн пилĕкĕ çине хучĕ. Нимĕн те шарламарĕç, ма тесессĕн сăмахсăрах пĕтĕмпех паллă пулчĕ. Виçĕ çул иртнĕ, вăл хушăра нумай шыв юхнă, темĕн тĕрлĕ улшăну та пулма пултарнă, анчах та вĕсем хушшинче нимĕн те улшăнман иккен. Виçĕ çул каялла, çакнашкалах çурхи каç, вĕсем çак каска çинчех пĕр-пĕрин ăшшине туйса, алăран ал тытса ларнăччĕ, пĕрне-пĕри манас çукки çинчен калаçнăччĕ, ак халь каллех пĕрле, юнашар, ун чухнехи пек кăмăлсемпех, пĕр кунлăх та уйрăлман пекех...

— Аннӳ мĕнле?— ыйтрĕ Варук, чылай чĕнмесĕр ларсан.

— Паян кăшт самайланчĕ пулас-ха.

— Эп ăна тем пекех кая-кая пулăшасшăнччĕ те, çынсем куласран хăраса тăтăм. Пĕлетĕн вĕт, ялта çав тери усал чĕлхесем пур. Пĕрре ахаль те ним сăлтавсăрах киревсĕр сăмах кăларса ячĕç. Шутсăр тарăхмалла пулчĕ...

— Мĕн пирки тата вăл? Хăçан?

— Эс салтака кайнă çул, юр çусан... Ун чухне отрядсем çӳретчĕç тыră пуçтарса. Вăт, пĕррехинче, çĕрле, хуланалла каякан тыră обозне такамсем тапăннă та отрядри виçĕ çынна çапса пăрахнă. Пирĕн атте кĕçнерни пасарĕнчен таврăнать-мĕн. Пăхать — çул хĕрринче, юр ăшĕнче виçĕ çын выртаççĕ. Пĕри вилсех çитеймен иккен, хуллен йынăшса выртнă. Атте ăна çуна çине хурса киле илсе килчĕ. Çамрăкскер пулнă хăй, çирĕм иккĕре кăна, Питĕртен килнĕскер... Хăра-хăрах, никама та пĕлтерес мар тесе, çавна пĕр эрне пуль усрарăмăр хамăр патра, сыватрăмăр. Анчах çынсем пурпĕрех сиснĕ те ман çинчен ыră мар калаçма тытăннă. Ăнланатăн ĕнтĕ мĕн калассине... Пĕр çур çул халăх хушшине тухмарăм çавăн хыççăн. Питĕ кӳренмелле пулчĕ!

— Кайран ăçта кайрĕ вăл çынни?

— Атте хулана леçсе ячĕ... Питĕртен темиçе хут та çырусем çырчĕ вăл пире тав туса.

— Питĕ лайăх ĕç тунă эсир, мухтамалла кăна сире уншăн,— терĕ Тарас.

... Сăмах хыççăн — сăмах, шухăш хыççăн — шухăш; Тараспа Варук нумайччен ларчĕç шăкăл-шăкăл калаçса, пĕрне-пĕри харпăр хăй çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа кă-

тартрĕç. Таврара ним хускалми шăплăх тăчĕ, улăх енчĕн майĕпе ирхи нӳрлĕх туртăна пуçларĕ, анчах вĕсем çаплах калаçрĕç... Варука хăй çумнерех тайăнтарса, Тарас пулас пурнăç çинчен, хăйĕн ĕмĕчĕсем, шухăшĕсем çинчен каларĕ, унăн пур сăмахĕсем те Варука тем пекех кăмăла кайрĕç, чĕри патнех пырса вырнаçрĕç. Çак каçхине вăл ăна ĕлĕкхинчен те вăйлăрах, темле ăшă, тăванла юратупа юратрĕ.

— Епле аван, ăслă вăл...

Варуксен çенĕх алăкĕ чĕриклетрĕ. Тахăшĕ тула тухрĕ пулас.

— Кĕрес пулать, нумай пулчĕ,— терĕ Варук.

— Кăштах лар ĕнтĕ,— хулĕнчен тытрĕ ăна Тарас.

— Ыран та ларма пулать вĕт...

— Ыранхи — ыран валли вăл...

Çав вăхăтра килхушшинче сасартăк Варук ашшĕн сасси илтĕнчĕ.

— Кам ку? Мĕн тăватăн эс кунта?!

Ана хирĕç чĕнекен пулмарĕ, анкартинелле тухмалли алăк халтлатса хупăнчĕ çеç.

— Стой!.. Хурах! Краву-ул! — кăшкăрса ячĕ Варук ашшĕ.— Тытă-ăр!..

Таçта йытă вĕрсе ячĕ. Хурах кăшкăрнине илтнĕ-илтмен, Тарас каска çинчен вăшт кăна тăчĕ те, хӳме урлă пĕррех сиксе каçса, уçă алăкпа Варуксен анкартине чупса тухрĕ. Самантранах вăл паранкă кассисем хушшипе чупакан Варук ашшĕпе танлашрĕ те:

— Аçта? — тесе кăшкăрчĕ.

— Ав, çырманалла тарчĕ...

Урăх нимĕн те чĕнмерĕ Тарас, арăслан пекех малалла ыткăнчĕ. Варук ашшĕ таçта хыçалта хурах кăшкăрса юлчĕ...

Çырма хĕррине çитеспе Тарас карта урлă темле мĕлке йăванса каçнине курчĕ.

«Çавă! Пурпĕр тытатăп!» — шухăшларĕ те вăл, çырманалла сикрĕ. «Куçран вĕçертес марччĕ кăна...» Карта урлă каçсан, вăйлăран та вăйлă чупма тапратрĕ вăл вăрă хыççăн. Анчах лешĕ те хытă чупать иккен, ниепле те çывăха ямасть. Акă, вăл картаран сылтăмалла пăрăнчĕ те çырма тĕпĕпе чупрĕ. Унтан сăрталла хăпарма пуçларĕ. Пырать — каçĕ çутă, курăнать...

Тарас сăрталла темиçе утăм тунăччĕ çеç — çӳлтен револьвер сасси шартлатрĕ. «Кунпах хăратаймăн»,— шухăшларĕ те Тарас хăй ăшĕнче, самантлăха чарăнса тăнăскер, каллех малалла ыткăнчĕ. Вăрă хирелле тухса, ыраш хушшинелле кĕрсе кайрĕ, анчах ырашĕ лутра пирки — пытанаймарĕ, пилĕк таранах курăнса пычĕ. Пĕр аллă чалăш кайсан чарăнчĕ те каллех печĕ Тарас çинелле, анчах каллех сиен тăваймарĕ, тарма тытăнчĕ. Чылай вăхăт пычĕ Тараспа вăрă хушшинчи хăрушă ăмăрту. Пĕрин епле пулсан та тарса хăтăлас килет, тепри тем пулсан та ăна çитсе çапса ӳкересшĕн... Вăрри çурăм хыçĕнчи кутамккине те паçăрах калча ăшнелле вăркăнтарса хăварчĕ, вăл татах чарăнса пересшĕн пулчĕ, анчах револьверĕнче пульлисем пĕтнĕ пулмалла, çавăнпа унăн пĕр хăйĕн урисем çине çеç шанмалли юлчĕ.

Вĕсем шăлĕсене çыртса, антăхас патне çитсе чупнă хушăра пĕтĕм ял ура çине сиксе тăчĕ. Пур урамсенче те кăшкăрашаççĕ, çуйхашаççĕ, йытăсем вĕреççĕ, алăксем уçăлса хупăнни илтĕнет. Аçта мĕн пулнине ăнланайманнипе, çынсем урамран урама чупаççĕ, пĕр-пĕринчен ыйтаççĕ, анчах ретлĕн никам та каласа парайман пирки татах чупаççĕ.

Автан çырми патнелле çывхарнă чух вăрă вăйсăрланса пыни сисĕнме пуçларĕ. Вăрăпа Тарас хушши пĕчĕкленнĕçемĕн пĕчĕкленсе пычĕ. Ак ĕнтĕ çывăх, темиçе чалăш çеç... Тарас мĕнпур вăйне пухрĕ. Унтан минут та иртмерĕ пуль — вăрра ĕнсинчен чышса антарчĕ те хăй те тирĕнсе кайрĕ... Анчах вĕсем иккĕшĕ те харăсах сиксе тăчĕç, пĕр-пĕринпе тытăçса ӳксе, çырма хĕрринелле йăванма тапратрĕç. Хăрушла кĕрешӳ пуçланса кайрĕ вĕсем хушшинче... Иккĕшĕ те ывăннă ĕнтĕ, аран сывлаççĕ, анчах нихăшĕ те парăнасшăн мар, кашниннех пурăнас килет. Пĕрре пĕри çиеле тухать, тепре — тепри, аллисем пĕр-пĕрин пырĕсем патнелле туртăнаççĕ.

— Килĕр!.. Пулăшă-ăр!.. — вăрăммăн кăшкăрса ячĕ Тарас.— А-а-а!..

Унччен те пулмарĕ, вĕсем хăйсем сисмесĕрех çырма хĕрринелле йăванса пычĕç те чăнкă çĕртен кутăн-пуçăн чикеленсе анса кайрĕç.

Хире чупса тухнă халăх, Тарас кăшкăрнине илтсе, Автан çырми еннелле ыткăнчĕ. Çынсем çырмана чупса аннă çĕре Тарас бандита ӳппĕн пăрахса, унăн аллисене хыçалалла пăрса лартма ĕлкĕрнĕ-мĕн ĕнтĕ.



## 6. ЧАНЛАХ ÇИЕЛЕ ТУХАТЬ

Калама та çук пăлханса кайнă çынсем бандита ялалла çав тери кăшкăрашса, çухăрса, ним ăнланмалла мар шавласа илсе пычĕç.

— Вĕлерес ăна халех!

— Çакăнтах çапса пăрахас!

— Пилĕкне хуçас, вырăнтан та ан хускалтăр!..

— Кутăн çакас, пырши-пакарти йăтăнса тухтăр эсрелĕн!..

— Пăркăçлас пулать...

— Мĕн кĕтсе тăмалли пур — тӳпелес тавай!

Юнашар пыракансем бандита сисмен хушăрах ăçтан тивнĕ унтан паркаласа илме пуçларĕç. Хăшĕ чышкăпа, хăшĕ çĕçĕ аврипе, хăшĕ алла тытнă рычак вĕçĕпе. Лешĕ, ним тума пĕлмесĕр унталла та кунталла çаврăнкаласа, йăлăнма пуçларĕ:

— Тархасшăн ан тивĕр... Тархасшăн ан вĕлерĕр...

Кун пек йăлăнни халăха тата ытларах хускатса ячĕ, вăл тарăхнине татах вăйлатрĕ.

— А-а, тархасшăн-и? Эсир хăвăр, мур пуçĕсем, тархасланине пăхатăр-и? Шеллетĕр-и çынсене?

— Миçе айăпсăр чуна пĕтертĕр?

— Мĕн чул çынна макăртрăр?

— Ы-ых, чунилли!..

Бандита малтанхинчен те хытăрах чышкалама тапратрĕç. Тахăшĕ çурăмĕнчен пысăк лаптак чулпа хаплаттарчĕ. Капла ырă ĕç пулас çуккине кура, Тарас халăха лăплантарма пикенчĕ:

— Ан çапкалашăр, юлташсем! Совет влаçĕ ун пек тума хушмасть. Хăвăрах япăх пулма пултарать уншăн.

— Мĕншĕн? Вăрра хĕненĕшĕн-и? — кĕрлесе кайрĕ халăх.

— Вĕсемшĕн тем тума та юрать те, пире мĕншĕн юрамасть?

— Закон тăрăх ответ тыттаратпăр ăна, чышкăпа мар!— кăшкăрчĕ Тарас.— Никам та пӳрнепе те тĕкĕннĕ ан пултăр!

Ял патнелле çывхарсан, бандита çавăтса пыракан халăха хирĕç Иливан — ял Совет секретарĕ — мăн çăматăпа лăпăстатса çитрĕ. Халăх чарăнчĕ.

— Ăçта вăрри? Хăшĕ? — ыйтрĕ те вăл сăмси витĕр, хăрах аллипе тимĕр кăшăллă куçлăхне тытса, халăх

хушшинелле кĕрсе кайрĕ.— Çакă-и? Мĕн вăрланă вăл, прохвост эдăки?

— Назарăпне лаша илсе тарма тăнă,— терĕ тахăшĕ.

— Ах, подлец, ах, подлеццă!.. Ну, айтăр ман хыççăн!

Тул çутăлса килчĕ. Бандита хурал пӳрчĕ патне илсе пычĕç. Темле чарма тăрăшсан та, халăх лăпланма пĕлмерĕ (ытла пурте тарăхса çитнĕ-мĕн хурахсем çине!). Асăрхаса пынă çĕртех, бандитăн пуçне çапса шăтарса пăрахрĕç, пичĕсене тăрмаласа пĕтерчĕç, кĕпине çурса тăкрĕç...

— Председатель ăçта? — ыйтрĕ Иливанран Тарас.

— Виçĕмкунах Вăратин пасарне кайнă.

— Милици патне ярас пулать.

— Ёлкĕрĕпĕр-ха, малтан хамăр килти майпа допрос тăватпăр.

— Допроса следстви органĕсем тăваççĕ...

Иливан, куçлăхне сăмси вĕçнерех антарса лартса, Тарас тăрăх пăхса илчĕ. Хăрах куçне хĕсрĕ.

— А эс мĕн? Учитель-и? Хамăрах лайăх пĕлетпĕр, салтак юлташ. Ялта эпир власть! Санăн тăхтас пулать-ха пире вĕрентме!

Вăл хăвăрт çаврăнчĕ те, хурал пӳрчĕ умне илсе тухнă сĕтел хушшине кĕрсе ларса, папкине салтма тытăнчĕ. Халăх çаплах шавларĕ, бандит çинелле кĕпĕрленсе пычĕ, çĕр тĕрлĕ ыйту парса кăшкăрашрĕ. Тарас, халăх хушшинчен Исая чĕнсе илсе, пӳрт кĕтесси хыçнелле илсе кайрĕ.

— Итле, тусăм, паян кунта ĕç ытлашши пулса кайма пултарать. Иливан темшĕн милицие чĕнтересшĕн мар. Тавай, лашуна утлан та халех вулăса вĕçтер. Милици яччăр. Хут ма çырса паман тесен, ял Советсем килте çук, тесе кала. Атя, халех яра пар...

Исай килĕшсе пуçĕпе сулчĕ те çавăнтах килне чупрĕ. Тарас сĕтел патнерех кайса тăчĕ. Иливан хăйĕн папки ăшĕнче чакалансан-чакалансан темле сар хутсем кăларса хучĕ, куçлăхне тасатса тăхăнчĕ, сайра хĕрлĕ сухалне якаткаласа илчĕ.

— Ну, ристанне кунтарах илсе килĕр-ха!— терĕ вăл юлашкинчен, ик аллипе сĕтел пуçĕнчен тытса. Бандита харăсах темиçе çын çурăмĕнчен чышса, сĕтел умнелле тĕртсе кăларчĕç. Вăл Иливан çине куç илмесĕр пăхма тытăнчĕ.

— Кала тӳррипе, кам эс?— хыттăн пуçларĕ Иливан,

майне пăркаласа.— Тĕрĕссипе кала, атту эпир сана халех йăмра тăрринчен туртса çакма пултаратпăр. Илтрĕн-и?

Бандит чĕнмерĕ. Вăл ответ парасса пĕр çур минут пек кĕтсе тăнă хыççăн Иливан тепĕр хут, тата хытăраххăн ыйтрĕ:

— Ну, калатăн-и? Кам эс? Ăçти çын?

Бандит каллех ответ памарĕ, Иливан çине çав тери сивĕ, курайман куçĕпе шăтарасла пăхса тăчĕ çеç.

— Кала, теççĕ сана!— кăшкăрчĕ Иливан, сĕтел çине çапса.— Элле халех вилессӳ килет-и́?

Бандит пĕр утăм малалла ярса пусрĕ те, ывăннă лаша пек хашкаса, шăл витĕр:

— Мĕн ыйтатăн, палламан пек? — терĕ.

Иливан кăпăр-капăр ура çине сиксе тăчĕ.

— Мĕн терĕн эс?

— Палламастăн-и-мĕн, терĕм. Лайăхрах пăх эппин: Пăшатан эпĕ!

— Какой-такой Пăшатан?

— Çапласкерех. Эс мана пит лайăх пĕлетĕн.

— Ах, йытă вилли! — çухăрса ячĕ Иливан, сĕтел хушшинчен чупса тухса. Сăмси темле сасартăк хĕрелсе кайрĕ унăн, аллисем чĕтреме тапртрĕç.— Ăçтан паллам эп сана? Эс мĕншĕн мана халăх умĕнче пустуйран намăс кăтартатăн?! Ах...— вăл виçĕ хутлă намăс сăмах лаплаттарчĕ те, Пăшатан çине сиксе, пĕрре пĕр енчен, тепре тепĕр енчен пĕтĕм вăйĕпе çапрĕ.

— Ан çап, Иливан!— кăшкăрчĕ кун хыççăн Пăшатан та, янах шăммине тытса.— Ай, пĕрле ĕçсе-çинисене мантăн-и? Эс пире суя лаша хучĕсем туса панăшăн эпир сана мĕльюнсем тыттарнă чух ыталансах юрлаттăмăрччĕ-çке?! Эх, сысна!.. Килсе тăр халăх умне манпа юнашар!

Иливан хăйне такам пуçран тукмакпа çапнă пекех каялла сулăнса кайса ларчĕ. Чарăлса кайнă куçĕпе халăха ухмаха ернĕ çын пек пăхса çаврăнчĕ, унтан Пăшатан çине тĕллесе кăтартса, çинçе сасăпа çухăрма тапратрĕ:

— Суять вăл! Юри калать! Эп нихçан та тĕл пулман унпа! Мана вараласа хăй хăтăласшăн... Вĕлерес пулать ăна халех!..

— Мăнъялта пĕркун виçĕ мĕльюн илнине мантăн-и?— кăшкăрчĕ Пăшатан каллех.— Хам тыттартăм вĕт!..

— Суять! Суять!..

Иливан тата темскер каласшăн пулчĕ, анчах та Пăшатан сăмахĕсем хыççăнах юпа пек хытса тăнă халăх халь мĕн пулнине тавçăрса илчĕ те, пĕр харăс ĕрлесе ярса, унăн сассине путарса лартрĕ.

— Ах, Иуда!..

— Намăссăр, кĕççе пит!

— Вăт, шуйттан!

— Пирĕн юна сутса пуранна...

— Çыхас ăна!

— Йккĕшне те пĕрле çакас!..

Халăх Иливан çине кĕпĕрленсе пыма тапратрĕ. Иливан стена çумĕнчи сак çине хăпарса кайса, кĕтессе йăпшăнчĕ:

— Эп мар! Эп айăплă мар!..

Ун пуçĕнчен кăшт аяккарах çеç хӳмене çур кирпĕч пырса çапăнчĕ. Кирпĕчрен пăрăнма ĕлкĕрчĕ кăна — ун еннелле ал туйи вăркăнчĕ.

— А-а-а!..

— Чарăнăр! Шăпланăр! — кăшкăрса сак çине тăчĕ Тарас.— Чакăр каялла! Халех милицисем килеççĕ!

Пĕр вăхăтлăха халăх лăпланкаларĕ. Унтан каллех шавлама пуçларĕç, ним ăнланмалла мар пулса тăчĕ.

— Давай, допрос ту, Тарас!

— Халăх умĕнче каласа кăтартчăр!

— Каламасан, халех пăркăçлас...

Милицисем килсе çитиччен халăха епле те пулин чарса тăрас тесе, Тарас допрос пекки тума тытăнчĕ. Малтан Пăшатанран пуçларĕ.

— Ăçтан килтĕн эс кунта?

— Килтен...

— Килӳ ăçта сан?

— Вăрманта, кашни тĕмĕ айĕнче.

— Пит те шутник пулас эсĕ... Махорка бандинче çӳретĕн-и?..

— Çавăнта.

— Хăй ăçта вăл халь?

— Пĕлместĕп.

— Ан суй. Хăвнах япăх пулать. Кала тӳррипе: ăçта Махорка?

Пăшатан кăштах тытăнса тăчĕ, унтан темскер каласшăн пулса çăварне уçрĕ çеç — сасартăк тахăшĕ сăнчăр вĕçне çыхнă кĕренке пуканĕпе ăна пуç тӳпинчен туртса

çапрĕ. Кăкран каснă юман пекех лаплатрĕ çĕрелле бандит, йынăшаймарĕ те...

Халăх кăрах каялла чакрĕ.

— Кам çапрĕ? Кам çапрĕ?— сиксе тăчĕ Тарас.— Халех калăр, кам çапрĕ?

Никам та ответ памарĕ. Çынсем çăвара шыв сыпнă пекех тăчĕç. Халăх хушшинчен Лява Уртемĕ майĕпе чакса тухса тăкăрлăкалла пăраннине Тарас кураймарĕ.

Çынсем Пăшатан кĕлеткине çĕртен илсе сак çине вырнаçтарса хунă вăхăтра икĕ милиционер çитсе тухрĕç.

* * *

Пăшатана вĕлерекеннине тупайманнипе тата Иливан пачах тунса лартнă пирки милицисем Энтриялĕнчен çĕрлечченех каяймарĕç. Нумайăшне допрос турĕç, Иливан килне кайса ухтарчĕç — усси пулмарĕ. Кaçалапа тухтăра илсе килчĕç, вăл Пăшатан ўтне касса пăхрĕ, пуç мимине аркатнă пирки вилнĕ, терĕ, унтан пытарма хушрĕ. Тĕттĕмленнĕ вăхăтра милицисем Иливана урапа çине лартрĕç те, Совет членĕсемпе Тараса ыран ирпе вулăса пыма хушса, тухса кайрĕç.

Килне Тарас çурçĕр тĕлнелле çеç таврăнчĕ. Вăл пыриччен Микуль амăшне пĕтĕмпех каласа панă иккен.

— Асту, ывăлăм, асăрханарах çўре, темскер туса хурĕç тата. Халăхĕ пит усалланса кайрĕ халь,— терĕ амăшĕ, Тарас çине кăмăллă куçĕпе пăхса.

— Ан кулян, ним те пулмасть пире!— аллипе сулчĕ Тарас.— Ху мĕнле? Паян килсе курма та вăхăт пулмарĕ.

— Çăмăлланать пек-ха. Халь эс килтĕн те, вилес те килмест...

— Эп таврăниччен вилес килетчĕ-им вара?— кăшт куларах ыйтрĕ Тарас.

— Ун чух — пурпĕр пĕтмелле, теттĕм çав...

— Çук, анне, халĕ пирĕн пĕтесси иртрĕ ĕнтĕ. Курăн акă, çĕр çула çитсен те вилес килмĕ!

— Темле-çке... Пурнăç юлашкине те пулин этемле пурăнса иртерсен аванччĕ те...

Тарас çенĕхе тухса выртрĕ. Икĕ талăка яхăн çывăрман пулин те, пуçра темĕн тĕрлĕ шухăш явăннипе, вăл нумайччен куç хупмарĕ, ир еннелле тин тĕлĕрсе кайрĕ, анчах нумай та çывăрмарĕ — кĕтў хăваланă вăхăтра сиксе те тăчĕ. Шăмшакне çемçетме гимнастика туса илчĕ, пилĕк таран сив шывпа çăвăнчĕ те, амăшĕн сывлăхĕ

çинчен ыйтса пĕлчĕ. Йăпăр-япăр чей вĕретсе ĕçтерчĕ ăна, хăй те пĕр-ик стакан ĕçрĕ, унтан вулăсалла тухса утрĕ.

Вăл пынă чух кантурта никам та çукчĕ-ха; Тарас кунта ĕçлекенсене кĕтсе, хаçат тытса ларчĕ. Тĕнчери лару-тăру çинчен çырнисене пăхса тухрĕ. Республика пурнăçĕ çинчен пĕлтерекен хыпарсене вуларĕ. Аван хыпарсем... Лере завод ĕçле пуçланă, кунта фабрика тӳрлетсе çитернĕ, çĕнĕ кĕпер хывнă...

Урамран сăран пиншаклă, хулхушшине брезент портфель хĕстернĕ, сухалне нумайранпа хырман лутрарах çын кĕчĕ. «Волком РКП(б)» тесе çырнă алăк патне çитсен, вăл чарăнса тăчĕ те Тарасран ыйтрĕ:

— Хăш ялтан пулатăн?

— Энтриялĕнчен.

— Николаев Тарас мар-и эс?

— Шăпах çавă.

— Илтнĕччĕ сан çинчен. Атя, кĕр...

Тарас сăран пиншаклă çын хыççăн пĕр чӳречеллĕ пĕчĕк пӳлĕме кĕрсе, çĕмрĕк хыçлă пукан çине ларчĕ.

— Камран илтме пултарнă вара эсир ман çинчен, эп киле таврăнни те виçĕ кун кăна-çке? — ыйтрĕ вăл волком секретарьне куçĕнчен пăхса.

— А эп укомра пултăм, мана унта каларĕç. Эс учета тăнă-ха вĕт?

— Тăнă.

— Ну, вот... Сана халех ĕçе кӳлме хушрĕç. Пĕлетĕн-и, çынсем çитмеççĕ. Ĕçĕ — темĕн чухлех, ниçтан туса çитерме ĕлкĕрейместпĕр...

Вăл портфелĕнче тем шырама тытăнчĕ. Тарас секретарĕн пӳлĕмне йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ. Стенасем çинче Маркспа Ленин сăнĕсем тата тахçанхи кивĕ плакатсем çакăнса тăраççĕ: «Пролетарий, на коня!», «Все на Врангеля!», «Долой попов и кулаков!» Стенисем те, маччисем те тĕтĕмпе хуралса ларнă. Урайĕнче — çӳп-çап...

«Тасатма та вăхăт тупаймаççĕ пулас»,— шухăшларĕ Тарас.

Волком секретарĕ хăйне кирлĕ хута тупса сĕтел çине кăларса хучĕ те, вăрăммăн сывласа ярса, çамкине шăлкаласа илчĕ.

— Манăн пысăк хуйхă-ха паян, Николаев юлташ,— терĕ вăл.— Бандитсем ман йăмăка персе пăрахнă... Вăрмана ĕне çитерме кайнă-мĕн те вăл, пачах çухалнă. Килтисем ăна икĕ кун шыранă, тупайман. Ĕнер хамăр ялти

пĕр çын пушăт касма кайнă та ăнсăртран унăн виллине курнă... Халь çеç илсе таврăнтăмăр. Шутсăр шел, хĕрачи пит лайăхчĕ, çамрăк, вунултă çул кăна тултарнăччĕ. Ним сăлтавсăрах пĕтрĕ. Тăилавĕнчен пенĕ...

— Хăçан пĕтерсе çитерĕпĕр эпир вăл тискер кайăксене?— терĕ ку хăрушă хыпара шăл çыртса итлесе ларнă Тарас.

— Пĕтĕмĕшпе илсен, Махорка бандине пĕр-икĕ эрне каялла аркатрăмăр ĕнтĕ эпир. Анчах та хăй тарса ӳкнĕ. Унпа пĕрле тата темиçе çын пулмалла-ха.

— Ĕнер пирĕн патра пĕрне тирпейлерĕç...

— Епле? Ăçта тытнă?

Тарас тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ.

— Н-да... Тĕлĕнмелле ку,— терĕ волком секретарĕ, сăмахсене тăсса.— Бандита хыçалтан пырса вĕлерни — питĕ иккĕлентерекен япала вăл. Ахальтен пулман ку, тусăм, унта темскер пурах...

— Хам та çапла шутлатăп.

— Вăл каласа кăтартма пуçласан вĕлерчĕç те-тĕн-и-ха?

— Çапла.

— Ну, апла пулсан, паллă: ăна кам та пулин хăйсен шайккинчи çынах тунă.

— Ма ун пек шутлатăн?

— Ниушлĕ ăнланаймастăн: чăннине каласа парса ыттисене тыттарасран!

— Кам пĕлет вĕсене, тен, чăнах та çапла-и?— терĕ Тарас, аллисене ик еннелле сарса.

— Çаплах вăл, çаплах. Итле эс чекист пулнă çынна... А леш чиновникĕнчен епле пулсан та сведенисем ытларах пăчăртаса кăларма тăрăшас пулать. Тен, татах çыхăнусем палăрĕç. Кайран вара расхута яма та юрать.

— Председатель таçта кайса кĕнĕ-ха пирĕн.

— Ăна та хытă хыпашласа пăхмалла. Секретарь вăл ĕçсене тунах пулсан — пĕччен туман. Иккĕшĕ пĕрле пулнă вĕсем. Тепĕр енчен, председатель хăй хутшăнман пулсан та — айăплă. Пичетсем ун аллинче пулма тивĕçлĕ, анчах Иливан суя хутсене пичетсĕр тăвайман...

— Тĕрĕс.

— Кун хыççăн сирĕн ял Совечĕн пĕтĕм ĕçне тĕпренех тĕрĕслеме тивет. Эпир юри комисси туса ярăпăр сирĕн пата. Май пулсан, хам та пырăп. Эс мĕнле унта, чухăн-

семпе ёҫлесси ҫинчен шухӑшласа пӑхрӑн-и? Ҫамрӑксене пухса пӗрлештересси пирки епле?

— Ҫук-ха, вӑхӑт пулмарӗ.

— Ёҫлеме тытӑнас пулать...

Волком секретарӗпе Тарас хушшинче пит те кирлӗ, ёҫлӗ калаҫу пуҫланса кайрӗ. Пӗр ыйтуран тепӗр ыйту патне куҫса, хальхи вӑхӑтра ялта ёҫ мӗнле пулса пымалли, яла мӗнле ҫулпа илсе пымалли ҫинчен пӗр-ик сехет ытла калаҫрӗҫ вӗсем.

— Революцие эпир ахальтен мар тунӑ, пӗтӗм пурнӑҫа тӗпрен улӑштарса, социализм патне илсе пымашкӑн тунӑ. Анчах та социализм — хӑйне хӑй пулакан япала мар, ӑна тумашкӑн куллен пӗтӗм вӑя хурса кӗрешмелле...

Пӳлӗме пӗр вуник ҫулхи арҫын ача чупса кӗчӗ. Хашкама ернӗскер, вӑл сӑмси айне кӗпе ҫанни вӗҫӗпе шӑлса типӗтрӗ те:

— Иван пичче, мӗн ҫав... Сана почтӑна пыма каларӗҫ. Халех килтӗр, терӗҫ. Хуларан кӗлихвонпа чӗнеҫҫӗ, тет...

Волком секретарӗ, сӗтел хушшинчен хӑвӑрт тӑрса, картузне тӑхӑнчӗ.

— Чуп, кайса кала, халех пыратӑп,— терӗ вӑл ачана. Унтан Тарас еннелле ҫаврӑнчӗ.— Ҫапла, Николаев юлташ. Пырса тӗрӗслӗпӗр, тасатӑпӑр, шанчӑклӑ ҫынсене лартӑпӑр. А эсир ан ҫывӑрӑр унта, витӗмлӗрех пӑхӑр. Ҫамрӑксем ҫинчен ан ман. Сывпул!

* * *

Махоркӑпа Чалӑшкуҫ хӑйсен юлташӗ таврӑнасса вӑрманти пӗр ҫырмари кивӗ утар пӳртӗнче кӗтсе выртрӗҫ. Вӑл Энтрияльне Лява Уртемӗ патне кайнӑ каҫах, ир енне те пулин килмеллеччӗ, анчах хӗвел те тухрӗ, кӑнтӑрла та ҫитрӗ, каҫ та пулчӗ — Пӑшатан ҫаплах таврӑнмарӗ. Ури ыратнипе, хырӑмӗ выҫнипе, Махорка тискер кайӑкран та ытларах усалланса кайрӗ.

— Ну, килтӗр кӑна, тыллатӑп эп ӑна пӗрре! Йӗксӗк, пӗлмест-и-мӗн вӑл кунта ҫын асапланнине!

— Пӑрахса тармарӗ-ши пире?— сӑмах хушрӗ Чалӑшкуҫ, ним тума аптранӑ май ҫӗҫҫипе сак хӗррине касса.

— Пулма пултараймасть, ӑҫта кайтӑр вӑл ухмах?

— Тен, лекрӗ пуль.

— Мур пӗлет...

Çав вăхăтра сасартăк пӳрт çумĕнче такам ерипен пусса утни илтĕнчĕ. Махоркăпа Чалăшкуç, йăпăртах револьверĕсене туртса кăларса, алăкăн ик енне тăчĕç.

«Вăл-ши, вăл мар-ши?..»

Çын çенĕхе кĕчĕ, хуллен кăна пӳрт алăкне туртса уçрĕ те пĕр урине шалалла ярса пусрĕ. Тĕттĕм пирки çыннăн сăнĕ курăнмарĕ, анчах та ку Пăшатан марри паллă пулчĕ, вăл пулсан, сас памалла. Çавăнпа та Чалăшкуç, çав çын пĕр утăм ярса пуссанах, ăна тăнлавĕнчен револьвер аврипе çапса ӳкерчĕ те ун çине хăпарса выртрĕ.

— Пĕр сас та ан кăлар!..

Махорка шăрпăк çутрĕ. Чалăшкуç айĕнче хăйсен юлташех, бандăра пĕрле çӳренĕ Шишка тенĕ этем иккен.

— Ăçтан килсе лекрĕн эс кунта? — сиввĕн ыйтрĕ унтан Махорка.

— Хам та пĕлместĕп,— терĕ Шишка, кĕпи-йĕмне тӳрлеткелесе.— Ах, ытла хытă çапрăн-çке... — Вăл ĕнсине хыпашласа илчĕ.— Эпĕ виçĕ кун вăрман тăрăх хырăмпа шуса çӳрерĕм. Наган та таçта тухса ӳксе юлнă, шуйттан Çимелли пур-и сирĕн мĕн те пулин?

— Çук.

— Турттарăр апла пулсан.

— Ав, мăк тăпăлтарса турт.

— Çветтуя тухрăмăр эппин.

— Чим акă, тен, Пăшатан илсе килĕ,— терĕ Чалăшкуç.— Ăна кĕтетпĕр-ха эпир...

Анчах тата темиçе сехет кĕтсен те, Пăшатан таврăнмарĕ. (Тĕрĕссипе каласан, вăл ун чухне Энтриялĕн хурал пӳртĕнче сывламасăр выртнă ĕнтĕ, унăн ӳчĕ те сивĕннĕ).

— Кĕтсе усси çук, кайрăмăр!— терĕ юлашкинчен Махорка,— лекнĕ вăл ăçта та пулин...

— Ăçта кайăпăр?— ыйтрĕ Шишка.

— Пырсан — курăн.

Вĕсем пӳртрен тухса сăртран анчĕç те тăршшипех çырма тăрăх утрĕç. Махорка, ури питĕ ыратнă пирки, пĕтĕм тĕнчене ылханса пычĕ. Ирччен вăл Энтрияльне çитесшĕнччĕ, анчах хытă утайманнипе — вĕсем çур çула çитсенех тул çутăла пуçларĕ. Ирĕксĕрех пĕр ял хĕрĕнчи пуш арпалăха пытанса, тепĕр каçчен кĕтмелле пулчĕ вĕсен. Кунта Махорка ним чĕнмесĕр, вăхăтран вăхăта шăлне шатăртаттарса тата намăс сăмахсемпе вăрçса кăна выртрĕ.

Каçхине, ялти сасăсем лăплансан, бандитсем каллех малалла утрĕç. Автансем иккĕмĕш хут авăтнă тĕле Энтриялььне çитсе, Лява Уртемĕ патне анкарти енчен пырса кĕчĕç. Уртем вĕсене тахçантанпа кĕтнĕ пекех йышăнчĕ, тӳрех çӳлти хутри чăлана — никам курас çук çĕре илсе кайса вырнаçтарчĕ.

— Ĕçмелли пар та, çитер мĕн те пулин,— терĕ нимрен малтан Махорка, шалтах халтан кайнăскер.

Уртем мĕн кирлине илсе пычĕ. Махорка никам çине пăхмасăрах пĕр стакан тултарса ĕçрĕ те:

— Пăшатан килчĕ-и сан пата? — тесе ыйтрĕ.

— Килчĕ те, усси пулмарĕ,— терĕ Уртем, куçхарши айĕпе пăхса.

— Мĕн апла?..

— Тытрĕç те тирпейлерĕç.

— Эх, тăмпуç!— сурчĕ Махорка.— Таврара мĕн илтĕнет? Пирĕн çинчен пĕлеççĕ-и?

— Пĕлеççĕ. Пурте савăннă.

— Ытла час савăнаççĕ. Чим-ха, ура тӳрлентĕр, çĕнĕрен пуçлатăп акă! Савăнĕç вара...

Тата тепĕр стакан тултарса ĕçсен, сĕтел çинчи апата уйăхĕпе выçă çӳренĕ кашкăр пек хыпма тытăнчĕ.

... Бандитсем ĕçсе-çисе тăрансан, Уртем Махоркăна куç хĕссе пӳрте чĕнсе кĕртрĕ те Пăшатанпа ĕç мĕнле пулни çинчен, ăна мĕншĕн вĕлерни çинчен каласа пачĕ.

— Аван тунă апла пулсан,— терĕ Махорка, ним хĕрхенмесĕр.— Ăна кам тытнă терĕн-ха эс?

— Тăлăх Хветуç ывăлĕ, Тарас, анчахрах салтакран таврăннăскер,— пĕлтерчĕ Уртем.

— Тытса шаккас пулать ăна...

## 7. ÇАМРĂКСЕМ ЧĂМАРТАНАÇÇĔ

Вулăсран таврăнсан тепĕр кунне Тарас Микишпа тĕл пулса калаçрĕ те, вĕсем каçалапа çамрăксене пухма шут турĕç.

Самаях иккĕленсе, хăюсăртараххăн пычĕç шкула çамрăксем. Никам та пĕлмерĕ: мĕн тума чĕннĕ вĕсене? Мĕншĕн кирлĕ пулнă ку пуху? Мĕн çинчен калаçаççĕ-ши ĕнтĕ?

Çапах та, пĕр çирĕм çынна яхăн пухăнчĕç. Хĕрсене те чылайăшне чĕнтернĕччĕ, анчах пурĕ те иккĕн çеç пычĕç вĕсем: Варукпа унăн юлташĕ Марине. Хăшĕсем — çă-

малтарах чӗлхеллисем — вӗсенчен тӑрӑхлама та пӑхрӗҫ, анчах Варук ҫавӑнтах хирӗҫ касса хучӗ:

— Эпир те сирӗн пекех ҫӑкӑр ҫиместпӗр-и-мӗн?

Тепӗр кӑштах тӑхтасан, сӗтел хушшинче ларакан Тарас, ура ҫине тӑрса, пухӑннисене пӑхса ҫаврӑнчӗ те:

— Пуҫлатпӑр пуль, юлташсем,— терӗ.

Ҫамрӑксем шӑпах пулчӗҫ.

— Эпир сире паян хамӑрӑн пурнӑҫри хӑшпӗр ыйтусем ҫинчен калаҫса пӑхма пухрӑмӑр... Ытти нумай ялсенче ҫамрӑксем тахҫанах ҫакнашкал пухусем туса ирттереҫҫӗ, пӗрле пухӑнса, тӗрлӗ ӗҫсем пирки сӳтсе яваҫҫӗ. Пирӗн ун пеккисем пулман-ха, паян пӗрремӗш хут пулать... Ҫавӑнпа та паян ытларах калаҫма тивет пулӗ.

Тарас хӑйӗн сӑмахне аякран пуҫласа, васкамасӑр, майӗпе илсе пычӗ. Вӑл патша вӑхӑтӗнчи хӑрушӑ пурнӑҫ ҫинчен, вунҫиччӗмӗш ҫулта Российӑра рабочи класс — ӗҫхресченӗсемпе пӗрле — мӗншӗн революци туни, революци хыҫҫӑн ҫамрӑк Совет республики ҫине тапӑннӑ интервентсемпе шалти тӑшмансене епле аркатса тӑкни ҫинчен, малашне пурнӑҫ епле пулса пымалли, пурнӑҫа юсаса аванлатмашкӑн, савӑнӑҫлӑ та телейлӗ пурӑнма пуҫламашкӑн хальхи вӑхӑтра вӑя хӗрхенмесӗр нумай ӗҫлемелли, кӗрешмелли ҫинчен каларӗ. Ҫамрӑксем ӑна шӑппӑн, ним хускалмасӑр, пӗр-пӗр халап итленӗ пекех интересленсе итлесе ларчӗҫ. Анчах унӑн сӑмахӗ мӗнпе вӗҫленессине никам та тавҫӑрса илеймерӗ-ха.

— Пирӗн ҫӗршыва, пирӗн пӗтӗм пурнӑҫа, ӑна юсаса малалла ярассине хальхи вӑхӑтра Коммунистсен партийӗ ертсе пырать,— терӗ Тарас малалла.— Коммунистсен партийӗ вӑл рабочи класӑн малта тӑракан отрячӗ пулса тӑрать. Коммунистсен партийӗсӗр пуҫне пирӗн тата ҫамрӑксен коммунистла союзӗ пур, ӑна кӗскен РКСМ теҫҫӗ. РКСМ-ра малта пыракан ӗҫҫамрӑкӗсем пӗрлешсе тӑраҫҫӗ. Илтнӗ-и эсир ун ҫинчен?

— Илтнӗ,— сас пачӗҫ пӗр-иккӗшӗ.

— Ҫамрӑксен коммунистла союзӗ, урӑхла каласан — РКСМ, Коммунистсен партин пӗрремӗш помощникӗ пулса тӑрать, вӑл ертсе пынипе ӗҫлет, ӑна пур ӗҫре те хӗрӳллӗн пулӑшать...

Тарас малалла комсомол ӗҫӗсем ҫинчен кала пуҫларӗ. Вӑл ку чухнехи ҫамрӑксен хӑйсен пӗлӗвӗсене сарса пырасси, тӗн сӗрӗмӗпе, тӗттӗмлӗхпе кӗрешсе культурлӑха хӑпартасси, ялхуҫалӑхне ҫӗнетесси, пур ӗҫре те малта

пырасси, ȩ̈çсыннисен пур тӗрлӗ тӑшманӗсемпе кӗрешесси çинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа пачӗ.

— Пӗр сӑмахпа, юлташсем, комсомолӑн çӗнӗ ялшӑн, çӗнӗ пурнӑçшӑн кӗрешмелле...

Вӑл самантлӑха чарӑнса, класра ларакансене тепре пӑхса çаврӑнчӗ те малалла каларӗ:

— Хальхи вӑхӑтра нумай ялсенче РКСМ ячейкисем тунӑ ӗнтӗ. Ак, сӑмахран, Уйкасрах пур вӑл. Вӗсем эпӗ халь çеç каланӑ ӗçсене тӑрӑшсах туса пыраççӗ. Эпир те хамӑр ялта çавӑн пек ячейка туса, ӗçлеме тытӑнас тетпӗр... Малтанах калатӑп: ку пӗтӗмпех ирӗклӗ япала. Комсомола никам та ирӗксӗрлесе çырма пултараймасть, унта çамрӑксем хӑйсен кӑмӑлӗ пулнипе çеç кӗреççӗ. Кам çырӑнас тет, çав çырӑнать... Çавӑн пек çеç. Ыйтса пӗлмеллисем пулсан, ыйтӑр, халех ӑнлантарса паратпӑр.

Класра ларакансем пӗри те чӗнмерӗç. Вӗсем пӗр-пӗрин çине пӑхкаласа илчӗç çеç. Пӗр-ик минут пек иртсен тин хыçалтан пӗр сасӑ:

— Унта çырӑннӑшӑн пире мӗн тухать?— терӗ.

Пурте каялла çаврӑнса пӑхрӗç. Ку ыйтӑва параканни — ялта кӑрчама пит ӑста тӑвакан пӗр хусах арӑм ывӑлӗ, тӑрри кӑшт шӑтӑкрах Микстур Михали тенӗскер пулнӑ.

— Шалу параççӗ сана, кунне çӗр тенкӗ,— тӑрӑхларӗ тахӑшӗ.

Çамрӑксем лахӑлтатса кулса ячӗç.

— Кулса мар, чӑнах ыйтатӑп,— ура çине тӑчӗ Микстур.— Ман вӑт тӑхӑнма ним те çук, мана шӑлавар парсан тем пекчӗ...

Каллех кулчӗç. Тарас шавлама пуçланӑ çамрӑксене шӑплантарса, кун пирки ӑнлантарса пачӗ, унтан татах ыйтусем пама сӗнчӗ. Ыйтусем ытла тӑруках пулмарӗç, анчах та майӗпе çамрӑксем хускала пуçларӗç-пуçларӗçех. Тӗрлӗрен тӗрлӗ ыйтусем çинчен пӗлесшӗн пулчӗç вӗсем. Тарас пурин кӑмӑлне те тултарчӗ. Ыйтусем пӗтсен, вӑл:

— Ну, ӗнтӗ, юлташсем, калаçса çитертӗмӗр пулас, урӑх ыйтса пӗлес текенсем çук курӑнать... Халь çырма пуçлӑпӑр,— терӗ.— Калӑр, камӑн çырӑнас кӑмӑл пур? Вӑтанса ан тӑрӑр...

Каллех, паçӑрхи пекех, малтанах никам та чӗнмерӗ, партӑсем хушшинче ларакан çамрӑксем каллех пӗрпӗрин çине пӑха-пӑха илчӗç çеç.

Тарас тепĕр хут каларĕ:

— Кам çырăнас тет? Калăр, хăраса тăмалли нимĕн те çук кунта. Ма нихăшĕ те чĕнместĕр?

Татах пĕр хушă шăп пулчĕ. Унтан вăта çĕрте ларакан Микиш аллине çĕклесе сасă пачĕ:

— Çыр мана...

Тарас çырса хучĕ.

— Тата кам?

— Эпĕ,— терĕ Микишпа юнашар ларакан Исай.

— Тата?

— Эпĕ... Петров Арсений.

— Аха, пăр тапранчĕ!— кулса илчĕ хăй ăссăн Тарас.— Халь каять ĕнтĕ. Тата кама çырас?

— Мана... Скворцов Иван.

— Мулгачов Николай...

— Ильмаков Петр.

— Тата кам?

Урăх çырăнакансем пулмарĕç. Тарас çамрăксене татах хавхалантара пуçларĕ.

— Мĕн тери йышлăрах пулатпăр, çавăн чухлĕ ĕçлеме авантарах пулать...

— Хĕрсене çырас пулать,— терĕ Арçук.— Ма çырăнмаççĕ вĕсем? Варук, Марине, мĕн шăлсене çыртса ларатăр?

— Эпир тăхтар-ха пăртак,— терĕ Марине, хăмла çырли тĕслĕ пулса кайса.

— Çырăнăр ĕнтĕ, çырăнăр,— ўкĕтлеме тытăнчĕç малтан çырăннисем ыттисене. Çавăн хыççăн тата темиçе çын алă çĕклерĕç. Пурĕ вара вунпĕр çын пухăнчĕ.

— Урăх çук-и ĕнтĕ?— ыйтрĕ Тарас, вунпĕрмĕшне çырсан.— Ну, малтанлăха ку та юрать...

— Хăвна çыртăн-и? — сас пачĕ тахăшĕ.

— Ах, чăнах та, хама мансах кайнă,— кулса ячĕ Тарас.— Çакăнта, аялтан та пулин çырса хурам-ха эппин... Халь ĕнтĕ ячейка ĕçне ертсе пымашкăн виçĕ çынран бюро суйласа хăварăпăр... Кама суйлас тетĕр? Калăр,— анчах та çырăннисем çеç калама пултараççĕ.

— Микиша!

— Сана хăвна!

— Коляна! Арçука!

— Исая!

— Çитĕ... Ан çыр урăх!

Сасăланă хыççăн бюрона Микиш, Коля, Тарас суйлан-

чеҫ. Тарас ҫитес пуху тепӗр пилӗк-ултӑ кунтан, ячейкӑна уездра ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн пуласси ҫинчен каларӗ те пухӑва хупрӗ. Ҫамрӑксем шавлӑн калаҫса, шӳт туса, кулса урамалла тухма пуҫларӗҫ. Анчах тула тухсанах, калаҫукулӑ шӑпланса ларчӗ: вӗсем урам тӑрӑх икӗ милиционер Каҫӑр Куҫмана — ял Совет председательне — илсе пынине курчӗҫ. Ялан пуҫне ҫӗклесе, ҫынсем ҫине йӑлт та ялт пӑхса ҫӳрекенскер, халӗ ҫамрӑксен тӗлӗпе вӑл темле хутланса, ҫӗрелле пӑхса иртсе кайрӗ.

— Куна та лектерчӗҫ иккен,— терӗ Микиш.— Шалҫи тулчӗ ӗнтӗ...

— Иливан пирки пуль-ха.

— Ӑҫтан пӗлен, тен, хӑех ӗҫлесе тупнӑ?

— Ара, иккӗш те пӗрлех пулнӑ ӗнтӗ...

— Ҫав кирлӗ!

* * *

Ҫамрӑксен пуххи пулни ҫинчен хыпар ҫав кунах пӗтӗм ялӗпе сарӑлчӗ. Пур ҫӗрте те Хветуҫ Тарасӗ ҫамрӑксене «комуна ҫырни» ҫинчен калаҫма тапратрӗҫ. Кам мӗнле пӗлет, ҫавна палкать, илтнӗ сӑмах ҫумне хӑйӗнчен хушса калать...

Лява Уртемӗ те илтрӗ кун ҫинчен, ҫавӑнтах Махоркӑна каласа пачӗ. Лешӗ ӑна тӳрех ял хушшинче сӑмах ытларах сарма хушрӗ:

— Ун пек ячейкӑсем вӗсем пире те чӑрмантарма пултараҫҫӗ, сан йышшисене те хӗсме тытӑнаҫҫӗ. Тымар яриччен кӗтсе тӑма юрамасть, ҫийӗнчех таптаса тӑкмалла. Пупа систер: вырсарникун калатӑр вӑл мӗн те пулин. Астутар ӑна: вӑл шайкка чӑн малтан чиркӗве пӗтерме тапратать, те.

Ӗҫле пуҫларӗ вара кулаксен «агитпропӗ...» Темӗн тӗрлӗ сӑмах-халап та, темӗн тӗрлӗ элек те сарма тытӑнчӗ ялта комсомол ҫинчен, унта ҫырӑннисем пирки. Комсомола ҫырӑннинчен хӑрушши те ҫук иккен ҫӗр ҫинче!

Пӗр ҫӑл кутӗнче хӗрарӑмсем калаҫаҫҫӗ:

— Илтнӗ-и эсир, ҫамрӑксем антихрист партине ҫырӑннӑ, тет.

— Улталаса ҫырнӑ, тет, вӗсене.

— Турӑран уйрӑлтӑм, тесе тупа тунӑ, тет.

— Кайран вӗсене таҫта илсе каяҫҫӗ, тет.

— Кашни ҫинех темле паллӑ ҫакаҫҫӗ пулать...

— Хӗрсем те пулнӑ, теҫҫӗ, унта...

— Камсем-ши?
— Варукпа Марине, теççĕ...
— Ах, кĕписене уçса вĕлтренпе пĕçертесчĕ пĕрре!
Килте ашшĕпе амăшĕ калаçаççĕ:
— Ванюк килмерĕ-и?
— Çук-ха, иртенпех таçта çӳрет.
— Çав арçури партине çыранма кайман-ши вăл?
— Ах, тур çырлахтăрах...
— Пĕр те пĕр çырăннă пулсан, эп ăна паянах килтен хăваласа кăларса яратăп. Ун шăрши те ан пултăр ман килте! Кăтартăп эпĕ ăна комун...

Тепĕр ирхине ирех Тарас патне Антун ятлă çамрăк чупса çитрĕ. Пăлханса кайнă, такамран тарса килнĕ пек хашкать хăй.

— Итле-ха, Тарас... Чĕрсе пăрах, тархасшăн, ман ята,— терĕ вăл макăрас пек сасăпа.

— Ма апла?
— Ахалех.
— Епле ахаль? Кала, мĕн пулнă?
— Килте вăрçаççĕ... Атте каçхине çапса пăрахмах тапратрĕ, киле те кĕртместĕп, тет. Ăçта каям эп, килтен хăваласа ярсан? Тархасшăн хурат...

— Юрĕ эппин, питех тухассу килет пулсан, хуратăп,— терĕ Тарас.— Пĕлетĕп мĕншĕн кун пек пулнине, элек сараççĕ пирĕн çинчен, анчах пурăна-киле вăл тĕрĕс марри курăнĕ акă. Ун чухне эсĕ те каялла çырăнăн, тата çĕнĕрен кĕрекенсем те нумай пулĕç. Астăвăн ман сăмаха.
— Тен, апла та пулĕ те, эс çапах ман ята хуратса хур...

Антун тухса кайрĕ çеç, Тарас патне тата иккĕн пырса кĕчĕç. Вĕсем те хăйсен ячĕсене хуратма ыйтаççĕ, вĕсене те çавнашкалах ашшĕ-амăшĕсем вăрçса ăнран кăларнă иккен, килтен ним памасăр хăваласа ярассипе, çиелтен ĕмĕрлĕх ылханассипе хăратса пĕтернĕ.

— Пултараймастпăр çырăнма, тем тусан та...
— Эпир сире ним тума та хатĕрленместпĕр-ха, анчах та эсир, ман шутпа, пустуй хăраса ӳкнĕ...

Тарас вĕсене татах ăнлантарма, ӳкĕтлеме тытăнчĕ, анчах лешсем итлесшĕн те пулмарĕç:
— Халех чĕрсе пăрах...
Список çинче хăйсен ятне хуратнине курсанах, вĕсем хăвăрт тухса кайрĕç.

— Ну, пулать те çав халăх,— терĕ Тарас вĕсем хыççăн кӳренӳпе пăхса юлса,— пасар кун çур пус тăмаççĕ...

Çав вăхăтрах Микиш пырса кĕчĕ...

— Ман килес,— терĕ вăл, сĕтел патне пырса.— Ыр кун пултăр.

— Пит ырах мар-ха çав паянхи кун...— ал пачĕ Тарас.— Ниме юрăхсăр, темелле.

— Мĕн тата?

— Эс пĕлместĕн-и? Ĕнер комсомола çырăннисем пĕрин хыççăн тепри каялла тапса сикеççĕ вĕт.

— А-а... Ăна пĕлетĕп.

— Эсĕ те, ăнсăртран, ятна хураттарма килмерĕн-и? Яра пар, чаракан çук.

Ку сăмахсем хыççăн Микиш аллинчи картузне аяккалла хучĕ те Тарас куçĕнчен кăмăлсăр пулса пăхрĕ.

— Ан мăшкăлла, Тарас. Манран нихçан та пулас çук вăл. Эс ман атте мĕнле вилнине пĕлетĕн-и?

— Ну?

— Вăл продразверстка вăхăтĕнче Янашвар кушта-нĕсем хĕненипе вилчĕ. Сывлăшĕ тухиччен темиçе сăмах çеç каласа хăварчĕ мана: хам пек пул, халăхшăн тăрăш, терĕ. Çав сăмахсене эп нихçан та манас çук. Ман атте пуян куштансемпе кĕрешсе вилнĕ, эпĕ те çав йĕрпех каятăп... Нимрен те хăрамастăп!

Халь çеç ача çулĕнчен тухнă вунçиччĕри йĕкĕт çакнашкал хĕрӳллĕ калаçни, калаçнă чух унăн куçĕ хастарлăхпа çутăлса тăни Тараса пит те кăмăла кайрĕ. Вăл çемçен кăна кулса илчĕ те, Микиш патне пырса, ăна хулпуççинчен лăпкаса илчĕ:

— Çук, эп ахаль каларăм...

Юлташсем пĕр вăхăт чĕнмерĕç. Унтан сăмаха Микиш пуçларĕ.

— Çапах та, мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ халь?

— Мĕн тăвăпăр? Ĕçлетпĕр!— терĕ Тарас.— Тепре каласан, нимех те пулман вĕт ытлашши. Хавшаккисем сирĕлчĕç çеç. Паян куна вĕсенчен усси те питех пулмастчĕ пуль. Анчах та, курăн акă, майĕпе каллех килеççĕ вĕсем пирĕн пата!

Тулта урам алăкĕ хыттăн уçăлса хупăнчĕ те, чӳрече тĕлĕпе Хăмăт Энтри чупнă пекех иртни курăнчĕ.

— Ку мĕн сăлтавпа килет-ши тата? — шухăшларĕ Тарас.— Ывăлĕ пирки мар-ши?

Унăн шухăшĕ тĕрĕсех пулнă. Хăмăт пӳрте кĕрсенех паллă пулчĕ вăл: ырă та сунмарĕ, ал та памарĕ, тӳрех кутнĕк çине ларса, Тараспа Микиш çине куçхарши айĕпе пăхрĕ те йывăррăн сывласа илчĕ.

— Мĕнле ыр хыпар пур, Энтри пичче?— ыйтрĕ Тарас, çав хушăрах хăрах куçĕпе Микиш çине пăхса илсе.

— Ытлашши нимех те çук,— терĕ хулăн сасăпа Хăмăт,— эпĕ хам ача пирки килтĕм.

— Ача пирки? Тем пулнă-и-мĕн? — юриех сисмĕш пулчĕ Тарас.

— Пуласси пулман та, пулма пултарать... хăшпĕрисене итлесе, вĕсем хыççăн кайсан... Хăйсем ухмаха ерни çитмест, тата ыттисене ертесшĕн хăйсемпе пĕрле!

— Мĕн çинчен апла эс?

— Çавăн çинченех!— сасартăк сиксе тăчĕ Хăмăт.— Сирĕн çинчен! Мĕн эсремет ушкăнне çырса хунă эсир ман ывăла? Как имел право çамрăка улталама?

— Чим-ха, Энтри пичче, йĕркипе калаç...

— Эп сан пиччу мар, эс ман шăллăм мар, неччу пирĕн нумай калаçса тăма. Ман сăмахăм кĕске: халех чĕрсе хур ман ывăл ятне! Не имеш права ун пек тума!

— Ара, ăна никам та вăйпа çырман вĕт,— хутшăнчĕ Микиш.

— «Вăйпа çырман!» Мĕн пĕлет вăл тăнсăр сурăх? Эсир тем те пĕр тыттарса тултарнă та — ал йăтнă ĕнтĕ вăл. Сирĕн чĕлхесем çуллă вĕт...

— Эс вара пире ултавçăсем выранне хуратăн-и?

— Чёрт выранне хуратăп, ним выранне те хумастăп! Çыхланмастăп та, калаçмастăп та! Хуратăр ман ывăл ятне, урăх ним те çук. А ешĕл тепре çавнашкал тусан, сирĕнпе урăхла та калаçĕç...

— Мĕн тусан?

— Ачасене ашшĕсенчен уйăрса, вĕсене хирĕç тăратсан, вăт мĕн!

— А кам апла тунă-ха? Итле-ха эс, Энтри пичче...

— Ним те итлеместĕп! Ан калăр эсир мана ним те! Хуратăр, тетĕп, халех!

Хăмăт вĕриленнĕçемĕн вĕриленме пуçларĕ, сак çинчен сиксе тăчĕ, кăшкăрнăçемĕн сĕтел патне çывхарса пычĕ. Унăн куçĕ темле улшăнса кайрĕ, тутисем кава карса чĕтреме тапратрĕç. Вăл кăшкăрни, сăмахсене суйласа тăмасăрах лаплаттарни Тараса самаях тарăхтарма

пуçларĕ, пĕр вăхăтра вăл ăна хирĕç кăшкăрса ярасси патнех çитрĕ, анчах та хăйне хăй тытса чарчĕ. Хăмăта текех пӳлмерĕ, пĕтĕмпех каласа пĕтерме пачĕ, унтан чĕлĕм чĕркесе тивертрĕ те лăпкăн кăна:

— Эс çапах та лар-ха, Энтри пичче,— терĕ.— Ура çинче чăнлăх çук, теççĕ. Йĕркеллĕн, пĕрне-пĕри хăратмасăр калаçăпăр. Кăшкăрас тесен, эпĕ те кăшкăрма пĕлетĕп, анчах мĕн усси унтан? Эпир кунта нумаййăн мар, хуллен каласан та илтетпĕр пĕр-пĕрне. Ме, чĕлĕм туртса яр...

Тарас çав тери пăлханмасăр, ним пулман пекех лăпкăн калаçнипе, Хăмăт нимле мар пулса кайса каллех сак хĕррине ларчĕ. Тарас панă табака чĕлĕмне тултарчĕ.

— Акă мĕн, Энтри пичче, чăн малтанах манăн хампа сана танлаштарас килет,— пуçларĕ Тарас, чикарккине мăкăрлантарса.— Эпĕ кам та — эс кам...

Çĕрелле пăхса, пăлхануллăн сывласа ларакан Хăмăт пуçне кăштах пăрса, Тарас çине ăнланман куçпа пăхрĕ.

— Мĕн каласшăн вара эс? — ыйтрĕ вăл.

— Çакна каласшăн... Эп сана питĕ аван пĕлетĕп ĕнтĕ, Энтри пичче. Эс хăвăн ĕмĕрĕнте яланах лаша пек ĕçленĕ пулин те, нихçан та çителĕклĕ пурнăçпа пурăнса курман. Ку çитмен те — леш çитмен... Теприсем пек ĕçкĕçикĕ тума мар — праçниксенче те сĕт-çупа аш-какай тăраниччен çимен, çура тухсан яланах кивçене кайнă. Çапла-и?

— Çапла пултăр,— терĕ Хăмăт, Тарас ăçталла пăрнине ăнланаймасăр.

— Эпир те çавнашкалах, ырă пурнăçпа пурăнман, пирĕн кашни çулах çимелли çитмен. Ăна пĕлетĕн ĕнтĕ эс.

— Пĕлетĕп...

— Ялти «ырă çын» тенисем, Лява таврашĕ пеккисем, пире нихçан та этем вырăнне шутламан, выльăх вырăнне хунă. Вĕсем урам варрипе утнă, эпир вĕсене курсан сапур çумне йăпшăннă. Çапла вĕт?

— Çапла та-ха вăл, анчах мĕн тума калатăн эс мана кун çинчен?

— Эпир иксĕмĕр те пĕрешкел çынсем, ялти чухăнсем пулнине кăтартса парас тетĕп.

— Ăна эп ахаль те пĕлетĕп.

— Пĕлни сахал, Энтри пичче, ăнланас пулать тата ăна... Эп те чухăн пулсан, эс те чухăн пулсан, пирĕн мĕн

пирки пĕр-пĕрне хирĕç пымалла-ха? Сăлтав пур-и ăна валли?

— Сăлтав? Мĕн сăлтавĕ пултăр...

— Тĕрĕс! Пирĕн, чухăнсен, пĕр-пĕрне хирĕç пымалла мар, пирĕн пĕр-пĕринпе пĕрлешмелле, пĕр шухăшлăн пулса, пĕр-пĕрне пулăшса пыма тăрăшмалла. Совет влаçĕ çапла тума вĕрентет. Сан шутпа мĕнле пек?

— Ара, пĕр шухăшлă пулни аван ĕнтĕ вăл. Ваттисем калашле, пĕччен сурать — типсе пырать, халăх сурать— кӳлĕ пулать...

— Çапла çав. Халь шутласа пăх ĕнтĕ: манăн сана усал тăвас шухăш пулма пултарать-и, çук-и?

— Çук пек те...

— Эс тӳррипе кала мĕн шутланине.

Тараспа Хăмăт куçĕсем тĕл пулчĕç те, вĕсем пĕр-пĕрин çине пĕр минут пек пăхса тăчĕç.

— Ăнланмастăп эп,— терĕ Хăмăт,— тем кирлĕ сана...

— Эс мана ывăлу пирки айăпларăн, çавăн пирки калатăп. Апла та капла улталанă, темскер эсремет ушкăнне çырнă, терĕн. Сан сăмаххусем тăрăх, эп ĕнтĕ сан ывăлушăн сиенлĕ япала туса хунă. Анчах та апла мар вăл, Энтри пичче, эс çав сăмахсене тивĕçлипе шухăшламасăр каларăн. Çавăн пек туйăнмасть-и сана хăвна?

Хăмăт чĕнмерĕ. Çунса пĕтнĕ чĕлĕмне тепĕр хут тултарчĕ те каллех мăкăрлантарма пуçларĕ. Пăлханни халĕ унăн пĕтĕмпех иртсе кайрĕ.

— Сан сăмаххусене тепĕр çын каланă пулсан, эп ăна тахçанах хулĕнчен çавăтса пӳртрен кăларса ямалла,— терĕ Тарас, Хăмăт сăнĕ епле улшăннине сăнаса.— Анчах сана ун пек тăвас килмерĕ, мĕншĕн тесен эс ăнланма пултаратăн пуль, тетĕп. Эпир çамрăксене пĕр ушкăна пухнăшăн хăрамалли те, ăна тиркемелли те çук, пире хирĕç пыма та кирлĕ мар. Мĕншĕнне каласа кăтартăп эп сана...

... Тараспа Хăмăт хушшинче лăпкă кăна калаçу пуçланса кайрĕ. Микиш те хутшăнчĕ. Хăмăт вара вăл кун нихçан илтмен тĕлĕнмелле япаласем çинчен пĕлчĕ. Тараспа Микиш пуçĕнче чăнах та аван шухăшсем иккен, ялта сарăлнă сăмахсем суя пулнă-мĕн!

Кăнтăрла çитеспе, килне тухса кайнă чух, вăл ырă кăмăлпах чăмăртарĕ икĕ йĕкĕт аллине:

— Ну, ан ятлăр эппин, ушипкă пулчĕ паян. Ывăла та пустуйранах пĕр-ик хут çурăм урлă пушăпа туртса

илтӗм. Эсир каланӑ пекех пулсан, валяй, ӗҫлӗр. Чармастӑп. Ялта хускатаканни кирлех вӑл. Эсир ҫамрӑк-ха, юн вӗри сирӗн, эсир пултармалла...

## 8. ЫРА ЁМЁТСЕМ

... Хирти калчасем, улӑхсенчи курӑксем ҫав тери ҫетсенлӗн симӗсленсе хӑпарчӗҫ, пахчасенче акнӑ ҫимӗҫсем те тикӗс ӳсрӗҫ, кӑҫалхи ҫул кӗлет пурисем те, нӳхреп-семпе пусӑсем те самаях тулли пуласси аванах курӑна пуҫларӗ. Анчах та ҫӗнӗ тырӑ пулас вӑхӑт пит вӑраххӑн ҫывхарса пычӗ, пурнӑҫ йывӑрланнӑҫемӗн йывӑрланчӗ, мӗншӗн тесен ял ҫыннисен ҫимеллисем веҫех пӗтсе ҫитрӗҫ ӗнтӗ. Ҫынсене выҫлӑх кунтан-кун хытӑрах пӑчӑртарӗ.

Тарас яла таврӑннӑранпа виҫӗ ҫын — старикпе карчӑк тата пӗр тӑлӑх арӑмӑн вуник ҫулхи хӗрачи выҫӑпа вилсе кайрӗҫ. Старикпе карчӑка унччен малтан вилнӗ чылай ҫынсене пытарнӑ пекех, ытлашши хӗрхенмесӗрех, куҫҫулӗсӗрех кайса пытарчӗҫ. Вӗсем вилни ял хушшинче палӑрсах та каймарӗ, анчах тӑлӑх арӑмӑн хӗрачи вилнӗ хыҫҫӑн чылай хушӑ калаҫрӗҫ.

Вӑл акӑ мӗншӗн пулчӗ. Хӗрӗ выҫӑ пирки чирлесе ӳксенех, ҫав арӑм, ӑна ытла та питӗ юратнӑ пирки, кунӗнҫӗрӗн хуйхӑрса, макӑрса пурӑннӑ, тет. Ӑна епле те пулин сыватма ӗмӗтленсе, кӑшт та пулин ҫимелли тупас тесе, нумай ҫынсем патне ҫитнӗ, анчах та никамран та нимӗн те тупайман. Юлашкинчен, Лява Уртемне малтанах парӑмлӑ пулнӑ пулин те, ҫавӑн патне кайса ыйтнӑ. Ун умне чӗркуҫленсех темиҫе кӗренке ҫӑнӑх пама тархасланӑ, тет, анчах лешӗ унпа калаҫса та тӑман, хӑваласа янӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн ҫак арӑм хӗрӗн пуҫ вӗҫӗнчен уйрӑлмасӑрах ларнӑ, хӑй татти-сыпписӗр, чарӑна пӗлмесӗр макӑрнӑ. Тепрер кунтан хӗрӗ вилнӗ, вара арӑм ҫавӑнтах ӑнран кайса ӳкнӗ. Пырать — кӑнтӑрла пулнӑ вӑл, ун патне кӳршӗ арӑмӗсем пынӑ-мӗн, атту пулсан хӑй те вилсе кайнӑ пулӗччӗ-и...

Тупӑка масар ҫине илсе кайнӑ чух ҫав хӗрарӑма ик енчен ик арҫын ҫавӑтса пынӑ, вӑл пӗтӗм ӑшчиккине таварса кӑлармалла ҫухӑрнӑ, пуҫӗнчи ҫӳҫне тӑпӑлтарнӑ. Тупӑк ҫине ҫиелтен тӑпра сапма пуҫласан, вӑл ҫынсен аллинчен вӗҫерӗнсе шӑтӑка сикнӗ, мана та пӗрле пытарӑр, тесе кӑшкӑрнӑ, ӑна аран-аран туртса кӑларнӑ, анчах та вӑл ҫавӑнтах улшу калаҫма пуҫланӑ, ҫынсенчен аяккал-

ла тарма тапратнă. Килне илсе пырсан, пĕр вăхăт лăпланнă пек пулнă, унтан сасартăк туй юрри юрласа янă, унччен те пулман — турăшсем çине пăхса сăхсăхма тытăннă, анчах темиçе самантранах кĕтеселле сиксе пырса, усал сăмахсемпе вăрçса, турăшсене çӳпĕ шăтăкнелле пеме тытăннă. Тепĕр ирхине ăна урапа çине çыхса хурса хулана ăсатнă.

Ку хыпара илтни Тараса йывăр шухăша ячĕ.

— Мĕнле чăткаласа irттерĕ-ши халăх? Чăтмалли вăхăчĕ нумаях та мар та, анчах ытлах та хĕн çав. Патшалăх паракан çимĕçсенчен пĕçерсе çитерекен столовăй пур ĕнтĕ, анчах вăл ачасем валли çеç, вĕсене те çителĕксĕр, тата — çитменне — пит начар ĕçлет тесе вăрçаççĕ ăна. Анне сывлăхĕ самайланчĕ халь, анчах малашне ăна та темле усрамалла-ха...

Каçхине, тен, Варука тĕл пулăп-и, тесе, вăл тăвалла тухса утрĕ. Анчах ун патне çитеймерĕ,— вăта урамра, пĕр пӳрт умĕнче темиçе çын ларнине курчĕ те вĕсем патĕнче чарăнчĕ. Çынсенчен пĕри хайхи ухмаха ернĕ арăм çинчен каласа парать-мĕн:

— Ним пĕлмиех аташса пычĕ, Йăвана та паллама-рĕ, тет...

— Ăçтан паллатăр ĕнтĕ вăл, ăсĕ картран тухса кайнă пулсан...

— Пĕр вăхăт текех: Уртем Лявонч, тархасшăн, турă пул, çăл мана!..— тесе кăшкăрчĕ пулать.

— Шел, аван çынччĕ. Такки пурнăç ăнмарĕ мĕскĕнĕн... Малтан упăшки хĕн курнă пирки асапланчĕ, халь хăй капла пулчĕ.

— Уртеме асăннă эппин... Леш, çăнăх ыйтма кайнă май пулĕ-ха вăл. Асту, Лява таврашĕнчен пулăшу илĕн! Раштавра юр памĕ.

Калаçу татăлчĕ. Çынсем шухăша кайса ним чĕнмесĕр ларчĕç. Каçхи нӳрлĕрех сывлăшра чĕлĕм тĕтĕмĕ йăсăрланчĕ çеç. Çав хушăра ту енчен Варуксен ашшĕ — Назар пырса тăчĕ. Пухăнса ларнисене ыр сунчĕ те, вĕсене кура чĕлĕмне майлаштарма тытăнчĕ.

— Пĕлме çук, хамăра та тем пулмалла-ха,— терĕ чылай вăхăт иртсен пĕри, Çĕтĕк Якку.—Питĕ йывăр вĕт... Эх, халь пĕр ик-виçĕ пăт тырă пулсассăнччĕ! Епле телей пулĕччĕ.

— Ăна ан та асăн ĕнтĕ,— терĕ куна хирĕç Назар.

— Малашне ăслăрах пулас пулать пирĕн, епле пул-

сан та тырă ытларах тума тăрăшмалла,— сăмах хушрĕ Тарас, пĕрене пуçне ларса.

— Çĕрĕ чăх çӳремелĕх çеç пулсан, ăçтан нумай тăватăн ăна? — кăмăлсăр ыйтрĕ Çĕтĕк Якку.— Мачча çине акаймастăн вĕт-ха!

— Ют çĕршывсенче сахал çĕр çинчех нумай тырă тăваççĕ...

— Ха! Ют çĕрсенче! Эс кайса куртăн-и-мĕн унта?

— Ун çинчен çыраççĕ, Якку пичче.

— Çыраççĕ! Çырма пулать ăна, эс мана туса кăтарт! Тет хыççăн кайма çук. Тепĕр чух шутсăр яка тыттарса хăвараççĕ.

— Чăнпа суяна уйăрма пĕлес пулать. Ют çĕршывсенче тырă-пулă пирĕннинчен темиçе хут лайăх акса туни çинчен эпир кĕнекесенчен çеç мар, пленра пулнисенчен те пĕлетпĕр.

Калаçăва Назар та хутшăнчĕ:

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ, Якку... Тарас чăн калать. Эп хам куçпах курнă ĕнтĕ ăна, мана суймалли çук. Анчах та унта ĕçлессе те пирĕн пек ĕçлемеççĕ çав, шатах машинсемпе ĕçлеççĕ те, çĕрне темĕн тĕрлĕ майпа та юсаса пыраççĕ.

— Пирĕн çук-ха вĕт вăл?

— Пурăна-киле — пулать.

— Хăçан пулать-ха?

— Тепĕр тесен,— терĕ Назар малалла,— нумай çĕрсене ахаль сая яратпăр вĕт эпир, ни ĕçленĕ — ни ĕçлемен...

— Ун пекки çук пирĕн,— хăй шухăшĕ çинех тăчĕ Якку.

— Епле çук?— тĕлĕннĕ пек ыйтрĕ Назар.— Суккăр мар пуль эсĕ? «Пиçен уйне» ăçта хуратăн?

— Мĕн вара?

— Сая каймасть-и-мĕн вăл? Çĕр аллă теçеттина яхăн сая каять!

— Епле сая каять, акатпăр вĕт? Инçерех пирки акман анасем юлкалаççĕ те ĕнтĕ...

— Кăçал кайса курнă-и эс унта?

— Кайман.

— Кайман пулсан ан та калаç. Çурри ытла ахаль выртать, акнисене те пиçен пусса илнĕ.

— Пĕлтĕр вăрлăх пулмарĕ те ара...

— Вăрлăх пулнă çул та çав манерлех ĕнтĕ, мĕн калăн! Çĕртен мăшкăллатпăр çеç.

Яккупа Назар хушшинчи тавлашу хĕрмех пуçларĕ, вĕсен тавлашăвне ыттисем те хутшăнса пычĕç.

Чăнах та, Энтриялĕн ялтан вуникĕ çухрăмра пĕр 150 теçеттина яхăн çĕр пулнă. Вăрçă умĕн темиçе çул малтан юлашки хут вунвиçĕ ял хушшинче çĕр йĕркеленĕ чухне сутăнчăк мишевейсем юри туса хăварнă, тет, çавна. Инçе пирки, вăл çĕрпе Энтрияльсем кирлĕ пек усă курайман. Ни вăхăтра çĕртме туман, ни тивĕçлипе сухаласа сÿрелеймен, çавăнпа та унти анасем çинче ялан пиçен чашкăрса ларнă, çавăн пиркиех вăл çĕре «Пиçен уйĕ» тесе ят панă. Пуринчен малтан унти çĕр чухăнсене, лашасăррисене усă сахал кÿнĕ. Вĕсем хăйсен анисене е вуçех акмасăр хăварнă, е пуянсене тара панă... Пуянсем кунти çĕре хапăл тусах тара илнĕ, мĕншĕн тесен çĕрĕ тутă, лайăх ĕçлесен, сĕтлĕ ĕне пекех пархатарлă пулнă...

Вăрçă тухиччен ялти хăшпĕр çынсем — вăл шутра Варуксен ашшĕ Назар та — кунта выселкă тăвасси çинчен те калаçкаланă-мĕн, анчах та вăрçă пуçланнă пирки ку ĕç пулса çитеймен.

... Тавлашура Çĕтĕк Яккăва путарса лартрĕç. Пурте пĕр шухăшпах килĕшрĕç:

— «Пиçен уйĕнчи» çĕр пĕртте начар çĕр мар, анчах усă сахал парать, мĕншĕн тесен ăна кирлĕ пек ĕçлени çук. Пуянсем çеç ырă кураççĕ вăл çĕрпе.

Варуксен ашшĕ хăйĕн тахçанхи шухăшне хушса хучĕ:

— Унта пурăнма куçас пулать, унсăрăн май тухмастех, кирек мĕн калăр. Пĕрре тапранса каймалла кăна та çав, эпир вырăнтан хускалма пит хăратпăр-çке! Унта акмалли çĕрĕ çеç мар, вăрманĕ те, çаранĕ те, шывĕ те пур... Эсĕ вăт юриех ман пата пыр-ха,— терĕ вăл Тарас еннелле çаврăнса,— эп сана планттине кăтартăп... Пĕр çирĕм-вăтăр килтен çав тери лайăх выселкă тума пулать!

Çавăнтах вăл выселкă çурчĕсене хăш вырăна лартсан, епле тусан аван пуласси çинчен калама тытăнчĕ. Кун çинчен Назар нумай шухăшланă иккен, пĕтĕмпех палăртса хунă. Унăн сăмахĕсемпе пурте килĕшрĕç, пĕр Çĕтĕк Якку çеç хăй иккĕленнине палăртрĕ.

— Тем-çке... Пиртен пулас çук пуль вăл. Ахаль те вăйсăр пурăнатпăр та, вырăнтан тапрансан пуçĕпех арканса кайăпăр.

— Вăл ĕçе пĕрле тăвас пулать, пĕр-пĕрине пулăшса,— терĕ ăна хирĕç Тарас.— Пурте пĕр шухăшлă пулсан, нимрен те хăрамалли çук. Ленин виçĕмçулах хрес-

ченсен эртельсем туса ĕçлемелли çинчен каланă. Эртельпе ĕçлекенсене патшалăх та пулăшать, кивçен машинсем парать...

— Эпир пĕрле ĕçлеме пĕлместпĕр-çке, пирĕн кашни хăйшĕн çеç çунать...

— Майĕпе хăнăхаççĕ! Çынпа çыннăн ĕмĕчĕсем пĕрешкел пулсан, вĕсем кирек хăçан та калаçса татăлма пултараççĕ.

— Тĕрĕс сан сăмаху,— çирĕплетрĕ Назар.

Килсене саланас умĕн вăл Тараса тепĕр хут чĕнчĕ:

— Эс, чăнах та, пыр-ха ман пата, планттине кăтартăп эп сана...

— Юрĕ, пырăп,— терĕ Тарас.

... Çĕрле ăшă çумăр çурĕ, анчах ирччен иртсе кайрĕ вăл. Пĕлĕт яланхи пекех тап-таса пулчĕ, хĕвел питĕ илемлĕн шуса тухса сарăлчĕ, çумăрпа йĕпеннĕ йывăçсем темле çамрăклаңнă пек курăнчĕç, унта та кунта кайăксем чĕвĕлтетрĕç.

Тарас пит лайăх кăмăлпа вăранчĕ те тӳрех каçхи калаçăва аса илчĕ. Пĕр вăхăт шухăшласа выртрĕ:

— Тулкăллă калаçрĕç... Ку «Пиçен уйĕ» пирки тĕплĕрех сӳтсе явас пулать. Чăнах та, пĕр 20—25 килпе куçса ларсан, хуçалăха тĕпренех çĕнĕлле туса пыма пулать... Пĕтĕм тавралăхшăн пример пултăр. Варуксен ашшĕ план пур, терĕ, халех кайса пăхас çавăн патне...

Çапла шухăшсемпе хăвăрт сиксе тăчĕ те тумланма тытăнчĕ.

* * *

Варукăн ашшĕ-амăшĕ çинчен эпир каласа кăтартнăччĕ ĕнтĕ. Питĕ ĕçчен, тăрăшакан, тирпейлĕ çынсем пулнă вĕсем. Ачи-пăчине те лайăх пăхса ӳстернĕ, йĕркеллĕ те ĕçчен пулма хăнăхтарнă; вĕсен ачисем, хăшпĕрисен пек, ял тăрăх йытă хăваласа чупман, çапăçса, ашкăнса çӳремен, кӳршĕсене тарăхтарман. Çавăн пиркиех Назар çемйи çинчен ялта ырăпа çеç асăннă. Çавăн пиркиех Варук хĕр çулне çитсен, ăна илес текенсем нумай пулнă, евчĕсем вуншар çухрăмран та пынă. Анчах та Варук — Тарас çара кайнă чух ăна çирĕп сăмах панăскер — каясшăн пулман, сăлтавне амăшне каласа панă. Назар кун çинчен пĕлсен хăйĕн хĕрĕн кăмăлне хуçас темен, темиçе сăмах çеç каланă ăна:

— Ну, асту, хăвăн кăмăлу, кайран пире ан ӳпкеленĕ пултăр...

Тарас яла таврăнсанах, Назар ăна сăнама тытăннă, хутран-ситрен арăмĕпе те калаçса илнĕ ун çинчен. Вăл коммунист пулнине пĕлсен, Назарăн шухăшĕсем ик еннелле кайма пуçланă, анчах Тарас унăн лашине вăрлама пынă бандита тытсан, ял хушшинче ялан сăпайлă та йĕркеллĕ пулнине курсан, иккĕленме пăрахнă. Хăй ăшĕнче вăл Варук Тараспа пĕрлешсен телейлĕ пуласса ĕмĕтленнĕ. Çав сăлтавпах, Варук çамрăксен пуххинче пулни çинчен пĕлсен те хĕрне сив сăмахпа чĕнмен. «Хĕрарăм ĕçĕ мар вăл пухусем тăрăх çӳресси»,— тенĕ çеç.

... Вĕсем патне Тарас кĕтмен çĕртен пырса кĕчĕ. Пырса кĕчĕ те, пӳртре никам та çуккине кура, алăк патĕнчех чарăнса тăчĕ. Анчах чăланта такам кăштăртатнине илтсен:

— Ман килес, ыр кун пултăр,— тесе сас пачĕ.

Чăлантан Варук пуçĕ курăнчĕ. Вăл тутăрсăр, çара пуçăн пулнă, çӳç пĕрчисем куçĕ çине аннă, пичĕ хĕрелсе кайнă. Тараса палласан, вăл пуçне часрах шалалла илчĕ.

— Иртсе лар... Эп пуçтарăнаймарăм-ха паян, пӳртре те ним латти те çук, ан тирке ĕнтĕ...

— Юрĕ-çке, эп хăна мар вĕт,— терĕ Тарас, тăрăхла сак çине пырса ларса.— Мана аçу кирлĕччĕ.

— Вĕсем аннепе иккĕш пахчана тухрĕç, халех кĕрет пуль.

Тарас пӳрт ăшчиккине пăхса çаврăнчĕ, унтан чӳрече çинче выртакан кĕнекене уçкалама тытăнчĕ. Темиçе страница уçсанах:

— Ку «Нарспие» кам вулать сирĕн?— тесе ыйтрĕ.

— Петюк шкултан илсе килнĕччĕ те... эп те вуларăм.

— Епле, кăмăла кайрĕ-и?

— Кăмăла кайма çеç мар, Маринепе иксĕмĕр вуланă чух куççулĕпех макăртăмăр, ачам.

— Çав териех-и вара?

— Çав териех пулмасăр?.. Мĕнле кăна çырма пĕлнĕ пуль!

— Ма?

— Ара, ытла та пурнăçри пек каласа панă. Сăмахĕсем те çав тери чĕре çумне пырса çыпăçаççĕ.

— Сирĕн те Нарспи пек пулас килчĕ пуль?— кулса илчĕ Тарас.

— Çук... Малтан хăюллă та вăл, кайран хăйне хăй пĕтерет. Эп апла тăвассăм çук, темле йывăр пулсан та, хăтăлма тăрăшмалла. Пурнăçа мĕншĕн пĕтерес?

Варук чӑлантан тухрӗ. Хӗр тумланма та ӗлкӗрнӗ. Пуҫӗнче сарӑ тутӑр, умӗнче илемлӗ кӗрен саппун, питӗ килӗшӳллӗ! Киленсех пӑхрӗ Тарас ун ҫине:

«Аван та-ҫке эс... Нарспирен пӗртте кая мар...»

Тултан ашшӗ кӗчӗ, вӑл пӗрре Тарас ҫине, тепре хӗрӗ ҫине пӑхса, вӗсене куҫӗпе виҫсе илчӗ.

— Хӑна пур-ҫке...

— Эп ӗнерхи пирки килтӗм,— терӗ Тарас.

— Леш планттӑ пирки-и?

— Ия ҫав.

— Юрать, юрать... Ҫиччас пӑхӑпӑр.

Варук пӳртрен килхушшинелле тухрӗ. Назар сентре ҫинчен пушӑтран тунӑ пештӗр илсе, ун ӑшӗнчен тӑрӑхла чӗркенӗ сарӑ хут туртса кӑларчӗ те сӗтел ҫине сарса хучӗ.

— Акӑ вӑл... Кур. Ҫак юпаран пуҫласа мӑн ҫул патне ҫитиччен, унтан хысна вӑрманӗ таран — пӗтӗмпех пирӗн ял ҫӗрӗ,— ӑнлантарса пама тытӑнчӗ Назар, шӗвӗр пӳрнине хут тӑрӑх шутарса.— Кунта акӑ вӗтлӗх, ку — ҫаран, ку леш Ҫутшыв... Калӑпӑр, выселкине ҫак тӗле, ҫырма хӗрнерех лартсан, пит аван пулать. Шывӗ те ҫывӑх, выльӑхсене кӑларма та вырӑн пур, тата кӗрхи-хӗллехи ҫилсенчен те хӳтӗ. Ку вӗтӗ вӑрманлӑ ҫырмара темиҫе уҫланкӑ пур, унта утар тума стайлӑ вырӑн. Ак ҫак тӗле пӗве тусан, кашни пахча хыҫӗнчех шыв пулать...

Назарӑн пур шухӑшӗсемпе те Тарас килӗшсе пычӗ. Вӑл килӗшнине кура, Назар пушшех хӗрӳллӗн каласа пачӗ хӑйӗн шухӑшӗсене.

— Тӑвас пулать вӗт ҫавна, тусассӑн, тупата майсӑр хӳхӗм пулать! Ҫынсем ҫӗнӗ ҫӗр шыраҫҫӗ, анчах та вӑл пирӗн ҫывӑхрах пур, шырама та кирлӗ мар, пӗр-ик ҫул ҫине тӑрса ӗҫлемелле ҫеҫ... Мӗнле шутлатӑн?

— Сан пекех шутлатӑп...

— Апла пулсан, хускатас пулать вӑл ӗҫе. Мӗнрен пуҫлассине пӗлетӗн ӗнтӗ эсӗ. Тусах ҫитерсен, пит чаплӑ ӗҫ пулӗччӗ!

— Юрӗ, Назар пичче, эпӗ кун пирки кирлӗ ҫӗрте калаҫӑп,— терӗ Тарас.— Анчах та, пуринчен малтан, ҫыннисемпе калаҫса килӗшес пулать. Нумайӑшӗ хирӗҫ тӑма пултараҫҫӗ.

— Камсем хирӗҫ тӑччӑр?

— Чухлаймастӑн-и? Ӗлӗк вӑл ҫӗртен ыр курса пурӑннисем. Курӑн акӑ, мӗн пулӗ...

Назар аллипе сулчĕ:

— Халăха хирĕç ним те тăваймаççĕ вĕсем! Çĕр — пирĕн, халăхăн. Совет законĕ пур ун пирки. Çитет ĕнтĕ вĕсене ĕлĕк ашкăнни те.

... Тата чылай вăхăт сăмах вакласа ларсан, Тарас киле кайма ура çине тăчĕ. Назарпа вĕсем пĕр шухăшлă пулчĕç ĕнтĕ: «Пиçен уйне» куçас ыйтăва халех хускатмалла, çынсен кăмăлне çавна майлă çавăрмалла. Çенĕхре Тарас тултан кĕрекен Варука тĕл пулчĕ. Вĕсем пĕрпĕрине куçран пăхса илчĕç те Тарас Варука хулĕнчен хуллен кăна тытса чăмăртарĕ:

— Қаçхине тух...

— Юрĕ,— терĕ Варук, килтисенчен кам та пулин курасран часрах шалалла кĕрсе.

## 9. ТӲСМЕ ÇУК МĂШКĂЛ

Урампа анаталла аннă чухне Тарас пĕр килхушшинче ачасем йышлăн шавланине илтрĕ. Сахалтан та хĕрĕхаллă ача пухăннă та çĕмĕрлеççĕ çеç... Кун чухлĕ ача-пăча мĕншĕн пухăннине малтанах ăнланаймарĕ вăл, унтан, ку Мамун килĕ пулнине асăрхаса, тавçăрса илчĕ: ачасем столовăйне пынă иккен.

«Кĕрсе пăхас-ха юриех, мĕнле çитеркелеççĕ вĕсене?»— тесе шухăшларĕ те вăл, ачасем патне пычĕ.

— Апат çиме килтĕр-и, шăнкăрчсем?

— Апат çиме-е...

— Ăçта çитереççĕ сире?

— Пӳртре-е.

— Ма кĕместĕр эппин?

— Инки кӳртмест те, халех мар, тет те...

— Епле, апачĕ тутлă пулать-и?

— Тутлă-ă...

— Тăранма çитет-и?

— Çитмест ça-ав...

Пӳрт алăкĕ умне Мамун матки — хыткан, тăсланкă хĕрарăм тухрĕ те ачасем çинелле:

— Кĕрĕр, катăршни полкки!— тесе кăшкăрчĕ. Ачасем харăсах пӳрт патнелле ыткăнчĕç, тăрук пырса тулнипе алăкра хĕсĕнсе ларчĕç, пĕр-иккĕшĕ сухăрса яма та ĕлкĕрчĕç. Мамун арăмĕ татах кăшкăрчĕ:

— Э-э, шуйттан ачи-пăчи! Акă, çапă илĕп те пĕрре!..

Çавăнтах ик-виç ачана çурăмĕсенчен чышкаласа та илчĕ.

Ачасене кун пек туни Тараса питӗ тӗлӗнтерчӗ: вӗсем пӳрте кӗрсе пӗтсен, шалта мӗнлине курас тесе, вӑл та хыҫҫӑн кӗчӗ. Пӳртре саваламан хӑмасенчен тукаланӑ темиҫе ансӑр та вӑрӑм сӗтел ларать иккен, вӗсем тавра сак пеккисем тунӑ, анчах саккисем питӗ лутра, ачасем ларсан, сӗтел хӗрри вӗсен янахӗсем тӗлӗнчен пулать. Урайӗнче тахҫанхи ҫӳп-ҫап, таса мар, нихҫан ҫуман пекех. Кусем татах тӗлӗнтерчӗҫ Тараса.

— Неушлӗ никам та килсе пӑхмасть ҫакна? Вӑт, пулать те-мӗн халӑх!..

Мамун арӑмӗ пысӑк хура витререн ачасем умӗнчи тӑм чашӑксем ҫине пӗрер ҫӑпала шӳрпе ярса, кашнин умне пӗрер пӗчӗк татӑк ҫӑкӑр хурса пачӗ те, Тарас ҫине темшӗн сиввӗн пӑхса илсе, тулалла тухрӗ. Выҫӑ ачасем каҫса кайсах ҫиме тытӑнчӗҫ. Тарас сӗтел патнерех пырса, чашӑксенчи апат ҫине пӑхрӗ: унта темле кӑвакрах пӑтранчӑк шыв янӑ, шывра хура чӑмӑрккасем ярӑнса ҫӳреҫҫӗ.

— Хури мӗн вӑл?— ыйтрӗ Тарас пӗр ачинчен.

— Хури-и? Кӑмпа. Типӗтнӗ кӑмпа!

— Тата мӗн янӑ?

— Тата... пӑрҫа янӑ.

Ача, чашӑкра пӑрҫа тупма хӑтланса, кашӑкӗпе чылай ухтарчӗ, аран-аран темиҫе пӗрчӗ тытса кӑларкаларӗ.

— Акӑ...

— Ну, ҫиех, ҫиех...

Тарас пуҫне сулса тарӑннӑн сывласа илчӗ те алӑк патнелле пӗр-ик утӑм ярса пусрӗ ҫеҫ — сасартӑк ачасенчен пӗри шариех кӑшкӑрса ячӗ:

— А-а-а!..

— Кушаккайӑк!— кӑшкӑрчӗ тепри.

— Шӑши!..

Тарас хӑвӑртрах каялла ҫаврӑнса пычӗ.

— Мӗн пулчӗ, ачасем?

— Уҫӑп чашкинчен шӑши тухрӗ!

— Чӑнах-и?

— Ав выртать...

Ачасем кашӑксене пӑрахсах, шӑши тупса кӑларнӑ ача тавра пухӑнчӗҫ. Тарас калама та ҫук тарӑхса кайрӗ. Часрах ҫенӗхе тухрӗ те, кӗлет умӗнче тем туса тӑракан Мамун арӑмне чӗнсе илчӗ:

— Инке! Кӗр-ха наччас.

— Мӗн тума?

— Кӗр-ха, кӗр. Ӗҫ пур.

Мамун арӑмӗ кӗчӗ, Тарас ӑна тӳрех сӗтел ҫинче вырттакан йӗпе шӑши вилли ҫине тӗллесе кӑтартрӗ:

— Мӗн ҫак?

— Ӑҫтан тупрӑр кӑна?— сив куҫпа пӑхрӗ Мамун арӑмӗ.— Ачасем сӗтӗрсе килнӗ пуль ӗнтӗ...

— Ачасем мар ҫав, какай вырӑнне ярса пӗҫернӗ эсир ӑна!

— Эс пустуй ан калаҫса тӑр кунта, суккӑр куртӑн-и мӗн мана?

— Ӑна пӗлместӗп эпӗ, анчах та шӑши ҫак ача чашкинчен тухрӗ! А̂кӑ, пурте курчӗҫ... Тунса тӑмалли ҫук!— татса хучӗ Тарас.— Мӗн хӑтланатӑр эсир? Тӳсме ҫук мӑшкӑл вӗт ку! Темле пулсан та, ку япалана ахаль ирттерсе ямастпӑр, калаҫатпӑрах халӑх ҫинче.

Мамун арӑмӗ, ҫак сӑмахсене илтсен, сасартӑках кӑшкӑрса пӑрахрӗ Тараса:

— Эс мана ан хӑрат! Ҫакӑн чухлӗ салаттуй каманди валли ху пӗҫерсе пӑх-ха эс малтан, курӑн вара!

— Пултараймастӑн пулсан, ҫыхланма кирлӗ мар.

— Эпир мӗн, вӑйпа ҫыхланнӑ-и? Пире халӑх хушнӑ!

— Халӑх хушнӑ пулсан, ӗҫе лайӑхах тӑвас пулать...

— Санран пырса вӗренмеллеччӗ пуль... Ай, столовӑя хӑвӑн аллуна ҫавӑрса илес килет-и? Ҫавӑнпа ланккаса килтӗн пуль-ха? Пӗлетпӗр эпир сирӗн пеккисене!

— Мӗн пеккисене?

Кунта калаҫса тӑнинчен усси пулас ҫуккине кура, Тарас Мамун арӑмне кӗскен кӑна:

— Пухура, халӑх умӗнче ответ тытӑн!— терӗ те тухса утрӗ. Лешӗ ун хыҫҫӑн ним майсӑр усал сӑмахсемпе вӑрҫса, ҫӗтӗлсе юлчӗ.

«Епле ирсӗр япала! Халех тӗрӗслес пулать ку ӗҫе...»— тарӑхса шухӑшласа пычӗ Тарас.

Килте Микуль столовӑй пирки тата тепӗр япала каласа кӑтартрӗ. Иккӗмӗш черетри ачасем ҫинӗ чух пӗр арӑм пычӗ, тет те, ман хӗрачана мӗншӗн улталаса ятӑн, ҫӑнӑх ултӑ кӗренке вырӑнне — пиллӗк те тухмарӗ, тесе каларӗ, тет. Мамун арӑмӗ ун ҫине кӑшкӑрма, ӑна тем те пӗр калама пуҫларӗ, тет. Юлашкинчен ҫапӑҫсах кайрӗҫ, тет, иккӗшӗ. Леш ҫӑнӑх хутаҫҫипе ҫапрӗ, тет. Мамун арӑмӗ алтуйипе тӳпелеме тапратрӗ, тет. Ҫынсем чупса пырса ӑрчӗҫ, тет, вара...

* * *

Столовăйĕнче мĕн пулса иртни çинчен часах пĕтĕм ял пĕлчĕ, мĕншĕн тесен киле таврăннă хыççăн ачасем кашниех хăйсен ашшĕ-амăшĕсене каласа панă, тата ун пек усал хыпар ахаль те пит час сарăлать. Пур çĕрте те кун пирки хаяррăн калаçрĕç.

Тарас чĕнтернипе, каçхи кӳлĕмпе ун патне — пĕрин хыççăн тепри—комсомола çырăннă çамрăксем пухăнчĕç. Сăмах каллех паянхи истори тавра çаврăнчĕ, çамрăксем столовăйĕнче унччен малтан пулнă ирсĕрлĕхсем çинчен каласа пачĕç. Тĕрĕссипе каласан, столовăй мĕн уçăлнăранпах ним латтисĕр ĕçлесе пынă иккен, ун пирки часчасах харкашусем пулса иртнĕ. Пурне итлесе сăмах вакланă хыççăн Тарас çапла шут туса хучĕ:

.— Текех кун пеккине тӳссе пурăнма юрамасть, ку ĕçе шанчăклă çын аллине парас пулать. Халь пĕтĕм шанчăк — столовăй çинче, вăл йĕркеллĕн ĕçлесен çеç ачасене çĕнĕ тырăччен усракалама май пулать.

Ку шухăшпа пурте килĕшрĕç.

— Кама шанса пама юрать-ши?— ыйтрĕ çамрăксенчен пĕри.— Каллех кукăр алăллă çынна парас марччĕ...

— Ăна тупăпăр,— терĕ Тарас,— неушлĕ вара пирĕн ялта тӳрĕ кăмăллă çын пĕрре те çук?!

Сăмах ялти урăх ĕçсем çине куçрĕ. Пуринчен малтан, ял Совечĕ пирки хускатрĕç.

— Иливанпа Каçăр Куçмана тытса кайнăранпа эрне те иртрĕ ĕнтĕ, анчах мĕншĕн-ха вĕсем çинчен нимĕнле сас-хура та илтĕнмест? Ялта хуçасăр пурăннă пек пулса тухать вĕт-ха капла,—терĕ Исай.

— Вăл-ку кирлĕ пулсан, никам патне те кайма çук.

— Кусене хупса лартнă-тăк, çĕнĕрен суйлас пулать...

— Ялĕнче ĕçĕ тем чухлех халь. Хĕллех калаçса татăлнăччĕ: Мăн çырмапа Хăямат кĕперĕсене халех юсамалла. Тулли лавпа пырса кĕме те хăрушă вĕсем çине, кĕлте кӳртнĕ чух тем курмалла пулать-ха...

— Униче картисем те юхăнса выртаççĕ.

Тарассен килхушшинче çынсем калаçнине илтсен, Павăл пичче йăкăшт кăна карта урлă пăхса илчĕ. Кунта пĕтĕмпех çамрăксем пухăннине курсан, юриех интересленчĕ вăл: «Ку ĕне чĕрни пусман халăх мĕн çинчен калаçать-ши?» тесе шутларĕ. Анчах та çамрăксем кирлĕ ĕçсем çинчен калаçнине кура—тӳсеймерĕ, сăмах хушрĕ:

— Тарас Петровччă, мана — ват çынна — калама юрать-и?

— Ма юрамасть, калаçсам, — терĕ Тарас, ытти пур çамрăксемпе пĕрлех ун еннелле çаврăнса пăхса.

— А вăт эсир çĕр валеçес пирки мĕн шутлатăр? Çĕртме умĕн çĕр валеçес пулать вĕт пирĕн, мĕншĕн тесен вилекенсем те, çуралакансем те пулчĕç...

— Ку та тĕрĕс,— хушса хучĕ Микиш.

— Ăна та ял Совечĕсĕр тума çук.

— Тата шкула та юсамалла,— терĕ малалла Павăл пичче,—унта пĕр юрăхлă кăмака та çук, пĕренесем хушшипе хĕлле çил ачисем чупаççĕ. Ĕç çине тухса кайиччен тăвас пулать çавна...

Калаçнăçемĕн палăрса пычĕç ялти халăх тумалли ĕçсем. Пĕрне те вăраха яма юрамасть, вĕсене вăхăтра тумасан, ялти пурнăç каллех йĕркеллĕ пулмасть. Пур ĕçсене те пуçарса яракан, ертсе пыракан кирлĕ, анчах та вăл çук-ха паян кун...

— Ыран эсĕ мĕн тăватăн?—ыйтрĕ Тарас Микишрен, калаçусем пĕтсен.— Ерçетĕн-и?

— Ерçетĕп, ытлашши нимех те çук.

— Апла пулсан, эпир иксĕмĕр вулăса кайăпăр. Тен, хуланах çитĕпĕр. Хускатсаваскатас пулать унта та. Каппа май килмест.

— Эсир вара унта пĕтĕмпех каласа парăр,—терĕ Павăл пичче.—Çĕр пирки те ан манăр...

* * *

... Тĕттĕмленсен, Тарас Варук патне тухса утрĕ. Варук ăна яланхи вырăнтах, лаç пуçĕнчи каска çинче кĕтсе ларать-мĕн. Пĕркунхи пек мар, халĕ вăл Тарас аллине хăюллăн тытса чăмăртарĕ те тӳрех хăйпе юнашар ларма сĕнчĕ. Тарас та, çăварĕнчи чикарккине туртса пĕтерсенех, сылтăм аллине унăн çурăмĕ хыçнелле ячĕ. Калаçмалли сăмахсем часах тупăнчĕç.

— Ну, паян ирхине çав тери хăратса пăрахрăн эс мана,—терĕ Варук.

— Мĕнпе?—тĕлĕнерех ыйтрĕ Тарас.—Ниушлĕ эп çав териех хăрушă? Кашкăр пекех-и?

— Ара, тăрук пырса кĕтĕн те...

— Мана аçу ĕçпе чĕннĕччĕ.

— Сисрĕм.

— А эс мана ма пынă пуль терĕн?
— Ним шутлама та пĕлмерĕм...
— Хăвна çураçма пынă, темерĕн-и?
— Çу-ук...
Тарас кулса ячĕ:
— Ун пек пулма пултараймасть-и-мĕн?
— Эп ăçтан пĕлеп... Сан пуçăнта тем шухăш...— Варук Тарас çине чеереххĕн пăхса илчĕ те куларах каларĕ:
— Кам пĕлет, тен... санăн тахçанах тĕллесе хуни пур... пĕр-пĕр çӳлĕ пушмаклăскер, кĕске сараппанлăскер...
— Тĕрĕс калатăн, тĕллесе хуни пур çав манăн, тунмастăп,—терĕ куна хирĕç Тарас, сăмахĕсене тăсарах, Варука хăй çумнерех тайăлтарса.—Пĕлетĕн-и эс çавна?
— Çук, пĕлместĕп.
— Итле эппин. Тахçанах тĕллесе хунă эп ăна, çара кайиччен... Анчах вăл çӳлĕ пушмак та, кĕске сараппан та тăхăнмасть, ăна сарă тутăрпа кĕрен саппун питĕ килĕшет...
Варук хăй çиччен каланине сисрĕ те Тараса хулпуççийĕнчен хуллен кăна тĕртрĕ:
— Ан кулса лар...
— Пĕртте кулмастăп.
— Ĕненес килмест ман сана...
— Мĕншĕн?
— Арçынсене пурне те ултавçă, теççĕ.
— Мĕнле арçын вĕт... Пур çынна та пĕр виçепе виçме юрамасть.
— Апла та... Кам пĕлет...
Варук хулĕнчен Тарасăн айăкне çемçе ăшă çапрĕ. Вăл ăшă майĕпеле пĕтĕм шăмшака сарăлса, ăна темле çав тери тутлăн ӳсĕртнĕ пек тăва пуçларĕ. Пĕр вăхăтлăха Тарас пуçĕнчен пур шухăшсем те вĕçсе тухрĕç, вăл çав хăй савнин ăшшине çеç туйрĕ. Сисмесĕрех, вăл сасартăк Варука мăйĕнчен ыталаса илчĕ те, унăн питне хăй еннелле çавăрса, вĕри тутинчен хыттăн чуптурĕ. Темиçе самант хушши сывламарĕç вĕсем, хĕрӳленсе кайнă чĕрисем çеç час-час тапрĕç...
— Яр...— терĕ Варук, сывлăш пĕтсе çитнипе пуçне аяккалла пăрса.— Вĕлеретĕн...
Унтан вĕсем пĕр хушă шарламасăр ларчĕç. Тикĕс сывлама пуçласан, малтан Варук сăмах хушрĕ:
— Лаша пекех вăйлă-çке эсĕ...

— Пулма пултарать,— терĕ Тарас.— Çамрăк чух ик алăпа икшер пăт çĕклеттĕмччĕ. Ахальтен мар тимĕрç лаççинче ĕçленĕ пуль.

— Халь ватă ĕнтĕ,— кулса ячĕ те Варук, ăна питĕнчен ачашшăн лăпкаса илчĕ.— Ăçтан килсе тухрăн эс ман тĕле...

Пĕркунхи пекех, вĕсем нумайччен кăмăллăн калаçса, чĕрисене йăпатса ларчĕç. Пĕркунхи пекех вĕсен пĕр-пĕринчен уйрăласси килмерĕ, хĕвелтухăçĕ хĕрелме пуçласан тин вĕсем пĕр-пĕрин аллине хыттăн чăмăртаса:

— Тепреччен,— терĕç.

## 10. ТĂШМАНСЕМ ПАРАНАСШĂН МАР

Икĕ кун çухалса пурăнчĕç Тараспа Микиш. Виççĕмĕш кунне кăнтăрлапа тин таврăнчĕç яла, анчах иккĕшĕ кăна мар, вĕсемпе пĕрле икĕ лавпа темле палламан çынсем килчĕç те тӳрех шкула кĕрсе вырнаçрĕç. Кăштах тахтасан, яла тата тепĕр лав пырса кĕчĕ, ун çинче ик енче икĕ милиционер, варринче Иливанпа Кaçăр Куçма вырнаçнăччĕ.

Кун пек çынсем килсе тулнинчен тĕлĕнсе, шкул тавра малтан вĕт-шакăр ачасем, унтан пысăкраххисем те, ваттисем те пухăна пуçларĕç. Тĕрлĕрен калаçрĕç кун пирки, вулăсри (кам пĕлет, тен, уездри?) çынсем кун пек йышлăн мĕн тума килни тата Иливанпа Кaçăр Куçмапа мĕншĕн яла илсе килни çинчен апла та капла шухăшласа пăхрĕç.

— Ĕлĕк пулсан, халăх умне сарса хурса юн пĕрĕхичченех пĕçертетчĕç ĕнтĕ вĕсене,— терĕ çитмĕл çула çитнĕ Тимахви мучи, çамрăкраххисем калаçнине итлесе.

— Эс кам пирки калатăн?

— Иливанпа Куçма пирки ара...

Тараспа пĕрле килнĕ çынсем — партин вулăсри комитечĕпе вулĕçтăвком Энтриялĕнчи пурнăçа, чăн малтан ял Совет ĕçне пур енчен те тĕрĕслеме янă комисси пулнă. Тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн айăплисене патĕнчех, ял халăхĕ умĕнчех суд тума хушнă. Çул çинчи тусанран тасалсанах, комисси членĕсем ушкăнĕпех Мамун патне столовăйне кайрĕç. Унта вĕсем шăпах ачасене апат çитернĕ тĕле пычĕç, хăшĕсем апатне те, çăкрине те тутанса пăхрĕç, ăçта епле пĕçернине сăнарĕç, унтан Мамуна халех шкула пыма хушса хăварчĕç.

— Асту, приход-расходсене çырнине манса ан хăвар,— асăрхаттарчĕ ăна Тарас, ыттисенчен каярах юлнăскер.

— Сансăрах пĕлетпĕр,— шур куçпа пăхса илчĕ ун çине Мамун. Унтан ăна хулĕнчен тытса самантлăха чарчĕ те:— Пирĕн çула урлă тăтăн эппин? Курăпăр-ха малашне, тен, тĕл пулма тӳр килĕ!— терĕ.

— Ан хăрат, Мамун пичче, эп ытлашши хăравçах мар, куркаланă,— татса хучĕ Тарас.

Вăл тухса кайсан, Мамун сĕтел ещĕкĕнчен тĕрлĕ хутсем кăларса, чылайччен вĕсене майлаштарса ларчĕ. Унтан урамалла тухрĕ, анчах та малтан шкула мар, хăйĕн хунчăкăшĕ — Лява Уртемĕ патне кайрĕ, унпа пĕр çур сехет пек калаçса ларсан тин хăйне чĕннĕ çĕре утрĕ.

Шкула таврăнсанах, комисси председателĕ — типшĕм кăна сарă çын, кăштах сăмса витĕр калаçаканскер — Тараса каç валли пуху пухтарма хушрĕ. Хăй, комиссин ытти членĕсемпе пĕрле, Мамун илсе пынă хутсене тĕрĕслеме тепĕр пӳлĕме кĕрсе ларчĕ те каçченех, халăх пуханиччченех, тухмарĕ унтан. Пӳлĕмрен ăнланмалла мар калаçу тата шут шăрçисем шаклатни çеç илтĕнчĕ.

Пухăва халăх вăхăтра пухăнчĕ: ытти чухнехинчен раснах, паян çынсем пуху пуçланасса шавламасăр кĕтрĕç, пĕрне-пĕри хăйсен шухăшĕсене шăппăн пĕлтерчĕç. Ытти чухнехи пек нумай кĕтсе тăма та тӳр килмерĕ, шкул класĕ тулсанах, вулăсран килнĕ комисси председателĕ пухăва пуçласа ячĕ. Павăл пиччене, Хăмăт Энтрине, комсомолецсенчен Исая президиума суйланă хыççăн вăл сăмах калама пуçларĕ.

— Эпир сирĕн пата пит пысăк ĕçпе килнĕ, юлташсем... Сирĕн ялти Совет председателĕпе секретарĕ — халь хыçалти пӳлĕмре ларакан Каçăр Куçмапа Иливан — икĕ çул хушши вĕçĕмсĕр сăтăр туса пурăннă. Халăхшăн тăрăшас вырăнне, вĕсем халăха çаратса, хăйсен кĕсйисене тултарнă, тӳсме çук преступленисем тунă... Следстви ăна пĕтĕмпех кăтартса пачĕ. Халь эпир вĕсене суд умне тăратса, совет законĕсем тăрăх айăплатпăр, вĕсене пысăк наказани пама тивĕçлĕ. Анчах та, суд тăвиччен малтан, вĕсен ирсĕр сăн-сăпатне тата лайăхрах палăртас тесе, эпир сирĕнпе калаçас терĕмĕр. Тен, вĕсен тата нумай айăпĕсем, пӳтсĕр ĕçĕсем палăрмасăр юлнă пулĕ. Эпир сирĕнтен паян çакăнта вĕсем çинчен мĕн пĕлнине ним пытармасăр каласа парасса кĕтетпĕр. Хăраса

тăмалли нимĕн те çук кунта, преступленисене тăрă шыв çине кăларма пулăшни — хисеплĕ ĕç вăл...

— Эс малтан хăвăр мĕн пĕлнине каласа кăтарт,— терĕ хыçалтан пĕр сасă.— Ҫайран вара эпир те хушса калăпăр, тен.

Пурте çак сасă еннелле çаврăнса пăхрĕç. Ку сăмахсене Ҫĕтĕк Якку каланă иккен. Ял Советĕнче пулнисем ăна пит те тарăхтарнă пулас, çавăнпа та вĕсем çинчен вăл халь çирĕппĕн калама ĕмĕтленнĕ.

— Эпир пĕлни акă мĕн,— терĕ комисси председателĕ.— Вĕсем тĕрлĕ вăрă-хурахсемпе, бандитсемпе çыхланнă, вĕсене пулăшнă... Вăрланă лашасене сутмашкăн суя хутсем туса панă, Совет влаçĕ чухăнсене пулăшма паракан вăрлăхсене, тĕрлĕ таварсене ултавлă майсемпе хăйсем валли çавăрса илнĕ тата хăйсен çывăх çыннисене валеçсе панă.

Итлесе ларакан халăх сĕрлеме пуçларĕ:

— Вăт, шуйттан пуçĕсем!

— Хура юнсем...

— А эпир ним шарламасăр пурăнатпăр.

— Персех пăрахас пулать вĕсене...

Ҫомисси председателĕ, пĕр хушă чарăнса тăнăскер, малалла калама пуçларĕ.

— Мĕнле çитменлĕхсем, кăлтăксем, йĕркесĕрлĕхсем çинчен пĕлетĕр, пĕтĕмпех каласа парăр. Вĕсене пĕтермешкĕн — вĕсем çинчен пĕлес пулать вĕт. Сăмахран, столовăй пирки каласа кăтартма пултаратăр, унта та ĕçсем йĕркеллех мар пулас...

— Ачасен тӳпине вĕсем пĕрле çисе пурăнчĕç!— илтĕнчĕ хыçалтан.

— Ҫакай вырăнне шăши пĕçереççĕ!..

— Пĕр сăмахпа,— терĕ комисси председателĕ,— каллех калатăп: хăвăра çаратса, кӳрентерсе пурăннă çынсене хĕрхенсе ан тăрăр, вĕсем сире хĕрхенмен...

...Шкулта пуху пуласси çинчен пĕлсен, Лява Уртемĕ те шкула кайрĕ. Унта пырсан шала кĕмерĕ вăл, çынсем мĕн калаçнине çенĕхри алăк хыçне хĕсĕнсе тăрса итлерĕ. Шалтан илтĕнекен кашни сăмах ун чĕрине пырса касрĕ, пырĕ патне темскер капланса пычĕ. Ирĕк пулсан, унта ларакансене вăл çавăнтах темскер те пĕр каласа, пĕрерĕн-пĕрерĕн лапчăтма хатĕр пулчĕ, анчах халĕ ним тума та çуккипе хытăран хытă тарăхса тăчĕ.



Комисси председателĕ чĕнсе калани пустуй пулмарĕ. Каçăр Куçмапа Иливан ирсĕрлĕхĕсем çинчен пĕрин хыççăн тепри калама пуçларĕç. Чăн малтан паçăрах сас панă Çĕтĕк Якку сăмах илчĕ, вăл ял Совет председателĕпе секретарĕ хăйсене ĕçтерменшĕн çуркунне ăна вăрлăхсăр хăварни, ун тӳпине кайран сутса ĕçни çинчен каласа пачĕ. Ун хыççăн Кулине ятлă тăлăх арăм тăчĕ.

— Эп те калам-ха,— терĕ вăл чĕтрекен сасăпа,— халăх умĕнче калаçма хăнăхманнипе пăлханса.— Эп ĕнтĕ тăлăх арăм, ман старик Хĕрлĕ гвардинче вилчĕ... Ман виç ача. Паллах ĕнтĕ, мана пĕччен пуçпа вĕсене пăхса ӳстерме питĕ йывăр, çавăнпа та, иртнĕ кĕркунне ачасене тырă пулнă вырăнсене яраççĕ тенине илтсен, пĕрине те пулин вырнаçтарма пулмасть-ши, тесе шутларăм. Хай эпир тĕттĕм çынсем те, йĕркине-мĕнне пĕлместпĕр те, ыйтса пĕлес тесе Иливан патне кайрăм. Çапла, çапла, терĕм, пĕр ачине те пулин ярасчĕ, терĕм. Атту выçă-çке... Иливан мана: май кӳрĕпĕр, терĕ, анчах халь ним те калаймастăп-ха, председательпе пуплесе пăхмалла, терĕ. Эс халь киле кай, каçхине хамах пырса калăп, терĕ. Ну ĕнтĕ, савăнсах кайрăм киле. Темле пулсан та, тăван ачасем-çке, усрас килет епле те пулин... Хайхискер каçхине пычĕ. Сисрĕм куна — хĕрĕнкĕ. Ун çинчен калаçать, кун çинчен — ман ĕçе асăнмасть те. Унтан çулăхма тапратрĕ çак мана, сысна аçи пек ăрăхлатма пуçларĕ!..

Халăх кулса ячĕ.

— Кулса мар, чăнах!— терĕ Кулине.— Ним тунмасăрах калатăп: асăнмалăх пĕрре çывăрар та — пурте пулĕ, тесе ыталамах тытăнчĕ, йĕрĕнчĕк. Çурăмĕнчен чышса кăларса ятăм вара... Тепĕр кунне канцелере каллех кайрăм та, манпа çак калаçмасть те. Темиçе ыйтсан тин: вырăн çук, тесе хучĕ. Юрать-ха çавăнтах хуларан килнĕ çын пулнă, эп унпа калаçрăм та, вăл ман ачана пĕр сăмахсăрах çырса хучĕ. Ак ку шуйттанĕ пулсан — такки ямастчĕ... Мĕн каласси пур, яланах çаплаччĕ вĕсем: пĕр пĕчĕк ĕçшĕнех виç кун уттаратчĕç те тата ялан хăйсене тутаран çу сĕртерме хăтланатчĕç. Тав турра, шалçисем тулчĕç! Хытăрах тыткалас пулать вĕсене! Ĕмĕр асăнмалла пултăр!

Кулине каласа пĕтерчĕ те ларчĕ.

— Тĕрĕс каларăн, Кулине!

— Маттур!

— Çапла кирлĕ!— илтĕнчĕç ырлакан сасăсем.

Комисси председателӗ халàха шăпланса, шавламасăр ларма чӗнчӗ те:

— Тата кам калас тет?— тесе ыйтрӗ.

Халăх хушшинче харăсах темиçе алă çӗкленчӗç. Ку ӗнтӗ пухăва пынисем малашне Каçăр Куçмапа Иливан тата вӗсемпе пӗр майлă пулнă çынсем çинчен нумай калассине пӗлтерчӗ. Итленӗ çӗртех хăвăрт шухăшласа тăнă Лява Уртемӗ çавна сисрӗ те шкултан часрах тухса шурӗ. Килне çитсенех, вăл садра мунча çенӗхӗнче сывăракан Махоркăна вăратса, ăна шкулта мӗн пулса пыни çинчен каласа пачӗ.

Паян ир енне тин таврăнса, кунӗпех çывăрнă Махорка тăруках нимӗн те каламарӗ, арпашса кайнă çӳçне пӳрнисемпе чавса, пӗр хушă йывăррăн сывласа ларчӗ. Унтан мухмăрпа, нумай çывăрнипе какай пекех пулса ларнă пăтранчăк куçне Уртем енелле çавăрса:

— Лешсем килчӗç-и? — тесе ыйтрӗ.

— Камсем?

— Кам пултăр... Шишкăпа Чалăшкуç.

— Килмен.

— Ну, апла пулсан, хамах тăватăп.

Уртем ун çине ăнланмасăртарах пăхрӗ.

— Мӗн тăватăн?

— Вӗсен пуххине халех салатса яратăп.

— Пухха пырас тетӗн-и?— тӗлӗнчӗ Уртем.— Ан хăтланах. Вара хăвна та, мана та...

Анчах та Махорка ăна каласа пӗтерме памарӗ, аллине çӗклесе чарчӗ.

— Пухăва эс пӗчченех кайăн, ман унта ӗç çук. Эп акă мӗн тăватăп... Кил кунтарах.

... Вӗсем пичӗсене пӗр-пӗрин çывăхне илсе пычӗç. Махорка никама илтмелле мар шăппăн, хăрушă вăрттăнлăхпа темскер çинчен калама тытăнчӗ. Унăн сăмахӗсене итленӗ хушăрах Уртем темиçе хутчен пур еннелле те пăха-паха илчӗ, кам та пулин пырса курасран, мӗн те пулин илтесрен сыхланчӗ курăнать. Махорка каласа пӗтерсен, вăл, аялти тутине çыртса, пуçӗпе сулчӗ:

— Юрӗ...

Çавăнтах вара картузне лайăхрах пусса лартса, садран пысăк утăмсемпе утăмласа тухрӗ те каллех шкула кайрӗ. Кунта халӗ пуху питех те хӗрсе кайнă-мӗн. Ял çыннисем пӗрин хыççăн тепри тăра-тăра ялти йӗркесӗрлӗхсем, Каçăр Куçмапа Иливанăн ирсӗр ӗçӗсем çинчен,

вёсен хӳттипе пуян таврашёсем иртённи çинчен каланă... Уртем, шкул умне пырса тăрсанах, комсомолец Исай сассине илтрё:

— Пирён ялта çав Иливансене пула Совет влаçё çукпа пёрех пулма пуçларё вёт. Ăçта та пыр — пур çёрте те пуянсем çавăрса илме тапратрёç... Илёр акă столовăйнех: мёншён-ха эпир ăна пуян Уртемсен кёрӳшё Мамун аллине панă?..

Хăй ятне асăннине илтсенех, Уртем шăлне çыртрё.

«Йёксёк,— шухăшларё вăл Исай çинчен,— тытса пăчăртатăп-ха эп сана пёрре...»

Столовăй çинчен каласа пётерсен, Исай иртнё хёлте Совет ялти чухăнсем валли панă вăрман çурри ытла пуянсен аллине кёрсе ӳкни çинчен калама пуçларё.

— Лява Уртемёпе кёрӳшё хёлёпе вăрман турттарчёç, сахалтан та пилёкшер çуллăх вутă хатёрлерёç, анчах пирён пеккисене 2—3-шер лав çеç тиврё. Мёнле пулма пултарнă çав япала? Каçăр Куçмапа Иливан тунă çавна! Ахальтен мар Лява таврашёсен кашни ёçкинчех упаленеççё вёсем...

— Тёрёс!

— Чăн сăмах!

— Нумай мăшкăлларёç ёнтё...— илтёнчё халăх хушшинчен темиçе сасă.

Çав тери хёрсе, пётём чёринчен калаçакан имшертерех шăмшаклă, кăвак куçлă Исая та, унăн сăмахёсемпе килёшсе кăшкăракансене те Уртемён çавăнтах çапса ӳкерес, пёрерён-пёрерён кăларса ывăтасси килсе тăчё, вăл пётём мăн сассипе питё усал сăмахсем кăшкăрса ярасси патнех çитрё, çапах та хăйне хăй чарчё. Халь ун пек тума май килменнине лайăх ăнланчё вăл...

Исай хыççăн председатель Тараса сăмах пачё.

«Ку ёнтё тата... тепёр кёлмёçи... мён калать-ши?—шухăшларё Уртем.— Паллах, пире хирёç ёнтё, тупнă пульха чакаланса...»

Кăштах шавлама пуçланă халăх, Тарас ура çине тăрсанах, шăп пулчё. Тарас хуллен кăна ӳсёрсе пырне тасатрё, аллинчи хут татки çине пăхса илчё, анчах та пёр сăмах та калама ёлкёреймерё...

Урамра сасартăк такам калама çук тискер, хăрушă сасăпа кăшкăрни илтёнчё:

— Пуша-ар!.. Çуна-ать!..

Пурте харăсах урамалла вăхрёç. Чăнах та, ялăн анат

вĕçĕнче çунать иккен... Лăпкă сывлăшра çулăм çӳлелле юпа пек тапса хăпарать, çулăм юпинчен пур еннелле хĕм сирпĕнет...

Пушара курни шкулти халăх хушшине бомба пăрахнă пекех пулчĕ. Çынсем алăк патнелле ним йĕркесĕр ыткăнчĕç, алăк ансăррипе хĕсĕнсе ларчĕç, унтан час тухма çуккине кура, нумайăшĕ чӳречесенчен сикме тапратрĕç. Темиçе самантран шкулта никам та юлмарĕ, пурте пушар патнелле чупрĕç, ял урамĕсем çынсем кăшкăрнипе, шавланипе, чупакансен ура сассисемпе тулса ларчĕç. Пĕр Лява Уртемĕ çеç каймарĕ пушар сӳнтерме. Шкулти халăх тулалла ыткăннă чух вăл çенĕх алăкĕ хыçне юлчĕ те, çынсен сассисем инçетелле кайсанах, шалалла чупса кĕрсе, хыçалти пĕчĕк пӳлĕмĕн алăкне пĕтĕм вăйĕпе пырса тĕкрĕ.

— Куçма хăта! Иливан!— тесе кăшкăрчĕ вăл.— Тухăр часрах, никам та çук!.. Тарăр!

Анчах шалта çав самантрах винтовка затворне шакăлтаттарса илни илтĕнчĕ.

— Кам унта?! Перетĕп!— терĕ Уртеме палламан сасă. Вăл — Каçăр Куçмапа Иливана хураллакан милиционер сасси пулнă. Ăна илтсенех, хăйне паллаттарас мар тесе, тата хăйне тытасран хăраса, Уртем часрах шкултан чупса тухса, пахчаналла чăмрĕ...

* * *

Сасартăк сиксе тухнă пушар, çитменнине тата ял хĕрринчи никам пурăнман кивĕ пӳрт çунни пурне те питĕ тĕлĕнтерчĕ. Темĕн тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕç ял çыннисем ун пирки, çапах нимĕнле ответ та тупаймарĕç. Анчах Энтриялĕнчи ĕçсене тĕрĕслеме пынă комисси председателĕ — Каçăр Куçмапа Иливана хураллакан милиционер пушар вăхăтĕнче шкула такам пырса преступниксене ирĕке кăларма тăни çинчен каласа парсанах, пушар сăлтавне тавçăрса илчĕ.

— Сисетĕн-и, ĕç ăçталла каять?— терĕ вăл пушара сӳнтернĕ хыççăн ирчченех киле кайман Тараса.— Ку пушар вăл — юри, çак çăхансене хăтарса тартас шутпа тунăскер. Епле чее шухăшласа хунă: халăх пушар сӳнтерме чупать те, кусем хăтăлаççĕ... Халь ĕнтĕ паллă: ялта Куçмапа Иливансен тымарĕ таран, вĕсен чи çывăх çыннисем пур... Çавсене епле пулсан та тупса кăклас пулать... Эс паянах çамрăксене пухса калаç çавăн çинчен. Пурин те куçĕсем çивĕч пулччăр!

— Юрĕ,— терĕ ăна хирĕç Тарас.— Пĕтĕм вăя хурсах тăрăшăпăр. Эпир те пĕлетпĕр вĕт: хамăр çул çинчи тумхахсене пĕтермесĕр, пирĕн пурнăç малалла тикĕссĕн каяс çук...

Пушар хыççăн следстви тата икĕ кун хушши пулса пычĕ. Ялти нумай çынсене чĕнсе тĕпчерĕ комисси, пур вак ĕçсем çинчен те пĕлме тăрăшрĕ. Анчах çĕнĕ сведенисем нумаях тупăнмарĕç. Пушар пирки вуçех те нимĕн те палăрмарĕ. Қаçăр Куçмапа Иливанран пушар пулнă каçхине шкула кам пыни çинчен темле тĕпчесе ыйтсан та, вĕсем Уртем сассине ун чухне лайăхах уйăрса илнĕ пулин те — нимĕн те каламарĕç.

— Эпир нимĕн те илтмен... Никам та пыман, пĕлместпĕр. Милицине хăранипе ахаль çавăн пек туйăннă пуль,— терĕç...

Лява Уртемĕ хăйĕн çумне пырса çыпăçмашкăн нимĕнле сăлтав та ан пултăр тесе, бандитсем вăрласа пынă япаласенчен ку таранччен вырнаçтарайманнисене тепĕр куннех пухса тиерĕ те инçетри пĕр пасара кайса сутрĕ. Пуху пулнă каçхине кивĕ çурта вут тĕртсе тарнă хыççăн тăваттăмĕш кунĕнче Махорка каялла пырса тухрĕ. Уртем ăна та «çанталăк лăпланиччен» аякра çӳреме хушрĕ.

Кунтан-кун сăнсăрланса, тискерленсе пынă Махорка çав каçхине пушшех те хăрушă сăнлă пулчĕ. Куçĕ шыçса тухнă, янах шăммисем тата ытларах тулалла тухса палăракан пулпă, ӳчĕ темле çĕр тĕслĕ пулса кайнă. Стакан хыççăн стакан тултарса ĕçрĕ вăл, анчах эрех те ӳсĕртмерĕ ăна, куçĕ тата ытларах пăтранчĕ çеç...

— Шишкăпа Чалăшкуç килмерĕç эппин?—ыйтрĕ вăл, нумайччен чĕнмесĕр ларнă хыççăн.

— Çук.

— Ăçта çухалчĕç вăл шуйттансем?..

— Пĕлместĕп çав.

Махорка урăх ыйтмарĕ. Сĕтел урлă ним тĕлсĕр пăхса, вăрахчен сăмах хушмарĕ. Вăл халь шухăша кайрĕ... Унăн ӳсĕрĕлме пуçланă, шавласа тăракан пуçĕнче пĕрин хыççăн тепри асаилӳсем çуралма пуçларĕç... Акă вăл çамрăк, вунсаккăрти каччă, «пыл та çу пек» пурнăçпа пурăнать. Унăн ашшĕ пуян, вăл никамран та хăрамасть, мĕнле хĕре çавăрас тет, çавна çавăрать; хĕр ун еннелле çаврăнмасан, вăйпах парăнтарать. Праçниксенче ун пек чаплă тумланакан никам та çук, çимĕксенче пурте ун çине пӳрнепе кăтартса: «Разумăх ачи», теççĕ шăппăн... Çă-

варниччен темиçе эрне малтан хура ăйăра кӳлмесĕр сĕлĕ çитерсе тăратнă, çăварни çитсен вара ăна кӳлсе ялсем тăрăх çил-тăман пек çӳренĕ, çынсен çунисене çаклатса, вĕсене тӳнтере-тӳнтере хăварнă... «Кур пире, палла пире!..» Кам та пулин кăмăла каймасан е ăна хирĕç сăмах чĕнсен, çав çынна хĕнемешкĕн тара тытмалăх кĕсъере укçа яланах пур... Унтан вăл — рекрут, пĕр эрне ытла çĕр çĕмĕрттерсе çӳрет, çапăçать, кантăксене çапса ватать, икĕ хĕре тытса пусмăрлать... Станцине çынсем çурран утаççĕ, вăл тройкăпа... Пенза, Ростов, Псков... Вăл ĕнтĕ унтер-офицер... Ансăр, кукăр-макăр тăкăрлăк, унта, çӳлти хутра, проститутка Элла... Пĕринче, эрех кӳпсе тултарсан, ӳсĕр «кĕçĕн чинсем» хушшинче çапăçу пуçланса каять, ăна çӳлти хутран пусма тăрăх кутăн антарса яраççĕ... Кайран — фронт, вăл — прапорщик, хăрушă та тискер кунсем пуçланаççĕ, хуласенче тăнă чух — каллех ӳсĕр каçсем, каллех сутăнчăк хĕрарăмсем... Революци, митингсем, «война до победного конца», вăл мирлĕ хресченсене персе вĕлерет... Нумаях та вăхăт иртмест — тепĕр революци пулать, ун хыççăн шăпланма тивет, граждан вăрçи пуçлансан — тылра юлать... Укçа кирлĕ... Ăна темле вăрттăн пурăнакан, çухисене тăратса çӳрекен çынсемпе паллаштараççĕ, вăл çар хатĕрĕсене сутма тытăнать, каллех «сарлака пурнăç» пуçланса каять... Унтан сасартăк — тĕрме. Шăрш, пăчă, тĕттĕм, хăсăк килет... Кунтан тарса хăтăлсан, килсĕр йытă пурнăçĕ тапранать... Таттисĕр çаратусем, айăпсăр çынсен юнĕ, ĕçкĕ; пĕрмай, кашни кун, кашни самантра сыхланса, тытасран хăраса, тарса пурăнмалла... Анчах — хăçанччен? Малашне ăçта каймалла? Пĕтĕмпех арканать, ĕмĕтсем сӳнеççĕ, çулсем татăлчĕç... Ĕнтĕ пурпĕр çĕнес кун коммунистсене, иртни — таврăнас çук, вăл пĕтрĕ, яланлăхах, ĕмĕрлĕхех путрĕ... Таврара пурте пурнăç тума тăрăшаççĕ, пурин те ĕмĕт, тĕл, паллă çул пур...

— Манăн мĕн пур? Мĕскер? Нимĕн те, нимĕн те çук, пушă, тĕттĕм...

«И я подохну где-нибудь
В канаве, под заборо-ом»,—

— юрласа ячĕ Махорка хуллен, çĕтсе ларнă сасăпа. Унăн паçăрхинчен те ытларах пăтранса кайнă куçĕ вăйсăррăн хупăнчĕ... Пĕр-ик минут пек вăхăт иртсен, вăл тăрук пуçне çĕклерĕ те пĕтĕм вăйĕпе сĕтел çине чышкăпа çапрĕ.

— Пурпӗрех асӑнтаратӑп-ха хам ҫинчен!.. Парӑнмастӑп-ха халех! Ман вилӗм хакла ларать вӗсене!..

Унтан хӑвӑрт пуҫтарӑнчӗ те Уртеме ал пачӗ.

— Сывпул.

— Ӑҫта каятӑн ӗнтӗ халь?— ыйтрӗ Уртем.

— Хусана. Унта манӑн пӗр тус пурччӗ. Ҫавна тупас.

— Килетӗн-и?

— Мӗнле пулӗ...

— Пӗр-ик эрнерен килсе пӑхсан юратчӗ. Лӑпланать унччен...

— Курӑнӗ унта. Эс ҫыру ҫыр.

Махорка Уртеме хут татки ҫине темле адрес ҫырса пачӗ те тухса кайрӗ. Ун хыҫҫӑн алӑка питӗрсе кӗрсен, Уртем нумайччен ҫывӑрса каяймарӗ. Вӑл, тек-текех пӗр енчен тепӗр еннелле ҫаврӑнкаласа, малашнехи ҫинчен, епле майпа ӗлӗкхи пек пурӑнасси, хӑйне чӑрмантаракансене путарса лартасси, каллех хӑйне пӑхӑнмалла тӑвасси ҫинчен шухӑшласа выртрӗ... Анчах темле шухӑшласан та, хӑйӗн ӗмӗчӗсене пурнӑҫламашкӑн тӳрӗ, шанчӑклӑ мел шухӑшласа тупаймарӗ.

— Неушлӗ ҫавсене пӑхӑнса пурӑнмалла пулать? Неушлӗ ялта ҫав Тарас пеккисемех, Ҫӗтӗк Яккусемех пуҫ пулса тӑрӗҫ? Ҫук, темле пулсан та, вӑй илме май пама юрамасть вӗсене... Пуҫӗпех пӗтереҫҫӗ вара...

## 11. ҪАМХА СӲТӖЛЕТ

Тӗлӗкре Уртеме темле пысӑк хура йытӑсем, йӗкехӳресем — тем мурӗ те курӑнчӗ. Вӗсем пурте Уртеме сырса илсе, ӑна ҫурса тӑкма хӑтланчӗҫ. Уртем тем пысӑкӑш чукмар тытса ҫапӑҫрӗ вӗсемпе. Ҫав вӑхӑтрах ун умне нумаях пулмасть ухмаха ернӗ тӑлӑх арӑм хӑйӗн хӗрачине ҫавӑтса пырса тухрӗ те унтан ахӑлтатсах кулма тапратрӗ. Унччен те пулмарӗ — ҫав хӗрарӑм ӑна тӑпрапа сапма, чул таткисемпе пеме тытӑнчӗ. Таҫта параппан ҫапма тапратрӗҫ. Уртем ҫав тери хӑраса вӑранса кайрӗ.

Килхушшинелле тухакан чӳречерен шаккаҫҫӗ-мӗн. Вӑл кӑкри ҫинелле пухӑнса ларнӑ ҫивиттине ҫилӗпе аяккалла ывӑтса ячӗ те, вырӑн ҫинчен тӑрса, чӳрече патне пычӗ. Килхушши енчен Мамун кӗрӗвӗн ывӑл ачи шакканӑ иккен.

«Ырра мар ку... Ахальтен килес ҫук кун пек ирхи вӑхӑтра...» — шухӑшларӗ те Уртем, ҫенӗх алӑкне тухса уҫрӗ.

— Ма килтĕн?— ыйтрĕ вăл ачаран.

— Аттене... тытса кайрĕç...— терĕ лешĕ, йĕрсе яма хатĕрленсе.— Анне сана пыма хушрĕ...

— Камсем? Хăçан?!— кăшкăрса ячĕ Уртем, тăруках пĕтĕм шăмшакĕ сивĕннине туйса.

— Ара, судьясем... Шкула килнисем... Пычĕç, тет те, кĕлете уçтарса хăйсен çăраççипе питĕрчĕç, тет, унтан аттене илсе кайрĕç, тет... Эп хам курман, анне калать. Атя-ха пирĕн пата...

Уртем, хулпуççинчен йăпăр-япăр сăкман уртса ярса, йăмăкĕ патне кайрĕ те ĕç мĕнле пулнине тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлчĕ. Чăнах та, ĕç ача каласа панă пекех пулнă иккен. Яла килнĕ комисси председателĕ паян хĕвел тухнă чух Тараспа тата яла темле çĕнĕрен килнĕ çынпа пĕрле пынă та, патшалăх выççисене пулăшма панă çимĕçсене усракан кĕлет алăкĕ çине пломба хунă хыççăн, Мамуна арестленĕ... Ку хыпар Уртеме калама та çук пăлхатса татa хаярлатса ячĕ. Ним тума пĕлменнипе хăйĕн аллине хăй çыртса илчĕ. Унтан пĕр вăхăт ним шухăшлама та пĕлмерĕ, унăн пуçĕнче пĕтĕмпех пăтрашса кайрĕ. Мамун арăмне те йĕркеллĕн нимех те калаймарĕ вăл, ниепле канаш та параймарĕ. Шăлне çыртрĕ те, алăка хыттăн уçса хупса, тухса кайрĕ.

«Мĕншĕн-ши? Мĕн пĕлчĕç-ши? Пĕтĕмпех яка тунăччĕ-çке, нимĕн те палăрмалла мар пекчĕ... Мĕн тумалла-ши халь? Махорка та кайрĕ, эсрелĕ...» — шухăшсем çавăрăнчĕç унăн пуçĕнче.

Анчах та пуçра çуралакан ыйтусем çине ответ тупаймарĕ.

Ответне тупма чăнах та йывăр пулнă.

... Мамуна малтанах арестлеме çителĕклĕ сăлтав пулман. Комисси унăн пур хучĕсене те тĕрĕслесе тухнă хыççăн, пĕтĕмĕшпе илсен, патшалăх панă çимĕçсене кирлĕ пекех расхутланă пек курăннă. Çавăн чухлĕ илнĕ — çавăн чухлĕ çитерсе пĕтернĕ. Балансне чиперех туса пынă вăл, «шито-крыто». Мамун çимĕçсене вăрланине, ĕçсем приход-расход кĕнекинче кăтартнă пек пулса пыманнине комисси аванах туйнă, анчах тӳррипех айăплама май килмен.

«Ним тума та çук вĕт, шывран типпĕнех тухать, прохвост»,— тенĕ ун пирки комисси председателĕ, тарăхса.

Анчах сасартăк ĕç урăх майлă çаврăнса кайнă...

Шăпах çав кунсече уезд хулинчи пасарта пĕр ватă-рах майра пит те тутлă сăнлă шурă булкăсем сутса лар-нă. Қашни булкинех вăл икĕ пин тенкĕпе панă. Илекенни авантарах тумланнă пулсан, укçаллă çын пек туйăнсан, майра ăна шăппăн кăна маргарин, сахăр, песок, какао сĕннĕ... Çын илме килĕшсен, майра таçтан, хăйĕн майсăр сарлака юбки ăшĕнчен ăна та, куна та туртса кăларнă.

Пасарта сăнаса çӳрекен çамрăк чекист çакна асăрха-нă та ыйтма тытăннă: кун пек лайăх çăнăх ăçтан тупрăн эс, мĕнле сахăр сутрăн? Майра ăна хирĕç çав тери илĕрт-се юптарма тытăннă: ывăл Мускавра пурăнать, çав ярса пачĕ, укçа кирлĕ пирки сутатăп, тенĕ. Чекист ĕненмен. Майра тем пекех турра асăнса, сăхсăхса, ашшĕ-амăшĕ ячĕпе тупа тунă пулин те, чекист ăна хăйпе пĕрле илсе кайнă. Унтан, тепĕр юлташне чĕнсе, сад варринчи бесед-кăн урайĕ айĕнче темĕн тĕрлĕ çимĕçсем те — шур çăнăх, сахăр, маргарин, банкăри «çăралатнă сĕт» тупнă...

Майран тек тунса тăма май килмен, ăна ĕнтĕ куçкĕ-ретĕнех тытнă. Допросра тĕпчеме тытăнсан, вăл ку япа-ласене ăçтан тупни çинчен каласшăн пулман, анчах та следователь çине тăрсах «стена çумне» хĕсме тапратсан, тунайман вара, çимĕçсене Энтриялĕнчи Мамунран илни çинчен, вăл кашни ик эрнерех, столовăй валли çимĕçсем илме килсен, ăна сутă тума парса хăварни çинчен каласа панă. Çав кунах ку ĕçе малалла тĕрĕслемешкĕн Энтриял-не çын янă, вăл унта çĕрле çитнĕ те комисси председа-тельне каласа панă, ирпе вара Мамуна арестлемелле ту-на. Ана мĕншĕн хупнине урăх никам та пĕлмен...

Виçĕ кунтан Қаçăр Куçмапа Иливан сучĕ пулчĕ. Айăплисен тенкелĕ çинче вĕсемпе пĕрле Уртемĕн кĕрӳшĕ Мамун та ларчĕ.

Суда итлеме Энтриялĕнчи çынсем çеç мар, таврари çывăх ялсенчен те нумайăн пуханчĕç, шкул çуртне ха-лах савăлпа çапса хĕснĕ пекех тулчĕ. Нумай вăхăт хуш-ши халăх пурлăхне салатса, халăхран мăшкăлласа, выçă çынсен юлашки татăкне туртса илсе, ыр курса пурăннă тискер чĕреллĕ этемсем халăх куçĕ умĕнче юлашки хут мĕн калассине пурин те итлесе пăхас килнĕ çав!

Вĕсем виççĕшĕ те палламалла мар улшăннă иккен! Ĕлĕкхи çивĕч, вăшт та вашт кăна çаврăнкалакан, çынсем çине яланах çиелтен, мăнкăмăлпа пăхакан этемсем халĕ пачах та пусăрăнса ларнă-мĕн, ватттисем калашле — «пăкки шаннă» вĕсен. Қалаçасса та ерипен, айăпсăрах

суда лекнĕ пек туйăнма тăрăшса калаçаççĕ. Вĕсем пĕр усал ĕç те туман имĕш, яланах, пур чухне те халăхшăн тăрăшнă, çĕр çывăрмасăр ĕçленĕ... Пуринчен ытла ку тĕлĕшпе Иливан пит ăста хăтланчĕ: пурнăçра нумай асап курнă çын пек çинçе сасăпа — сăмахсене тăсса калаçрĕ, хăй айăплă маррине кăтартма аллипе пĕрмай хăйне чĕринчен тытрĕ, час-часах турра асăнса сăхсăха-сăхсăха илчĕ. Малтанах халăх ăна шăппăн, тĕлĕнерех итлесе ларчĕ, анчах майĕпе унта та кунта тăрăхланисем илтĕнме пуçларĕç:

— Ай-уй, ку турра пит ĕненекен çын иккен...

— Кулине патне те çапла сăхсăхсах пынă-ши вăл?

— Кам пĕлет, тен, кашни лаша вăрлаттарнă хыççăнах чиркĕве кайса çурта лартнă пуль...

— Епле, çветтуй жулик!

Иливан çине тăрсах турă ячĕпе витĕнме тăрăшни, пулчĕ-пулмарĕ хĕрес хывни судья вырăнче ларакан комисси председательне те култарса ячĕ.

— Итле-ха, подсудимый Иливанов,— терĕ вăл ăна,— кунта турра чăрмантарма та кирлех мар пулĕ. Суд — чиркÿ мар, эпĕ — пуп мар...

Преступниксем виççĕшĕ те хăйсен сăмахĕсемпе судьясен чĕрисене çемçетме, халăха — хĕрхентерме, унăн кăмăлне хăйсене майлă çавăрма тăрăшрĕç, анчах никамăн куçĕнче те вĕсене шеллени курăнмарĕ, вĕсем майлă пулни палăрмарĕ...

Свидетельсем — пĕрин хыççăн тепри — пурте вĕсене хирĕçле, мĕн курни-илтни, мĕн пулни-тÿсни çинчен ним пытармасăр каларĕç. Лăпкăн ларма пултарайман Иливан, судья асăрхаттарни çине пăхмасăрах, малтанхи вăхăтра свидетельсене хирĕç калаçма, вĕсемпе тавлашма тăрашрĕ, анчах та — суда пынă халăх пĕтĕмпех преступниксене хирĕçле пулнине кура — шăпланчĕ, тĕлĕннĕ пек пулса, пĕрмаях пуçĕпе сулкаларĕ, темшĕн пит час тарлакан куçлăхне хыва-хыва шăлчĕ. Куçмапа Мамун никама хирĕç те чĕнмерĕç, пачах чĕлхесĕр çынсем пек урайнелле пăхса ларчĕç.

Суд пĕр кунта пĕтмерĕ. Чылай свидетельсене — вăл шутрах хуларан юри кайса илсе килнĕ хайхи пасарта булкăсемпе сутă тунă мăнтăр майрана — тепĕр кунне ыйтрĕç. Ку та — те хăранипе, те хăй айăпран хăтăласса шанса — пĕтĕмпех каласа пачĕ. Мамуна вăл революцичченех палланă иккен, вăл çав майран упăшки патĕнче

пĕр вăхăт приказчик те пулнă. Выçă çынсене çитермелли çимĕçсене Мамун ăна хăй пырса сĕннĕ, сутса илнĕ тупăшсем пирки калаçнă чух măкăриччи пит вăйлă ĕçнĕ...

— Сăмакунне те хăех илсе пычĕ, эп закуска валли какай ăшаларăм çеç...— терĕ майра.

Ун сăмахĕсем ку таранччен самаях йĕркеллĕ ларнă халăха сасартăках пăлхатса ячĕç, çынсем харăсах хускалма, калаçма, сĕрлеме тапратрĕç...

— Вăт, шуйттан пукани!

— Хăйне ăшаласчĕ ăна... вĕри хулăпа!

— Ĕлĕк халăх ĕнси çинче пурăннă та, халь те çаплах пурăнасшăн...

— Мамунĕ... Мамунĕ мĕн хăтланнă!

— Пулать те çав намăссăр!

— Çынсем выçса вилеççĕ, а вăл, йытă, халăхăн юлашки çăкăр татăкне сутса, майрасемпе ашкăнса çӳренĕ...

Судья — комисси председателĕ, сĕтел çине шаккаса халăха шăплантарчĕ те майрана тата темиçе ыйту панă хыççăн свидетельсене ыйтса пĕтерни çинчен пĕлтерчĕ.

— Айăплисене юлашки сăмах паратăп,— терĕ вăл унтан.— Хăшĕн мĕн каламалли пур — калăр.

Қаçăр Қуçмапа Мамун пуçĕсене те çĕклемерĕç, анчах та Иливан тӳрех сиксе тăчĕ.

— Эп калатăп! Ман пур...

— Қала.

— Эпĕ... эпĕ, граждан судьясем, айăплă... Чăнласах калатăп: айăплă... — пуçларĕ Иливан, чĕтрекен аллипе куçлăхне хывса.

— Ана эпир ху каламасăрах пĕлетпĕр,— пӳлчĕ Иливана хыçалта ларакансенчен пĕри.

Судья кăранташĕпе шаккаса илчĕ. Иливан малалла калама тытăнчĕ:

— Хам айăплине тинех ăнланса илтĕм эпĕ... Туршăн та... (вăл хĕрес хучĕ) ăнлантăм ĕнтĕ...

Халăх хушшинче такам кулса ячĕ:

— Тур пулăштăр эппин!

— Чăнах калатăп,— терĕ Иливан тепĕр хут, çамки çинчи тарне шăлса.— Ĕненĕр мана... Эпĕ... эпĕ урăх нихçан та апла хăтланмăп... Қаçарăр мана... Хĕрхенĕр!..

— Эсĕ ху нумай хĕрхеннĕ-и халăха?

— Эккей, кашкăр сурăх тирĕпе витĕнме пуçларĕ!— илтĕнчĕ каллех халăх хушшинчен.

— Малашне эп те хӗрхенӗп... Туршӑн та...
— Сан хӗрхенӳсӗр те пурӑнма пӗлӗпӗр-ҫке!
— Пӗтӗм чуна парӑп...
— Шуйттана кайса пар чунна!
Судьян каллех халӑха шӑп ларма хушмалла пулчӗ. Шав чарӑнсан, Иливана ҫӗнӗрен сӑмах пачӗ.
— Қала малалла.
— Мӗн калам ӗнтӗ эп?— терӗ ӑна хирӗҫ вӑйсӑрлансах ларнӑ сасӑпа Иливан, темле чӗрӗп пек хутланса ларса.— Пӗтрӗм витнӑ... Никам та ман майлӑ каламасть... Хӗрхенмеҫҫӗ мана, старике...
Ҫав самантрах такам арӑмӗн сасси янраса кайрӗ:
— Чӗчӗ памалла мар-и тата сана, сар шуйттана? Эккей, тупӑннӑ! Хупасчӗ карланкуна, намӑссӑр!
— Вӑт, ку тӗрӗс!— ҫирӗплетрӗ тепри.
Судья Иливанран татах ыйтрӗ:
— Ну, тек каламастӑн-и эппин?
Иливан пуҫӗпе пӑркаларӗ.
— Эсир тата?— терӗ судья Қаҫӑр Қуҫмапа Мамуна.
Кусем те чӗнмерӗҫ.
— Апла пулсан, суд умне тӑратнӑ ҫынсене халӑх ячӗпе тухса айӑплама сӑмаха Тарас Николаев юлташа паратӑп...
Сылтӑм енчи чӳрече патӗнче ҫак таранччене ним чӗнмесӗр, аллинчи хут ҫине пӗрмай кӗттӗн-кӗттӗн ҫырса ларнӑ Тарас ура ҫине тӑчӗ те, кӑкӑр туллин сывласа илсе, хӑйӗн сӑмахне майӗпе пуҫларӗ.
— Юлташсем, эп калас тенисене нумайӑшне свидетельсем каларӗҫ ӗнтӗ,— терӗ вӑл лӑпкӑн,— ҫак хӑрушӑ ҫынсен (Тарас преступниксем ҫине кӑтартрӗ) пур тискер ӗҫӗсене те, вӗсен ирсӗр сӑн-сӑпатне пур енчен те пит аван кӑтартса пачӗҫ, ҫавӑнпа та ман калаҫмалли те нумай мар. Ҫапах та, кӑшт каласах пулать... Қама суд тӑватпӑр эпир паян? Халӑхӑн чи хӑрушӑ тӑшманӗсене суд тӑватпӑр...
Тарасӑн сасси кунта тӑруках хӑпарса кайрӗ. Унтан сӑнӗ те улшӑнчӗ: пичӗ хӗрелчӗ, куҫӗсем сарӑлса, ытларах ялтӑртатма пуҫларӗҫ.
— Халӑх чи йывӑр самантсене пурӑнса ирттернӗ чух, халӑх выҫӑпа аптранӑ вӑхӑтра, пур юлашки вӑйсене пухса тытӑнса тӑнӑ кунсенче вӗсем, ҫак виҫӗ кашкӑр, этем сӑн-сӑпатне ҫухатнӑскерсем, халӑх юнне тискер кайӑксем пекех ӗҫсе пурӑннӑ! Вӗсем халӑхӑн куҫҫулӗпе,

тарĕпе, халăхăн пурнăçĕпе сутă тунă!.. Акă мĕнле çăхансем лараççĕ пирĕн умра...

Тарас сывлăш çавăрса илчĕ те, Қаçăр Куçмапа Иливанăн тата Мамунăн преступленийĕсене пĕрин хыççăн теприне, йĕркипе, васкамасăр тишкĕрме тытăнчĕ. Суда итлеме пынă халăх ăна пит те тимлĕн, шăппăн, пĕр сăмахне те сиктермесĕр итлерĕ. Алăк патнерех хĕсĕнсе тăнă Варук, Тарас сăмахĕсене итленĕ май, сывламан пекех пулчĕ.

«Ах, лайăх калать-çке... Ăçтан кăна тупать сăмаххисене, кĕнеке çинчен вуланă пек вĕт... Çитменнине пĕтĕмпех тĕрĕс тата...»

Нумай каларĕ Тарас. Унăн сăмахĕ сахалтан та пĕр сехете пычĕ. Çав хушăра ун çăварĕнчен пĕр пуш сăмах та тухмарĕ, пурте вырăнлă, çыпăçуллă, ĕнентерӳллĕ пулчĕ. Вăл каланăçемĕн суда пынă халăх хăй умĕнче ларакан преступниксене тата ытларах кураймИ пулса пычĕ...

— Пуçĕпех, яланлăхах тĕп тумалла çакăн пек çынсене, вĕсен тĕсĕ мар, шăрши те ан пултăр пирĕн хушăра! Халăха вĕсем ним вырăнне те хуман... Эпир те хĕрхенсе тăма пултараймастпăр вĕсене. Совет судĕнчен эпир çак хăрушă преступниксене персе пăрахма ыйтатпăр!— тесе пĕтерчĕ те Тарас, хăйĕн малтанхи вырăнне ларчĕ.

— Чăн калать...

— Пире хĕрхенмен вĕт вĕсем...

— Йытта йытă вилĕмĕ пулмалла та çав,— пăшăлтатса илчĕç халăх хушшинче.

Суд хыçалти пӳлĕме канашлама кайсан, çынсем нумайăшĕ килхушшинелле, урамалла тухрĕç. Шалта юлнисем те, тула тухнисем те — приговор епле пуласси, мĕнле тусан авантарах пуласси, преступниксем мĕнешкел наказанине тивĕçли çинчен калаçма, сӳтсе явма тапратрĕç. Калаçакансем хушшинче вĕсене хĕрхенекенсем тупăнмарĕç...

Қаçăр Куçмапа Иливана суд сакăршар çуллăха, Мамуна пилĕк çула хупмалла турĕ. Çав кунах, каçхи кӳлĕмпе, вĕсене ялтан илсе кайрĕç. Асатма Энтрияль çыннисем пит нумаййăн тухрĕç, анчах та, паçăрхи пекех, хĕрхенсе-туса калаçни пулмарĕ, çынсем ахальтен, «интересшĕн» çеç тухнă иккен. Қаçăр Куçмапа Мамунăн арăмĕсем çеç юри пĕтĕм халăха илттерме тăрăшса çухăрчĕç, хăйсен упăшкисене халь «кураймасăр савăнса тăракансене» темĕн те пĕр каласа, ал-урасăр пулма, ача-

пăчасăр юлма, хăйсене те çавнашкалах тĕрмене кайса ларма сенсе ылханчĕç. Иливана кăрчама ăсти, Микстур Кĕтеринĕ, тутăрпа çыхса пашалусем пырса тыттарчĕ те, куççулĕсене шăлкаласа, ал пачĕ. Куна курсан, чылайăшĕ кула-кула илчĕç:

— Çӳпçи хупăлчине хĕрхенет...

— Ара вĕт, лешĕ ăна нумай ырă кăтартнă-çке!

Суд вăхăтĕнче халăх хушшинче палăрмасăр ларма тăрăшнă Лява Уртемĕ халĕ те хăйне ытлашшиех палăртмарĕ. Мамун кĕрӳшĕ патне пырса:

— Ытлах ан хуйхăр,—терĕ сиввĕн.—Кама кирлине—тавăрăпăр. Çемьешĕн — ан пăшăрхан, выçă лартмăпăр...

Урăх нимĕн те каламарĕ, аяккалла пăрăнчĕ.

Преступниксене лартнă лавсем тапранса кайрĕç. Пĕр пилĕк минутран вĕсем уй хапхинчен тухса курăнми те пулчĕç, çул çинчи тусан çеç чылай хушă мăкăрланса тăчĕ...

## 12. СЫВЛĂШ ТАСАЛАТЬ

Çав каçхинех Энтриялĕнчи комсомолецсемпе чухăнсен пĕрлешӳллĕ канашлăвĕ пулчĕ, тепĕр кунне пур ял çыннисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта та, кунта та вулăсран килнĕ комисси председателĕ ялти пурнăç малашне мĕнле пулса пымалли çинчен, ăна халь епле майсемпе юсаса пырасси çинчен нумай калаçрĕ. Ун хыççăн комсомолецсем хăйсем те, ял çыннисем те паянхи нушасем, мĕн-мĕн тума кирлисем çинчен туха-туха каларĕç. Президиумра ларнă Тараса пурин сăмахĕсем те савăнтарчĕç. «Аван халăх... Чипер ертсе пырсан, пит лайăх ĕçлеме пулать вĕсемпе. Ĕçлетпĕрех ĕнтĕ!..»

Кăнтăрла иртсен суйлавсем пуçланчĕç. Ытлашши кирлĕ мар шавсăр, кăшкăрашусăр, йĕркеллĕн пулса иртрĕ вăл ĕç. Пурте тенĕ пекех пĕр канашлă пулса, ял Советне Тараса, Назара, Çĕтĕк Яккăва, Павăл пиччене, Микиша, Хăмăт Энтрине, Кулинене суйласа лартрĕç. Суйлав хыççăн комисси председателĕ, каллех сăмах илсе, çĕнĕ ял Советне тивĕçлĕн, ăнăçлăн ĕçлесе пыма, ялан чухăнсемпе вăтамсен интересĕсемшĕн тăрăшма, куллен-кун хуçалăха, культурăна вăйлатасшăн кĕрешме, çав хушăрах тăшмансенчен сыхă пулма сĕнчĕ...

Пуху хыççăнах пулнă çĕнĕ Совет ларăвĕнче председателе пĕр сасăпах Тарас суйланчĕ, столовăйне Назар аллине пачĕç, «эс тĕплĕ, тирпейлĕ çын», терĕç ăна. Микиша

секретарь турĕç... Нумайччен шакăлтатса калаçса ларчĕç çĕнĕ Совет членĕсем хăйсен малашнехи ĕçĕсем çинчен. Пурне те темле йывăр сывлăш уçăлса тасалнă пек, кăкăра сывлама çăмăлтарах пулнă пек, çанталăкра та темле ăнланмалла мар пысăк улшăну пулнă пек туйăнчĕ...

Шăпах Совет членĕсем килĕсене саланма хатĕрленнĕ вăхăтра ашшĕне апат çиме чĕнме Варук пырса тухрĕ, Тарас ăна кĕçĕр урама тухмашкăн систерме ĕлкĕрчĕ. Вара, киле кайса апатланнă хыççăн, вĕсем, яланхи пекех, Варуксен лаççи умĕнче курнăçрĕç.

Қаçĕ пит те ырă пулчĕ, пĕркунхи пекех пур енчен те каçхи нӳрлĕхпе пĕрле ырă шăршсем туртăнчĕç, пахчасенче чипер кайăксем юрларĕç. Пĕркунхи пекех, Тараспа Варук нумайччен, кăмăллăн, иккĕшĕ пĕр чĕререн калаçнă пек калаçса, пĕр-пĕрин ăшшине туйса ларчĕç.

Варук суд çинчен сăмах хушрĕ, Тарас судра ăста каланинчен тĕлĕнни çинчен аса илчĕ.

— Кĕнеке çинчен вуланă пекех каларăн...

— Э-э, ун пек калаççĕ-и çынсем!

— Камсем?

— Вĕреннĕ çынсем... Пирĕн иксĕмĕрĕн нумай вĕренес пулать-ха.

— Мĕнле... «иксĕмĕрĕн?»

— Çаплах. Сан вĕренес кăмăл çук-и вара?

— Вăхăт иртрĕ пуль ĕнтĕ манăн...

— Пĕртте иртмен. Вĕренме нихçан та кая мар. Курăн вăт, епле вĕренме пуçлăпăр, тăхта пăртак.

Тарас çавăнтах ял культурине епле хăпартма тытăнасси, хĕллехи вăхăтсенче епле вĕренӳ пуласси, çынсене хуласене ярасси çинчен калаçма тытăнчĕ.

— Пĕлессӳ килет пулсан, пурăна-киле хулапа ял хушшинче ним уйрăмĕ те пулмасть... Асăнăн ман сăмахсене хăçан та пулин!

Паллах, Варук Тарас каланисене ĕненмесĕр тăма пултарайман. Итленĕçемĕн итлес килчĕ унăн сăмахĕсене. Хăй сисмесĕрех, пуçне Тарас хулпуççийĕ çине хучĕ вăл.

— Пирĕн ачасем хамăр пек мар, телейлĕ пулĕç эппин...

— Эпир те телейлĕ пулатпăр, чунăм. Анчах вăл телейлĕ пурнăçа çитме нумай ĕçлемелле-ха пирĕн, телей хăйне тĕллĕн пуç çине татăлса анмасть. Çапах та, пулатех вăл телейлĕ, çутă, ырă пурнăç!

Қалаҫса ларнӑ май, пӗркунхи пекех, вӗсем тул ҫутӑлма пуҫланине те сиссе юлаймарӗҫ. Тарас хӑйӗн каламалли вӑрттӑн сӑмахне кӗҫӗр те калаймарӗ, уйрӑлса каймалла пулчӗ...

Ирхине, Варук ҫенӗх урайне ҫунӑ вӑхӑтра, вӗсем патне Тарас шӑлнӗ Микуль чупса пычӗ те:

— Сана шкула чӗнеҫҫӗ,— терӗ.

— Кам чӗнет?

— Пичче темшӗн халех пыма хушрӗ.

Варук тӗлӗннипе ним калама аптрарӗ.

— Чӑнах-и, ай ахаль... суятӑн-и эс?

— Суйнӑшӑн мана шалу тухать-и-мӗн?— терӗ Микуль, таҫта такамран илтнӗ сӑмаха.— Сана анчах мар, Маринене те чӗнме хушрӗ. Пыр часрах!— Ҫапла аларӗ те тухса вӗҫрӗ. «Маринене те чӗнеҫҫӗ», тени Варука тата ытларах тӗлӗнтерчӗ.

«Епле-ха... каҫхине кӑна пӗрле пултӑмӑр-ҫке, нимӗн те шарламарӗ...» Апла та, капла та шухӑшласа пӑхрӗ— пурпӗр усси пулмарӗ. Ҫавӑнпа та пусма картлашкисене васкасах ҫуса пӗтерсе, Маринесем патне кайрӗ.

— Килте ҫук вӑл, ӑна Тӑлӑх Хветуҫ ачи тем тума шкула чӗнсе кайрӗ,— ответ пачӗ Марине амӑшӗ, ун ҫинчен ыйтсан. Варук та вара шкулалла утрӗ.

Кунта ӑна чӑнах та кӗтеҫҫӗ-мӗн. Алӑкран кӗнӗ-кӗменех сӗтел хушшинче ларакан Тарас хӑй патнелле пыма кӑчӑк туртрӗ ӑна:

— Часрах, часрах кил-ха кунта...

— Мӗн пулнӑ апла, эп ним те пӗлместӗп,— терӗ Варук, пӗрре Тарас ҫине, тепре сӗтел пуҫӗнче ларакан Кулинепе Марине ҫине тӗлӗнерех пӑхса.

— Нимех те пулман,— терӗ ӑна хирӗҫ Кулине, кӑшт куларах.— Сана качча парас тетпӗр...

Варук хӑлха таранах хӗрелсе кайрӗ.

— Каччине ӑна урӑххисем кайччӑр-ха. Чӑнах ара, ма чӗнтертӗр?

— Хулана каймалла сирӗн,— терӗ Тарас.

— Камӑн?

— Ак, виҫҫӗрӗн...

— Мӗн тума?

— Паян хут килсе пачӗҫ. Хулара хамӑр уездри хӗрарӑмсен пуххи пулать. Пирӗн ялтан виҫӗ ҫын яма хушнӑ. Ҫавӑнта кайма эпир сире уйӑртӑмӑр.

— Мӗн тумалла вара унта?

— Нимех те тăвас çук... Мĕн-мĕн каланисене итлемелле те, кайран, киле килсен, мĕн хушса янисене ялта тума тытăнмалла.

Варук пуçĕпе сулчĕ:

— Манран пулмастех вăл... Урăххине ярăр. Кулса тăна кăларĕç тата.

— Чипер калаç, Варук!— калаçăва хутшăнчĕ Марине.— Мĕнрен хăрамалли пур вара? Кайса курар ĕнтĕ...

— Эп сирĕн пек мар ватă та, итту каяс тетĕп,— хушса хучĕ Кулине.

— Ара, эс халь — Совет, сан каясах пулать.

— Каймастăн эппин?— Варук куçĕнчен хыттăн пăхрĕ Тарас.— Ĕнер эпир урăхла калаçрăмăр-çке... Вĕренес тени çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ вăл, Варук.

— Апла пуль те...

— Мĕн тата?

— Темле...

Варук çаплах тытăнса тăчĕ. Чăнах та ĕнтĕ, хулана делегатка пулса каясси уншăн ытла та кĕтмен çĕртен пулса тухрĕ, ун пек ĕçе хатĕрленмен вĕт вăл! Çапах та, Тарас çине тăрсах ӳкĕтлеме тытăннипе, тата Кулинепе Марине хулана кайма çăмăллăнах килĕшнине кура, иккĕлене-иккĕленех çураçрĕ вăл.

— Юрĕ эппин... Анчах атте темле-çке...

— Ун пирки ан хăра,— терĕ Тарас.— Хирĕçет пулсан, эп унпа хам калаçăп. Эс кайса хатĕрлен, часрах тухса каяс пулать вĕт: каçхине ултă сехет тĕлне сирĕн хулана çитмелле!

Ашшĕ Варука кайма чармарĕ. Варукпа Марине ана кун çинчен каласан, Назар пĕр вăхăт иккĕленнĕ пек пулса ларчĕ, çапах та хирĕçле нимĕн те каламарĕ. Кăнтăрла тĕлĕнче вара Энтриялĕн ту вĕçĕнчи хапхинчен виçĕ хĕрарăм тухса, хĕвеланăç еннелле, хула çулĕпе утрĕç.

## 13. ĔÇСЕМ АНМА ПУÇЛАÇÇĔ

Çĕнĕрен суйланă ял Совет пирвайхи кунсенчех ĕçе хĕрӳллĕн тытăнчĕ. Чăн малтан, хирти ĕçсем çывхарса килнине шута илсе, Тарас Совет членĕсемпе ялти кĕперсене, çулсене, уй хапхисене, униче картисене тӳрлетсе йĕркене кĕртесси çинчен калаçса татăлчĕ. Варуксене хулана ăсатнă кунах вăл халăха пухтарса, тепĕр ирхине ĕçлеме пултаракансене пурне те пуртăсемпе, састăпсемпе, пăчкă-

семпе, камăн мĕнле ĕç хатĕрĕ пур — çавсене илсе шкул умне тухма хушрĕ.

— Хамăр тумасан, пирĕншĕн никам та килсе тăвас çук, çавăнпа та çине тăрсах ĕçлер-ха. Хамăршăн вĕт!..

Хуласенче рабочисем юхăнса ларакан заводсене, тĕрлĕ мастерскойсене, депосене тӳрлетсе ĕçе ямашкăн туса ирттернĕ коммунизмла субботниксем çинчен Тарас аван пĕлнĕ, хăй те пулкаланă вĕсенче, çавăнпа та кун пек массăллă ĕçе мĕнле туса ирттересси уншăн çĕнĕ япала пулман. Малтанах вăл, ял çыннисен спискине илсе, камăн ăçта ĕçлемеллине паллă туса хучĕ, халăх пухăнсан вара пурне те хăйсен вырăнне кăтартса пачĕ. Пĕтĕм ял халăхне вăл виçĕ ушкăна уйăрнă пулнă: пĕрисем Мăнçырма кĕперĕ патне каяççĕ, теприсем Хăямат кĕперĕ патне, виççĕмĕшсем — униче картисемпе уй хапхисене юсаççĕ, кашни ушкăннех ял Совет членĕ ертсе пырать. Хăйне валли Тарас Хăямат кĕперне илчĕ, ма тесессĕн кунта халăх пуринчен те ытларах ĕçлемелле пулнă.

Плана ял çыннисем ырласах йышăнчĕç.

— Кирлĕ ĕç ку, кирлĕ...

— Аслă тунă.

— Пит маттур пуçлать-ха çĕнĕ Совет...— текелесе саланчĕç çынсем хăйсен килĕсене.

Тепĕр ирхине вара виçĕ çĕрте те калама çук хĕрӳллĕ ĕç тапранса кайрĕ. Çырмасенчи ватă йăмрасем йывăррăн ӳкни, пуртăсемпе касни, шаккани, пăчкăсем юрлани, çынсем пĕр-пĕринпе шавлăн калаçни, хушшăн кулни, мăннисем ĕçленĕ çĕрте чупса çӳрекен ачасем çуйхашни кунĕпех илтĕнсе тăчĕ Энтриялĕнче. Никам та ĕççĕр тăмарĕ, шкул çулне çитнĕ ачасем те пулăшрĕç. Тарас хăй те лачкам тарличченех ĕçлерĕ. Вăл Микишпа тата ытти темиçе çамрăкпа пĕрле Хăямат кĕперĕн юрăхсăра тухнă юписем вырăнне çĕнĕ сăвайсем çапрĕ... Сăвайсене çапса пĕтерсен, çамрăксем чĕлĕм туртмалла канма ларчĕç; Тарас çав вăхăтрах такам ун ятне кăшкăрсах чĕннине илтрĕ те, сăрт хĕрринче тăракан Хăмăт Энтрине курса, ун патне чупса хăпарчĕ.

— Мĕн каласшăн, Энтри пичче?

— Мăнçырмара пирĕн ĕç пĕтет ĕнтĕ, çынсемпе мĕн тăвас? Киле ярас-и е кунта илсе килес-и?

— Кунта илсе кил, ĕç тупса парăпăр... Анчах та епле пит час пĕтет-ха унта?

— Ара, тĕлĕнмелле хастарлă ĕçлеççĕ вĕт,— сухалне шăлса илчĕ Хăмăт,— хăйсем выççине кура мар... Хам та хăвалатăп та ĕнтĕ...

— Юрать эппин, аван. Тӳрех илсе кил.

Хăмăт каялла кайсан, Тарас çырманалла пăхрĕ. Сахалтан та икçĕр çын ĕçе юратакан кăткăсем пекех йăшăлтатаççĕ унта... Пĕрисем çĕр чаваççĕ, тăпра турттараççĕ, хăмасем туртаççĕ, теприсем вартаççĕ, якатаççĕ, хăшĕсем кĕперне сараççĕ, карлăксене хатĕрлеççĕ. Çак пĕтĕм ĕç шавĕ Тарас кăмăлне тата ытларах уçса ячĕ, унăн çав самантра çырмара ĕçлекенсене пурне те ал тытса тав тăвас, кашнинех «тавтапуç» тесе калас килсе кайрĕ... Май пулнă пулсан, Тарас паян ĕç хыççăн çак пĕтĕм халăха пĕр сĕтел хушшине лартса хăна тунă пулĕччĕ.

— Аван ĕçлерĕр, аван тăрăшрăр, çавăншăн çийĕр, ĕçĕр,— тенĕ пулĕччĕ. Анчах халь ун пек тума май килменнине, никамăн та, Тарасăн хăйĕн те, тăраниччен çимелĕх паранкă та çуккине çав самантрах аса илни ун чĕрине йĕп пекех чиксе илчĕ...

Çывăхрах — пĕр-ик утăмра — ача макăрни илтĕнчĕ. Тарас пуçне çав еннелле çавăрчĕ те кукăртарахураллă пĕчĕк ача çыран хĕррипех хăй патнелле макăрса утнине курчĕ. Ача ӳкесрен хăраса, вăл ăна йăпăр-япăр чупса пырса алла тытрĕ.

— Ма макран, герой?— терĕ вăл, ачана сиктеркелесе.— Кӳр-ха, нăш-нăшне тасатар...

Ачана те хăйĕн сăмсине шăлса яни килĕшмерĕ, те ют çынран хăрарĕ — вăл тата хытăрах çухăрса ячĕ.

— Ну, мĕн пулчĕ ĕнтĕ тата... Мĕн пулчĕ, шăнкăрч? Çынсем ĕç тăваççĕ, савăнас пулать, а эс кăшкăратăн...

— Мемме...— терĕ ача, шывлă куçне мăчлаттарса.

— Çиес килет-и? Паçăрах çапла калас пулатчĕ...

Тарас ирпех кĕсйине чикнĕ турантăпа хутăш пĕçернĕ пăри пашалу татăкне кăларчĕ те çуррине ачана хуçса пачĕ. Леш вара шăпах пулчĕ.

— Вăт, аван... Çи те, урăх нимĕн те ан шарла,— мăн çынпа калаçнă пекех калаçма тытăнчĕ унпа Тарас.— Тӳсес пулать пăртак. Тăхта акă, кулач та çийĕпĕр эпир санпа...

Ачана урăх ним те кирлĕ пулмарĕ, вăл Тарас сăмахĕсене те итлемерĕ, пур вăйĕпе пашалу татăкне кăтăртаттарса кăшларĕ çеç. Тарас вăл мĕнле хыпаланса çинине

тата кăштах пăхса тăчĕ те, ачана çĕре тăратса, çырманалла, ĕçлекенсем патнелле чупса анчĕ.

Тепĕр сехетрен Хăмăт Энтри хăйĕн çыннисене илсе пычĕ. Тарас вĕсене çавăнтах кĕпер патĕнчен хирелле каякан çула тӳрлетме тăратрĕ. Ĕç татах хĕрӳленсе кайрĕ, ĕç шавĕ малтанхинчен те вăйланса, хĕвел инçетри Сăр вăрманĕсем çинелле анма пуçличченех чарăнмарĕ. Хиртен кĕтӳ кĕртнĕ вăхăтра вара, пĕтĕм ĕçе туса çитерсе, çынсем çырмаран хăпарчĕç.

Ку тĕлĕнмелле пысăк çĕнтерӳ пулчĕ...

— Тĕрĕссипе каласан, ĕç кун пекех ăнăçлă пуласса шанманччĕ эп,— терĕ Тарас Павăл пиччене, ĕç хыççăн тăкăрлăк тăрăх килелле пĕрле утса пынă чух.— Сахалтан та ик-виçĕ хут пухăнмалла пулĕ, тенĕччĕ... Шуткă мар вĕт, пĕр кун хушшинче мĕнешкел ĕçе çавăрса хутăмăр!

— А мĕн тетĕн эс... Халăх вăл çавăн пек вĕт. Ăна чипер йĕркелесе вырăнтан хускатса яма пĕлсен, вăл тем тума та пултарать.

— Çапла çав.

— Халь тата, ĕç çине тухса кайиччен, çав шкула тытса юсас пулать пирĕн. Астăватăн пуль, пĕркуннех, хăвăн патна çамрăксем пухăнса ларнă чухнех, каларăм эп сана ун çинчен. Атту ачасем иртнĕ хĕлте те ĕретлĕ вĕренеймерĕç, кăçал та çавăн пек ан пултăрччĕ.

— Тăватпăр, Павăл пичче! Хамăрăн пурнăça юсасси хамăртан килет. Йĕркипе пурне те тăвăпăр, пурте пулĕ...

Çак каçхине Тарас вырăн çине выртсанах çывăрса кайрĕ те ирчченех питĕ лăпкăн çывăрчĕ. Çартан таврăннăранпа та кун пек канлĕн çывăрманччĕ вăл... Тĕлĕкре ăна хĕвел çутинче йăлтăртататакан анлă шыв, илемлĕн ешĕрекен вĕçĕ-хĕррисĕр чечеклĕ çарансем курăнчĕç. Çак çарансем çинче темле пит те чаплă уяв тăваççĕ иккен... Темĕн тĕрлĕ — шурă, кăвак, сенкер, сарă тумсем тăхăннă çынсем çӳреççĕ унта... Çынсем калама та çук йышлă, хăйсем шатах савăнăçлă, сăнĕсем пурин те çутă, хаваслă... Çав çынсем хушшинче вăл та — пурин пекех илемлĕ тум тăхăннăскер — Варукпа пĕрле алла-аллăн тытăçса çӳрерĕ, вĕсем те ыттисем пекех савăнăçлă та хаваслă пулчĕç, чĕрисем çăмăллăн тапрĕç.

* * *

Кирек епле ĕçе те яланах тĕплĕ, тăрăшса, тирпейлĕ тума вĕреннĕскер, Назар, ялти столовăя хăйĕн аллине илсенех, пĕтĕм чунне парса ĕçлеме тытăнчĕ. Ним калаç-

са-туса тăмасăрах, вăл, хайĕн лаç пуçĕнчи лупас айне юпасем çапса, çиелтен сарлака хăмасем сарса, вăрăм сĕтелсем турĕ, вĕсем тавра çавнашкалах вăрăм тенкелсем лартса çирĕплетрĕ. Апатне лаçра пĕçермелле пулнă пирки, унтан пур кирлĕ мар япаласене те кăларчĕ, арăмне лаç ăшчиккине çуса тасаттарчĕ, юлашкинчен пурпа шуратса лартрĕ. Çаксене пурне те туса çитерсен, вăл Тараса хайĕн ĕçне пăхма чĕнсе пычĕ.

— Çапла юрать пуль вĕт, Тарас Петровччă?

— Аван, питĕ аван,— ырларĕ Тарас.— Нимĕнле чăкăртăш санитар та хурлас çук. Чăнах та питĕ лайăх тунă, Назар пичче. Юлашки кунсенче те пулин йĕркеллĕ çитеретпĕр ĕнтĕ ачасене...

— Тусан — кули ĕç пулмасть,— хавасланчĕ Назар ку сăмахсем хыççăн.

Çав кунах Назар виçĕ лавпа хулана кайрĕ те тепĕр кунне кăнтăрлапа Энтрияльне тивĕçлĕ çимĕçсене тиесе таврăнчĕ.

— Юлашки тет ку,— пĕлтерчĕ вăл Тараса, лавсене килхушшине кĕртсе тăратсан.

— Урăх вуçех те памаççĕ-и вара?

— Çук, тет. Перекетлеме тăрăшăр, терĕç.

— Вăл каламасăрах паллă та-ха, çапах та — пĕр пĕрчĕрен икĕ пĕрчĕ тума çук-çке.

— Тӳсес пулать ĕнтĕ...

Тарас, пĕр хушă шухăша кайса, аллинчи хулă таткине çавăркаласа тăчĕ.

— Варуксене курмарăн-и тата?

— Çук, курмарăм.

— Паян таврăнмалла ĕнтĕ вĕсем, виçĕ кун иртрĕ...

— Ĕçĕсем пĕтсен килĕç-ха.

Лавсене пушатнă чух Назар килхушшине пĕрерĕн-пĕрерĕн темиçе çын пухăнчĕç, пурте, сăмах майĕн, паян кӳрсе килнĕ çимĕçсем çинчен ыйтрĕç, малашне мĕнле пуласси çинчен пĕлме тăрăшрĕç. Яланхи пекех, вăл калаçусенче çынсем выçăпа питех те аптрани, пĕтĕм шанчăка патшалăх пулăшăвĕ çине çеç хуни палăрчĕ. Çынсем калаçнă çĕре хайхи кăрчама ăстин ывăлĕ — Микстур Михали пырса кĕчĕ. Вăл калама çук сарлака кивĕ галифе тăхăнса, ăна хулпуççи урлă подтяжкăпа çакса янине асăрхасанах, Тарас çамрăксен пĕркунхи пухуне аса илчĕ. Ирĕксĕрех кулас килсе кайрĕ унăн.

— Э-э, Михал Михалч, ара, эс пит чаплă йĕм тупса



тăхăннă-çке! —терĕ вăл.— Чисти генерал! Ăçтан тупрăн ара, анчахрах шалавар çук, теттĕн-çке?

— Эпир тупăпăр,— темле сиввĕн татса хучĕ те куна хирĕç Микстур, шăл витĕр сурчĕ.— Пирĕнпе нумай ан калаç.

— О-о, эсĕ ытла та мăнкăмăлланса кайнă иккен,— асăрхаттарчĕ Назар патне пынисенчен пĕри.— Ăнсăртранах пуйса каймарăн пулĕ те?

— Ара, мĕн тетĕн,— куçне хĕсрĕ тепри,— кун пек йĕмпе те мăнкăмăлланмасан... Пăх-ха эс, кашни йĕмпĕççине пĕрер четвĕрт кăрчама чиксен те палăрас çук та...

Пурте кулса ячĕç. Хăйне кăрчама çинчен калаканни çине Микстур хĕсĕк куçĕпе пăхса илчĕ те сасартăк ăна:

— Ослы!— терĕ. Унтан каллех шăл витĕр сурса, ерипен урамалла утса тухса кайрĕ.

— Уй тăмани!..— кулса юлчĕç килхушшинче.

Каç пулма пуçларĕ. Пушатнă лавсем килхушшинчен тухса кайрĕç, çынсем те, калаçкаласа, чĕлĕм турткаласа, хапхаран тухрĕç. Унччен те пулмарĕ, Назар кĕлет алăкне мăн çăраççипе епле питĕрнине пăхса тăракан Тарас урамра тахăшĕ хыттăн кăшкăрнине илтрĕ:

— Килеççĕ хайхисем! Пирĕн тиликатсем килеççĕ!..

— Варуксем таврăнаççĕ пулас,— терĕ вăл Назара.— Тухса пăхас-ха...

Ку тĕрĕс пулнă. Тарас, урама тухсанах, хир енчен Кулине, Варук, Марине тата майралла тумланнă тепĕр хĕрарăм утса аннине курчĕ. Майрине Тарас тăруках паллаймарĕ, çывăхарах пырса тин уйăрса илчĕ — вăл ялти çамрăк учительница Екатерина Васильевна пулнă. Ял çыннисем ăна пурте Катя тесе чĕннĕ. Тарас вăл хĕрачана мĕн пĕчĕкренпех пĕлнĕ, мĕншĕн тесен ача чух шкулта унпа пĕр вăхăтра вĕреннĕ.

Хăйсене çынсем кĕтсе тăнине курсанах, хĕрарăмсем пĕр-пĕрин çине пăхса кулса ячĕç, çапла вара, кулма чарăнмасăрах, вĕсем Варуксен умне пырса тăчĕç.

— А-а, таврăнтăр-и, çухалнăскерсем?— терĕ Тарас шӳтлĕн, хĕрарăмсене пĕрин хыççăн теприне ал парса.— Эпир ĕнтĕ сире шырама ярасшăнччĕ...

— Вуçех таврăнас мар тенĕччĕ те, кайран килес терĕмĕр тата...— кулса илчĕ Варук.

— Питех кăмăла кайрĕ-и-мĕн?

— Ара, мĕн калăн ĕнтĕ...

— Курманнине куртăмăр çав!— хушса хучĕ Кулине.

— Аплах-и?
— Ҫапла пулмасӑр...
— Но-о... Аплах пулсан, ләрӑр-ха эппин, каласа кӑтартӑр пире те пӑртак...
Тарас урамри каска ҫине ларчӗ, унпа пӗрле халь ҫеҫ гаврӑннӑ хӗрарӑмсем те, паҫӑр Назар килхушшинче пулнӑ ҫысем те вырнаҫрӗҫ. Назар хӑй те тухса тӑчӗ, тата урампа иртсе пыракан пӗр-ик ҫын чарӑнчӗҫ.
— Ну, Кулине аппа, эс аслӑрах, пуҫла тавай...— терӗ Тарас.
Кулине, хӑйӗн ӗнси ҫинелле анса кайнӑ масмакне тӳрлетсе, ҫӳҫне ывҫипе якатрӗ те, хӗрсем ҫине кулара... пӑхса илчӗ.
— Мӗнрен пуҫлам-ши?..
— Йӗркипе кала ара,— терӗ Варук.
— Ну, йӗркипе калам эппин...— пуҫларӗ те Кулине, каллех чарӑнса Варукпа Марине ҫине пӑхрӗ.— Тупата пӗлместӗп...
— Хулана мӗнле ҫитрӗр, ҫавӑнтан тытӑн,— пулӑшрӗ Тарас.
— Юрӗ эппин... Хулана каҫ пуласпа ҫитрӗмӗр те, эсӗ тӗллеттерсе янӑ ҫурта тупрӑмӑр, хайхи... мӗнлеччӗ-ҫке ҫав, Варук?
— Уком.
— Ия ҫав, укома. Хамӑр хутсене пӗр кӗске ҫӳҫлӗ майрана патӑмӑр. Вӑл пире тӳрех: «Апат ҫинӗ-и эсир паян?» — терӗ.— Ҫинӗ, — тетпӗр.— «Хӑҫан?» — Ирпе. — «Апла пулсан, малтан столовӑйне айтӑр»,— терӗ. Карӑмӑр пасар пулнӑ ҫӗре... Леш кӗтесри мӑн ҫурта кӗрсе, ҫӳлти хута хӑпартӑмӑр та пире чиччасах апат пырса пачӗҫ...
— Авӑртрӑр пуль пӗрре?— терӗ тахӑшӗ.
— Панӑ апата ма ҫиес мар?.. Ну, ҫирӗмӗр те, майра пире хула хӗррине, леш реальни теҫҫӗ-и ҫав... ҫавӑнта илсе кайрӗ. Пырса кӗтӗмӗр те — айтурух! Тӑп-тулли хӗрарӑм! Кӑткӑ пек. Таҫтан та пынӑ курӑнать. Сахалтан та пӗр пилӗкҫӗр ҫын пулӗ ҫав... Сасартӑк, ман пуҫ ҫийӗнчех шӑнкӑрав сасси вӑрӑммӑн янраса кайрӗ. Хӗрарӑмсем пурте ҫӳлти хута хӑпарма пуҫларӗҫ. Эпир те хӑпартӑмӑр, халӑхпа пӗрлех пысӑк пӳлӗме пырса кӗтӗмӗр. Хайхи ҫамрӑк майра, пире маларах илсе кайса, пукансем ҫине лартрӗ. Пирӗн ӗнтӗ куҫ пуҫ салансах кайрӗ, ним ҫине пӑхма та пӗлместпӗр! Халӑхӗ пӗр йӑшӑлтатать, пур ҫӗр-

те те калаçаççĕ, шавлаççĕ, пӳлĕмне темĕн тĕрлĕ те илемлетсе пĕтернĕ... Туршăн та, пĕр çĕр аршăн хĕрлĕ çитсă пĕтернĕ пуль стенасем çине карлакаса... Çитси çине веçех çырса тултарнă тата...

— Мĕн çырнă?— Кулинене пӳлсе ыйтрĕ халĕ çеç пырса тăнă Исай.

— Эп хам вулаймастăп та, каламах пĕлместĕп ăна... Ак, кусем (Кулине пуçĕпе Варук еннелле сулчĕ) веçех вуларĕç пулас... Мĕнччĕ çав, Варук?

— Пĕтĕмпех хĕрарăмсем çинчен çырнă.

— Мĕн тенĕ-ха вара?

— Хĕрарăм халĕ арçынпа танах, тет, унăн та патшалăха тытса тăма пĕлмелле, тет...

— Пит хăватлă каланă-çке, май мар,— мăкăртатса илчĕ Кулине калавне итлесе тăракансенчен пĕри, суккăртарах хресчен, Шĕвĕрпуç Хоми тенĕскер.— Апла, малашне упăшкисем арăмĕсене мар, арăмĕсем упăшкисене хĕнеççĕ пуль?

— Хĕрарăма текех эс хĕненĕ пек хĕнеме юрамасть, терĕç çав,— татса хучĕ ăна Кулине,— уншăн суда памалла, терĕç. Асту акă, лекетĕн пĕрре шур çурта кирпĕч шутлама.

— Эс йĕркипе, Кулине, йĕркипе,— чарчĕ ăна Тарас.

— Халь те йĕркипех ара... Нумаях та лармарăмăр — шăнкăрав татах янратса илчĕ те, пирĕн умри тем пысăкăш хулăн чаршав уçăлчĕ кайрĕ. Ун хыçне вăрăм сĕтел лартнă пулнă, сĕтелне симĕс пуставпа витнĕ... Сĕтел умĕнче пĕр чылаях ватă хĕрарăм тăрать. Малтан хурт вĕлли пекех сĕрлекен халăх шăпах пулчĕ. Вара çав хĕрарăм калама тапратрĕ. Тĕлĕнсе каймалла! Эпир ăна вырăс пуль тенĕччĕ, анчах вăл пирĕн пек чăвашах иккен, тӳрех чăвашла калама тытăнчĕ.

— Мĕн каларĕ-ха?

— Мĕн çав... Чăваш хĕрарăмĕ ĕмĕрĕ-ĕмĕрĕпех тĕттĕмре пурăннă, кун çути курман, тет, унăн пурнăçĕ тĕпел кукринче иртнĕ, вăл выльăх пек ĕçлесе, асаппа мăшкăл тӳссе çеç пурăннă, тет, малашне апла пулмалла мар ĕнтĕ, чăваш хĕрарăмне те çутта кăларма тытăнмалла, халах ĕçне хутшăнтармалла, тет... Нумай каларĕ вăл, пурне астуса илейместĕп ĕнтĕ, çапах та вăл каланине пĕтĕмпех ăнлантăмăр... Хамăр пурнăçа епле юсасси çинчен канашлама пухрăмăр эпир сире, терĕ вăл. Çапла каласанах — çурăм хыçĕнче, таçта çӳлте, темскер этем майсăр

вăйлă, аслати пек кĕрлесе, янраса кайрĕ. Шартах сикрĕм çав, хăрасах кайрăм!

— Мĕн пулнă-ха вăл апла?

— Музăк теççĕ-и... Пӳлĕмĕнче унта, хыçалта, çӳлĕ вырăн тунă, çавăнта пĕр çирĕм çын темле çутă трубасене вĕрсе лараççĕ-мĕн...

— Духовой оркестр,— терĕ Исай.

— Çав туховни пулмалла çав... Ăна-кăна эпир нимĕн те пĕлмен-çке, ялтан ниçта тухман çынна мĕн тетĕн эс?

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ. Малалла мĕн пулчĕ?— васкатрĕ Тарас. Çав вăхăтра Назар тĕлне Павăл пичче, Хăмăт Энтри тата темиçе çын пырса тăчĕç.

— Унтан вара пĕрин хыççăн тепри туха-туха калама пуçларĕç. Тем çинчен те вĕрентсе houларĕç. Халь пурне астуса та çитерес çук. Хĕрарăм пурнăçĕ малашне пĕтĕмпех улшăнмалла, терĕç. Хĕрарăмсен пур çĕрте те арçынсемпе пĕрлех пулмалла, вĕсене пур çĕре те суйламалла, вĕрентмелле, теççĕ. Унтан... мĕн пулчĕ çав, Варук?

— Чирсем çинчен...

— Чăнах та-çке! Пĕр мăн кусçлăхлă хыткан тухтăр чирсем çинчен ăнлантарчĕ. Пирĕн хушăри чирсем нимрен ытла эпир таса мар пурăннинчен пулаççĕ, тет. Килçурта, çи-пуçа таса тытсан, чирсем те сахалланаççĕ, тет. Ун хыççăн тепĕр майра-тухтăр ачасене мĕнле пăхмалли çинчен каласа кăтартрĕ... Юлашкинчен пире çаксем çинчен ялти хĕрарăмсене пĕтĕмпех ăнлантарса пама хушрĕç. Авă, тем чухлĕ хутсем парса ячĕç, вĕсене пурне те вуласа пĕлмелле, тет.

— Мĕнле хутсем?

— Кăтарт, Марине...

Марине хул хушшине хĕстернĕ хут тĕркине салтрĕ. Хуларан тĕрлĕ тĕслĕ агитациллĕ плакатсем парса янă иккен: ялхуçалăхĕ çинчен, чирсем çинчен, ачасене ӳстересси çинчен... Пухăннă çынсем вĕсене каçса кайсах пăхма тытăнчĕç.

— Тата мĕн куртăр хулара?— ыйтрĕ çав хушăра Исай, Марине патнелле çаврăнса. Вĕсем ĕнтĕ хĕллеренпех пĕрне-пĕри кăмăлласа пурăннă, ăна çынсем те сиснĕ, анчах та, иккĕшĕ те çамрăк пирки хăюсăр пулнипе, кун çинчен пĕр-пĕрне каласа парайман, ăнсăртран тĕл пулса калаçма тӳр килсен, нимле мар пулса хĕрелсе кайнă çеç. Çавăнпа халĕ те, Исай сăмах хушсан, Марине тӳрех хĕрелсе кайрĕ.

— Пынă каçах шивой картин кăтартрĕç,— терĕ вăл, Исай çине тӳррĕн пăхма хăяймасăр.

— Мĕнле шивой картин?

— Стена çине çакнă шăналăк çинче чупаççĕ ара... Кина теççĕ-и...

— А-а, пĕлетĕп! Кино. Кинематограф. Урăхла каласан, электричествăпа ĕçлет...

— Тиятăр кăтартрĕç тата,— терĕ вĕсен калаçуне итленĕ Варук.— Ачам, питĕ тĕлĕнмелле пулчĕ. Кининчен те ытларах кăмăла кайрĕ мана. Çĕр улпучĕсем хресченсене епле асаплантарнине куртăмăр. Хресчен ывăлĕ пĕр хĕре юратнă, ăна качча илесшĕн пулнă, анчах та улпут ывăлĕ вăл хĕр çине хăй куç хывнă-мĕн. Иккĕшĕ çавсем тавлашма тапратрĕç те, улпучĕ хресчене çупса ячĕ. Ку та тӳссе тăраймарĕ, лешне пĕррех персе антарчĕ, лешĕ чутах вилсе каятчĕ. Çавăншăн хресчен ывăлне тыттарса ячĕç, улпучĕ хĕре пусмăрлама тапратрĕ... Хĕрĕ хăюллăскер-мĕн, парăнмарĕ çавна, улпут пӳлĕмĕнче çакăнса тăракан хĕçпе пĕррех ярăнтарчĕ çакна пуç урлă. Анчах та хăтăлаймарĕ хăй, пырса тытрĕç. Юлашкинчен хĕр çав тери хурлăхлăн юрларĕ... Куççулĕсем шăпăртатсах анчĕç пирĕн...

— Питĕ шеллерĕмĕр çав,— хушса хучĕ Марине.

— Унтан тата музей кăтартрĕç... Мĕн кăна çук пуль унта! Пĕчĕк хурт-кăпшанкăсенчен пуçласа упасем таранах пур... Таçти темле кайăксем те...

— Чăнах та çав, нихçан курманнине куртăмăр.

— Эппин, куç уçăлчĕ пăртак? Епле пек, хĕрсем? — терĕ Варука куçĕнчен пăхса ларнă Тарас.— Ӳкĕнместĕр пуль вĕт кайнăшăн, э?

— Мĕн ӳкĕнмелли...

— Вăл çапла пулассине эпĕ малтанах пĕлнĕ, çавăнпа çине тăрсах хăваларăм сире... Халь ĕнтĕ, ыран-виçминесемех, пур хĕрарăмсене те пухатпăр та, сирĕн çаксем çинчен пĕтĕмпех каласа кăтартмалла пулать.

— Ху куçпа курса, ху хăлхупа илтнĕ япала çинчен каласа пама пулĕ-çке ăна,— терĕ Кулине, каска çинчен тăрса.— Ну, хĕрупраç, киле каймалла пуль, каç та пулса килет... Ачасем темле пурăнкаларĕç ĕнтĕ хамсăр...

Кулинепе Марине анаталла утрĕç, Варук киле кĕчĕ, вĕсем хыççăн ытти çынсем те чылайăшĕ саланчĕç.

Вĕсемпе пĕрле Екатерина Васильевна та кайма тăчĕ, анчах Тарас ăна тытса чарчĕ.

— Епле пурӑнкалатӑн, Катя, мӗн ӗҫлекелетӗн? Курманни нумай пулать...

— Пурӑнкалатӑп хама май,— терӗ учительница.— Халӗ каникул вӑхӑчӗ те, нимех те ӗҫлеместӗп-ха. Хулари хӗр-танташсем патне курма кайсаттӑм, унта делегаткӑсен канашлуне кӗрсе тухрӑм, хамӑр ялсене тӗл пултӑм...

— Хӗрарӑмсемпе малашне сана ӗҫлеттермелле пулать пулӗ, Катя. Хутла та вӗрентмелле вӗсене, чир-чӗртен сыхланма та...

— Ӗҫлекеленӗччӗ те-ха эпир, ҫак выҫлӑх пуҫлансан пӑрахмалла пулчӗ. Выҫӑ халӑхпа мӗн тӑвӑн?

— Ку тӗрӗс, анчах малашне ун пек пулмасть пуль ӗнтӗ, ҫӗнӗрен тытӑнма тивет.

— Маншӑн пулсан, ӗҫ тытӑнса тӑрас ҫук, Тарас Петрович!

— Юрать эппин. Тӗл пулӑпӑр-ха, калаҫса татӑлӑпӑр...

Учительница пуҫӗпе сулса сывпуллашрӗ те урампа анса кайрӗ. Варуксен тӗлӗнче, унӑн ашшӗсӗр пуҫне, Тарас, Павӑл пиччепе Хӑмӑт Энтри тата Исай ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ. Кӑнтӑр енчен вӗрекен ҫил, каҫ пулнӑ май, хӗвеланӑҫ еннерех куҫрӗ, кӑшт сивӗрех пулма пуҫларӗ, тӳпери пӗлӗт таткисем хӑмӑрланма тытӑнни курӑнчӗ.

— Кӗлет патне хурал тӑратас пулать пуль, Назар пичче,— терӗ Тарас.— Темрен тем пулса тухӗ тата. Юлашки вӑхӑтра таврара нимех те илтӗнмест пек те, пурпӗр сыхланас пулать...

— Сыхланни нихҫан та кансӗрлемест ӗнтӗ вӑл,— унпа килӗшрӗ Павӑл пичче.

— Вӑхӑчӗ ҫавӑн пекрех-ха ҫав. Бандитсен юлашкисем пӗтӗмпех пӗтнӗ теме ҫук. Унта-кунта ҫӳреççӗ-ха выҫӑ кашкӑрсем евӗр...

— Шуйттан пӗлет-и вӗсене, тен, хамӑр ялтах пулӗ кам та пулин,— терӗ Хӑмӑт.

— Кама тӑратӑпӑр?

— Хамах хураллатӑп пуль,— терӗ Назар.— Кӗлет умне тухса выртатӑп та...

Тарас унпа килӗшмерӗ:

— Ун пек май килмест, Назар пичче... Эс иртнӗ каҫ та путлӗ ҫывӑрман, анчах санӑн ыран ӗҫ мӑй таранах пулать. Урӑххине тупӑпӑр.

— Акӑ, Исая хушас эппин...

— Ӑнах та, хурал тăр кĕçĕр,— Исая айăкĕнчен чавсипе тĕкрĕ Тарас.— Ыран санăн нимех те тăвас çук пуль бĕт?

— Юрĕ ара,— килĕшрĕ Исай.

— Эп сана хам пăшала авăрласа парăп,— терĕ Павăл пичче.— Чăн-чăн часовой пекех пулатăн.

— Вăл та юрать...

Кун хыççăн татах чылай хушă калаçса ларчĕç вĕсем Назар умĕнчи каскасем çинче. Хĕрарăмсем хулана кайса килнине асăнчĕç. Тарас вăл питĕ усăллă ĕç пулни çинчен каларĕ («мĕншĕн тесен пирĕн çур пурнăç хĕрарăмсем çинче тытăнса тăрать...»), унтан хирти тырпулсем çине куçрĕç, Назар каллех «Пиçен уйĕ» пирки тапратрĕ, унта куçса ларсан аван пуласси çинчен тата тепĕр хут ĕнентерме тытăнчĕ. Ун шухăшĕпе пурте килĕшрĕç.

— Эп хам та пĕрмаях шухăшлатăп-ха ун пирки,— терĕ Тарас,— анчах та ĕçе эс каланă пек мар, кăшт урăхларах тăвас пулать пулĕ.

— Мĕнле тата?

— Эпĕ унта çĕр ĕçне пурĕ пĕрле ĕçлемелли юлташлăх тума май çук-ши, тетĕп.

* * *

Киле таврăнсан, Тарасăн темшĕн çывăрас килмерĕ. Амăшĕпе шăлнĕне вăратас мар тесе, вăл хуллен кăна хыпашлакаласа «шăши куçне» тупса çутрĕ, сентре çинчен темле хутсем илчĕ те сĕтел хушшине ларчĕ. Хутсене суйланă хушăра унăн аллине пĕр сăнӳкерчĕк кĕрех кайрĕ. Малтанах ăна вăл ытти хутсемпе пĕрле аяккалла хума тăчĕ, анчах та хумарĕ, лампа патнерех илсе пырса тинкерсех пăхма тытăнчĕ.

Ку — Тарас пĕлтĕр çак вăхăтра Çĕпĕрти пĕр хулара хăйĕн икĕ юлташĕпе пĕрле ӳкерттернĕ карточка пулнă. Пĕри — Саранск çывăхĕнчи мăкшă каччи, тепри Чулхула вырăсĕ, Сормово заводĕнчи рабочи. Вĕсем икĕ çулталăка яхăн пĕрле пурăннă, нумай çапăçусенче пулнă, пĕр хуйхăпа хуйхăрнă, пĕр савăнăçпа савăннă. Мăкши çак карточкăна ӳкерттернĕ хыççăнах пĕр çапăçура вилнĕ, вырăсĕ тепĕр çулталăкран Тараспа пĕрлех киле таврăннă. Атăл тăрăх Васильсурска çитсен, вĕсем пĕр-пĕринпе ăшшăн, тăвансем пекех уйрăлнă, пĕр-пĕринпе яланах çыхăну тытма, çырусем çырма сăмах панă.

Карточка çине пăхса ларнă май Тарас пусĕнче нумай асаилӳсем çуралса шуса иртрĕç...

«Мĕнле пурăнать-ши вăл халь? Çыру çырас-ха...» — шухăшларĕ вăл юлашкинчен. Çавăнтах хутпа кăранташ илчĕ те çырма тытăнчĕ.

*«Тусăм Потап,— çырчĕ вăл,— иксĕмĕр уйрăлнăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ, анчах эпĕ вуçех те сисмерĕм ăна, кунсем çав тери хăвăрт иртсе пыраççĕ... Киле çитсенех ĕçе кӳлĕнтĕм те (ним пысăклатмасăрах калатăп сана!) обоз лаши пекех ĕçлетĕп. Пирĕн ялти пурнăç питех те начар-мĕн, Советра жуликсем, мародерсем, тăшмансем ларнă, пурнăçа юхăнтарсах янă, манăн вара, çĕнĕ шăпăр вырăнне пулса, чăн малтан çав шăршлă çӳп-çапа тасатма тӳр килчĕ. Халь ĕнтĕ ĕçсем юсанма пуçларĕç, темелле, çамрăксене пĕрлештертĕмĕр — ячейка ĕçлеме тытăнчĕ, актив пур ĕнтĕ, хĕрарăмсене те вырăнтан хускатма тапратрăмăр... Пĕр пысăк субботник ирттертĕм, çак кунсенче тата тепре тума шут пур-ха. Пуçра питĕ пысăк плансем çуралаççĕ, тусăм! Ял пурнăçне епле улăштарса, çĕнетсе пымаллине тĕкĕр çинчи пекех куратăп... Халь эпир ĕçе тин çеç пуçăнатпăр-ха вĕт, чăн-чăн пысăк ĕçсем, татăклă çапăçусем пĕтĕмпех малта. Анчах та хăратмаççĕ вĕсем мана, пĕртте шиклентермеççĕ! Çав ĕçсем витĕр, çулсем урлă — чечеклĕ, телейлĕ, илемлĕ пурнăç курăнать вĕт, тусăм, çав хаваслантарать мана, чĕрене çĕклет, малалла туртать. Çулсем иртĕç, хамăра чăрмантаракан тăшмансене пуçĕпех аркатăпăр, тӳснĕ йывăрлăхсем манăç пулĕç, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем çитĕç... Çавăншăн, хамăрăн пуласлăхшăн, малашнехи телейлĕ пурнăçшăн ĕçлетпĕр те вĕт халь! Астăватăн-и, киле тухса килес умĕн военком мĕнле калаçрĕ пирĕнпе? Вăл пирĕн çĕршыв вунă-вунпилĕк çултан мĕнешкел пуласси çинчен каларĕ... Пулатех вăл калани! Нумаях та вăхăт иртмĕ — пирĕн çĕршыв пек вăйлă çĕршыв та пулмĕ тĕнчере. Эсир хуларă ĕçлĕр, эпир — ялта, хуçалăх кунтан-кун çирĕпленсе хăпарĕ, культура сарăлĕ, хулапа ял хушшинчи уйрăмлăх пĕтсе пырĕ... Хамăртан килет вĕт вăл, хамăр вăйран, хамăр тăрăшса ĕçлениччен! Аса илĕпĕр вара иртнĕ кунсене... тĕлĕкри пек... Çапах та,*

*хамăр пурнăçа усăсăр пурăнса ирттермерĕмĕр, теме тивĕçлĕ пулăпăр. Çапла мар-и мĕн, тусăм?*

*Хамăн пурнăçра улшăнусем çук-ха. Ĕлĕкхи пекех каччă. Леш хĕр... (астăватăн-и, Варук тенĕскерне асăнаттăм?) улталаман мана, таврăнасса кĕтнĕ. Час-часах тĕл пулкалатпăр, майĕпе халăх хушшинчи ĕçе хутшăнтарма тăрăшатăп ăна. Аван çын. Ăсĕ те пур, кăмăлĕ те аван. Тен, кĕркунне туя чĕнĕп сана... А эс мĕнле? Леш хут фабрикинчи Таня?*

*Анне питĕ чирлĕ пулнă та — сывалчĕ, халь чиперех çӳрет, шăллăм арçури пекех çивĕчленсе кайнă... Ыран акă пĕр пысăк ĕç хускататăп-ха: пĕр çирĕм-вăтăр хуçалăхран çĕре пĕрле ĕçлемелли юлташлăх тăвасшăн. Плане пит аван та-ха, мĕнле пулĕ ĕнтĕ. Кайран çырăп. Эсĕ те çыр!*

*Халлĕхе сывă пулса юл. Çĕр хут салам!*

*Сан тусу ТАРАС».*

Мĕн çырнине Тарас çĕнĕрен вуласа тухрĕ те хăйĕнчен хăй тĕлĕнчĕ.

«Çырма пултаратăп иккен эпĕ... Пăх-ха! Кун пек пулсан, таçта сăвăсем те çырма тытăнăп тата!»— кăмăллăн кулса илчĕ вăл хăй ăшĕнче.

Тулта çав вăхăтра çанталăк чăннипех пăсăлма пуçларĕ. Çил вăйланнăçемĕн вăйланчĕ, йывăçсем кĕркуннехи пек кашларĕç... Тарас çырăва пуçтарса хучĕ те тула тухрĕ. Тӳпене пĕтĕмпех хăвăрт шăвакан çăра пĕлĕтсем хупласа илнĕ иккен, пăч тĕттĕм пулса тăнă. «Исай мĕнле тăрать-ши унта? Çывăрса ан кайтăр тата... Кун пек каçсем усал вĕсем...»— шухăшларĕ вăл. Çавăнтах пӳрте кĕрсе пиншак тăхăнчĕ те, урама тухса, пысăк утăмсемпе тăвалла утрĕ...

## 14. ÇАРАТУ

Çĕрле, пĕтĕм ял çывăрса кайсан, Лява Уртемĕн кайри пӳртĕнче кивĕ лутра сĕтел тавра тăватă арçынпа пĕр хĕрарăм тем çинчен пит те вăрттăн, çав тери асăрханса калаçса ларчĕç. Кил хуçи вĕсене валли ĕçмелли те, çимелли те кăларса хунă-мĕн, анчах çынсем вĕсем çине питех çаврăнса та пăхмарĕç, вĕсем нимрен ытла турăшсем айĕнче ларакан Махорка сăмахĕсене итлерĕç...

Пĕркунне, Уртемпе сывпуллашса тухса кайсан, Махорка Хусана çитсе тухнă, анчах унта хăйĕн тусĕсене тупайман: вĕсенчен хăшне хупса лартнă иккен, хăшĕсем таçта мурне тарса çухалнă. Ют хулара икĕ кун çапкаланса çӳренĕ хыççăн вăл выçăпа аптра пуçланă. Атăл пристанĕнчи билет сутакан касса умĕнче пĕр тутар арăмĕн аллинченех укçа туртса илсе тарнă, ăна хăваласа çитсе хĕнеме тапратнă, анчах та ку, темле майпа вĕçерĕнсе, пристаньрен хускалса кайма пуçланă пăрахут çине сикме ĕлкĕрнĕ. Козьмодемьянска çитсен, вăл малтанах сăнаса пынă икĕ чăматана вăрласа çырана тухнă та, унти япаласене çав кунах пасарта сутса, Энтрияльнелле утнă.

Лява Уртемĕ, пĕркунне Махоркăна сиввĕнтерех ăсатса янă пулин те, халĕ ăна хапăл тусах йышăнчĕ.

— Пит аван пулчĕ-ха эс килни,— терĕ вăл.— Кĕтсех тăраттăм.

— Мĕн апла?

— Ĕç пур, тăванăм. Пысăк ĕç...

Пулштухри сăмакуна ĕçсе ларнă чух Уртем Махоркăна хăй шухăшласа хуни çичен каласа пачĕ. Питĕ вăрттăн, пӳртре çын пулнă пулсан — вăл та нимĕн те илтмелле мар каларĕ.

— Çынсем кирлĕ,— терĕ Махорка, Уртем калама чарăнсан.— Шанчăклă çынсем тупма пултаратăн-и?

— Миçе кирлĕ?

— Виç-тăват çын.

— Пĕрре пур...

— Кам?

— Çынни тăмсайрах ĕнтĕ, анчах та кумсумулсене юратмасть, çавăншăн паха, Микстур Михали, теççĕ...

— Калаçса пăх. Урăх çук-и?

— Хамăр пулăпăр эппин... Питех кирлĕ пулсан, хĕрарăмсем пур.

... Вĕсен телейне, пачах та кĕтмен çĕртен, тепĕр каçхине Уртем пӳрт алăкне Чалăшкуç пырса шаккарĕ. Ку бандит çак хушăра нумай çапкаланса çӳренĕ иккен, пĕр вăхăт тăван ялĕнче те пурăннă, анчах та ялти активистсем вăл камне чухласа илсе ăна тытса пама хатĕрленнине сиссен, часрах тухса шунă. Ниçта кайма çуккипе, вăл каллех Уртем патне пырса тухнă.

Махорка ăна тӳрех пулас «ĕç» çинчен ăнлантарса пачĕ. Чалăшкуç пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ.

Микстур Михалине вара Уртем пит ăста çавăрса илчĕ. Вăл сыпма юратнине астуса, кĕсйине çурпулштух чикрĕ те, ун патне çăраççи юсаттарас сăлтавпа пычĕ. (Микстур тимĕр хатĕрсемпе кăшт-кашт аппаланкаланă). Сăмах хыççăн сăмах... Пурнăç начарри, ялта халь комсомолецсем пуç пулса тăни, Михалана вĕсем хисеплеменни çине кĕрсе кайрĕ Уртем. Пĕр сехет хушшинче ĕç пулса та тăчĕ, Микстур комсомолецсене хирĕç кирек мĕн тума та хатĕр иккенни курăнчĕ. Уртем ăна тумланма пулăшасси çинчен каласан, вăл антăхсах кайрĕ вара.

— Шалавар çук-и сан?— ыйтрĕ тӳрех.

— Ма çук пултăр? Пур... Халь тесен, халь пама пултаратăп.

— Пар эппин!— сиксе тăчĕ Микстур, пурин çинчен те манса кайса.

— Кăшт тăхтасан пыр. Шалавар анчах мар, тен, тата мĕн те пулин тупăпăр,— юри савăнăçлă пек пулса, куçне хĕссе илчĕ Уртем.— Манпа туслă пурăнсан, нихçан та аптрас çук эс!

Хаваслансах кайнă Микстур тепĕр çур сехетренех персе çитрĕ Уртем патне. Ку ăна чăлантан темле кивĕ галифе (бандитсем вăрласа килнĕ япаласен юлашкине) тата çавнашкалах кивĕ сенкер подтяжка тупса пачĕ. Микстур вĕсене йăпăр-япăр тăхăнса ячĕ те, хăйне тăрăх пăхкаласа, пӳртре каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ. Ун кăмăлне çĕклентермешкĕн Уртем юриех мухтарĕ ăна:

— Э-э, ку сана калама та çук килĕшет вĕт! Шутсăр лайăх, ахвицер пекех!— терĕ вăл, Микстурăн çинçе те хыткан пĕççисем çинче галифе пуш михĕ пекех çакăнса тăнă пулин те. Çавăнтах чăлантан тата пиншак çĕклесе тухрĕ.

— Çакна тăхăнсан, татах капмар пулмалла та эсĕ, анчах куна пама кăшт тăхтам-ха... Ĕçне тăвар малтан, вара пурте пулĕ...

— Кала, Уртем пичче, хуть те мĕн тăватăп!— кăшкăрса илчĕ халь ĕнтĕ пуçне пĕтĕмпех çухатнă Микстур.

— Чăнах-и? Турра асăн эппин.

— Туршăн та, хĕвелшĕн те!

— Нимрен те хăрамастăн-и?

— Шуйттанран та хăрамастăп!

— Сăхсăх!

Микстур вăль та вальт çеç хĕрес хурса илчĕ.

— Çĕр çăттăр мана!

— Апла пулсан, акă мĕн, шăллăм...

Уртем Микстура кайри пӳрте кĕртсе сĕтел хушшине лартрĕ те, иккĕшĕ те пĕрер черкке сăмакун типĕтнĕ хыççăн, ăна «ĕç» çинчен ăнлантарма тытăнчĕ. Нумай ăнлантарчĕ... Вĕсем калаçнине çĕр çинче пĕр чун та илтмерĕ. Уртемĕн сăмахĕсене Микстур малтан тĕлĕнсе, унтан хăраса тăнласа ларчĕ, анчах Уртем ăна паттăрлатма тата темиçе черкке пачĕ те, вăл паçăрхи пекех хăй тем тума та пултарни çинчен ĕнентерме тытăнчĕ...

— Никам та нимĕн те пĕлмест, пĕлес те çук... Анчах эсĕ хăвна пысăк усă кӳретĕн, сана ахаль тăвас çук эпир. Укçа та, çи-пуç та пулать. Сан пек маттур каччăна мĕн кирлĕ тата?— тесе пĕтерчĕ Уртем хăйĕн сăмахне.

Микстур темиçе самант чĕнмесĕр ларчĕ...

— Ма ним те шарламастăн?— ыйтрĕ Уртем, хăйĕн çăмламас питне Микстурăн пичĕ патнех илсе пырса.— Ай, комсумулсене хĕрхенетĕн-и? Асту, халь тин каялла чакма юрамасть ĕнтĕ. Ăçта та пулин пĕр сăмах персе ярсан, пирĕнпе пĕрле эс ху та пĕтетĕн!

— Юрать,— пăчăртанса тухрĕ Микстур пырĕнчен.

— Пар аллуна!

— Ме...

— Халь ĕнтĕ Назар таврашнелле кайса çӳре... Каçхине вăл хулана тавар тиеме кайнă. Пĕлме тăрăш: мĕн илсе килнĕ, ăçта хураççĕ...

Микстур итлерĕ, Уртем хушнине кайса пĕлчĕ. Çĕрле пулсан вара вăл Уртемпе, Махоркăпа, Чалăшкуçпа, Мамун арăмĕпе пĕрле каллех çав сĕтел хушшинче ларчĕ, Махорка вĕсене Уртем тахçанах шухăшласа хунă «ĕçе» мĕнле тумаллине вĕрентрĕ. Тĕрĕссипе каласан, кулаксемпе бандитсен шайки çак каçхине этем майсăр хăрушă, тискер çарату тума хатĕрленчĕ. Çурçĕр иртсен пĕр сехетре вĕсем Уртем пӳртĕнчен умлăн-хыçлăн тухрĕç те тĕттĕмлĕхре çухалчĕç. Никам куçĕ те курмарĕ вĕсене, пĕр чĕрчун та асăрхамарĕ. Энтриялĕ лăпкăн кăна çывăрчĕ, хĕвеланăç енчен çаплах чуна çӳçентерекен çил вĕрчĕ, урамри ватă йăмрасем теме сиснĕ пек шавлăн кашларĕç...

* * *

Павăл пиччерен пăшал илсе хăпарсан, Исай йăпăртлăха киле кĕрсе тухрĕ те Варуксем патне каялла пычĕ.

— Ну, эс çывăрах ĕнтĕ, эп хурала тăратăп,— терĕ вăл Назара.— Пĕр-пĕр кашкăр тытăп-и-ха кĕçĕр...

— Асту, хӑвна тытса ан ҫиччӗр,— кулчӗ Варук, крыльца ҫинче аллине ҫуса тӑраканскер.

— А мӗн? Макӑракан пулас ҫук вӗт, пурпӗр,— ҫавнашкалах кулса ответ пачӗ Исай.

— Ӑҫтан пӗлес, тен, пулӗ?

— Никам та ҫук...

— Марине ҫинчен мантӑн-и-мӗн?

Капла калани Исая тӳрех такӑнтарчӗ

— Ан калаҫ кирлӗ мара...— аллипе сулчӗ те вӑл, урамалла тухрӗ.

Малтанах вӑл лаҫ пуҫӗнчи каска ҫине ларчӗ. Ытахальтен чӗлӗм чӗркесе чӗртрӗ (туртасса — туртсах кайман вӑл), Павӑл пиччен берданкине ҫавӑркаласа, гильзине кӑларса, кӗпҫи витӗр пӑхрӗ, унтан каллех авӑрларӗ. Ҫав вӑхӑтра пачах тӗттӗмленсе ҫитрӗ, тӳпере пӗр ҫутӑ та курӑнми пулчӗ, ҫил татах вӑйланчӗ. Исай вара лаҫ кӗтессинчен сулахаялла пӑрӑнчӗ те, хӳттерех кайса, кӗлет ҫумӗнчи каска ҫине вырнаҫрӗ.

Этем пӗччен юлсан, никампа калаҫмалли те ҫук чухне, унӑн пуҫӗнче яланах тӗрлӗрен тӗрлӗ шухӑшсем, асаилӳсем ҫуралаҫҫӗ, вӑл хӑйпе хӑй калаҫма тытӑнать. Исайӑн та ҫавнашкалах пулчӗ. Вӑл, хуллен кӑна темле юрӑ кӗвви шӑхӑркаласа ларнӑ май, вӑрӑм шухӑша кайрӗ...

Малтанах паян Маринепе калаҫнине, сӑмах хушсанах Марине еплеименсе хӗрелсе кайнине, ӑна куҫран пӑхма хӑяйманнине аса илчӗ. Чӑн та ҫав, Марине питӗ аван хӗр... Сӑнӗ-пичӗ хитре, кӗлетки — пӗчӗкрех пулин те — илемлӗ, ӑсӗ-пуҫӗ те лайӑх, хут пӗлет, ял хушшинче — ыр ятлӑ... Ун кӑмӑлне ҫавӑрса, унпа пӗрле ӑҫта та пулин вӗренме кайсан, мӗнешкел аван пулӗччӗ! Ҫамрӑк-ха вӗт вӑл, вӗренме пӗртте кая мар... Унтан, вӗренсе пӗтерсен, пӗрлешес те киле таврӑнас... Вӗренессине — вӗренмеллех, епле пулсан та вӗренмелле, нумай пӗлекен ҫын пулмалла. Ун ҫинчен икӗ ҫул шухӑшласа пурӑннӑ ӗнтӗ, анчах ку таранччен май килмерӗ-ха. Малашне пурӑнма кун пек йывӑр пулмасть ӗнтӗ, халь кайма май пулать. Тырпулсене пуҫтарса кӗртсен, кӑҫал кӗркуннех каясчӗ... Маринене те илсе каясчӗ, вӑл яланах ҫывӑхра пултӑрччӗ.

Исай ҫапла шухӑшланӑ май хӑйӗн ӗмӗчӗсем епле пурнӑҫа кӗнине те кура пуҫларӗ. Акӑ ӗнтӗ кӗркунне те пулнӑ. Маринепе калаҫса татӑлнӑ вӗсем, пӗр сывлӑмлӑ ирхине,

хӗвел тин ҫеҫ тухса сарӑлма пуҫланӑ чух, ҫурӑмӗсем хыҫне кутамккасем ҫакса, ялтан тухса каяҫҫӗ, унтан хурӑнлӑ ҫул тӑрӑх хуланалла утаҫҫӗ. Исай темӗн ҫинчен каласа кӑтартать. Марине ӑна итлесе чунтан кулать, ҫул ҫинче тӗл пулакансем вӗсем ҫине кӑмӑллӑн пӑхса юлаҫҫӗ. Епле аван!

— Исай! Ӑҫта эс?— тени илтӗнчӗ ҫав вӑхӑтра лаҫ кӗтессинчен.— Эй, хуралҫӑ!

— Кунта!— сас пачӗ Исай.— Кам ку?

Ун патне Тарас пырса тӑчӗ.

— Эп ятарласах килтӗм сан патна,— терӗ вӑл.— Темшӗн, ыйхӑ вӗҫсе кайрӗ те сана килсе курас терӗм.

— Юрать ара... Лар.

— Ҫывӑрас килмест-и?

— Ҫук. Шухӑшласа лартӑм...

— Мӗн ҫинчен вара ун пекех?

— Вӗренме каяс килет.

— Аван шухӑш. Эпӗ те вӗренесшӗн-ха та, анчах манӑн кӑҫалах пулмасть пуль, малтан пурнӑҫа йӗркене кӗртес пулать пӑртак...

Туссем чӗлӗм чӗртсе ячӗҫ. Унтан чылай вӑхӑт калаҫса ларчӗҫ иккӗшӗ. Сӑмах-юмах каллех пулас пурнӑҫ, пулас ӗҫсем тавра ҫаврӑнчӗ. Тарас Исая кӑҫал вӗренме кайма сӗнчӗ.

— Ялти пурнӑҫа ҫӗнетмешкӗн вӗреннӗ ҫынсем нумай кирлӗ... Агрономсем, учительсем, тухтӑрсем — пурте хамӑр ҫынсем пулмалла.

— Паллах ӗнтӗ,— килӗшрӗ Исай.

— Анчах та... Каясах пулсан, Маринене епле пӑрахса хӑваратӑн-ха? Шел вӗт хӗрачана?— чавсипе айӑкӗнчен тӗкрӗ ӑна Тарас.

Тусӗ кулнине сиссе, Исай та кулса ячӗ.

— А мӗн... Арӑм мар вӗт вӑл ман.

— Ҫапах ара! Урӑххисем тытса илме пултараҫҫӗ. Эс мана ним те пӗлмест, тетӗн пуль. Ӑна курсанах вилсе каятӑн вӗт. Паҫӑр та асӑрхарӑм-ха... Ну, хлынсем, терӗм ҫав. Тен, иксӗр те каятӑр вӗренме?

— Апла та юратчӗ.

— Во, ку аван пулать! Ҫавӑр эс ӑна.

— Хам та шухӑшлатӑп-ха...

— Шутла, шутла. Эп те пулӑшӑп.

Тата пӑртак ларкаланӑ хыҫҫӑн Тарас каска ҫинчен тӑчӗ те вӑйлӑн карӑнса илчӗ.

— Ну, юрĕ... Каям-ха киле. А эс тул çутăличчен тӳскеле ĕнтĕ, ан çывăр. Тем курса ларăпăр тата — пĕри килсе вут тĕксен. Пĕлетĕн вĕт, пире курайманнисем нумай-ха...

— Çук, çук, çывăрмастăп...

— Асту çав. Сивĕ мар-и? Акă, хам пиншака парса хăварам...

Исай пиншака илесшĕн пулмарĕ, анчах Тарас ăна вăйпах тăхăнтарса хăварчĕ. Вăл кайсан, Исайăн пуçĕнче каллех паçăрхи шухăшсем çуралчĕç, Тараспа калаçнă хыççăн вĕсем тикĕсрех, йĕркеллĕрех пулчĕç, вăл хăйĕн пулас пурнăçне уççăнах кура пуçларĕ...

Çанталăк çаплах пăсăлса пычĕ, халĕ ĕнтĕ пачах тĕттĕм пулса тăчĕ, çил татах вăйланчĕ, таврари йывăçсем кашланисĕр пуçне урăх нимĕн те илтĕнмерĕ. Исай аллинчи берданкине çурăм хыçне çакрĕ те, ыйхă ан килтĕр тесе, майĕпе каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ. Хăйĕн пуçĕнче çаплах шухăшсем, савăнăçлă, хаваслă, чĕрене тата вăйлăрах ĕçлеттерекен шухăш-ĕмĕтсем шурĕç, вăл хуллен кăна вăйă кĕввине шăхăрма пуçларĕ. Лаç пуçне çитрĕ те темиçе самантлăха чарăнса тăчĕ, унтан каллех каялла çаврăнса утрĕ. Анчах виçĕ утăм та тăваймарĕ вăл, сасартăк хыçалтан такам сиксе пычĕ те, ун пуçне михĕпе хупласа лартса, малалла тирĕнтерсе ячĕ. Пĕрре сывласа та илеймерĕ Исай, çав самантрах ăна пуçран темле йывăр япалапа çапрĕç. Урăх пĕр сас та пулмарĕ, кĕтес хыçĕнче этем кĕлеткине çĕр тăрăх кăшăртаттарса сĕтĕрсе кайни çеç илтĕнчĕ пĕр хушă...

Пĕлĕтсем малтанхи пекех таçта хăяматалла васкаса шурĕç, çил çаплах вĕрчĕ, йывăçсем кашларĕç.

Энтриялĕ лăпкăн çывăрчĕ...

* * *

... Тул çутăлнă чух вăраннă Назар нимрен малтан кĕлете хураллакан çинчен аса илчĕ те, хулпуççинчен сăкман уртса ярса, тула тухрĕ.

— Исай!— чĕнчĕ вăл, крыльца çинчен анмасăрах.

Ана хирĕç никам та сас памарĕ.

«Киле кайнă-ши вара ку?»— шухăшларĕ Назар. Картлашкасем тăрăх чупса анса килхушши урлă каçрĕ, кĕлет алăкĕ патне пырса çăраççине тытса пăхрĕ. Çăраççи каçхине питĕрнĕ пекех çакăнса тăнине курсан, вăл каллех Исай киле кайнă пуль, тесе шухăшларĕ.

«Çапах та, урама тухса пăхас-ха, каска çинче çыварса кайман-и...»

Васкамасăр, ирхи сивĕ пирки çӳçенкелесе, вăл хапхаран тухрĕ те, лаç кĕтессинчен пăрăнса, кĕлет хыçнелле пăхрĕ. Вара çавăнтах ăна чĕререн такам çĕçĕпе чикнĕ пек пулчĕ... Кĕлет хыçĕнче пĕр купа улăм сапаланса выртать иккен, çав тĕлтех кĕлет çине пусма тăратнă... Пĕр самант хушшинчех вилнĕ çын пек шурса кайнă Назар пусма патне чупса пырса ун тăрăх хăпарчĕ те кĕлет тăрринче çын кĕмелĕх шăтăк пуррине курчĕ. Çавăнтах:

— О-ахх!— тесе, темле тискер сасăпа йынăшса ярса, пусма çинчен тӳрех çĕрелле татăлса анчĕ.

— Пĕтрĕм! Пĕтрĕ-ĕм!..

Чĕтрекен аллисемпе пусмаран тыткаласа ура çине тăчĕ, унтан, пӳрте чупса кĕрсе, ăнран тухса кайнă çын пек кăшкăрма тытăнчĕ:

— Пĕтрĕмĕр! Пĕтрĕмĕр!.. Çаратнă!.. Карчăк, Варук, тухăр часрах, пĕтрĕмĕр!.. Чупăр часрах, чĕнĕр! Совета чĕнĕр, Тараса!.. О-о!.. Вĕлерчĕç!..

Хăй, кăмака çумнелле тайăнса кайса, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе, темле ăнланмалла мар сăмахсем кăшкăрса макăрма тапратрĕ:

— Пĕтерчĕç... Пусса хучĕç... Тĕрмене лартрĕç... О-ох!.. Ма çыхлантăм-ши!..

Вилес пек хăраса ӳкнĕ Варукпа амăшĕ çара уранах килхушшине сиксе тухрĕç. Кĕлет çăраççине уçса шалалла пăхрĕç. Ĕнер хуларан илсе килнĕ çимĕçсенчен унта пĕр типĕтнĕ кăмпа çыххисем çеç юлнă, ыттисене такамăн тискер алли пĕтĕмпех шăлса тухса кайнă...

## 15. АЙАПСĂР АЙАПЛИСЕМ

Урам енчи чӳречерен питĕ хытă кĕмсĕртеттерсе шаккарĕç. Тарас вырăн çинчен вăштах сиксе тăрса пăхрĕ те — кантăк витĕр Варукăн калама çук пăлханса кайнă сăнне, чарăлса кайнă куçне курчĕ.

«Темскер пулнах!»— шухăш çиçĕм пек вĕçсе илчĕ ун пуçĕнче.

— Тух-ха часрах! Пыр пирĕн пата! — кăшкăрчĕ Варук.

— Мĕн пулнă?— çавăн пекех кăшкăрса ыйтрĕ Тарас.

Анчах Варук мĕн тавăрса каланине илтеймерĕ, йăпăр-япăр аттине тăхăнса ярса, урама сиксе тухрĕ. Варук çара уран иккенне, çӳçне-пуçне те пуçтарманнине кур-

сан, вӗсен килӗнче мӗнле те пулин хӑрушла ӗҫ пулнине тата лайӑххах тавҫӑрса илчӗ вӑл. Варукӗ, ун патнелле чупса, макӑрса ячӗ:

— Ҫаратса кайнӑ пире... Ним те хӑварман!..

Ку хыпар Тарасшӑн пуҫран темпе ҫапнӑ пекех пулчӗ. Тӑруках шурса кайрӗ вӑл, калас тенӗ сӑмахӗ пыра пырса пӳлӗнчӗ, тӑнлавӗсене сасартӑк юн тулчӗ.

— Ним те хӑварман, тӗппипех шӑлса тухнӑ,— терӗ Варук татах, куҫҫулӗпе чыхӑнса.— Атя часрах... Ним тума та пӗлместпӗр!

Вӗсем тӑвалла чупрӗҫ...

— Исай ӑҫта?— хыттӑн ыйтрӗ Тарас.

— Пӗлместӗп. Ҫук вӑл...

— Хурала пӑрахса кайнӑ-и-мӗн?

— Кайнӑ пулас ҫав... Пӗлместӗп...

— Каларӑм вӗт хӑйне!.. Ҫӗрле юри кайса асӑрхаттартӑм! Ну, пулать те халӑх!

... Варуксем патне ҫынсем пухӑнма пуҫланӑ та-мӗн ӗнтӗ. Ниҫта кайса кӗме пӗлмен Назар арӑмӗ кӳршӗсене тӑратса пынӑ, вӗсем килхушшинче шавлӑн калаҫнӑ, кӗлет тавра пӑхса ҫӳренӗ, шала та кӗрсе пӑхнӑ, анчах нихӑшӗ те нимӗнле лӑплантаракан сӑмах та калама пӗлмен. Тарас ҫитсе кӗрсенех, чӑн малтан ҫынсене кӗлет патӗнчен сирсе, текех ун ҫывӑхне пыма чарчӗ. Унтан, хӑй пӑлханнине пусарма тӑрӑшса, пухӑннӑ ҫынсенчен хӑшӗ-хӑшӗсене — ял Совет членӗсене чӗнме, хӑшӗсене комсомолецсене хӑвӑрт пухма хушрӗ, пӗр шур пуҫлӑ ачана Исайсем патне чуптарчӗ. Хӑвӑрт, татӑклӑ ҫапӑҫу умӗнхи командӑсем пек илтӗнсе тӑчӗҫ унӑн сӑмахӗсем.

Кусем тухса кайсанах, вӑл килхушшине хӑйӗн шӑлнӗ Микуль пырса кӗнине курчӗ. (Тарас тухса кайнӑ чух вӑраннӑ амӑшӗ ӑна юриех Варук мӗн пирки ир-ирех чӗнсе кайнине пӗлме янӑ-мӗн.)

— Атя-ха манпа,— терӗ те вӑл шӑлнӗне, пӳртелле чупса кӗчӗ. Кунта вӑл хут татки тупса хӑвӑрт кӑна темскер ҫырчӗ, унтан ҫавӑнтах Микуле тыттарчӗ.

— Ак сана ҫыру,— терӗ вӑл,— Назар пичче лашине утлан та ҫил пек вӗҫтер вулӑса! Ҫитсен тӳрех ҫак хута е волком секретарьне Петрухина, е милици начальникне Скворцова тупса пар... Асту, ҫынсем урлӑ ан пар, хӑвӑн аллупах тыттар. Сӑмахпа та кала: халӑха ҫитермелли ҫимӗҫсене кӗҫӗр пӗтӗмпех ҫаратса кайнӑ, те. Халех пыма чӗнеҫҫӗ, те... Ӑнлантӑн-и?

— Анлантăм,— пуçĕпе сулчĕ Микуль.
— Яра пар хăвăртрах!

Темиçе минутран Микуль ялтан тухса, пучах кăларма пуçланă ыраш хушшипе авкаланса выртакан çул тарах сиккипе ыткăнтарса пычĕ, хĕвĕнчи çырăва епле пулсан та часрах çитерсе парас ĕмĕтпе Назарăн лашине ним хĕрхенмесĕр, таттисĕр хăваларĕ...

Лайăх хыпар — çуран çӳрет, усал хыпар — утпа чупать, теççĕ. Çур сехет те иртмерĕ пуль, Назар килхушшине халăх лăках тулчĕ. Тата кăшт тăхтасан, халăх килхушшине те вырнаçайми пулчĕ, çынсем урамра та, лаç хыçĕнчи тăкăрлăкра та кĕпĕрленчĕç. Çĕр тĕрлĕ калаçрĕç, кашни хăйĕн шухăшне пĕлтерме васкарĕ, хĕрарăмсем ахлатрĕç, иртнĕ вăхăтсенче пулнă çаратусене асăнчĕç, татах хуйхăрчĕç. Совет членĕсем те, комсомолецсем те часах пухăнчĕç, анчах та Исая чĕнме янă ача таврăнчĕ те: вăл килте çук, тесе пĕлтерчĕ.

— Кам каларĕ сана?— ыйтрĕ Тарас, ку хыпара илтсен тата ытларах пăлханма пуçласа.

— Амăшĕ каларĕ. Қаçхине кунта хурал тăма килнĕренпе киле таврăнман, тет...

«Ку мĕне пĕлтерет-ши тата?.. Аçта кайма пултарнă вăл?.. Неушлĕ вĕлернĕ ăна?..» — вĕлтлетрĕ те Тарас пуçĕнче, унăн чĕри çав тери пăчăртанса илчĕ.

Кĕлет тавра халăх пухăннăçемĕн пухăнса пынине курa, палăрса юлма пултарнă йĕрсене çынсем таптаса пĕтересрен, Тарас вĕсене тăкăрлăкран кăларма, кĕлет çывăхне пымашкăн чарма хушрĕ.

— Эпĕ милицисем патне ятăм, вĕсем киличчен ним тума та юрамасть, мĕнле пулнă, çапла пултăр...

Совет членĕсем — Хăмăт Энтри, Павăл пичче, вĕсемпе пĕрле комсомолецсем те Тарас хушнипе халăха урамалла чакарма тытăнчĕç.

— Тухăр кунтан, урамалла тухăр...
— Ним курмалли те çук кунта!
— Ну, мĕн кĕпĕрленетĕр?
— Пăрăнăр, теççĕ, пăрăнăр...
— Милицисем киличчен кĕлет çывăхне пыма юрамасть!

Халăх ерипен каялла чакса, тăкăрлăкран та, килхушшинчен те урамалла тухма пуçларĕ. Анчах çав хушăрах унта та, кунта та кăмăлсăр сасăсем илтĕнчĕç.

— Кăшкăрма анчах пĕлеççĕ вĕсем... Сыхлама пĕлмен!

— Ачасене пачах выçă хăварчĕç халь, усалсем...

— Ытла час пуç пулса тăчĕç...

Унтан тăруках тахăшĕ хыттăн, хаяррăн кăшкăрса ячĕ:

— Хăйсем çаратнă вĕсем! Çавăнпа пытарма хăтланаççĕ, никама та çывăха ярасшăн мар!

— Паллах, хăйсем тунă! Кам пултăр тата?— янраса кайрĕ тепĕр сасă.

— Ухтарас пулать вĕсене!..

Халăх тăпах чарăнчĕ. Çак темиçе сăмах çынсене иккĕлентерсе, вĕсен ăсне-пуçне пăтраштарса яма пуçларĕ... Кам пĕлет, тен, тискер ĕçе вĕсем чăнах та хăйсем тунă? Çыннăн шухăшне-кăмăлне ăçтан пĕлетĕн? Каçăр Куçмапа Иливана та шанса пурăннăччĕ те, кайран авă вĕсем чи усал хурахсем пулни курăнчĕ... Çитменнине, ытла час пулнă-çке ку: таварне ĕнер каçалапа çеç илсе килнĕ, анчах кĕçĕр çаратма та ĕлкĕрнĕ. Паллах ĕнтĕ, ютран килсе туман куна! Ютри çын ăçтан тăруках пĕлтĕр?

Çавнашкал шухăшсем çуралчĕç халăхра. Юлашки çур çул хушшинче тем тĕрлĕ тертленсе, нушаланса, путсĕр çынсен ултавне тӳссе пурăннă çынсен ун пек шухăшлама та май пулнă çав!

Малашнехи ĕçсем пит те хăвăрт сарăлса пычĕç. Шухăшсем вĕçленме те ĕлкĕрейменччĕ — урам варринчи çăл енчен тепĕр çын кăшкăрни сывлăша çурса кайрĕ:

— Халăх!.. Мĕн пăхса тăратăр?!.

Пурте пуçсене çăл еннелле çавăрчĕç. Çăл пури çине мăн галифеллĕ Микстур Михали хăпарса тăнă иккен, ку сăмахсене вăл кăшкăрнă.

— Улталаççĕ вĕт сире, куç-кĕретĕнех улталаççĕ, неуштă сисместĕр çавна?!— кăшкăрма тытăнчĕ кăвак хут пек кăвакарса кайнă Микстур, сарлака çăварĕнчен сурчăк сирпĕтсе.— Çак ĕçе никам та мар, советрисемпе комсомолсем хăйсем тунă!.. Хăйсем вăрласа валеçнĕ! Кам килсе вăрлатăр çак хушăра? Шухăшлăр-ха эсир лайăххах! Хăйсем пулмасан, вĕсем пaçăрах йĕрлесе шырамалла, атту вĕт — вырăнтан та хускалмаççĕ!.. Хăйсем валеçнĕ те — ăçта шырас? Айтăр, халех ухтарма тытăнар вĕсене!..

Микстур сиккелекен куçĕпе урамри халăх çине сунарçăсенчен тарса хăтăлнă кашкăр пек пăхса илчĕ те çĕрел-

ле сиксе анчĕ. Анчах ун вырăнне çав самантрах Шĕвĕрпуç Хоми хăпарса тăчĕ, Микстуртан та хытă çухăрма тапратрĕ.

— Мĕншĕн ним те чĕнместĕр? Чăн калаççĕ вĕт сире: Тарас шайкки тунă çакна! Урăх никам та мар! Часрах веç ухтарас пулать...

Вăл каласа пĕтереймерĕ—халăх хушшипе хĕсĕнсе тухса, Микиш ăна çăл пури çинчен пĕррех туртса антарчĕ.

— Юлташсем! Лăпланăр, юлташсем!— аллине çĕклесе пур вăйпа кăшкăрчĕ вăл.— Микстурпа Шĕвĕрпуç суя сăмах каларĕç... Эпир бандитсем мар! Кун пек элеклесе каланăшăн суда паратпăр эпир вĕсене!

Анчах та Микиш сăмахĕсене итлекенсем сахал пулчĕç, халăх пăлханса кайрĕ, шавлама тытăнчĕ, унта та кунта хытăран хытă кăшкăрма тапратрĕç...

— Эсир пурне те судпа хăрататăр!..

— Ыр çынсене хуптартăр та, халь хăвăр çаратма тытăнтăр эппин?

— Кулач çиес килчĕ пуль?

— Халăх çăкрине!

— Солотой ротăсем!..

— Тытса çунтарас пулать вĕсене...

— Кăтартăпăр çире суд!

— Айтăр, айтăр! Ухтара-ас!..

Халăха чарма Микиш татах кăшкăрчĕ, анчах усси пулмарĕ, пăлханса кайнă çынсем ăна итлемерĕç. Вĕсем, Микстур Михалипе Шĕвĕрпуç кăшкăрса чĕннипе вырăнтан хусканса, Назар килхушшийĕ еннелле сулăнчĕç. Шăп çав вăхăтра хапхаран Тараспа пĕрле ял Совет членĕсем тухрĕç, анчах халăх вĕсем тĕлĕнче чарăнса тăмарĕ, малтисем вĕсене темскер кăшкăрчĕç те шалалла кĕпĕрленсе кĕрсе кайрĕç, Микиш та, халăх хушшине хĕсĕнсе кĕрсе, хулпуççийĕпе хăйне валли çул уçма тытăнчĕ...

Килхушшине кĕрсен, Микстур каллех кăшкăрма тытăнчĕ.

— Ухтарас! Пур çĕрте те ухтарас!— çухăрчĕ ун хыççăн Шĕвĕрпуç.

Микстур крыльца патнелле ыткăнчĕ, анчах картлашка умĕнче ăна такамăн вăйлă алли ĕнсерен тытса чарчĕ. Ку Тарас пулнă.

— Ухтарма кам права панă сана? Халăха мĕншĕн пăлхататăн?— хĕмленекен куçĕпе çисе ярас пек пăхса, хăвăрт ыйтрĕ вăл.

— Хам панӑ!— терӗ те Микстур, сасартӑк Тараса пур вӑйпа кӑкринчен чышса, ҫенӗхелле чупса кӗчӗ. Сулӑнса кайнӑ Тарас ун хыҫҫӑн чупма ӗлкӗриччен картлашкасем ҫынсемпе тулса та ларчӗҫ, унӑн ҫулӗ картланчӗ.

Пуҫланчӗ вара ухтару... Ҫынсем кӗрсе пӑлхатман вырӑн та юлмарӗ Назар килӗнче. Пӳртре, тӗпсакайӗнче, мачча ҫинче, ҫенӗхри чӑланра — пур ҫӗрте те ҫын йӑшӑлтатрӗ; Варукӑн арчине, амӑшӗн ҫӳпҫине ним йӗркесӗр арпаштарчӗҫ, тулта та ухтарман кӗтес хӑвармарӗҫ, выльӑх картинче, витере, аслӑк ҫинче, нӳхрепре — таҫта та чакаланчӗҫ, ҫухалнӑ ҫимӗҫсене шырарӗҫ... Пӗр уйӑх малтан Тарас хӑваласа ҫитсе тытнӑ бандита яла илсе пынӑ чухнехи пекех шавларӗ халӑх... Назар хӑй пачах ҫухалса кайса, пур ҫӗрелле те сапаланчӑк куҫӗпе пӑхса, хушшӑн-хушшӑн ахлатса кӑна ҫӳрерӗ ҫынсем хушшинче.

— Шырӑр... Лайӑх шырӑр, тӑвансем... Пур ҫӗрте те...— терӗ вӑл сӳрӗк сасӑпа.

Унӑн арӑмӗ кӗлет умӗнче ниҫта кайса кӗме пӗлмесӗр макӑрса ларчӗ. Варукпа Марине тата учительница Катя — хӑйсем те макӑрас патнех ҫитнӗскерсем — ӑна чунтан лӑплантарма тӑрӑшрӗҫ. Сасартӑк вӗсем патне калама та ҫук хаяр сӑнланса кайнӑ Мамун арӑмӗ пырса тӑчӗ.

— Мӗн ухмаха супса ларатӑр тата?— шӑл витӗр сӑрхӑнтарса кӑларчӗ вӑл,— малтан ҫарататӑр та, кайран хӑвӑрах макӑратӑр пулать?.. Намӑса пӗлесчӗ, кӗҫҫе питсем! Тьфу!

Лач! сурчӗ Мамун арӑмӗ Назар арӑмӗн пуҫӗ ҫине...

— Кай кунтан, инке!— пӗтӗм вӗчӗхсе ҫитнӗ чӗринчен кӑшкӑрса ячӗ Варук.

— Эс мӗн тата, сучка!— шӑлне йӗрчӗ Мамун арӑмӗ.— Сучка вӗт эс, кӗрт ами! Кӑмсамулсемпе явӑҫса ҫӳрерӗн-ҫӳрерӗн те, халь тата ҫынпа калаҫатӑн-и? Хырӑму хӑпарма пуҫланӑ курӑнать-ха...

Ку сӑмахсем хыҫҫӑн вара ялан йӑваш пулнӑ Катя та тӳссе тӑраймарӗ, пӗррех Мамун арӑмӗ умнелле сиксе пырса тӑчӗ.

— Ҫӑварна хуп, бандит хӑраххи!.. Хӑвна пӗл малтан!

Вӑл ҫавӑнтах Мамун арӑмӗ ҫине кушак пек сиксе ларма хатӗр пулчӗ, анчах вӗсем патне Микиш пырса тухрӗ.

— Мĕн калаçатăр унпа пустуй!— терĕ вăл хĕрсене.— Пӳрте кĕрĕр...

— Исай пирки мĕнле? Исай тупăннă-и?— ыйтрĕ Марине, Микиша çаннинчен çавăрса тытса.

— Нимĕн те паллă мар. Ниçта та çук,— тарăннăн сывласа илчĕ Микиш.— Ним калама та, ним шутлама та пĕлместпĕр ĕнтĕ...

Хĕрсем çине салхуллă куçĕпе пăхса илчĕ те, аллипе сулса, выльăх карти еннелле кайрĕ. Хĕрсем Назарăн халран кайса çитнĕ арăмне ик енчен çавăтса пӳрте илсе кĕчĕç.

... Кил таврашĕнче нимĕн те тупăнмарĕ. Вара Микстурпа Шĕвĕрпуç, вĕсем хыççăн пăлханса кайнă ытти çынсем те анкартине кĕпĕрленсе тухрĕç. Чипер çумласа, купаласа лартнă çĕрулми кассисене те, Варук аллипе тунă тирпейлĕ купăста-хăяр йăранĕсене те хĕрхенсе тăмарĕç, ĕрĕхсе кайнă выльăх кĕтĕвĕ пекех таптаса иртрĕç вĕсене.

Анкарти вĕçĕнче, ватă çĕмĕрт йывăççисем хушшинче, Варуксен мунча пулнă. Микстур Михали, ун патне никамран малтан чупса çитсе, çенĕх алăкне пĕррех урипе тапса уçса ячĕ.

— Айтăр-ха, çакăнта тĕрĕслесе пăхар!— кăшкăрчĕ те вăл халăх еннелле, çавăнтах шалалла кĕрсе çухалчĕ. Темиçе самантран тата пилĕк-ултă çын чупса çитрĕç, унтан юлашкисем те. Микстур ним тăхтамасăрах мунча урайне хăпăтма тытăнчĕ. Хăма пуçĕсене çĕкле-çĕкле, аяккалла пăрса хучĕ вăл. Унтан аллине шалалла чикрĕ те, сасартăк çăварне мĕн тери карăннă таран карăнтарса, кăшкăрса ячĕ:

— Тупрă-ăм! Тупрă-ăм...

Халăхшăн ку сăмах «пушар» тесе кăшкăрнă пекех пулчĕ... Кар-р! пухăнчĕç мунча патне. Виççĕн-тăваттăн мунча урайне хăвăрт кăна сӳтсе пăрахрĕç. Хăмасем айне чăнахах та такам алли пĕр михĕ шур çăнăхпа тепĕр михĕ сахăр пырса чикнĕ иккен. Микстурпа тепĕр çын вĕсене йăпăртах тулалла çĕклесе тухса пăрахрĕç.

— Халăх! Курăр ĕнтĕ, мĕн хăтланаççĕ вĕсем!..— паçăрхинчен те хытăрах çухăрса ячĕ Шĕвĕрпуç.— Ака ăçта вăл чăн-чăн бандитсем! Пăхăр, курăр!..— аллипе михĕсем çине тĕллерĕ вăл.

Калама çук тĕлĕнсе, пĕр вăхăт хытнă пек тăнă халăх каллех ним майсăр пăлханса шавласа, кĕрлесе кайрĕ...

— А-а, шуйттан пуҫӗсем!..
— Хайсем бандит иккен! Хайсемех тунӑ!
— Ҫакас пулать вӗсене...
— Ҫынсене тиркеҫҫӗ тата!
— Ах, йытӑсем...

Анкартинчи асар-писер шава илтнипе унта Назарпа Тарас, вӗсем хыҫҫӑн Хӑмӑт Энтрипе Микиш чупса пычӗҫ. Мунчаран тупса кӑларнӑ михӗсене курсан, вӗсем те ытти ҫынсенчен кая мар тӗлӗнчӗҫ, анчах вӗсене нихӑшне те сӑмах чӗнме памарӗҫ. Чӑн малтан вӗсем тавра Микстурпа Шӗвӗрпуҫ, шуйттансем пек сиккелесе, чи усал сӑмахсемпе вӑрҫма тапратрӗҫ, каламаннине хӑвармарӗҫ, унтан ыттисем те кӑшкӑрма тапратрӗҫ вӗсем ҫине.

— Бандитсем, намӑссӑрсем!
— Мӗнле куҫпа пӑхатӑр халӑх ҫине?..
— Ҫапса пӑрахас пулать сире!..
— Чимӗр-ха, ыттисем патӗнче ухтарар!
— Айтӑр Тарасӗ патне!
— Айтӑ-ӑр!..

Лӑплантарма тӑнинчен усси пулас ҫуккине кура, халӑха хирӗҫ Тарас хӑй те нимӗн те каламарӗ, Микиша та чарчӗ.

«Питӗ чее хӑтланнӑ... Малтанах тӗплӗн шухӑшласа тунӑ ку ӗҫе...»— терӗ вӑл хӑй ӑшӗнче, тутисене ҫыртса. Ҫавӑнтах Исая аса илчӗ. «Ӑҫта кайса кӗме пултарнӑ-ха вӑл, ӑна мӗн тунӑ-ши вӗсем? Ах, вулӑсрисем часрах килччӗрччӗ!»

Микстурпа Шӗвӗрпуҫ чӗннипе анкартинчи ҫынсем ҫав вӑхӑтра картасем урлӑ сике-сике урамалла тухрӗҫ те Тарассем патне чупрӗҫ. Халӑх пӗтӗм урам анлӑшӗпех ҫурхи шыв юххи пек йӑванса пычӗ. Назар патӗнче Тараспа Микиш, Хӑмӑт Энтри, Павӑл пичче тата ик-виҫ ҫамрӑк ҫеҫ юлчӗҫ.

— Мӗн тӑвӑпӑр ӗнтӗ, Тарас Петровччӑ?— ун ҫывӑхнерех пырса, ӑна куҫӗнчен пӑхрӗ Павӑл пичче.
— Кӗтес пулать вулӑсран килессе...
— Санӑн килне каяс пулатчӗ,— хушса хучӗ Хӑмӑт Энтри,— тем туса хурӗҫ тата.
— Ытлашшиех мӗн тума пултарччӑр вӗсем?
— Назара туса хунӑ вӗт...
— Ним те мар... Лӑпкӑрах пулӑр. Паллӑ-ҫке, ҫак пӗтӗм ӗҫе ҫав ҫухӑракансем хӑйсем тунӑ. Кӗтӗр пӑртак, лекеҫҫӗ...

Чăнах та, Хăмăт Энтрийĕ йăнăшман. Тарассен килне çил-тăвăл пек чупса çитсенех, Микстурпа Шĕвĕрпуç тата Мамун арăмĕ хĕтĕртсе пынипе пăлханса кайнă çынсем вĕсем патĕнче урнă пек арпаштарма тытăнчĕç. Малтан пӳрте кĕрсе пĕтĕм хатĕрсене кутăн-пуçăн çавăрттарчĕç, унтан, кĕлете çĕмĕрсе кĕрсе, пур катка-пичкесене тӳнтерсе йăвантарчĕç, тĕк хутаççисене салтса силлерĕç, çĕмĕрлекен япаласене çĕмĕрсе, ватса тухрĕç... Тарас амăшĕ малтанах тĕлĕннипе чĕлхесĕр пулса ларчĕ, çынсем çине ним ăнланмасăр пăхрĕ. Мĕн пирки, мĕн сăлтавпа арпаштарать ун килне халăх— нимĕн те пĕлмерĕ вăл, ним шухăшлама та аптрарĕ... Ун патне тăрук Мамун арăмĕ сиксе пычĕ.

— Каланă пултăр часрах, вăрланă апат-çимĕçе ăçта пытартăр?!— кăшкăрса ячĕ вăл.

— Мĕнле апат-çимĕçе?— чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ Тарас амăшĕ.

— Ха! Пĕлмĕш пулать тата!.. Çăнăха ăçта пытартăр? Сахăр! Çу!

— Ним те пĕлместĕп эп...

— Епле пĕлместĕн пулать? Сан ывăлу халăх кĕлетне çаратнă вĕт кĕçĕр!

— Чипер калаç... Вăл килтех çывăрчĕ.

— Курăпăр акă!— Мамун арăмĕ ăна чышкипе юнарĕ те, ун çине çав тери усал куçпа пăхса илсе, лупас айнелле, халăх уйрăмах хытă шавланă çĕрелле чупса кайрĕ. Вăл Тарас амăшĕпе ятлаçнă вăхăтра çынсем пахчари пусă шăтăкĕнчен икĕ михĕ çăнăх туртса кăларнă та иккен... Назар патĕнче тупнă михĕсем пекех — пысăк кăвак пичетлĕ, ĕнер хуларан илсе килнĕскерсем пулнă вĕсем. Михĕсене килхушши варнелле йатса тухрĕç, халăх вĕсем тавра пухăнса тăчĕ, халь ĕнтĕ паçăрхинчен те вăйлăрах тарăхса кăшкăрашма тапратрĕ... Анчах пуринчен те ытла каллех Микстур сасси янрарĕ:

— Куртăр-и ĕнтĕ, халăх, куртăр-и, мĕн хăтланаççĕ çĕнĕ советсем? Кĕлете хăйсемех çаратса валеçнĕ, юри, халăха выçăпа вĕлересшĕн!.. Мĕн тăвас пулать ĕнтĕ вĕсене куншăн?! Калăр ĕнтĕ!

— Пуçĕсене çапса салатас!— кăшкăрчĕ тахăшĕ.

Çавăн хыççăнах тапранса кайрĕ вара...

— Халех тытса пăвас!

— Çăнăхне çĕклеттерсе, урам тăрăх питлĕх çапса уттарас!

— Мĕн пăхса тăмалли пур? Хĕнес тытса!

— Вĕлерес!..

Урнă пекех пулса кайнă çынсем урам тăрăх каялла, Назар патне ыткăнчĕç. Çенĕх умĕнчи картлашка çинче пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе, вилнĕ çын пек шурса кайнă Тарас амăшĕ аялалла анма тăчĕ, анчах та тăрук сулăнса кайрĕ те килхушшинелле пĕрене пек йăванса анчĕ... Ун çине никам та çаврăнса пăхакан пулмарĕ, вăл пусма вĕçĕнче тăр-пĕчченех выртса юлчĕ, унăн ӳкнĕ чух аманнă янахĕнчен çăра юн сăрханчĕ...

* * *

Халăх ним йĕркесĕр шавласа, кăшкăрашса хăпарни инçетренех илтĕнчĕ. Варуксен килхушшинче тăракансем хапхаран тухса анаталла пăхрĕç.

— Пушшех урса кайнă пулас,— терĕ Павăл пичче.— Темскер туса ан хуччăр, Тарас Петровччă. Вулăсран киличчен пăрăнмалла мар-ши?

— Эсĕ мĕн, ухмаха ертĕн-и?— тавăрчĕ ăна хирĕç Тарас.— Мĕншĕн пăрăнмалла? Эп айăплă мар пулсан, ма пытанас манăн?

— Ана-кăна пăхса тăмĕç, тетĕп-çке...

— А-а, ним те мар... Тепĕр тесен, пуçа чиксех тăмăпăр, ун пеккине мар курнă. Килхушшине кĕрĕр те лăпкăрах пулăр...

Халăх хумĕ çывхарсах пычĕ. Микстурпа Шĕвĕрпуç, пуринчен малта чупаканскерсем, халăха çаплах хĕтĕртрĕç, çынсене тата ытларах хумхатма, вĕсене пăлхатма тăрăшрĕç...

— Выçă çынсен юлашки татăкне вăрлаççĕ!

— Авă мĕнле вăл коммунистсем!

— Лайăхрах тыткалас пулать вĕсене!

Çаплах хаяррăн усал сăмахсем кăшкăрса, алăсене сулкаласа, халăх темиçе самантран Назар тĕлне кĕрлесе çитрĕ те килхушшинелле кĕрсе кайрĕ. Совет членĕсемпе комсомолецсем, кĕлет умне пĕр çĕрелле пухăнса, пĕр ушкăн пулса тăнă-мĕн. Халăх ултава пула пăлханса кайнипе халь хуть те мĕн туса тăкма хатĕр пулнине пĕлсе, вĕсем, хăйсене хӳтĕлеме хатĕр пулса, куçхаршисем айĕпе пăхса кĕтсе илчĕç.

«Мĕн хăтланатăр эсир? Пирĕнте нимĕнле айăп та çук вĕт, ултав хыççăн каятăр!»— тенĕ пек пулчĕ вĕсем пăхни...

Малтисем тăпах чарăнчĕç. Çавăн пирки кайрисен те чарăнмалла пулчĕ. Темиçе самантлăха шăпах пулчĕ. Анчах та халь ĕнтĕ калама çук вĕриленсе çитнĕ Микстур маларах хĕсĕнсе тухрĕ те тăруках кăшкăрса ячĕ:

— Акă вăл бандитсем! Тытăр вĕсене, çыхăр!..

Хăй çавăнтах, аллипе ял Совет членĕсемпе комсомолецсем еннелле сулса, пĕр-ик утăм малалла утрĕ. Халăх каллех хумханма пуçларĕ, хыçалта хĕтĕртекен темиçе сасă илтĕнчĕ. Микстур хыççăн тата темиçе çын малалла тухрĕç. Ĕнтĕ кĕлет умĕнчи пĕчĕк ушкăна халăх кĕç-вĕçех тытса лутăркас, таптаса тăкас пекех туйăнчĕ...

— Шăпланăр!..— янраса кайрĕ çав вăхăтра Тарас сасси.— Мĕн тăвас шут пур? Кама хăратас тетĕр?— Тарас ик утăм малалла ярса пусрĕ.— Ай пуççене пĕтĕмпех çухатрăр-и? Э? Калăр-ха! Чăнах та пире вăрăсем тесе шутлатăр-и? Хăш енчен вăрă пулнă-ши эпир? Çапла намăс курмашкăн виçĕ çул хушши Совет влаçĕшĕн, халăхшăн çапăçса юн юхтарнă-ши эпĕ? Шутласа пăхăр-ха пăртак!..

— Мĕн шухăшламалли пур, хамăр куçпа куртăмăр, вăрласа валаçнă вĕт!— илтĕнчĕ Шĕвĕрпуç сасси.

— Куçран тусан сапас тетĕн-и тата?— терĕ тепри.

— Ан итлĕр ăна!

— Пăх-ха, куçкĕретĕн тытсан та тунасшăн!

— Çап ăна!

— Хĕне-ес!..

Халăх каллех йĕркерен тухса кайрĕ... Халĕ ĕнтĕ ăна чарасси çинчен шухăшламалли те пулмарĕ. Таçтан, хыçалти ретсенчен илсе пенĕ чул пĕррех Тарас тăнланвĕнчен пырса тиврĕ, ун хыççăнах кĕлет умĕнче тăракансем еннелле чул катăкĕсем, хытă панкрасем, патаксем вăркăнма тапратрĕç.

— Халăх! Юлташсем! Чарăнăр! Хăвăрах пĕтеретĕр!— пĕтĕм ӳпке вăйĕпе кăшкăрчĕ Тарас юлашки хут, анчах çав самантрах ăна пуçĕнчен темле йывăр япала пырса тиврĕ, тахăшĕ хыçалтан çапса малалла тирĕнтерсе ӳкерчĕ.

— Хĕнĕр!

— Вăрăсене вĕлерсен те нимĕн те пулмасть!— Микстур сасси пырса кĕчĕ Тарасăн хăлхине. Пĕр хушă вăл пичĕпе çĕр çине тăрăнса выртрĕ, унтан сиксе тăчĕ те, Совет членĕсемпе комсомолецсене кĕлет умне хупăрласа лартса хĕнеме тытăннине курса, çавăнталла ыткăнчĕ.

Хăйĕн çулĕ çинчи çынсене хулпуççисемпе сирсе пырса кĕлет умнерех çитсен, çапăçакансене пĕрерĕн-пĕрерĕн аяккалла ывăтма тытăнчĕ. Хăйне тек-текех чулпа патаксем пырса тивни çине те, такам аллисем çурăмĕнчен тӳпелени çине те пăхмарĕ вăл, пĕрмай аяккалла сирпĕтрĕ çынсене... Вилес пек хăраса ӳкнĕ Варукпа Марине, вĕсем хыççăн учительницăпа Кулине те пӳртрен крыльца çине чупса тухрĕç, анчах çав самантрах вĕсем çинелле те чулсемпе патаксем вăркăнма тапратрĕç.

— Сучкасем!

— Кĕрт амисем!..

— Туртса антарăр вĕсене!..

Килхушши енчи чӳрече кантăкĕсем чăнкăртатса сирпĕнчĕç. Халăх пĕтĕмпех пăтранса кайрĕ... Сывлăшра тем тĕрлĕ ылханни, намăс сăмахсем, ыратнипе кăшкăрни илтĕнсе тăчĕ, çынсем пĕр-пĕрин çинелле сикрĕç, ӳкрĕç, пĕрне-пĕри таптарĕç, каллех сиксе тăрса çапăçма тытăнчĕç... Тарас чылай вăхăт парăнмарĕ, хăйĕн çинелле пыракансене ывăта-ывăта ячĕ, унпа юнашар тăракан Микиш та унран кая мар ĕçлерĕ ал-урипе, Хăмăт Энтри те, пысăк куçне ялкăштарса, çынсене çĕрелле пуса-пуса антарчĕ. Анчах çынсем хаярланнăçемĕн хаярланса, урнăçемĕн урса пычĕç... Тарас хăй тавра хăрушă та тискер сăнсем çеç курчĕ... Акă Микстур темле мăн патакпа Микиша хыçалтан пырса çапрĕ те, леш тайăлса кайса ӳкрĕ. Сылтăм енче Лява Уртемĕн чĕрĕ какай пек сăмсипе кăпăклă çăварĕ курăнчĕ. Вăл, хăрушă сасăпа темскер кăшкăрса, Тарас çинелле пысăк чукмарпа сулса ячĕ. Малалла мĕн пулнине вара вăл курмарĕ те, илтмерĕ те...

Сасартăк çак самантра тахăш хĕрарăм, урамран чупса кĕрсе, хăлхана çуракан çинçе сасăпа хыттăн çухăрса ячĕ:

— Милици!.. Утлă милици килет! Чарăнăр!..

Вăл кăшкăрни килхушшинчи пĕтĕм халăх пуçĕ çине кĕтмен çĕртен пăрлă шывпа сапнă пекех пулчĕ. Çапма çĕкленнĕ алăсем аялалла усăнчĕç, алла тытнă чулсемпе алтуйисем çĕрелле ӳкрĕç, унта та кунта çынсем хашлатса, тарăннăн сывласа яни илтĕнчĕ... Хумханнипе чĕтремех ернĕ çынсем, куçĕсене тискеррĕн çаврăкаласа, хăйсем çĕмĕрсе тăкнă ял Совет членĕсем патĕнчен каялла чакма тытăнчĕç. Пурте куçĕсемпе хапха еннелле тăрăнчĕç; хĕнекенсенчен хăшпĕрисем кунтан часрах тухса тарас шутпа ик енчи хӳмесем çинелле пăха-пăха илчĕç.

Микстур Михали, халăх хушшинелле пуринчен ытларах чакса кĕрсе, Шĕвĕрпуçăн ашланса кайнă шывак куçĕпе тĕл пулчĕ.

— Шăвăнас пулать!— терĕ вăл ăна шăл витĕр.

— Ăмма?

— Ырри пулас çук...

Çавăнтах ун умне таçтан Лява Уртемĕ тухса тăчĕ те ăна аллинчен çавăрса тытрĕ:

— Ним те пулмасть. эсир анчах мар... Тарсан, хăвăра пушшех палăртатăр. Тăрăр вырăнта!

Çакăнта калани пĕтĕмпех питĕ хăвăрт, пĕр çур минут хушшинче пулса иртрĕ. Лява Уртемĕ юлашки сăмахĕсене каласа пĕтернĕ-пĕтерменех, Назарăн хапхи умне икĕ милиционерпа Тарас шăллĕ Микуль юланутсемпе çитсе чарăнчĕç. Вĕсем хыççăнах çӳрен лаша кӳлнĕ тăрантас пырса тăчĕ. Ун çинче, ямшăксăр пуçне, волком секретарĕ Иван Петрухин — тăваткалтарах питлĕ лутрарах чăваш тата пысăк уссиллĕ, хура типшĕм çын килнĕ; хура çыннăн чĕркуççисем хушшинчен кашкăр тĕслĕ пысăк йытă пăхса ларнă.

## 16. ЙĔР ТĂРĂХ

... Петрухин милиционерсене çĕре анма хушрĕ, унтан, типшĕм çынна пуçĕпе сулса, килхушшинелле чупса кĕчĕ. Типшĕм çын, тăрантас çинчен анса, йыттине сăнчăрĕнчен туртрĕ.

— Альма, за мной!

Хапхаран кĕрсе ик утăм ярса пуссанах Петрухин чарăнса тăчĕ. Выльăх карти еннелле сулăнса тăнă çынсем пурте ним чĕнмесĕр ун çине хăшĕ куçхаршисем айĕпе хаяррăн, хăшĕ хăравçăн, куçĕсене мăчлаттарса пăхни, килхушши варринче виçĕ çын алли-урисене саркаласа, ним хускалмасăр выртни, унта та кунта чулсем, патаксем йăваланни, пӳрт чӳречине рами-мĕнĕпех ватса тăкни кунта мĕн пулса иртнине самантрах ăнланса илме май пачĕ ăна. Вăл çавăнтах 1918 çулхи кĕркунне, кулаксен пытарнă тыррисене ухтарса çӳренĕ чухне, хăйсене пĕр ялта çакнашкалах вĕлерме тăнине аса илчĕ. Кулаксен, бандитла этемсен ĕçĕ пулмасан, камăн ĕçĕ пултăр ĕнтĕ ку?..

Вăл, хăйĕн пырĕ патне темскер тулса хăпарнине туйса, хуллен кăна ӳсĕрсе илчĕ те тата виçĕ утăм малалла ярса пусрĕ. Куçĕпе пăрапа шăтарнă пек тепĕр хут пăхса

çаврăнчĕ килхушшинчи халăха... Унтан пурне те илтĕнмелле, хыттăн ыйтрĕ:

— Мĕн хăтланатăр, тăвансем?..

Никам та пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Ун умĕнче икçĕр çын ытла тăнă пулин те, килхушшинче тупăкри пекех шăп пулчĕ. Темиçе çĕр куç Петрухинпа ун хыçĕнчи йытăллă çынна витĕр курма тăрăшнă пек, вĕсем çитес самантра мĕн тума шутланине пĕлесшĕн пулса пăхса тăчĕç.

Пĕр-ик минут иртрĕ çапла.

— Ну, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?— ыйтрĕ Петрухин татах. Халăх каллех нимĕн те чĕнмерĕ, вăл халĕ вулăсран килнисем мĕн каласса кĕтрĕ. Петрухин чăнах та тем каласшăн пулчĕ, анчах сасартăк килхушши варринче, тусан çинче выртакансенчен пĕри хускалма пуçланине курчĕ. Ун патĕнчерехре тăракан çынсем, вăл каллех сиксе тăрса тем тăвасран хăранă пек, тата каялла чакрĕç...

— Никам та вырăнтан ан хускалтăр!— хаяррăн кăшкăрчĕ Петрухин.— Ларăр! Ăçта тăнă, çавăнтах ларăр!— Вăл милицисем еннелле çаврăнса аллипе сулчĕ.— Никама та ан кăларăр, никама та ан кĕртĕр!..

Халăх хускалкалама, пĕр-пĕрне тĕрткелеме тытăнчĕ. Темиçе кăмăлсăр сасă илтĕнчĕ:

— Мĕнле апла вăл?

— Пурте айăплă мар вĕт...

— Айăплисене тупас пулать...

— Ан пăшăрханăр!— терĕ волком секретарĕ, халăх çывăхнерех пырса.— Айăплисем тупăнĕç! Никам та хăтăлаймĕ! Ларăр тавай, ларăр!

Майĕпе, пĕр-пĕринпе кăмăлсăртараххăн калаçса, килхушшинчи çынсем ларма пуçларĕç. Петрухин çĕрте выртакансем патне пычĕ. Хускалма пуçлани — Тарас пулнă. Тата иккĕш — Назарпа Микиш иккен. Вĕсем виççĕшĕ те палламалла мар пулса кайнă, пичĕ-куçĕсем шыçса ларнă, суранĕсенчен сăрхăннă юн тусанпа хутăшса сăнĕ-пичĕсене хупласа лартнă... Петрухин Тарасăн пуçне çĕклесенех, ун патне Микуль шариех кăшкăрса макăрса чупса пычĕ:

— Пичче-е!

— Килĕр кунта!— аллипе хăй еннелле туртрĕ Петрухин.— Пӳрте çĕклесе кĕрĕр! Ак кусене те!— Вăл Тарас пекех аран йынăшса выртакан Назарпа Микиш çине кăтартрĕ.— Ну! Хăвăртрах! Эх, тăнсăр халăх! Туссене тăшмансенчен уйăрса илме пĕлместĕр!..

Крыльца ҫине хӑпарсан, ҫынсене татах асӑрхаттарчӗ:

— Астӑвӑр, нихӑшӗ те тухса кайма ан шутлӑр! Хӑвӑрах япӑх пулать атту...

Пӳртре вӑл чӑн-чӑн тухтӑр пекех ӗҫлеме тытӑнчӗ: суранлисен тумтирӗсене хывтарчӗ, халь ҫеҫ лӑпланма пуҫланса, Варукпа тата учительницӑпа пӗрле сурансене ҫыхма тапратрӗ.

— Эх, эмел ҫук... Халех тухтӑр патне ярас пулать! Калӑр кама та пулин!

— Юрать,— терӗ халь ҫеҫ тултан кӗнӗ Хӑмӑт Энтри,— хам ывӑла хушатӑп!

— Часрах!

Микуль ҫавӑнтах, сак ҫинче выртакан Тарас патӗнчен пӗр шит те уйрӑлмасӑр, ним тума пӗлмесӗр хыпкаланса, пӗрмай нӑшӑклатса, куҫне ҫаннипе шӑлса тӑчӗ.

— Ан макӑр, ачам, ан макӑр, хӑрамаллиех ҫук,— лӑплантарчӗ ӑна Петрухин.

Чӑнах та, питне сив шывпа ҫуса тасатса сурансене ҫыхсан, Тарас пӗр вӑхӑт шӑппӑн выртрӗ те хуллен кӑна куҫне уҫрӗ. Волком секретарьне курни ӑна тӑруках тӗлӗнтерчӗ, анчах вӑл ҫавӑнтах астуса илчӗ курӑнать.

— Килтӗр-и?— ыйтрӗ вӑраххӑн.

— Килтӗмӗр, Тарас Петрович... Вӑхӑтра ҫитрӗмӗр пулас.

— Никама та... вӗлермен-и?

— Ҫук. Ӗлкӗреймен.

— Вӗсем... ӑҫта?

Тарас кам ҫинчен ыйтнине Петрухин тӳрех ӑнланчӗ те пуҫӗпе килхушши еннелле сулчӗ.

— Пурте кунта, эпир киличчен тарса пӗтмен пулсан... Кӗтеҫҫӗ,— терӗ вӑл, Тарас ҫине пӑхса. Кӑштах шарламасӑр ларнӑ хыҫҫӑн ҫапла хушса хучӗ:— Пӗтӗм халӑха тытса тӑма аван мар, эс кама-кама тытса юлмаллине каласа пар... Паллах, ҫапакансене ҫеҫ мар, вӗсен аллисене ҫӗклеттернисене те...

Тарас хӑй асӑрхама ӗлкӗрнисене йӗркипе каласа тухрӗ.

— Тата ҫав Мамун арӑмне те хупас пулать, вӑл та шуйттан пекех сикрӗ паян,— хушса хучӗ Варук, Тараспа Петрухин калаҫӑвне итлесе тӑнӑскер.

— Тӗрӗс, тӗрӗс,— ҫирӗплетрӗҫ Маринепе Катя.

— Ну, эс канса вырт-ха халлӗхе, эпир ӗҫе тытӑнатпӑр,— терӗ Петрухин, бандитла тискер ӗҫе тӑвакансен

ячĕсене çырса пĕтерсен.— Халĕ сирĕн ялти сывлăша пĕтĕмпех тасатса çитеретпĕр пуль ĕнтĕ.

— А эсир пĕлетĕр-и тата...— пуçларĕ Тарас, волком секретарьне Исай çухални çинчен калас шутпа, анчах килхушшинче тăрук шавлама пуçлани илтĕнчĕ.

— Стой! Ăçта каятăн?— кăшкăрчĕ тахăшĕ.

— Пăрăн унтан!

— Каланă сире — юрамасть!

— Назад!..

Петрухин чӳречерен пăхса илчĕ те, пиçиххийĕ çинчи кобурне тӳрлетсе, тулалла чупса тухрĕ.

— Мĕн унта?— ыйтрĕ Тарас хăй пуçĕ вĕçĕнче нăшăклатса тăракан Микульрен.

— Такамсем сапур урлă каçма тăчĕç...

— Хăтăласшăн пулас, йытăсем...— мăкăртатса илчĕ Тарас. Унтан шăллĕ çине пăхса, сасартăк амăшĕ çинчен аса илчĕ.

— Килте пултăн-и эс?

— Пулман,— терĕ Микуль.

— Апла акă мĕн... Кунта сăмса юхтарса тăриччен киле кайса кил-ха часрах. Анне мĕнле унта...

— Чăнах, кай,— терĕ Варук, вĕсем патнелле пырса.— Сирĕн патра та пулчĕç паçăр... Аннӳне тем туман-и тата...

Микуль хăвăрт кăна тухса чупрĕ. Пӳртре халь кутнĕк çинче выртакан Назар тата Варук çеç юлчĕç. (Микиша çенĕхри вырăн çине хунă пулнă). Назар, хушшăнхушшăн тарăннăн сывласа, йынăша-йынăша илчĕ, Варук, пĕрехмай ун патне пыра-пыра, ăна канлĕрех вырнаçтарма тăрăшрĕ. Урам енчи чӳречесем витĕр урайне хĕвел çути ӳкрĕ, ку ĕнтĕ кăнтăрла çитнине пĕлтерчĕ. Чӳрече умĕнчи акаци тураттисем çинче салакайăксем хăйсен чĕвĕлти чĕлхипе калаçса сиккелеме тытăнчĕç. Тарасăн темшĕн вĕсем çине пăхас килсе кайрĕ, вăл пуçне çĕклеме тăчĕ, анчах ăшчикĕ пăтранса килнĕ пирки çĕклеймерĕ, унăн пуçĕ минтер çине каялла ӳкрĕ...

Кантăк çумĕнче таçтан килсе лекнĕ пыл хурчĕ нăйлатма тапратрĕ. Вăл Тараса тарăхтармаллах йăлăхтарчĕ, унтан хурт сасси такам пĕр майлăн шăпăр каланă пек туйăнчĕ, кунпа пĕрлех пӳрт маччи темшĕн хускалчĕ, çаврăнма тапратрĕ, юлашкинчен таçта хăямата кайса путрĕ...

— Тарас, Тарас... Мĕн эс? Вăран-ха...— йлıрĕ вăл тĕлĕк витĕр такамăн çепĕç сассине.

— Мĕн?— ыйтрĕ Тарас, куçне уçса.

Ун умĕнче Варук тăрать иккен.

Тарас çавăнтах мĕн пулнине, хăй ăçта выртнине аса илчĕ те, шăмшакĕ ыратни çине пăхмасăрах, тăрса ларчĕ.

— Çынсем ăçта?— ыйтрĕ вăл, чӳречерен пăхса илсе.—Мĕн пулчĕ унта кайран?

— Тытса хупрĕç,— терĕ Варук.

— Кама-кама?

— Микстурпа Шĕвĕрпуçа, Уртеме, Мамун арăмне тата темиçе çынна — вĕсене асăрхаймарăм... Ку, вулăсран килни, пӳртрен тухсанах, вĕсене ятпа чĕнсе пухрĕ. Халăх хушшинчен тухасшăн пулмарĕç вĕсем, анчах та çынсем кăтартса пачĕç вĕсене...

— Камсем?

— Павăл пичче унта, Кулине...

— Хăюлăх çитрĕ пулать?

— Çапла пулас çав. Вара милицисем пурне те хурал пӳртне илсе кайса хупрĕç...

— Вулăсрисем ăçта халь?

— Çавсене ăсатсанах, вĕсем йыттипе йĕр йĕрлеме тухса кайрĕç. Çынсем те пит нумайăн кайрĕç вĕсемпе. Эп те каясшăнччĕ те, сире пăхакан çук, тесе юлтăм.

— Ăçталла кайрĕç-ши?

— Çырмапа анса кайрĕç...

Тарас ура çине тăчĕ. Варук унăн куçĕ хĕмленнине асăрхарĕ.

— Эс... каяс теместĕн пуль те?— ыйтрĕ вăл.

— Каяс пулать!

— Чипер калаç... Вăйсăр вĕт эс, ан кай. Тем пулĕ тата...— терĕ Варук, ун çине шелленĕн пăхса.

— Нимĕн те пулмасть,— терĕ Тарас, гимнастерка çухине тӳмелесе. Чӳрече витĕр пăхрĕ те, урамра Варуксен лаши çӳренине курсан, хуллен кăна ыйтрĕ:

— Сирĕн лашăра утланса каям-и?

— Пултаратăн пулсан, кай ара. Анчах, каймасан авантарах пулатчĕ пуль те...

Варук сассинче, чĕререн ыйтнисĕр пуçне, калама çук пысăк юрату янраса тăчĕ. Тарас ăна уççăнах сисрĕ.

— Ан хăра... Эс хăвăн аçупа Микиша лайăххрах пăх кунта.

Вăл килхушшине тухсан, хапхаран ăна хирĕç хашкама ернĕ Микуль чупса кĕчĕ.

— Пичче,— терĕ вăл кĕç-кĕç макăрса ярас пек.— Аннене хĕнесе пĕтерне, атя киле часрах!..

Тарас нимĕн те каламарĕ, Варуксен лашине тытса утланчĕ те урам тăрăх аналалла сиккипе чуптарса анса кайрĕ...

* * *

Иван Петрухин Тараса «сирĕн ялти сывлăша пĕтĕмпех тасатса çитеретпĕр» тесе ахальтен каламан. Юлашки икĕ эрне хушшинче вулăсри бандитла элементсен ушкăнĕсене икĕ çĕрте хупăрласа тытма май килнĕ, уголовнăй розыск сотрудникĕсен аллине таврари ял çыннисене куллен хăратса пурăннă шултра «çăрттансемех» лекнĕ. Анчах та вĕсен хушшинче Махорка пулман. Петрухина Махорка кирлĕ пулнă: вăл, тĕрлĕ майсемпе йĕрлесе, хăйĕн йăмăкне Махорка персе пăрахнине чухланă, çавăнпа та ку бандита епле пулсан та хам алăпах тытатăп, тесе сăмах панă. Аçта та пулин вăрă-хурахсем алхасни çинчен хыпар илтсенех, Петрухин унта хăй кайнă.

Çÿлте тăракан органсем бандитсен юлашкийĕсемпе çине тăрсах кĕрешме хушнине пурнăçа кĕртесси Петрухиншăн хăйĕн интересĕсемпе çыхăнса пынă.

... Паян ирпе Тарас çырăвне илсен те, вăл нумай шухăшласа тăмарĕ. Угрозыск начальникĕпе, типшĕм питлĕ украинец Челомбитько юлташпа, темиçе сăмах калаçсанах, вĕсем икĕ милиционер илчĕç те Энтрияльне тухса кайрĕç. Çул çинче Петрухин Челомбитькона хăйĕн шухăшĕсене каласа пачĕ.

— Махорка яланах çак таврара çÿренĕ... Эп пĕлнĕ юлашки сведенисем тăрăх, унăн Энтриялĕнче темле тăван пур. Унпа çыхăннах вăл. Çитменнине, пĕр виçĕ эрне каялла унта Махоркăн пĕр çыннине тытнăччĕ, анчах та вĕсем ку «чĕлхене» пит хăвăрт тирпейлесе хунă. Ман шутпа, кĕçĕрхи ĕç те Махоркăсăр пулман... Эс мĕн тейĕн, э?

Украинец, сăмах-юмах питех ваклама юратманскер, ăна хирĕç нимех те каламарĕ, чĕркуççисем хушшине лартнă йыттине пуçĕнчен ачашласа илчĕ çеç.

— Н-да... Це дило треба разжуваты...— терĕ вăл пĕр çур çухрăм пек кайсан тин.— Побачимо, як вин будэ. Пошукаемо...

Энтриялĕ патнелле çывхарнăçемĕн Петрухин ытларах та ытларах пăлханса пычĕ. Унăн пуçĕ пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕ, вăл бандитсене тытмалли тĕрлĕрен тĕрлĕ меслетсем çинчен шухăшларĕ...

«Вăхăт ĕнтĕ, вăхăт!.. Яланлăхах, ĕмĕр тапранаймиех кăклас пулать вăл хураюнсене... Эпир тĕнчере пулман чаплă та пысăк ĕçе тытăнтăмăр... Пĕтĕм пурнăçа тĕпрен çĕнетсе юсама тапрататпăр, мĕнпур ĕççыннисен телейĕшĕн... Анчах вĕсем, тискер çĕленсем пек, сисмен çĕртен пырса сăхаççĕ пире, кашни утăмрах такăнтарасшăн, пирĕн ал-урана çыхасшăн... Пĕлетпĕр эпир вĕсен ĕмĕчĕсене, пит лайăх чухлатпăр. Анчах та — çук, пулаймĕ...»

— Що такэ?— ыйтрĕ украинец, Петрухин темскер мăкăртатнине илтсе.

— Нимех те мар...— терĕ ку.— План тăвататăп.

— А ну, який вин?

Чеомбитько юлташ та ним шухăшламасăр пыман. Вăл хăйĕн практикинче тĕл пулнă ĕçсене аса илнĕ. Революци пулнăранпах розыск органĕсенче ĕçленипе унăн тĕрлĕ бандитсемпе кĕрешес тĕлĕшпе пысăк опыт пухăннă, халь вăл паянхи преступленин çăмхине епле майпа авантарах сӳтсе, вĕçне тупассине ăсĕнче виççе пычĕ. Петрухин планне итлесен, вăл та хăйĕн шухăшĕсене каласа пачĕ. Калаçса пынă май вĕсем Энтрияльне пырса çитнине сиссе те юлаймарĕç.

— Пире эсĕ тӳрех леш çаратнă кĕлет патне илсе кай, ачам,— терĕ Петрухин милиционерсенчен пĕр шит те юлмасăр пыракан Микуле.

— Акă вăл, кунтах, икĕ кил урлă кăна,— аллинчи хулăпа малалла кăтартрĕ Микуль.

— Атя! Хăвăртрах!— ямшăка çурăмĕнчен пӳрнипе тĕртрĕ волком секретарĕ.— Илтетĕн-и, епле шавлаççĕ. Мур пĕлет, тем хăтланаççĕ унта...

Тепĕр минутран вĕсем Назар хапхи умне пырса чарăнчĕç. Ку истори пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччен кулаксен провокацийĕ пулнине пĕлнипе активистсене çакăн пек çĕмĕрсе тăкнинчен те тĕлĕнмерĕç вĕсем. Пĕрпĕрин çине хулпуççисем урлă пăхса илсе, сăмахсăрах ăнланчĕç.

Вара хăйсем иккĕшĕ тунă плана пурнăçлама тытăнчĕç.

Суранланнисене майласан, Тарас кăтартса панă çынсене арестлесен («антив, вĕсем хушшинче айăпсăррисем

те пулччăр, кайран палăртатпăр», терĕ Петрухин), Челомбитько хăйĕн йыттине йĕр шыраттарма пуçларĕ.

— Шукай! Шукай[1], Альма!..

Альма питĕ опытлă ищейка пулнă, ăна пула Челомбитько ниепле те тытма май çук пек туйăннă преступниксенех йĕрлесе тупнă. Ахальтен мар вăл йытта такамсем пĕр-икĕ хут та вĕлерме тăнă, наркăмăшпа йĕплĕ çăкăр та парса пăхнă, пĕрре пăшалпа персе те суранлатнă. Унăн хуçи паян та вăл пысăк ĕç тăвасса шаннă.

... Кĕлет патĕнче шăршласа чупкаласан, Альма пĕр вырăнта чарăнса нăйкăшма тапратрĕ, малти урисемпе çĕре чавса илчĕ.

— Стой, нельзя!— кăшкăрчĕ ун çине Челомбитько. Унтан йăпăр-япăр кăкăрĕ çинчи кĕсйинчен çавракана кантăк кăларчĕ те йытă чавма тăнă вырăна пăхса упаленме тытăнчĕ. Тĕлĕннĕ халăх, сасартăк чĕлхесĕр пулнă пекех, унран темиçе чалăшра ним чĕнмесĕр, шăппăн сывласа пăхса тăчĕ.

— Юн,— терĕ Челомбитько Петрухина.

Йытă анаталла туртăнма пуçларĕ.

— Шукай!— терĕ те ăна хуçи каллех, хăй ун хыççăн чупнă пекех утса кайрĕ. Юпа пек тăнă халăх та хускалчĕ, шавлама тапратрĕ.

— Ан шавлăр! Çывăха ан килĕр!— кăшкăрчĕ халăх еннелле Петрухин, Челомбитькопа юнашар утса. Вăл малтанхинчен те хытăрах пăлханса кайрĕ халь: куçĕ темле пит хăвăрт çаврăнкаларĕ, çамки çине шултра тар пĕрчисем пăчăртанса тухрĕç, сылтăм аллипе тек-текех кобурне тыта-тыта тӳрлетрĕ. Пăлханма сăлтавĕ те пулчĕ çав: Альма преступниксен йĕрне тупни уççăнах курăнчĕ... Анчах та вĕçне çитичченех илсе пырĕ-ши вăл?

Акă Альма, çырма патнелле чупса анса, Карас кӳлли патнелле чупрĕ, унтан сĕвек сăрт çинелле хăпарчĕ, ванчăк çатан карта урлă сиксе каçса, ыраш ăшнелле кĕрсе кайрĕ. Ансăр йăран тăрăх пĕр ана пĕвĕ пек кайсан, тăрук сылтăмалла пăрăнса, анасен пуçĕпе каллех анаталла, Юрпаш шывĕ еннелле ыткăнчĕ...

Янкăр уяр тӳпери хĕвел ним хĕрхенмесĕр пĕçертрĕ, таçта çӳлте, вĕри сывлăшра, тăрисем каçса кайсах юрларĕç, ыраш ăшĕнче шăрчăксем чĕриклетни илтĕнчĕ...

Челомбитькопа Петрухин йытă хыççăн аран ĕлкĕрсе пычĕç. Вăл çаплах малалла туртăнчĕ. Хыçалтан пыракан

[1] Шыра! *(украинла)*.



халăх та юлмарĕ вĕсенчен. Чăн малтан — йытăран пĕр-ик чалăшра çеç — Павăл пичче, Хăмăт Энтри, Кулинепе Марине, Катя, темиçе комсомолец утрĕç, вĕсем хыççăн— Назар, килхушшинче пулнă пĕтĕм халăх, ватти-вĕтти мĕнĕпех... Вĕсем пурте кĕç-вĕçех пит те пысăк, тĕлĕнмелле ĕç пуласса кĕтрĕç, чăн-чăн вăрăсем, выçă çынсен юлашки çăкăр татăкне туртса илекенсем тупăнасса шанчĕç. Шанчĕç те, çав хушăрах ĕненмерĕç те... Сасартăк, ку таранччен лупашкаллă йăран тăрăх пынă Альма сулахаяллла пăрăнса, анасем урлă, тӳрĕрен тӳрĕ, Качака варĕ пуçнелле чупса кайрĕ. Хушăран вăл йăпăртлăх чарăнса тăчĕ, пĕр-ик хут вĕрсе илчĕ, унтан каллех чупрĕ. Йытă кун пек хăтланни çынсене тата ытларах тĕлĕнтерсе пăлхатрĕ, вĕсем хытăран хытă малалла чупрĕç.

Альма, ыраш хушшинчен ухă йĕппи пек сиксе тухса, Качака варĕ хĕррине çитсе тăчĕ те тӳрех хаяррăн вĕрме тапратрĕ. Петрухинпа Челомбитько пĕрре пĕр-пĕрин çине, тепре çырма тĕпнелле пăхса илчĕç. Иккĕшĕ те вĕриленсе çитрĕç вĕсем, йывăррăн хашкаса сывларĕç, пичĕсем тăрăх шултра тар юхса тăчĕ...

— Треба пошукаты!— терĕ те украинец, вĕтĕ çӳçе тĕмисем ӳсекен çырма тĕпне, унтан çырхупаххисемпе витĕннĕ чăнкă çырансене куçĕпе сăнама тытăнчĕ. Альма вăл хушăра чарăнма пĕлмесĕр çаплах вĕрчĕ. Унтан çур минут та иртмерĕ пуль, Челомбитько пĕр вырăнта çыранти хупахсем лутăрканнине асăрхарĕ те, ним шухăшласа тăмасăрах, аялалла сикрĕ. Альма йынăша-йынăша ун хыççăн анса кайрĕ. Çыран хĕррине çитсе тăнă çынсем: «Ах, айтурух! пĕтрĕ ку!» — теме анчах ĕлкĕрчĕç, украинецпа йытă çырма тĕпĕнчи çӳçе тĕмисем ăшĕнче çухалчĕç. Тепĕр самантрах аялтан, йытă вĕрнипе пĕрле, хыттăн кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Петрухин! Сюда-а!.. До мене!

Çӳлте тăракансем ăнланчĕç: украинец темскер тупнă унта. Малтан Петрухин, ун хыççăн ыттисем те çырманалла пăрça пек тăкăнчĕç. Вĕсем çырма тĕпне çитиччен Челомбитько çӳçе тĕмисем хушшинчи лупашкаран темле этем кĕлеткине çĕклесе тухса курăк çине хучĕ те унăн пуçĕ çине тăхăнтарнă миххе салтса хывма тытăнчĕ.

Михĕпе хупласа çырмана ывăтнă çын — Исай пулнă. Унăн сăн-пичĕ кăвакарса çĕр тĕслĕ пулсах ларнă, куçĕ хупăннă, чăн-чăн вилнĕ çын пекех...

Çынсен кăкрисенчен пĕр харăс хăрушă сас пăчăртанса тухрĕ:

— А-ахх!..

— Тур çырлахтăрах! Вĕлернĕ!..

— Исая!

— Эх, мĕскĕн...

— Кам-ши? Кам тискерĕ-ши?

— Аçа çапасчĕ...

— Куртăр-и ĕнтĕ кам айăплине?— хулăн сасăпа кăшкăрса ячĕ халăх çине Хăмăт Энтри, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе илсе.— Советсем тунă-и çакна? Комсомолецсем-и? Эх, çынсем те мар çав эсир...

Вăл каласа та пĕтерейменрĕ — халăх хушшинче пĕр хĕрарăм калама çук хыттăн, ăнран тухса кайнă пек:

— А-ай!— тесе кăшкăрса ячĕ...

Куна Марине кăшкăрнă; хăйĕн савниййĕ вилнĕ пек выртнине курсассăн, хĕр чĕриййĕ тӳсейменен унăн, ăс-пуçĕ пăтраннă пек пулса кайнă... Вăл пĕр утăм малалла ярса пусрĕ те, Исай кĕлетки патне ӳксе, ăна хулпуççинчен ыталаса илсе, пĕтĕм халăх илтмелле, антăхса кайса, пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе чĕтренсе макăрма тапратрĕ:

— Вĕлернĕ-ĕ!.. Вĕлернĕ сана... Пире курайман çынсем вĕлернĕ. Чунăм!..

Татах та тĕрлĕрен тĕрлĕ ачаш сăмахсем каласа йĕчĕ вăл, хăйĕн таса çамрăк чĕринче ку таранччен мĕн пухăннине пĕтĕмпех каласа пачĕ, унтан çавăнтах ăнран кайрĕ... Пăхса тăракан çынсенчен никам та пĕр сасă кăлармарĕ хăяймарĕ, çырмара хăрушă шăплăх пулса тăчĕ. Хыçалта темиçе хĕрарăм нăшăклатса илчĕç... Пурнăçра темĕн тĕрлĕ хăрушлăх та курнă Челомбитько та тӳсеймерĕ, çамрăк хĕр асапланнине кура, унăн пысăк кăвак куçĕ шывланчĕ.

— Обморок,— терĕ вăл Петрухина.—До дому треба...

Хăй çавăнтах Исай патне чĕркуçленсе, унăн юн тымарне тытрĕ. Унтан, пуçне кăкри çине хурса, чĕри тапнине итлесе пăхрĕ.

— Сывлать. Халех тухтăр кирлĕ...

— Тухтăр патне янă,— терĕ Петрухин.

## 17. ХУРАЛ ПӲРТĔНЧЕ

Хурал пӳртне хупса лартнă Лява Уртемĕпе Мамун арăмĕ, Микстур Михалипе Шĕвĕрпуç ĕç кун пек çавăнса килессине ниепле те кĕтменччĕ. Пĕр сехет каялла кă-

на ялти активистсем ҫине урса кайнӑ йытӑсем пек сикнӗскерсем, халь вӗсем тӑруках шӑпланчӗҫ, хастарлӑхӗ таҫта хӑямата кайса кӗчӗ. Пурин те ӑшчиккисем вӑркама тытӑнчӗҫ, вӗсем пӑлханчӗҫ, пурте харпӑр тӗллӗн шухӑша кайрӗҫ...

Пуринчен ытла Микстур пӑлханчӗ. Вӑл, пурнӑҫра яланах хӑравҫӑ пулнӑскер, ӗнерпе паян Лява Уртемӗн сӑмахӗсене суккӑр ҫын пек ӗненнипе ҫеҫ хавхаланнӑскер, халь, тӗксӗм хурал пӳрчӗн алӑкне тул енчен шанчӑклӑ ҫӑрапа питӗрнине илтсен, кӑшт ҫеҫ макӑрса ямарӗ. Малти кӗтеселле утса иртрӗ те, чӗлӗм чӗркесе, ҫӑра тӗтӗме ҫӑтма тытӑнчӗ. Пӳртре куҫа ҫиекен аван мар йӳҫӗк шӑрш кӗчӗ, темле навус шӑнисем нӑйлатрӗҫ...

— Тӗрме пулчӗ-ҫке ку, Уртем пичче,— терӗ Микстур хӑраса ӳкнӗ сасӑпа, чылай вӑхӑт ним чӗнмесӗр ларнӑ хыҫҫӑн.

— Тӗрме ҫав! Эсӗ мӗн, сана советсем пуҫран ачашласа тӑрӗҫ, терӗн-и?— татса хучӗ Уртем сиввӗн.

— Мӗнле-ха апла... Эс ним те пулмасть, терӗн-ҫке...

— Мӗн пултӑр? Айӑпсӑр ҫынна мӗн туччӑр?— терӗ Мамун арӑмӗ, «айӑпсӑр» сӑмаха юриех палӑртса. Хӑй ҫавӑнтах урай варрине тӑсӑлса выртнӑ Пакарта Ҫеменӗпе Автан Упрамӗ ҫине пӑхса илчӗ. Кусем иккӗшӗ те нимӗн те пӗлмен, вӗсем, ахаль чух та ҫапӑҫма юратаканскерсем, паян активистсене чӑнласах айӑплӑ пуль тесе хӗненӗ, хӑйсем халь чи айӑплӑ ҫынсемпе ларнине те чухламан...

— Вӗсен пире винават тума ниепле права та ҫук, эпир анчах мар, пӗтӗм халӑх хӗнерӗ...— мӑкӑртатса илчӗ Шӗвӗрпуҫ, Микстуртан чӗлӗм тӗпне илсе хыпса.— Рас вӑрӑ — сначӑт вӑрӑ, ӗҫӗ те ҫав кӑна!

— Ҫапах та, айӑпламах тапратсан, мӗн тӑвӑпӑр-ха эпир? — Уртем патнерех пырса ыйтрӗ Микстур.

— Сӗлекӳне ан юхтар ӗнтӗ!— тӑрук кӑшкӑрса пӑрахрӗ лешӗ, Микстур ҫине шур куҫпа пӑхса.— Мӗн... чӗчӗ ачи пек! Эс ним те курман, илтмен, ним те пӗлместӗн... Ӑнлантӑн-и? Миҫе хут каламалла сана?!

— А... а... а тупсан тата? — мӑкӑртатса илчӗ куна хирӗҫ Микстур, асӑрханасси-мӗнне манса кайса.

Ку вара ытлашши пулчӗ.

— Мӗн тупсан?— кӑшкӑрса пӑрахрӗ те Уртем, ответ кӗтсе тӑракан Микстура сасартӑк ҫупса ячӗ. Микстурӑн питҫӑмартийӗ вут пекех пӗҫерсе кайрӗ, вӑл ӑна ывҫипе хупласа лартрӗ.

— Мĕншĕн ку?

— Çавăншăн! Мĕн кирлĕ мара лăркатăн? Тепре çăварна уçсан, эп сана çакăнтах пăвса пăрахатăп! Ухмах!

— Чĕлхене ăна шăлпа çыртма пĕлес пулать!— хушса хучĕ Мамун арăмĕ, ĕç малалла та кун пекех пырсассăн Микстур тем те пĕр каласран хăраса.— Вăрăм чĕлхе çынна нихçан та ыр тумасть!

— Эп... эп нимех те каламарăм вĕт, ма çапрĕ вăл мана?— мăкăртатса илчĕ Микстур.— Пăх-ха, юн тухиччен çапрĕ!..

— Татах палкасан, чунна кăларатăп,— тепĕр хут юнарĕ Уртем.

Урайĕнчи Пакарта Çеменĕпе Автан Упрамĕ, пуçĕсене çĕклесе, вĕсем çине ним ăнланмасăр пăхса выртрĕç... Çав вăхăтрах пӳртри сасăсене илтнĕ милиционер чӳрече тĕлĕнче чарăнса кантăкран шаккарĕ.

— Шăп ларăр! Шавлама юрамасть!

— Çук, эпир шавламастпăр, шăпах ларатпăр, юлташ начальник,— терĕ ăна хирĕç Шĕвĕрпуç, кантăк витĕр милиционер çине айăпа кĕнĕ йытă пек пăхса.

— Астăвăр çав!

Пӳртре каллех шăп пулчĕ, шăнасем найлатса вĕçсе çӳрени çеç илтĕнчĕ. Лява Уртемĕ алăк патĕнчи сак çине месерле выртрĕ те ним тĕлсĕр хура маччана пăхма тытăнчĕ. Унăн пуçĕнче тăхлан пек йывăр шухăшсем çаврăнчĕç.

«Йытă илсе килчĕç... Неушлĕ тупĕ вăл? Армана кайса пăхма пултараймаççĕ-ха вĕсем. Никамăн та ăс çитес çук, арманĕ темиçе çул ĕçлемест ĕнтĕ... Махорка унтах выртать-ши? Тарнă пулсан аванччĕ. Ну, вăл парăнасах çук-ха. Леш сарă туталли... Исай тени... вилмеллипех вилчĕ-ши? Ăна çеç мар, ыттисене те тирпейлесе хумаллаччĕ. Шел, ĕлкĕреймерĕмĕр. Мĕн хăтланаççĕ-ши халь? Йытăпа йĕрлеççĕ пулĕ-ха... Шуйттан пĕлет... Ку ухмах Микстурне пустуй çапрăм. Пĕр те пĕр темскер персе ярсан — пĕтерчĕ вара. Ытлашши вĕрилентĕм... Вăл, тăмпуç, пире малашне те кирлĕ пулать-ха. Йăпатас пулать...»

Сехете яхăн тĕрлĕ шухăшсемпе пăтранса выртрĕ Уртем. Урайĕнчи Пакарта Çеменĕпе Автан Упрамĕ хăрлаттарма пуçларĕç. Мамун арăмĕ те, Шĕвĕрпуç та тĕлĕрсе кайнă, пĕр Микстур çеç, чӳрече янахĕ çине чавсаланса, чикаркка хыççăн чикаркка йăсăрлантарса ларать.

Вăл та халĕ малалла мĕн пуласси çинчен шухăшланă... Пĕр енчен, ăна Уртем çупса яни хытă кӳрентернĕ, малтанах вăл урамри милиционера чĕнсе илсе, ĕнертенпе мĕн-мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех каласа парас патнех çитрĕ. «Мĕн тивĕçпе çапрĕ вăл мана? Хăй темĕн тĕрлĕ илĕртрĕ те, халь хĕнеме пуçларĕ! Мăшкăллать манран!— Анчах та темиçе самантранах пусăрăнчĕ.— Апла тусан хам та пĕтетĕп... Епле те пулин хăтăлас пулать...»

Лява Уртемĕ ун çумне шăппăн кăна пырса ларчĕ те хулпуççинчен тĕкрĕ.

— Туртмалли пур-и сан?

Вăл чĕлĕм туртманнине пĕлсе, Микстур ун çине тĕлĕнерех пăхса илчĕ, анчах çапах та кĕсйинчен чăвашла евангели листипе пĕр чĕптĕм килти табак кăларса пачĕ.

— Аш çунать,— терĕ Уртем. Чĕлĕм чĕркесе чĕртсен, Микстур хăлхинченваскавлăн пăшăлтатса калама тытăнчĕ:

— Эс каçар мана, Михали... Ансăртран пулчĕ ку, сана кӳрентерес тесе мар. Хăвах ăнланатăн: пирĕн халь пĕр-пĕринпе харкашмалла мар, пĕрне-пĕри пулăшса пырас пулать. Унсăрăн пĕтереççĕ пире... Мана та, сана та, хамăрăн ытти çынсене те... Турра асăнса калатăп: çакăнтан хăтăлса юлсан, эп сана улпут пекех тумлантаратăп, сан пек капăр çӳрекен каччă та пулмĕ. Хĕл каçнă пăру парăп... Мĕн кирлĕ, çавна ил... Тульккйш эс халлĕхе çирĕп пул, халăх умĕнче хăвна тыткалама пĕл... Ăнлантăн-и? Маншăн çеç мар вĕт, хăвăншăн та вăл...

Микстур унăн сăмахĕсене чăнласах ĕненчĕ.

— Ан шиклен, Уртем пичче, эп саншăн шанчăклă çын... Пуçхĕрлĕ çаксан та, манран вĕсем пĕр сăмах та пĕлес çук!

Урамри милиционер каллех чӳрече тĕлне пырса тăчĕ. Пӳртрисем шăп пулчĕç.

## 18. ХАЯР ТЫТАÇУ

... Исая çӳçе тураттисенчен тунă нуçилкке çине хурса яла ăсатрĕç. Пуçне шывпа йĕпетсе, питне çунă хыççăн куçне уçса тăна кĕнĕ Маринене те Кулинепе Катя киле çавăтса кайрĕç. Челомбитькопа Петрухин, вĕсене ăсатсан, чăн малтан Исайăн пуçĕ çинчен хывса илнĕ миххе пур енчен те пăхса тухрĕç. Миххи икĕ çĕртен çĕтĕлнĕ пулин те, çирĕп лапрашки пиртен çĕленĕскер пулнă, унăн

пĕр енче тахçан тикĕтпе çырнă икĕ саспалли: «Л» тата «А» кăшт çеç палăрса тăнă.

— Це гарно!— куçне ялкăштарса илчĕ Челомбитько.— Це же карты в руки!

Петрухин йĕри-тавра пухăннă çынсем çине пăхса ыйтрĕ:

— Камăн ячĕпе хушамачĕ пуçланать сирĕн ялта çак буквăсемпе?

Çынсем пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕç. Унтан пĕр комсомолец Петрухин патнерех пычĕ те:

— Львов Артемий вăл, Лява Уртемĕ пулать,— терĕ.

— Тĕрĕс, çавăн миххи ку!— терĕç ыттисем те.

— Питĕ аван!— хĕпĕртесех кайрĕ Петрухин.— Халь тин нимĕн те тунаймасть вăл!

Çавăнтах миххе хуçлатса хулхушшине хĕстерчĕ.

Унтан вĕсем, çырана улăхса, паçăр сикнĕ вырăна тухрĕç. Хыççăн пыракан çынсем те вĕсенчен юлмарĕç.

— Кунтан бандитсем хăш еннелле кайма пултарнă?

Çак ыйту çине ответ тупма тăрăшса, вĕсем çырма хĕррипе анаталла, Юрпаш шывĕ еннелле утрĕç. Альма каллех пăлханма пуçларĕ, йĕр çухалнипе вăл тек-текех йынăшрĕ, ыраш ăшнелле те кĕрсе пăхрĕ, çырманалла та туртăнчĕ. Челомбитько ăна пĕрмай лăплантарса, хуллен кăна: «Шукай, Альма, шукай»,— тесе пычĕ. Пĕр çирĕмвăтăр чалăш пек кайсан, вĕсем пӳрт лаптăкĕ пысăкăш лупашкана анчĕç. Альма кунта тата хытăрах пăлханса чупкалама тытăнчĕ. Петрухин пĕр вырăнта курăк лутăрканнине асăрхарĕ. Челомбитько, çавăнтах чĕркуçленсе ларса, курăк ăшĕнче темскер шырама тытăнчĕ...

Халăх каллех, çăвара шыв сыпнă пек пулса, пăхса тăчĕ ун çине...

— Курили, холеры!— терĕ Челомбитько, курăк ăшĕнчен икĕ çунăк спичка тата пĕр чикаркка чĕркемелĕх хут татăкĕ тупса кăларса.— Во! Нам и це пригодится... А ну, Альма, пошукаемо еще трошки!

Унăн куçĕ каллех савăнăçлăн çутăлса илчĕ,— украинец каллех преступниксен йĕрĕ çине ӳкнине Петрухин сăмахсăрах ăнланчĕ. Вăл çеç те мар, куна ыттисем те сисрĕç. Çырма хĕррипе пĕр çур ана пĕвĕ пек чупса ансан, Петрухин чавсинчен Хăмăт Энтри çитсе тытрĕ.

— Мĕнле-ши, юлташ, тупăпăр-ши?

— Тупатпăр!

— Мĕн терĕ вăл?— ыйтрĕ Энтрипе танлашнă Павăл пичче.

— Тупатпăр, тет...

... Çав вăхăтра ялăн анатри хапхинчен Тарас юланутпа сиктерсе тухрĕ. Килĕнче ӳксе çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ амăшне чипер вырнаçтарса, ăна пăхмашкăн Павăл пичче арăмне, Марфа инкене, хушса хăварсан, вăл часрах йытăпа йĕрлекенсене тупас тесе тухнă. Унăн пĕтĕм шăмшакĕ ыратнă, хушшăн-хушшăн ăшĕ пăтранса, пуçĕ çаврăнса килнĕ. Анчах та, епле пулсан та, тăшмансене тупса тытас кăмăл ăна халь ним тусан та килте лартма пултарайман... Ытла мăшкăлларĕ вĕт тăшман, ытла та тӳсме çук ирсĕр ĕç туса хучĕ, ăçтан каçаран ăна? Тем пулсан та, тăшман тем пек чееленсен те, ана тупса тĕппипех кăклас пулать! Тымарĕ мар, шăрши те ан юлтăр, ан вăралатăр вăл пирĕн сывлăша, ĕçлеме çеç мар, сывлама та çăмăл пултăр! Курăпăр — кам çиеле тухĕ!

Хапхаран тухсанах, Тарас лашана сулахаялла, Лява таврашĕсен кивĕ шыв арманĕ патнелле каякан çулпа тытрĕ. Лаша сиккипе ыткăнчĕ, çаран çинче ӳсекен сарă, хĕрлĕ, кăвак чечексем вĕлтлетсе кăна юлаççĕ.

Хурама кукринелле пăрăнсан, Тарас хăйне хирĕç икĕ арçын ача мĕнпур вăйран чупса пынине курчĕ.

— Çаксенчен ыйтас-ха, йĕрлекенсене курман-и вĕсем,— шухăш вĕçрĕ Тарасăн. Анчах та ачасемпе танлашсан, вĕсем хăйсемех кăшкăрса ячĕç:

— Тарас пичче! Тарас пичче!

— Мĕн?— ыйтрĕ Тарас, хĕрсе кайнă лашана чарса тăратса.

— Мĕн çав... Мĕн çав... çавăнта, арманта...— сывлăш çавăраймасăр, антăха-антăха, аллипе арман еннелле кăтартрĕ пĕр ачи.

— Таркăн куртăмăр!— персе ячĕ тепри.

— Мĕнле таркăн?— чĕри картах турĕ Тарасăн. Ачасен кăвакарса кайнă сăнĕсемпе сиксе тухас пекех чарăлса кайнă куçĕсене курсан, вăл ку ачасем чăнах та темскертен хăранине ăнланчĕ.— Мĕнле таркăн, ăçта?— татах ыйтрĕ вăл.

— Арманта!— хашкаса персе ячĕ малтан калама пуçланă ачи.— Эпир Митюкпа Наснартан, пирĕн кукамайсем патĕнчен таврăнаттăмăр та арман пĕви пуçне пулă тытма антăмăр... Чулсем айĕнче йăмпăлтăк пулă нумай унта, алăпах тытма пулать...

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп, эс кама курни çинчен кала! Йĕркипе кала!

— Калатăп-çке... Пулă тытрăмăр-тытрăмăр та киле килес терĕмĕр. Арман кĕлечĕ патне хăпартăмăр та кайăк чĕпписем чĕриклетнине илтрĕмĕр. Митюкпа иксĕмĕр те çӳлелле пăхрăмăр...

— Вара мĕн?— васкатрĕ Тарас.— Часрах кала!

— Пăхрăм та, кĕлет пусĕнчи шăтăкран... хай çӳлте, мачча патĕнче, кăвакарчăн шăтăкĕ тăваççĕ вĕт... çав шăтăкран тĕтĕм тухнине куртăм... Митюка «пăх-ха!» тесе айăкĕнчен тĕкрĕм çеç... унччен те пулмарĕ, çав шăтăкра сар уссиллĕ çын курăнчĕ. Курăнчĕ те самантранах пытанчĕ! Чĕлĕм туртрĕ пулмалла... Митюка эпĕ: ку çын никам та мар — таркăн, терĕм те часрах кунталла чупрăмăр...

— Вăл хăй сире курчĕ-и?— ыйтрĕ Тарас, ниçта кайса кĕрейми хумханса.

— Пĕлместĕп... Кураймарĕ пуль, эпир тӳрех тартăмăр.

— А эсир тата ку таврара çынсем нумайăн çӳренине курмарăр-и?

— Мĕнле çынсем?

— Хамăр ялсем те, ют çынсем те... йытăпа.

— Çук, курман,— пусĕсене пăркаларĕç ачасем.

— Ну, юрать эппин!..

Тарас урăх нимĕн те каламарĕ, лашана чĕлпĕртен карт! туртрĕ те, ик урипе ик енчен хăрăс тапса, çул тăрăх малалла тăпăртаттарчĕ, тусан çеç мăкăрланса юлчĕ ун хыçĕнчен. Ачасем ун çине тĕлĕнсе кăна пăхса юлчĕç...

Арман патне çитесси пĕр çĕр чалăш пек юлсан, Тарас сулахай енчи сăртран улăхалла ыраш хушшипе 50—60 çынлă ушкăн кĕпĕрленсе аннине курчĕ. «Çавсем!»— шухăшларĕ те вăл, лашине çул çинчен пăрса, ыраш урлă тӳрех вĕсем çинелле тытрĕ. Пĕр-ик минутран çитсе те тухрĕ вĕсем патне.

— Чимĕр-ха!— лаша çинчен сиксе анчĕ вăл.

Хирĕç анакан халăх тăпах чарăнчĕ. Петрухинпа Чеиомбитько ун патнелле чупса пычĕç.

— Мĕн тата?

— Хыпар пур.

Ытти çынсенчен темиçе утăм аяккалла кайса тăрса, Тарас вĕсене ачасенчен халь çеç илтнине васкавлăн каласа пачĕ.

— Унтанпа пӗр ҫирӗм минут кӑна иртрӗ, ытла мар. Тен, вӑл халь те унтах-ха, каҫ пуласса кӗтет пулӗ...

— Пит аван! Ку питӗ аван!..— чышкисене чӑмӑртарӗ Петрухин.— Эппин, пире Альма тӗрӗс илсе килнӗ!..

— Зараз треба окружить мельницу!— терӗ Чеиомбитько, Юрпаш хӗрринче курӑнакан арман ҫурчӗсем ҫине пӑхса.— С флангов и с тылу. А мы с Альмой побежимо прямо, в лоб!.. Не спасется!

Ку шухӑшпа Петрухин та килӗшрӗ.

— Тӗрӗс! Пур енчен те ҫавӑрса илес, эпир ӑна чӗррӗн тытатпӑр!

Ҫавӑнтах хӑвӑрттӑн, вӑхӑта пӗр минут та ҫухатмасӑр, вӑл кун ҫинчен халӑха пӗлтерчӗ те мӗн тумаллине хушма тытӑнчӗ.

— Эсӗ пӗр ҫирӗм ҫынпа сулахай енчен, ав ҫав ҫырма хӗррипе ҫаврӑнса пыр,— терӗ вӑл Хӑмӑт Энтрине.— Эсӗ тепӗр ҫирӗм ҫынпа сылтӑмран, ав ҫав йывӑҫсем патӗнчен ҫавӑрса ил,— кӑтартрӗ Павӑл пиччене.— Тарас, эс халех леш енчи сӑрт ҫине кайса тӑр, наблюдатель пул. Хӑвпа пӗрле пӗр-икӗ ҫын илсе кай. Эпир кунтан тӳррӗн пырӑпӑр... Ӑнсӑртран пире курсан, вӑл леш еннелле ҫеҫ тарма пултарать, вара эпир ун хыҫҫӑн йытӑ яратпӑр... Ӑнлантӑр-и?

— Ӑнлантӑмӑр!

— Вӗҫтерӗр!

Халӑх чупрӗ... Пӗрисем пӗр еннелле, теприсем тепӗр еннелле. Ҫак самантра хирти ҫынсен пурин те пӗр шухӑш, пӗр кӑмӑл пулчӗ: епле пулсан та, тытасахчӗ ку бандитсене! Паҫӑр ирхине Варуксен килхушшинче нумайӑшӗ иккӗленчӗҫ, кӗҫӗрхи ирсӗр ӗҫе чӑнах та Совет членӗсемпе комсомолецсем хӑйсем тунӑ пулӗ, тесе шутларӗҫ, анчах та халӗ, Қачака варӗ тӗпӗнче Исай вилнӗ пек выртнине курсан, шухӑшӗсем пачах улшӑнчӗҫ, халь ӗнтӗ кашниех ку ӗҫе бандитсемпе вӗсен майлисем тунине ӑнланса, вӗсене пӗр ҫын юлмиччен тытса пӗтерес ӗмӗтпе ҫунчӗҫ.

Тарас, лаши ҫине утланса, халӑхран уйрӑлчӗ те, Петрухин юлташ хушнӑ пек, Юрпаш леш енчи сӑрт патнелле ыткӑнчӗ. Арман патӗнчен курӑнмалла ан пултӑр тесе, унтан чылай тӑварахра ӳсекен пӗр ушкӑн йӑмрасем хыҫӗпе пӑрӑнса каҫрӗ. Ун хыҫҫӑн икӗ ҫамрӑк каччӑ чупса пычӗҫ.

... Юрпаш урлӑ каҫса, сӑрт ҫине ҫурри таран хӑпар-

сан, Тарас, хашкама ернӗ лашине самантлӑха чарса тӑратса, улӑхалла пӑхрӗ. Армантан анатарах та, тӑварах та, арман патнелле пыракан ҫулпа та тарӑн курӑк ӑшӗнче, лупашкапа тӗмескесем хыҫӗнче пытана-пытана, ҫынсем шуса пыраҫҫӗ иккен.

— Фронтри пекех... наступлени,— шухӑшларӗ те Тарас, тавралӑха тата лайӑхрах курмалла вырӑн йышӑнас шутпа, лашине хускатрӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн вӑхӑт нумай та иртмерӗ — сасартӑк сулахай енче, Хӑмӑт Энтри ертсе пыракан ушкӑнта, тахӑшӗ пур вӑйран кӑшкӑрса ячӗ:

— Тарать! Тарать! Авӑ, пӑхӑр!

— Тытӑ-ӑ-ӑр!— илтӗнчӗ ҫав самантрах теприн сасси.

— Сто-ой!

— Тытӑ-ӑр!

— А-а-а... — янраса кайрӗҫ сасӑсем ҫырма тӑрӑх.

Сӑрта хӑпарса ҫитнӗ Тарас лашине тепӗр еннелле карт! туртса ҫаврӑнчӗ те, аллинчи хулӑпа ӑна урлӑ та пирлӗ туртса ҫапса, сӑрт хӗррипе, ним ҫине пӑхмасӑр, сасӑсем илтӗннӗ ҫӗрелле ыткӑнтарчӗ. Анчах ҫав вӑхӑтра арманӑн сылтӑм енче те — Павӑл пичче ушкӑнӗнче ҫавнашкалах кӑшкӑрни илтӗнчӗ:

— Эхе-хе-эй!

— Сто-ой!

— Ан яр!..

— Тытӑ-ӑр!..

«Урӑххи пуль унта... Пӗринех хӑвалас пулать...— шухӑшласа илчӗ те Тарас малаллах вӗҫтерчӗ.— Икке хӑваласан, пӗрне те тытаймӑн...»

Тепӗр минутран вӑл хӑйӗнчен пӗр аллӑ чалӑшра, ҫырма тӗпӗнче, Хӑмӑт Энтрипе унӑн ушкӑнӗ чупнине, вӗсенчен аллӑ-утмӑл чалӑш малта — темле кӑвак пиншаклӑ, атӑллӑ ҫын каялла пӑха-пӑха ыткӑнса пынине курчӗ. Тарасӑн чӗри тата пӑлханулларах тапма тапратрӗ...

«Ҫавӑ! Ҫавӑ! Бандит!»

Лашине таттисӗр хӑвалама тытӑнчӗ...

Акӑ ӗнтӗ, бандитпа Тарас хушши ҫирӗм чалӑшран ытла юлмарӗ. Ҫыранран ҫырманалла анмалла ҫеҫ, вара ана ҫитсе таптать вӑл...

— Сто-ой! Ан тар!— кӑшкӑрса ячӗ Тарас. Анчах та кӑшкӑрма кирлӗ мар-мӗн. Бандит, ӑна курсан, тӑпах чарӑнса тӑчӗ те, револьверне кӑларса, икӗ хутчен печӗ... Пульӑсем Тарас ҫумӗпех шӑхӑрса иртсе кайрӗҫ.

— А-а-а!.. Эс капла-и?.. Ҫавах тытатпӑр!— кӑшкӑрчӗ Тарас татах, лашине ҫырманалла пӑрса.— Тараймӑн!

Самантран вӑл ҫырма тӗпне анса, лашине шыв урлӑ сиктерчӗ. Бандит, ҫав хушӑра тепӗр еннелле хӑпарса, Шемертен вӑрманӗ патнелле чупрӗ. Тарас та ун хыҫҫӑнах сиктерсе хӑпарчӗ... Бандит пӑшал пеме тытӑнсан, тӑруках чарӑнса тӑнӑ Хӑмӑт Энтри ушкӑнӗ, Тарас бандита ним шиксӗр хӑваланине кура, каллех чупма пуҫларӗ.

— Тытӑ-ӑр!..

— Ан тартӑ-ӑр!..— янраса тӑчӗ таврара.

Бандитпа Тарас хушши кӗскелсех пычӗ. Ҫирӗм чалӑш, вунпилӗк, вуннӑ... Ҫывӑх ӗнтӗ, ҫывӑх! Халех, халех ҫитсе таптать ӑна вӑл... Анчах бандит вӑрт! каялла ҫаврӑнчӗ те, хӑвӑрт чӗркуҫленсе, хӑйӗн ҫинех пырса кӗме тапратнӑ Тараса револьверпа тӗллесе, икӗ хут печӗ. Тарас айӗнчи лаша тӑрук кайри урисем ҫине тӑрса аяккалла сикрӗ. Тарас, ҫав самантрах хӑлаҫланса илсе, ҫӗрелле татӑлса анчӗ... Ҫакна кура, бандит ун патне хӑвӑрт чупса пычӗ те ӑна ӗнсинчен тытса ҫӗр ҫумне пӑчӑртаса лартрӗ... Анчах унӑн вӗри пӳрнисем Тарас карланкки патне ҫитиччен ку пӗтӗм кӗлеткипе ҫӗкленчӗ те ӑна хӑйӗн ҫийӗнчен сирсе пӑрахма ӗлкӗрчӗ. Бандит ӑна ҫавӑнтах ҫухинчен ярса тытрӗ... Вара вӗсем урса кайнӑ аҫа кашкӑрсем пекех кӗрешсе йӑванма тапратрӗҫ вӑрӑм курӑк ӑшӗнче...

— А-а-а!..

— Э-э-эй!.. Ан я-ар!..— паҫӑрхинчен те вӑйлӑрах кӑшкӑрма тапратрӗҫ хысалта чупакансем, вӗсем патне часрах ҫитме юлашки вӑйӗсене пухса.

Никамран малтан Петрухин чупса ҫитрӗ. (Вӑл, малтанхи сасса илтсенех, арман патӗнче Челомбитькона хӑварса, хӑй Юрпаш хӗррипе Хӑмӑт Энтри ушкӑнӗ хыҫҫӑн чупнӑ иккен). Чупса ҫитрӗ те, Тарас аллине ҫыртса лартнӑ бандита пӗрех тапса ывӑтса, ун ҫине хӑпарса выртрӗ.

— Сволочь!.. — пӑчӑртарӗ вӑл ӑна пырӗнчен.

— Яр... — хӑрӑлтатрӗ бандит.

— Кам эс? — вӗри курайманлӑхпа тулнӑ куҫӗпе ҫисе ярас пек пӑхса ыйтрӗ Петрухин.— Кала, кам? Халех вӗлеретӗп...

— Махорка...

Ытти халӑх та чупса ҫитрӗ. Петрухин сиксе тӑчӗ те ҫынсене пуҫӗпе сулчӗ;

— Çыхăр!

Унтан Тарас патнелле çаврăнчĕ:

— Сана суранланă-и вăл?

— Çук пулас,— терĕ Тарас.— Сисĕнмест...

Чăнах та, бандит пульлисем ăна тивеймен иккен, пĕри унăн пиншак аркине шăтарнă та, тепри Варуксен лаши пĕççине шăйăрнă çеç. Револьверте ӳрăх пуля пулман. (Кун çинчен çынсем кайран пĕлчĕç.) Арман енчен çав вăхăтра Павăл пичче ушкăнĕ çывхарса килни курăнчĕ. Çынсем хăвăрт утни, аллисемпе сулкаласа шавлăн калаçни тăрăх вĕсем савăнăçлăн пăлханни палăрчĕ...

— Тытнă!

— Кусем те тытнă!..

— Илсе килеççĕ!— çĕкленнĕ кăмăлпа шавлама тапратса ячĕç Хăмăт Энтри ушкăнĕнчисем.

Ку тĕрĕс пулнă. Арман хыçĕнчен тухса, Юрпаш тăрăх аналла тарма тапратнă тепĕр бандита курсанах, Альма Челомбитько аллинчен вĕçерĕннĕ те вăтăр-хĕрĕх чалăшран ытла та тарма паман, лешĕн ĕнси çине сиксе ларса, çĕре пусса антарнă.

— Ну, пурте пирĕн алăра пулас!— терĕ Петрухин, йывăррăн сывласа тăракан Тараса чавсинчен чăмăртаса.

Тарас, хăй тытнă бандит умне пырса тăрса, ăна çисе ярас пек пăхрĕ. Тăрăхларах питлĕ, сарă çӳçлĕ, кăвак куçлă, кăшт усăнчăкрах сăмсаллă этем иккен. Чим-ха, чим... Ăçта курнă вăл ăна? Ăçта тĕл пулнă çак тискеррĕн çутăлакан куçа?..

Унтан тӳрех аса илчĕ: Хĕрлĕ Çартан киле таврăннă чух, Хусан çывăхĕнче, çĕрле, вĕсен вакунне хурахсем пырса кĕрсе çынсене çаратма тапратсан курнă! Ун чухне Тарас ăна аллинчен çавăрса тытнăччĕ, анчах та вăл унран вĕçерĕнсе тарма ĕлкĕрчĕ. Авă кам пулнă иккен Махорка текен тискер кайăк! Каллех тĕл пулма тӳр килчĕ!

— Паллатăп эп сана, сволочь!— терĕ вăл Махоркăна.— Пĕрре вĕçерĕнтĕн манран, анчах текех хăтăлаймăн, çук!..

## 19. САВĂНĂÇ

Ялта çаплах шавларĕç...

Тарас тухса кайсанах, Варуксем патне çынсем татах пыма тытăнчĕç те татăлма та пĕлмерĕç, пĕрисем тухса кайнă çĕре теприсем пычĕç, çынсем унта кинематографири пекех улшăнса тăчĕç. Кашниех Назарпа Микиш пирки

ыйтса пĕлчĕç, ахлатрĕç, хĕрхенчĕç, пуçĕсемпе сулчĕç, çак тискер ĕçе тăвакансене ылханчĕç. Кăнтăрла иртсен çывăхри ялсенчен те йышлă ушкăнсемпе пыма пуçларĕç, хыпар пур çĕре те çитме ĕлкĕрнĕ иккен. Урамра, килхушшинче, пӳрт умĕсенче, ăçта иккĕн-виççĕн пухăннă, çавăнта таттисĕрех сăмах вакланчĕ, кашни хăй мĕн пĕлнине теприсене каласа пама васкарĕ.

— Эс илтнĕ-и?.. Тарасĕ епле маттур вĕт, э? Пĕр сехет те выртмарĕ, ут утланса йĕр йĕрленĕ çĕре кайрĕ, тет... Мана Варук каларĕ.

— Лешсем мĕнле-ши тата?

— Кам çинчен çак эс?

— Назарпа Микишĕн пуçĕсене çапса çурнă, темеççĕ-и?

— Çу-ук, апла мар... Назарĕ тăна кĕчĕ, тет, ĕнтĕ, калаçать, тет. Микишĕ йывăр-ха...

— Исайне халь те тупайман витнă?

— Пĕлмеççĕ.

— Ăçта кайса кĕнĕ-ши вăл? Ачи çав тери аванччĕ...

— Питĕ шел!

— Милицисене кам чĕнсе килнĕ-ши?

— Микуль, теççĕ...

— Тарас шăллĕ-и? Пăх-ха эс ăна! Пиччĕшĕ пекех çивĕч пулать эппин...

— Вĕсен амăшне те çĕмĕрсе тăкнă, темеççĕ-и?

— Хăрушах мар, тет, Павăл хăта арăмĕ каларĕ.

— Эх, мĕскĕн хĕрарăм! Ăнмасть унăн пурнăçĕ, йĕпе çине сапа тупăнсах пырать ăна валли!

— Хупнисем мĕнле-ши тата?

— Ларaççĕ ĕнтĕ... Никама та çывăха ямаççĕ, тет, вĕсем патне.

— Çав кирлĕ-ха вĕсене. Çав кирлĕ!

...Исая яла илсе пырсан, ăна ăçта тата мĕнле тупни çинчен пĕлсен, çынсем тата шавлăрах калаçма тапратса ячĕç. Халĕ ĕнтĕ Варуксен пӳртĕнче çеç мар, килхушшинче те тăвăрланса çитрĕ. Активист-арçынсенчен никам та çуккипе кунта халĕ Кулинепе Варук хуçа пулчĕç. Исайăн пуç вĕçĕнче амăшĕ, кăшт çеç куракан пĕчĕк карчăк, хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшипех нушапа асапланса пурăннăскер, пĕтĕм вăтă чĕрипе хурланса йĕрсе ларчĕ. Чăланта Варук ниепле те лăпланса çитеймен Маринене ӳкĕтлерĕ.

— Ан тарăхтар ĕнтĕ хăвна ху, мĕн усси пур? Авă, пирĕн атте те çавăн пекехчĕ те — калаçа пуçларĕ вĕт...

Исай та çаплах пулать акă, курăн. Часах тухтăр килмелле, паçăрах карĕç хулана.

— Çук ĕнтĕ, сывалас çук вăл...

— Сывалать, тетĕп сана. Асăнăн ман сăмаха!

Çав вăхăтра Варуксем патне çиçĕм пек хыпар çитсе тухрĕ.

— Икĕ бандита тытнă!

Ку хыпар кунта пухăннă халăха вăйлă тăвăл Атăл шывне хумхантарнă пекех хумхантарса, пăтраштарса, çавраçил пек çавăрттарса, çĕклентерсе, урам тăрăх анаталла, хурал пӳрчĕ патнелле ыткăнтарчĕ...

— Тытнă!..— çак сăмах кашнин хăлхинчех чан сасси пек янраса тăчĕ. Кашниннех вĕсене хăйĕн куçĕпе курас, май пулсан, хăйĕн аллипех тытса пăвас килчĕ... Халăхран çакăн чухлĕ мăшкăлланă, айăпсăр çынсене асаплантарнă хыççăн епле тӳсес вĕсене вырăнтах çапса пăрахмасăр? Халех, халех çакас пулать вĕсене е çакăнтах, халăх умĕнчех персе пăрахас пулать!..

Анчах Петрухинпа Челомбитько бандитсене çурса тăкма мар — пӳрнепе тĕкме те памарĕç. Халăх вĕсене курса çеç юлчĕ: иккĕшне те шкула илсе кайса питĕрчĕç. Кĕçех хурал пӳртĕнчеларакансене те унта илсе кайрĕç.

— Допрос тăваççĕ, тет...

— Япалисене тупман-ха вĕт...

— Пурпĕрех туптараççĕ ĕнтĕ!— терĕç халăх хушшинче.

Халь, чăнах та, каçхине Назар кĕлетĕнчен çаратса кайнă çимĕçсене тупасси çеç юлнă. Бандитсене тытнă хыççăнах Петрухинпа Челомбитько Юрпаш çинчи армана, çимĕçсене унта пытарнă пуль тесе, пит тĕплĕн ухтарнă, анчах нимĕн те тупайман. Ăçта кайса хунă вăл çимĕçсене бандитсем? Ăçта ăсатнă? Вĕсене тупса, Энтрияль халăхне каялла тавăрса пулĕ-ши? Çак ыйтусем ыраттарнă çынсен пуçĕсене, çак ыйтусене епле пулсан та татса памалла пулнă Петрухинпа Челомбитькон.

— Эс ялтисене допрос ту, а эп ку «гастролерсене» хыпашлам. Манăн Махоркăпа куçа куçăн калаçмаллаха... — терĕ Петрухин.

— Юрать,— килĕшрĕ Челомбитько.

Вăл яланах çăмха пек пăтранса ларнă ĕçсене тĕрĕслеме юратнă. Тем тĕрлĕ меслетпе те шыранă вăл преступлени йĕрĕсене, анчах çапах та, ĕç темле пăтраннă пулин те, вĕçне яланах шыраса тупнă. Çавăнпа та халь

вăл хапăл тусах тытăнчĕ Лява Уртемĕн ушкăнне пĕрерĕн-пĕрерĕн чĕнсе кăларса тĕпчеме... Петрухин, тепĕр пӳлĕме питĕрĕнсе ларса, Махоркăпа калаçу пуçласа ячĕ. Питĕ вăрăм пулчĕ вăл калаçу, пĕрре хĕрсе, тепре сӳнсе, унтан каллех хăпарса пычĕ, алăк патĕнчи милиционер икĕ хутчен чейникпе шыв илсе пырса пачĕ. Анчах вĕсен калаçуне никам та илтмерĕ...

Халăх кĕтрĕ...

Питĕ вăраххăн шурĕ вăхăт. Минутсем сехетсем пек туйăнчĕç. Çапах та шкул патĕнчен никам та кайма шутламарĕ. Çынсем, шкул тавра ушкăнăн-ушкăнăн вырнаçса, шакăл-шакăл сăмах вакласа ларчĕç. Пĕр сехет пек иртсен, тахăшĕ пырса пуриншĕн те савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ:

— Хăмăт Энтри ачи хуларан тухтăр илсе килнĕ... Пурне те пăхрĕ тет вăл, хăрамалли нимĕн те çук тесе іаларĕ, тет...

— Исай... Исай мĕнле-ши тата?

— Исай та аптрамасть тет, сывалать, тесе каларĕ, тет. Ăнран анчах кайнă тет вăл, унăн нимĕнех те çĕмĕрĕлмен, тет.

— Тур патăрччĕ!..

— Тен, вăл хăйне кам çапнине астăвать пуль...

— Тем-çке...

— Вăл тарам-ха, хăй пурăнтăрччĕ!

Калаçу татах ăнса кайрĕ. Вăхăт шурĕ...

Тата тепĕр сехет иртрĕ. Иккĕ иртрĕ. Виççĕ...

Халăх çаплах кĕтрĕ, шкулта çаплах допрос тăсăлчĕ, унта Челомбитькопа Петрухин, тăшмансене хĕснĕçемĕн хĕссе, утăм хыççăн утăм каялла чакарса, преступленисен çăмхине салтса пычĕç...

... Кун каçипе ĕшеннĕ хĕвел Сăр вăрманĕсем еннелле сулăнсан, шкултан Челомбитькопа пĕр милиционер, Тараспа Хăмăт Энтри Микстур Михалине илсе тухрĕç. Никама ним каламасăрах, вĕсем халăх хушшинчен ик-виç çынна чĕнсе илчĕç те шкул çумĕнчи тăкăрлăкалла кĕрсе кайрĕç. Ăçта кайрĕç вĕсем, мĕн тума — ăна никам та пĕлмерĕ. Каллех тĕрлĕрен тĕрлĕ шутласа калаçма сăлтав тупăнчĕ шкул патĕнче кĕтсе ларакан çынсем валли.

— Вулăсах илсе кайрĕç-ши?

— А мĕншĕн ăна çеç? Ыттисене тата?

— Килĕнче мĕн те пулин пур-ши?..

— Амăшĕ патне пуль...

— Вăл килте çук, таçта кайнă...

— Мур пĕлет! Ним те ăнланмалла мар...

Анчах та çак ыйтусем çине ответ часах тупăнчĕ. Çур сехет ытларах çеç иртрĕ пуль — шкул тĕлне михĕсем, ещĕксем тиенĕ тулли лав пырса чарăнчĕ...

— Акă вăл, пирĕн çăкăр!— кăшкăрса ячĕ лав çинче тăрса килнĕ Хăмăт Энтри.— Тупăнчĕ!..

Қарр! сырса илчĕ халăх лава...

— Ăçта тупрăр?!

— Қам патĕнче?

— Аçа çаптăрах!..— хавасланса кайнă хурсем пек какăлтатма тытăнчĕ халăх, ниепле те вырăнта тăма пĕлмесĕр.

— Ак çак шуйттанăн нӳхрепĕнче!— пушă аврипе тĕллерĕ Хăмăт Энтри çынсем çине пăхма хăяймасăр тăракан Микстур çине.— Самăй çакă, никамран хытă сикекенни патĕнчен тиесе тухрăмăр!

Темĕн тĕрлĕ ылхану, темĕн тĕрлĕ хаяр сăмах сирпĕнчĕ Микстур еннелле... Ирĕк панă пулсан, халăх ăна çавăнтах татăкăн-татăкăн çурса тăкма пултарĕччĕ, унăн çӳç пĕрчисене те тупма пулмастчĕ пулĕ.

— У-у, çĕлен!..

— Хураюн эс, этем мар!— тесе юлчĕç çынсем, ăна шалалла илсе кĕнĕ чух хыçалтан пăхса.

Кун хыççăн тата чылай вăхăт иртрĕ...

Халăх çаплах саланманнине кура, малтанхи допроса пĕтернĕ Петрухин урама тухрĕ.

— Ну, тăвансем, куртăр-и, ĕççем епле?— ыйтрĕ вăл, халăха пăхса çаврăнса. Унăн сăнĕ çинче çемçе кулă палăрса тăчĕ.— Халь ĕнтĕ кам айăплине пĕлтĕр-и?

— Ара, пĕлетпĕр çав ĕнтĕ...— терĕ тахăшĕ.

— Анчах эпĕ ăна малтанах пĕлнĕ! Мĕншĕн тесен кун пек тискер ĕççене Махорка пек бандитсемпе сирĕн Лява Уртемĕ пек кулаксем çеç тума пултараççĕ.

Халăх шăп тăчĕ...

— Тĕрĕссипе, ĕç мĕнле пулнине пĕлес килет-и?

— Килет! Пĕлес килет!— харăссăн илтĕнчĕ çирĕмвăтăр сасă.

— Қаласа кăтартма пултаратăп сире...

Петрухин пĕрене купи çине çӳлерех хăпарса ларчĕ те чĕлĕм чĕркесе чĕртрĕ. Ăна кура ыттисем те вырнаçавырнаçа ларчĕç, кĕçех чĕлĕмсем йăсăрланма тапратрĕç. Қаллех шăп пулчĕ.

Вара Петрухин юлташ каласа пама пуçларě...

Халě хупса лартнă çынсем кам иккенни, вěсем ку таранччен мěн-мěн туни, ěлěкхи Совет председателěпе секретарě — Каçăр Куçмапа Иливан вěсене мěнле пулăшса пыни, иртнě каçхи çаратăва мěнле хатěрленни, пěтěмпех, пěтěмпех тухса тăчě Энтрияль çыннисен куçě умне. Петрухин каланăçемěн вěсен тěлěннипе куçěсем чарăлчěç, чěрисенче çилě хăпарчě, унта та кунта ылханса илни илтěнчě. Пит те усал, этем сăнне çухатнă хăрушă тăшмансем пурăннă иккен вěсем хушшинче!

— Мěншěн пулаççě-ха çакăн пек япаласем?— терě Петрухин юлташ.— Мěншěн тесен Лява Уртемě пек этемсем пире пěтěм чěререн, пěтěм юнěпе курайманççě... Совет влаçě вěсен çунаттисене çапса хуçрě, чухăнсен юнěпе, тарěпе пурăнса пуйма чарчě, малти вырăна ěлěкхи пек кулак эрешменěсем мар, чухăнсем, хăйсен ěçěпе тăранса пурăнакансем, йышăнса тăчěç! Çавăн пирки вěсем кашни утăмрах çапса хуçасшăн пире... Анчах та вěсен ěмěрě иртрě ěнтě, малашне темле чееленсен те, темле тискерленсен те, вěсем пирěн ěнсе çине утланса лараяс çук!..

Татах нумай къларě Петрухин юлташ...

Унăн сăмахěсем çав тери ăшă, çывăх, ăнланмалла, чěре патне вырнаçса лармалла сăмахсем пулчěç. Вăл калама чарăнсан, ăна ыйтусем нумай пачěç. Петрухин юлташ пурне те ответлерě. Махорка мěнле-мěнле тискер ěçсем туни çинчен ыйтсан, сăмах майěн вăл хăйěн хуйхине аса илчě.

— Мана та хытă кўрентерчě вăл кашкăр... Пěр виçтăват эрне каялла, вăрманта, вăл манăн йăмăка персе вěлернě... Каласа пачě халь... Ним айăпсăр çамрăк çынна пěтерчě!

— Эх, мăнтарăн... — хуйхăллăн сывласа илчěç хěрарăмсем.

— Мěн тăвас тетěн! Тавăрма çук... Анчах та текех асайманççě ěнтě, çулě татăлчě, шăпи тулчě вěсен... Хамăра валли телейлě çěнě пурнăç тумашкăн пире халь тин никам та чарма пултарас çук, чăрмантарасшăннисем пулсан, эпир вěсене çавăнтах çапса аркатăпăр. Çыхланччăр кăна! Вăй кěчě ěнтě пире халь...

Итлесе ларакансене Петрухин юлташ каланисем питě кăмăла кайрěç. Сисěнмесěрех хěвел анчě...

— Ну, кайса çывăрар ĕнтĕ,— терĕ вăл юлашкинчен.— Ыран пирĕн сирĕнпе калаçмалли татах пулать-ха. Юрататăп эпĕ пурнăç çинчен калаçма!

Çынсем лăпкă кăмăлсемпе килĕсене саланчĕç...

## ЭПИЛОГ

Паллах ĕнтĕ, вулаканăн малалла мĕн пулни çинчен пĕлесси килет...

Кĕскен кăна каласа пама пултаратăп.

Тепĕр кунне бандитсене хулана ăсатнă. Пĕр-ик эрнерен суд пулнă вĕсене. Махоркăна персе пăрахнă, ыттисене тĕрлĕ сроклăх хупса лартнă. Пакарта Çеменĕпе Автан Упрамне хытă ятланă та киле янă.

... Ваттисем астăваççĕ ĕнтĕ — выçлăх хыççăн тепĕр çулхине тырă самаях лайăх пулчĕ те, ял çыннисем сывлăш çавăрса илчĕç. Çавăн хыççăн вара халăх пурнăçĕ юсаннăçемĕн юсанса пыма пуçларĕ.

Çав çулах, авăнсем çапса пĕтерсен, кĕр вăйĕпе пирĕн тусăмăр Тарас туй турĕ, нумайранпа юратса пурăннă Варука хăй патне илсе пычĕ. Анчах вĕсен туйĕ таврари пĕтĕм халăха тĕлĕнтерчĕ: Тараспа Варук ыттисем пек чиркĕве кайса венчет тумарĕç, вĕсем кăнтăрла вулăсра хут уйăрттарчĕç те каçхине вара «халăх çуртĕнче», хальхи пек каласан, клубра, ку тăрăхри пĕрремĕш «хĕрлĕ туй» пулса иртрĕ. Пĕтĕм вулăсри комсомолецсем пухăнчĕç унта, ытти çамрăксем те, ваттисем те курма сахал мар пычĕç. Çамрăк мăшăра сцена çинчи хĕрлĕ пуставпа витнĕ сĕтел хушшине лартрĕç, малтан вĕсене укомран пынă кĕске çӳçлĕ хĕрарăм, унтан волком секретарĕ Петрухин юлташ, ял çыннисен ячĕпе учительница Катя саламласа хĕрӳллĕ сăмахсем каларĕç, Тараспа Варука ырлăх-сывлăх, телейлĕ пурнăç сунчĕç, парнесем нумай пачĕç, парнисем хушшинче ача ĕмкĕчисем те пулчĕç (ай, кунтан кулчĕç вара!..), юлашкинчен пысăк концерт пулчĕ: «халăх çурчĕ» çумĕнчи çамрăксен хорĕ юрларĕ, хĕлĕхлĕ оркестр янратрĕ, ушкăнăн-ушкăнăн та, пĕчченшерĕн те ташларĕç. Унччен малтан кунта çакăн пек чаплă концерт пĕрре те пулманччĕ-ха, ятарласа «хĕрлĕ туй» валли хатĕрленĕ пулмалла ăна...

Кунта та тĕлĕнмеллисем сиксе тухрĕç: уголовнăй розыскра ĕçлекен Челомбитько артист пулма пултарать тесе никам та шутламан, анчах та вăл уссийĕсене пĕтĕр-

келесе сцена çине тухрĕ те украинецсен темиçе юррине çав тери чĕре патне пымалла юрласа пачĕ, сасси калама та çук çемçе те вăйлă иккен! Ун хыççăн Петрухин юлташ тухса «Бурлак» сăвва чăвашла питĕ ăста вуларĕ:

Эх, тăванăм! Эсĕ те
Хурлăх курнă пулмалла,
Савăнăçлă юрăран
Макăратăн пулсассăн...

Чăнах та, макăртсах яратчĕ ку сăвă итлесе ларакансене: унта ĕлĕкхи вăхăтри чухăн çамрăксен телейсĕр юратăвĕ, вĕсен нимĕнпе виçме çук хурлăхĕ çинчен каланăччĕ.

Тахçанччен кĕрлерĕ «халăх çурчĕ», ир енне тин саланчĕç çамрăксем çак «хĕрлĕ туйран».

Халăх хушшинче ун çинчен чылайччен аса илсе пурăнчĕç, нумайăшĕ — пуринчен ытла кинемейсем — питĕ тиркерĕç, сура-сурах ятлаçрĕç, антихрист туйĕ пулнă вăл, терĕç, венчет туман мăшăрăн ĕмĕрне те телей пулас çук, ачи-пăчи те пулмасть акă вĕсен, çуралсан та турă усрамасть вĕсене çĕр çинче, терĕç. Анчах тепĕр çултаăкран Варук калама та çук паттăр ывăл çуратса пачĕ, Тарас пекех хуп-хура та çивĕч куçлăскер. Вилме мар, чирлеме те шутламарĕ вăл, упа çури пекех тĕреклĕ ӳсрĕ. Ывăл хыççăн хĕр çуралчĕ, каснă-лартнă Варук...

Ыттисем çинчен мĕн калас? Паллах, пурте хăйсем мĕн шутланине, мĕн ĕмĕтленнине туса пыма тытăнчĕç. Исай ик уйăха яхăн чирлесе пурăннă хыççăн ура çине чиперех тăчĕ те хĕл каçа ялти вулав çуртĕнче ĕçлерĕ, тепĕр кĕркунне вара вĕсем Маринепе иккĕшĕ те Шупашкара вĕренме тухса кайрĕç. Микиша çĕнĕ çул умĕн укомола суйларĕç те, ĕç нумаййипе вăл киле час-час пыраймарĕ, унтан вăл та вĕренме кайнă, терĕç.

Варук ашшĕ Назар та хăй ĕмĕтне пăрахмарĕ, «Пиçен уйĕ» пирки текех сăмах хускатрĕ, çав сăлтавпа хăйĕн кĕрӳшне, Тараса, пĕр канăç та памарĕ:

— Хăçанччен усăсăр вырттаратпăр вăл çĕре? Çылăх вĕт, тупата çылăх! Миçе теçеттин сая каять...

Ку ĕçе тăруках тума май килмерĕ, анчах виçĕ çултан, çынсем вăй илсен, пурнăç йĕркене кĕрсе çитсен, çирĕм пилĕк хуçалăх пухăнса, çав «Пиçен уйне» куçса кайрĕç. Уйрăммăн-уйрăммăн мар, çĕрĕçне пĕрле туса пурăнмалли юлташлăх пулса кайрĕç вĕсем унта. Лайăх ĕçлерĕç, аванах пурăнчĕç, патшалăх та пулăшрĕ вĕсене.

Темиçе çултан вара, пĕтĕм çĕршывĕпех колхозсем тума тытăнсан, вĕсем кӳршĕри тепĕр ялпа пĕрлешрĕç те пысăк хуçалăх туса хучĕç. Ăна ертсе пыма та Тарасах шанса пачĕç...

Пытармалли çук, сахал мар тумхахсемпе чăрмавсем пулчĕç çĕнĕ пурнăç тунă чух, тăшмансем нумай хутчен такăнтарма тăрăшрĕç, Тараса та, унăн çывăх юлташĕсене те хытă юнарĕç, пăшалпа та персе пăхрĕç, пĕррехинче колхоз тыррине çунтарса ячĕç, анчах юлашкинчен хăйсемех пĕтсе ларчĕç, вĕсен ĕмĕрĕ путланчĕ.

... Эхер те сирĕн хăçан та пулин çак тăрăхалла лекме тӳр килсен, эсир:

— Ленин колхозне епле каймалла?— тесе ыйтăр кăна.

Вара сире тăхăрвун çулхи старик те, вунă çулхи пионер те тĕп-тĕрĕс çул кăтартса ярĕ.

1938—1939,
Ленинград.



# Вăрçăра сырса пынисем





## РАЗВЕДЧИК ДЖУНГАЛИ

Эхер те, эп вилес пулсан та,
Мана хисеплĕр коммунист тесе...
*(Фронтри сăвăран).*

...Чикĕ урлă каçнă хыççăн батальон тăваттăмĕш кун ĕнтĕ хăйĕн секторĕпе пырать. Çак тăватă кун хушшинче вăл хăйĕн çулĕ çинче тĕл пулакан финсен нумай бандитла отрячĕсене аркатрĕ, йĕплĕ пралук картисене ватса, тĕлĕнмелле чеелĕхпе лартса тултарнă минăсене тасатса, çĕмĕрсе хăварнă кĕперсене хăвăрт тӳрлетсе, татгисĕр, пĕрмаях малалла шурĕ.

Батальон пусĕнче, çӳлĕ кăвак лаша çинче, сарлака хулпуççиллĕ, кăшт курпунтарах комбат ларса пырать.

Ĕнер ирхине, К. шывĕ урлă кĕпер тунă чух, леш енчи йывăççем хушшине вăрă пек пытанса выртнă белофинсем сасартăк пулеметсемпе, автомат-пăшалсемпе пеме тапратрĕç. Батальон, хăвăрттăн ик еннелле сарăлса, тăшмана хирĕç çунтарма тытăнчĕ. Пĕр çирĕм минут хушши таврари сывлăшра пулеметсем шатăртатни, пульă-

сем пин-пин сăпсасем пек нăйлатса шăхăрни çеç илтĕнсе тăчĕ. Кунпа пĕрлех батальонăн икĕ флангĕнче те миномётсем пĕтĕм вăрмана чĕтретсе кĕрĕслетме тытăнчĕç, çырман леш енче, тăшмансем пытанса ларнă çăра туратлă йывăçсем патĕнче, пирĕн гранатăсем шартлата-шартлата çурăлни илтĕнчĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, финсен пулемечĕсем шарлами пулчĕç, гранатăсемпе миномётсем хупларĕç вĕсен çăварĕсене...

Финсем вăрман енне шалалла тарчĕç курăнать, кĕпер туса пĕтмен пирки батальон вĕсене хăваламарĕ.

— Пурпĕрех пирĕн алла лекеççĕ-ха вĕсем, инçех тараймĕç,— терĕ комбат, батальон умне тухса тăрса. Вăл çырма хĕрринчех, никамран малта, финсене пулеметран ăшаласа выртнă иккен.

Ун патне тулли те çаврака питлĕ, хĕсĕкрех куçлă, хура сăнлă кĕçĕн командир пычĕ.

— Юлташ капитан! Сирĕн янахран юн юхать!— терĕ вăл, пӳрнипе комбатăн пичĕ çине кăтартса. Çавăнтах, тепĕр еннелле çаврăнса, хыттăн кăшкăрчĕ:

— Санита-ар! Санинструкто-ор!..

Комбата, чăнах та, сылтăм тăнлавĕнчен суранлатнă иккен. Анчах та вăл медпункта каясси çинчен илтесшĕн те пулмарĕ. Санинструктор пырса суранне çыхсанах, вăл хăй патне çавăтса пынă лаши çине утланса ларчĕ.

— Юлташ капитан, астăвăр, кайран япăх ан пултăр... — сăмах хушрĕ унăн суранне малтан асăрханă кĕçĕн командир.

— Ан хăра, Джунгали, нимĕн те пулмасть! Пĕчĕк ача-им эпĕ пуля кăшт шăйăрса кайнăшăнах стройран тухма?— терĕ те ăна комбат, батальона çырман тепĕр енне каçарма пуçларĕ.

Джунгали хăйĕн отделенине кайса тăчĕ.

— Маттур пирĕн комбат... — шухăшларĕ вăл. — Çав тери хăюллă, паттăр чĕреллĕ этем...

...Çул çинче, унта та кунта, совет салтакĕсем çывхарнине кура хăвăрт таракан финсем пăрахса хăварнă вĕр-çĕнĕ велосипедсем, йĕлтĕрсем, патрон ещĕкĕсем выртаççĕ. Хăшĕсем — çăмăлланма — шинелĕсене те хыва-хыва ывăтнă. Вăрçă пуçланиччен хăйсен «паттăрлăхĕпе» тем пекех мухтаннă шюцкорсем* халĕ мулкачсем пек тараççĕ-мĕн!

---

* Финляндири фашистсем.

Майӗпе каҫ пула пуҫларӗ, батальон ансӑр ҫул тӑрӑх пӗр пысӑк уҫланкӑ хӗррипелле тухрӗ. Комбат лашине чарса ҫӗре анчӗ те командирсене халех хӑйӗн патне пухӑнма хушрӗ. Вӗсемпе вӑл мӗн калаҫнине никам та илтмерӗ, анчах та вунӑ-вунпилӗк минутран пурте пӗлчӗҫ: ирччен батальонӑн ҫак уҫланкӑ хӗрринче тӑмалла.

Часах ҫӑра тураптлӑ чӑрӑшсем айне палаткӑсем карӑнчӗҫ, вӗсен ӑшӗнче пӗчӗкҫеҫ кӑвайтсем ҫунма пуҫларӗҫ. Халӑх йышлӑ пулин те, ним шав та ҫук, пурте шӑппӑн кӑна калаҫаҫҫӗ, мӗншӗн тесен тӑшман усал та чее, унран кирек мӗнле ирсӗрлӗхсем те кӗтме пулать... Часах пӑшӑлтатни те илтӗнми пулчӗ, боецсем — кун каҫа ӗшӗннӗ хыҫҫӑн — ҫывӑрма выртрӗҫ. Темиҫе сехетлӗх «лагерь» йӗри-тавра кӑларса тӑратнӑ хуралти боецсем ҫеҫ ҫывӑрмаҫҫӗ, вӗсем, никам асӑрхамалла мар вырнаҫса, вичкӗн куҫӗсемпе тӗттӗмелле пӑхса, таврара епле те пулин сасчӗв пуласса итлесе выртаҫҫӗ.

Джунгалийӗн тӑруках ыйхӑ килмерӗ... Юлашки темиҫе кун хушшинче пулса иртнисем унӑн куҫӗ умӗнче пӗрин хыҫҫӑн тепри шуса иртрӗҫ. Унтан вӑл хӑй Хӗрлӗ Ҫара пӗлтӗр кӗркунне мӗнле тухса килнине аса илчӗ. «Кзыл Аскер» колхоз хӑйӗн чи маттур джигитне ҫав тери савса ӑсатрӗ, хура куҫлӑ Эмине, асӑнмалӑх, ҫынсем куриччен хӑрах хӑлхинчен алкине хывса пачӗ.

— Ан ҫухат... Алкама ҫухатсан, пирӗн юрату та ҫухалӗ...

Тепӗр ирхине вӑл юлатшӗсемпе пӗрле пануплми хулине — илемлӗ Алма-Атана ҫитрӗ, вӗсене поезд ҫине лартрӗҫ, вунӑ кунтан Ленин хулине, Джунгалие хӑйӗн чапӗпе калама ҫук тӗлӗнтернӗ Ленинграда, пырса тухрӗҫ. Вӗренӳ пуҫланчӗ... Кунтан-кун Джунгалишӗн тӗнче сарӑлса пынӑ пек туйӑнчӗ, кунтан-кун унӑн умӗнче пурнӑҫӑн ҫӗнӗрен ҫӗнӗ страницисем уҫӑлса пычӗҫ... Ҫуркунне лагерьти пурнӑҫ пуҫланчӗ... Кунта Джунгалийӗн тата пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ: пулеметчиксен сборӗнче пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑшӑн комбат ӑна пӗтӗм батальон умне чӗнсе кӑларса тав турӗ... Унӑн сӑнне хаҫатра пичетлесе кӑларчӗҫ, хаҫат тухнӑ кунах Джунгали ӑна Эмине патне ярса пачӗ.

Тепӗр ик уйӑхран Джунгалие батальон штабне чӗнтерчӗҫ. Комбат яланах шӑтарас пек пӑхакан куҫӗпе Джунгалие пӑхса илчӗ, унтан ларма хушрӗ.

— Сана эпир паянтан пуçласа отделени паратпӑр, эсӗ — командир пулатӑн,— терӗ.

Джунгали, кун пек хыпара кӗтменскер, тӳрех сиксе тӑчӗ.

— Ан пӑлхан, ан пӑлхан, лар,— аллине пукан çине кӑтартрӗ комбат. — Эп каланине кирлӗ çӗрте çирӗплетнӗ ӗнтӗ... Çапла, командир пулатӑн. Эпир сана шанатпӑр... Анчах та асту, Хӗрлӗ Çар командирӗ пуласси вӑл — питӗ пысӑк чыс, вал чыса таса тытма пӗлес пулать...

— Ӑнланатӑп,— терӗ Джунгали, каллех ура çине тӑрса,— анчах та... пултарайӑп-ши эп? Вырӑсла та начартарах...

Комбат ӑна каласа пӗтерме памарӗ, пӳлчӗ.

— Кирлӗ мара калаçатӑн! Сан пек каччӑсем пултармасан тата... Эпир пурте малтан сан пек пулнӑ.

Комбат пирус чӗртрӗ. Джунгалие те туртма пачӗ, унтан хӑй епле командир пулни çинчен каласа кӑтартрӗ. 1918 çулта, Совет çӗршывне пур енчен те тӑшмансем тапӑнса хӗсме тытӑннӑ вӑхӑтра, вӑл — Питӗрти пӗр завод-ра «подручный» пулса ӗçлекен 16 çулхи ача — хӑй ирӗкӗпе çара çырӑнса фронта кайнӑ. Ик-виç çул хушшинче нумай фронтсенче пулса курнӑ, фронтрах командира тухнӑ.

— Пурӑна-киле эсӗ те пысӑк командир пулатӑн акӑ... Чӗререн тӑрӑшни тата хамӑр çӗршыва чунтан юратни пулсан, этем теме те çӗнсе илӗ, Джунгали!— терӗ вӑл юлашкинчен.

Çакӑнтан вара комбат Джунгалишӗн хаклӑран та хаклӑ çын пулса тӑчӗ. Мӗнпур вӑйне хурсах тӑрӑшрӗ Джунгали, «Кзыл Аскер» колхозри джигит. Çакӑн пиркиех вара вӑл ырӑ ятсӑр пуçне нимӗн те илтмерӗ аслӑ командирсенчен.

...Кун каçа ӗшенни çӗнтерсе илме пуçларӗ. Джунгалийӗн куçӗ хӑех хупӑнчӗ, шӑмшак тӑрах темле ырӑ ӑшӑ сарӑлса кайрӗ, шухӑшсем татӑлчӗç. Тем вӑхӑт çывӑрнӑ вӑл... Сасартӑк, такам шӑппӑн кӑна хӑйне хушаматпа чӗннине илтсе, вӑранса кайрӗ.

— Джунгали!.. Юлташ Джунгали...

— Мӗн?— хӑвӑрт тӑрса ларчӗ вӑл. — Кам?

— Эпӗ ку, эпӗ...

Джунгали взвод командирӗн сассине палларӗ.

— Сана комбат чӗнет...

Джунгали пĕр сăмахсăрах сиксе тăчĕ те хăйĕнпе юнашар выртакан боеца вăратрĕ.

— Мана чĕнеççĕ, ман вырăна эсĕ юлатăн... Асту!

— Есть!— терĕ боец, палаткăра выртакансене пăхса çаврăнса.

Ик минутран лейтенантпа Джунгали комбат палаткине пырса кĕчĕç. Комбат çывăрма шутламан та иккен, аран-аран çунакан кăвайт умне пĕшкĕнсе, карттă çине пăхса ларнă.

— Тăхтăр пăртак,— терĕ вăл. пырса кĕнисем çине пăхмасăрах. Унччен те пулмарĕ — палатка хĕрри çĕкленчĕ, палаткăна тата икĕ кĕçен командир кĕрсе тăчĕç:

— Юлташ капитан, эсир хушнипе килтĕмĕр!

— Юрĕ... — комбат сылтăм аллине карттă çине хучĕ. — Акă мĕн, юлташсем... Сире эпĕ питĕ ответлă задача пурнăçлама яратăп. Пăхăр çакăнта...— Вал пӳрнипе карттă çине тĕллерĕ. — Эпир халь çак вырăнта тăратпăр. Ку — юнашар уçланкă. Унтан каллех вăрман пуçланать. Ик-виç километртра Х. ялĕ. Сирĕн кĕçĕр çав Х. ялне çитсе килес пулать. Белофинсем пур-и унта, çук-и? Нумайăн-и? Орудисем пур-и вĕсен? Пирĕн çул çинче мĕнле чăрмавсем пулма пултараççĕ?

* * *

Комбат панă задачăна разведчиксем тĕп-тĕрĕс пурнăçларĕç. Вăрман варринче ларакан ял патне виççĕн виç енчен упаленсе пырса, кил-çуртсем, хӳмесем çуммипе йăпшăнса, яла урлă-тăрăхах «хыпашласа» тухрĕç. Никам та çук иккен, ял пуш-пушах. Чĕрчунсенчен пĕр тăлăх йытăпа пĕр пăрусăр пуçне нимĕн те тĕл пулмарĕç вĕсем.

— Кулаксем пурăннă пулмалла кунта, çурчĕсем ытла лайăх, тата кил тавраш ĕнче машинăсем те нумай...— шухăшларĕ ялăн анат вĕçне тĕрĕсленĕ Джунгали. — Чухăнсен ун пек пулас çук! Çавăнпа тарнă та вĕсем... Комбата çавăн пекех каласа паратăп...

Вăл ял хыçĕнчи юлашки хӳме урлă каçрĕ те, таврари шăплăха пĕр-ик минут итлесе выртнă хыççăн, вăрманалла упаленсе кайрĕ. Юлташĕсемпе тĕл пулма калаçса татăлнă çĕре, пĕр пĕчĕк çырма пуçне çитсен, çамрăк чăрăш айне пытанчĕ.

— Аван пулчĕ-ха ку паян. Приказа пурнăçларăмăр.

Ял — пушă, ирпе хăюллăнах килме пулать... Анчах та, юлташсем мĕншĕн килмеççĕ-ха? Çĕтсе каймарĕç-ши?

Вăхăт шурĕ... Çур сехет иртрĕ, унтан пĕр сехет. Джунгалийĕн урисем шăнма пуçларĕç, айĕнчи юр ирĕлсе пăрланма тытăнчĕ. Юлташсем кĕç-вĕçех тухаççĕ пуль тесе, вăл тата тепĕр çур сехет кĕтсе выртрĕ. Урисем ыратакан пуличченех шанса кайрĕç, пĕтĕм шамшак чĕтреме пуçларĕ.

— Мана тĕл пулайманнипе иккĕшех кайнă пулас,— шухăшларĕ Джунгали юлташĕсем çинчен. — Капла выртсан, ырри пулас çук, каяс...

Чăрăш тĕми айĕнчен шуса тухрĕ те мăн вăрман ăшне кĕрсе кайрĕ. Вăрманта хăрушла шăплăх, пĕтĕм тĕнче пĕр харăс сывлами пулнă пекех туйăнать. Тĕттĕм, куçран чиксен те курăнмасть, ура айĕнчи шурă юр çеç тĕксĕм-кăвакăн палăрать. Джунгали пĕр йывăç патĕнчен тепĕр йывăç патне, шăппăн, туратсене чăштăртаттармасăр пыма тăрăшса утрĕ. Пĕр километр ытларах кайсан, вăрманта сасартăк кăштах çутăлнă пек пулчĕ. Джунгали çӳлелле пăхрĕ. Çăра пĕлĕтсем хушшинчен чалăш уйăх шуса тухнă иккен.

— Хамăрăннисем патĕнчен кайнăранпа вăхăт та нумай иртрĕ ĕнтĕ, тен, часах çуталать те пулĕ...

Чăнах та, майĕпе кăвак çутă çапма пуçларĕ. Джунгали, хăрах аллипе шинель аркисене çĕклесе, хăвăртрах утма пуçларĕ. Батальона часрах çитес пулать-çке, пĕлтерес пулать мĕн пулнине, ирпе ирех батальонăн малалла наступление каймалла!

Сасартăк сылтăм енче хăрăк турат хуçăлнă сасă илтĕнчĕ...

Джунгали пĕр йывăç кутне лап выртрĕ те сас илтĕннĕ еннелле мĕнпур куç вăйĕпе пăхма тытăнчĕ. Пĕр минут иртрĕ, иккĕ. Татах тепĕр турат хуçăлчĕ.

— Финн... — шухăш вĕçрĕ те Джунгали пуçĕнче, унăн аллисем винтовкăна çатăрах пăчăртарĕç. Унччен те пулмарĕ, вăл пĕр йывăç патĕнчен теприн патне темле мĕлке сиксе каçнине асăрхаса юлчĕ.

— Вĕсен разведчикĕ пулмалла,— шухăшларĕ Джунгали. — Йывăç тăрринче ларнă пулĕ-ха... Курăпăр, мĕн пулĕ! Эх, чĕррĕн тытса кайсан аванччĕ!.. «Чĕлхе» пулатчĕ...

Çапла шухăшларĕ çеç — хайхи мĕлке каллех тепĕр тĕме патнелле ыткăнса каçрĕ.

Джунгалин чӗри кӑкартан сиксе тухас пек тапма пуҫларӗ. Тăшман разведчикне чӗррӗн тытса каяс шухăш ăна калама ҫук пăлхатса ячӗ. Вăл йывăҫ айӗнчен тăчӗ те мӗлке кураннă ҫӗрелле хăвăрттăн шума тытăнчӗ. Тул ҫуталса пырать, ӗнте вăрманта вунпилӗк-ҫирӗм чалăшра аванах курăнакан пулчӗ.

— Кӗрӗс!— турӗ кӗтмен ҫӗртен пăшал сасси малти тӗме айӗнчен... Пуля, хăлха ҫуммипе шăхăрса иртсе, йывăҫа шалтлатса ҫапăнчӗ. Тăшман Джунгалие асăрхарӗ иккен. Джунгали самантлăха пуҫне юр ăшне чикрӗ, анчах ҫавăнтах ҫӗкленсе малалла пăхрӗ, хайхи тăшман йывăҫсем хушшипе кукăр-макаррăн чупнине курчӗ.

— Ну, манранах тараймăн!— терӗ те Джунгали шăл витӗр, тăшман ҫулне пӳлес шутпа, тӳрех васкаса чупрӗ. Пӗр самантлăха тăшман мӗлки курăнми пулчӗ. Малта ҫырма пулнă-мӗн. Джунгали пӗтӗм вăйран чупса пырса ҫырманалла кусса анчӗ те кăкăр таран шыва кӗрсе кайрӗ... Ҫавăнтах тепӗр еннелле сиксе тухрӗ те каллех хăвалама тытăнчӗ.

— Пурпӗрех тараймастăн...

Тăрук ун хыҫӗнче пăшал сасси кӗрӗслетрӗ. Пуля Джунгалин питҫăмартине ҫунтарса илчӗ. Хăйӗн хыҫӗнче те тăшман пуррине шута илсе, вăл вилнӗ пек пулса выртрӗ. Самантранах аяккалла упаленме тытăнчӗ, лăпсăркка тураттисене ҫӗре ҫитиех саркаланă чăрăш айне пытанса йăпшăнчӗ.

Питҫăмарти тăрăх юн чарăнма пӗлмесӗр юхрӗ. Пырӗ типсе ларчӗ. Джунгали ҫăвар тулли юр хыпса илчӗ. Сывламасăр итлерӗ... Темшӗн ҫак вăхăтра йывăҫ тăррисем кашлама пуҫларӗҫ. Таҫта инҫетре, сылтăм енче, тупăсем пени илтӗнсе кайрӗ.

Ҫак хушăрах, инҫетре те мар, йывăҫсем хыҫӗнче тăшмансем ҫывхарса килни сисӗнчӗ. Йывăҫсем хушшипе кăштăртатни, типӗ туратсем хуҫăлса шартлатни, нӳрӗ юр нăтăртатни Джунгалие уҫҫăнах илтӗнчӗҫ ӗнтӗ.

Акă унăн куҫӗ ҫывăхрах пӗр тăшман мӗлкине тытрӗ. Алăсем хăйсемех винтовкăна ҫӗклерӗҫ, пӳрне курок ҫине пусрӗ. Ҫавăнтах пăшал сасси янăраса кайрӗ.

— Са-атана!— уҫҫăнах илтӗнчӗ тăшман хаяррăн кăшкăрни. Белофинн ҫӗрелле йывăррăн персе анчӗ.

— Курăпăр-ха, кам кама тӗп тăвӗ!— савăнăҫлăн шухăшларӗ те Джунгали, тепӗр чăрăш айне кушак пек сиксе каҫрӗ.

Ун çинелле харăссăн темиçен персе ячĕç. Пăшал сассисем, вăрманти шăплăха çурса, таçта çитиех кĕрлесе кайрĕç.

— Курăпăр-ха... — терĕ Джунгали тепĕр хут, пысăк хыр патне чупса каçса. Анчах пăшал пенисем йышлансах пынине кура: — Капла май килмест... Эп пĕччен, хамăрăннисем патне тухас пулать! — тесе шухăшласа илчĕ.

Тĕмĕсем хушшинче каллех мĕлке курăнчĕ. Джунгали ун çине тĕллесе курока туртрĕ те тепĕр белофинн, малтанхи пекех, темскер кăшкăрса йывăррăн ӳкнине курчĕ. Халь ăна хăйне те пур енчен те пеме тапратрĕç. Вăл хăйĕнчен инçетре мар тарăн çырма, унтах тăвăлпа ӳкнĕ йывăçсем пуррине аса илчĕ. Пĕрре сылтăмалла, тепре сулахаялла, унтан каялла печĕ те çырма патнелле ыткăнчĕ. Пăшал сассисем петĕм вăрманĕпех янăрарĕç ĕнтĕ... Таврара пульăсем шăхăрчĕç кăна. Пĕри Джунгалие пĕçĕрен çыртрĕ. Вăл çырана чупса çитсе аялалла сикрĕ, каллех кăкăр таран шыв урлă шăмпăртатса каçрĕ. Акă ĕнтĕ купаланса выртакан йывăçсем...

— Халь килĕрех! — терĕ Джунгали, темле шăтăка кĕрсе тăрса. Аллисем винтовкăна хăвăрт авăрларĕç, куçĕ йĕри-тавра мĕн пуррине сăнарĕ...

Тăшмансем ун йĕрĕпех чупса пынă-мĕн. Джунгали сывлăш çаварма ĕлкеричченех сартра пĕр белофинн кĕлетки курăнчĕ. Джунгали персе ячĕ, тăшман çӳлтен пăрахнă каска пекех йăванса анчĕ çырма тĕпĕнчи юханшывалла. Самантранах ун хыççăн тепри чăмрĕ...

Сылтăм хулпуççие витĕрех такам сивĕ йĕппе чикнĕ пек туйăнчĕ, унтан вери пулса кайрĕ. Ĕнтĕ тăшмансем ăна виççĕмĕш хут суранлатнине вăл аванах ăнланчĕ, ун куçĕ темле тĕтре витĕр пăхнă пек çеç куракан пулчĕ, анчах та Джунгали, юлашки вăйне пухса, обойма хыççăн обойма пушатрĕ. Юр çинчи пушă гильзăсен купи пысăклансах пычĕ.

— Тăван çĕршывшăн... — çирĕппĕн çыртса лартнă шăлĕсем витĕр пăшалтатрĕ вăл, пĕтĕм чун хавалне пухса. — Мейĕр, илĕр манăн кучченеçе!..

Вăрманта пăшал пени ку вăхăтра татах вăйланчĕ. Таçта инçетре те мар, Джунгалисен батальонĕ вырнаçнă енчен, темиçе пулемет урнă пек шатăртатма тапратни хăлхана пырса кĕчĕ.

— Ăрр... ăрр... — темле типĕ сасăпа ĕрлеме тытăнчĕç кĕске черетсем, унтан вара, кăшт тăхтасан, дискĕ-дискĕпех кăларса яма тытăнчĕç курăнать. Пĕр çĕр-çăраллă чалăшран аякра та мар умлăн-хыçлăн икĕ граната сиксе çурăлчĕç, пĕтĕм вăрман чĕтресе кайрĕ...

— Неушлĕ кусем пурте мана переççĕ?— шухăшласа илчĕ вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланса пыракана Джунгали. — Юлташсем ăçта-ши? Тен, ку пулеметсем — пирĕн? Тен, мана пулăшма килеççĕ?..

Леш енчи çыранра, шăпах ик-виç минут каялла икĕ белофинн шывалла чикеленсе аннă вырăнта, каллех тăшман курăнчĕ. Вăл йывăç çумне пĕшкĕнсе автомат-пулемета вырнаçтарма тытăннине Джунгали курчĕ те, кăкăр умне чикнĕ чăмăркка гранатăна туртса кăларса, пур-çук юлашки вăйне пухса, тăшман патнелле ывăтрĕ.

Граната сиксе çурăлса кайрĕ...

Тĕтĕмпе, çулăмпа, тăпăлнă çĕрпе пĕрле сывлăшалла белофинпа унăн пулемечĕ те пĕр метр пек çĕкленчĕç, унтан иккĕшĕ те пĕр харăсах çырма тĕпнелле сирпĕнчĕç...

Анчах Джунгали хăй те пачах вăйсăрланса çитрĕ. Кăкăрĕнче тӳсме çук вĕриленсе, вутпа çунтарнă пек çунакан пулса кайрĕ. Вăл аран-аран пĕр ывăç юр илсе хыпрĕ. Пуçĕ çаврăнма пуçларĕ, чĕркуççисем хутланса анчĕç.

— Мĕнле-ха... Эп заявление параймарăм пулать...— йывăр тĕлĕкри пек шухăш çуралчĕ унăн.

Сулахай аллипе кăкăрĕнчен, гимнастерка кĕсйи тĕлĕнчен тытрĕ. Унта, гимнастерка кĕсйинче, Джунгали темиçе кун каялла çырнă заявлени выртнă, вăл хăйне парти кандидатне илме ыйтнă, анчах та ăна памашкăн тăхтаса тăнă — çапăçусенче паттăр ĕç тунă хыççăн авантарах пулать, тенĕ. Çав кĕсъерех çаврака çутă кĕмĕл алка — хура куçлă Эмине парни выртнă...

Вăрман хытăран хытă кĕрлерĕ.

Ĕнтĕ пулеметсем çывăхрах шатăртатрĕç, унта та кунта гранатăсем çурăлчĕç, такамсем команда парса кăшкăрнисем илтĕнчĕç.

Джунгали ăнран кая пуçларĕ...

Юлашки хут ăна, тĕтре витĕр курăннă пек, хăйĕн тăван килĕ, ватă амăшĕ, колхозри джигитсем, хура куçлă Эмине, комбатăн хăюллă сăнĕ, разведкăна пĕрле кайнă юлташĕсем курăнса иртрĕç...

Вăрман çаплах кĕрлесе тăчĕ.

Джунгалирен инçетре те мар хулăн сасăпа кăшкăрнă команда янăраса кайрĕ.

— Вперед, за мной!.. В атаку!...

— Урра-а!..

Джунгали ăна илтмерĕ.

* * *

Вăл икĕ-виçĕ кунтан Ленинградри пĕр госпитальте вăранса тăна кĕчĕ.

Шап-шурă таса стенасене, хăйĕн пуçĕ патĕнче пукан çинче ларакан шур халатлă хĕрарăма курсан, вăл нумайччен хăй ăçта лекнине ăнланаймасăр выртрĕ.

— Аçта эпĕ?— ыйтрĕ юлашкинчен.

— Больницăра, шăллăм, госпитальте,— терĕ ăна хирĕç йăваш саслă хĕрарăм. — Кунта эс икĕ талăк ытла выртатăн ĕнтĕ...

— Аха-а, калаçма пуçларĕ-и?— савăнăçлăн пуçне çĕклерĕ юнашар койка çинчи çын. — Тавах медицинăна! Хăранăччĕ эпĕ!

Джунгали пуçне ерипен çавăрчĕ те разведкăра хăйенпе пĕрле пулнă юлташне палласа илчĕ. Тăруках унăн чĕри савăнăç ăшшипе тулса ларчĕ.

— Эс те кунта-и?

— Эп те çав! Алла çĕмĕрчĕç, явăлсем! Эс пĕлместĕнха вĕт мĕнле пулнине...

— Паллах, пĕлместĕп.

Джунгали тăна кĕрсе калаçакан пуласса икĕ талăк ытла пăшăрханса кĕтсе пурăннă юлташĕ халь ăна каçса кайсах каласа кăтартма тытăнчĕ.

... Çав каçхине Х. ялĕнче разведка туса пĕтерсен, вĕсем те пĕр юлташĕпе пĕрле Джунгалие тĕл пулас тесе вăрман хĕрринелле пынă, анчах ăна тĕл пулайман. Тĕрĕссипе, вĕсем урăх вырăналла тухнă пулмалла. Вара, чылай кĕтсе тăнă хыççăн, батальона иккĕшех таврăнма шут тытнă. Вăрман хушшипе пĕр сехете яхăн пырсан, пăшал сассисем илтнĕ, унтан тăшмансене хăйсене те асăрханă. Вĕсем пурте пĕр еннелле пенине чухласа илсен — ăнланнă: финсем е Джунгалие, е пирĕннисенчен кама та пулин урăххине переççĕ... Пĕр-ик сăмахпа канашласа илсе, лайăхрах пытанса выртнă та финсене таттисĕр пеме тытăннă. Темиçĕшне патĕнчех тирпейлесе хунă. Çапла пулнă ĕнтĕ: Джунгали сылтăм флангран, кусем сулахайран çунтарнă... Çав вăхăтра, разведчиксем час

таврӑнманшӑн пӑлханма пуçласа, тата уçланкӑн тепӗр енчи вӑрманта, шӑп разведчиксен çулӗ çинче, вӑйлӑ перкелешнине илтсе, комбат пӗр ротӑна тӑратнӑ та уçланкӑ урлӑ каçарса янӑ... Вара белофинсенчен пӗри те хӑтӑлайман.

— Нумайййӑн пулнӑ-и вӗсем?— ыйтрӗ Джунгали, юлташӗ хӑйӗн калавне пӗтерсен.

— Рота таран. Вӗсем пирӗн батальон çулӗ çинче засада тӑвасшӑн пулнӑ...

Джунгали çăмӑллӑн сывласа илчӗ.

«Эппин, эпӗ малтанхи разведчикӗ хыççăн кайни тӗрӗс пулнӑ...»

— Эпир вара саншӑн питӗ хытӑ хӑрасаттӑмӑр,— терӗ юлташӗ малалла. — Çырмари шӑтӑкран сана комбат хӑй çӗклесе кӑларчӗ, тет. Санӑн суранусене çыхнӑ чух ниçта уйрӑлмасӑр пӑхса тӑчӗ, куна эп хам куçпах куртӑм. Унтан вара... эс пӗлместӗн-ха... Тепӗр ӗç пулса иртнӗ.

— Мӗн тата?

— Кӑнтӑрлапа, кӑшт каннӑ вӑхӑтра, парти пухӑвӗ пулнӑ. Унта сана кандидата илнӗ. Санӑн заявлени пулнӑ вӗт?

— Чӑнах-и? Чӑн калатӑн-и?— хӗмленекен куçӗпе пӑхса илчӗ Джунгали хӑйӗн юлташӗ çине.

— Аçа çаптӑр мана, суятӑп пулсан,— терӗ лешӗ.

Джунгали кӑна хирӗç нимӗн те чӗнмерӗ, кӑмӑлӗ çав тери тулса килнипе çемçен кулса илчӗ çеç.

Темиçе кунтан, майӗпе тӳрленме пуçласан, вӑл хутпа кӑранташ ыйтса илчӗ те çыру çырма тытӑнчӗ.

«Савнӑ чунӑм Эмине, сана эпӗ хамӑн савӑнӑçпа тулнӑ чӗререн пӗлтеретĕп: эпӗ халь тӗнчери чи телейлӗ çын...»

1939, декабрь.
Ленинград, госпиталь.





## ЮЛТАШ ПУРНĂÇĔ

Хура вăрман çийĕпе татăк-татăк кĕрен пĕлĕтсем чупаççĕ, сивĕ çил вĕсене пĕр чарусăр хĕвеланăçнелле хăвалать...

Пĕр виçĕ кун хушши çанталăк питех те аван пулнăччĕ, çуркунне пуçланнă пекех туйăнатчĕ, унтан тепĕр хут сивĕтсе пăрахрĕ. Ура айĕнчи юр каллех хытса кăчăртатакан пулчĕ, йывăçсем пасланчĕç, кайран çак сĕмсĕр çил вĕрме тапратрĕ.

Анчах вăрçă çанталăка пăхмасть, уншăн пурĕ-пĕр. Çил шăхăрни витĕр кунĕн-çĕрĕн йывăр тупăсем ухлатни илтĕнет, сивĕ сывлăшра минăсем шăхăраççĕ, чи малти позицисенче пулеметсем таттисĕр, пĕрре чарăнма пĕлмесĕр тăкăртатаççĕ. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе хăлхана моторсем хаяррăн ĕрлени хупласа лартать, кĕçех зениткăсем пеме тытăнаççĕ, пĕлĕтре пĕр харăсах çĕршер çиçĕм çиçнĕн туйăнать. Çав вăхăтрах пехота хăйĕн ĕçне тăвать, метр хыççăн метр малалла шăвать вăл, тăшман çывăхнерех пырса, ăна пĕр харàс вăйлăн çитсе çапма хатĕрленет...

Вăрмантан тухсан çатма пек тикĕс хир тăсăлать, унтан сасартăк — çÿлĕ сăрт, сăрт çиче — чиркÿллĕ пысăк ял. Мускав патĕнче аркатса тăкнă хыççăн тăтăшах хĕвеланăçнелле чакса каякан гитлеровецсем çакăнта çитнĕ те питĕ вăйлă укрепленисем туса кĕрсе ларнă. Вĕсене кунтан пĕтĕм тавралăх таçта çитиех курăнса тăнă, вĕсем пур çĕрелле те тÿррĕн пеме пултарнă, çавăнпа та ку ял çине ниепле те тăрук пырса кĕме юраман. Н-ски полк командованийĕ çакна питĕ аван ăнланнă, çавăнпа та вăл нимрен малтан тăшмана хавшатса çитермелли майсем шыранă.

...Каç пуласпа полк штабĕн начальникĕ разведка взвочĕн командирне, Инкин лейтенанта хăй патне чĕнтерчĕ те:

— Кĕçĕр пысăках мар «экскурси» тăвас пулать,— терĕ. — Тăшманăн огневой точкисене хыпашласа пăхăр, оборона системине лайăхрах пĕлме тăрăшăр. Хăш тĕлте, мĕн чухлĕ... Задача — питĕ кăткăс та ответлă. Кама ярассине хăвăн пĕлмелле, ответне эс тытатăн. Ăнланатăн-и?

— Ăнланатăп.

— Çынсене халех хатĕрле. Кайран мана пĕлтер.

— Есть!

Разведчиксен командирĕ урăх пĕр минут та тытăнса тăмарĕ, тÿрех хăйĕн подразделенине, штаб начальникĕн приказне пурнăçлама кайрĕ. Паллах, сывă пулнă пулсан разведкăна вăл хăй кайнă пулĕччĕ, анчах иртнĕ эрнере «чĕлхе» тытма кайсан ăна сылтăм хулĕнчен пуля лекнĕ те, вăл ăна халь мăйĕнчен бинтпа çакса çÿренĕ. Пуля шăмма тивменнипе суранĕ йывăрах пулман, çавăнпа та вăл медсанбата та кайман, взводрах юлнă, санротăна перевязкăна çеç çÿренĕ.

— Акатовăн группине ярас... — шухăшласа пычĕ Инкин. — Шанчăклăрах пулĕ...

Хăйĕн взводĕнчи боецсене вăл пурне те питĕ лайăх пĕлсе тăнă. Пĕрисем, калăпăр, йĕлтĕрпе çил-тăман кăларса чупма пултараççĕ, теприсем йывăççем тăррине пакша пек хăпарса каяççĕ, виççĕмĕшсем вĕçсе пыракан кайăка пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах персе антараççĕ... Çавăнпа та вăл, çынсене разведкăна янă чух, кам мĕне пултарнине асра тытса суйласа илнĕ.

Кĕçĕр акă пĕр-ик километра яхăн кăкăр таран юр

ăшше́н упаленсе каймалла, çырма урлă каçмалла, унтан сăрт çине хăпармалла... Ку ĕç валли Акатов йышши сибиряксем кирлĕ. Вăл — Алтайра çуралса ӳснĕ тĕреклĕ йĕкĕт, хулпуççийĕ аршăн сарлакăш, питçăмартинчен пӳрнепе пуссан юн пĕрхĕнессĕн туйăнать, пысăк кăвак куçĕ иксĕлми хастарлăхпа ялкăшса тăрать. Мĕн пĕчĕкренпех сунарçăсем хушшинче ӳснĕскер, вăл вунçичĕ çултах пĕр-пĕччен упана хирĕç пулса, ăна хăрушă тытăçура аслашшĕн кукăр кинжалĕпе чиксе пăрахнă. Çавăнтан вара ăна ял çыннисем «Ванька-Медвежатник» тесе ят панă. Ваттисем ырланă, çамрăккисем кăштах кĕвĕçнĕ, сарă хĕрсем — пĕр-пĕри сисиччен — ун çине ăмсанса пăхнă. Çара каймалли вăхăт çитнĕ тĕлелле вара вăл картинсем çинчи вырăс богатырĕсем пекех пулса тăнă.

Фронта килсен Акатов тӳрех разведчиксем хушшине лекнĕ. Унăн хăюлăхне, вăл хуть те мĕнле задание те тĕп-тĕрĕс пурнăçласа пыма пултарнине кура, ăна часах сержант ятне панă та отделени командирĕ тунă. Çавăнтан вара унăн фронтри биографийĕ тата ытларах пуянланнă. Нимрен хăрама пĕлмесĕр, вăл хăйĕн боецĕсемпе тăшман позицийĕсем патнех шăва-шăва пырса унăн пулемечĕсене шарлами тунă, темиçе «чĕлхе» тытса килнĕ, пĕр разведкăран та трофейсăр таврăнман...

Пĕррехинче, чăнах та, питĕ кулăшла пулса тухнă. Хăйĕн юлташĕсемпе тăшман тылĕнчен таврăннă чух вăл сасартăк ял хĕрринчи пĕр арпалăхра иккĕн-виççĕн нимĕçле мăкăртатнине илтнĕ. Хăйсене палăртас мар тесе, вĕсен кунтан питĕ шăппăн, никам сисмелле мар иртсе каймалла пулнă ĕнтĕ, анчах та Акатов, ăна-кăна шутламасăрах, темшĕн çав фашистсене тапăнма шут тытнă. Вăл боецсене хуллен кăна команда панă та арпалăха ыткăнса кĕнĕ. Ку ытла та кĕтмен çĕртен пулнипе гитлеровецсем хирĕç те тăрайман, разведчиксем вĕсене темиçе самантрах ним сассăр тирпейлесе хунă. Унтан Акатов арпалăхăн малти стени çумĕнче çĕр айнелле анмалли шăтăк пуррине асăрханă.

— Э, кунта арлан йăви те пур иккен! — тенĕ те çамрăк командир, шăтăкалла икĕ «хăяр» — çаврака граната ывăтнă.

Шалтан пĕр сасă та илтĕнмен. Вара Акатовпа икĕ боец çĕр айнелле чупса аннă та шăрпăк çутса пăхнă. Ку — халь çеç туса пĕтернĕ дзот пулнă иккен. Виçĕ амбразура: пĕри пулемет валли, иккĕшĕ автоматсем

валли. Пулеметне те илсе пынă, вырнаçтарма кăна ĕлкĕреймен.

— Питĕ вăхăтлă пулнă иккен эпир килни,— терĕ боецсенчен пĕри, çĕнĕ спичка çутса. — Э-э, ара, хуçи те кунтах-мĕн!

Пурте вăл кăтартнă çĕрелле пăхнă. Кĕтесре фашист офицерĕн вилли саркаланса выртнă. Унпа юнашарах пысăк хура чăматан тăнă.

— Пурлăхĕ-мĕнĕпех пурăнма куçнă-мĕн те... — кулса илнĕ пĕр боец, чăматана çĕклесе пăхса. — Йывăр, ача! Уçса пăхасчĕ, мĕн тултарнă-ши унта?

— Вăхăт мар халь!— чарнă ăна Акатов. — Васкас пулать. Тĕрĕслекенсем пирĕнсĕрех тупăнĕç.

Вăл офицер кĕсйинчи хутсене, парабеллумне кăларса илнĕ те, дзотра пулнă пур трофейсене те боецсене çĕклеттерсе, тул çутăлнă çĕре полка çитнĕ. Взвод командирне рапорт панă хыççăн вĕсем иккĕшĕ штаба кайнă. Штабра малтан хутсемпе хĕçпăшалсене пăхнă, унтан Акатов илсе килнĕ хайхи офицер чăматанне уçнă. Сĕтел тавра пухăннисем ун çине питĕ интересленсе пăхса тăнă: чăнах та, мĕн тултарнă-ши çав тери нумай?

Анчах çиелти япалине туртса кăларсанах, пурте ахăлтатса кулса янă: вăл самаях вараланнă пĕчĕк ача утиялĕ пулнă...

Унтан хĕрарăм сараппанĕ тухнă. Ун айĕнче ултă мăшăр хĕрарăм чăлхи, салфеткăсем, çӳлĕ кĕлеллĕ туфли, тăватă кăкăр çакки, ултă кĕмĕл кашăк, мулкач тирĕнчен çĕленĕ кивĕ муфта, пĕр ярăм шăрçа, тăватă вилка, икĕ тутăр, хĕрарăм шлепки...

Штабри çынсем антăхса кайса, варĕсене тытса кулнă.

— Ну, трофей-тăк трофей!

— Хĕрарăм япалисен магазинĕ вĕт ку!

— Аçтан кăна пухса çитернĕ пуль...

— Тиркемен вара нимĕн те!

— Ара, вăрă хăçан тиркесе тăрать?

Акатов малтанах нимĕнле мар пулса тăнă, темшĕн, çынсем унтан хăйĕнчен кулнă пек туйăннă ăна. Юратьха кунсăр пуçне ытти трофейсем пулнă, атту пĕр çак чăматана çеç сĕтĕрсе килнĕ пулсан, мĕн курмаллаччĕ-ха? Кипке пухса çӳрекен барахольщик ятне илтмеллеччĕ-и? Вара кулсах тăна кăларатчĕç...

Анчах ку тахçанах иртсе кайнă ĕнтĕ, унтанпа Акатов, тата нумай хутчен разведкăра пулса, калама та çук паха сведенисем пуха-пуха таврăннă. Полкра ăна халь чи пултаруллă разведчик тесе хисепленĕ. Нумай пулмасть, И. шывĕ хĕрринчи çапăçу хыççăн, правительство наградине илме тивĕçлĕ боецсемпе командирсен спискиче тунă чух, пĕрремĕш вырăнта унăн ячĕ пулнă.

...Взвод командирĕ Инкин лейтенант ун патне вăл çĕрпӳрт умĕнче, йывăç кăкĕ çинче, çыру вуласа ларнă чух пырса тухрĕ.

— Здорово, Акатов!

Разведчик ăна хирĕç вăштах сиксе тăрса саламларĕ.

— Мĕн вулатăн пит тăрăшсах?

— Килтен çыраççĕ...

— Савни пулĕ-ха, пĕр-пĕр сенкер куçлă Нюра е Дуся-Муся?— куçне хĕссе илчĕ лейтенант. Акатов та çемçен кулса илчĕ.

— Унсăр та май килмест, лейтенант юлташ, кашни çыннăнах чĕре пур, мĕн тăвăн?

— Тĕрĕс, тĕрĕс...

Лейтенант унпа юнашар ларса чĕлĕм чĕртсе ячĕ те унтан хăй мĕншĕн килнине каласа пачĕ.

— Питĕ ответлă ĕç,— терĕ вăл,— полковникпа штаб начальникĕ хăйсем чĕнсе калаçрĕç манпа. Нумаййăн кайма кирлĕ мар, пилĕк-ултă çын пулсан çитет. Юлташусем ăçта?

— Кунтах, канаççĕ,— пуçĕпе çĕрпӳрт еннелле кătартрĕ Акатов. Унăн пичĕ çинчи кулă çухалчĕ, куçĕнче темле урăхла çутă ялкăшма тытăнчĕ...

— Халех хатĕрленĕр,— терĕ лейтенант. — Эпĕ батальон штабĕнче пулатăп.

Акатов тăчĕ те çĕрпӳрте кĕрсе кайрĕ. Тепĕр 15—20 минутран унпа пĕрле шурă халат тăхăннă пилĕк боец тухрĕç. Пиллĕкĕшĕ те пĕр пек — çамрăк, патвар, çилпе кăштах куштăрканă хĕрлĕ сăнлă йĕкĕтсем. Кашниех автоматпа, халат айĕнчи пиçиххирен икшер-виçшер граната çакнă, хĕвĕсене тата тепрер запаснăй диск чикнĕ.

— Эпир хатĕр!— кайса пĕлтерчĕ Акатов хăйсен командирне. — Задача парасса кĕтетпĕр...

Лейтенант вĕсене автомашинăсем валли тунă хӳтлĕхе илсе кĕртрĕ те кĕçĕрхи разведкăра мĕн тумалли çинчен ăнлантарма тытăнчĕ.

— Эсир тĕрĕс сведенисем илсе килнинчен пирĕн çитес наступлени ăнăçлă пуласси килет,— терĕ лейтенант. — Кашни тĕмескене, кашни лупашкана «хыпашласа» пăхма тăрăшăр. Блиндажсем, окопсем хăш тĕлте вĕсен, пулеметсемпе орудисене ăçта лартнă, укреплениcем хăш тĕлте начартарах — пурне те пĕлес пулать...

— Анланатпăр, лейтенант юлташ.

— Епле асăрханмалли майсене хăвăр пĕлетĕр. Астăвăр, кирлĕ мар çĕртен тытăçу пуçласа ан ярăр, усăсăр çухатусем ан пулччăр.

— Пĕлетпĕр, пирвайхи хут мар вĕт.

— Ну, телей пултăр!

Разведчиксем хăйсен командирĕпе сывпуллашрĕç те вăрман хĕрринелле кайрĕç. Лейтенант вĕсем çине кăмăллăн пăхса юлчĕ.

— Кусем ахаль таврăнас çук...

Вăрман хĕрринчи юлашки йывăçсем айĕнче Акатов боецсене чарса тăратрĕ.

— Авă,— терĕ вăл, чылаях инçетри сăрт çинче курăнакан юрпа витĕннĕ çуртсем çине кăтартса,— пирĕн çавăнта çитмелле ĕнтĕ. Сăрт патнерех çитиччен пурте пĕрле каятпăр, унта вара виçĕ пая уйрăлса каймалла пулать. Эпир, Быстровпа иксĕмĕр, сăрт çамкине тӳрех хăпаратпăр. Петровпа Файзуллин — сылтăмран каяççĕ. Симонянпа Ищенко — сулахайран... Кайран хăш тĕлте пухăнмаллине çывăхарах пырсан палăртăпăр. Ыйтмаллисем пур-и?

— Çук, ăнланнă ĕнтĕ,— терĕç ăна хирĕç боецсем.

— Ну, апла пулсан, юлашки хут чĕлĕм туртăр та, шăвăнăпăр, вăхăта сая ярас мар.

Лăпсăркка чăрăш айĕнче махорка тĕтĕмĕ йăсăрланма тытăнчĕ. Табакпа «аппаланман» Акатов вăл хушăра маларах тухрĕ те, пĕр йывăç тăрне çурри таран хăпарса, бинокльпе пăхма пуçларĕ...

Қаçхи кăвакрах тĕтре витĕр вăл ялти хăшпĕр пӳртсенчен шурă шĕвек тĕтĕм тухнине çеç асăрхарĕ, урăх нимĕн те курăнмарĕ ăна.

— Юрĕ, патне çитсен курăпăр,— шухăшларĕ те вăл, çĕре анса боецсене хускатрĕ.

Вĕсем, пĕрерĕн-пĕрерĕн хирелле тухса, кăпăшка таран юр ăшне выртрĕç...

Акатов хăй пуринчен малта упаленсе пычĕ, кашни 40—45 метртанах юлташĕсем çине çаврăна-çаврăна пăх-

рĕ. Қаç пулнă май çанталăк татах сивĕтрĕ, вĕсене хирĕç кассăн-кассăн çил вĕрсе тăчĕ, анчах çынсем шăнма мар, хĕрнĕçемĕн хĕрсе пычĕç. Пĕр пилĕкçĕр метр пек кайсан, Акатов кăштах канас тесе чарăнчĕ те месерле çаврăнса выртрĕ (юр ăшшĕн çул туса упаленсе пыма питĕ йывăр çав!).

Тӳпере пĕр çăлтăр та курăнмасть, сăнсăр кăвак пĕлĕтсем вĕсене пĕтĕмпех хупласа лартнă иккен. Çавăнпа кĕçĕр уйра та питĕ тĕттĕм...

— Ку аван-ха пирĕншĕн... Хамăра палăртмасăр çитме шанчăк ытларах...— çăмăллăн сывласа илчĕ Акатов.

Унпа юнашар Быстров ефрейтор пырса выртрĕ. Ку çын Акатовăн чи çывăх тусĕ пулнă. Истра хулине нимĕçсенчен каялла туртса илнĕ чух ун пурнăçне çăлнă: Акатова çурăмĕнчен штыкпа чикме чупсах çитнĕ нимĕçе хăйне чиксе пăрахма ĕлкĕрнĕ. Çакăн хыççăн вара вĕсем хушшинче нихçан пĕтмелле мар туслăх тĕвĕленнĕ, вĕсем пĕр-пĕринчен ниçта та уйрăлман, пĕри ăçта кайнă, тепри те çавăнтах пынă. Аслă командирсем те вĕсене уйăрма тăрăшман, мĕншĕн тесен вĕсем пĕрле пулни ĕçе усă кӳнĕ çеç.

— Ма чарăнтăн?— ыйтрĕ Быстров.

— Эсир хашкама ернĕ пуль, терĕм...— кулса илчĕ Акатов.

— Ну-у, калаçатăн кирлĕ мара!

— Апла пулсан, кайăпăр.

Қаллех малалла шума тытăнчĕç. Текех Акатов ял умĕнчи сăрт патне çитиччен те чарăнмарĕ. Кунта вара вĕсем кăшт кăна канса выртрĕç. Акатов, хăйсен задачине тата тепĕр хут астутарса, камăн ăçталла кайса мĕн тумаллине кăтартса пачĕ те кайран пурне те çав лупашкана пухăнма хушрĕ.

Боецсем икшерĕн ик еннелле шуса кайса куçран çухалсан, Акатовпа Быстров та сăрталла хăпарма тытăнчĕç. Ерипен, чарăна-чарăна итлесе, асăрханса хăпарчĕç вĕсем. Халлĕхе ниçтан та пĕр сас та илтĕнмерĕ. Сайра хутра çеç тăшман енче пĕр-пĕр пулемет кĕскен кăна тăкăртатса илет те каллех шăпланать.

Анчах ку шăплăх ултавлине туссем питĕ лайăх пĕлнĕ: хăйсенчен 100—150 метртах тискер тăшман ларнăçке, вăл кашни самантрах çак лăпкă тавралăха вилĕм сапма тытăнма пултарнă...

Йĕплĕ пралук патне çитсен, вĕсем шалалла кĕмелли

май шырама пикенчӗҫ. Вӑрахчен упаленсе пычӗҫ пралук ҫумӗпе. Пӗр лупашкаллӑрах вырӑнта вара самаях пысӑк шӑтӑк тупӑнчӗ те, туссем ялалла кӗрсе кайрӗҫ.

...Питӗ хӑюллӑ «экскурси» пулчӗ ку. Тӑшман йӑва ҫавӑрса ларнӑ ял тӑрӑх разведчиксем икӗ сехет ытла сӑнаса ҫӳрерӗҫ. Пӗр ҫуртран тепӗр ҫурт патне, пӗр йывӑҫран тепӗр йывӑҫ кутне куҫса пырса, «хыпашламан» пӗр кӗтес те хӑвармарӗҫ. Ӑҫта мӗн пуррине, ӑҫта мӗн вырнаҫтарнине самаях пӗлекен пулса ҫитрӗҫ. Тӑшман кунӗра чӑнах та питӗ ҫирӗппӗн кӗрсе ларнӑ иккен, темӗн тӗрлӗ укрепленисем туса, хӑй ҫӗр ӑшне чакаланса пытаннӑ, унтан ӑна хӑватлӑ вут-ҫулӑмпа ҫеҫ ҫунтарса кӑлармa май пулнӑ. Хӑш тӗлне ытларах ҫунтармалли халь паллӑ ӗнтӗ!

Акатовпа Быстров ялӑн тепӗр хӗрринелле шуса кайрӗҫ.

— Вӗсем пире ку енчен кӗтмеҫҫӗ, кунта хурал сахалтарах пулма кирлӗ,— тесе шут турӗҫ вӗсем.

Анчах кунта та пралук карнӑ-мӗн.

— «Круговая оборона» тунӑ, халерсем,— терӗ Акатов.— Хытӑ хӑраҫҫӗ иккен!..

— Чӗрисем вырӑнта мар ӗнтӗ, паллах...— ун шухӑшне ҫирӗплетрӗ Быстров.

Сасартӑк туссем мал енчен хӑйсем патнелле икӗ ҫын мӗлки килнине курах кайрӗҫ. Ҫав самантрах вӗсем пӗр сарай ҫумне, хӳтте йӑпшӑнчӗҫ. Лешсем Акатовпа Быстров ҫинеллех пыраҫҫӗ. Кӑшт тӑхтасан, лайӑхах асӑрхама май пулчӗ: иккӗшин те кӑкрисем умӗнче автоматсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Паллах, кусем тӑшман салтакӗсем...

— Мӗн тӑвӑпӑр?— тусӗнчен шӑппӑн ыйтрӗ Быстров.

— Капут тӑвӑпӑр, мӗн тата,— терӗ Акатов, ҫӑматӑ кунчи ӑшне чикнӗ штыка туртса кӑларса.— Сан кинжал пур-и?

— Ҫук...

— Апла пулсан, автоматран магазинне уйӑр та пӑшал кӗпҫипе ҫапма хатӗрлен. Хамӑр тӗле ҫитсен, эпӗ малти ҫине сиксе ларатӑп, эсӗ — кайрине тирпейле... Асту, ӗҫе питӗ хӑвӑрт тӑвас пулать, шав-мӗн ан пултӑр,— вӗрентрӗ Акатов.

— Пӗлетӗп...

Урӑх вӗсем пӗр сӑмах та чӗнмерӗҫ, кашниех хӑйне хӑй ҫак темиҫе самантран пулмалли тытӑҫӑва хатӗрлерӗ. Кӗҫӗр вӗсем гитлеровецсене курчӗҫ, анчах вӗсене

пурне те тивме май килмен: ыттисем сиссен вара пĕтĕм разведка харама кайма пултарнă. Халь ĕнтĕ, никам курман çĕрте, çак икĕ «фрица» ниепле те тĕрĕс-тĕкĕллĕн ирттерсе ярас килмен. Ытла та аллах пырса кĕнĕ-çке вĕсем!

Гитлеровецсем вĕсен тĕлне çитрĕç... Иккĕшĕ те, шăннипе, кукăрăлсах ларнă, аллисене хире-хирĕç çаннисем ăшне чикнĕ, йывăç тĕплĕ кĕççе атăсемпе шаклаттарса пыраççĕ...

Акатов чавсипе Быстрова кăшт кăна тĕртрĕ те малти салтакĕ çине арăслан пек сиксе ăна çĕре персе антарчĕ. Унпа пĕрлех Быстров та кайрине пусса антарса çăварне хупларĕ. Ĕç питĕ хăвăрт, темиçе самант хушшинчех пулса иртрĕ: нимĕçсем пĕр сас та кăлараймарĕç. Туссем, часрах вĕсен кĕсйисенчи хутсене кăларса илсе, автомачĕсене çакрĕç те хирелле шăвăнчĕç.

— Трофей те пулчĕ,— терĕ Акатов, йĕплĕ пралук хыçне тухсан. — Атту эп кĕçĕр пушă алăпах таврăнмалла пулать пуль тенĕччĕ.

Туссем хир тăрăх хăш чух упаленсе пычĕç, тепĕр чух пĕшкĕнсе чупрĕç. Тепĕр икçĕр метр кайсан сылтăмалла пăрăнмалла та — çырма пулать, унта вĕсене ытти юлташĕсем пaçăрах кĕтеççĕ пуль ĕнтĕ. Епле пулнă-ши вĕсен ĕçĕ? Мĕн-мĕн курса тухнă-ши вĕсем?

— Чим!— терĕ сасартăк Акатов, кукленсе ларса.— Куратăн-и? Пăх-ха...

— Мĕн?

— Авă, малта...

Быстров тинкеререх пăхрĕ. Ялтан çырма еннелле умлăн-хыçлăн пĕр 10—12 çын утать иккен.

— Е разведкăна, е боевăй охраненине каяççĕ,— пăшăлтатса илчĕ Акатов. — Мĕн те пулин тăвас пулать, тусăм... Мĕнле шутлатăн? Курса тăнă çĕртех ашкăнма памастпăр пуль! Тăн кĕртер пăртак.

— Мĕн тăвас шуту пур?

— Атя, вĕсен çулне пӳлетпĕр! Засада тăватпăр та, автоматсенчен... Питĕ чаплă номер пулать!

Ку шухăшпа Быстров пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ. Вĕсем часрах юр ăшĕнчен сиксе тăчĕç те ял пуçĕнчен тӳрĕрен-тӳрĕ çырма хĕрринелле чупрĕç. Самаях мала кайсан, пер лутрарах йывăç хыçне чакаланса кĕрсе выртрĕç.

— Ман командăсăр нимĕн те ан ту,— терĕ Акатов.

Вĕсен нумай кĕтмелле пулмарĕ. Туссем майлăрах

вырнаçса выртсан, пĕр вунă минутранах гитлеровецсем вĕсем патнелле кĕпсĕртетсе çитрĕç. Акатов пĕрерĕн-пĕрерĕн шутласа выртрĕ вĕсене: 12 çын. Пурте автоматсемпе...

— Пуçлар!— терĕ те пĕр хушă сывламан пек выртнă Акатов, спусковой крючок çине пусрĕ. Быстров та умлăн-хыçлăн темиçе черет кăларса ячĕ. Вара çавăнтах пилĕк-ултă фашист кĕлетки юр çине тĕшĕрĕлсе анчĕç, вĕсем кăшкăрни, ахлатни илтĕнчĕ. Пирĕн туссем ăнран тухса кайнă тăшмансене таттисĕр çунтарчĕç, хăйсене çакăн пек тапăнасса ниепле те кĕтменскерсем, вĕсем ним тума пĕлмерĕç: ăçталла тармалла, епле хăтăлмалла?

Çапах та, кăшт тăрсан, гитлеровецсем пирĕн разведчиксене асăрхарĕç, вĕсенчен чĕррĕн юлнисем унтан та кунтан пеме тытăнчĕç. Сывлăш автоматсем шатăртатнипе тулса ларчĕ. Çав вăхăтрах ял енчен темиçе мина çинçен уласа килни илтĕнчĕ, вĕсем çырма хĕрринчен инçетре те мар ӳксе шартлатрĕç. Ял енче пĕр харăсах темиçе пулемет ĕçлеме тытăнчĕ...

Фашистсен станĕнче паника пуçланчĕ...

Разведчиксем, текех кунта тытăнса тăма юраманнине пит лайăх ăнланса, хамăрăн еннеллеваскарĕç. Йăпăртлăх чарăнса автомачĕсенчен кĕскен-кĕскен шатăртаттарса илеççĕ те тăрса чупаççĕ, переççĕ те чупаççĕ.

Сасартăк вĕсенчен инçетрех те мар мина кĕрĕслетсе çурăлчĕ. Быстров ӳкрĕ, унăн хăлхисем ним илтми хупланса ларчĕç... Акатов ун патне чупса пычĕ.

— Лекрĕ-и?— хăранă сасăпа ыйтса кукленчĕ вăл ун патне.

Быстров çĕкленесшĕн пулчĕ, анчах çавăнтах йывăррăн йăнăшса ярса, каялла ӳкрĕ.

— Пĕтрĕм пулас...

— Ан лĕпĕртет! Тен, ытла хытах мар?— хыпкаланса илчĕ Акатов. — Каяс пулать вĕт, вĕсем хыççăнах хăвалаççĕ ĕнтĕ...

— Пултарай...мастăп... — татах йынăшса илчĕ Быстров. — Урасем... сылтăм... алă... Эс пĕчченех кай, пĕлтер...

— Ну, ку сăмаха пăрах эсĕ!— çиленчĕ Акатов.— Çăлăнсан — иксĕмĕр те çăлăнатпăр, пĕтмелле пулсан та — пĕрле!

Вăл хăвăрт кăна йĕри-тавралла пăхса илчĕ. Çав самантрах, пĕрин хыççăн тепри, пĕлĕтелле икĕ ракета чашкăрса хăпарса кайрĕç. Уйра кăнтăрлахи пекех çап-çутă

пулса тăчĕ. Кунпа пĕрлех тăшманăн пулемечĕсем тата хытăрах ĕçлеме тытăнчĕç. Çутăлакан пульăсем разведчиксен çуммипех шăхăрса иртсе юр ăшне тăрăнаççĕ.

Акатов лап выртрĕ.

— Сăпса йăви хускалчĕ,— терĕ вăл,— часрах, хăвăртрах шăвас пулать... Кайрăмăр, Гриша! Çырмана анса сурансене çыхăпăр та...

Анчах Быстров ăна хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ, каллех йынăшса илчĕ çеç. Вара Акатов ăна ерипен çĕклесе çурăмĕ çине хучĕ те, юр ăшне пĕçĕ кăкĕ таранах путса, темиçе утăм малалла ярса пусрĕ. Çав вăхăтра пĕлĕтелле татах ракетăсем пĕрхĕнсе хăпарчĕç, пулеметсем малтанхинчен те вăйлăрах пеме тапратрĕç.

— Тытасшăн, çĕленсем... — вăрçса илчĕ Акатов.

Вăл часрах маскхалат айĕнчи шинельне хывса юр çине сарчĕ, тусне ун çине вырттарчĕ. Унтан пĕр автоматне хăй мăйĕнчен çакрĕ, виççĕшне — тусĕ çумне вырнаçтарчĕ.

— Ну, чипер вырт, Гриша, тӳс епле те пулин!

Çак сăмахсемпе шинелĕн пĕр аркинчен тытса, вăл Быстрова çырманалла туртса анса кайрĕ. Çырма тĕпне çитсен, çав тери васкаса, суранĕсене унăн-кунăн çыхкаларĕ: ӳчĕпе тумтирĕ те юнланса пĕтнипе тĕттĕм çĕрте суранĕсене лайăххăн тупса палăртма пулмарĕ çав. Çакна вара лайăх ăнланчĕ: унăн тусĕ питĕ йывăр суранланнă, ăна часрах медпункта çитерес пулать...

Акатов ытти юлташĕсем çинчен аса илчĕ, анчах малтан калаçса татăлнă вырăна каясси çинчен халь шухăшламалли те пулмарĕ унăн. Быстрова сĕтĕрсе кайма йывăр, кунта пĕччен хăварма — каллех юрамасть.

— Тӳрех полка каяс,— шут турĕ те вăл, Быстрова шинель çине лайăххрах майласа вырттарчĕ.

— Гриша, ну, мĕнле эс?

— Пуç çаврăнать... — вăйсăррăн ответ пачĕ Быстров.

— Тен, эрех ĕçĕн пăртак? Флягăра пур манăн...

— Çук, кирлĕ мар... Каяр луччă... май пулсан...

Акатов хăйĕн тусĕ выртакан шинелĕн аркинчен çирĕппĕн тытса лартрĕ те сăрталла чакаланма тытăнчĕ. Сăрта хăпарса çитсен, сывлăш çавăрма, пĕр-ик минут пек канса выртрĕ, шинель çинчен шуса анма пуçланă юлташне тӳрлетсе вырттарчĕ, унтан тӳрех вăрман çине çул тытрĕ. Темиçе хутчен те чарăнса, тусне тĕрĕслесе пăхрĕ: лайăх выртать-и вăл, мĕнлерех сывлать... Малтанах

Быстров хăйĕнчен ыйтнисене хирĕç ответ паратчĕ, унтан пачах халтан кая пуçларĕ пулмалла — калаçми пулчĕ. Акатова ку питех те пăшăрхантарчĕ, темрен-тем пуласран хăраса, вăл мĕнпур вăйĕпе сĕтĕрчĕ ăна вăрман еннелле. Епле пулсан та, ăна часрах медпункта çитерсе, тухтăрсен аллине памалла. Хăй тарласа лачкам шыва ÿкрĕ, чĕри унăн мăлатук пек шаккаса тăрать, пуçĕ пĕçерекен пулса çитрĕ...

Акă ĕнтĕ вăрман та инçе мар. Пулсан пулĕ пĕр икçĕр метр, унтан ытла мар. Акатов юлашки вăй пухсах туртрĕ хăйĕн тусне.

— Çитетпĕр, часах çитетпĕр...

Анчах тăрук чарăнмалла пулчĕ. Хыçалтан ракета çутатрĕ те харăсах — инçетрен те мар пек — тăшман пулемечĕсем усал йытăсем пек вĕрме тытăнчĕç.

— Чăк-чак! чăк-чак! — пыра-пыра тăрăнчĕç пульăсем юр ăшне.

— Сăртран переççĕ кусем. Вилесем патĕнчен... — тавçăрса илчĕ Акатов. — Начар-ха ку, лекме те пултарать!

Обстрел айĕнчен тухас тесе, вăл сылтăмалла пăрăнса кайрĕ. Уссиех пулмарĕ — нимĕçсем халь минометсенчен пеме тытăнчĕç. Пирвайхи мина туссенчен пĕр улт-çичĕ метр малта çурăлчĕ, иккĕмĕшĕ — хыçалта... Вĕсем çине малтан та, кайран та юр сирпĕнчĕ.

— Вилкăна лекрĕмĕр! Неушлĕ пĕтетпĕр?.. — шăлне çыртса лартрĕ Акатов. Шинель аркинчен хытăрах туртрĕ те тата сылтăмарах кайма тытăнчĕ. Çав вăхăтра пуç тăрĕнче тепĕр мина шăхăрни илтĕнчĕ. Самантранах вăл, тăмана вĕçнĕ пек лăпăртатса, разведчиксемпе юнашар юр ăшне пашт! пырса ÿкрĕ...

Пулать те çав этемĕн телей! Мина çурăлмарĕ. Юр ăшне пырса ÿксенех, вăл хăйне тавра çил-тăман кăларса çаврăнчĕ, унтан вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланса пырса, юлашкинчен темиçе хут «Фăр-р... фăр... фр...» туса илчĕ те лăпланчĕ. Анчах халь Акатов ниçталла кайма пĕлмерĕ, тусĕ çумне йăпшăнса выртрĕ. Ывăнса çитнипе питĕ йывăррăн хашкаса сывларĕ вăл.

— Ваня... — хуллен кăна сас пачĕ çав хушăра Быстров. Минăсем шартлатнипе кăштах тăна кĕчĕ пулмалла. — Ваня...

— Мĕн?— пуçне кăштах çĕклерĕ Акатов.

— Кай эсĕ... Манпа ĕç тухас çук, хăвна çăл. Кунта

иксӗмӗр те пӗтсен, разведка сая каять... Ав, епле перет вӑл... Ҫай, ман ҫине ан пӑх...

— Ухмах эсӗ,— терӗ ӑна хирӗҫ Акатов,— юлташа пӑрахса хӑваратӑп пулать вара! Ҫитетпӗр ӗнтӗ...

— Асту, Ваня... Чӑнах кай...

— Вырт чипер!

Минӑсем сулахаярах ӳкме тытӑннине кура, Акатов каллех вырӑнтан хускалчӗ. Тек вӑл пӗрре те чарӑнмарӗ, вӑрмана пырса кӗрсен тин пӗр вӑтӑ юман хыҫӗнче кӑштах канса тӑчӗ те татах малалла туртса кайрӗ хӑйӗн тусне.

Пилӗк сехет тӗлӗнче вӑл ӑнран кайнӑ Быстрова хӗрлӗ хӗрес ҫакнӑ ҫӗрпӳрте илсе ҫитерчӗ.

— Тем пулсан та, вилме парас марччӗ!— терӗ вӑл ҫамрӑк хӗр-фельдшера, ывӑнса ҫитнипе аран сывласа.— Ҫаччи пит маттур, разведчик...

Фельдшерпа санитарсем Быстрова часрах укол турӗҫ, суранӗсене тасатрӗҫ, эмел сӗрсе ҫыхрӗҫ. Быстров пӗрре те хускалмарӗ, вилнӗ пекех выртрӗ.

— Начар...— терӗ фельдшер, унӑн алтунинчи юн тымарне чылайччен тытса тӑрса.— Пульс питӗ вӑйсӑр, юн нумай ҫухатнӑ...

— Мӗн тӑвас пулать-ха эппин?

— Часрах медсанбата илсе каяс пулать, эпир кунта текех ним тума та пултараймастпӑр...

— Илсе каяр эппин часрах!

— Халех санитарсене ярӑтӑп...

Акатов фельдшера куҫӗнчен пӑхрӗ.

— Вӗсемпе пӗрле эпӗ те каятӑп! Пӗлетӗр-и, вӑл пӗрре ман пурнӑҫа ҫӑлнӑ, халь манӑн ӑна ҫӑлас пулать!

— Вӑхӑту пулсан, кай, ара,— Акатов чӗререн ыйтнине ӑнланчӗ фельдшер.

Ним хускалман Быстрова ҫуна ҫине илсе тухса хучӗҫ. Унпа юнашар санитар вырнаҫрӗ. Акатов тилхепене тытса туртрӗ те, минутранах лав йывӑҫсем хушшинче курӑнми пулчӗ. Акатов паҫӑрхинчен те ытларах пӑлханчӗ: неушлӗ Гриша вилсех кайӗ? Ҫук, пулма пултараймасть! Епле вилтӗр вара Гриша Быстров? Разведкӑна кампа ҫӳрес пулать вара? Чи хӑюллӑ, паттӑр юлташ...

Пилӗк километр хушши тем пекех вӑрӑм туйӑнчӗ. Ҫуна ҫинче суранлӑ ҫын мар, урӑххи пулнӑ пулсан, ла-

шана çил-тăман çеç кăларттармалла, анчах та юрамасть, çулĕ шăтăк-путăклă, çуна ытла хытă сиктерет...

Майĕпе тул çутăлма пуçларĕ. Хĕвел тухасса систерсе, пĕлĕт хĕрри хĕрелсе килчĕ — çĕнĕ кун çуралчĕ. Шăп çав вăхăтра Акатов медсанбат вырнаçнă ял хĕрринчи чул çурт тĕлне çитсе чарăнчĕ. Быстрова хăй аллипех çĕклесе кĕчĕ те ăна кушетка çине хунă-хуманах:

— Ăçта сирĕн чăн асли?— тесе ыйтрĕ.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана?— ыйтрĕ питĕ ывăннă сăнлă ватăрах сестра.

— Кирлĕ! Хăшĕ пулать вăл ?

Юнашар алăкран пысăк куçлăхлă, шĕвĕртерех сухаллă, шур халат тăхăннă, самăр арçын тухрĕ.

— Мĕн пулнă, юлташ?

— Хисеплĕ тухтăр!— ун патнелле пычĕ Акатов, темшĕн çĕлĕкне хывса. — Эсир тем те тума пултаратăр...— Унăн сасси чĕтренсе кайрĕ. — Тархасшăн, çăлăр çак боеца... Эп сире уншăн виличчен те манмăп. Алтайран парне ярса парăп, манăн хам вĕлернĕ упа тирĕ пур...

— Мĕн тума кирлĕ ку калаçу?— тĕлĕнчĕ тухтăр. — Эпир аманнисене пурне те пĕр пекех пăхатпăр, пирĕншĕн пурте хаклă.

Акатов тата темскер каласшăнччĕ — сăмахĕ пырне ларчĕ, калаймарĕ. Быстрова халь çеç тухтăр тухнă пӳлĕме йатса кĕртрĕç. Акатов пĕчченех тăрса юлчĕ. Малалла мĕн тумаллине пачах та пĕлмерĕ вăл. Кабинет алăкĕ патне пычĕ те юпа пек хытса тăчĕ. Унăн тем пекех алăка уçса шалалла пăхса илес килчĕ, анчах больница тавраш̆енче ун пек тума юраманнине пĕлнипе хăюлăх çитмерĕ. Çапах та, кăшт тăрсан, вăл хăлхине алăк çумнех илсе пырса, итлеме тытăнчĕ. Малтан пӳлĕмри çынсем мăкăртатрĕç кăна, унтан вĕсен сăмахĕсем уççăнах илтĕнекен пулчĕç.

— Халех юн ярас пулать, çăлмалли май çав кăна,— терĕ арçын сасси (куçлăхлă тухтăр пулмалла).

— Юн çук, военврач юлташ,— ответ пачĕ ăна хĕрарăм сасси.

— Епле çук?

— Ĕнер çеç пĕтрĕ, Алексей Петрович, паян илсе килеççĕ...

— Ним чухлĕ те юлман-и?

— Пĕр кубик та çук...

— Апла пулсан, шанчăк сахал... Унăн юн нумай кайнă...

Акатов пĕтĕмпех ăнланчĕ: Гришăна çăлма халех юн кирлĕ, медсанбатра юн çук... Вăл пĕтĕм кĕлеткипе çӳçенсе илчĕ, çамки çине пăрça пек шултра тар тапса тухрĕ... Çав вăхăтрах унăн сылтăм алли алăк хăлăпĕнчен карт! туртрĕ.

— Тухтăр юлташ! Каçарăр...

— Мĕн кирлĕ?— тарăхса пăхрĕç ун çине пӳлĕмрисем.

— Сире юн кирлĕ... Каçарăр, эп итлесе тăтăм...

— Вара мĕн?

— Илĕр ман юна! Мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ илĕр, эп вăйлă, ман юн нумай... Ку боец — ман тус вăл, çапăçуран та эп çĕклесе тухрăм ăна!— пĕр чарăнмасăр, автоматран пенĕ пек, каласа тăкрĕ Акатов.

Пӳлĕмрисем кăна хирĕç тăруках нимĕн те каламарĕç, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç çеç. Акатов кĕтсе тăчĕ...

— Санăн юн хăш группа, пĕлетĕн-и? — тесе ыйтрĕ унтан пĕр хĕрарăмĕ.

— Пĕрремĕш! Акă, кунта та çырнă... — Акатов кăкăр çинчи кĕсйинчен красноармеец кĕнекине туртса кăларчĕ. — Манăн тусăн та çавах, пирĕн пĕр группа!

Пӳлĕмрисем халь пурте тухтăр çине пăхрĕç. Тухтăр пуçĕпе сулса илчĕ:

— Иккĕшинне те тĕрĕслесе пăхăр... Май килет пулсан, илсе ярас.

— Май килет, килет!— хĕпĕртесе кайрĕ Акатов. — Эп ăна тĕп-тĕрĕс пĕлетĕп! Улталамастăп ĕнтĕ...

— Юрĕ, юрĕ, ĕненетпĕр,— вăл хытă хыпкаланнинчен кулса илчĕ пĕр хĕрарăм. — Саланăр.

...Юн илсе ярасси ăнăçлă пулса иртрĕ. Трубка тăрăх юлашки тумламсем Быстровăн юн тымарне кĕрсе кайсан, тухтăр куçлăхне хывса шăлчĕ те, çаплах кĕтсе ларакан Акатов патне пырса, ăна хулпуççинчен лăпкаса илчĕ:

— Ан пăлхан, санăн тусу халь тата çĕр çул пурăнма пултарать. Çăлтăн эсĕ унăн пурнăçне!

— Спаççипа сире! Пин хут тав тăватăп!— тухтăр аллине тытса чăмăртарĕ Акатов. — Ĕмĕрне те манмăп!..

Унтан вăл урама тухрĕ те, хăйне кĕтсе тăракан лав çине ларса, разведкăра мĕн курни-пĕлнисем çинчен взвод командирне çитсе пĕлтерме васкарĕ.

Унăн чĕри çав тери савăнăçлăн тапса пычĕ.

1942, апрель.
Гжатск патĕнче.





## САЛТАК ЧУНӖ

... Сывалаканнисен палатинче эпир виҫҫӗн выртаттӑмӑр.

Ҫанталӑк кунтан-кун ӑшӑтса пычӗ, майӗпе пӗтӗм тавралӑх симӗсленчӗ, йывӑҫ ҫулҫисем те сарӑлчӗҫ, унтан пирӗн медсанбат вырнаҫнӑ темӗн пысӑкӑш илемлӗ сад, кӑпӑш юрпа витӗннӗ пек, чечексем айне пулчӗ.

Каҫсерен садра шӑпчӑк юрри янрарӗ, унта та кунта — кашни палата умӗнчех — е купӑс, е патефон сасси илтӗнчӗ, хушӑран юрлакансем те пулчӗҫ. Вӑхӑтран вӑхӑта малти линирен тупӑсем пени тата пуҫ тӑрринче фашистсен «юнкерсӗсем» хаяррӑн ӗрлесе иртни, вӗсем хыҫҫӑнах хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ истребительсем ыткӑнни илтӗнмен пулсан, пирӗн пурнӑҫ мирлӗ вӑхӑтри курорт пекех туйӑнмаллаччӗ. Анчах та фронт пирӗнтен улт-ҫич ҫухрӑмра кӑначчӗ, кашни кун тенӗ пекех вӑйлӑ артиллери налечӗсем туни илтӗнетчӗ, аманнисене те илсе килкелетчӗҫ, ҫавӑнпа та хамӑр вӑр-

çăра пулнине манса кайма çукчĕ. Тем çинчен калаçсан та, сăмах-юмах юлашкинчен пурпĕрех çапăçусем, вăрçăра пулнă тĕлĕнмелле эпизодсем çине пырса тухатчĕ.

Пĕр каçхине, тухтăрпа сестрасем обход туса тухса кайсан, манпа хирĕç выртакан çамрăк кăна лейтенант палата чӳречине уçса ячĕ те, çывăхрах усăнса тăракан шурă чечексем çине пăхса, чылай вăхăт шухăша кайса ларчĕ. Унтан стена çинчи пăтаран гитара илсе унăн хĕлĕхĕсене йăвашшăн янратрĕ те ерипен юрлама пуçларĕ. Вăл ун чухне пур фронтовиксем те çав тери юратакан «Землянка» текен юрра юрларĕ... Малтан хуллен çеç, çăварне кăшт кăна уçса, сăмахĕсене шăл витĕр каласа юрларĕ, унтан çирĕпленсех, вăйлансах пычĕ унăн юрри. Юрланăçемĕн хăйĕн сăнĕ те улшăнса пычĕ, куçĕ те темле урăхларах çутăлчĕ...

Ку лейтенант пĕтĕмпе те вунтăххăра çеç кайнăччĕ-ха, çапах та вăрçăри хурапа шурра сахал мар тутанса пăхнăччĕ. Вăтам шкул пĕтерсен, командир пуласшăн çуннипе, вăл тӳрех çар шкулне вĕренме кĕнĕ, анчах икĕ уйăхранах вăрçă пуçланнă та — хăй ирĕкĕпе фронта кайнă. Кунта вара нумай тӳсме тивнĕ ăна, тем тĕрлĕ çапăçусенче те пулнă вăл, тыткăна лексе те тарса тухнă, виçĕ хут аманса сывалнă, каллех строя таврăннă, халĕ ак тăваттăмĕш хут суранланнă хыççăн выртатчĕ. Унăн çамрăк кăкăрне орденпа медаль капăрлатса тăратчĕç.

Тăванĕсем пулман унăн, хăй ача çуртĕнче ӳснĕ; çырусем пит сайра, ытти фронтсенчи юлташĕсенчен çеç илкеленĕ. Çав вăхăтрах унăн чĕринче сӳнми юрату çуннă...

Вунтăхăр çул! Эпир кашниех астăватпăр вăл вăхăта. Пĕр-пĕр илемлĕрех хĕр çĕр çинчи пĕтĕм хитрелĕхе пухса йышăннă пек курăнать, тĕнчери пĕр çын та сан пек юратма пултарас çук пек туйăнать. Çак лейтенант та, çар шкулĕнче чух хулана тухса çӳрекелесе, хаçат киоскĕнче сутă тăвакан пĕр Наташăпа паллашнă та ăс-тăнне çухатмаллах юратса пăрахнă.

Миçе çĕр хут каларĕ-ши вăл пире ун çинчен! Хамăр унăн савнă хĕрне ĕмĕрне те курман пулсан та, ăна халь эпир пин çын хушшинче те палласа илме пултараттăмăр пулĕ. Пĕтĕмпех пĕлсе çитрĕмĕр эпир: Наташăн çӳçĕ сăмала пек хура, куçĕ — пиçнĕ çĕмĕрт пек, сулахай питçăмарти çинче çаврака турпалли пур, шăлĕсем — ахах евĕрлĕ, калаçнă чух вăл хĕр яланах хĕрелсе каять... Вă-

там пӳллӗ, хулпуççийӗ тӑваткӑлрах, утти вӗтӗ, пуринчен ытла ӑна чечеклӗ сенкер платье килӗшет...

Наташа пурӑнакан хула халӗ гитлеровецсен аллинче пулнӑ. Те тарса хӑтӑлнӑ Наташа, те унтах юлнӑ — лейтенант ӑна пӗлмен. Тен, вӑл тахçанах асапланса вилнӗ пуль, тен, партизансем патне кайнӑ — нимӗн те паллӑ пулман. Çапах та лейтенант ӑна малтанхи пекех юратнӑ, хӗрӗн сӑнӗ унӑн куçӗ умӗнчен çухалман, ячӗ çӑвартан кайман.

— Пӗлетӗр-и?— терӗ вӑл пире пӗринче. — Эпӗ кашни çапӑçу умӗнех Наташӑн сӑнӳкерчӗкне кӑларса пӑхаттӑм. Сире ку кулӑшла туйӑнать-и тен... Анчах эпӗ чӑнах çавӑн пек тӑватӑп. Наташа çине лайӑх кӑна пӑхса илетӗп те, кайран вара вӑл яланах манпа юнашар пынӑн туйӑнать, çавна пула чӗрере темле чарусӑр вӑй хутшӑнать. Пӗрре, Ржев тӑрӑхӗнче, эпӗ хамӑн взводпа тӑшмана флангран пырса çапас тесе вӑрмана кӗрсе кайрӑм... Нимӗçсен унта засада пулнӑ-мӗн. Кӑпӑрах çавӑрса илчӗç пире! Ну, эпӗ часрах круговая оборона турӑм та юлашки патрон юлмиччен çапӑçас, терӗм. Пурпӗрех вилӗм... Ачисем манӑн питӗ маттурччӗ: хӑшӗсем Çӗпӗртен, хӑшӗсем Атӑл тӑрӑхӗнчен... Арӑслансем пекех çапӑçрӗç ӗнтӗ, каламалли те çук. Фрицсене курӑк çулнӑ пекех çулаççӗ. Анчах лешсем те хытӑ тарӑхрӗç пулмалла — пӗрисем вырӑнне теприсем тухаççӗ, çӗр айӗнчен шӑтса тухнӑ пекех. Пӗр сехет пычӗ çапӑçу, иккӗмӗш сехет çине кайрӗ... Манӑн взводран пӗтӗмпе те çичӗ çын çеç юлчӗ, ыттисем е вилнӗ, е йывӑр аманнӑ. Патронсем те пӗте пуçларӗç. Тӑшмансен пуçӗсем хамӑртан аллӑ-утмӑл метртра курӑнаççӗ. «Русс, сдавайсь!»— тесе кӑшкӑрма тытӑнчӗç, сӗмсӗрленсех çитрӗç. Пӗтмелли курӑнсах тӑчӗ... Çав вӑхӑтра сасартӑк Наташа çинчен аса илтӗм. Неушлӗ ӑна курмасӑрах вилес пулать? Йӑпӑрт кӑна гимнастерка кӗсйинчен унӑн сӑнӳкерчӗкне кӑларса пӑхрӑм. Наташа куçӗ ман çине кӳренӳллӗн пӑхнӑн туйӑнчӗ... «Ваня, парӑнатӑн-и вара?»—терӗ пек вӑл мана. Чӗрем тӑрук пӗçерсе кайрӗ... «Взво-од, за мной, в атаку!»— тесе кӑшкӑрса ятӑм та вара эпӗ, юлашки гранатӑсене унталла та кунталла — ӑçта тӑшман курӑнать — çавӑнталла вӑркӑнтарма тытӑнтӑм... Сиксе тӑчӗ манӑн «взвод» — хампа пӗрле ултӑ çын! Урра кӑшкӑрсах сиксе тӑчӗ-ха! Граната хыççӑн граната çурӑлать, автомат кӗпçисем тытмалла мар хӗрсе кайнӑ... Вара, мӗн тетӗр?

Тухрăмăр вĕт тимĕр ункăран! Нимĕçсем тарса пĕтрĕç... Аманнисене те хăтартăмăр... Тупата, çав Наташа çине пăхниех пулăшрĕ çавăн чух!

Ку сăмахсене çамрăк лейтенант пĕтĕм чĕринченех, ĕнентерсех каларĕ, çавăнпа та, унăн калавĕнче ачалла айванлăх пулнă пулин те, эпир ăна чăнласах йышăннă пек турăмăр. Кăшт кăна ĕненменниех ăна хытă кӳрентернĕ пулĕччĕ. Вунтăхăр çул! Чĕре çавăн пек çав ун чух...

Халĕ те, аллине гитара тытса, чӳрече умĕнчи чечексем çине пăхса юрласа ларнă чух та, лейтенант çав Наташа çинченех шухăшланă ĕнтĕ. Эпĕ ăна унăн куçĕ ялан-хи пек мар, темле урăхла çутăлма тытăннинченех асăрхарăм. Паллах, ун умĕнче Наташа сăнĕ тăнă. Тен, ăна çав самнатра хăйĕн юррине Наташа çак чӳрече патĕнче, чечексем хушшинче тăрса итленĕ пек туйăннă пуль... Майĕпе юрлакаласа ларсан, вăл сасартăк вăйлă аккорд турĕ те хыттăнах юрласа ячĕ:

— До тебя далеко, далеко,
Между нами снега и снега,
До тебя мне дойти нелегко,
А до сметри четыре шага...

Унтан тата çĕнĕ аккорд илсе, юррăн тепĕр çаврăмне ачашшăн, пысăк туйăмпа юрласа вĕçлерĕ:

— Пой, гармоника, вьюге на зло,
Заплутавшее счастье зови,
Мне в холодной землянке тепло
От моей негасимой любви...

Гитара хĕлĕхĕсем янрама чарăнсан, лейтенант кăкăр туллин сывласа илчĕ те каллех шухăша кайнă пек пулчĕ, пĕр хушă ним чĕнмесĕр, чӳрече витĕр садалла пăхса ларчĕ.

— Аван юрă,— терĕ вăл унтан,— чĕренех пырса тивет...

— Куççуль кăларма та пултарать çав,— терĕм эпĕ те.

— Ну, куççуль çинченех калаçмăпăр,— килĕшмерĕ вăл манпа, пирус чĕркеме тытăнса,— салтакăн куççуль пулма пултараймасть... Макăракан салтак — салтак-и вăл?

— Ай-ай, ытла та тӳрĕ кастаратăн-çке! — сасартăк калаçăва хутшăнчĕ çав вăхăтра виççĕмĕш койка çинче

выртакан кăвак çӳçлĕ майор. — Салтакăн чĕри çук, тесшĕн мар-и тата эс? Ай чунсăр пĕрене тетĕн-и ăна?

Майора эпир çывăрать пуль тесе шутланăччĕ, анчах вăл çывăрман иккен, чип-чиперех лейтенантăн юррине итлесе выртнă. Эпир калаçма пуçласан, тăрсах ларнă-мĕн.

— Кала-ха,— пуçĕпе лейтенант еннелле сулчĕ вăл,— салтак вара, сан шутпа, ытти çынсем пекех чĕрĕ чун мар-и-мĕн? Калăпăр, санăн чĕрӳ пулман пулсан, хăвăн Наташуна çакăн пек юратма пултараттăнччĕ-и эс?

— Вăл апла та-ха... — тытăнарах тăчĕ лейтенант.

— Чĕре пурах эппин салтакăн, туйăмĕсем те пур унăн?

— Паллах, пур.

— А мĕн кирлĕ мара калаçатăн апла пулсан?

— Килĕшмест салтака...

— Мĕн?

— Куççуль юхтарни...

— Салтака сĕлеке юхтарни килĕшмест, куççуль кăларни мар!— Майор малти сĕтел патне пырса пирус тивертрĕ. — Ниепле те йышăнма пултараймастăп сан теорине...

— Хăвăрăнне каласа парăр эппин.

— Калас тетĕп çав. А эс итле. Темле пулсан та, эп санран ытларах пурăнса курнă çын...

— Хирĕçместĕп.

— Эпĕ ĕнтĕ ватă салтак, çирĕм ултă çул пĕрмай çарта служить тăватăп, тăваттăмĕш вăрçа пурăнса иртттеретĕп. Ман чухлĕ юн курсан, тепри тахçанах ухмаха ернĕ пулĕччĕ, анчах эпĕ хăнк та тумастăп-ха. Чăнах та, нервăсем выляççĕ ĕнтĕ, анчах вăл ватлăх çывхарнă май та пулма пултарать. Пĕр сăмахпа калас-тăк, ман чĕре тахçанах чул пек хытса ларнă тес пулать. Çапах та эпĕ те макăрма пултаратăп иккен... Ĕненместĕн-и?

Майор пĕрре ман çине, тепре кăштах тĕлĕннĕ çамрăк лейтенант çине пăхрĕ.

— Хирĕçместĕп, вăрçă этемĕн чĕрине чăнахах та хытарать, çирĕплетет, унăн хĕрхенӳ туйăмĕ çухалса пырать. Ун вырăнне тăшмана курайманни ӳссе, тулса хăпарать, час-часах вăл кураймanлăхран ним умĕнче те чарăнса тăман хаярлăх çуралса тухать... Ку пĕтĕмпех тĕрĕс. Вăл çапла пулмалла та ĕнтĕ. Анчах çапах та —

ёненӗр мана!— чи ватӑ фронтовикӗн те тепӗр чух чунӗ кӳтсе ҫитет, унӑн куҫӗ ирӗксӗрех шывланать...

Кӑвак ҫӳҫлӗ командир вӑрӑммӑн сывласа илчӗ. Эпир ытти чух та унӑн калавӗсене питӗ юратса итлеттӗмӗр те, халь, вӑл хӑйӗн пурнӑҫӗнче уйрӑмах паллӑ пулса юлнӑ саманта аса илнине сиссе, пушшех ним шарламасӑр итлерӗмӗр.

— Иртнӗ ҫулхи август уйӑхӗнче ҫакӑн пек истори пулчӗ,— терӗ майор.— Тӗлӗнмелле истори... Нихҫан та манас ҫук эпӗ ӑна! Сычевка районӗнче тӑшман оборонине ҫӗмӗрсе кӗрсе кайсан, виҫҫӗмӗш кунӗнче эпир пӗр пысӑк ял патне ҫитсе тухрӑмӑр. Нимӗҫсен кунта вӑйлӑ опорнӑй пункт пулнӑ. Ӑна вӗсем малтанах хатӗрлесе хунӑ — чакмалла пулсан часрах ҫӗнӗ оборона йышӑнса ларма. Шуйттан чухлӗ дзотсем, курӑнми огневой точкасем лартса тултарнӑ, темиҫе рет йӗплӗ пралук карнӑ... Ну, ун пеккисене ӗнтӗ наступленисенче пулнӑ кашни ҫынах курнӑ, хӑвӑрах пӗлетӗр. Кӑпӑр-капӑрах ҫӗмӗрсе кӗрсе кайма ҫук, ҫамкана ыраттарма пулать! Ҫакӑнта самаях тапаҫланмалла пуласси ял патне ҫывхарма пуҫласанах сисӗнчӗ. Сӑмах артиллерипе миномётсене патӑмӑр... Хӗрӗх пилӗк минут пӗр чарӑнмасӑр тӳпкерӗҫ вӗсем, ялта снаряд е мина ӳксе ҫурӑлман вырӑн та юлмарӗ пулӗ. Нумай ҫуртсем ишӗлсе анчӗҫ, теприсем ҫунма тытӑнчӗҫ...

— Малалла!— команда патӑм вара эпӗ пӗтӗм батальона.

Виҫӗ ротӑпа виҫӗ енчен пӗр тӑрук пырса кӗме план тунӑччӗ. Ротӑсем харӑсах ҫӗкленчӗҫ, пӗр 200 метр пек хӑвӑртах малалла шурӗҫ, анчах урӑх каяймарӗҫ — тӑшман пулеметсемпе автоматсенчен каллех тӳсмелле мар ҫунтарма тапратрӗ. Пуҫа ҫӗклеме те ҫук. Пӑр ҫунӑ пекех ҫӑваҫҫӗ пульӑсем... Анчах ялӗ инҫе те мар ӗнтӗ, пулсан пулӗ пӗр 250—300 метр. Тепре тӑрса чупмалла кӑна, анчах ҫынсене нумай ҫухатма пулать. Ҫавӑнпа та ирӗксӗрех ҫӗр ҫумнерех лӑпчӑнса выртма тивет.

Темиҫе минутран, эпир хускалманнине кура пулас, нимӗҫсем кӑшт сайрарах пеме пуҫларӗҫ. Эпӗ пуҫа умри тӗмескерен ҫӳлерех ҫӗклерӗм те бинокльпе пӑхса сӑнама тытӑнтӑм. Манӑн тӑшманӑн чи ҫывӑхри огневой точкисене палӑртас килетчӗ. Сулахайран сылтӑмалла йӗркипе пӑхса пытӑм... Ҫав вӑхӑтра, сасартӑк, пӗр ишӗлнӗ арпалӑх хыҫӗнчен хӗрарӑм чупса тухрӗ. Чип-чипер вырӑс

хĕрарăмĕ — шурă тутăрпа, хура пиншакпа, хăрах аллипе чĕчĕ ачине çĕкленĕ, теприне пĕр тăват-пилĕк çулхи ачине çавăтнă. Ним тытăнса тăмасăрах, унталла-кунталла пăхмасăрах, вăл пирĕн паталла чупрĕ... Чĕре яштах турĕ манăн... Бинокле çĕмĕрсе пăрахас пекех пăчăртаса лартрăм...

Хĕрарăм хире чупса тухсанах, нимĕçсем ăна хыçран пеме тапратрĕç. Пур енчен те переççĕ, çутăлакан пульăсем ун çуммипех ирте-ирте каяççĕ, анчах вăл çаплах чупать, çаплах чупать... Пур вăйне пухса, каялла çаврăнса пăхмасăр, пирĕн паталла чупать!

Майор хăйĕн калавне лăпкăнах пуçланăччĕ, анчах ку тĕле çитсен, палăрмаллах пăлханма пуçларĕ. Вăл пирус тĕпне умлăн-хыçлăн ĕме-ĕме илчĕ, унтан ăна чўрече витĕр тулалла ывăтрĕ те, ура çине тăрса, каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ.

— Эпĕ вут çинче выртнă пек выртрăм... Хĕрарăм хамăр паталла çывхарнă май ăна пит лайăх куракан пултăм эпĕ: унăн шурă тутри ĕнси çинелле анса ларнă, çўçĕ сапаланса çилпе вĕлкĕшме тытăнчĕ, питçăмартийĕ тăрăх куççулĕ юхать... Тахăш самантра бинокле куç патĕнчен илсе хамăн боецсем çине пăхрăм та, вĕсем пурте, нимĕçсен пульлисенчен асăрханмаллине манса кайсах, пуçĕсене çўлелле çĕкленине куртăм — пурте çав хĕрарăм çине куç илмесĕр пăхаççĕ иккен... Çитет-и вăл пирĕн пата, çитеймест-и? Ах, çиттĕрччĕ, ах, ан лектĕрччĕ ăна!— тенĕ ĕнтĕ кашниех...

— Нимĕçсем çаплах печĕç, пур енчен те печĕç ăна. Пулеметсенчен çеç мар, минометсенчен те кĕрслеттерме тытăнчĕç вĕт, ирсĕрсем! Акă, пĕр мини унран инçетрех те мар вăркăнса çурăлчĕ. Хĕрарăм ўкрĕ. Вилчĕ, пĕтрĕ ку, терĕм эпĕ... Çук, вилмен иккен-ха... Каллех тăчĕ, каллех чупа пуçларĕ. Анчах паçăрхи пек хăвăрт чупаймарĕ вăл, пĕр енчен тепĕр еннелле сулăнса кайрĕ, çавăн пирки сылтăм аллипе ачи те çĕр çийĕн сĕтĕрĕнсе пычĕ. Ачин пичĕ — чĕп-чĕр юн, вăл чĕрри-виллине те уйăрса илмелле мар... Хĕрарăм пирĕн пата çитесси пĕтĕмпе те пĕр çĕр метр çеç юлчĕ, анчах та вăл çак вилĕм хирĕ урлă чĕррĕнех каçса çитес шанчăк пит сахал пулчĕ çав, нимĕçсем хытăран хытă печĕç. Вĕсем ăна епле пулсан та вĕлермех тăрăшрĕç... Унтан мĕнле пулнине астумастăп, анчах та эпĕ çак самантра хамăн куççуль юхса аннине туйса илтĕм... Ăнлантăр-и çавна? Эпĕ, ватă салтак, хам пурнăç-

ра тем те пĕр курнă çын, куççулĕпех макăрса ятăм вĕт! Салтак чунĕ те чăтаймасть иккен тепĕр чух!

— Вперед, в атаку!— мĕн вăй çитнĕ таранах хыттăн кăшкăрса команда патăм та вара эпĕ, хамăн боецсем вырăнтан тăни-тăманни çине пăхмасăрах, малалла, çав ачаллă хĕрарăм патнелле ыткăнтăм... Эпĕ хăйĕн еннелле чупнине курсан, вăл та ман паталла чупрĕ. Темиçе самантран эпĕ ăна ачи-мĕнĕпех ыталаса илтĕм...

— Тăвансем, тăвансем... Юлташсем, çăлăр!— теме çеç пултарчĕ вăл, унтан, халтан кайса çитнипе, çавăнтах ӳкрĕ.

— Нумаййăн-и вĕсем?— кăшкăрса ыйтрăм эпĕ, хăвăртрах ун патне кукленсе .

— Икçĕр çын та пулĕ... Тупăсем, пулеметсем нумай... — Хĕрарăм ниепле те сывлăш çавăрса илеймерĕ.

— Халех вĕсем пĕри те пулмаççĕ!— каллех кăшкăртăм эпĕ ăна илттерме тăрăшса, мĕншĕн тесен пирĕнтен темиçе метрта пысăк мина ӳксе çурăлчĕ. Осколоксем хăлха çуммипех чашкăрса иртсе кайрĕç.— Эсĕ вырт çак воронкăра, кайран килĕпĕр сан патна!

Нимĕн те хăрушă пулмарĕ пирĕншĕн... Эпĕ хĕрарăмпа темиçе сăмах хушнă вăхăтра манăн боецсем ялăн анкартийĕсем патнех çитме ĕлкĕрнĕ. Чарусăр хаярлăхпа штурмласа кĕрсе кайрăмăр вара эпир çак яла. Боецсем пуринчен ытларах винтовкăсенчен, автоматсенчен персе мар, штыкпа, пăшал кĕпçипе, çумри кинжалсемпе ĕçлерĕç. Траншейăсемпе окопсенче нумай фашистсем аллисене çĕкленине куртăм эпĕ, анчах вĕсене пĕрине те каçару пулмарĕ. Ултă тупă, пулеметсем, минометсем — тĕп-тĕрĕссипе!— пирĕн алла лекрĕç, çав кунах тăшмана хирĕç пеме тытăнчĕç.

Майор калама чарăнчĕ. Пĕр вăхăт палатăра никам çук пекех пулчĕ. Эпир майорăн калавне итлесе тĕлĕннипе шарламарăмăр, вăл хăй, çавăн чухне ĕçсем мĕнле пулса иртнине аса илсе, тăруках лăпланаймарĕ пулас. Чылайран, вăл çĕнĕ пирус чĕркесе тивертсен тин, сăмах тепĕр хут пуçланчĕ.

— Çапла вăл салтакăн чунĕ,— терĕ майор.— Çиелтен пăхсан çеç хытса ларнă пек туйăнма пултарать... Шаларах кĕрсе пăхсан — урăхла иккен, пачах урăхла! Вăл çав тери юратма та пултарать, вĕçĕмсĕр савăнма та пĕлет, хурланни те пулать унăн. Ну... курайманлăх енчен илсен, салтак чунне никам чунĕ те çитмест çав...

Салтак чĕринче чăн-чăн курайманлăх вĕреме пуçласан, тытăнса кăна тăр вара!

Каллех пĕр хушă шарламасăр лартăмăр. Чĕрене кĕрсе ларнă тĕрĕс сăмаха хирĕç мĕн калăн?

— Леш хĕрарăма кайран куртăр-и?— ыйтрĕ унтан лейтенант. — Кам пулнă вăл?

— Эпир ăна ачи-пăчипех госпитале ăсатрăмăр,— терĕ майор. — Хăй вăл çав ялти учительница пулнă, упăшки Хĕрлĕ Çар командире пулнăшăн вĕлересрен хăраса, нумай вăхăт фашистсенчен подвалта пытанса пурăннă. Эпир çывхарса çитнине курсан вара, тарма шут тытнă... Тахçанччenex аса илсе пурăнтăмăр ăна. Эпир пĕрмай малалла кайса пытăмăр, нумай ялсемпе хуласене фашистсенчен тасатса ирĕке кăлартăмăр, анчах та çăлăнăç шыраса пирĕн пата вилĕм витĕр чупса пынă икĕ ачаллă хĕрарăм сăнĕ пĕрмаях куç умĕнче тăчĕ...

1943, июнь.
Курск облаçĕ.





## ЛАПКА ÇЫН

Паян-ыран наступлени пуçланассине дивизире пурте пĕлсе тăчĕç. Вăл саманта халь кашниех кĕтрĕ, кашниех хатĕрленчĕ. Икĕ уйăх ытла оборонăра пулни пурне те çав тери йăлăхтарса çитерчĕ, çынсен чĕрисенче часрах малалла, хĕвеланăçнелле, фашистсен тимĕрленĕ атти айĕнче тунсăхласа выртакан тăван çĕре хăвăртрах чуралăх намăсĕнчен хăтарас кăмăл çĕкленсе вĕрерĕ.

Тĕттĕмленес умĕн, кăштах саралма пуçланă хурăнлăх çине сывлăм ӳкнĕ чух, виççĕмĕш батальона полковникпа генерал — дивизи командирĕ пычĕç. Вĕсем батальон пулас çапăçăва епле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухрĕç.

— Аван,— терĕ юлашкинчен кăвак уссиллĕ, пĕвĕпе кăштах лутрарах, анчах патвар кĕлеткеллĕ генерал,— ку халăх çине шанма пулать. Кусем ним умĕнче те чарăнса тăрас çук, такама та, теме те çĕмĕрсе тăкма пултараççĕ. Анăçлăх сунатăп!

Вăл батальон командирĕн, çирĕм çулхи капитан Баталовăн, аллине тытса чăмăртарĕ.

— Ыран тĕл пулăпăр-ха! Ятлаçма тӳр килмĕ, тетĕп. Ку ĕнтĕ сирĕнтен хăвăртан килет... Эсир епле çапăçма пултарнинчен!

— Анланатăп,— терĕ комбат. — Ку таранччен питех ятламанччĕ те-ха пире, хальхинче мĕн пулĕ...

— Ну, ну, асту. Шанатăп.

Генералпа полковник машина çине ларса тепĕр батальон еннелле кайсан, çамрăк комбат пур боецсене те кантарма хушса хăйĕн çĕрпӳртне таврăнчĕ те амăшĕ патне кĕске те пулин çыру çырас тесе ларчĕ.

«Хаклă та юратнă аннеçĕм!— ачаш сăмахсемпе çырма пуçларĕ вăл. — Темиçе сехетрен эпĕ хамăн салтаксене тăшман позицийĕсене штрумлама илсе каятăп. Яланхи пекех, çак самантра манăн шухăшăмсем сан патна çаврăнса тухаççĕ. Пилле мана, аннеçĕм...»

Анчах малалла çырма май килмерĕ — кĕтмен-туман çĕртенех çĕрпӳрте пĕрмай батальон обозĕнче çӳренĕ рядовой Иван Куракин пырса кĕчĕ.

— Капитан юлташ! Чăрмантарнăшăн каçарăр...— терĕ вăл, алăк патĕнчех чарăнса тăрса.

— Мĕн пулчĕ?— тĕлĕнерех ыйтрĕ комбат.

— Ниmĕнех те пулман та-ха... Пĕр ыйту пур манăн...

— Кала эппин.

— Эпĕ хама ротăна куçарма ыйтасшăн.

— Епле вăл... ротăна?— тата ытларах тĕлĕннĕ пек пулчĕ командир.

— Çаплах. Хуть те хăш ротăна куçарăр.

— Мĕншĕн апла?

— Мĕншĕн тесен, çак кунсенче эпĕ обозра ларма пултараймастăп. Ахаль те госпиталь хыççăн çичĕ уйăх лашасемпе тăрмашса пурăнтăм ĕнтĕ, çитет. Малти линие каяс тетĕп халь.

— Пирĕн ротăсенче сансăр та çын çитет, Иван Васильевич...

— Çитет пулсан та, ытлашши пулмăп. Тархасшăн хирĕç ан пулăр, пĕтĕм чĕререн ыйтатăп!

Комбат, аллинчи кăранташа аяккалла хурса, хăй умĕнче пĕр ури çинчен тепĕр ури çине пускаласа тăракан салтака çав тери тинкерсе пăхрĕ. Мĕне пĕлтерет вăл çакăн пекех çине тăрса ыйтни?..

Иван Куракин батальонра чи хисеплĕ çынсенчен пĕри пулнă,ăна ĕнтĕ пурте хăнăхса çитнĕ, юратнă. Хĕрĕхрен чылай иртнĕ, вăрçăччен Дон тăрăхĕнчи пĕр пуян колхозра конюх пулса пурăннăскер, батальон хуçалăхĕнче вăл калама та çук тăрăшса ĕçленĕ. Хăйĕн ездовой службине пуринчен те авантарах туса пынисĕр пуçне,

вăл урапасем юсанă, хăмăт-ĕнерчĕксене тӳрлетнĕ, вĕренсем явнă, лашасене те хăех таканланă, камăн та пулин атă-пушмак çĕтĕлсен, ăна сапланă. Тем тума та пĕлнĕ вăл! Нихçан та кам та пулин — взвод командирĕ-и унта, старшина-и — хушасса кĕтмен, ĕçне хăех тупнă. Кăмăлĕ вара унăн тĕлĕнмелле лăпкă пулнă, нихçан никампа хирĕçмен, кутăнлашма вуçех те пĕлмен. Çавăнпа та пуринчен те хисеп пулнă ăна. Хăй пек рядовойсем çеç мар, аслăрах командирсем те ăна яланах е «атте» тесе, е ятпа — «Иван Васильч» тесе чĕннĕ. Иртнĕ хĕлти çапăçусенче аманнă хыççăн куçĕ ытла витĕрех курман та унăн, ăна стрелок туса малти линие ярасси çинчен никам та шутламан.

— Куракин пирĕн пĕтĕм хуçалăха тытса тăрать, никама та памастпăр вăл боеца,— тенĕ ун пирки сăмах тапрансан.

Çавăнпах ĕнтĕ батальон командирĕ халь те ăна ыранхи çапăçăва ярасшăн пулмарĕ.

— Епле тăрук кун пек шухăш тытрăн вара эс? — Куракинăн хĕсĕкрех те йăваш куçĕнчен пăхса ыйтрĕ вăл.

— Тытрăм çав. Пуринпе пĕрле пулас килет,— терĕ салтак, ним тытăнса тăмасăр.

— Ямастăп эп сана ротăна, эс хуçалăх взводĕнче те питĕ кирлĕ çын. Кама тăратас-ха манăн сан вырăнна? Маларах пулнă пулсан, татахчĕ... Атту халь темиçе сехетрен çапăçу пуçланать, пурте хăйсен вырăнĕсене йышăннă.

— Тархасласа ыйтатăп, капитан юлташ...

— Ан та ыйт. Татăклăнах калатăп сана.

— Пĕр çапăçăва ярăр хуть. Кайран каллех хам вырăна таврăнатăп! Чăнах!

Комбат пирус чĕртсе ячĕ те кăштах шухăша кайса ларчĕ. Унтан, çак чылай çула çитнĕ салтак пĕтĕм чĕререн ыйтнине, вăл хăйĕн кăмăлне тултаракан ответ илмесĕр тухса каяс çуккине курса, килĕшрĕ.

— Юрĕ эппин, Иван Васильевич. Пĕр çапăçăва кĕрсе тух. Анчах та асту, кайран, сывă пулсан, каллех снабжени взводне каятăн!

— Есть! Пысăк тав, капитан юлташ. Хăш ротăна кайма юрать?

— Иккĕмĕшне, Яблоков лейтенант патне.

— Есть!

Çакăнпа сăмах пĕтрĕ те, Иван Куракин чăн-чăн строевик пекех вăшт! çаврăнса пат, пат! утса тухса кайрĕ. Капитан, паçăр пăрахнă кăранташа каллех алла тытса, амăшĕ патне çырма пуçланă çырăва малалла çырма пикенчĕ.

«Пĕлсех тăратăп, пĕтĕм чĕрепе туятăп, çак ыранхи çапăçура тискер тăшман темле хирĕç тăрсан та, çĕнтерекенĕсем пурпĕрех эпир пулатпăр, мĕншĕн тесен...»

Шухăшсем çурхи шыв пек капланса килме пуçларĕç. Капитанăн çак минутсенче инçетри хулара пĕр пĕччен пурăнакан ватă амăшне пурин çинчен те пĕлтерес килчĕ: салтаксем çапăçу пуçланасса çав тери хĕрӳллĕ кăмăлпа кĕтнине те, лăпкă обозник Иван Куракин хăйне малти линие яма тархасланине те, генерал унăн батальонне мухтанине те, пĕтĕмпех, пĕтĕмпех... Анчах темшĕн алли çырмарĕ унăн. Чĕри хыттăн-хыттăн тапса тăчĕ. Кĕтмен çĕртенех чĕлхе вĕçне шкулта чухне вĕреннĕ Пушкин сăввин сыпăкĕ пырса тухрĕ:

— Страшись, о рать иноплеменных!  
России двинулись сыны;  
Восстал и стар и млад, летят на дерзновенных,  
Сердца их мщеньем зажжены.  
Вострепещи, тиран! Уж близок час паденья!  
Ты в каждом ратнике узришь богатыря...

Сасартăк телефон зуммерĕ вăрăммăн нăрлатса илчĕ. Комбата халех полк командирĕ патне пыма хушрĕç. Çырăва çырса пĕтересси пулмарĕ, амăшне каласа парас тенĕ туйăмсем капитанăн чĕринчех юлчĕç.

---

...Çапăçу ирхине тăватă сехетре тапранчĕ. Икĕ сехет хушши артиллери кĕмсĕртетнĕ хыççăн тăшманăн позицийĕсем çине пирĕн самолетсем пĕр ушкăн хыççăн тепри, умлăн-хыçлăн, вĕçĕ-хĕррисĕр вĕçсе пырса çĕмĕрме пуçларĕç. Таврара пĕтĕмпех чĕтресе, кисренсе тăчĕ, снаряд е бомба ӳксе çурăлман вырăн та юлмарĕ, «катюшăсем» çине-çине вут-хĕм сапса çунтарчĕç.

Гитлеровецсем нумай тӳссе лараймарĕç, малти траншейăсемпе окопсенчен каярахрисене тарма тытăнчĕç. Çапах та, кунта та чарăнса тăраймарĕç вĕсем—пирĕн пехота вĕсене хыçранах хăваласа пычĕ. Пирвайхи темиçе ял вара пирĕн алла çапăçусăр тенĕ пекех куçрĕç. Кăнтă-

ралла сулăнсан тин, самаях çӳллĕ сăрт çинче вырнаçнă пысăк сала патне çитсен, вăйлă çапăçу çыхланса кайрĕ...

Кунта фашистсен оборонин иккĕмĕш линийĕ пулнă. Ана вĕсем малтанах хатĕрлесе, темĕн тĕрлĕ укреплени-сем туса тултарнă-мĕн. Шуйттанла чеелĕхпе лартса тухнă огневой точкăсенчен пульăсем çумăр пек, уяр çанталăкра тăрук килсе çапакан пăр пек çурĕç. Пирĕн пехотăн ирĕксĕрех çĕр ăшне чакаланса кĕрсе выртма тӳр килчĕ.

Вара каллех пирĕн артиллери ĕçе тытăнчĕ. Нумай расчетсем тӳрĕ наводкăна тухрĕç. Татах, пĕр çур сехет хушши, пĕтĕм тавралăх чĕтрерĕ. Унтан вара тепĕр хут стрелоксем çĕкленчĕç. Хăшпĕрисем ĕнтĕ ялăн анат вĕ-çĕнчи анкартисем патнех çитрĕç, тăшман траншейисене гранатăсем вăркăнтарма пуçларĕç...

Анчах сылтăм фланграниепле те малалла кайма май килмерĕ. Пĕр пахчара виçĕ амбразурăллă пит çирĕп дзот пулнă. Мăшăрланнă виçĕ пулемет пур еннелле те вилĕм сапса тăнă, пуçа çĕклеме те паман. Пирĕн оруди-сем те печĕç ун çине, минометсем те пĕрмай тӳпкерĕç— дзот çав-çавах путланмарĕ.

— Тухатнă пуль ку шуйттан йăвине, тьфу!— тарăхса сурчĕ наблюдательнăй пунктра çамрăк комбат. Вăл ĕнтĕ тахçантанпах ку дзот çинчен куç илмесĕр бинокль витĕр сăнаса тăнă. Яла сылтăм енчен шăпах унăн ба-тальонĕ çĕмĕрсе кĕмелле пулнă, анчах çав путсĕр дзот пĕтĕм çула картласа лартнă, пĕр шит те малалла кайма паман. Ана путармасăр яла кĕресси çинчен шутламалли те пулман.

— Вăт, халера! Мĕнрен тунă вара ăна, мĕншĕн ар-канмасть вăл? Темиçе снаряд тӳп-тӳрех лекрĕ-çке!..

Комбат ывăнса çитнĕ куçне шăлкаласа илчĕ те кал-лех бинокль витĕр пăхса сăнама тытăнчĕ. Салтаксем малтанхи пекех çак дзотран пĕр 200—300 метрта çĕр çумне йăпшăнса выртаççĕ. Çутăлакан пульăсем вĕсен хушшипе çыххи-çыххипе вĕçсе иртеççĕ. Кашни минутра тенĕ пекех дзот çывăхĕнче пирĕн снарядсемпе минăсем çурăлса, çĕре чава-чава сирпĕтеççĕ.

— Штурмпа илесси ĕнтĕ куна... Халăх нумай пĕтме пултарать,— терĕ комбат хăйпе юнашар тăракан штаб начальникне.— Мĕнле шутлатăн? Намăс куратпăр вĕт капла, генералтан лекет вара пире!

— Тăхтар-ха пăртак, сапах та, тен, «вăрçă турри»

пулăшĕ,— терĕ ăна хирĕç лешĕ, комбат пекех куçне бинокльрен уйăрмасăр.

Вăхăт шурĕ. Лару-тăру улшăнмарĕ. Сулахайрисем ĕнтĕ, урам вĕçне пырса кĕрсе, пӳртсем хушшинче çапăçма тапратрĕç, сылтăм фланг çаплах ним чухлĕ те шăваймарĕ. Кĕçех комбата полк командирĕ телефонпа приказ пачĕ:

— Текех пĕр минут та тытăнса тăма юрамасть. Хуçа халех штурмлама хушать, епле пулсан та ял вĕçне тухса, тăшманăн чакса каймалли çулне татмалла! Ăнлантăн-и?

«Хуçа» тесе вăл дивизи командирĕ çинчен каланă.

— Ăнланатăп,— терĕ те ăна хирĕç комбат, трубкăна телефониста парса, тарăннăн сывласа ячĕ.— Вăт, инкек сиксе тухрĕ пирĕн тĕле, мать честная!

— Чим-ха, чим... — терĕ çав хушăра бинокль витĕр пăхса тăнă штаб начальникĕ. — Эпĕ питĕ интереслĕ япала кура пуçларăм...

— Мĕн? — комбат та бинокльне часрах куçĕ патне тытрĕ.

— Пирĕн пĕр салтак дзот патнелле шăвать...

— Пулма пултараймасть!

— Ман куç умĕнчех пĕр аллă метр шурĕ...

— Ăçтарах вăл?

— Ав, утă купи пек йывăç тĕминчен сулахаярах.

— Чăнах та!

— Татах шăвать... шăвать... чарăнчĕ... Куратăн-и?

— Куратăп. Кам-ши вăл?

— Калама хĕн, çурăмĕ çеç курăнать вĕт.

— Эх, çиттĕрччĕ! Çитме пултарсан, мĕн те пулин тăватех вăл, тупата!

— Каллех хускалчĕ, шăвать...

— Анчах пулемет ун çинелле перет-çке! Çук, пулаймасть пуль çитесси, халех вĕлереççĕ ăна... Эх!

— Çапах та, малаллах пырать-ха вăл, шăвать...

— Тупата, герой! Пульăсем çинех пырса кĕрет-çке... Кам-ши вăл, кам çынни?

— Яблоков ротинчен пулма кирлĕ.

— Чарăнчĕ... хускалмасть... неушлĕ вĕлерчĕç?

Комбат, ниçта кайса кĕрейми сăнаса тăнăскер, тутине çыртса лартрĕ. Çак самантра вăл тем тума та, çумăр пек çăвакан пульăсем айĕн фашистсен дзочĕ умнелле шăвакан салтака пулăшмашкăн хăй ыткăнма та хатĕр

пулчӗ. Минут хыççăн минут иртрӗ... Калама та çук вăрăм пулчӗç вӗсем! Дзот патне пӗр 50—60 метр таранах шуса çитнӗ салтак хускалмарӗ. Тăшманăн пулемечӗсем амбразурăсенчен малтанхи пекех вилӗм сапса тăчӗç.

— Паллах, вӗлерчӗç ăна,— терӗ комбат пусăрăнчăк сасăпа. — Çавăн пек çӗрте этем ăçтан хăтăлса юлтăр? Генерал приказне пурнăçлас пулать. Штурмлас! Урăх ним тума та çук халь тин. Ротăсемпе çыхăн.

Штаб начальникӗ ăна ответ парас вырăнне йывăррăн сывласа илчӗ.

— Эпӗ ӗç урăхла пулса тухасса шаннăччӗ,— терӗ вăл.

Урăх нимӗн те каламарӗ. Окопран тухрӗ те çӳлӗ хăмăл ăшшӗн иккӗмӗш рота еннелле хăвăрт-хăвăрт шуса кайрӗ.

Комбат тата тепӗр хут дзот çывăхӗнче выртакан салтак çине пăхса илчӗ. Малтанхи пекех, вăл пӗртте хускалман.

— Çапах та, ку герой кам пулнине кайран пӗлес-ха, хăй вилнӗ пулсан та, унăн паттăрлăхӗ çинчен çемйине хамăннах çырса ярас,—шухăшларӗ комбат юлашкинчен.

---

Çав паттăр, çав хăюллă çын — ӗнерхи обозник, рядовой Иван Куракин пулнă...

Ăна ӗнтӗ пурте вилнӗ тесе шутланă, анчах та вăл чӗрӗ пулнă-ха. Чăнах та, çутăлакан вӗри пульăсем ăна темиçе çӗртен шăтарса кайнă, унăн суранӗсенчен пӗрмай юн сăрхăннă, çапах та вăл сывланă-ха, унăн чӗри те тапнă, ăс-пуçӗ те чиперех ӗçленӗ.

— Пурпӗрех çитетӗп... Пурпӗр хупласа хуратăп сире, урнă йытăсене... — тенӗ вăл шăл витӗр, аллинчи противотанковăй гранатăна хытăран хытă чăмăртаса. — Таварăтăпах... арăмшăн та, ачасемшӗн те! Таварăтăп!..

Иван Куракин халь юри вилнӗ пек пулса выртнă. Малтанах вăл дзот патне курăнми пытанса çитме ӗмӗтленнӗ, икӗ йăран хушшипе чылай вăхăт ним сиен курмасăр шуса пынă, пульăсем ун çийӗпе вӗçсе иртнӗ, çурăм çинчи фуфайкине çеç шăтара-шăтара кайнă, анчах каярахпа, пульăсем харăсах темиçе çӗртен пырса сăхсан, Куракин кăшт лупашкаллăрах вырăна çитнӗ те тăшмансене улталама шут тытнă.

— Вилнĕ пек пулас... Вилнĕ çынна таттисĕр перес çук вĕсем... Пуçăм сывă пулсан, çав-çавах çитсе кĕрĕслеттеретĕп! Кăтартам эп вĕсене...

Вăрахчен выртмалла пулчĕ унăн вилнĕ çын тĕсне кăтартса. Гитлеровецсем çаплах печĕç. Пĕр вершук çĕкленнĕ пулсанах, Куракин кĕлеткине вуншар пуля çитсе тăрăнма пултарнă. Унтан — те çур сехет иртрĕ, те ытларах, ăна чухламарĕ вăл,— пуç çийĕнче пульăсем шăхăрма пăрахрĕç, пăч-пач кăна, уйрăммăн-уйрăммăн, сăпсасем пек сăрлатса ирте-ирте кайрĕç.

— Халех... халех тăратăп та чупатăп. Пĕр çирĕм метр юлсан, малтан противотанковăйне, унтан çăмăллине ыватăтăп...

Куракинăн чĕри тата хытăрах тапма пуçларĕ. Суранĕсем ыратнине те туймарĕ халь вăл, пĕтĕм шăмшакĕ вут пек пĕçерсе тăнине çеç сисрĕ. Ĕнтĕ вăл сиксе тăрас патнех çитрĕ, аллинчи йывăр граната аврине тата çирĕппрех чăмăртарĕ.

— Урра-а!.. За Родину, впере-ед!— тесе кăшкăрни аслати пек янăраса кайрĕ çав вăхăтра.

Паллах, куна пирĕн салтаксем кăшкăрнă, урăх никам та мар!..

Куракин пуçне вăштах çĕклесе çав çĕнтерӳллĕ «урра» кĕрленĕ еннелле пăхрĕ те хăйĕнчен сулахай енче сахалтан та пĕр икçĕр çын атакăна ыткăннине курчĕ. Текех ĕнтĕ пĕр самант та, кăшт та тăхтаса тăма юраман: дзотри пулеметсем пире питĕ пысăк сиен кӳме пултарнă.

Хăйне çил вĕрсе хăпартнă пекех сиксе тăчĕ вара юнланса пĕтнĕ Куракин. Умри виç амбразурăллă дзотсăр пуçне халĕ вăл урăх нимĕн те курмарĕ, пĕр çавсем çине çеç пăхса чупрĕ малалла. Темиçе секундран, вилĕм йăви патне çитесси çирĕм-вăтăр утăм кăна юлсан, вăл пĕтĕм вăйне пухрĕ те аллинчи кĕске тукмак пек гранатăна дзот çинелле ывăтрĕ...

Самантранах калама та çук хăрушла вăйлă взрыв пулчĕ. Пĕр хушă ку вырăнта хура çăра тĕтĕмсĕр пуçне нимĕн те курăнмарĕ. Унтан, тĕтĕм-хăрăм сирĕлсен, дзот пулнă вырăнта тĕрлĕ пĕрене, тимĕр каштасем, чул, кирпĕч купи çеç палăрса тухрĕ...

---

Виççĕмĕш батальон командирне пĕрин хыççăн тепри телефон патне чĕнме тапратрĕç. Малтан полк командирĕ калаçрĕ, унтан дивизи командирĕ патĕнчен чĕнчĕç. Вĕсем

хăйсен наблюдательнăй пункчĕсенчен темле салтак, тăшманăн пулемечĕсем çине пырса кĕрсе, ку таранччен çав тери кансĕрленĕ дзота сывлăшалла сирпĕтнине курсах тăнă иккен.

— Кам турĕ ку ĕçе?— ыйтрĕç вĕсем.

— Пĕлместĕп-ха, Яблоков лейтенант ротинчен пулас, анчах вăл кам пулнине тĕп-тĕрĕс калама пултараймастăп,— ответ пачĕ комбат.

— Халех шыраса тупса пĕлтерĕр!

— Есть!

Комбатăн хăйĕн те кун çинчен епле пулсан та хăвăртрах пĕлесси килчĕ. Ку паттăра вăл вилнĕ тесе шутланăччĕ ĕнтĕ, анчах та çав «вилнĕ çын» ав епле номер туса хучĕ! Темиçе самант хушшинче, пĕр-пĕччен, пĕтĕм батальона çул уçса пачĕ: дзот сирпĕнсенех стрелоксем пĕр чăрмавсăрах яла кĕрсе кайма пултарчĕç, халь ĕнтĕ урăх нимĕн те чарса тăраймасть вĕсене. Çул уçă!..

— Паянах, çапăçу хирĕнчех наградăна памалла тăвас!

Комбат ял еннелле чупрĕ. Çул çинче те вăл çав паттăр салтак пиркиех шухăшласа пычĕ.

— Вилнĕ ан пултăрах... Çитсе тупас, часрах тав тăвас ăна!

Анкартисем хыçĕнчи çырмара вăл икĕ санитар чĕпчĕр юн пулнă салтака наçилккапа çĕклесе пынине курчĕ. Аманнă çыннăн питне те бинтпа çыхса лартнă-мĕн, ăна паллама та май пулман.

— Кам ку? — хăвăрт ыйтрĕ комбат.

— Рядовой...

— Хăш тĕлтен илсе килетĕр?

— Нимĕçсен дзочĕ патĕнче, пахчара выртатчĕ...

— Хушаматне пĕлмерĕр-и?

— Ыйтман. Ыйтсан та пĕлес çук, ăнран кайнă. Эпир чупса пынă чухнех ним пĕлми выртатчĕ...

— Чимĕр-ха эппин, докуменчĕсене пăхар. Мана питĕ кирлĕ вăл!

Санитарсем наçилккана çĕр çине хучĕç те, вĕсенчен пĕри аманнă салтакăн гимнастерка кĕсйине хыпашлама тытăнчĕ. Çав вăхăтра салтакĕ йынăшса ярса тăна кĕнĕ пек пулчĕ пулмалла.

— Кам ку? Мĕн кирлĕ?— ыйтрĕ вăл аран-аран тухакан сасăпа.

— Капитан юлташ сан хушаматна пĕлесшĕн,— терĕ санитар.

— Мĕнле капитан?
— Хамăрăн ара, Баталов капитан!
— Пĕлмест-и вара вăл ман хушамата?— малтанхи пекех вăйсăррăн ыйтрĕ аманни. — Куракин вĕт эпĕ... Ездовой...
Комбат пĕтĕм кĕлеткипе картах сиксе илчĕ.
— Аттеçĕм, эсĕ-и вара ку? Иван Васильевич!
— Эпĕ çав... Пур çĕртен те шăтарса пĕтерчĕç, шуйттансем...
— Дзота эсĕ хупласа хутăн-и вара?
— Эпĕ...
— Ну, тавтапуçах сана куншăн! Пурне те тĕлĕнтертĕн, геройран та герой пултăн! Манмăпăр сана, пысăк награда илме тивĕçлĕ пултăн эсĕ, генерал хăй шыраса тупма хушрĕ...
— Нимĕнле награда та кирлĕ мар мана,— ассăн сывласа ячĕ те салтак, хăйĕн куçне картланă бинта сирчĕ. — Эпĕ хам ĕмĕтленнине тата хамăн ача мĕн хушнине турăм çеç. Сире спаççипă вара — мана çапăçава кайма чарманшăн...
Ăна хирĕç калама комбатăн сăмах та тупăнмарĕ, пĕр хушă çак ватă салтак çине пăхса хытнă пек пулса тăчĕ вăл. Кам шутлама пултарнă çак çын нимрен хăрамасăр вут-çулăм ăшне кĕрсе кайса çакăн пек паттăр ĕç тăвасси çинчен?
— Юрĕ эппин,— терĕ комбат, кăшт тăрсан. — Май пулсанах эпĕ медсанбата пырăп, ун чух калаçăпăр...
— Пырăр, эп сире унта пĕр япала кăтартăп,— терĕ Куракин.
Вĕсем пĕр-пĕрин çине çав тери кăмăллăн пăхса илчĕç те ашшĕпе ывăлĕ пек пĕр-пĕрине ырă сунса уйрăлчĕç.

---

Икĕ кунтан хирти госпиталь палаткисем вырнаçнă çăра хыр вăрманне ула кушак тĕслĕ пĕчĕк автомобиль пырса кĕчĕ. Унăн ăшĕнчен кăвак çӳçлĕ генералпа çамрăк кăна капитан тухрĕç. Дежурнăй врач вĕсене йывăр аманнисем выртакан палаткăна илсе кайрĕ.
— Куракин!— тесе чĕнчĕ врач. — Сан пата хаклă хăнасем килчĕç, йышăн!
— Мĕнле хăнасем тата?— тĕлĕнчĕ Куракин, пуçне çĕклесе.
— Эпир килтĕмĕр, Иван Васильч!— аякранах аллине тăсса пычĕ ун патне генерал. — Ну, сывлăху мĕнле?

— Антрамасть пек-ха, тӳрленетӗп... — именнӗ пек пулчӗ Куракин.

— Питӗ аван апла пулсан! Эпир акӑ сан валли награда илсе килтӗмӗр,— терӗ капитан,— Отечественнӑй Вӑрҫӑ орденӗ, пӗрремӗш степень!

— Ытла та-ҫке... — пушшех именсе кайрӗ Куракин.— Ытла пысӑк чыс тӑватӑр...— Тӑрук пӑлханса кайнипе унӑн сасси чӗтрерӗ. — Мӗн тунӑ вара эп питех? Наградӑшӑн мар вӗт, ун чухнех каларӑм сире... Хаман кӑмӑл ҫавӑн пек пулнипе... Наградӑсене ҫамрӑксене ытларах парас пулать, вӗсем пирӗнтен маттуртарах...

— Ну, тусӑм Иван Васильич, ку енчен эсӗ пире ирӗк пар ӗнтӗ, кам мӗнле ҫапӑҫнине эпир хамӑрах куратпӑр!— терӗ те ӑна хирӗҫ генерал кӑмӑллӑн, Куракинпа юнашар койка хӗррине ларса, унӑн кӑкри ҫине ылтӑнланӑ орден вырнаҫтарма тытӑнчӗ. — Совет правительстви пирӗн паттӑрсене пӗрне те манса хӑвармасть... Пӗтӗм чӗререн саламлатӑп сана пысӑк наградӑна тивӗҫлӗ пулнӑ ятпа!

Генерал Куракинӑн аллине тытса чӑмӑртарӗ.

— Часрах сывал та пирӗн пата таврӑнса кил. Тӑшмана пуҫӗпех аркатса тӑкиччен чылай ҫапӑҫмалла-ха пирӗн, чыл-ай! Берлин ҫулӗ вӑрӑм-ха. Ҫапах та эпир унта ҫитетпӗрех, тусӑм, епле пулсан та ҫитетпӗр! Ҫапла-и?

— Вӑл тӗрӗс-ха... Анчах эпӗ тек ҫапӑҫма юрӑхлӑ пулӑп-ши? Ҫав шиклентерет мана...

— Кирлӗ мара калаҫатӑн, Иван Васильч! Епле юрӑхлӑ пулмастӑн вара? Пулатӑн! Тухтӑрсемпе калаҫрӑмӑр ӗнтӗ эпир, вӗсем сана пӗрер уйӑхран строя тӑратаҫҫӗ.

— Тем пекчӗ...

Генералпа капитан ватӑ салтакӑн куҫӗ шывланнине асӑрхарӗҫ.

— Ан, пӑлхан, Иван Васильч, пӗтӗмпех йӗркеллӗ пулать,— татах лӑплантарчӗ ӑна генерал,— хуйхӑрмалли нимӗн те ҫук!

— Уншӑн мар эпӗ...— куҫҫульне ҫӑтрӗ Куракин.— Телейпе... чӗре тулса ҫитнипе... Епле пысӑк чыс турӑр та эсир мана! Ӗмӗрте те шутламан кун ҫинчен.

— Тӗрӗссипе каласан, Иван Васильич, эпир те сана ҫакнашкал паттӑр ӗҫ тума пултарать тесе шутламан!— терӗ ӑна хирӗҫ капитан, кӑмӑллӑн кулса илсе. — Лӑпкӑ кӑна ҫынччӗ эсӗ, батальонра санӑн сассу та илтӗнместчӗ,

тепӗр чух эс пурри-ҫукки те сисӗнместчӗ, анчах эсӗ авӑ мӗн туса хутӑн!

— Шавлама юратмастӑп ҫав эпӗ, ку тӗрӗс...

— Ҫапах та, каласа пар-ха ӗнтӗ халь, мӗнрӗн сасартӑк ҫапӑҫава кайма шут тытрӑн эсӗ? Ҫине тӑрса, тархасласах ыйтрӑн вӗт-ха!

— Чӑнах та, интереслӗ ку,— терӗ генерал та, Куракинӑн йӑваш куҫӗнчен пӑхса. — Тӑшман дзотне путлантараканӗ — ездовой Куракин тесе пӗлтерсен, эп те тӗлӗнтӗм.

— Вӑл акӑ мӗншӗн пулчӗ,— лӑпкӑн ҫеҫ ответ пачӗ Куракин.— Вуласа пӑхӑр-ха ҫакна...

Ҫавӑнтах вӑл пуҫ айӗнчи бумажникрен лутӑрканса пӗтнӗ кӑвак хут татки кӑларса комбата тыттарчӗ.

— Мӗн вара ку?

— Ҫыру. Манӑн кӗҫӗн хӗрача ҫырӑвӗ. Вулӑр.

Начар кӑранташпа ҫырнӑ чалӑш-чӗлӗш саспаллисене аран уйӑркаласа, капитан ҫырӑва хуллен вуларӗ.

«Савнӑ атте, сана пӗтӗм чун-чӗререн хӗрӳллӗ салам яратӑп, пин хут чуптӑватӑп!

Сан ҫырӑвна илсе эсӗ сыввине пӗлсен, каласа памалла мар савӑнтӑм, анчах ҫавӑн чухнех аннене тата Юркӑпа Машӑна аса илсе хытӑ макӑртӑм. Вӗсене виҫҫӗшне те фашистсем вӗлерчӗҫ... Эпӗ пӗчченех тӑрса юлтӑм та халь Васса инке патӗнче пурӑнатӑп. Малтан нимӗҫсемпе полицайсем пирӗн пата киле пырса аннене пӑшал тимӗрӗсемпе питӗ хытӑ хӗнерӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсем пирӗн анне партизансене кӗпе ҫуса панине пӗлнӗ. Ун ҫинчен вӗсене хамӑр ялти староста каласа панӑ, тет. Кайран аннене хулари тӗрмене илсе кайрӗҫ те, вара вӑл унта вилнӗ. Тен, ӑна хӗнесех вӗлернӗ пуле. Юркӑпа Машӑна фашистсем хамӑр ирӗке тухиччен темиҫе кун малтан персе пӑрахнӑ. Вӗсем хамӑрӑн пӑрупа сысна ҫурине фрицсем тытса пусасран вӑрмана хӑваласа кайса пытарма шутланӑ-мӗн. Ун чухне пирӗн ялта 21 ҫынна тата 46 пуҫ ӗнесемпе пӑрусене персе вӗлернӗ. Халь пире Хӗрлӗ Ҫар ирӗке кӑларчӗ, тин хӑрамастпӑр. Анчах та хӗлле епле пурӑнассине пӗлместпӗр, мӗншӗн тесен нимӗҫсем тухса тарнӑ чух яла тӗппипех ҫунтарса ячӗҫ. Тата тӑлӑххӑн пурӑнма питӗ кичем, кашни кунах макӑратӑп. Юратнӑ атте, эсӗ фашистсене хамӑрӑн аннешӗн те, Юркӑпа Машӑшӑн та тавӑр, вӗсене ытларах пӗтер! Ҫав тискер Гитлер хурахӗсене ҫӗнтерсен вара, киле таврӑн.

Манăн сана питĕ курас килет. Часрах таврăнма тăрăш! Татах нумай-нумай хут чуптăватăп. Санăн пĕртен-пĕр хĕрӳ Клава».

Капитан çырăва вуласа пĕтерчĕ те ăна Куракина каялла пачĕ. Темиçе самант хушши нихăшĕ те чĕнмерĕç. Пĕчĕк хĕрача хăйĕн куççулĕпе çырнă сăмахсем пурин чĕрине те çав тери ыраттарчĕç...

— Ку çырăва эпĕ шăпах наступлени пуçланас умĕн илтĕм,— терĕ Куракин. — Тӳссе тăраймарăм вара, никама каламасăрах сирĕн пата пырас, терĕм. Манăн çапăçура пулса тăшмана хам алăпа тавăрассăм килчĕ...

— Тĕрĕс шут тытнă,— ырларĕ ăна генерал. — Ним айăпсăр совет çыннисен, хĕрарăмсемпе ачасен таса юнĕшĕн кашни утăмра тавăрмалла, тетпĕр вĕт. Эсĕ çавăн пек турăн та ĕнтĕ, çавăнпа мухтатпăр сана.

Тепĕр кăшт тăрсан, генералпа капитан тухса кайрĕç.

— Каçар, Иван Васильевич,васкатпăр, пирĕн çапăçу хирĕнче пулас пулать. Эсĕ кан ĕнтĕ халь, часрах сывалса вăй илме тăрăш!— тесе хăварчĕç вĕсем.

Куракин чылайччен шухăша кайса выртрĕ. Унтан вăл госпитальти пĕр çамрăк кăна сестрана чĕнсе илчĕ те, сылтăм алли те аманнипе хăй çырма пултарайман пирки, ăна хĕрачи патне çыру çыртарчĕ:

«Юратнă хĕрĕм Клава, эсĕ пĕлтернисем манăн ăшчике вут пекех çунтарчĕç. Сан çырăвна илсен тепĕр куннех, эс хушнă пек, çапăçура эпĕ фашистсене хытă тавăртăм. Темле йывăр пулсан та, ляпланма тăрăш, чунăм, макăрниччен усси çук, вăл çыннăн вăйне пĕтерет кăна. Вăрçă пĕтсен, эпир санпа каллех телейлĕ пулса пурăнăпăр-ха...»

1943, ноябрь.
Гомель облаçĕ.





## СТАРИК

...Мускав патĕнче тăшман çарĕсене аркатса хĕвеланăçнелле хăвалама тытăннăранпа тăвата уйăх хушши тăтăшах çапăçусенче пулнă хыççăн 1942 çулхи апрелĕн юлашки кунĕсенче пирĕн дивизие малти линирен тыла канма илсе тухрĕç.

Çанталăк вăл вăхăтра питĕ начарччĕ, кашни кунах юр та çумăр, çумăр та юр çăватчĕ. Смоленск тăрăхĕнче ахаль те шурлăхсем нумай та, халĕ çул-йĕрсем пачах та иртсе çӳремелле мар пулса тăчĕç. Пылчăк, шыв, лачака... Машинăсем хăйсен кустăрмисем курăнми пуличченех кĕре-кĕре ларчĕç, лашасем çур хырăм таранах путрĕç, вара пирĕн, шĕвĕ кĕсел пек лапра ăшне кĕрсе кайса, машинăсемпе тупăсене те, йывăр лавсене те алă вĕççĕн, хамăр вăйпах сĕтĕрсе кăлармалла пулчĕ.

Вăтăр километра икĕ талăк ытла пытăмăр. Çынсем те, лашасем те калама çук ывăнса çитрĕç. Вырăна çитмешкĕн тата тепĕр вунă километр юлнăччĕ те, виççĕмĕш кунĕнче пире Вишни ялĕнче çĕр каçма хушрĕç.

Тĕрĕссипе, Вишни ялĕ çĕр çинче юлманччĕ ĕнтĕ. Карттă тăрăх унта 287 кил шутланнă, анчах хĕлле кунтан чакса кайнă фашистсем вĕсене пурне те тĕппипех çунтарса янă, вăрçăччен садсем хушшинче илемлĕн

йёркеленсе ларнă çуртсем вырăнне халĕ унта-кунта кă-
мака мăрйисемпе çунăк хапха юписем кăна тăрса юлнă.

Эпир, юлташпа иксĕмĕр, ял хĕррипе шарлатса юхса выртакан шыв урлă пăрахнă пĕренесем тăрăх каçрăмăр та ишĕлтернĕ чиркÿ патнелле хăпаратпăр. Ниçта та пĕр çын та курăнмасть. Килхушши вырăнĕсенче, пахчасенчи хăрăк йывăçсем айĕнче алтса тунă çĕрпÿртсенчен шурă рах кăвак тĕтĕм тухни çеç фашистсем çĕрпе таплаштарса хăварнă ялта çапах та чĕрĕ çынсем пуррине систерет.

Пит те салхуллăн, йывăр шухăшсемпе утрăмăр эпир... Мĕн тери тискер чĕреллĕ пулас пулать ĕнтĕ чечекленсе ларнă мирлĕ хуласемпе ялсене çак таран пĕтерсе хума! Фашистсем кăна пултарнă çав çакăн пек чарусăр хăтланма! Никама та усал туман, никамăн пурлăхне те нихçан хапсăнман совет çыннисем хăйсен пур вăйне хурса, тар юхтарса тунă пĕтĕм ырлăх-пурлăха вĕсем кĕлпе кăмрăк туса хăварнă вĕт-ха... Чĕрере çак хăрушла вăрçа пуçарса яракансене хирĕç хаяр тарăху тата ытларах ÿссе хăпарать, пĕтĕм кăкăра вĕри курайманлăх пĕçертет... Çутă ĕмĕтсемпе пурăнакан этемлĕх сире куншăн нихçан та каçарас çук, ирсĕр фашистсем, ăна ан кĕтĕр!..

...Тăруках çумăр тепĕр хут çума пуçларĕ те, эпир, хÿтлĕх шыраса, унăн-кунăн пăхкалама тытăнтăмăр.

— Ав çавăнта темле çурт пур,— терĕ ман юлташ, сулахайри сайра туратлă йăмрасем еннелле кăтартса. — Атя, çавăнта кайса пăхар!

Эпĕ сăмахсăрах килĕшрĕм, мĕншĕн тесен эпир унччен те аялти кĕпесем таранах исленнĕччĕ те, текех йĕпенес килмерĕ. Çитменнине каç та пулса килетчĕ ĕнтĕ, ăçта та пулин вырăн тупса çĕр каçас пулать, типĕнмелли вырăн тупăнсан тата лайăхрахчĕ. Ик-виç минутран эпир çав çурт патне çитсе те тăтăмăр. Шалтан сасăсем илтĕнни-пе кунта çынсем пурăнни паллă пулчĕ.

— Ку пырать-ха, тен, унта ăшă пуль,— шухăшларăм та эпĕ, кивĕ чус хăмаран çапса тунă алăка ярах уçрăм.

— Кĕме юрать-и?

— Кĕрĕрех, кĕрĕрех,— илтĕнчĕ шалтан харăсах темиçе сасă.

Нихçан та пĕр пÿртре çакăн чухлĕ халăх пурăннине курман вара эпĕ! Пÿрчĕ те — пÿрт мар, темле кĕлет пулнăскер кăна. Тултан çутă кĕме стенана ик-виçĕ çĕр-тен шăтарса, кантăк куçĕсем лартнă. Йĕри-тавра икĕ

хутлӑ нарсем — сарлака саксем туса тултарнӑ, пурин ҫинче те тӑп-тулли ҫын: хӗрарӑм, ача-пӑча, стариксем. Ҫавӑнтах — кивӗ утиялсемпе, ҫӗтӗк шӑналӑксемпе чӗрке-чӗрке ҫыхнӑ япаласем, тумтирсем; маччаран тӑватӑ сӑпка ҫакса янӑ, урайӗнче, вӗт-шак ачасемпе хутӑш, путексем ҫӳреҫҫӗ, пӗр сакӗнчен имшеркке кӑна пӑру кӑкарнӑ. Нимӗнпе те танлаштарма пулмарӗ ку ҫынсен йӑвине — ни казарма мар, ни вокзал, ни пӑрахут ҫинчи тӑваттӑмӗш класс теме ҫук. Пичкери пулӑсем чыхӑннӑ теҫҫӗ тепӗр чух. Чӑн та ҫавӑн пекех тулса ларнӑ ҫав Қалаҫу, шав, ҫуйӑху — нимӗн те ӑнланмалла мар.

Тултан тата тепӗр ватӑ карчӑк кӑштӑртатса кӗчӗ те, эпир алӑк патӗнче ура ҫинчех тӑнине курса, тӗттӗм кӗтеселле кӑтартрӗ:

— Ма лармастӑр, ывӑлӑмсем? Ав ҫавӑнта пӗчӗк тенкел пулмалла, иртсемӗр...

— Тавтапуҫ, эпир ытлах ывӑнман-ха, ҫумӑртан ҫеҫ кӗтӗмӗр, халех каятпӑр,— терӗм эпӗ ӑна, урӑх ним калама аптраса.

— Ывӑнманни курӑнсах тӑрать, аттӑрсем те ҫара лапрах авӑ, пӗр ҫирӗм-вӑтӑр ҫухрӑм утнӑ пулӗ-ха,— пире тӑрӑххӑн пӑхса илчӗ карчӑк. — Э-эх, мӑнтарӑнсем... Темле йывӑр пулсан та, тӳсесех пулать ӗнтӗ! Манӑн хамӑн та сирӗн йышшисем виҫҫӗ те, кашни салтака курмассеренех аса килеҫҫӗ. Пуҫӗсем ку таранччен сывӑ пулсан, вӗсем те ҫакӑн пекех ҫӳреҫҫӗ пуль ҫав! Чипер йышӑнса ӑшӑ сӑмах калакансем пур-ши хуть, тетӗп...

— Салтаксене пур ҫӗрте те ыр кӑмӑлпа йышӑнаҫҫӗ,— терӗ ман юлташ. — Хуть те хӑҫан та...

— Ара, сире йышӑнмасан, кама йышӑнас тата? — Карчӑк пирӗн ҫине тинкеререх пӑхрӗ. Эпӗ унӑн куҫӗ шывланнине асӑрхарӑм. — Хамӑрӑн вӗт эсир, хамӑрӑн! Пӗтӗм пурнӑҫа та халь сирӗн ҫине шанса ҫеҫ пурӑнатпӑр пулать те...

Карчӑк пире валли тенкел пекки илсе пырса лартрӗ те куҫне кӗрӗк ҫанни вӗҫӗпе шӑлса илчӗ.

— Пилӗк уйӑх хушши тамӑкра ҫуннӑ пек пурӑнтӑмӑр вӗт, эсир хӑтарса кӑлартӑр. Аса илсенех куҫҫуль тухать...

— Иртни — иртнӗ ӗнтӗ вӑл, текех таврӑнас ҫук, халӗ пурнӑҫа юсасси ҫинчен шухӑшлас пулать ҫеҫ сирӗн,— лӑплантарчӗ ӑна ман юлташ.

— Ҫаплах, ара, ҫаплах,— килӗшрӗ карчӑк. — Хамӑр

та çаван пирки çеç хыпкаланатпăр. Колхоз каллех ĕçлеме пуçларĕ ав, вăрлăх пуçтарать, çуртырри акасшăн...

— Акас пулать çав, тăшмантан хăтарнă çĕре ахаль вырттарма юрамасть. Эпир вăл çĕре хамăрăн юнпа шăварнă.

Юлташ карчăкпа çавăн пек калаçса кайнă хушăра эпĕ, пӳрт ăшчиккине лайăхрах сăнаса, пĕр кĕтесре, пĕчĕкçеç сĕтел хушшинче икĕ хĕрача тата вĕсене хирĕç кукша пуçлă, шĕвĕртерех кăвак сухаллă, куçлăх тăхăннă старик ларнине асăрхарăм. Вĕсем хăйсем хушшинче хуллен кăна калаçатчĕç. Старик темскер ыйтрĕ, хĕрачасем ăна ответ пачĕç, кайран хăйсем унран ыйтрĕç... Эпĕ тинкererex итлерĕм, çапах та, пӳртре питĕ шавлă пулнипе, вĕсен уйрăм сăмахĕсене çеç илтме пултартăм.

— Имя существительное... прилагательное... глагол...

Кăшт тăрсан пĕр хĕрачи çинçе кăна сасăпа калама пуçларĕ:

— Сложным предложением называется...

— Миçе çемье пурăнать вара ку пӳртре?— ыйтрĕ çав вăхăтра ман юлташ хайхи карчăкран.

— Тăхăр çемье,— терĕ карчăк,— питĕ тăвăр, анчах ним тума та çук, çăва тухиччен тӳсесех пулать. Хăшĕсем çĕрпӳртсем алтса кĕчĕç, анчах эпир — ватă-вĕтĕсем — вăй çитерейменрĕмĕр çав.

— Леш старикĕ кам вăл?— ыйтрăм эпĕ çав хушăрах, кĕтесри сĕтел хушшинчи калаçусенчен тĕлĕне пуçласа.

— Учитель вăл пирĕн, Яков Иванович...

— Кунта пурăнать-и?

— Çук, вăл хăйне уйрăм çĕрпӳртре пурăнать, кунта çав хĕрачасене вĕрентме килнĕ çеç. Нимĕçсем пирĕн шкула та çунтарса ячĕç те, халь Яков Иванович ачасене вĕрентме килтен киле çӳрет. — Карчăк хурлăхлăн сывласа илчĕ. — Ăна та çăмăл мар, ватлăхра пĕр-пĕччен тăрса юлчĕ. Хуйхи тем пекех пысăк пулсан та, хăй ĕçне пăрахмасть тата, çӳрет майĕпе кăштăртатса.

— Ну, ыранччен çак виçĕ параграфа вĕренĕр эппин, ыран вара иксĕртен те ыйтатăп,— илтĕнчĕ çак самантра старикĕн сасси,— хутлă тата хутсăр предложенисене лайăххрах уйăрма пĕлес пулать... Унтан тата — хутламалли таблица. Эс ăна пачах манса кайнă, Тамара, аса илес пулать, унсăр арифметика малалла каймасть пирĕн...

— Эп вĕрентетĕп ăна, Яков Иванович,— терĕ çинçе саслă хĕрачи.

Старик куçлăхне хывса хучĕ те, темле кивĕ хаçат татки çурса илсе, кĕсйинче табак шырама пуçларĕ. Анчах табакĕ пĕтнĕ пулмалла, пирус чĕркемелĕх тупăнаймарĕ. Çавна асăрхаса, эпĕ вырăнтан тăтăм та, нарсем хушшипе ун патне пырса, портсигара уçса пирус сĕнтĕм:

— Туртăр...

— Ой, спаççипă, командир юлташ!—ман çине кăмăллăн пăхрĕ вăл. — Табакран начар пурăнатăп-çке çав! Ыттинчен аптрамастăп, пулăшаççĕ мана, анчах табак çук вара, питĕ кансĕр вăл енчен...

Унпа пĕрле эпĕ те пирус чĕртрĕм. Алăк патĕнчи карчăк ун çинчен кĕскен кăна каласа паниех мана питĕ интереслентерсе ячĕ те, манăн ку старикпе çывăхрах паллашас килсе кайрĕ. Старикĕ те калаçма юратаканскер пулнă-мĕн; пирĕн паллашу хăвăртах йĕркене кĕчĕ.

— Вĕрентетĕр эппин?— сăмах пуçларăм эпĕ.

— Майĕпе вĕренткелетĕп,— терĕ Яков Иванович.— Çамрăк вăхăта сая яма юрамасть вĕт. Ахаль те ачасем пилĕк уйăх ытла вĕренеймесĕр пурăнчĕç...

— Куна сире мĕнле... районтан хушрĕç-и е эсир хăвăр...

— Çук, эпĕ нихçан та хушнипе ĕçлемен, командир юлташ. Мĕн тумаллине, хăш вăхăтра тумаллине эпĕ хамах пит аван пĕлетĕп,— терĕ Яков Иванович. — Ачасене вĕрентме тытăнни хĕрĕх виçĕ çул ĕнтĕ. Ман ученик-сенчен халĕ ученăйсем те, генералсем те, поэтсем те, орден илнисем те, темлисем те пур... Пуринчен хакли — вăхăт. Вĕренме нихçан та кая мар, теççĕ те, çапах та çынна вĕрентессине кая хăварма юрамасть. Пахчаçă хăйĕн ӳсентăранĕсене епле вăхăтра шăварса, çĕре çемçетсе çитĕнтерет, учителĕн те çавнашкалах пулмалла. Нимĕçсене хăваласа яриччен эпĕ, пуринчен ытла, пирĕн ачасем вĕренмесĕр юлнишĕн хуйхăртăм, яла хамăрăннисем ирĕке кăларсан вара ик-виç кунтанах ĕçе тытăнтăм. Хăшĕсем мана: тăхта, ăçта васкан, кăштах лăпланар-ха, пурнăç пăртакках йĕркене кĕтĕр, текелерĕç, анчах эпĕ никама та итлесе тăмарăм. Шкул çурчĕ çук пулсан, килтен киле çӳретĕп, терĕм. Малтан темле тĕлĕнмеллерех пекчĕ те, халь ним те мар, ачасем те хăнăхрĕç, хам та...

— Ĕç чиперех пырать эппин?

— Пырать-ха. Тăрăшатпăр, йывăр пулин те...

— Кĕнекесем пирки мĕнле-ха тата сирĕн? Шкулне çунтарса янă пулсан, вĕсем те пĕтнĕ пулĕ?

— Çителĕклех мар та — пур пăртак. Эпĕ вĕсене упраса хăварма пĕлтĕм. Микроскоп та пур, ытти хăшпĕр приборсем те. Чăнах та, эпĕ вĕсемшĕн чутах хамăн пуçăма хураттăм, çапах та çăлтăм-çăлтăмах... Вăхăтăр пур пулсан, нума-ай каласа пама пултаратăп эп сире хамăн мĕн-мĕн курма тӳр килни çинчен!

Эпĕ юлташ çине пăхса илтĕм; вăл, ĕшенсе çитнĕскер, пуçне стена çумне тайăнтарнă та ларнă çĕртех тĕлĕрсе кайнă иккен.

— Вăхăчĕ пур-ха пирĕн, ыран ирччен ку ялтах пулатпăр,— терĕм эпĕ. — Анчах тем тумалла пулать...

— Çĕр выртма хваттер пур-и?

— Шыраман-ха ăна...

Старик, куçлăхне тӳрлеткелесе, кăмăллăн кулса илчĕ..

— Шырасан та тупаймастăр. Çак кĕлет — пĕртен-пĕр «гостиница» пирĕн. Пĕркун полковниксем те выртса кайрĕç. А эсир, тиркеместĕр пулсан, атьăр ман пата, çĕрпӳрте. Комфорт пулмасть ĕнтĕ, анчах ăшши пулать, ăна шантарсах калама пултаратăп.

Ку сĕнӳ пирĕншĕн питех те майлă пулчĕ .

Тепĕр темиçе минутран эпир, Яков Ивановичпа пĕрле, икĕ вата улмуççи хушшине алтнă çĕрпӳрте пырса кĕтĕмĕр.

— Ан тиркĕр ĕнтĕ,— терĕ вăл,— вырнаçăр. Халех кăмака хутса ярăпăр та, ăшă пулĕ пире...

Вăл алăк патĕнчи тимĕр кăмакапа тăрмашма тытăнчĕ, эпир, шинельсене хывса, пĕчĕкçеç хăрах куçлă чӳрече умĕнчи сĕтелĕн ик енне лартăмăр. «Сорокопятка»* гильзинчен тунă лампăна çутатса ярсан, мана, чăн малтан, çĕрпӳртри тирпейлĕх тĕлĕнтерчĕ. Стенисене, тăпра тăкăнасран, снаряд ещĕкĕсенчен кăларса илнĕ хăмасемпе картланă, сĕтел çине шурă çитти сарнă, унтах чечек лартнă; пĕчĕк тĕкĕр, çырмалли хатĕрсем пур. Шăп чӳрече тĕлĕнче Ленинпа Горький сăнĕсем, кĕтесре Пушкинăн пысăках мар бюстне лартнă.

— Сирĕн çĕрпӳрт чăн-чăн кабинет пекех-çке, питĕ кăмăллă,— терĕм эпĕ, йĕри-тавра темиçе хут та пăхса çаврăнса.

---

* 45 мм тупă. Вăл тупăсемпе вăрçăн малтанхи çулĕсенче танксене хирĕç кĕрешнĕ.

— Йĕркелĕхе юрататăп,— терĕ Яков Иванович.— Этем кирек мĕнле условисене лексен те, унăн этемлех пурăнма тăрăшас пулать.

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ.

— Эпир фашистсем мар вĕт. Вĕсем, ав, хăйсен культурăлăхĕпе тем пекех мухтанаççĕ пулин те, хăйсем сыснаран та сысна. Куртăмăр ĕнтĕ вĕсен «культурине»— виличчен те манас çук! Тискер кайăксемпе танлаштарма та йывăр вĕсене...

* * *

...Сĕтел çине Яков Иванович пăсланакан чейник пырса лартрĕ те, эпир хамăрăн сумкăсенчен çимеллисем кăларса апатланма тытăнтăмăр. Хăйĕн хăнисем хаçатра ĕçлекен çынсем пулнине пĕлсен, вăл тата ытларах хавасланса калаçма пуçларĕ.

— Историре пулман вĕт-ха кун пек тискерлĕх, ывăлăмсем... Хамăн куçпа курман пулсан, хам тӳссе ирттермен пулсан, тупата, ĕненессĕм те çук çав, мĕншĕн тесен чипер ăс-тăнлă этем çав тери тискер ĕçсем тума пултарнине ниепле те йышăнма çук,— терĕ вăл. — Ну, историре Чингис-хан пулнă, Батый... Феодализм вăхăтĕнче инквизиторсем пулнă... Анчах вĕсем пĕри те фашистсемпе танлашма пултараймаççĕ. Культура! Пуртăпа çулăм «культури» вĕсен, акă мĕн!

— Тен, эсир хăвăр мĕн-мĕн курнисем, тӳснисем çинчен пире йĕркипе каласа парăр?— ыйтрăмăр эпир, старик чĕринче фашистсене хирĕç нихçан сӳнмелле мар кураймалăх вĕресе тăнине кура.

— Пĕтĕмпех каласа паратăп, итлеме кăмăл тăвăр кăна. Каласа памасăр тӳсме çук. Эсир вара кайран ман калава пичетлесе кăларăр, пурте пĕлччĕр фашистсен чăн-чăн сăн-сăпатне: ватти те, вĕтти те, пулас ăрусем те пĕлччĕр!

— Юрĕ, Яков Иванович, çырăпăр.

...Акă мĕн каласа кăтартрĕ вара фашистсем çинчен пирĕн çĕнĕ тус, ватă учитель Яков Иванович Просветов.

— Малтанах питĕ чееленсе хăтланчĕç вĕсем... Пирĕннисем чакса кайсан тепĕр кунне, шăп кăнтăрла мотоциклетсемпе килсе кĕчĕç те çавăнтах халăха илĕртме тытăнчĕç. Çынсем унта-кунта пытанса пĕтнĕччĕ, анчах гитлеровецсем вĕсене тупа-тупа урама илсе кăларчĕç. Эпĕ те лекрĕм вăл шута. Пĕр сехет — сехет çурăра çĕр

çынна яхăн пухрĕç. Вара çавăнтах пĕри, вырăсла пĕлĕкенскер, «митинг» тума тытăнчĕ.

— Ан хăрăр пирĕнтен, ан пытанăр, эпир — сирĕн тусăрсем, сире çĕнĕ йĕрке, ырă пурнăç паракансем пулатпăр!— Тӳсмелле мар демагоги пуçласа ячĕ! Мухтанать, суять, çынсен пуçĕсене пăтраштармалли меслетсем шырать çав, ăш лĕкленет вĕт, ниçта кайса кĕме çук! Вăл каланă хушăрах темиçе салтакĕ ачасене канфетсем, печенисем валеçсе пачĕç, хĕрарăмсене — темле тутăрсем, ленттăсем, шăрçасем. Пĕрисем параççĕ, теприсем çав вăхăтрах фотоаппаратсемпе чаклаттараççĕ — ӳкереӳкере илеççĕ. Паллах ĕнтĕ, хăйсен хаçачĕсем валли...

— Çук, улталă та ирсĕр вăйă кăна ку,— терĕм эпĕ хама хам. — Сарасса çемçе сарма хăтланаççĕ те, çывăрма питĕ хытă пулать...

Эп кăна мар, пурте çапла шутланă ĕнтĕ. Ютран килнĕ хурахла тăшмансем пире валли епле «ырă пурнăç» хатĕрленине кашни ăслă-пуçлă çынах ăнланнă. Ик-виç кунтанах пит лайăх кăтартрĕç ăна фашистсем. Малти чаçсем иртсе кайсан, гестаповецсем çитсе кĕчĕç. Пуçланчĕ вара тӳсмелле мар çарату, никам шухăшласа кăларма пултарайман тискерлĕх...

Чăн малтан, ялти власть валли хăйсене юрăхлă çынсем суйласа тупрĕç. Пĕр пӳтсĕре — виç-тăватă хут тĕрмере ларса тухнă бандитла çынна староста турĕç, ăна пирĕн Кузьма Битый тесе чĕнетчĕç, мĕншĕн тесен ăна çамрăк чухнех темиçе хут та вăрăпа тытса пĕтĕм халăхпа хĕненĕ. Мана писарь пулма сĕнчĕç.

— Германи командованийĕ сире шанать, çавăнпа та эпир паракан ĕçе санăн савăнсах тытăнас пулать,— терĕ мана гестапо пуçлăхĕ тăлмачă урлă, ман умма çимелли-ĕçмеллисем кăларса лартса. — Сирĕншĕн нимĕнле хăрушлăх та пулмасть, эпир сире те, сирĕн çемйĕре те хамăр хӳтлĕхе илетпĕр. Пирĕн кăтартусене тĕп-тĕрĕс пурнăçласа пырăр кăна!

Манăн чĕре тăрукках тапми пулса ларчĕ çакăн пек сĕнĕве илтсен.

Хĕрĕх çул ытла вырăс халăхне çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçленĕ хыççăн, çирĕм çул ытла совет ачисене вĕрентсе, социализм строителĕсене хатĕрлесе пурăннă хыççăн фашистсен холуйĕ пулманиепле те пултарайман ĕнтĕ эпĕ, хăвăрах ăнланатăр! Гестапо сĕнекен «ырлăхсенчен» çавăнтах пăрăнма тытăнтăм. Ватта петĕм. Вăйăм çук,

куç курмасть, çырма — алăсем чĕтреççĕ... Пултараймастăп, урăххине шырăр!

— Хăратăн эсĕ,— терĕ мана фашистсен начальникĕ. — Большевиксем каялла таврăнасси çинчен шухăшлатăн. Анчах та вăл шухăша пуçран кăларса ывăт, сирен Совет влаçĕ пĕтнĕ ĕнтĕ, Хĕрлĕ Çар çук, эрнеренех эпир Мускавра пулатпăр! Пурпĕрех пирĕн йĕркесемпе килĕшмелле пулать, темле кутăнлансан та!

Хăй çаплах эрех черккине ман паталла шутарать. Анчах эпĕ, паллах, ăна алла та тытмарăм, нихçан та эрех тавраш сыпса курман, тин сыпассăм та çук, терĕм.

Пĕр хушă чĕнмесĕр лартăмăр. Вăл ман çине витĕр шăтарас пек пăхса ларать, эп татăклă ответ парасса кĕтет, эп шарламастăп...

— Ну, асту, кайран ӳкĕнмелле пулса ан тухтăр санăн,— терĕ вăл юлашкинчен, пӳрнисемпе сĕтел çине тăкăртаттарса илсе. — Саботажниксемпе урăхла каласатпăр эпир... Çакна лайăхрах асту: эпир сире çĕнтернĕ ĕнтĕ, власть — пирĕн алăра!

— Хуть те мĕн тăвăр...

Гестаповец, сĕтел хушшинчен тухса, каллĕ-маллĕ уткаларĕ те сасартăк ман умма пырса тăрса кăкăртан çатăрах тытса лартрĕ:

— Учитель! Эс хăвна та, çемйӳне те хĕрхенместĕн курăнать. Ыранччен шухăшласа пăх. Ирччен сана ăс кĕрессе шанатăп! Асту: кам пирĕнпе ĕçлеме килĕшмест — вăл пире хирĕç пырать, анчах хирĕç пыракансемпе эпир нумай чăрманса тăмастпăр!

Вĕри тамăкран хăтăлса тухнă пекех пулчĕ маншăн вăл мана киле кайма ирĕк пани. Урампа мĕнле иртсе пынине те астумастăп. Анчах килте мана çĕнĕ инкек кĕтсе тăнă...

Манăн аслă хĕр Вера, хампа пĕрле шкулта ĕçлекенскер, эп алăкран кĕрсенех ман паталла макăрса чупса пычĕ.

— Шкула аркатрĕç пирĕнне... ним те хăвармарĕç!— терĕ вăл куççулĕ витĕр.

— Епле апла? Мĕн туса хунă?

— Партăсене кăларса пăрахрĕç, вĕсен хăмисенчен лашасем валли кормушкăсем тăваççĕ, шкулта вите пулать пулмалла... Шкапсенчи кĕнекесемпе кăмака хутаççĕ!

Ашчик вутпа çунтарнă пекех пĕçерсе илчĕ. Кĕнеке-

сем маншăн пурнăçри чи хаклă пуянлăх пулнă. Эпĕ вĕсене çирĕм çул ытла пухнăччĕ, пирĕнни пек пуян библиотека районĕпе те çукчĕ...

— Пĕтĕмпех çунтарса ячĕç-и?— тесе ыйтма çеç пултартăм эпĕ.

— Кăштах юлнă пулас та, нумай çунтарчĕç çав,— терĕ Вера.

— Атя эппин, юлашкисене кайса çăлар!

Хĕр хăраса ÿкрĕ:

— Юрамасть пуль унта пыма... Курсан, персе те пăрахĕç!

Эпĕ пурпĕр хамăн шухăша пăрахмарăм. Вара Вера тумланчĕ те, эпир васкасах шкула кайрăмăр. Каç пулнăччĕ ĕнтĕ, урамра тĕттĕмччĕ; хÿме çуммипе йăпшăнкаласа, шкула пырса кĕтĕмĕр те, манăн куççулĕ шăпăрах юхса анчĕ... Шкулăн стенисем кăна тăрса юлнă! Партăсем, сĕтел-пукансем, класри доскасем — пĕтĕмпех шкул умĕнче шанкă пек выртаççĕ, ăçта ан пăх — пур çĕрте те кĕнеке, хут, карттăсем, картинăсем сапаланнă.

Мĕн тăвас? Шкул пуянлăхне ытла пĕтĕмпех аркатса çунтарса яриччен кăшт та пулин хăтарас пулать вĕт! Анчах ăçта чикес ăна? Тăшмансем пур çĕрте те ухтарса тупма пултараççĕ,— пытарнă япалана тупсан пушшех пуçа çийĕç!

Сасартăк аса илтĕм: шкул картинче пирĕн питĕ пысăк пусă шăтăкĕ пурччĕ, унта эпир кашни çулах шкулăн çĕрулмине хываттăмăр.

— Тултарар çав шăтăка!

Вера ку шухăша ырларĕ. Мĕн пулать, мĕн килет! Вара эпир çĕрĕпех ĕçлерĕмĕр. Шкапсенче хăтăлса юлнă кĕнекесене пĕтĕмпех çав пусса леçсе хутăмăр, çиелтен улăм сарса, тăпра сапса лартрăмăр. Пирĕн телее, ку çывăхра нимĕçсен хурал тавраш пулман-мĕн, çавăнпа та пире никам та кансĕрлемерĕ.

Каялла таврăннă чух, шкул сарайĕ хыçĕнче, эпĕ тăрук темле хытă япаларан такăнтăм. Темскер шуррăн курăнса кайрĕ. Хыпашласа пăхрăм та — Пушкин выртать! Ак çакă... (Яков Иванович çĕрпÿрт кĕтессинче таракан бюст çине кăтартрĕ.) Темле майпа çĕмĕрĕлмен вара, тĕлĕнсе каймалла! Анчах маншăн вăл питĕ, питĕ хаклă япала, ăна мана Ленинградран килнĕ пĕр скульптор ятарласа, асăнмалăх туса панăччĕ. Эпĕ Пушкина часрах çĕклерĕм те килелле тата хăвăртрах утрăм.

— Мăшкăллаттармастăп вырăс генийĕнчен!— тесе, Александр Сергеевича питĕ тĕплĕ вырăна пытарса хутăм...

Ирхине мана каллех чĕнтерчĕç. Гестапо начальникĕ манпа ĕнерхи майлах калаçма тытăнчĕ.

— Тупăшлă вырăнтан пăрăнатăн!—тет. Эпĕ çаплах хамăн вăй çукки çине петĕм.

— Ватă ухмах! Ашак!— тесе кăшкăрса пăрахрĕ те вăл мана юлашкинчен, сĕтел çине чант! çапрĕ. — Тинех пирĕнтен ыррине ан кĕт ĕнтĕ, тем пулсан та, хăвна çеç ÿпкеле!

— Пурпĕр сан умăнта чĕркуçленсе ларассăм çук,— терĕм куна хирĕç хамăн ăшăмра. — Вĕлерĕр, анчах парăнтараймăр!

Калама та çук тарăхса кайрăм çав. Çине тăрсах, куçкĕретĕнех мана сутăнчăк тăвасшăн! Эпĕ вĕрентсе ÿстернĕ çĕршер çынсем фронтсенче Тăван çĕршывшăн çапăçаççĕ, анчах манăн вăл вăхăтра фашист чунилли-семпе юнашар ларса, вĕсен йытти пулса, тăшман майлă ĕçлемелле иккен!..

Хальхинче эпĕ киле таврăннă çĕре район салинче фельдшерицăра ĕçлекен кĕçĕн хĕрĕм Соня çитсе ларнăччĕ. Алăк патĕнче унăн япалисен çыххине курсанах, вăл та ырă мар сăлтавпа килнине туйса илтĕм...

— Больницăра нимĕçсем казарма тăваççĕ, пире хăваласа кăларса ячĕç. Хамăрăн япаласене те ĕретлĕн пуçтарса тухма памарĕç,— терĕ Соня.

— Çапла пулмалла та ĕнтĕ вăл,— ответ патăм ăна.— Кун пеккине кăна мар курăпăр-ха малашне...

Ĕнертенпех çименччĕ те эпир, аслă хĕрĕм апат хатĕрлеме пикенчĕ. Кĕçĕн хĕрĕм нимĕçсем район центрĕнче мĕнле урса кайса хăтланни çинчен каласа пама тытăнчĕ. Больницăра выртакан çынсене, вăл шутрах халь çеç ача çуратнă хĕрарăмсене те, пăшал кĕпçисемпе чыша-чыша кăларса янă иккен, больницăри аслă тухтăр чирлĕ çынсен хутне кĕме тăрсан, ăна çавăнтах персе пăрахнă...

Çаксене илтсе, тĕлĕннипе хытнă пек пулса, тарăхнипе шăлсене çыртса ларнă вăхăтра пирĕн пата хайхи Кузька Битый, староста, пырса кечĕ. Чĕре тата хытăрах пăчăртанса илчĕ. Унччен малтан эп ăна ĕмĕрне те хамăн кил çывăхне яманччĕ, мана куçран пăхма та пултарай-

ман вăл, анчах халĕ чăн хуçа пекех пырса кĕчĕ. Нимĕн те шарлаймарăм — власть!

Кĕрсе тăчĕ те — сывлăх та сунмарĕ, вăрă куçĕпе йĕри-тавралла пăхса илчĕ кăна. Унтан кĕсйинчен хут кăларса, тӳрех темскер çырса хучĕ.

— Эсир виççĕн-ха эппин халь... — терĕ вăл.

— Ма вара? — ыйтрăм эпĕ.

— Ялта миçе çын пуррине шутлатăп. Мана тĕп-тĕрĕс сведени кирлĕ, çавăнпа.

— Çук, эпĕ хăнана çеç килнĕ,— терĕ Соня.

— Эппин нумай ан пурăнăр кунта. Юрамасть халь ялсем тăрăх сулланса çӳреме. Эсир вара... (вăл Верăпа иксĕмĕр çине тĕллесе кăтартрĕ) ниçта та ан кайăр. Тепĕр сехетрен ялта клуб вырăнне каллех чиркӳ уçăлать. Ăна уçнă çĕре пурин те пырас пулать. — приказ çапла. Ак çак списока лекнисенчен кам та пулин пымасан — вăл влаçсене хирĕç тăнине пĕлтерет... Ăнланма тăрăшăр çавна, эсир вĕреннĕ çынсем!

— Турра ĕненесси вăл ирĕклĕ япала-çке,— сăмах хушрĕ ман Вера.

— Эсир, мадама, «ирĕк» сăмаха манма тăрăшăр! Сирĕн диктатура мар халь, законсене эпир тăватпăр,— чалăшшăн пăхрĕ те ун çине Кузьма йĕрĕнчĕклĕн кулса илчĕ. — Халĕ сирĕн пăхăнмалли çеç юлать. Амба! Тепĕр сехетрен — шăп вуниккĕре — чиркĕве пынă пултăр. Паллах ĕнтĕ, лайăххрах тумланса пырас пулать, мĕншĕн тесен чиркӳ уçни вăл — халăхшăн пысăк праçник. Эп ăнланатăп-ха сире, эсир пирĕн пек тĕттĕм çынсем мар, турра ĕненместĕр, анчах та — закон, ним тума та çук. Тата... комендантăн алли йывăр, теççĕ...

Хирĕç нимĕн те калаймарăмăр. Кузька шăрт пек уссийĕсене шăлкаларĕ те, пирĕн çине тата тепĕр хут çав тери мăшкăллăн пăхса илсе, алăка шăлт-шалт уçса хупса тухса кайрĕ.

— Йытă... сутăнчăк... ирсĕр! Çакăн пек çĕлен-калтасен аллинче ĕнтĕ халĕ пирĕн пурнăç!— терĕ те Соня çилĕпе, тӳсеймесĕр макăрса ячĕ.

— Мана çав йыттăн помощнике тăвасшăнччĕ,— ассăн сывласа пĕлтертĕм эп ăна.

Соня тата хытăрах макăрма пуçларĕ. Унăн çамрăк чунĕ ытла та кӳтсе çитнĕ пулас çав.

— Пĕтĕмпех пĕтрĕ... Пур ĕмĕтсем те татăлчĕç!—

терĕ вăл куççулĕ витĕр. — Халь ĕнтĕ эпир чĕлхесĕр выльăхсем çеç пулатпăр, чурасем...

Эп ăна хам пĕлнĕ пек лăплантарма тăрăшрăм:

— Ĕмĕрлĕх мар вĕт ку, пирĕннисем таврăнаççех, хăтараççех пире! Тӳссе irttерĕпĕр епле те пулсан. Шанчăка çухатас пулмасть кăна...

Унтан эпир малашне мĕн тăвасси пирки канашлама пуçларăмăр.

Паллах, чиркĕве пирĕн ниепле те каяс килмен. Çирĕм çул ытла чиркӳ крыльци çине ура ярса пусман хыççăн паян сасартăк такам шуйттанĕ хушнипе кайса тăрас пулать!

...Вуниккĕ çите пуçларĕ. Пĕртен-пĕр пĕчĕк чан сасси илтĕнчĕ. (Вăл пирĕн пушар дружининче çакăнса тăратчĕ.) Вера урамалла пăхрĕ те:

— Халăх чăнах чиркӳ еннелле утать,— тесе пĕлтерче. Ун хыççăнах пӳрте хайхи Кузька Битыйпа пĕр нимĕç салтакĕ кĕрсе тăчĕç.

— На церков,— терĕ нимĕç. — Марш! Гот! Ваш бох...

Ним тумалли те юлмарĕ пирĕн. Конвойпах кайрăмăр чиркĕве! Соньăна çапах та хăваркаларăмăр — кил пăхма текелесе ĕнтĕ. Ăна та илсе каясшăнччĕ фашист.

Эпир пынă çĕре халăх самаях пухăннăччĕ. Пурте кĕтсе тăраççĕ — ватти, вĕтти. Чиркĕвĕнче вунă çул ытла клуб пулнăччĕ пирĕн, питĕ аванччĕ унта, анчах халь çара стенасем çеç тăрса юлнă — сарай манерлех пулса тăнă. Пăхас та килмест!

Çур сехет иртрĕ, пĕр сехет... Никам та нимĕн те пĕлмерĕ-ха. Ни пуп таврашĕ çук, ни турăш. Шăнса кайнă çынсем килĕсене каясси пирки те калаçкалама тытăнчĕç. Анчах çав вăхăтрах урамран чиркĕве пĕр çирĕм нимĕç салтакĕ кĕрсе тăчĕç. Хура каскăсемпе, автоматсемпе, халь тесен халь çапăçма каяс пек. Алăкран кĕрсенех, вĕсем халăха йĕри-тавра çавăрса илчĕç те клубран никам тухса каймалла мар туса лартрĕç.

— Итлĕр, турра ĕненекенсем!— кăшкăрчĕ пĕр фашисчĕ вырăсла, сцена çине хăпарса тăрса. — Эсир кунта турра кĕлтума килнĕ. Çапла-и?

— Нимĕн те пĕлместпĕр... — илтĕнчĕ такамăн сасси.

— Пире салтаксем хăваласа килчĕç...

— Чиркĕве килнипе тĕрĕс тунă эсир,— терĕ нимĕç малалла.— Сирĕн халĕ туррă ячĕпе Германи çарне пулăшас пулать. Ăна ăшă япаласем кирлĕ. Çавăнпа та, ним

тытăнса тăмасăрах, çири тумтирсене, урари çăматăсене, алăсенчи алсишсене халех çакăнта хывса хурăр. Хирĕç-се тăнинчен усси пулмасть, ăна малтанах асăрхаттаратпăр. Тумтирне Германи çарĕ валли парнелемесĕр пĕр çын та тухса кайма пултараймасть кунтан. Халех хывăр! Турă манмĕ сире уншăн!

Çынсем пĕр хушă юпа пек хытса тăчĕç... Никам та хускалмарĕ. Ытла та ăнран кăларса ячĕ вĕсене ку тискер приказ! Ниměншěн те мар, куçкěретěн, кăнтăр кунěнче çаратмашкăн пухнă иккен ял халăхне!..

— Ну, мĕн кĕтсе тăратăр? Хывăнăр!— тата хаяртараххăн кăшкăрчĕ çав нимĕçех. — Хамăр хывма пуçласассăн вуçех çарамас юлатăр акă!— Вăл тӳсме çук мăшкăлламалла калаçрĕ...

Халăх халь те хускалмарĕ. Вара фашистсем çынсене чăнах та хăйсем çарамаслантарма тытăнчĕç. Кĕрĕксем, пальтосем, атăсем, чесăнкăсем, çĕлĕксем, ăшă тутăрсем пĕр кĕтеселле ывтăнчĕç кăна. Мĕн хывса илме май пуррине пĕтĕмпех тăпăлтарса илсен, çынсене алăкран туралла вăркăнтарчĕç. Хĕрарăмсем макăрчĕç, çуйăхрĕç, ылханчĕç, ачасем вилсе каясла кăшкăрчĕç, анчах усси пулмарĕ — ытлашши шавлакансене салтаксем пăшал кĕпçисемпе çапа-çапах ăсатрĕç...

Черет ман пата çитрĕ. Пулă куçлă нимĕç пĕрре туртсах ман çири кĕрĕклĕ пиншака сĕвсе илчĕ, тепри çав хушăрах урaран тытса ӳкерчĕ те атта хыврĕ. Чăлхана та пулин хăвармарĕ, бандит! Пĕрре ура çине тăнăскере çав чăлхашăн тепĕр хут ӳкерсе тăпăлтарчĕ вĕт! Верăнне, пальттипе пĕрле, ăшă кофтипе юбкине те хывса илчĕç, аялти кĕпепе çеç тăрса юлчĕ вăл. Вара пире пурне те çаплипех хăваласа ячĕç. Тулта ун чухне питĕ сивĕччĕ ĕнтĕ — ноябрь вĕçĕ...

Анчах та ку пуçламăшĕ кăна пулнă-ха.

Халăха турă ячĕпе çаратнă хыççăн тата хăрушăрах ĕçсем тапранса кайрĕç. Çынсен пĕтĕм тырпулне, выльăхчĕрлĕхне, кайăк-кĕшĕкне ним юлмиччен туртса илни çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Ку пĕтĕмпех хăй йĕркипе пулса пычĕ. Вĕсем — нимрен ытла — пирĕн çынсене чĕлхесĕр выльăхпа танлаштарса хучĕç!

Пĕррехинче, тул çутăлнă-çутăлманах, çынсене килĕсенчен хăваласа тухса, пĕтĕм халăха ял варрине пухрĕç те темиçе сехет тытса тăчĕç. Сивĕ — тӳсмелле мар, çав тери витĕр çапакан çил вĕретчĕ вăл кун. Шăнсах хытат-

тăмăр. Киле те ямаççĕ. Кăнтăрла çитеспе тин пирĕн пата комендантпа унăн ӳсĕр помощникĕсем тухрĕç. Тăлмачă сăмах каларĕ:

— Паянтан пуçласа кашни çыннăн хăйĕн номерĕ пулать. Паспорт вырăнне. Çав номерсĕр урама та тухма юрамасть.

Список тăрăх чĕне-чĕне, вĕсем çынсен мăйĕсенчен пĕр аллаппи пысăкăш фанер таткисем çакса ячĕç. Хăми çине хамăрăн ял ятне çырнă та цифра лартнă. Çавăнтан вара эпĕ ятлă-хушаматлă çын мар, вăтăр виççĕмĕш номерлĕ чура пулса тăтăм. Арестант... Ĕмĕрне те манас çук çав мăшкăла! Халь те усратăп çав фанер таткине— çынсене кăтартма усратăп! Пурте пĕлччĕр фашистсем пирĕнтен выльăхсем тăвасшăн пулнине, нихçан та ан манччăр ун çинчен!...

Яков Иванович сĕтел айĕнчи ещĕкрен сарăрах фанер татăкĕ тупса кăларчĕ. Ун çине хура сăрпа нимĕçле саспаллисемпе çырнăччĕ:

| Wischni |
|---|

— Тăвата уйăх ытла çакса çӳрерĕм вĕт çак йытă номерне!— терĕ Яков Иванович çилĕпе. — Мăйра пĕрмай мăйкăç çакăнса тăнă пекех туйăнатчĕ вăл мана...

Çакăнпа пĕрлех, ытти енчен те хĕстерсе çитерчĕç вĕсем пире. Аçта ан пыр — пур çĕрте те вывеска та пĕлтерӳ çакăнса тăрать. Пирĕн шкул умĕнчи пысăк çăл çине: «Германи салтакĕсем валли кăна, вырăссен çывăха пыма юрамасть», тесе çырнă. Часах ялти чи лайăх çуртсенчен хуçисене хăваласа кăларчĕç те кашнин çинех «нимĕçсен çурчĕ» тесе çырчĕç. Кайран кунпа та çитмерĕ: ял халăхне пĕтĕмпех хыçалти урама хăваласа кăларчĕç, кашни пӳрте 4—5-шер çемье тултарчĕç, мăн урама йĕплĕ пралукпа картларĕç. Урам вĕçне таçтанах курăнмалла çырса çапнăччĕ: «Германи урамĕ. Вырăссен кĕме юрамасть. 50 метра çывхарнисене асăрхаттармасăрах переççĕ». Чăнах та, урамăн икĕ вĕçне те вышкăсем туса лартрĕç, тĕрме картинчи пекех. Вĕсем çинче кунĕн-çĕрĕнех пулеметлă часовойсем тăчĕç.

...Гитлеровецсем мĕн пирки çакăн пек хăтланнине каярахпа тин тавçăрса илтĕм эпĕ. Питĕ хăранă иккен вĕсем. Хăйсен урисем айĕнче çĕр çунса тăнине сиснĕ.

Кашни утăмрах пуç çине тавăру чукмарĕ ÿкессе кĕтнĕ. Пирĕн халăх хăйсене мĕн тери курайманнине, ăна вĕсем тем тусан та парăнтарас çуккине туйнă.

Халăхра «партизан» сăмах сарăлма пуçларĕ. Фашистсем пирĕн таврана килсе кĕрсенех, районти коммунистсемпе ытти активистсем вăрмансене партизана кайнă иккен. Вĕсен командирĕ райĕçтăвком председателĕ Уваров юлташ пулнă. Малтанах партизансем йышлăнах пулман, анчах темиçе эрнерен унта пилĕкçĕр çын ытла пухăннă. Вара тăшман эшелонĕсем çырманалла вăркăнма, станцисенчи складсем çунма тытăннă, постсенчи часовойсем çухалнă, обозсем çитес вырăна çитеймен. Çакă нимĕçсене калама та çук пăлхатса янă. Вĕсем чăнчăнах урса кайрĕç. Пурăнма мар, сывлама та май пулмарĕ тек.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче кам кăштах активлăрах çын пулнă, çавсене пурне те тытса хупма тапратрĕç. Кĕçĕр пĕри çухалать, ыран — тепри. Урăх никам та курмасть вара вĕсене, йĕп пекех çухалаççĕ ыр çынсем.

Часах эпĕ те лекрĕм...

Ĕçĕ çапла пуçланчĕ. Çĕнĕ çул ыран тенĕ чух, гитлеровецсем килтен киле çÿресе, ялти мĕнпур хĕрсемпе çамрăк хĕрарăмсене комендатура умне пухрĕç. Вăл шутрах манăн кĕçĕн хĕре — Соньăна та тытса кайрĕç. Кун пек ĕç ахальтен пулас çуккине сиссе, хĕрĕсем хыççăн ашшĕ-амăшĕсем те пычĕç. Эпĕ те килте лараймарăм, мĕншĕн тесен ытти ялсенчен çамрăксене Германие хăваласа кайнă сас пурччĕ.

Пĕтĕмпе пĕр аллă хĕрпе хĕрарăма пухнăччĕ. Вĕсене салтаксем пĕр рет туса тăратсан, комендатурăран икĕ офицер тухрĕç те кашни умĕнчех чарăна-чарăна пăхкалама тытăнчĕç. Пасарта выльăх илнĕ чухне пăхнă пекех — питне-куçне, кĕлеткине, станне пăхаççĕ... Хĕр самаях илемлĕ пулсан, ăна çавăнтах стройран кăларса, аяккарах тăратаççĕ. Çавăн пек йĕркипе пăхса пырса, ман Соньăна та уйăрса тăратрĕç. Çапла шăп çирĕм хĕр суйласа илчĕç вĕсем.

— Мĕн пулать-ши, мĕне пĕлтерет ку? — тесе, эпир ним ăнланмасăр, вилес пек хăраса тăтăмăр.

Тĕреклĕ самăр офицер, çăварĕнчи хулăн сигарне чăмласа, уйăрса илнĕ хĕрсене тата тепĕр хут пăхса тухрĕ. Ним намăса пĕлмесĕрех, вăл хĕрсене кăкрисенчен, хулпуççисенчен, çурăмĕсенчен тĕрткеле-тĕрткеле илчĕ.

Хĕрĕсем ни чĕрĕ, ни вилĕ пулса тăчĕç, хăйсен хутне кĕрекенсем пуласса шаннă пек, унăн-кунăн пăхкалама пуçларĕç. Анчах эпир вĕсенчен чылай аякра пултăмăр (çывăха ямарĕç), вĕсем тавра чул сăнлă фашист салтакĕсем çеç тăчĕç...

Унтан офицер малтанхи вырăнтах тăрса юлнă хĕрсем еннелле çаврăнчĕ те аллипе сулчĕ:

— Шлехт! Пльохо! Нах хауз... Домой уходить!

Çавăнтах хăйсем суйласа илнисем патнерех пычĕ те:

— Ну, красавиц, ми з вами поехать! — терĕ.

Хĕрсем пурте пĕр харăс шавлама тапратрĕç:

— Ăçта илсе каясшăн эсир пире?

— Ниçта та каймастпăр эпир!

— Пире те киле ярăр!..

Вĕсем умне тăлмачă пырса тăчĕ те, хĕсĕк куçне вылятkаласа, пурне те илтĕнмелле ответ пачĕ:

— Халех хулана каятпăр, çĕнĕ çул каç аслă Германи офицерĕсене савăнтарма... Хăрамалли нимĕн те çук: çĕр каçатăр та ирхине таврăнатăр. Питĕ хаваслă пулать унта сире: эрех, музыка, ташă...

Вăл çав тери усаллăн кулса ячĕ. Хĕрсем хăйсене мĕншĕн пухнине тавçăрса илчĕç те, ниçта кайса кĕрейми хăраса, малтанхинчен темиçе хут хытăрах шавлама, кăшкăрса макăрма тытăнчĕç...

Унччен те пулмарĕ, комендатура умне хура брезентпа витнĕ грузовик пырса тăчĕ.

— Ляден! Садись! — кăшкăрчĕ офицер. — Скоро! Бистро!

Салтаксем хĕрсене машина çине лартма тытăнчĕç. Эпир, аппăшĕ-амăшĕсем, тĕркĕлтипех офицер патне чупса пытăмăр.

— Тархасшăн илсе ан кайăр!

— Хĕрхенĕр!

— Çамрăк вĕт-ха вĕсем...

Итлеççĕ-им? Пăшал кĕпçисемпе, чышкисемпе çапса, урисемпе тапа-тапа хăвалама тытăнчĕç пире. Çав вăхăтрах хамăн Соня хыттăн кăшкăрнине илтрĕм:

— Ан çулăх, йытă! Яр!..

Пăхатăп — пĕр нимĕçĕ ăна пилĕкĕнчен ыталаса тытнă та вăйпах машина çине хăпартса пăрахасшăн. Соня пур вăйĕпе тапкаланать, ун аллинчен вĕçерĕнесшĕн — тĕртет ăна, чышать. Тутри салтăннă, çӳçĕ-пуçĕ арпашса кайнă, куççулĕсем чарусăр юхаççĕ. Тахăш самантра чуп-

са пытăм ун патне — астумастăп. Темскер хаяррăн кăшкăрса ярса, Соньăна фашист аллинчен вĕçертме пикентĕм. Анчах мана çавăнтах тĕксе ячĕç те — ластах ӳкрĕм. Унтан Соня хыттăн: «Сывпул, атте! Пĕтрĕм эпĕ!» тесе кăшкăрнине çеç илтсе юлтăм. Çав вăхăтрах хĕрсене тиенĕ грузовик вырăнтан хускалса кайрĕ...

Çав тери хурланса, тарăхса, хам ним тума та пултарайманшăн кӳренсе, ватă пуçпах макăрса ятăм çавăнта. Куççульсемпе пĕрле, вĕçĕмсĕр ылхавлă сăмахсем каларăм:

— Чуниллисем, урнă йытăсем! Тавăрĕç-ха сире пирĕн куççульсемшĕн, пиге хытă тавăрĕç!

Чышкăпа юнаса, машина хыççăн чупрăм...

Темле-çке чĕре çурăлса каймарĕ çавăн чух.

...Аслă хĕрпе иксĕмĕр çĕрĕпех çывăраймарăмăр. Вăл пĕрмай макăрчĕ, эпĕ пӳлĕм тăрăх таттисĕр калле-малле утрăм. Хăлхара çаплах Соня юлашки хут кăшкăрни янăраса тăчĕ: «Сывпул, атте, пĕтрĕм эпĕ!»

— Ăçта-ши вăл халь? Мĕнле тискер йытă асаплантарать-ши ăна?..

Чĕре тӳсмелле мар ыратрĕ, тăнлавсенчи юн тымарĕсем мăлатукпа шакканă пек тапса тăчĕç, ал-урасем чĕтрерĕç. Паллах ĕнтĕ, калама çук хытă пăлханнă. Кун пек хуйхăна никам та лăпкăн тӳссе ирттерме пултарас çук çав. Хăйĕн тăван ачине камăн кашкăр аллине парас килтĕр-ха?

Çурçĕр иртсен пĕр-ик сехетре, сасартăк, пĕтĕм яла çав тери вăйлă взрыв кисрентерчĕ. Унтан уйрăм-уйрăм пăшал сассисем илтĕнчĕç, ял варринче такамсем кăшкăрма пуçларĕç, пулемет шатăртатма тапратрĕ. Темскер пулса иртрĕ, анчах нимĕн те ăнланма пулмарĕ. Эпир Верăпа иксĕмĕр те, сиксе тăрса, урамри шава итлерĕмĕр.

Унччен те пулмарĕ, хамăрăн урам енчи хӳме çине такам питĕ хăвăрттăн чакаланса хăпарни, унтан килхушшинелле этем кĕлетки ӳкни илтĕнчĕ. Кĕçех çенĕх алăкне хăвăрт-хăвăрт шаккарĕç.

Хытă хăранă пулин те, эпĕ çенĕхе тухрăм.

— Кам унта? Мĕн кирлĕ?

— Уçăр-ха, Яков Иванович,— илтĕнчĕ тулти сасă.

— Кам эсĕ?

— Ана кайран калăп, эсир алăкне часрах уçăр!

— Палламан çынна епле кĕртес-ха манăн?

— Эп сире питĕ лайăх паллатăп, сирĕн Соньăна та паллатăп, вăл та пĕлет мана... Тархасшăн, уçăр! Ан хăрăр, эп тăшман мар...

Соня ятне асăннине илтсен, ку чăнах та ытла ют çынах мар пулĕ-ха тесе, уçса кĕртрĕм çавна.

— Лампа пур-и сирĕн?— нимрен малтан ыйтрĕ хайхискер. — Çутасчĕ часрах...

— Мĕн тума?

— Юн юхать манăн, аманнă эпĕ... Çыхасчĕ!

Чĕре сиксе тухас пек тапрĕ. Шутлăр-ха, вăрçă ман пӳртех пырса кĕчĕ вĕт! Юн, перевязка... Ман пек мирлĕ çын хăçан шухăшлама пултарнă ун çинчен?.. Васкасах пĕчĕкçеç «чĕпкуçне» çуткаларăм та, хам умра çамрăк кăна типшĕмрех каччă тăнине куртăм. Çара пуçăн, çăмăл фуфайкăпа, сылтăм аллипе сулахайне тытнă, унăн пӳрнисем тăрăх юн сăрхăнать... Вера часрах шурă катанпир татăкĕ тупса çыхма пуçларĕ. Пуля чавсаран аяларахран шăтарса кайнă курăнать. Çыхнă чух каччă шăлĕсене çыртса тăчĕ, питĕ хытă ыратнă ĕнтĕ унăн, анчах пĕрре йынăшса илесчĕ хуть! Сас та кăлармарĕ.

— Шыв парăр-ха, тархасшăн,— терĕ вăл, аллине çыхса пĕтернĕ хыççăн пукан çине ларса. — Аш хыпса тухать...

Вера ăна куркапа шыв пырса пачĕ. Вăл шыва пĕрре сывлăш çавăрмасăрах ĕçсе ячĕ.

— Тата...

Вера ăна тепĕр курка пачĕ. Каччă ăна та çавăн пекех çăтрĕ.

— Палламастăр эппин?— тесе ыйтрĕ унтан.

— Таçта курнă пек туйăнать... — терĕ Вера, ун çине пит те тинкерсе пăхса. — Комсомол райкомĕнче ĕçлемен-и эсир?

— Çавăнта ĕçленĕ çав. Сирĕн Соня питĕ лайăх пĕлет мана, мĕншĕн тесен вăрçă умĕн вăл комсомола кĕчĕ, эп ăна рекомендаци патăм. Ăна паян гестапо илсе кайнă вĕт?

— Эсир ăна ăçтан пĕлетĕр?

— Пурне те пĕлетпĕр эпир, мĕншĕн тесен хуть те ăçта та хамăрăн çынсем пур пирĕн, пĕлтерсех тăраççĕ... Паллах, сирĕн çинчен лайăх пĕлмен пулсан, килсе те кĕрес çукчĕ эпĕ.

— Сире мĕн пулчĕ вара? Ăçта амантăр?

— Взрыв илтрӗр пулӗ? Нимӗçсен комендатурӗ турӑас пулса тӑчӗ. Çунать халь. Кайран вӗсем те пеме тапратрӗç. Анчах партизансене тытма аллисем кӗскерехха вӗсен.

— Эсир партизан эппин? — тӗлӗнсех кайрӑмӑр Верӑпа иксӗмӗр те.

— Хальхи вӑхӑтра тӑшман тытса илнӗ вырӑнсенче пурӑнакан кашни совет çынни — партизан,— терӗ вӑл лӑпкӑнах. — Сире те партизан теме пулать, мӗншӗн тесен эсир партизанӑн суранне çыхса ятӑр, ӑна пулӑшрӑр...

Пӗр вӑхӑт шӑпланнӑ пек пулнӑ пӑшал сассисем тепӗр хут илтӗнме пуçларӗç. Çывӑхран çывӑха килсе пычӗç вӗсем, уçӑран уçӑрах янӑрарӗç. Пирӗн тӗлпе темиçе çын юланутсемпе тӗпӗртеттерсе иртсе кайрӗç. Автомат черечӗсем шатӑртатрӗç, таçта каллех взрыв кӗрӗслетрӗ.

Партизан йӑпӑртах ура çине сиксе тӑчӗ.

— Çавсем пире шыраççӗ ӗнтӗ. Эп пытансан, лайӑхрах пулать пулӗ, тетӗп... Ир енне тухса кайӑп, анчах халлӗхе тӑхтас пулать. Вӗсем ӗнтӗ пур çӗрте те çавӑрттараççӗ...

Аçта пытарас? Этем йӗп мар-çке, ӑна йӑпӑр-япӑрах ним палӑрми туса хума çук. Апла та, капла та шухӑшласа пӑхрӑмӑр. Çав хушӑра урамри шав татах вӑйланчӗ. Пирӗн васкамалла пулчӗ. Çавӑнпа та партизана сивӗ чӑлан урайне уçса пытартӑмӑр та çиелтен питӗрсе хутӑмӑр. Хамӑр каллех пӳрте кӗрсен, Вера урайне тумланӑ юна шӑлса тасатрӗ. Опытлӑ конспираторсем пекех ӗçлерӗмӗр çав...

Çаксене туса çитертӗмӗр çеç — хапхаран шанлаттарма тапратрӗç.

— Уç! Уç халех!

Çӗмӗреççӗ кӑна... Хамӑр пата кам тата мӗншӗн килнине чухласа, эп юриех васкамасӑр, кӑштӑртаткаласа тухрӑм.

— Мӗн кирлӗ сире? Тӗттӗм-çке, нимӗн те курмастӑп,— текелесе пытӑм урам хапхи патнелле.

— Эпир сана халех çутӑ кӑтартатпӑр акӑ! Уç часрах, ват сысна!— кӑшкӑрса пӑрахрӗç мана.

Хапхана уçсанах, пӗрисем мана çавӑрса тытрӗç, теприсем пӳртелле кӗмсӗртеттерсе чупса кӗрсе кайрӗç.

— Кам пур сан патӑнта?

— Аçта пытартӑн, кала халех? Асту, пуçна çапса салататпӑр, ватӑ анчӑк!

«Кусем нимӗн те пӗлмеççӗ, юри «на пушку» илесшӗн», терӗм те хама хам, мӗн вӑй çитнӗ таран лӑпкӑн калаçма тӑрӑшрӑм:

— Никам та çук ман патра, никама та курман эпӗ, нимӗн те пӗлместӗп...

Кӑкӑртан тытса силлерӗç мана, пӑшалпа тӗллесе те пӑхрӗç, анчах эпӗ пурпӗр хамӑнне петӗм:

— Шырӑр, ара, ухтарӑр, никам та çук...

Вӗсем чӑнах та унта та кунта — чӑлана, тӗпсакайне, мачча çине пӑхрӗç, анчах эпӗ хама хам çирӗппӗн тытни вӗсене ӗнентерчӗ пулас. Епле пырса кӗнӗ, çавӑн пекех шавласа, кӗмсӗртеттерсе тухса кайрӗç.

— Сана эпир пурпӗрех лектеретпӗр-ха!

— Ӑна валли сӑлтавӗ кирлӗ,— терӗм эпӗ. — Айӑпсӑр çынна ӑçтан тивен?

— Кирлӗ пулсан, сӑлтавне хамӑрах тупӑпӑр эпир, санран ыйтса тӑмӑпӑр!

Ӗненетӗр-и, çакӑн хыççӑн чӗре темле уйрӑмах çирӗп кӑмӑлпа тулса ларчӗ, хамра çителӗклӗ вӑй пуррине туйрӑм эпӗ! Улттӑн-çиччӗн пырса та нимӗн те тӑваймарӗç вӗт — партизана чиперех хӑтарса хӑвартӑм! Тепрер сехетрен вара эпир ӑна чӑлан айӗнчен кӑларса пӳрте кӗртрӗмӗр те кӑмака çинчех ӑшӑтса çывӑратрӑмӑр. Ир енне тин, пире тав туса, хӑй çулӗпе тухса кайрӗ вӑл. Юлашкинчен питӗ лайӑх сӑмахсем каласа хӑварчӗ:

— Нихçан та парӑнтарас çук пире ютран килнӗ хурахсем. Хамӑрӑн ирӗке эпир каллех тавӑратпӑр! Ӗненӗр, çирӗп шанса пурӑнӑр!..

Ирхине вӑраннӑ-вӑранманах Соня ӑша кӗрсе кайрӗ. Мӗн пулнӑ-ши ӑна? Чӗрӗ-ши вӑл? Таврӑнать-ши хӑçан та пулин?

Çук, таврӑнмарӗ ман хӗрӗм. Ялтан машинӑпа тиесе тухса кайнӑ хӗрсенчен нихӑшӗ те каялла килмерӗ. Пӗр кун иртрӗ, виççӗ, пиллӗк, унтан вуннӑ та иртсе кайрӗ... Никам та, нимӗн те пӗлмерӗ вӗсем çинчен. Чӗрери хуйхӑ йывӑр чул пек пусса тӑчӗ.

...Çӗнӗ çул каç партизансем нимӗççен комендатурине йывӑр гранатӑсемпе пере-пере сиктернӗ иккен. Нумай фашистсене вӗлернӗ. Коменданта, хайхи пирӗн Соньӑна вӑйпах хулана ӑсатаканнине, питӗ хытӑ амантнӑ, вара ӑна пирӗн патран самолетпах илсе кайнӑ. Анчах çавӑн хыççӑн ял çине тата ытларах хурлӑх йӑтӑнса анчӗ. Çур

ял тӳрех пушанса юлчĕ — пĕр кун хушшинчех пухса кайрĕç. Кĕçех мана та тытса хупрĕç...

Верăпа сывпуллашсах тухрăм эпĕ. Темшĕн эпир пĕр-пĕрине текех курас çук пек туйăнчĕ мана. Чĕре улталаман-мĕн, эп ăна кайран чăнах та кураймарăм. Анчах ун çинчен каярахпа калăп-ха.

Вăрçăччен колхоз вити пулнă темĕн пысăкăш сарайĕнче эпир икçĕр çын ытла лартăмăр. Пирĕн ялтан çеç мар, ытти ялсенчен те сĕтĕрсе пырса тултарнă иккен унта.

Шартлама сивĕ... Вут хутса ăшăтма мар, чӳрече шăтăкĕсене те питĕрмен, çил шăхăрать кăна. Пырать, кунта кивĕ улăм юлкаланă-мĕн те, çавăн ăшне сыснасем пек чакаланса кĕрсе выртаттăмăр. Ни çăкăр, ни шыв памаççĕ. Паллах, тытса хупнисен тăванĕсем кашниех çимеллисем илсе пынă унта, анчах вăл апат-çимĕç пирĕн пата çитмен, хуралти нимĕç салтакĕсем ăна хăйсемех хыпса янă.

Допроса икшер-виçшер çынна пĕрле чĕнтеретчĕç. Вĕсем вара яланах палламалла мар пулса таврăнатчĕç: е чĕп-чĕр юн, е куçĕ-пуçĕ шыçса ларнă, е аллине пăрса хуçнă. Нимĕçсем допрос тăвакан пӳлĕме пурте «вилĕм пӳлĕмĕ» тетчĕç, унтан сыввăн тухасси çинчен никам та шутлама пултарайман.

Сивĕ сарайсенче икĕ талăк ытла пĕр тĕпренчĕк çăкăр та ăша ямасăр ларса вилес патнех çитнĕ хыççăн алăкран ман хушамата та кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Просветов! Тух!

Тăрса утрăм... Тĕлĕнсе каймалла: те пачах та нимĕн туйми пулса çитнĕ эпĕ, те урăх сăлтавпа, анчах ним хăрани те пулмарĕ манăн çав самантра! Лăпкăнах пырса кĕтĕм «вилĕм пӳлĕмне». Чĕркуççисем çеç чĕтрерĕç кăштах...

— Вĕлерччĕр, анчах эпĕ пурпĕрех никама та сутас çук, ман чĕрене те, кăмăла та вĕсем улăштарма пултарас çук!— терĕм хама хам.

Пӳлĕме кĕтĕм те, сĕтел хушшинче хайхи пĕркун мана писарь тума тăрăшнă гестапо пуçлăхĕ ларнине курах кайрăм. Вăл мана тӳрех палласа илчĕ, йытă.

— Аха-а, эсĕ те лекрĕн эппин! Питĕ аван, питĕ аван,— сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ вăл.— Каллех тĕл пултăмăр иккен? Хальхинче ĕнтĕ пĕркунхи пек мăнкăмăллă пулмастăн пулĕ, тетĕп...

Унăн куçĕ çав тери усал çутăпа йăлтăртатса илчĕ.

— Пĕтерет ку мана,— шухăш вĕçсе илчĕ пуçăмра.— Çăлăнăç кĕтмелли çук...

Çав вăхăтра коридорта, алăк хыçĕнче, темиçе çын кĕрешни, такама çапни илтĕнчĕ. Тахăшĕ хăлхана çурса ямалла кăшкăрчĕ:

— Айăплă мар эпĕ, мĕншĕн хупса усратăр мана? Çав-çавах нимĕн те калама пултараймастăп сире! Пĕлместĕп эпĕ нимĕн те!..

Унтан алăк петлĕрен тухса вăркăнас пек уçăлса кайрĕ те, «вилĕм пÿлĕмне» хура сухаллă пĕр лутака çынна кĕртсе ывăтрĕç. Çын стена çумне пырса çапăнчĕ, унтан урайне ÿкрĕ.

— Чуниллисем эсир! Мĕншĕн асаплантаратăр? Вĕлерĕр часрах пĕреххут!— йынăшса макăрса ячĕ вăл.

Ун хыççăн пÿлĕме сиксе кĕнĕ офицер ăна тимĕрленĕ аттипе янахĕнчен тапрĕ. Çыннăн çăварĕнчен юн юхса анчĕ.

— Мĕн?— хаяррăн пăхса илчĕ ун çине гестапо начальникĕ.

— Эп айăплă мар, господин...— урмăшса кайнă куçне çавăркаласа, çăварĕнчен юхсах тăракан юнне сура-сура калама пуçларĕ сухаллă çын. — Ма çыпăçаççĕ вĕсем ман çумма? Кунне виçшер хут допроса сĕтĕреççĕ, кашнинчех хĕнеççĕ, пуçа çапа-çапа шăтарса пĕтерчĕç... Анчах эпĕ нимĕн те пĕлместĕп, курман эпĕ нимĕн те, партизансемпе нихçан та тĕл пулман! Халь персе вĕлерĕр хуть, пурпĕр, асапланса пурăннинчен çăмăлтарах пулĕ...

— Пăлхавçă вăл, господин гауптман,— йăрстах тăсăлса тăчĕ халь çеç кĕнĕ офицер. — Большевиксен агитаторĕ! Хам хăлхапа илтрĕм: фюрера урнă йытă, терĕ, ытти арестованнăйсене Хĕрлĕ Çар часах каялла килессипе лăплантарать...

— Каламан, нимĕн те каламан,— чĕтрекен пуçне пăркаласа илчĕ сухаллă çын.

Гестапо пуçлăхĕ нимĕн те каламарĕ. Кобурĕнчи револьверне кăларчĕ те тÿрех ăна пуçĕнчен печĕ. Çын аллисемпе хăлаçланса ÿкрĕ, анчах вилмерĕ. Нимĕç ăна тепре печĕ — каллех пуçĕнчен. Çын çаплах тапаланчĕ. Унăн пичĕ тăрăх темиçе йĕрпе юн юхрĕ, вăл хăрăлтатма тапратрĕ. Çапах та, çын вилсе çитмерĕ-ха. Кашни хашкамассеренех унăн çăварĕнчен юнлă кăпăк тухрĕ.



Урайёнче ун тавра юн кӳлли ӳснӗҫемӗн ӳссе пычӗ. Анчах вӑл ҫаплах хускалчӗ-ха. Вара фашист, ун патне сиксе пырса, ӑна ҫӑварӗнчен печӗ, пуля ҫыннӑн ӗнси витӗр тухса кайрӗ пулас: юн фонтан пек тапма пуҫларӗ кунтан. Халь ӗнтӗ ҫыннӑн пӗтӗм кӗлетки юн ӑшӗнче выртрӗ. Текех хускалмарӗ вара вӑл.

— Ӑаларса ывӑтӑр!— кӑшкӑрчӗ гестапо пуҫлӑхӗ.

Икӗ салтак сухаллӑ ҫынна аллисенчен тытса сӗтӗрсе тухса кайрӗҫ. Ун хыҫҫӑн аршӑн сарлакӑш юнлӑ йӗр хуралса юлчӗ.

— Халь ӗнтӗ мана... — шухӑшларӑм эпӗ. — Мана та ҫавӑн пекех...

Анчах темле телей ҫаврӑнса тухрӗ ман тӗле. Допрос тумарӗҫ. Гестапо пуҫлӑхне васкавлӑн таҫта чӗнсе кайрӗҫ те, «вилӗм пӳлӗмӗнче» манпа пӗр салтак ҫеҫ юлчӗ. Ҫур сехет пек вӑхӑт иртсен, ним каламасӑрах каялла, сарайне илсе кайса хупрӗҫ. Тепӗр кунне ирхине вара пире, пурне те урама илсе тухса, мӑн ҫул тӑрӑх хула еннелле хӑваласа кайрӗҫ.

Хӑрушла путешестви пулчӗ вӑл! Выҫӑпа, пӗрмай асаплантарнипе вӑйсӑрланса ҫитнӗ ҫынсем ӗретлӗн утаймарӗҫ, аран сулланса пычӗҫ. Юланутлӑ нимӗҫсем вӗсене пӗрмаях хыҫалтан хӳтерчӗҫ, кам та пулин ҫултан пӑрӑнсан е кая юлма пуҫласан, вӗсене ҫавӑнтах саламатсемпе турта-турта ҫапрӗҫ, лашасемпе таптатрӗҫ. Пачах та халран кайнипе урисене шутарайми пулнисене — пӗр вунӑ ҫынна пулӗ — ҫул ҫинчех пӗре-пере пӑрахса хӑварчӗҫ. Эпӗ те лекеттӗм ӗнтӗ ҫак шута, анчах мана икӗ ҫамрӑкрах ҫын ҫул тӑршшипех ик енчен тытса пулӑшса пычӗҫ те ҫавӑнпа ҫеҫ хӑтӑлса юлтӑм, атту халиччен ман шӑмӑсене те йытӑсем кӑшласа янӑ пулӗччӗҫ...

Каҫ пуласпа пире хулари тӗрмене илсе кӗртсе хупрӗҫ. Уйӑха яхӑн арестант пулса пурӑнтӑм вара эпӗ. Мен кӑна тӳссе ирттермерӗм пулӗ ҫав хушӑра! Анчах этемӗн чунӗ час тухмасть иккен, вилме патне ҫитнӗскерех чӗррӗн юлтӑм вӗт!

Пӗр пӗчӗк камерӑра эпир утмӑлӑн ытла пултӑмӑр. Выртма мар, ларма та вырӑн ҫукчӗ. Вуҫех лараймитӑрайми пулнисем ҫеҫ выртрӗҫ, ыттисем, пӗр-пӗрин ҫине тӗренсе е ура вӗҫҫӗнех, стена ҫумне тайӑнса ҫывӑрчӗҫ. Апат вырӑнне — ирпе каҫ пӑтранчӑк шыв, пӗр воҫмушка пек тӑм еверлӗ ҫӑкӑр татӑкӗ. Шыв та хӗрхенетчӗҫ вӗт,

ăна та кунне пĕр кружкăран ытла памастчĕç, çăхансем! Мĕн чухлĕ ырă халăх пĕтрĕ пуль унта!

Кашни ир камерăсенчен темиçешер виле сĕтĕрсе тухатчĕç. Кашни каç коридор вĕçĕнчи «асап каменринчен» çынсем чуна çурса ямалла йынăшса кăшкăрни илтĕнетчĕ. Пĕр каçхине арçынсен сасси илтĕнет, тепринче — хĕрарăмсен...

«Асап каменринче» сасăсем илтĕнме пуçласан, тĕрме шăп пулатчĕ, пурте паян кама асаплантарнине, кама черет çитнине тавçăрса илме тăрăшатчĕç. Нумайăшĕсем хăйсен çывăх çыннисене палласа илетчĕç вара. Ирсерен вĕсене тимĕрлесе пĕтернĕ хура хупă грузовикпа (ăна «душегубка» тетчĕç) хула хыçне илсе кайса тăкатчĕç, вăл машинăра совет çыннисене газпа антăхтарса вĕлернĕ...

Пĕр каçхине, çавăн пек асаплăн кăшкăрни пайтахчен таттисĕр хăлхана хупласа тăнă хыççăн, коридорта ура сассисем илтĕнчĕç. Тĕрмере шăп пулса тăчĕ. Сасартăк çав хăрушла шăплăхра çăлкуç пек таса çамрăк сасă янăраса кайрĕ:

— Юлташсем! Пире вĕлерме илсе каяççĕ... Сывă пулăр! Ан парăнăр! Пурне те вĕлерсе пĕтереймĕç! Ĕненĕр, юлташсем: тăван халăх манман пире! Хĕрлĕ Çар килет, вăл совет çĕрне фашистсенчен тасататех! Ĕненĕр...

Урăх кăшкăрма памарĕç ăна. Тăруках кĕрешни, çапни илтĕнчĕ, ура сассисем хăвăртланчĕç — конвоирсем хăйсем илсе каякансене часрах хăвалама тытăнчĕç курăнать. Çапах та, темиçе самантран, коридорăн тепĕр вĕççĕнчен юлашки хут янраса илчĕ çамрăк сасă:

— Сывă пултăр пирĕн Çĕршыв! Сывă пултăр пирĕн халăх!..

Çавăнтах пăшал сасси кĕрĕслетсе илчĕ. Паллах ĕнтĕ, çав вĕри чĕреллĕ, вилес умĕн те парăнман совет çыннине тĕрмерен илсе кăларичченех персе пăрахрĕç...

Тахăш камерăра темиçе çын пĕр харăс юрласа ячĕç:

> Вы жертвою пали в борьбе роковой,
> Любви беззаветной к народу...

Кĕçех вĕсен сассисем çумне юнашар камерăри сасăсем хутшăнчĕç. Юрă вăйланчĕ:

> Вы отдали все, что могли, за него,
> За жизнь его, честь и свободу...

Унтан пур камерасем те — пĕтĕм тĕрме юрлама тапратрĕ. Надзирательсем ухмаха ернĕ пек чупкалама тытăнчĕç коридор тăрăх.

— Молчать! Халех чарăнăр! Пурне те карцера лартатпăр!..

Вĕсем камерăсен алăкĕсенчен шаккарĕç, пырĕсене çурса кăларас пек кăшкăрчĕç, темле те хăратма тăрăшрĕç — ним те пулăшмарĕ. Юрă пур камерăсенче те янăрарĕ... Халĕ ĕнтĕ хупса лартнă çынсем çеç мар, тĕрме çурчĕ хăй, стенари кашни кирпĕч юрланăн туйăнчĕ.

Нимĕн те тăваймарĕç фашистсем çавăн хыççăн, мĕншĕн тесен уйрăммăн никама та айăплама май пулмарĕ вĕсен. Икĕ кун апат памасăр, уçăлма кăлармасăр усрарĕç кăна.

...Талăк хыççăн талăк иртрĕ, эпĕ хама мĕн пулассине пачах та пĕлмесĕр пурăнтăм. Вăй пĕтрĕ, ĕнтĕ аран сывлакан пулса çитрĕм.

— Çак тамăкрах вилмелле пулĕ-ши?— хурлăхлăн пăчăртанчĕ чĕре.

Çирĕм виççĕмĕш кун çитсен тин допроса чĕнчĕç мана. Камерăра çывăхрах паллашнă çынсемпе алă парсах сывпуллашса тухрăм.

— Асаплантараççех пулсан, тӳсеймест ман чĕре,— терĕм.

Шăп кăнтăрлаччĕ. Тахăш камерăри хĕрарăмсене уçăлма кăларнă-мĕн те, вĕсем аллисене каялла тытса тĕрме килхушшинчи ункă пек сукмак тăрăх утатчĕç. Манăн конвоир хайĕн тусне курчĕ пулас та мана тăратсах унпа калаçма пикенчĕ. Ман тĕлпе, пирĕн хыççăн тепри, хĕрарăмсем утса иртрĕç... Халь çеç хурăмланма пуçланă çамрăк хĕрсем те, 50—60 çула çитнĕ карчăксем те пурччĕ вĕсем хушшинче. Анчах пĕрин те чĕрĕ этем сăнĕ çукчĕ, пурте начарланса, сарăхса, тăпра тĕслĕ пулса ларнă.

— Мĕншĕн асапланаççĕ çак мĕскĕнсем?— тесе тăтăм эпĕ, вĕсем çине хурлăхлăн пăхса.— Кама мĕн тунă вĕсем? Ырă кăмăлпа ĕçлесе, хăйсен телейĕшĕн çеç тăрăшнă вĕт...

Унтан сасартăк куçа чарсах пăрахрăм... Темиçе самант хушши сывлăш та тухмарĕ пулас манăн... Ансăр сукмак тăрăх умлăн-хыçлăн утакан хĕрарăмсем хушшинче эпĕ хамăн хĕре — Соньăна куртăм! Малтанах ĕненес те килмерĕ, улшу куратăп пуль, терĕм, çавăнпа

та шывланакан куҫа часрах шăлкаласа илтĕм. Ҫук, чăнах иккен, хамăн хĕрĕмех курнă эпĕ...

Ҫĕрелле пăхса, тарăн шухăша кайса утаканскер, вăл мана курмарĕ. Хам тĕле ҫитсен вара эпĕ ăна хуллен кăна ятпа чĕнтĕм:

— Соня...

Вăл пуҫне ҫĕклесе мана курчĕ те тап! чарăнса тăчĕ.

— Атте! Епле ку? Эсĕ те кунта-и?!— тесе ячĕ те, ҫавăнтах аллисене тăсса ман паталла чупса пычĕ, мана хыттăн ыталаса илсе, макăра-макăра, ниҫта кайса кĕрейми пăлханса чуптума тапратрĕ...

Анчах темиҫе секунд хушши ҫеҫ тăсăлчĕ ҫав пирĕн телей. Пĕр харăсах ик-виҫ салтак чупса пычĕҫ те пире ик еннелле туртса уйăрчĕҫ. Соньăна пуҫĕ урлă резина патак лекрĕ, мана хамăн конвоир темиҫе хут чышса сывлайми туса пăрахрĕ. Вара эпир пĕр-пĕрин ҫинчен нимĕн те пĕлеймерĕмĕр.

Допроса илсе ҫитерсен, конвоир офицера тӳрех килхушшинче пулса иртнĕ ĕҫ ҫинчен каласа пачĕ пулмалла, мĕншĕн тесен офицер нимрен малтан ҫавăн пирки ыйтма тапратрĕ.

— Қам вăл? Мĕнле хĕрарăма тĕл пултăн?

— Манăн ученица пулнăскер,— тесе тыттартăм эпĕ, вĕсем Соня ман хĕр иккенне пĕлсен ăна тата йывăртарах пулса тухасран шикленсе.

— Суятăн вĕт?

— Тĕп-тĕрĕс калатăп. Суйма — ватă эпĕ.

— Тен, тăвану вăл санăн?

— Ҫук...

— Е хĕрӳ пулĕ?

— Ман хĕр килтех пурăнать...

Офицер кĕтесре ларакан чĕрĕ какаӗ пек хĕрлĕ питлĕ салтака темскер каларĕ. Вара мана, ҫавăнтах тумтире хывтарса, сак ҫине хучĕҫ те шалавара туртса антарчĕҫ.

— Вĕрентер-ха эпир сана... учитель!— терĕ те офицер йĕрĕнчĕклĕн, хăй пӳлĕмрен тухса кайрĕ.

Шомполпа пĕр вунă хут ҫапнине астăватăп, унтан вара тăна ҫухатнă. Темĕн чухлĕ выртнă — ăна пĕлместĕп, анчах тăна кĕрсен хам йĕп-йĕпе пулнине туйрăм. Мана тăна кĕртме ҫиелтен шывпа сапнă иккен. Эп куҫа уҫсанах, мана ҫĕклесе тăратрĕҫ.

— Ну, ăс кĕчĕ-и пăртак?— куҫхарши айĕн пăхса илчĕ тахăш вăхăтра таврăннă офицер. — Малашне тĕп-тĕрĕс

ответсем парасса шанатăп. Кала, партизансене епле пулăшса тăтăн?

— Никама та пулăшман эпĕ.

— Çĕнĕ çул касхине кама пытартăн хăвăн патăнта?

— Никама та курман эпĕ...

— Суятăн, йытă! Çынсем курнă вĕт!

— Курнă пулсан, ма тытман?

— Эс чипер калаçкала, атту акă тепĕр хут йĕмне антаратпăр!

— Сирĕн ирĕк.

— Кала, теççĕ сана: кама пытартăн? Миçе çынна?

— Пĕр çынна та курман...

— Ан тун, сысна! Çаплах каламастăн пулать? Чунна кăларатăп эп санăнне! Халех персе пăрахатăп, илтетĕн-и?

— Вăл сирĕн ĕç ĕнтĕ, эсир ăна ăста пултаратăр!— тӳссе тăраймарăм тек. — Çăмăл ĕç... Тата эсир хăнăхнă ăна...

— А-а, эс калаçса тăратăн-и тата?! — Офицер сиксе тăчĕ те, сĕтел урлă кармашсах, янахран чышрĕ. Унпа пĕр вăхăтрах хыçалтан салтак чупса пырса хăлхаран çапрĕ. Эп сулăнса кайса ӳкрĕм. Салтак ман çине хăпарса сикрĕ. Çавăнтан вара нимĕн те астумастăп, тĕпсĕр тĕттĕм шăтăка путнă пекех пулнă.

...Ир енне темле çырмара тăна кĕтĕм. Пурпĕрех вилет тесе, тĕрмерен кăларса пăрахнă пулмалла мана. Тăруках хам ăçтине те тавçăрса илеймерĕм, ниçталла кайма та пĕлмерĕм. Тул çутăлса çитессе кĕтме шутларăм. Çутăлсан вара сăртра тĕрмен кăвакрах стенисене куртăм та, хама тем пекех хĕн пулнă пулсан та, кунтан аяккарах кайма тăрăшрăм. Пĕтĕм шăмшак, ал-ура, пуç — тӳсме çук ыратаççĕ, пĕр тумлам вăй та çук хамăн, анчах шалти сасă çаплах хăваларĕ мана:

— Ут, çапах та ут... Çăлăн... çăлăнатăн!

Çырма тăрăх хула хĕррине тухсан, малалла тек ниçта та кайма пултарас çуккине туйса, пĕр пĕчĕкçеç пӳрт патнелле пырса, алăкран хуллен шаккарăм. Кăшт тăхтасан, мана хирĕç хам пекех ватă хĕрарăм тухрĕ.

— Мĕн кирлĕ сана?— тесе ыйтрĕ вăл, чарăлса кайнă куçĕпе ман çине шиклĕн пăхса.

— Кăштах ăшăнасчĕ те канасчĕ... — терĕм эпĕ.

— Эсĕ тĕрмерен мар пулĕ-çке?

— Ма апла ыйтан?

— Сăну çавăн пек...

— Ан та ыйт эппин,— алăпа султăм вара эпĕ.

Карчăкĕ пит аванскер пулчĕ. Эпĕ ăна хам кам пулнине, мĕн-мĕн тӳссе ирттернине кĕскен кăна каласа патăм та, вăл мана макăра-макăрах пăхма тытăнчĕ.

— Манăн ывăла та çавăн пекех тытса кайрĕç,— терĕ вăл,— çĕр варринче, хурахсем пек килсе кĕрсе... Анчах та вăл тарса хăтăлнă хыпар тухрĕ-ха... Вĕсене кунтан урăх вырăна хăваласа кайнă чух вăрмантан темле пăшаллă çынсем тăрук сиксе тухса хăтарнă, тет. Тĕрĕс пултăрах çав сăмах!

Хама тем пекех йывăр пулнă пулин те, эпĕ ăна çĕнĕ çул каç пирĕн патра пулнă партизан сăмахĕсемпе лăплантарма тăрăшрăм:

— Нумаях пымасть ку хурлăх, хăваласа яраççех усал тăшмана! Эпир каллех ирĕклĕ çынсем пулатпăр... Шанчăка çухатма кирлĕ мар!

Çавăн пек калаçкаласа ларсан, карчăк татах ырă кăмăлланса кайрĕ. Ывăлĕ çинчен калама пуçларĕ. Районта комсомол енĕпе ĕçленĕ, тет. Хăш районта ĕçлени çинчен ыйтсан, вăл шăпах пирĕн район ятне асăнчĕ. Вара эпĕ унăн ывăлĕн сăн-сăпачĕ пирки ыйтса пĕлме пуçларăм.

— Çӳлĕ, сар çӳçлĕ, типшĕмрех, кăвак куçлă,— терĕ карчăк.

Эпĕ унăн сăнӳкерчĕкне кăтартма ыйтрăм:

— Курам-ха, тен, эпĕ ун çинчен мĕн те пулин пĕлетĕп пулĕ...

Карчăк ман çине пит те тĕлĕнсе пăхрĕ, çапах та урайĕнчи пĕр хăмана çĕклесе, кивĕрех альбом кăларса пачĕ. Эпĕ пĕр-ик страница уçсанах пĕр ӳкерчĕк çине тĕллесе кăтартрăм:

— Çакă-и? Çав вĕт?

— Çавă... — Карчăк тата ытларах пăлханма пуçларĕ. — Аçтан пĕлетĕн эс ăна?...

— Санăн ывăлу сывах, çĕнĕ çул каç ман патăмра выртса кайрĕ,— терĕм вара эп ăна. — Чăн та, питĕ маттур вара, ун пекки ниçта та, нихçан та аптрас çук! Питĕ лайăх астăватăп ăна...

Карчăк малтанах ман сăмахсене ниепле те ĕненесшĕн пулмарĕ, çĕнĕ çул каç хамăр патра мĕнле ĕç пулса иртнине йĕркипе каласа парсан тин вара, савăннипе, макăрса ячĕ,

— Ыр ҫынсем пурах иккен пирӗн... Спаҫҫипӑ сире, тӑванӑм, ӗмӗрне те, виличчен те манмӑп куншӑн!

Виҫӗ талӑк пурӑнтӑм ун патӗнче. Эпӗ хӑйӗн ывӑлне тӑшмансенчен хӑтарнине пӗлсен, хӑй тӑванӗ пекех пӑхса усрарӗ. Эпӗ самаях вӑй илтӗм, ыратнисем те майӗпе иртме пуҫларӗҫ. Гӑваттӑмӗш кунӗнче ирхине вара киле тухса утрӑм, мӗншӗн тесен, хулара ниҫта ҫырӑнмасӑр пурӑннӑ май, мана каллех тытса хупма пултарнӑ. Тата килти хыпарсене те часрах пӗлес килетчӗ. Соня тӗрмере ха ӗнтӗ, ӑна пӗлетӗп, анчах Вери мӗнле пурӑнать-ши?

Хуйхӑ ҫине суйхӑ... Килте мана тата пысӑкрах хурлӑх кӗтсе тӑнӑ. Эпӗ тӗрмере пулнӑ чух пирӗн кил пушпушах тӑрса юлнӑ. Хама тытса кайнӑ хыҫҫӑн ик эрнерен фашистсем манӑн аслӑ хӗре ҫакса вӗлернӗ, кил таврашӗнчи пӗтӗм япаласене ҫаратса тухса кайнӑ...

Кун ҫинчен кӳршӗсем ҫапла каласа пачӗҫ мана. Кунӗн-ҫӗрӗн хуйхӑрса пурӑнса, Вера питӗ хытӑ чирленӗ. Пӗрмай хавшаса пынӑ вӑл. Кӑшт та пулин вӑй кӗтӗр тесе, вӑл кӳршӗ хӗрарӑмне хамӑрӑн виҫӗ чӑхран пӗрине пустарнӑ. Ҫав чӑх пирки ҫакнӑ та вара ӑна.

Комендантпа староста, ялта юлнӑ пӗтӗм выльӑха, кайӑк-кӗшӗке шута илсе, ҫакӑн пек приказ кӑларнӑ пулнӑ:

«Кам пӗр путек те пулин, пӗр чӑх та пулин пытарать е пусса ҫиет, ҫавсене, Германи командованине хирӗҫ тӑракан вырӑнне шутласа, судсӑрах ҫакса вӗлереҫҫӗ».

Вера, чирлӗ пирки ниҫта та тухса ҫӳременскер, ҫав приказ ҫинчен нимӗн те пӗлмен. Шӑпах вӑл апат ҫисе ларнӑ ҫӗре староста — леш ирсӗр Кузька Битый пырса кӗнӗ... Тӗрмене хупнӑ ҫынсен ҫемйисене вӑл кашни кунах тӗрӗслесе ҫӳретчӗ, тет.

— Мӗн ҫиен?— тӳрех тӑрӑннӑ вӑл Вера ҫине.

— Ҫимелли нимӗн те ҫук та, чӑх пусрӑм,— тенӗ Вера.

— Кам ирӗк пачӗ?

— Хамӑн чӑх пирки камран ыйтса тӑратӑп вара?

— Приказ ҫинчен пӗлетӗн-и?

— Мӗнле приказ ҫинчен?

— Нимӗн те пусма юраманни ҫинчен!

— Пуҫласа илтетӗп...

Староста куна ӗненмен.

— Эс вӗреннӗ ҫын, пур приказсене те никамран малтан пӗлме тивӗҫ, куна эсӗ юри, закона пӑхӑнас мар тесе

тунă!— Тем те пĕр каласа пĕтернĕ Верăна. Çавăнтах акт пекки çырса коменданта панă. Паллах ĕнтĕ, кун çумне ытти сăлтавсене те хушнă: ашшĕне партизансене пулăшнăшăн хупнă, вĕсен пĕтĕм çемйи шанчăксăр, тенĕ. Ун пек чух çынна пĕтерсе лартма ансат вĕт!

Коменданчĕ те тахçанах хăйĕн приказне «çирĕплетмелли» май шыранă-мĕн. Вăл Верăна çав кунах хăй патне сĕтĕрсе пыртарнă, допрос тăванçи пулса, ăна темĕн тĕрлĕ асаплантарса пĕтернĕ, унтан вара, тепĕр ирхине, çакса вĕлернĕ. Хăй мĕн тери тискер чунилли пулма пултарнине питĕ чаплăн кăтартса пама тăрăшнă вăл: çакса вĕлермелли такан патне ялта юлнă пĕтĕм халăха хăваласа пынă, гарнизонти салтаксене парадри пек тăратса тухнă, тет.

Пилĕк кун çакăнса тăнă Вера кĕлетки. Қайран таçта кайса пăрахнă, ăна никам та пĕлмест.

...Тăр-пĕччен юлса, эпĕ юмахри отшельниксем пек пурăнма пуçларăм. Ниçта та тухмарăм, никампа та тĕл пулса калаçмарăм. Хуйхă мана пĕтĕмпех халтан ячĕ. Кунне пĕрре вут хуткалаттăм та, выртаттăм вара кăмака çинче. Анчах шухăшсене чарма çук вĕт, пуç чиперех ĕçлерĕ-ха манăн. Хама тытса кайнă чух Верăпа сывпуллашни, вăл мана вилсе каяс пек макăрса ăсатни, унтан Соньăна тĕрме килхушшинче тĕл пулни — пĕтĕмпех куç умĕнче тăчĕç. Тĕлĕкре те пĕрмай кураттăм вĕсене...

Унтан, майĕпе, шухăшсем сарăлса пырса ыттисем çине куçатчĕç.

— Неушлĕ пирĕн пурнăç çакăн пекех вĕçленет вара? Чурасем пулсах вилетпĕр-ши?— теттĕм. Анчах кун пек пулас шухăш пуçра ниепле те шăнăçмастчĕ.

— Çук-çук, ун пек пулма пултараймасть!— тетчĕ чĕре,— вырăс халăхĕ, Россия нихçан та, никам умĕнче те чĕркуççи çине тăман, халĕ пушшех те тăрас çук!..

Кун пек вăхăтсенче мана яланах тĕрмере пĕр каçхине пулса иртни — пĕрисем хăйсене вĕлерме илсе тухса кайнă чух та: «Тăван халăх манман пире! Хĕрлĕ Çар килет, вăл совет çĕршывне фашистсенчен тасатать! Ĕненĕр!» тесе кăшкăрни аса килетчĕ.

Тĕнчере мĕн пулса иртнине пĕлмен эпĕ, фронт ăçтине те пĕлмен, нимĕçсем пирĕн ял çыннисене хытăран хытă хĕстернине, пĕрин хыççăн теприне тытса вĕлернине çеç илтеттĕм, анчах çапах та чĕрере шанчăк сӳнмерĕ.

— Эпир тăшман чури пулман, пулас та çук...

Уйăх ытла пурăнтăм çапла, упа пек. Пĕрмаях темле телейлĕ самант килсе çитессе кĕтеттĕм...

Çитрĕ вĕт çав самант!

Пĕр питĕ тĕттĕм каç пулчĕ вăл. Эпĕ, алăксене питĕрсе, кăмака çине хăпарса, мăръере çил выçă кашкăр пек ӳленĕ май тахçанччenex хамăн шухăшсемпе пăтрашса выртрăм. Унтан тĕлĕрсе кайсаттăм çеç, сад енчи чӳречерен хуллен шăкăртаттарни илтĕнчĕ. Малтан эпĕ çилпе темскер чĕтрет пулĕ, тесеттĕм, анчах шакканă сас вăйланнăçемĕн вăйланчĕ. Вара, ерипен çĕре анса, «чĕпкуçне» çутрăм та чӳрече патне пытăм.

— Кам унта?

— Эпĕ ку... — илтĕнчĕ хĕрарăм сасси.

Ку мана тата ытларах тĕлĕнтерчĕ. Епле хĕрарăм пыма пултарнă-ха ман пата çав вăхăтра?

— Кам эсĕ?

— Эпĕ ку, атте, Соня, Соня!

Хам умма çав вăхăтра пĕр-пĕр калаçакан кайăк вĕçсе пынă пулсан, эпĕ çав териех тĕлĕнместĕмччĕ пулĕ!

— Хĕрĕм, чунăм!.. — асăрханмалли çинчен мансах кăшкăрса ятăм та эпĕ, çенĕхелле чупса тухрăм.

Соня алăкран кĕрсенех эпир ыталанса илтĕмĕр. Иксĕмĕр те макăртăмăр, пĕр-пĕрине чуптурăмăр... Хăвăрах ăнланатăр ĕнтĕ: Соня çавăн пек киле пырса кĕни маншăн вăл масар шăтăкĕнчен тухса килнĕ пекех пулчĕ-çке! Вăл сыввăн таврăнасса шанма та пăрахнăччĕ ĕнтĕ эпĕ...

— Епле хăтăлтăн, ачам? Хăйсемех кăларса ячĕç-и?— тĕпчеме тытăнтăм эпĕ унран.

— Асту, хăйсем кăларса ярĕç вĕсем!— терĕ Соня.— Пире ĕнтĕ Германие илсе кайма тапратнăччĕ, ак çаксем çăлчĕç!— Вăл алăк еннелле кăтартрĕ. Пăлханни-савăннипе эпĕ асăрхаман та, Соньăпа пĕрле темле арçын килнĕ-мĕн.

— Камсем — вĕсем?

— Партизансем...

— Ой, тавах вĕсене! Тем парăттăм уншăн! Спаççипă сире, юлташ!— Эпĕ алăк патĕнчи çын аллине татах чăмăртарăм, ăна малалла ирттерсе пукан çине лартрăм.

— Эсир мана паллаймастăр пулас?— куларах ыйтрĕ вăл манран.

— Палласах çитерейместĕп çав... Курасси курнă пек те...

— Çĕнĕ çул каçне астăватăр-и?

— Астăватăп-ха ăна...
— Мана çăлтăр вĕт эсир ун чухне!
— Чăнах-и? Эсир пулнă-и вăл?
— Çавă, çавă, атте!— пуçĕпе сулса илчĕ Соня.
— Юмахри пекех пулса тухать ку!— терĕм вара эпĕ. — Пурнăç мар, темле приключениллĕ повесть, тупата! Çын каласа парсан — ĕненес те çук...
— Мĕншĕн? Ма апла калатăн?— ыйтрĕ Соня.
Эпĕ ăна фашистсем хама тĕрмерен йытă вилли пек кăларса ывăтнă хыççăн мĕн-мĕн пулнисене, мана çав Соня тусĕн — çамрăк партизанăн — амăшĕ епле пăхса усранине каласа патăм. Ман калав вĕсене тĕлĕнтерчĕ те, савăнтарчĕ те.
— Пĕр сăмахпа каласан, çăкăр-тăвар хире-хирĕç,— çемçен кулса илчĕ партизан.
Соня хăй пирки çапла каласа пачĕ: иксĕмĕр тĕрме килхушшинче тĕл пулнă хыççăн темиçе кунтанах вĕсене — икçĕр çамрăка — тĕрмерен кăларса чугун çул станцинелле хăваласа кайнă. Кун çинчен партизансем пĕлнĕ те, вăрманта засада туса, фашист-конвоирсене пурне те вĕлерсе тăкнă, заключеннăйсене тĕрлĕ çĕрелле тартнă. Анчах вĕсен пысăк пайĕ ниçта та кайман, партизансен отрядĕнчех юлнă. Вăл шутра манăн Соня та пулнă. Часах ăна леш çĕнĕ çул каç хамăр патăмра пулнă «хăна» палласа илнĕ, эпир ăна Верăпа иксĕмĕр мĕнле çăлни çинчен каласа кăтартнă, вара вĕсем питĕ туслăн пурăнма пуçланă. Отряд пирĕн енчи вăрмансене пырса кĕрсен, вĕсем иккĕшĕ пирĕн пата килсе курма шут тытнă.
...Питĕ телейлĕ каç пулчĕ вăл пирĕншĕн. Чăн та ĕнтĕ, Вера пирки темиçе хут та асăнса хуйхăртăмăр, анчах халь тин ăна пурпĕр тавăрас çук та, хамăра хамăр çирĕпрех тытма тăрăшрăмăр. Ун пирки çамрăк партизан пит аван каларĕ:
— Вилнисемшĕн тавăратпăр, чĕррисемшĕн — кĕрешĕпĕр!— терĕ.
Ку сăмах мана çав тери килĕшрĕ. Эпĕ хальхи вăхăтра тĕнчере мĕн пулса иртнисем çинчен ыйтса пĕлме тытăнтăм. Тата ытларах савăнтарчĕç мана çамрăксем: фронт пирĕнтен пурĕ те аллă-утмăл километртра çеç иккен. Хĕрлĕ Çар фашистсене Мускав патĕнче аркатса тăкнă та халĕ кунталла, хĕвеланăçнелле хăваласа килет-мĕн.
— Темиçе кунтан Хĕрлĕ Çар пирĕн патра пулать, кĕтсех тăр,— терĕ Соня. — Çавăн пирки пирĕн отряд та

кунталла тухрĕ. Тăшман чакса каймалли çулсене пӳлсе лартмалла пирĕн. Вара ик енчен те лекет ăна: çар — лерен çапать, эпир — кунтан. Ниçта кайса кĕмелли те пулмасть унăн!

— Анчах сирĕн сыхланас пулать,— хушса хучĕ унăн юлташĕ.— Чакса кайнă чух фашистсем питĕ урççĕ. Аяккалларах пăрăнни кансĕрлемест...

— Тĕрĕс, тĕрĕс, атте, тархасшăн, сыхлан,— ӳкĕтлерĕ Соня та. — Çăлăнăç сывăх ĕнтĕ, чăн юлашкинчен тем туса ан хăварччăр!

Эпĕ епле пулсан та сыхланма сăмах патăм.

Ир енне вĕсем тухса кайрĕç.

Çавăнтан вара эпĕ пачах урăхланса тăтăм! Каллех вăй кĕчĕ мана, çĕр çинче вĕçĕмсĕр пурăнас килекен пулчĕ. Кунĕн-çĕрĕн хамăрăн çăлăнăç — Хĕрлĕ Çар килессе кĕтме тытăнтăм. Тӳссе ирттернĕ асапсем те манăç пулчĕç пĕр хушă.

Кĕтни сая каймарĕ! Фронт пирĕн паталлах çывхарса килни уççăнах сисĕнчĕ. Нимĕçсен вĕçĕ-хĕррисĕр обозĕсем хĕвеланăçнелле туртăнма пуçларĕç — пĕтĕмпех пирĕн çынсенчен çаратнă япаласене, темĕн чухлĕ пуянлăх турттарса кайрĕç. Анчах вĕсенчен нумайăшне партизансем тыта-тыта илни çинчен калаçатчĕç те, ку питĕ савăнтаратчĕ.

Сывлăшра халь нимĕç самолечĕсем мар, пирĕн самолетсем ытларах вĕçрĕç. Тупăсем кĕмсĕртетни çывăхран çывăха илтĕнме пуçларĕ. Тата хаваслăрах тапма пуçларĕ чĕре!

Хĕвелтухăç енчи ялсем тăтăшах çунни, пушар çутисем кашни каçах хамăр паталла çывхарни çеç хăрата пуçларĕ пире.

— Пирĕн яла та хыптарĕç-ши? Хăтăлса юлаймăпăрши мĕнле те пулин?

Çук, хăтăласси пулмарĕ. Пĕр каçхине, тупăсем ытла та пит çывăхра кĕмсĕртетме тапратсан, урамра тахăшĕ калама çук хыттăн, хăрушла кăшкăрни янăраса кайрĕ:

— Пуша-ар!.. Çунатпă-ăр!..

Эпĕ хăпăл-хапăл пуçтарăнкаласа урама чупса тухрăм. Унталла пăхрăм, кунталла... Турăçăм! Ял пĕр вăхăтрах темиçе çĕртен çунма тытăннă. Кĕçех урамра кăнтăрлахи пек çутă пулса тăчĕ. Аçта кайса кĕрес?

Хамăн киле епле те пулин çăлса хăварас шухăш мар,

фашистсем пирĕн шкула та хыптарса яма пултарас шухăш пырса çапрĕ ман пуçа.

— Вĕсемшĕн пурпĕр... Вĕсем пирĕнне нимĕн те хĕрхенсе тăрас çук... Ах, хăтарса хăварасчĕ-çке!..

Хам тем тума пултарас пекех, часрах шкул еннелле утрăм. Ялта çав вăхăтра тата темиçе кил пĕр харăс хыпса илчĕç — фашистсен тискер алли юри килтен киле вут тĕксе çӳрени никам каламасăрах паллă пулчĕ.

Утта татах хăвăртлатрăм. Пур çĕрте те çынсем кăшкăрашрĕç, çунакан йывăç шатăртатрĕ, унта та кунта çуртсем ишĕлсе анни илтĕнчĕ, урамсене ĕнĕк шăрши тулчĕ.

Эпĕ çав тамăкваррипе çаплах малалла васкарăм...

Сасартăк каласа памалла мар вăйлă взрыв пулчĕ. Пĕтĕм тĕнче чĕтренсе илнĕн туйăнчĕ, сывлăш хумĕ мана пĕр хапха çумне пырса çапрĕ. Пуç çийĕпе йывăр чулсем шăхăрса иртсе кайрĕç, унтан пĕр хушă пĕтĕмпех тĕтĕмпе хупласа илчĕ. Мĕн пулнине тăруках ниепле те ăнланаймарăм. Тепĕр урама тухсан тин куртăм мĕн пулса иртнине: нимĕçсем пирĕн ялти чиркĕве сывлăшалла сиктернĕ иккен. Питĕ чаплăччĕ вăл чиркӳ — вăрçăччен ăна Мускавран ятарласа янă комисси килсе пăхса кайнăччĕ, тивме юрамасть, архитектура искусстви енĕпе хаклă, тенĕччĕ. Халĕ ман умра йăсăрланакан чул купи çеç выртрĕ.

Чĕре тата хытăрах пăчăртанчĕ, кăкăр пӳлĕнсе ларчĕ.

— Шкула та пĕтерессĕ! Шкулсăр тăрса юлатпăр!..

Чăнах та çапла пулнă çав. Шкул килхушшине пырса кĕтĕм çеç, ун умĕпе аллине пысăк факел тытнă этем мĕлки чупса иртнине курах кайрăм. Хама хам та астăвайми пулнă вара эпĕ çавăнта. Кайран-малтан мĕн пулассине шутламасăрах, факельщик патнелле чупрăм. Вăл ĕнтĕ шкул кĕтессине бензин сапса, ăна факелпа хыптарма пуçăнчĕ. Хăйĕн тискер ĕçне çав тери тăрăшса тăваканскер, мана асăрхамарĕ пулас вăл. Çитменнине, эпĕ ун патне хыçалтан, тĕттĕм çĕртен пытăм-çке!

Шкул кĕтесси кăштах хыпса илчĕ те çавăнтах сӳнчĕ. Фашист каллех тивертме тытăнчĕ. Эпĕ тек тӳссе тăраймарăм. Ал айне лом евĕрлĕ темле тимĕр кĕрсе кайрĕ. Пур вăя пухса сулса ятăм та факельщике пуç урлă çапрăм. Ы-ых!—терĕ кăна вăл, унтан çавăнтах ӳппĕн тăсалса выртрĕ... Унăн çунакан факелне эпĕ часрах таптаса сӳнтертĕм... Анчах шкул çуртне пурпĕрех çăлса хă-

варма пулмарĕ. Нимĕç ăна малтан шал енчен хыптарса тухнă иккен. Пур чӳречисенчен те çулăм чĕлхисем шуса тухрĕç. Тумтире хывса çапкаларăм, юрпа сапрăм — усси пулмарĕ. Куç умĕнчех хыпса кайрĕ вара вăл... Шăпăртатсах куççулĕ юхрĕ манăн ун çине пăхса тăрса... Хамăн пурнăçри чи хаклă япала пĕтрĕ вĕт! Мĕн чухлĕ вăй хунă пулĕ эпĕ çав шкула таврари чи лайăх шкул тума, анчах халĕ вăл ĕнтĕ кĕл кăна пулса выртать...

Ялти пушар сарăлнăçемĕн сарăлчĕ. Пур урамсем те çунчĕç. Эп таврăниччен хамăн киле те вут хыпса илнĕччĕ...

Тепĕр кунне, кăнтăрла çитеспе, пирĕн яла Хĕрлĕ Çар пырса кĕчĕ. Анчах ун чухне ялĕ çукчĕ ĕнтĕ, кĕлпе кăмрак çеç хуралса выртатчĕ.

Ниепле сăмахсемпе те каласа памалла мар, çав тери пысăк хаваслăхпа кĕтсе илтĕмĕр эпир хамăра ирĕке кăларакансене. Халăх ун пек савăннине эпĕ нихçан та курман. Паллах, урăхла пулма та пултарайман çав, мĕншĕн тесен халĕ эпир çĕнĕрен çуралнă пекех пултăмăр вĕт!..

Хамăн чи пысăк хуйхă пирки — шкул çунса кайни, ачасене ниçта вĕрентме çукки çинчен эпĕ çав кунах пĕр командира каласа патăм.

— Ытлах ан кулян,— терĕ вăл мана.— Тăшмана çĕнтерсе пынă май пурте пулса пырĕ пирĕн — шкулĕ те, колхоз çурчĕсем те, ыттисем те. Малтанхинчен те лайăхрах пулĕç вĕсем, курăр акă! Унччен мĕнле те пулин майлашкаласа пырас пулать...

Çав тери савăнтарчĕç мана унăн сăмахĕсем!

Ик кунтан яла йăпăртлăха кĕрсе тухнă Соньăпа унăн юлташĕ те çавнах каларĕç мана.

— Хамăрăн телее тавăратпăрах!

Вĕсем иккĕшĕ те хăйсен ирĕкĕпех Хĕрлĕ Çара кайрĕç, эпĕ, çынсем пулăшнипе, çак çĕрпӳрте туса кĕтĕм те — хамăн ĕçе тытăнас, вăрçă пĕтессе кĕтес мар, терĕм. Мĕнле условисенче ĕçлеме тивнине хăвăрах куратăр, анчах халь ун çине пăхса тăма юрать-и? Ачасем вĕренмесĕр ан юлччăр кăна, вĕсене этемлĕх историнче нихçан пулман çутă тĕнче тума хатĕрлемелле вĕт, ку ĕçе ниепле те вăраха яма юрамасть...

...Ирхине эпир Яков Ивановичпа уйрăлтăмăр. Çул тăршшипех аса илсе пытăмăр ун çинчен. Нихçан манмалла мар асра юлчĕ çав «вăтăр виççĕмĕш старик». Те-

мӗн тӗрлӗ асап, хурлӑх, мӑшкӑл витӗр тухнӑ ку ҫын, анчах хӑйӗн таса чӗрине, ырӑ кӑмӑлне нихӑш енчен те вараламан, ҫутӑ ӗмӗчӗсене ҫухатман, ыранхи куна ӗненсе хӑюллӑн малалла пӑхнӑ.

— Совет ҫыннисем ҫеҫ ҫакӑн пек ҫирӗп пулма пултараҫҫӗ ҫав,— терӗмӗр эпир. — Ун пек ҫынсене нихҫан та, никам та парӑнтарас ҫук...

1943, июль.
Курск облаҫӗ.





## ХЁР ЮРРИ

А жизнь её вся песнею была.
*С. ЩИПАЧЕВ.*

Эпир Днепр шывĕн сылтăм енче, çӳлĕ сăрт çинче лараттăмăр. Каç пулатчĕ ĕнтĕ, леш енчи кӳлĕсемпе шурлăхлă вырăнсенче, ерипен пăс пек тĕтре çĕкленсе хăпарма пуçланăччĕ, çапах та Днепр пирĕн умра темĕн пысăкăш тăрăхла тĕкĕр пекех çутăлса выртатчĕ.

Сулахай çырантан паром килессе кĕтсе, эпир — виçĕ офицер, хамăрăн аслă çĕршывăн тĕрлĕ вырăнĕсенче çуралса ӳснĕскерсем — чаплă та хăватлă Днепрăн илемĕ çине пăхса ларгăмăр. Икĕ çул ытла кунта фашистсем пулнă, хăйсен ирсĕр карланкисене Днепр таса шывĕпе килентернĕ, анчах икĕ кун каялла эпир вĕсене кунтан ĕмĕрлĕхех хăваласа ятăмăр. Днепр каллех совет шывĕ пулса тăчĕ, хăйĕн чăн-чăн хуçисен аллине куçрĕ, каллех ирĕккĕн сывлама пуçларĕ.

Днепр çине уяр çанталăкра çӳлĕрех вырăнтан пăхса тăнă чух нимрен малтан Гоголĕн вилĕмсĕр произведенийĕсем аса килеççĕ: ун çинчен никам та Гоголь пек çырайман вĕт-ха...

— Чуден Днепр при тихой погоде... Ытарма çук Днепр тӳлек çанталӑкра, вӑрмансем витӗр те тусем хушшипе ирӗккӗн те меллӗн, туп-туллин юхса выртнӑ чухне кӑшт та хускалмасть, сас-чӳсӗр юхать. Пӑхатӑн та, ху та пӗлместӗн, те юхать унӑн анлӑ шывӗ, те юхмасть, кантӑкран шӑратса тунӑ пек вӑл, ешӗл тӗнче çийӗпе вара тӗкӗр пек йӑлкӑшакан кӑвак çул авкаланса выртнӑ пек туйӑнса каять, вӗçӗ те, хӗрри те курӑнмасть вӑл çулӑн...

Епле аван ӳкерсе кӑтартнӑ!

Çак каçхине те, сӑртран аялалла, Днепрӑн илемне таçта çитиех, пӗтӗмпех курса ларнӑ май мана çав ача чухнех вуласа вӗреннӗ сӑмахсем аса килчӗç. Хӑйсем тӗллӗнех çӑвартан тухса кайрӗç вӑл сӑмахсем:

— Чуден Днепр при тихой погоде...

Юлташсенчен пӗри те шарламарӗç, малтанхи пекех Днепр çинчен куç илмесӗр пӑхса ларчӗç. Чылайран тин пӗри, хӑй ӗмӗр тӑршшипех цифрӑсем шутласа кӑна пурӑннӑ пулин те, поэзие питӗ юратаканскер, пуçне ман еннелле çавӑрчӗ те:

— Урӑхла калас пулать халь,— терӗ.

— Мӗншӗн? Гоголь çапла çырнӑ вӗт?— ыйтрӗ унтан виççӗмӗш юлташ.

— Çырнӑ пулин... Эпӗ халь çапла калӑттӑм: чуден Днепр при всякой погоде, когда он... советский.

— А-а, ку питӗ тӗрӗс вара!— кӑмӑллӑн кулкаласа илтӗмӗр эпир.

Çак вӑхӑтра, сасартӑк, улӑхра, шурлӑхлӑ вырӑнсенче ӳсекен çӳçе тӗмӗсем хушшинче, такамӑн илемлӗ, уçӑ сасси янраса кайрӗ. Çивӗч çунатлӑ кайӑк пек вӗçсе хӑпарчӗ юрӑ айлӑмран, таса шыв юххи пек уççӑн янкӑртатма тапратрӗ.

Ай-хай вӑйлӑ шыв — аслӑ Днепр-шыв!
Килсе çитрӗмӗр, кӗтсе ил пире...

— Ак япала!— терӗ çак сӑмахсене уйӑрса илсенех иккӗмӗш юлташ.— Готово!

— Мӗн «готово»?

— Юрра улӑштарма та ӗлкӗрнӗ! Унӑн сӑмахӗсем пачах урӑхлаччӗ... Ана пирӗн дивизири ансамбль хӗлӗпех юрласа пурӑнчӗ. Унта «сан пата пыратпӑр», тенӗ...

— А халь килсе тухрӑмӑр та, улӑштармаллах çав,— терӗм эпӗ.— Ху та ав Гоголе улӑштарма тытӑннӑ та!

— Тĕрĕс те пулĕ çав...

Юрă çаплах янрарĕ. Эпир ăна калама çук тимлесе, ăшăпа пиçнĕ çын сивĕ шыв ĕçнĕ пекех итлесе лартăмăр. Вăл пирĕн пĕтĕм шухăшсене, кăмăла, туйăмсене çавăрса илчĕ. Юррăн юлашки сăмахĕсем каçхи шăплăхра таçта инçете-инçете кайса çухалсан тин сăмах хушма хал çитрĕ пирĕн.

— Аван юрă... — терĕ иккĕмĕш юлташ.— Анчах сăмахĕсем тупата урăх, малтанхи мар!

— Творчество, мĕн тăвассу пур... — ответ патăм ăна.

— Тĕрĕс, творчество... Халăх творчестви, халăх пултарулăхĕ,— килĕшрĕ вăл.

Калаçăва виççĕмĕш юлташ хутшăнчĕ.

— Халăх творчествине, ман шутпа, çĕр айĕнчен тапса тухакан çăлкуçĕпе танлаштарма пулать,— терĕ вăл.— Çăлкуççене пĕр çĕртен питĕр — вăл тепĕр вырăнтан тапса тухать... Ку та çавнашкалах. Темиçе кун каялла пĕр ялта мана питĕ тĕлĕнмелле, чĕрене пырса тивекен истори каласа пачĕç. Енчен те эпĕ çырма пултаракан çын пулнă пулсан, кун çинчен, тупата, çав тери хăватлă поэма çырнă пулăттăм. Кам пĕлет, тен, кайран нумайăшĕсем çырĕç-ха...

— Мĕнле пит чаплă истори вара вăл? Мĕн çинчсн? Тен, каласа парăн пире?— ыйтрăмăр эпир.

Çак офицер сапер-разведчиксен взвочĕн командирĕ пулнă. Хамăр ирĕке кăларакан ялсене вăл час-часах никамран малтан, пехотăран та малтан пырса кĕнĕ, çулйĕрсене тĕрлĕ минăсемпе «сюрпризсенчен» тасатнă. Ялсенчи совет çыннисемпе тĕл пулса калаçса, тĕрлĕрен хыпарсене вăл пуринчен малтан пĕлнĕ. Çавăнпа та халь, вăл пĕр «истори» тесенех, эпир, ун çине пысăк интереспе пăхса, калавне кĕтрĕмĕр...

— Хура виселицăллă яла астăватăр-и эсир?— тесе ыйтрĕ вăл пирĕнтен, хăй калавне пуçласа яриччен малтан.— Кунтан пĕр вунпик-вунпилĕк километрта, питех те илемлĕ шыв хĕрринче, айлăмра вырнаçнă вăл ял, ячĕ те илемлĕ — Цветники... Чанах та, ялĕ çук ĕнтĕ, ăна гитлеровецсем çĕрпе танлаштарса хăварнă, пĕр çакса вĕлермелли такан кăна — фашистсен тискерлĕхĕн символĕ пек — тăрса юлнăччĕ...

— Астăватпăр-çке...

— Вăт шăпах çав ялта пулнă ку тĕлĕнмелле истори. Ăна мана халь çеç вăрмантан таврăннă хĕр-партизансем

каласа пачӗç. Каласӑвӗ те çав çакмалли таканран тапранса кайрӗ... Нимӗçсем çак яла пырса кӗрсен, ытти çӗрти пекех, кунта та пӗтӗм пурнӑçа вилӗм сывлӑшӗ пусса илнӗ. Çынсем — чӗрчунсем пек мар, мӗлкесем пек çеç çӳренӗ, килӗсенчен тухма та, сасӑпа калаçма та хӑранӑ, мӗншӗн тесен кашни хӳме çинчех нимӗç коменданчӗн хура свастикӑпа — çав шуйттан паллипе — çирӗплетнӗ приказӗсем çакӑнса тӑнӑ. Вӗсенче пуринче те икӗ сӑмах: «юрамасть»... тата «персе пӑрахатпӑр» тени уйрӑммӑнах курӑннӑ. Этемӗн чун хавалӗ çӗкленнине кӑтартакан паллӑсем — кулӑпа юрӑ кунта пуçӗпех манӑç пулнӑ, таçта çӗр тӗпне анса кайнӑ пекех çухалнӑ. Çынсен кӑмӑлӗсем кӗрхи тӗттӗм каç пек пулса тӑнӑ. Вӗсем кашни утӑмрах хӑраса, кашни самантрах пуç çине çӗнӗрен çӗнӗ хурлӑх йӑтӑнса анасса кӗтнӗ...

Ял варринче, вӑрçӑччен колхоз правленийӗ пулнӑ çуртра, нимӗçсен коменданчӗ пурӑннӑ. Унӑн кашкӑр тӗслӗ виçӗ йытӑ-овчарка пулнӑ, вӗсемсӗр вӑл пӗр утӑм та ярса пусман. Кашни йытӑ пуçнех тата виçшер полицейски пулнӑ. Каç-каç вара масар шӑплӑхӗпе тулнӑ ялта çав комендант çуртӗнчен тухакан музыка сасси пытару кӗвви пек янӑранӑ. Музыкӑна пит те юратнӑ тет вӑл комендант! Хӑй таçти консерваторине ылтӑн медальпе пӗтерсе тухнипе мухтаннӑ, тет... Кашни каçах пӳрт умӗнчи пахчана хӑйӗн хаклӑ йышши аккордеонӗпе тухса ларса, вӗçӗ-хӗррисӗр епрешке вальссем вылянӑ... Каçхине музыкӑпа киленнӗ, ирхине вара пирӗн колхозниксене, ватти-вӗттипех, йытӑсемпе ӗçе хӑваласа тухнӑ, кам та пулин кӑшт айӑпа кӗрсенех вилсе кайиччен хӗненӗ, аллисене каялла çыхса нӳрӗ подвала пӑрахнӑ, стариксен сухалӗсене çунтарнӑ, çамрӑк хӗрарӑмсене темиçешер куна чӗчӗ ачисенчен уйӑрнӑ — тем те пӗр, пурне каласа та пӗтерес çук!

Чылай вӑхӑт çапла пурӑннӑ вӑл. Ентӗ, ку вырӑнсенче ӗмӗрлӗхех тымар яма та шут тунӑ пулмалла — хӑйне валли чи лайӑх çӗрсене суйлама тытӑннӑ. Анчах тӑрукках унӑн ӗмӗчӗсем кутӑн-пуçӑн çаврӑнса ишӗлсе аннӑ, юлашкинчен хӑйӗн те кунтан тухса тарма кирли паллӑ пулса тӑнӑ...

Пӗтӗм ӗç юрӑран пуçланса кайнӑ.

Çуллахи пӗр лӑпкӑ каçхине çак сысна аçи пек самӑр нимӗç-комендант пӳрт умӗнчи пахчара хӑйӗн вальсӗсене выляса пӗтернӗ хыççӑн çывӑрма кӗме хатӗрленнӗ-мӗн.

Çав вăхăтра, пачах та кĕтмен çĕртен, яла икке уйăракан çырман тепĕр енчи урамра хĕр юрласа яни вăйлăн та уççăн илтĕннĕ:

И-эх! Аслă шывăн çийĕпе
Акăшсем ишеççĕ.
Тарăр, йытă-фашистсем,
Хĕрлисем килеççĕ!..

Комендант сасартăк юман юпа пек хытса тăнă. Мĕн пулса иртнине ниепле те ăнланайман вăл, ăнран тухса кайнă качака таки пек унăн-кунăн пăхма пултарнă çеç... Епле-ха капла?! Ăна пăхăнса тăракан ялта тахăшĕ юрă юрлама хăюлăх çитерпĕ! Нихçан шутламан, кĕтмен япала! Бунт вĕт ку, пăлхав! Мĕнле пулма пултарнă-ха кун пек хăрушă ĕç?!

Комендант пĕрре кăвакарса, тепре хĕрелсе кайнă, унăн çамки çине шултра тар тапса тухнă. Леш енчи юрă çаплах янăранă:

Ту çинче тăрать машина,
Улăхра — пĕр танкĕ.
Ман савнийĕм партизан,
Хам та партизанка!

Ман савнийĕм паттăр яш,
Хам та паттăр хĕр эп,
Иккĕн иккĕ тыттарсан —
Юлмĕ фашист чĕррĕн...

Комендант ку юрра ăнланман, анчах юрăра çине-çинех «партизан» сăмаха асăнни ун хăлхине аванах пырса кĕнĕ. Шăнтакан чир ернĕ пек siксе чĕтреме тытăнса, вал часрах пӳрте чупса кĕнĕ. Пӳртре никам та пулман. Ку ăна пушшех хăратса пăрахнă. Вара вăл стена çинчи пăтаран автомата илсе калле урама сиксе тухнă та ним тĕлсĕр-мĕнсĕрех юрă илтĕннĕ еннелле черет хыççăн черет кăларса яма тытăннă...

Автомат сассине илтсе, ун патне хăйне сыхласа пурăнакан полицейскисенчен пĕри ыткăнса пынă.

— Мĕн пулнă? Кама перетĕр?

— Илтместĕн-и-мĕн, пăхăр çамка! — кăшкăрса пăрахнă ăна комендант.— Ав, итле!..

Комендант автомачĕпе тĕллесе кăтартнă еннелле полицейски те хăй пуçне çавăрса, унпа пĕрлех, итлеме тытăннă. Вăйлă та уçă хĕрарăм сасси халь те чарăнман, çаплах юрланă...

И-эх! Шăнкăр-шăнкăр шывĕнче
Тутăра çăватăп.
Партизан пулсан — каятăп,
Полицай çине — суратăп!

Хамăн партизанăмпа
Çурçĕрччен çӳреттĕм.
Халĕ пире уйăрчĕç —
Полицайсем — йытăсем.

— Мĕн çинчен юрлать вăл сысна?— хаяррăн ыйтнă урса кайнă комендант полицейскинчен.— Партизансем çинчен пулас? Вĕсене мухтать?

— Мухтать, господин комендант... — тенĕ ăна хирĕç полицейски, тутисене аран хускатса.— Тĕрĕс...

— Мĕн тĕрĕс?

— Мухтать, тетĕп...

— А пире хурлать ĕнтĕ?

— Пуринчен те ытла пирĕн йышшисене...

— Агитаци эппин? Бунт?

— Çапла пулса тухать...

Комендант, хаяр бомбежкăран тарма хатĕрленнĕ пек, унталла-кунталла пăхса, хашка-хашка чупкаланă. Унтан тăрук полицейскисем çине сиксе ӳкнĕ:

— Мĕн пăхса тăратăр? Мĕн кĕтетĕр? Сире çавăншăн çăкăр çитерсе усратăп-и эпĕ? Халех кайса тытса килĕр вăл партизан юрăçине — мунча кĕртем эп ăна! Юрлаттарам!.. Кĕçĕрех çакатăп! Марш!

Полицейскисем комендантăн йыттисене ертнĕ те юрлакан хĕрарăма шырама чупнă. Унталла ыткăннă, кунталла, ăнсăртран тĕл пулакан çынсенчен ыйтнă ун çинчен, юрăçă камне тата вăл ăçтине каласа памасан хăйсене тытса хупассипе, çаптарассипе хăратнă, анчах нимĕн те пулăшман вĕсене. Юрăçă çĕр тĕпне путнă пекех çухалнă... Ир енне сулăнсан вара йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ полицейскисем хăйсен хуçине салхуллăн пырса пĕлтернĕ:

— Тупаймарăмăр... Ялтан тухса кайнă пулмалла...

— Тухса кайнă пулсан аванччĕ,— тенĕ комендант, кăштах лăпланса.— Анчах астăвăр: эпĕ вăл хĕрарăм сассине тепре илтсен, никамран малтан сире лекет!

— Çук ĕнтĕ, урăх юрлаттармăпăр,— сăмах панă ăна полицейскисем.

Анчах ытлашши васканă вĕсем çавăн пек шантарма...

Çак кунтан пуçласа, кашни каç тенĕ пекех, çĕр çине хура шăналăк пек тĕттĕмлĕх шуса ансанах, çав хĕрарăм

сасси янранӑ. Паян — пӗр ҫӗрте, ыран — тепӗр вырӑнта. Юррисем унӑн пурте тӑшмансенчен мӑшкӑллакан юрӑсем пулнӑ, вӗсене пӑхӑнмасӑр пурӑнма, вӗсене хирӗҫ кӗрешме чӗннӗ...

Ҫак кунтан пуҫласа комендант ыйхине ҫухатнӑ, хӗрарӑмӑн сасси илтӗнсенех вӑл ниҫта кайса кӗрейми ӑшаланнӑ, полицейскисене ял тӑрӑх хӑйӗн йыттисемпе пӗрле чӗлхисене кӑларса яриччен чуптарнӑ.

— Тупӑр! Тытӑр! Илсе килӗр!..

Усси пулман. Темле шырасан та, хӗрарӑм-юрӑҫӑ тупӑнман. Полицейсем ял тӑрӑх ыткӑнма тытӑнсанах юрӑ чарӑннӑ, анчах ҫитес каҫхине хӗрарӑм сасси каллех илтӗннӗ.

Комендант приказ кӑларнӑ:

«Юлашки вӑхӑтра ялта каҫ-каҫ киревсӗр юрӑсем илтӗнеҫҫӗ. Германи влаҫӗн ячӗпе — юрлама чаратӑп. Кашни юрлакан ҫынна партизан вырӑнне шутласа, тытсанах ҫакатпӑр».

Ку та пулӑшман. Юрӑ пурпӗр янранӑ...

Ҫакӑнпа пӗрлех, таврара партизансем пирки сасхура ытларах илтӗнме пуҫланӑ. Кунта — поезда ҫырана сиктернӗ, лере — нимӗҫсен обозне тапӑннӑ, тепӗр ҫӗрте полицейскине ҫапса пӑрахнӑ. Халӑх партизансем ҫинчен ҫав тери хавасланса калаҫнӑ, куншӑн чӗререн савӑннӑ.

Комендант кунтан-кун хытӑрах хӑракан пулса пынӑ. Партизансем сасартӑк пырса тапӑнасран, вӑл хӑй пурӑнакан ҫурт тавра этем ытамне кӗми юман пӗренесенчен икӗ ӗретлӗ хӳме — чӑн-чӑн крепость тутарнӑ. Ялти пӗтӗм халӑха пӗр чарӑнмасӑр пилӗк кун та пилӗк каҫ ӗҫлеттернӗ вӑл. Темиҫе полицейски вырӑнне ун патӗнче вуникӗ жандарм пурӑнма тытӑннӑ.

Анчах ҫапах та малтанхи лӑпкӑлӑх каялла таврӑнман...

Нимрен ытла, каҫхи тӗттӗмлӗхре пӗтӗм халӑх сасси пек янӑракан юрӑ ӑнран кӑларнӑ ӑна. Вӑл юрӑ уншӑн чӗререн ҫивӗч ҫӗҫӗпе чикнӗ пекех пулнӑ!

Облава хыҫҫӑн облава тунӑ комендант. Епле пулсан та, вӑл ҫав юрра путлантарма тӑрӑшнӑ.

Ӗнтӗ темиҫе хӗрарӑма та сӗтӗрсе пынӑ ун патне жандармсем. Вӗсене кашнинех хӗненӗ, темӗн тӗрлӗ асаплантарнӑ — анчах юлашкинчен вӗсем айӑплӑ марри палӑр-

нă, мĕншĕн тесен хĕрарăмсем комендатурăра ларнă вăхăтра юрă каллех çуралса тухнă.

Ялта мĕн пулса иртнĕ, çавăн çинчен янăранă вăл...

Пĕррехинче, полицейскисем таврари ялсенче тĕрлĕ пурлăх, апат-çимĕç çаратса таврăннă чух вĕсене партизансем тапăннă. Лавĕсене туртса илнĕ, хăйсене питĕ хытă тӳпкесе янă. Çав каçах юрăçă çавăн пирки тăрăхласа юрланă:

Полицайсем чыс тăвасшăн
Коменданта — нимĕçе,
Партизансем тытрĕç те —
Хăлха чикки пачĕçĕ.

Партизансем — паттăрсем
Ялсене пыраççĕ,
Полицайсене тытса
Шаккаса хураççĕ!

Сасартăк гитлеровецсем ялти çамрăксене Германие чуралăха ăсатма тапратнă. Калама та çук пысăк хурлăх пулнă ку. Кашни килтех куççулĕ тăкăннă, кашни çемьерех хăйсен ачисене хăтармалли меслет шыранă. Çав шиклĕ вăхăтра ял çыннисем çапла юрăсем илтнĕ:

Çывăх мар Берлинăн çулĕ.
Тух, аннем, ăсат хĕрне...
Сывпуллашăпăр эпир куççуллĕн,
Кам пĕлет, тен, ĕмĕрлĕх...

Ку юрăсем халăх хушшинче тата ытларах кичемлĕх сарнă, хăрушлăх мĕн тери пысăккине тавçăрса илме пулăшса пынă. Вара Германие ăсатма палăртнă çамрăксем ăçта кирлĕ унталла тарма тапратнă. Çынсем хăйсем калана тăрăх, вĕсем пурте партизансен отрячĕсене кая-кая кĕнĕ иккен.

Комендант халь тем тума та хатĕр пулнă. Вăл пурне те персе вĕлеретĕп, яла тĕппипех çунтарса яратăп, тесе юнама тытăннă.

— Тупса парăр мана çав юрлакана!

Ку та усă кӳмен ăна. Пĕр сăмахпа çеç ответ панă ăна çынсем:

— Пĕлместпĕр...

Вара комендант чееленме шут тытнă. Вăл кашни каçах ялăн пур кĕтессисене те засадăсем лартма тытăннă. Кашни 2—3 кил хыçĕнчех автоматлă кашкăр сыхласа ларнă. Çапла майпа пĕр тĕттĕм каçхине юрăça тытнă-

тытнах. Пысăк садри йывăççем хушшине пытаннă хĕр пĕр çаврăм çеç юрлама ĕлкĕрнĕ-мĕн, сасартăк ун умне тĕттĕмлĕхрен виççĕн-тăваттăн сиксе тухнă. Ниçталла та тарайман вăл. Ăна çавăнтах çапса ӳкерсе пăшал кĕпçисемпе хĕнесе тăкнă, таканлă атăсемпе таптанă, унтан, юнланса пĕтнĕскере, аллисене каялла çыхса, комендант патне сĕтĕрсе пынă. Лешин вара хăйĕн куçне те ĕненес килмен... Ун умĕнче тĕлĕнмелле илемлĕ, сап-сар çӳçлĕ, çутă-сенкер куçлă çамрăк хĕр тăнă. Çавракан пичĕ тăрăх унтан та, кунтан та юн сăрханнă... Çавăнтан хăраса пурăнма тивнĕ иккен ăна!

Тем вăхăтченех пăхса тăнă ун çине ăнтан тухса кайнă комендант. Унтан сасартăк, урнă кашкăр пек пулса кайса, вăл хĕре кăкринчен чышса ӳкернĕ, мамăк евĕр çемçе çӳçĕнчен çавăрса тытса урай тăрăх сĕтĕрме тапратнă, тапнă, çапнă... Ывăнсан, пĕлми пулса çите пуçланă хĕре вăйпах стена çумне тăратса, тимĕр пек сивĕ пӳрнисемпе ăна пырĕнчен пăчăртаса лартнă:

— Юрла ĕнтĕ! Хăвна епле çакасси çинчен юрла!..

Хĕр, юлашки вăйне пухса, ун çине вĕри курайманлăхпа тулнă куçĕпе пăхса илнĕ. Ним те шарламан. Унтан комендант питĕнчен лач! сурнă...

Кун хыççăн ăна мĕнле асаплантарнине никам пĕлмест, мĕншĕн тесен комендант хăй патĕнчен жандармсене те хăваласа кăларса янă. Анчах кайран халăх хушшинче: вăл çак хĕре тискеррĕн пусмăрланă, текен хыпар сарăлнă.

Тепĕр кунне ăна валли ятарласах виселица тунă та çакса вĕлернĕ. Çакнине пăхса тăма пĕтĕм халăха хăваласа пухнă. Хĕрарăмсем, куççулĕсене çăтса, ĕсĕклесе тăнă, арçынсем шăлĕсене çыртнă, вĕсен чышкисем хăйсем тĕллĕнех чăмăртаннă...

Комендант питĕ хаяр сăмах каланă, халăха вĕçĕмсĕр юнанă, темĕн тĕрлĕ хурлăхпа асап кăтартассипе хăратнă.

— Юрлама мар, пĕр сăмах калайми тăватăп эп сире! Тĕрмере çĕртетĕп, пĕрерĕн çакса пĕтеретĕп!

Хулăн вĕренпе пăвса çакнă хĕр-юрăçăн ылтăн çӳçĕ кас пуличченех хĕвел çутинче ялтăртатса тăнă. Кас пулсан, ял çыннисем хĕрĕн виллине вăрласа каясран, ăна сыхлама комендант виçĕ жандарм кăларса тăратнă. Каçĕ ăшă, лăпкă пулнă, тӳпере çăлтăрсем ялкăшнă, кĕçех тулли уйăх ярăнса тухнă... Хурлăх пусса илнĕ ял хăрушла шăплăха путнă. Ниçта та пĕр сас илтĕнмен...



18. Л. Агаков.

Сехет хыççăн сехет шунă çапла. Унтан сасартăк, ытла инçетрех те мар, юрă çуралса тухса, калама çук вăйлăн янраса кайнă. Каллех хĕр сасси юрланă:

Ялпа сывпуллашрăмăр, хирпе сывпуллашрăмăр,
Тухрăмăр та кайрăмăр çилĕ пытарса.
Кĕтĕр, тăвансем, пире, кĕтĕр, савнисем, пире,
Таврăнăпăр тăвăл пек — тăшмана шăлса!

Çĕрле ял çине таçтан бомба пырса ӳкнĕ пекех пулнă вара ку. Çакса вĕлермелли такан патĕнчен часовойсем пĕр-пĕрин патне пырса йăпшăннă. Тĕлĕкре аташса выртакан комендант, юрра илтсе, хăйне такам пуçран çапнă пек сиксе тăнă. Пур нимĕçсем пекех тĕшмĕш пулнăскер, вăл ку юрра такан çинчи хĕр юрлать пуль тесе шутланă.

— Жандармсем! Ганс, Эрих, Фридрих!— çухăрса янă вăл.— Кам юрлать? Аçта юрлать? Илтетĕр-и эсир мĕн те пулин?!

— Илтетпĕр, анчах камне пĕлме пултараймастпăр,— ответ панă лешсем.

— Кайса пăхăр — çакни юрламасть-и? Коммунистсенчен тем те кĕтме пулать... Вĕсем вилсен те хăрушă пирĕншĕн!

— Унта виçĕ часовой тăраççĕ, господин комендант...

— Кайса калăр, чарччăр ăна! Юрлать пулсан, тепĕр хут персе вĕлерччĕр!

— Ун пек пулма пултараймасть, господин...

— Ан вĕрентĕр мана, эпĕ сирĕнтен лайăхрах пĕлетĕп! Кайса пăхăр, тетĕп!..

Юрă çаплах илтĕннĕ, вăл чарăна пĕлмесĕр янрана. Комендант хушнипе çав самантрах пĕтĕм гарнизона ура çине тăратнă, жандармсем ниçта кайса кĕрейми чупкаланă, автомачĕсенчен унталла-кунталла ним йĕркесĕр перкелешме тытăннă. Юрă пĕр вăхăтлăха чарăннă, анчах тепĕр çур сехетрен каллех çуралса тухнă.

Çутăличченех шавланă фашистсем — ирччен те лăпланайман. Ирхине вара комендант вилнĕ хĕрĕн кĕлеткине часрах такан çинчен антарса, масар çине кайса чикме хушнă.

— Çĕр айĕнчен кăшкăраймĕ!..

Хĕре выльăх пекех, тупăксăр-мĕнсĕрех пытарнă, çитменнине, вăрттăн, ял çыннисем сисиччен.

— Халь тин сасси илтĕнеймĕ ĕнтĕ, мана кансĕрлеймĕ,— тенĕ комендант.

Хăраса пурăннине сирсе ярас, пăлхануллă самантсене манас тесе, вăл шнапс* ĕçсе лартнă. Қаçалла сулăнсан, иртнĕ вăхăтсенчи пекех аккордеонне çĕклесе, пӳрчĕ умĕнчи пахчана тухнă та хăйĕн епрешке вальсĕсене выляма тытăннă. Унăн пусĕнче каллех çак пуян вырăнсенче помещик пулса пурăнас шухăшсем çуралса ӳсе пуçланă.

— Темиçе пин гектар çĕр... Вунă-вунпилĕк ял ман алăра пулать... Миллионлă доходсем!

Унăн пӳрнисем, хăйсем тĕллĕнех урăх клавишсем çине куçса, темле ташă кĕвви калама пикеннĕ. Икĕ жандарм, комендантпа пĕрлех ĕçсе кăркка аçисем пек хĕрелсе кайнăскерсем, пӳртрен чупса тухнă та ташлама тытăннă.

Анчах нумай ташлайман вĕсем.

Ял хыçĕнчен, вăрман енчен, вĕсем патне хăватлă, никам пусарса лартма пултарайман юрă янăраса çитнĕ. Иртнĕ кунсенчи пек пĕччен хĕрарăм сасси мар — пысăк, вăйлă хор юрланă ăна!

Уйăх та хĕвел пекех пурччĕ пирĕн пĕр пике,
Халĕ те асрах-ха вăл, халь те чĕререх.
Çӳçĕ — сар кăлканччĕ ун, шăпчăк пек юрлатчĕ...
Куçĕ çунтаратчĕ ун витĕр-витĕрех...

Комендант аллинчи аккордеон сасартăк тискер улшу сасăсем кăларнă та çĕре ӳкнĕ. Ташлакан жандармсем пат! чарăнса тăнă. Комендант пĕр хушă нимĕн те калама пултарайман. Юрă вăйлăран вăйлă илтĕннĕ:

Халь ăçта-ши çав хĕлхемлĕ çăлтăр пек çут куç,
Халь ăçта-ши çав хĕрĕн ӳт-пĕвĕ выртать?

— Партизансем вĕт ку! — кăшкăрса янă комендант, мĕн пулса иртнине тинех тавçăрса илсе.— Пурне те тăратăр! Халех, çак самантрах! Çавăрса илĕр, пурне те тытса килĕр!.. Хăвăртрах, сыснасем! Е хăвăра малтан вĕлерсе пĕтересse кĕтетĕр-и?

Юрă халь аслати сасси пекех кĕрленĕ ун хăлхинче:

Хĕршĕн тавăрмашкăнах тытрăмăр пăшал...

Жандармсемпе полицейскисем, автомачĕсенчен пеме хатĕрленсе, вăрман еннелле чупнă. Хăйсене унта мĕн кĕтсе тăнине пачах та пĕлмен вĕсем. Вăрман патне çитесси пĕр çĕр-çĕраллă метр юлсан, вара вĕсене хирĕç

* Эрех (нимĕçле).

пĕр харăс виçĕ пулемет шатăртатма тапратнă. Партизансем кунта тăшмансене паçăрах кĕтсе ларнă, хăйсен юратнă юрăçине çакса вĕлернĕшĕн фашистсене хаяррăн тавăрма тупа тунă вĕсем. Çавăнпа та халь вĕсен пулемечĕсемпе автомачĕсем чарусăр ĕçленĕ...

Малти жандармсем çавăнтах тек нихçан та тăрайми пулса ӳкнĕ, каяраххисем пур çĕрелле тарма тапратнă, анчах партизансен пулисем вĕсене пур çĕрте те хăваласа çитнĕ. Çав вăхăтрах масар хĕррине вырнаçтарса лартнă икĕ миномет ĕçлеме тытăннă. Йывăр минăсем, пĕрин хыççăн тепри, урам тăрăх ӳлесе иртсе, шăпах комендантăн «крепоçĕ» çине пыра-пыра ӳкнĕ. Темиçе самантран çак çăхан йăви талккишпех хыпса илнĕ.

Ял хыçĕнче, пулемет сассисемпе хутăш, «урра» кăшкăрни янăраса кайнă. Партизансем яла пырса кĕнĕ...

Фашист шăрши те юлман вара кунта. Хĕрарăм тумне тăхăнса тарма тăнă коменданта ял çыннисем хăйсемех хуса çитсе тытнă та хăй тутарнă такан çинех туртса çакнă. Унăн «крепоçне» çĕрпе танлаштарнă — йĕрне те хăварман.

... Хĕр-юрăçăн масар тăпри çине партизансем тепĕр куннех пĕчĕк палăк туса лартнă. Эпĕ юриех кайса куртăм ăна. Питĕ типтерлĕ, хитре тунă. Чул юпа çумне çыпăçтарнă пăхăр листи çине çапла çырса хунă:

«Партизанка Маша. Пуçне Тăван çĕршывшăн хунă. Унăн ятне те, унăн юррисене те халăх нихçан та манмĕ».

1943, июль.
Курск облаçĕ.





## ВИЛЕМРЕН ТЕ ВАЙЛАРАХ

*Повесть*

Асмонь ятлă яла эпир март уйăхĕн вĕçĕнче, пĕр пĕлĕтлĕ тĕксĕм кун каçалапа пырса кĕтĕмĕр. Малти чаççем кунтан тухса кайнăччĕ ĕнтĕ, çапăçу шавĕ ялтан тăватпилĕк километрта илтĕнетчĕ, анчах вăрçăн вĕри йĕрĕсем сивĕнменччĕ-ха. Унта та кунта çунса пĕтнĕ çуртсен никĕсĕсем йăсăрланаççĕ; пĕр çĕрте ванчăк тупă кĕпçипе юр ăшнелле тирĕнсе выртать, ун патĕнчех фашист салтакĕсем — туппăн пĕтĕм расчечĕ — урлă та пирлĕ саркаланса выртаççĕ, урам варрине сăра пички пек хулăн хырăмлă, кĕске хӳреллĕ икĕ першерон* тĕшĕрĕлсе аннă. Ăçталла ан пăх — пур çĕрте те снарядсемпе минăсем алтнă лакăмсем палăраççĕ, шурă юр хуп-хура хăрăмпа витĕннĕ...

Хамăрăн дивизи хаçачĕ валли майлăрах çурт тупса йышăнма урам тăрăх тăвалла хăпарнă чух эпĕ хамăн

---

* Бельги лаши.

туса, çирĕм икĕ çулхи капитан Палюкова, йăрăс пӳллĕ, кăвак куçлă, кăштах чĕкеç шатриллĕ, çапăçусенче пĕрре кăна мар чапа тухнă Шăмăршă каччине тĕл пултăм. Вăл сылтăм аллине бинтпа çыхса мăйĕнчен çакнине курсан, эпĕ унтан тӳрех:

— Амантрĕç-им? Хăçан? Хытах-и?— тесе ыйтрăм.

— Ытлашши хытах мар та... питĕ тарăхмалла пулчĕ,— терĕ вăл.

— Мĕнле апла тата?

— Фрицсене ялтан хăваласа кăларсаттăмăр ĕнтĕ эпир, вĕсем мулкачсем пекех тапса сикнĕччĕ, çав вăхăтра таçтан мурĕнчен пĕр ухмах снаряд килсе ӳкрĕ те, пĕр осколокĕ мана аларан пырса сăхрĕ...

— Халь вара медсанбата каятăн-и?

— Çук-ха, пĕр çĕре кĕрсе тухмалли пур.

— Ăçта?

— Каламастăп. Вăхăту пулсан, атя манпа пĕрле... Эс ăçталла уттараттăнччĕ?

Эпĕ каласа патăм.

— Чăнах, атя манпа. Инçе мар, ав çавăнта, ял вĕçне,— чĕнчĕ Палюков татах.

— Мĕн тума?

— Курăн унта. Сăмах майăн каласан, хăвна валли питĕ тухăçлă материал тупма пултаратăн.

— Хаçата çырма-и?

— Хаçат валли кăна мар, повесть валли те пулĕ-и тен...

Вăл çапла калани мана питех те интереслентерчĕ. Дивизи хаçачĕ валли вăл мана яланах лайăх фактсем паратчĕ те, халь те иртнĕ каçхи çапăçу çинчен пĕлтерессĕн пуль тесе шухăшларăм.

— Çапах та, мĕн пулнă?

Вăл мана пурпĕр уççăн каласа памарĕ. Темиçе хут ыйтсан та: «Пырсан курăн», терĕ кăна.

Вара манăн ирĕксĕрех килĕшмелле пулчĕ.

Çур сехетрен эпĕ редакцие çырма хĕрринче ăнсăртран тĕрĕс-тĕкел юлнă чылаях пысăк, икĕ пӳлĕмлĕ çурта вырнаçтартăм та Палюковпа пĕрле аналалла, ял вĕçнелле анса кайрăм. Утнă май эп унтан хамăр ăçта кайни çинчен татах ыйтрăм, анчах вăл мана çав-çавах ответ памарĕ, кула-кула илчĕ çеç:

— Лайăхрах кăсăклантарам-ха сана... Эсир, писательсем, вăл ĕçе юрататăр вĕт. Вулакана хăвăрăн чăн

шухăшăра каламасăр сăмсаран çавăтса пыратăр-пыратăр та кайран сасартăк шарт! тĕлĕнтерсе пăрахатăр.

Манăн куна хирĕç калама сăмах тупăнмарĕ, вара эпĕ текех ыйтмарăм та, чĕнмерĕм те. Часах эпир ял вĕçĕнчи пĕр çĕр çулхи хурама айне йăпшăнса ларнă, тул енчен тăмпа сĕрсе, пурпа шуратнă пĕчĕкçеç пӳрт тĕлне çитсе тăтăмăр.

— Ак çакăнта пулма кирлĕ,— терĕ Палюков.— Çыннисем сывах пулсан...

Вăл çенĕхе кĕрсе пӳрт алăкĕнчен хуллен кăна шаккарĕ.

— Кĕрĕрех, кĕрĕр,— илтĕнчĕ шалтан хĕрарăм сасси. Палюков ăна илтсен темшĕн ассăн сывласа ячĕ те ман çине темле тăруках улшăнса кайнă куçĕпе пăхрĕ. Эпĕ вăл хытă пăлханнине сисрĕм.

— Сывах пулас, çавăн сассиех...

Эпĕ ун çине малтанхинчен те ытларах тĕлĕнсе пăхса илтĕм:

«Мĕне пĕлтерет ку? Кама шыраса тупрĕ манăн тус?»

Палюков çав хушăра алăка картах туртса уçса шалалла кĕчĕ. Эпĕ ун хыççăн кĕрсе тăтăм.

— Сывă-и... анне? Пурăнатăн-и? — терĕ Палюков, малти кукăрта тăракан пĕр 45—50 çулсенчи хĕрарăм патнелле аллине тăсса пырса.

— Сывах-ха, ывăлăмсем, сывах, пурăнкалатăп,— терĕ хĕрарăм, Палюков аллине тытса.— Ку таранччен вилменнине малашне пушшех те пурăнма шутлатăп ĕнтĕ... Эпир халь çĕнĕрен çуралнă çынсем пекех вĕт!— Вăл çемçен кулса илчĕ.

Палюков хыççăн ăна эпĕ те ал патăм. Хам çав хушăрах ун çинчен куç илмесĕр пăхрăм. Унăн сенкертерех тĕслĕ йăваш куçĕ мана тӳрех кăмăла кайрĕ. Анчах çамки çинчи тарăн йĕрсем тата унăн çӳçĕ йăлтах шуралса кайни вăл питĕ нумай хура-шур тӳссе иртнине систерчĕ.

«Мĕншĕн-ха Палюков ăна «анне», терĕ? Мĕншĕн вăл ăçта та пулин урăх çĕре мар, шăп çак пӳрте, çак хĕрарăм патне илсе кĕчĕ мана? Паллать-шим ăна вăл? Епле майпа? Инçетри Атăл çинче çуралса ӳснĕ чăваш ачипе çак Орёл облаçĕнчи ватă хĕрарăм хушшинче мĕнле çыхăну пулма пултарать?..»

Çавăн пек нумай ыйтусем çуралчĕç ман пуçра, анчах пĕрин пирки те ответ тупаймарăм.

— Ларсамăр, ларсамăр, ара, ма ура çинче тăратăр,— терĕ хĕрарăм, тенкел çине кăтартса.— Ывăннă вĕт эсир, пĕлсех тăратăп, сирĕн ĕç вăл... ай-ай, çăмăл мар! Çиес те килет пулĕ-ха сирĕн, кăштах вăхатăр пулсан — халех мĕн те пулин пĕçерсе çитеретĕп... Нимех те çук та ĕнтĕ, нимĕçсем тĕппипех шăлса тухса кайрĕç, анчах, сирĕншĕн пулсан, юлашки татăк та шел мар...

Эпир стена çумĕнчи тăрăхла сак çине лартăмăр. Хĕрарăм васкасах чăланалла кĕме тăчĕ, анчах Палюков ăна:

— Ан чăрман, пире нимĕн те кирлĕ мар, Варвара Васильевна... Эс кил-ха кунта, пирĕнпе пĕрле лар,— терĕ.

Ку мана тата ытларах тĕлĕнтерчĕ: «Аçтан пĕлет Палюков унăн ятне?!..»

Анчах хĕрарăм та, çак палламан çамрăк офицер хăйне ятпа чĕннине илтсен, манран кая мар тĕлĕнчĕ курăнать. Вăл чăлан алăкĕнче чарăнса тăчĕ те Палюковпа иксĕмĕр çине çав тери тинкерсе пăхрĕ.

— Ман ята сире... кам каларĕ? Кӳршĕсем-и?

— Никам та каламан, Варвара Васильевна,— пуçне пăркаласа илчĕ Палюков. Темшĕн ун сасси кăштах чĕтрерĕ. Вăл паçăрхи майлах, пӳрте кĕрес умĕнхи пекех тарăннăн сывласа илчĕ те тепĕр хут:

— Никам та каламан, хамăрах пĕлетпĕр,— терĕ.

— Епле майпа? — ыйтрĕ хĕрарăм, пирĕн патарах пырса.

— Çаплах,— терĕ Палюков. Унăн пичĕ çинче халь çемçе кăна кулă палăрчĕ.

— Епле-ха апла? Тĕлĕнтеретĕр эсир мана...

Пĕр хушă шăпах пулчĕ. Хĕрарăм Палюкова паллама тăрăшнă пек сăнаса пăхса тăчĕ, энĕ ĕнтĕ пачах та ăнланмасăр пĕрре пĕрин çине, тепре теприн çине пăхкаласа лартăм.

— Эс мана астумастăн-и вара, Варвара Васильевна?— ыйтрĕ Палюков хуллен.

— Çук, астумастăп...— пуçне ерипен пăркаларĕ хĕрарăм.

— Мана... нихçан та курман пек-и?

— Темле-çке... Тен, курнă та пулĕ те — маннă... Эпир пурăнса ирттернĕ пурнăçра ăс-тăна çухатма та май пулнă та...

— Апла, эппин... — Палюков пичĕ çинче кулă тата ытларах палăрчĕ халь.— Хам аса илтерем-ха сана...

1941 çулта, кĕркунне, Гитлер хурахĕсем кунталла çĕмĕрсе килнĕ чух...

Хĕрарăмăн куçĕ мăч-мăч-мăч туса илчĕ. Палюков хăй сăмахне малалла каларĕ:

— Пĕрре, сĕм тĕттĕм каç, сирĕн алăка сасартăк такам килсе шаккаманччĕ-и?

Хĕрарăм çăвар тулли шыв сыпнă пекех тăчĕ. Палюков çине вăл шăтарас пек пăхрĕ...

— Çав, шаккаканни, йывăр аманнă совет салтакĕ пулнăччĕ. Эсир, Петя ятлă ывăлăрпа, ăна çĕклесе кĕртсе эмеллеме тытăннăччĕ... Çапла-и? Астăвăр-ха...

— Çапла... — хуллен кăна пăшăлтатса илчĕç хĕрарăмăн çӳхе тутисем.

— Çавăн сăнне астуса юлаймарăр-и вара эсир?

Хĕрарăм:— Турăçăм!— тесе вăраммăн кăшкăрса илчĕ те аллисене хире-хирĕç шарт! çапрĕ. Сасартăк çав тери тĕлĕннипе унăн сăнĕ те улшăнса кайрĕ, аллисем те вĕттĕн-вĕттĕн чĕтреме тапратрĕç.

— Миша! Миша-и вара эс?

— Çавă пек туйăнать хама!— кулса ячĕ Палюков.

— Турăçăм, епле телей ку!— Хĕрарăм тăруках ман юлташа мăйĕнчен ыталаса чуптума тытăнчĕ — питĕнчен, çамкинчен. Çӳлĕ Палюков та ăна, сывă аллипе ыталаса тытса, хушшăн-хушшăн пуçĕнчен чуптăва-чуптăва илчĕ.

— Миша! Ывăлăм, чунăм!.. Чĕрĕ эсĕ, сывă! Сывă!.

Варвара Васильевна тăрук макăрса ярса Палюков ытамĕнчен вĕçерĕнчĕ те пукан çине лак! ларчĕ.

— Кай... Кам шутлама пултарнă кун пек пуласса...— пăшăлтатса илчĕ вăл унтан, куçне тутри вĕçĕпе ерипен шăлса.

— Татах тĕл пуласса-и?— хуллен ыйтрĕ Палюков.

— Ара, çав...

— Мĕн тăвас тетĕн, пурнăçра тĕрлĕренех пулать вĕт. Сăртпа сăрт тĕл пулмасть, анчах çынпа çын яланах тĕл пулма пултарать,— тенĕччĕ эс мана ун чух. Анчах хальхи вăхăтра эпир пĕрмай вырăнтан вырăна куçатпăр та, кунтан питех тĕлĕнмелли те çук пуль...

— Вăл çаплах ĕнтĕ, çаплах,— пуçĕпе сулсах килĕшрĕ хĕрарăм, халь те Палюков çине тĕлĕнне куçĕпе пăхса.— Пулаççĕ вĕт çакăн пек телейлĕ тĕлпулусем, тавçăрса илме те, ĕненме те хĕн.. Юмахри пек, тупата!

— Юмахри пекрех çав,— килĕшрĕ Палюков.— Пу-

ринчен ытла çавăн чухнехине, хĕрĕх пĕрремĕш çулхине, аса илсен...

— И-и, ывăлăм, эс пĕтĕмпех пĕлместĕн-ха, кайран мĕн-мĕн пулнисене пĕлместĕн, вĕсем çинчен пĕлсен — пушшех те тĕлĕнсе каяс пулать...

Вăл тата тем каласшăнччĕ, анчах сасартăк хăйĕн пуçне икĕ аллипе пĕр харăс çавăрса тытрĕ те тем пулнă пекех хыпăнса ӳкрĕ.

— Ой, ватсупнă, мĕн-ха эпĕ çăвара карса ларатăп?! Ара, сире епле те пулин хăна тăвас пулать-иç! Çитерес-ĕçтерес... Тĕлĕннипе, савăннипе çухалсах кайрăм пулас...

Эпир ăна пĕтĕм чĕререн ӳкĕтлерĕмĕр, пире ним те кирлĕ мар, ан чăрман, терĕмĕр, анчах вăл пирĕн сăмахсене хăлхана та чикесшĕн пулмарĕ. Йăпăр-япăр шыв ăсса килсе апат çакса ячĕ, чей вĕретме тапратрĕ, таçта кайса пĕр çур литр килти эрех те тупса пычĕ. Вăл çавăн пек ăшаланса, унта-кунта чупкаласа çӳренĕ хушăра эпĕ Палюкова çыпăçмаллипех çыпăçрăм.

— Кун çинчен эс мана мĕншĕн ку таранччен нимĕн те каласа паман вара? Хăвна эпĕ тус тесе пурăнатăп, анчах эс манран пĕтĕмпех пытаратăн иккен?

— Мĕн пытарнă вара эп санран?— терĕ Палюков мана хирĕç лăпкăн кăна.— Окруженинче пулнине те, партизансемпе çӳренине те—пурне те каланă-çке? Мĕн тата?

— Анчах çак хĕрарăм хăвна епле çăлни çинчен каламан вĕт?

— Ну, тусăм, каçар, пур вак япаласене те аса илсе каласа пама эпĕ писатель мар,— тесе кулса ячĕ Палюков.— Детальсене шĕкĕлчесси вăл — сирĕн професси. Тата, тепĕр тесен, пурнăçра тӳссе ирттернĕ хăшпĕр япаласене аса та илес килмест тепĕр чух. Йывăр. Чуна ыраттарать.

— Çапах та, хальхинче эс манран пурпĕр хăтăлаймастăн, каласа паратăнах,— çинех тăтăм эпĕ.— Çитменнине, эс мана кунта «материал пулать» тесе илсе килтĕн. Ăçта вăл материал?

Палюков кăштах тытăнкаласа тăчĕ те — парăнчĕ.

Акă мĕн пĕлтĕм вара эпĕ.

* * *

... 1941 çулхи октябрь уйăхĕнче Хĕрлĕ Çарăн ывăнса çитнĕ чаçĕсем, тăшманпа кунĕн-çĕрĕн çапăçса, Орёл хули еннелле чакса килнĕ. Паттăррăн çапăçнă пирĕн боец-

сем, кашни рубежра чарӑнса тӑмассеренех фашистсене ҫӗршерӗн-ҫӗршерӗн ҫулнӑ, вӗсен техникине ҫӗмӗрнӗ, ҫунтарнӑ, анчах, вӑйсем тан пулманнипе, вӗсен каллех хӗвелтухӑҫнелле чакса килмелле пулнӑ.

Пӗр чугун ҫул станцийӗ патӗнче Н-ски полк тӑватӑ кун ҫапӑҫнӑ. Тӑватӑ кун хушши чарса тӑнӑ вӑл фашистсен «СС» дивизине. Ҫӗр татти-сыпписӗр чӗтреннӗ. Бомбӑсем, снарядсемпе минӑсем ҫурӑлнипе сывлӑш вӗриленсе ҫитнӗ, таврана йӳҫӗ тӗтӗм шӑрши ҫапнӑ. Ҫынсем ҫак хушӑра пӗрре те куҫ хупман, ӑша пӗр тӗпренчӗк яман, окопсен тӗпне пухӑннӑ лапраллӑ шыва ывӑҫлаывӑҫла ӗҫнӗ кӑна. Тӑваттӑмӗш кун вӗҫнелле ротӑсенче 10—12-шер ҫын ҫеҫ юлнӑ, вӗсем те ҫурри аманнӑскерсем пулнӑ, ҫапах та чакасси ҫинчен никам та шутламан.

Вилӗмлӗ ҫапӑҫу пулнӑ вӑл...

Пулеметчик Михаил Палюков, икӗ хут аманнӑскер, пӗтӗм расчетран пӗччен кӑна тӑрса юлнӑ пулин те, тӑшман салтакӗсене утӑ ҫулнӑ пекех ҫулнӑ, ура ҫине тӑрса пирӗн окопсем еннелле чупма пуҫласанах вӗсене каллех те каллех ҫӗре вырттарнӑ. Ҫаҫ пуличченех ҫавӑн пек ҫапӑҫнӑ вӑл, анчах сасартӑк ун ҫывӑхнех йывӑр снаряд ӳкнӗ те ӑна ним пӗлми туса пӑрахнӑ. Тем вӑхӑт выртнӑ вӑл — ку паллӑ мар, анчах та майӗпе тӑна кӗрсе куҫне аран-аран уҫсан таврара нимӗн те курӑнман, пӑч тӗттӗм пулнӑ. Хура пӗлӗтре кӑна, унта-кунта, ҫутӑ куҫсем пек, ҫӑлтӑрсем ялкӑшса тӑнӑ. Пулеметчикӑн пӗтӗм шӑммишакки ыратнӑ, ӗҫесси килнипе ҫӑвар ӑшчиккине ҫилӗм сӗрнӗ пек туйӑннӑ... Вӑл ерипен чавси ҫине ҫӗкленсе йӗри-тавралла пӑхнӑ, анчах ҫӑра тикӗт пек тӗттӗмлӗхсӗр пуҫне нимӗн те курайман. Ҫывӑхра нимле сас-чӳ те пулман. Ҫапӑҫу шавӗ таҫта инҫетре, сылтӑм енче илтӗннӗ. Ҫав енчех, ик-виҫ ҫӗрте, пушар ҫутисем ялкӑшнӑ...

— Мӗн пулнӑ капла?— хӑйӗнчен хӑй ыйтнӑ Палюков.— Мӗншӗн эпӗ тӑр-пӗччен, мӗншӗн таврара никам та ҫук?..

Пӗр хушӑ ҫапла шухӑшласа выртнӑ хыҫҫӑн вӑл майӗпе тавҫӑрса илнӗ:

— Пирӗннисем чакса кайнӑ. Мана пӑрахса хӑварнӑ... Вилнӗ тесе шутланӑ пулмалла ӗнтӗ...

Вӑл ним тума пӗлмен...

Ҫӗрле. Сивӗ. Темиҫе ҫӗртен аманнӑ, ҫан-ҫурӑм хускатмалла мар. Таврара пӗр чун та ҫук. Ӑҫта хамӑрннисем, ӑҫта нимӗҫсем — нимӗн те паллӑ мар. Каяс пул-

сан, хăш еннелле каймалла? Тен, темиçе çĕр метртанах тăшмансен аллине пырса лекмелле? Вара? Вара, паллах, вилĕм... Анчах кунта выртсан та нумаях пурăнас çук. Кунта выртсан та — вилĕм. Мĕн те пулин тăвасах пулать. Кам пĕлет, тен, çăлăнма май килĕ? Тен, хамăрăннисем тĕлнех çитсе тухăп?

Вилес килмен Палюковăн. Унăн пурăнас килнĕ. Вăл пĕтĕмпе те вунтăххăр кăна тултарнă-ха, унăн малашне нумай пурăнмалла пулнă, вăл паян та, ĕнер те, унччен малтан та çав малашнехи пурнăçшăн çапăçнă, çавăншăн рубежран пĕр утăм та чакман!

Пурăнас кăмăл çĕнтернĕ. Суранĕсем тем пекех ыратсан та, унтан та кунтан юн сăрхăннă пулин те, малта мĕн пулассине пĕлмесен те, вăл окопран ерипен шуса тухнă та, ăнсăртран ăлла лекнĕ винтовка çине тайăнса, тĕттĕмелле утнă. Малтанах хăш еннелле кайнине те чухламан, пĕлĕтре пĕр пысăкрах çăлтăра суйласа илнĕ те, çавăн çине пăха-пăха утнă. Унăн вăйĕ чаксах пынă, вăхăчĕ-вăхăчĕпе пуçĕ çаврăннă, ун пек чух пĕр хушă тăрса канма тивнĕ, çапах та шалти сасă ăна пĕрмай: «Ут, ут, малаллах шăвăн, çăлăнăç пулмаллах», тенĕ те, вăл юлашки вăйне пухса, шăлĕсене çыртса лартса, каллех утнă.

Нумай кайнă-и вăл çапла, сахал-и — ăна хăй те тавçăрса илме пултарайман, анчах сасартăк ун умне çӳлĕ те парка йывăç мĕлкисем тухса тăнă.

— Мĕн ку? Вăрман-и? Ял-и?— тесе ыйтнă Палюков хăйĕнчен хăй.

Вăрман пулсан, унта кĕрсе кайса çухаласран хăрамалла, ял пулсан... тен, унта халь фашистсем тăраççĕ?

Хăй пачах халтан кайма тытăннине, тек ура çинче тăма пултарайманнине туйса, Палюков çав йывăççем патнерех пынă. Ку — ял иккен. Чылай шухăшласа тăрсан, вăл çав ял вĕçĕнчи пӳрте çитсе пăхма шут тунă.

— Мĕн пулать, мĕн килет...

Пырса шакканă вара пĕр пĕчĕк пӳрт алăкĕнчен.

— Тархасшăн, çĕр каçма кĕртĕр...

Алăка ватăрах хĕрарăм уçнă. Унăн хăрах аллинче пĕчĕк лампа пулнă. Хăй умĕнче вилĕм сăнĕ çапнă, юнланса пĕтнĕ совет салтакĕ тăнине курсанах, вăл ăна шăппăн кăна:

— Кĕр, ывăлăм, кĕр, çĕр каçмалăх вырăнĕ тупăнĕ,— тенĕ.

Палюков хăрах урипе алăк урлă ярса пуснă та çав самантрах урайне ӳкнĕ. Урăх вăй пулман унăн. Куçĕ хуралса килнĕ, пуçĕ ним майсăр шавлама тытăннă та—ăнран кайнă.

Тепĕр кунне, кăнтăрла çитеспе, куçне уçсан, вăл хăй пĕчĕкçеç пӳртре, çемçе минтерсем çинче выртнине курнă. Унăн пур суранĕсене те такамăн çепĕç алли тап-таса шур пирпе çыхса янă. Хăй ăçта выртнине вăл тăруках тавçăрса та илеймен.

— Госпитале лекнĕ-ши эп капла?

Анчах хăй умне пĕр вунвиç çулхи арçын ача пырса тăрсан, ăнланнă вара:

— Каç килсе кĕнĕ çĕртех пулас...

Арçын ача ун çине кăштах ютшăнса, кăштах тĕлĕнсе пăхнă.

— Эс мĕн ятлă?— тесе ыйтнă Палюков хуллен.

— Петя,— тенĕ лешĕ ăна хирĕç.

— Шыв ĕçтер-ха мана, Петя. Ăш хыпсах тухать...

Петя витререн шыв ăснă та, Палюкова тăрса ларма йывăррине кура, хăрах аллипе унăн пуçне çĕклесе, тепĕр аллипе куркана ун çăварĕ патне илсе пырса ĕçтернĕ. Ĕçнĕ хыççăн Палюков куçне хупса каллех тĕлĕрсе кайнă пек пулнă. Çапах та вăл пӳрт алăкĕ уçăлса хупăннине, хĕрарăм сасси: «Вăранмарĕ-и халь те?»— тесе ыйтнине, Петя ăна хирĕç: «Эп ăна шыв патăм», тенине, хĕрарăм: «Шыв памалла марччĕ, эп ăна валли сĕт илсе килтĕм», тесе чăланалла утса кĕрсе кайнине те илтнĕ. Палюков куçне уçса: «Ан чăрманăр, тархасшăн», тесшĕн пулнă, анчах калас сăмах пыртан тухайман. Вăл татах темле тĕпсĕр шăтăка путнă пек пулнă.

Куçне тепре уçсан, ун умĕнче кил хуçи хĕрарăм аллине пысăк кружка тытса тăнă.

— Сĕт вĕретрĕм сан валли, ĕç-ха,— тенĕ вăл йăвашшăн,— ĕç, вăй кĕтĕр пăртак...

Йывăррăн сывлакан Палюков ăна калама çук ыра кăмăлпа сăнаса выртнă.

— Мана тăван анне пекех пăхатăр-çке эсир...

— Епле пăхас-ха тата ман сана?— тĕлĕннĕ хĕрарăм.— Эс пире тăшмансенчен хӳтĕлесе аманнă вĕт-ха, пирĕншĕн юн тăкнă... Ме-ха, ĕç, сĕчĕ сивĕнсе кайиччен.

Вăл, Петя пекех, хăрах аллипе пуçне çĕклесе, теприпе кружка тытса, Палюкова ăшă сĕт ĕçтернĕ. Юлаш-

ки тумламсене ёҫсе ярсан, Палюков тарӑннӑн сывласа илнӗ те:

— Мӗнпе тав тума пӗлӗп-ши эпӗ сире?— тенӗ.

— И-и, тав тӑвасси пулӗ-ха вӑл,— аллипе сулнӑ хӗрарӑм.— Сӑртпа сӑрт тӗл пулмасть, ҫынпа ҫын яланах тӗл пулма пултарать. Пуҫӑмӑрсем сывӑ пулччӑр кӑна. Халь ҫавӑнтан хӑрушӑ...

Хӗрарӑм Палюков пуҫӗ вӗҫне ларнӑ та, вӗсем хушшинче чунран тухакан ӑшӑ калаҫу пуҫланса кайнӑ. Хӗрарӑм ун ҫинчен ыйтса пӗлнӗ: ӑҫти ҫын, тӑвансем-мӗнсем пур-и, вӑрҫӑччен кам пулнӑ — йӗркипех. Хӑй ҫинчен те каласа панӑ: унӑн упӑшки Советра ӗҫленӗ те, колхозсем тунӑ вӑхӑтра ӑна кулаксем вӗлернӗ, кайран халӑх ун вырӑнне Совета Варвара Васильевнӑна хӑйне суйланӑ, вара вӑл тӑватӑ ҫул хушши ял Совет членӗ пулнӑ, партине кӗнӗ, каярахпа сӗт фермин пуҫлӑхӗ пулса ӗҫленӗ. Анчах ӗнесене хӗвелтухӑҫнелле, вӑрҫӑ ҫук вырӑнсене ӑсатнӑ та, вӑл ӗҫсӗрех тӑрса юлнӑ. Нимӗҫсем килсен хӑйне ырӑ пулас ҫуккине пӗлсе, вӑл тем пекех кунтан тухса каясшӑн пулнӑ, анчах ывӑлӗ чирлӗ выртнӑ пирки каяйман.

— Ҫапах та, хама тем тусан та, тӑшмана парӑнас шухӑшӑм ҫук,— тенӗ вӑл.— Мана халь тин никам та чура тума пултараймӗ... Икӗ ывӑлӑм Хӗрлӗ Ҫарта ҫапӑҫҫӗ пулать те — эпӗ тӑшман умне чӗркуҫленетӗп-и? Антив, хуть те пуҫӑма касса татчӑр...

Ҫӗрле Палюков каллех вӗриленсе кайнӑ, ӑнран тухсах аташма тапратнӑ, вырӑн ҫинчен сике-сике тӑрса хӑлаҫланнӑ, темскер кӑшкӑрнӑ... Варвара Васильевна ҫӗрӗпех чӑлӑм куҫ хупмасӑр пӑхнӑ ӑна, пуҫӗ ҫине тутӑр йӗпетсе хурса лӑплантарнӑ, ҫывӑратса яма тӑрӑшнӑ. Ир енне тин вара Палюков, шӑпланса, вилнӗ пекех ҫывӑрса кайнӑ.

Ҫав каҫхинех яла фашистсем пырса кӗнӗ...

Ун ҫинчен Варвара Васильевна ирхине шыв ӑсма кайсан пӗлнӗ. Ҫӑл патне пӗр хӗрарӑм темле хутланса, такам курасран хӑранӑ пек, унталла-кунталла пӑхкаласа чупса пынӑ та Варвара Васильевнӑран шӑппӑн кӑна:
— Сан патна пымарӗҫ-и-ха?— тесе ыйтнӑ.
— Камсем?— тӗлӗннӗ ку.
— Ай пӗлместӗн-им? Илтмен-им вара?
— Ним те пӗлместӗп...
— Ара, ял тулли нимӗҫ вӗт!

Варвара Васильевна аллинчи витри шăнкăртах тухса ӳкнĕ. Хăй вăл çавăнтах хут пек шуралса кайнă.

— Хăçан çитнĕ вĕсем?

— Кĕçĕр, кĕçĕр! Килтен киле çĕрĕпех тĕрĕслесе çӳрерĕç вĕт. Эсĕ ытла ял вĕçĕнче пурăннă пирки çеç пыман пуль сан патна... Асту, куçа курăнакан ытлашши япала пур пулсан — пытар, пĕтĕмпех тасатса тухаççĕ.

Варвара Васильевна урăх калаçса та тăман. Чĕтрекен аллисемпе витресене картлă кĕвентерен çакнă та часрах килнелле утнă. Утнă темелле те мар, чупсах кайнă вăл. Урисем айĕнче çĕр пуррине те туйман. Витресенчи шывĕ сирпĕнсе кăна пынă.

«Куçа курăнакан ытлашши япаласем пур пулсан — пытар...» Çак сăмахсем Варвара Васильевнăн хăлхинчех янăраса тăнă.

«Пытар...»

Çук, ун пуçĕнче япала пытарас шухăш пулман халь. Унăн пӳртĕнче темĕнле япаларан та хаклăраххи выртнă: аманнă çамрăк салтак. Япаласене мар, часрах ăна пытарма тивнĕ Варвара Васильевнăн. Инçетерех, тĕплĕрех, тăшман шыраса тупмалла мар çĕре пытармалла... Анчах — ăçта? Хăш вырăна? Çулла пулсан — татах та вырăн тупма пулатчĕ, анчах халь кĕркунне, сивĕ, çынни — чирлĕ, суранĕсем тӳрленме те пуçламан.

Амăшĕ çав тери пăлханнине Петя вăл пӳрте кĕрсенех сиснĕ.

— Мĕн пулчĕ сана?

— Ан шарла,— тенĕ ăна амăшĕ.

Витрисене чăлана лартнă та васкаса каллех тулалла тухнă. Вăл Палюкова пытармалли май шыраса килкарти тавра темиçе хут та çаврăннă, анчах юрăхлă вырăн тупăнман: ни витере, ни нӳхрепре, ниаслăк çинче... Тăшмансем килсе ухтарас пулсан, кунта ăна çăмăллăнах тупнă пулĕччĕç... Тупсан вара... о, тупсан мĕн пулассине Варвара Васильевна пит лайăх пĕлнĕ! Вăрçă пуçланнăранпа фашистсем пирĕн çĕр çинче мĕн чухлĕ айăпсăр çынсене вĕлерни çинчен вăл çителĕклех илтнĕ.

Тăхтаса тăма юраман. Яла каçах килсе кĕнĕскерсем, нумай килсенче ухтарса çӳренĕскерсем, вĕсем кунта та кашни самантрах килсе кĕме пултарнă. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе Варвара Васильевнăна урамра такам ури сассисем илтĕннĕ пек туйăнса кайнă. Пăлханнă чĕри тата хытăрах тапма пуçланă вара унăн.

— Пытарас, ăçта та пулин, епле те пулин пытарас, хамăр çынна урнă кашкăрсен аллине парас мар... Çăлас!..— Çак шухăш нимĕн канлĕх памасăр вĕресе тăнă унăн пуçĕнче.

Ним тума аптранă енне, вăл анкартинелле тухнă. Кунта та аманнă салтака пытармалли майлă вырăнах пулман çав. Арпалăх — шанчăксăр, тата хальхи çанталăкра унта чирлĕ çын мар, сывви те тӳсес çук. Çĕрулми пусси... Çук, унта та ĕç тухмасть. Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, ăçта пытарса хăтарас ку йĕкĕте?

Сасартăк Варвара Васильевнăн пуçне телейлĕ шухăш пырса кĕнĕ: ялтан пĕр çухрăм çурăра, сăрт çамкинче, пĕркунне халăха чылай окопсем алттарнăччĕ, вĕсенчен хăшĕсене çĕрпӳртсем пекех тунăччĕ. «Вăхăтлăха ăна çавăнта кайса хурсан, мĕнле-ши? Неушлĕ нимĕçсем çав шăтăксене те ухтарса çӳрĕç? Мĕн шыраччăр вĕсем унта? Тем тесен те, ку шанчăклă пулать... Тĕттĕмлентĕр кăна, тӳрех çавăнта илсе каятпăр. Улăм сарас, витĕнме тумтирсем парас, каç-каç хамăр кайса пăхăпăр...»

Çапла шухăшласа, Варвара Васильевна часрах пӳрте кĕнĕ. Палюков тĕлĕрсе кайнă пулнă, хăш чух кăна йывăррăн йынăшкаланă, типсе ларнă тутисене çуллаçулла илнĕ.

— Такамсем килеççĕ пирĕн пата!— тенĕ сасартăк чӳрече умĕнче ларакан Петя.— Виççĕн...

Варвара Васильевна, халь çеç чăлана кĕрсе апат хатĕрлеме тытăннăскер, тутине çыртса лартнă та куçĕ хуралса килнипе кăшт çеç ӳкмен. Вăл урам алăкĕ уçăлса хупăннине, унтан пусма картлашкисем тăрăх темиçе çын таканлă атăсемпе кĕмсĕртеттерсе хăпарнине уççăнах илтнĕ.

— Пулчĕ... Тытрĕç... Вĕлереççĕ... — çиçĕм пек çиçсе илнĕ шухăш унăн пуçĕнче.

Çав самантрах вăл Палюков выртакан вырăн патне чупса пырса ăна хăй кĕлеткипе картласа тăнă.

«Ăна вĕлериччен малтан хама вĕлерччĕр...»

Пӳрте виçĕ нимĕç кĕрсе тăнă. Вĕсем Варвара Васильевнăна пĕчĕккĕ чух асламăшĕн юмахĕсенче илтнĕ усалсем, чуниллисем пекех туйăнса кайнă. Хăйсем хушшинче темскер мăкăртатса илсен, вĕсенчен пĕри, çурхи кашкăр пек ырханни, Варвара Васильевнăна çисе ярас пек пăхса, халь те вăранман Палюков çине пӳрнипе тĕллесе ыйтнă:

— Кто... этот мужчин?

— Ман ывăл... ывăл... — тенĕ Варвара Васильевна чĕтрекен сасăпа, Палюкова тăшман кусĕнчен тата лайăххрах картлама тăрăшса.— Чирлĕ выртать, ним пĕлми...

— Нумайранпа чирлет-и?— тесе ыйтнă çав нимĕçех, вырăс сăмахĕсене хуçкаласа.

— Чылайранпа ĕнтĕ... Икĕ эрне ытла.

— Мĕнле чир унăн?

— Пĕлместĕп... Тиф пулмалла.

— Тиф?

— Тифах пуль, тетĕп çав. Пирĕн патра халь вăл чир питĕ сарăлнă та...

Нимĕç салтакĕсем пĕр-пĕрин çине кăн-кан пăхкаласа илнĕ те тек ыйтса-калаçса тăмасăрах кăптăртатса тухса кайнă. Каялла çаврăнса та пăхман.

— А-а, çапах та хăрама пĕлетĕр-и, çĕленсем? Сире эп тиф мар, халерăпа чума ертсе чыхăнтарăттăм,— чышкипе юнаса илнĕ Варвара Васильевна, нимĕçсем васкаса тăвалла хăпарса кайнине чӳрече витĕр пăхса тăрса.

Варвара Васильевна хăй тăшмансене улталама пултарнăшăн хĕпĕртесе сассăр кулса илнĕ, тиф çинчен вăл нимĕçсене юри, хăратас шутпа каланă-çке-ха. Пырать, çак чир ăнсăртран аса килнĕ ăна, унсăрăн тем тумаллаччĕ-ха, темле тасалмаллаччĕ вĕсенчен!..

Çапах та, лăпланса ларас пулмасть. Пĕринче ĕç майлашрĕ, анчах тепринче майлашăнмасан та пултарать.

— Епле пулсан та, ку йĕкĕте улахрах вырăна ăсатас, вара уншăн та шанчăклăрах, хама та лайăхрах пулĕ...

Вăл хăйĕн шухăшне Петьăна ăнлантарса панă, ăна сăртри дзотсене кайса пăхтарнă («хăшĕ лайăхрах, типĕрех, хăшĕнче, тен, çĕрле вут хурса ăшăнма та пулать...»), хăй Палюков валли çимеллисем хатĕрленĕ. Петя таврăнсан вара, тулта ним курăнми тĕттĕм пулса çитсен, вĕсем Палюкова, иккĕш икĕ енчен çавăтса, хирелле илсе тухса кайнă. Варвара Васильевна çул тăршшĕпех йăпатса пынă ăна:

— Эс ан пăшăрхан, ывăлăм... Ан куляи... Хăвăншăнах аван пулать ку. Ак кăштах сываланăн та, унтан вара мĕн тăвасси курăнĕ... Эпир сана пăрахас çук. Кашни каçах пырса тăрăпăр сан патна, мĕн кирлине пĕтĕмпех илсе пырăпăр, ним хуйхи-суйхи те пулмĕ санăн. Енчен,

нимӗҫсем хамăр ялтан тухса кайсан, сана каллех киле илсе пырăпăр... Лăпкă пул...

— Ма калатăр эсир ку сăмахсене? Эпĕ хам та аван ăнланатăп вĕт...— тесе пынă Палюков хуллен.

Тепĕр сехетрен Варвара Васильевнăпа Петя, Палюкова вăрттăн дзота вырнаҫтарса хăварса, киле таврăннă. Крыльца умне ҫитсен, Варвара Васильевна сасартăк чарăнса шухăша кайнă пек пулнă.

— Эс кĕр,— тенĕ вăл ывăлне,— манăн пĕр ĕҫ пур-ха...

— Таҫта каятăн-им?— ыйтнă Петя.— Ан кай, эп пĕччен юлма хăратăп...

— Ҫук, ниҫта та каймастăп... Йăпăрт кăна эпĕ...

Петя кĕрсе кайсанах вăл ҫенĕхрен хупăлчаллă салтак котелокĕ илсе тухнă. Унтан кĕсйинчен темле пĕчĕкҫеҫ япала кăларса, ăна кипкепе пит тĕплĕ чĕркенĕ те ҫав котелок ăшне хунă, вара лупас айĕнчи пĕр кĕтесе кайса, ҫĕр айне чавса пытарнă.

— Шыраччăрах халь, пурпĕр тупаймаҫҫĕ.

Вĕсем ҫутă ҫутмасăрах саланкаласа ҫывăрма выртнă, анчах нихăшĕ те ҫывăрса каяйман. Иккĕшне те йывăр шухăшсем ҫавăрса илнĕ: мĕн пулать-ши малалла? Ыранхи кун тата мĕнле инкек йăтăнса килĕ-ши?

Анчах инкеке ыранччен те кĕтмелле пулман. Хурлăхпа асап вĕсен пӳртне ҫав каҫах ҫĕмĕрсе ҫитсе кĕнĕ...

Ҫурҫĕр тĕлĕнче (Варвара Васильевнăпа Петя кăшт тĕлĕрсе кайма пуҫланă-мĕн ун чух) сасартăк такамсем ҫенĕх алăкне чышкăсемпе ҫапса, урисемпе тапса кисрентерме тытăннă. Шакканă май ăнран тухса кайнă пекех кăшкăрнă хăйсем:

— Уҫ часрах! Уҫ, большевик сысни!.. Уҫмасан, халех вут тĕртсе хыптарса яратпăр!

Шаккакансем урă маррине Варвара Васильевна тӳрех сиснĕ.

— Эппин, тата ытларах урнă кусем... Хăтăлса юласине шанма ҫук ĕнтĕ...

Петя, хăранипе, сиксе чĕтренĕ.

— Ан уҫ, анне, ан кĕрт...— тенĕ вăл, амăшне аллинчен тытса.

— Юрамасть, ывăлăм, уҫмасан хамăра тата йывăртарах пулма пултарать... Эс ан хăра, ан макăр... Хăвăнтан ыйтма пуҫласан, ним те ан кала, ҫирĕпрех пул... —

васкаса ăс панă ăна Варвара Васильевна. Хăй вара çавăнтах çенĕх алăкне тухса уçнă.

Самантранах пӳрт ăшчиккине кĕсъере чиксе çӳремелли электричество хунарĕ çутатнă. Çутă пайăрки пӳрте йĕри-тавра çаврăнса Петя çине пырса ӳкнĕ, унтан Варвара Васильевна çине куçнă. Куçран тăрук çутатнипе вĕсем хăйсем патне камсем килсе кĕнине те уйăрса илеймен.

— Çут-ха лампуна, йĕксĕк, пирĕн санпа таса чĕререн калаçмаллисем пур,— тенĕ килнисенчен пĕри.— Ĕлĕкхине те асăнăпăр, хальхине те манмăпăр, çăкăр-тăвара хире-хирĕç тăвăпăр...

Темшĕн, Петьăна ку сăмахсене калаканни хĕрарăм пулнă пек туйăннă.

— Неушлĕ вара нимĕçсен вырăсла калаçакан хĕрарăмсем пулма пултараççĕ? Çук, йăнăшрăм пулĕ. Тепĕр чух çинçе сасăпа калаçакан арçынсем те пулаççĕ вĕт...

Анчах та вăл йăнăшман. Пӳрте çĕмĕрсе кĕнĕ виçĕ нимĕçпе пĕрле вырăсла тумланнă пĕр çамрăкрах мар хĕрарăм пулнă. Каçăртарах сăмсаллă, темле тискер куçлă, тутисене хĕп-хĕрлĕ хĕретсе лартнă ирсĕр хĕрарăм пулнă вăл. Петя палламан ăна, анчах Варвара Васильевна хăй лампа çутса ярсанах уйăрса илнĕ: ку — 1930 çулта кулаксене пĕтернĕ чух ссылкăна янă Евстрат Пудов ятлă усламçăн кĕçĕн хĕрĕ иккен...

— Ăçтан килсе тухма пĕлнĕ вăл çавăн чухлĕ çул иртнĕ хыççăн?— тĕлĕнсе кайнă Варвара Васильевна.— Ун чух ачисене хĕрхентĕмĕр эпир, анчах халь вĕсем пире хĕрхенсе тăрас çук ĕнтĕ...

... Йăм хура автоматсем тытнă икĕ нимĕç алăк патне вырнаçнă, тепĕр нимĕçĕпе çав хĕрарăм сĕтелĕн икĕ пуçне ларнă. Петя çаплах лăпланаймасăр, пĕрре пĕрисем çине, тепре теприсем çине пăха-пăха илнĕ.

— Мĕн тăваççĕ-ши ĕнтĕ? Хĕнеççĕ-ши? Персе пăрахаççĕ-ши?

Тутисене сăрланă хĕрарăм пирус чĕртсе янă та, Варвара Васильевна çине, пуçне хăяккăнтарах тытса, хăрах куçне хĕсерех пăхса, сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса ыйтнă:

— Н-но, мĕнле пурăнкалатăн, ват кĕсре?

— Чун тухиччен пурăнас пулать...— хуллен кăна ответ панă Варвара Васильевна, чăлан çумĕнче аллисене хĕреслĕ тытса тăрса.

— Чунĕ пирки ан кулян, кирлĕ пулсан, эпир ăна хамăрах кăларса ывăтăпăр,— тенĕ хĕрарăм, пирусне ĕмеĕме.— Ывăлусем ăçта санăн?

— Çынсен ăçта — манăн та çавăнтах ĕнтĕ,— каллех лăпкăн ответ панă Варвара Васильевна, хĕрарăм çине пăхмасăрах.— Ун çинчен мĕн ыйтмалли пур...

— Çапах та, тен, каласа парăн?— тутисене çилĕпе пăркаласа илнĕ лешĕ.

— Вĕсем халь ăçтине, чĕрри-виллине хама кам та пулин каласа паринччĕ... Тем пекех тав тăвăттăм эпĕ вăл çынна.

Хĕрлĕ туталлă хĕрарăм сĕтел çине чышкипе чант! тутарнă та сасартăк ялт! виксе тăнă.

— Эсĕ! Йытами! Эпир кунта санпа юмах ярса ларма килмен!— тесе кăшкăрса пăрахнă вăл.— Кала тӳррипе!

— Эпĕ нихçан та кукăр-макăр калаçман.

— Ну-ка, начальниксем умĕнче чипертерех тăрса калаç! Кил кунтарах! Каласа пар, ăçта сан ывăлусем? Хăш тĕлте пытанса пурăнаççĕ?— шăртланса ӳкнĕ чăсланкă нимĕçĕ.

— Каларăм-çке...

— Ним те каламарăн эс! Суятăн! Хăш ывăлу килте пулнă санăн паян ирхине?

— Ак çак кăна пулнă...— Варвара Васильевна вырăн çинче ни вилĕ, ни чĕрĕ ларакан Петя çине кăтартнă.— Урăх никам та пулман...

Хĕрарăм нимĕçпе темскер калаçса илнĕ.

Лешĕ алăк патĕнчи салтаксенчен пĕрине сăмах хушнă. Салтак: «найн, найн!» тенĕ те пуçне пăркаланă. Хĕрлĕ туталлă хĕрарăмĕ вара сĕтел хушшинчен тухса, чышкисене чăмăртаса, Варвара Васильевна патне утса пыма пуçланă...

— Чăннипе калатăн-и эс, каламастăн-и, ватă стервă... Ăçта тартрăн ывăлна? Ирхине вăл кунтах пулнă, ак, салтак килсе курнă!

— Курнă пулсан, ма тытман?— кăштах хăюлланнă Варвара Васильевна...

— А-а, эс çапла калаçатăн пулать тата?!

Чăсланкă нимĕç куçран тӳррĕн, çав тери кураймасăр пăхса, шăлне çыртса тăракан Варвара Васильевнăна пур вăйран çупса янă.

— Вĕлеретĕп! Кала!

Ответ вырӑнне ку пуҫне пӑркаланӑ ҫеҫ. Вара хӗрлӗ ҫӳҫлӗ чӑсланкӑ фашист пушшех урса кайнӑ. Варвара Васильевнӑна вӑл кӑкринчен чышса каллех чӑлан ҫумнелле тӑратнӑ та, кӗсйинчен пистолет кӑларса, унӑн пичӗ патнех илсе пынӑ.

— Вилессӳ килмест пулсан — кала, пурнӑҫу йӑлӑхтарчӗ пулсан — хӑвӑн ирӗк! Ак ҫакӑнта — сакӑр пуля, сана пӗрре кӑна кирлӗ. Ӑнлантӑн-и мана, ват сысна?

— Ӑнлантӑм,— тенӗ Варвара Васильевна шӑппӑн.

— Кала эппин часрах мӗн ыйтнине!— кӑшкӑрса янӑ тутине хӗретнӗ хӗрарӑм.

— Эп... Эп нимӗн те пӗлместӗп... Никама та курман эпӗ... Ӗненместӗр пулсан — ухтарӑр, никам та ҫук ман патра.

Варвара Васильевнӑн тутисем чӗтренӗ, сӑнӗ шурса кайнӑ, чӗри сиксе тухас пек тапнӑ. Нимӗҫсемпе ҫак кулак хӗрӗ ӑна хӑйне те, Петьӑна та ним тытӑнса тӑмасӑрах вӗлерме пултарасса пит лайӑх пӗлнӗ вӑл, анчах унӑн шухӑшӗсем ҫав вӑхӑтрах урӑххи ҫине куҫса кайнӑ. Вӑл Хӗрлӗ Ҫарти икӗ ывӑлне, вӗсем халь ҫак урнӑ йытӑсене хирӗҫ ҫапӑҫнине аса илнӗ. Ун куҫӗ умне ӗнер каҫхине аманса юнланса пӗтнӗ йӗкӗт епле килсе кӗни тухса тӑнӑ... Ҫак самантра ак вӑл тӗттӗм те нӳрӗ шӑтӑкра выртать, ҫамрӑк, хӗрӳ чӗреллӗ, кунти ҫӗршыва хӳтӗлеме инҫетри Атӑл ҫинчен килнӗскер. Епле каласа пама май пултӑр вара ун ҫинчен? Ҫук, ҫук, нихҫан та, ним тусан та...

Хыткан та чӑсланкӑ салтак, икӗ утӑм каялла чакса тӑнӑ та ӑна пистолетпа тепӗр хут тӗллеме тытӑннӑ. Ерипен, васкамасӑр тӗлленӗ вӑл. Шӑлӗсене ҫыртса, тутисене йӗрӗнчӗклӗн чалӑштарса...

— Юлашки хут ыйтатӑп... Ӑҫта пытартӑн ывӑлна? Ӑҫта тартрӑн? Камсемпе ҫыхлантарса ятӑн? Ну?

Варвара Васильевна урӑх нимӗн те чӗнмен. Вӑл пистолет кӗпҫи хӑйӗн ҫамки тӗлнелле ҫӗкленнине, тискер этем сулахай аллипе хӑйне пилӗкӗнчен тытса, сулахай куҫне хӗссе тӗлленине, сутӑнчӑк хӗрарӑмӑн ирсӗр сӑнне курнӑ. Пӗр самантлӑха Петьӑн хӑрушла чарӑлса кайнӑ куҫӗ, вӑл кӑшкӑрма хатӗрленсе ҫӑварне карни курӑнса кайнӑ, унтан сасартӑк пӗтӗмпех хупланнӑ.

Пӳртре пӑшал сасси кӗрӗслетнӗ...

Варвара Васильевна урайне ӳкнӗ. Урӑх вӑл нимӗн те туйман, нимӗн те илтмен, нимӗн те курман.

Майепе тана кӗрсе, ерипен куҫне уҫна чух чӳречесем витӗр кӑвак ҫутӑ ҫапнӑ пулнӑ ӗнтӗ. Вӑл урай варринче, йӑпӑлка ҫӑра юн ҫинче выртнӑ. Пуҫ вӗҫӗнче вӑйсӑрланса ҫитнӗ Петя макӑрса ларнӑ...

Леш нимӗҫ ӑна тивертмелле пемен иккен, ӑна епле пулсан та парӑнтарас тесе, хӑратмалла ҫеҫ персе янӑ. Анчах та Варвара Васильевна тӑнсӑр пулса ӳкнине, паян вӑл текех калаҫма пултарас ҫуккине курсан, тарӑхнипе урса ҫитнӗскер, ӑна калама ҫук тискеррӗн хӗнесе тӑкнӑ. Пистолет аврипе ҫапа-ҫапа ун пуҫне темиҫе ҫӗртен шӑтарнӑ, таканлӑ аттипе тапа-тапа питне-куҫне ҫӗмӗрсе пӗтернӗ, хӑй ҫине хӑпара-хӑпара сикнӗ. Ҫаксене курса, Петя амӑшӗ хутне кӗме пикеннӗ, анчах тепӗр нимӗҫӗ ӑна тытса кӗтеселле ҫавӑрса ҫапнӑ та, вара вӑл та тем вӑхӑтченех пӗлми пулса выртнӑ...

Петя пулӑшнипе тӑна кӗнӗ Варвара Васильевна аран-аран вырӑн ҫине хӑпаркаланӑ. Вӑл халь йынӑшмасӑр алли-урине те хускатайман. Ана пӗҫертсе пӑрахнӑ, вӑл кӑштах тӗлӗрсе кайнӑ пек пулнӑ хыҫҫӑн куҫне уҫсан, ывӑлӗнчен пӗрмай шыв ыйтнӑ. Ҫапах та, хӑй ҫав тери асапланса аран сывласа выртнӑ пулин те, каҫалла сулӑнсан Петьӑна хӑй ҫывӑхнерех чӗнсе илсе, ӑна хуллен кӑна:

— Лере кайса килетӗн пуль, ывӑлӑм,— тенӗ.

Петя тӑруках ӑнланайман.

— Ӑҫта, анне?

— Окопа, ара, салтак патне... Епле вӑл унта... чӗрӗ-и, сывӑ-и? Килсе пӑрахрӗҫ те мансах кайрӗҫ, тейӗ тата... Хамӑр ҫын вӗт, темле пулсан та пулӑшас пулать... Чӑланта, сунтӑх ӑшӗнче, икӗ пашалу пурччӗ, пӗрине леҫсе пар. Хамӑр патра мӗн пулнине ан пӗлтер — чирлӗ ҫынна пӑлхантарни сиенлӗ вӑл... Кун ҫинчен пӗлсен, тухса кайма шут тытӗ тата... Кала: май килсенех шанчӑклӑ вырӑна ӑсатӑпӑр... Шансах тӑтӑр...

—Юрӗ, анне,— тенӗ те Петя, тумланма тытӑннӑ. Варвара Васильевна малалла хӑй тӗллӗн калаҫнӑ пек калаҫса выртнӑ.

— Пире вӗсем хӗненипе парӑнтарма пулать, теҫҫӗ пуль... Айвансем! Хӑйсене хирӗҫ тата вӑйлӑрах кӗрешме вӗрентеҫҫӗ кӑна вӗт!

Ывӑлӗ тухса кайсан та, вӑл ҫавӑн ҫинченех шухӑшласа выртнӑ.

— Кăкартан юлашки сывлăш тухиччен те парăнассăм çук, ураран ура иртми пуличчен те тавăрма пăрахассăм çук халь эп вĕсене!..

* * *

...Ку хăрушă повеçĕн юлашки пайне Варвара Васильевна пире хăй каласа пачĕ. Чун çӳçенчĕ, çурăм çине сив тар тухрĕ ăна итлесе ларнă чухне.

— Темиçе талăк выртрăм эпĕ вырăн çинчен тăраймасăр,— терĕ вăл,— вуçех те сывалаймастăп пулĕ тесеттĕм. Кашни ӳсĕрмессеренех пыртан юн муклашкисем тухса ӳкетчĕç. Ӳпкене хускатнă пулмалла вĕсем манăнне... Анчах çав хушăрах ак ку пĕрре те асран тухмарĕ... (Вăл пуçĕпе Палюков еннелле сулчĕ.) Ман Петя кашни каçах кайса тăчĕ ун патне, çимеллисем леçрĕ. Кӳршĕсенчен ман валли тесе сĕт тупкаласа килетчĕ те ăна та кайса паратчĕ... Çапах та, пĕрмаях кун пек пулса пыма пултарайманçке-ха. Çанталăк ытларах сивĕтме пуçларĕ. Вара эпĕ Петьăна çапла хушрăм: Лукинкăри аппусем патне кай та тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пар, вĕсем ăна — Мишăна ĕнтĕ — хăйсем патне илсе ăшăрах çĕре пытарччăр, терĕм. Ачи ман, итлекенскер, сăмахсăрах килĕшсе тухса кайрĕ. Анчах кайрĕ те — çухалчĕ. Икĕ талăк кĕтрĕм эп ăна. Тем тĕрлĕ те шухăшласа пăхрăм, чĕре çурăлсах тухатчĕ. Хăвăрах ăнланмалла... Юлашкинчен çапах та таврăнчĕ те савăнтарсах ячĕ: Мишăна илсе кайрăмăр, терĕ, аппасем ăна шанчăклă çынсем патне ăсатма пулчĕç, терĕ. Кайран, чылай вăхăт иртсен тин пĕлтĕм: ăна вĕсем партизансемпе явăçтарса янă иккен...

— Тавах вĕсене унщăн,— пуçĕпе сулса илчĕ Палюков,— питĕ лайăх пулчĕ вăл. Каллех алла пăшал тытса çапăçма май килчĕ...

— Ăна пĕтĕмпех Петя турĕ ĕнтĕ, унсăр нимĕн те тăваймастăмччĕ...— Варвара Васильевна темшĕн хаштах сывласа ячĕ.— Питĕ маттур ачаччĕ вĕт...

— Чим-ха, ма ун пек калатăр?.. Халь çук-им вара вăл?— хăраса ыйтрĕ Палюков.

Варвара Васильевнăн куçĕ тăруках шывланса кайрĕ, унтан пĕркеленнĕ питçăмарти тăрăх шултра куççулĕсем шăпăртатса юхса анчĕç.

— Çук çав ман Петя... Чунне илчĕç унăнне шуйттан йăхĕсем!— терĕ вăл.— Пĕтерчĕç ачана!

— Епле пулчӗ вӑл? Каласа пар, тархасшӑн,— ыйтрӗ Палюков, ҫав тери пӑлханса кайса.— Петя маншӑн тӑван шӑллӑмран та хаклӑрах пулнӑ вӗт, вӑл ман пурнӑҫа ҫӑлнӑ! Неушлӗ ниепле те ҫӑлса хӑварма пулмарӗ?..

— Епле пуласси...— терӗ те Варвара Васильевна, каллех пӗр вӑхӑт шарламасӑр ларчӗ. Ытла та йывӑр пулчӗ ӗнтӗ ӑна иртнӗ асаплӑ кунсене тата хӑйӗн юратнӑ ачине ҫухатнине аса илме. Хӑй вӑйлӑ чӗреллӗ, хуҫӑлми ҫирӗп кӑмӑллӑ ҫын пулнипе кӑна тепӗр хут макӑрса ямарӗ пулас вӑл. Кӑмӑлне хытарчӗ те — лӑпкӑ, тикӗс сасӑпа каласа пама пуҫларӗ...

— Малтанах эпир Петьӑпа иксӗмӗр таҫта тӗпсакайӗнче пурӑннӑ пекех пурӑнтӑмӑр... Ниҫта тухса ҫӳремен, никампа хутшӑнман. Хамӑр пата никам та килместчӗ. Ун чух ялти ҫынсем, нимӗҫсен куҫӗ тӗлне пулас мар тесе, шыв патне кайма та хӑратчӗҫ. Эпӗ тата хама хӗнесе тӑкнӑ хыҫҫӑн сывалса та ҫитейменччӗ-ха, аран ҫӳрекелеттӗм. Пӗтӗм ӗҫсене Петя туса пыратчӗ: вуттататчӗ, шыв кӳретчӗ... Нихҫан лампа ҫутса курман эпир, тӗттӗмленме пуҫласанах алӑксене питӗрсе кӑмака ҫине хӑпараттӑмӑр та вырта-аттӑмӑр вара шӑппӑн калаҫса. Кашнинчех аслӑ ывӑлсене аса илеттӗмӗр: ӑҫта-ши халь вӗсем? чӗрӗ-ши? сывӑ-ши? хӑҫан киле ҫаврӑнса килӗҫ-ши? ютран килнӗ хурахсене хӑҫан хӑваласа ярӗҫ-ши? хӑҫан пире ирӗке кӑларӗҫ-ши?.. Ку Мишӑна та час-часах асӑнаттӑмӑр... (Варвара Васильевна Палюков ҫине ҫав тери кӑмӑллӑн пӑхса илчӗ). Пӑшӑрханаттӑмӑр ун пирки: епле-ши, ҫӑлӑнайрӗши, суранӗсем тӳрленчӗҫ-ши?— теттӗмӗр.

— Анчах эпӗ ун чухне фашистсене кисретнӗ ӗнтӗ...— ҫемҫен кулса илчӗ Палюков.

— Ун ҫинчен эпир кайран тин пӗлнӗ-ҫке... Хамӑр пата ҫитекен хыпарсем пӗринчен тепри хӑрушӑрахчӗ. Вӗсене Петя, йӑпӑрт шыв ӑсма тухсан, ӑнсӑртран хӑйӗн юлташӗсене тӗл пулсан, пӗлсе килетчӗ. Мӗн кӑна хӑтланмастчӗҫ пуль вӑл ҫынҫиенсем, мӗн тӗрлӗ ашкӑнмастчӗҫ пуль!.. Ну, эсир ӑна хӑвӑрах аван пӗлетӗр, сахал мар куртӑр пулӗ икӗ ҫул хушшинче. Анчах пӗр япалана ниепле те манса каяймастӑп эпӗ...— Варвара Васильевна татах йывӑррӑн сывласа илчӗ.— Пӗр агроном ҫемйи пурӑнатчӗ пирӗн ялта. Хӑй вӑл коммунист пулнӑ. Такам усалӗ тӑшмансене ҫав агроном партизанра ҫӳрет тесе каласа панӑ. Вара кусем унӑн арӑмне комендатурӑна сӗтӗрсе кайса кунӗнҫӗрӗн допрос тума тапратнӑ. Ну, вӗсем допроссене епле

меслетсемпе тунине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ... Асаплантара-асаплантара çын йĕркинчен кăларсан, лешĕ калаçайми-утайми пулса çитсен, кăларса янă. Анчах темиçе кунтанах ун патне çич-сакăр ӳсĕр фашист сĕм çĕрле каллех пырса кĕнĕ те ăна хăйне те, ачисене те çĕрĕпех çухăртнă. Ирхине кӳршĕсем кусен пӳрт алăкĕ ярах уççине асăрхаса шала кĕрсе пăхнă та вĕсем мĕн туса хăварнине курнă вара... Агроном арăмĕн икĕ кăкрине те касса илнĕ вĕсем, ачисен хырăмĕсене унтан та кунтан çĕçĕсемпе чиксе пĕтернĕ пулнă. Сăпкари ачине те пулин вĕлерсе хăварнă вĕт, чуниллисем!..

— Çакна пĕлнĕ хыççăн эпĕ темиçе каç çывăраймарăм, ăнран тухса кайнă çын пек пурăнтăм,— терĕ малалла Варвара Васильевна.— Пĕр енчен, агрономăн çемйине хĕрхеннипе, тепĕр енчен — хамăра та çавăн пек туса каясран хăраса... Халăх хушшинче сăмах çӳреме пуçларĕ: леш Пудов кулакăн хĕрĕ нимĕçсене колхозра, советра активлă пулнă çынсен спискине туса панă, тет те, çитес виçĕ уйăх хушшинче вĕсен çемйисене пурне те вĕлерсе пĕтермелле, тет... Паллах, ун пек сăмаха илтсен эпĕ лăпкăн пурăнма пултарайман, кашни кунах кĕтеттĕм хамăн пуç çине тепĕр хут инкек йăтăнса анасса... Пĕр çил-тăманлă каçхине вара, çурçĕр иртсен, чĕре те тапма чарăнчĕ: ак çак килхушши енчи чӳречерен такам тăкăр-тăкăр! тутарчĕ.

«Килчĕç хайхискерсем, тинех пĕтрĕмĕр»,— терĕм...

Шакканине лайăхах илтнĕ пулин те, сас памарăм. Кăшт тăхтасан, кантăка каллех хуллен кăна тăкăртаттарчĕç. Тĕлĕнтĕм: мĕншĕн-ха кун пек кăна шаккаççĕ? Нимĕçсем пулсан, вăтанса тăрас çук-çке, тӳрех çĕмĕрме тытăнмалла. Е пăштăн кĕрсе пусса тухса каясшăн-ши кусем пире?.. Татах чĕнмерĕм. Виççĕмĕш хут шаккасан тин кăмака çинчен анса чӳрече патне пытăм та кантăк витĕр пăхрăм. Урамра çăмлă çĕлĕк тăхăннă çын пуçĕ мĕлтлетни курăнчĕ.

— Кам эсĕ?— тесе ыйтрăм хуллен.

— Варвари инке, кĕрт-ха, ют çын мар ку, эпĕ,— терĕ вăл. Сассине уйăрса илеймерĕм пулин те, хама ятпа чĕннине пула, уçса кĕртрĕм. «Ют çын пулсан та, нимĕçех мар-ха ку», терĕм ĕнтĕ.

— Эпĕ ку, Сашка,— терĕ хайхискер, пӳрте кĕрсе тăрсан.

Тĕлĕнсе хытсах кайрăм. Ку — ман упăшка пиччĕшĕн

ывăле пулнă-мĕн. Вăрçăччен вăл хамăр станцири депора маçтăр пулса ĕçлетчĕ, вăрçă пуçлансан та ăна çавăн пиркиех салтака илменччĕ. Халь вăл ман пата пĕлĕт çинчен ӳкнĕ пекех килсе кĕчĕ.

— Эсĕ ăçтан йăтăнса антăн? Епле майпа?— тĕпчеме тытăнтăм çакăнтан.

— Ыйтиччен малтан эс ăшăт-ха мана,— терĕ вăл,— патрульсем иртсе кайиччен карта çумĕнче пĕр сехет выртрăм пулĕ, малтан хытă килсе тарланăскер, ĕнтĕркесех кайрăм,— терĕ.

Чăнах та, вăл сиксех чĕтрет иккен. Эпĕ ăна часрах кăмака çине хăпарма хушрăм. Унтан хам та унпа юнашар хăпарса ларсан, вăл хăйĕн пĕтĕм историне каласа пачĕ. Хамăрăн çарсем станцирен хĕвелтухăçнелле чаксанах, депори рабочисем, пуринчен ытла çамрăккисем, партизана кайнă. Малтан отряд пысăк пулман, анчах икĕ уйăх хушшинче питĕ йышланнă. Кулленех çĕнĕренçĕнĕ çынсем пынă вĕсем патне: рабочисем, служащисем, колхозниксем, арçынĕсем те, хĕрарăмĕсем те, ваттисем те, çамрăккисем те — тĕрлĕренех. Кам фашистсен «ырлăхне» лайăххрах тутанса пăхнă — пурте партизансем патнелле туртăннă.

— Тĕрĕс çав,— сăмах хушрĕ кунта Палюков,— от ряд тĕлĕнмелле хăвăрт ӳссе пычĕ ун чух...

— Эс те çав отрядра пулнă-и вара?— тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ.

— Чим-ха, чим,— терĕ Варвара Васильевна,— ун çинчен те калăп. Саша хăйсем епле пурăнни çинчен, мĕнмĕн тунисем çинчен каласа пĕтерсен, манран сасартăк: пĕр-ик уйăх каялла эсĕ пĕр аманнă çамрăк салтака, чăваш ачине пытарса усранă-и?— тесе ыйтрĕ.

— Ма вара?— терĕм эпĕ.

— Эсĕ кала... Пулнă-и ун пек ĕç?— çаплах ыйтрĕ Саша.

— Ну, пулнă... А эсĕ ăна ăçтан пĕлетĕн?

— Салам калама хушрĕ вăл сана.

Унччен, Саша килсе кĕнĕ пирки тĕлĕннинчен те ытларах тĕлĕнсе кайрăм куна илтсен.

— Ăçта тĕл пултăн эсĕ ăна?

— Пĕрмаях пирĕн отрядра пулчĕ вăл, питĕ маттур партизанччĕ, анчах пĕр задание кайсан каллех аманчĕ те, ăна эпир самолетпа «Пысăк Çĕр» çине ăсатрăмăр,—

терĕ Саша.— Сана пĕрмай асăнатчĕ, пуçĕ сывă пулсан, хăçан та пулин килсе тав тăватăпах, тетчĕ.

— Тĕрĕс, каланăччĕ эп ăна...— пуçĕпе сулса илчĕ Палюков, хĕрарăм çине кăмăллăн пăхса.

— Ку вара мана калама та çук савăнтарса ячĕ,— терĕ те Варвара Васильевна, унăн сăнĕ те çутăлса кайрĕ пĕр вăхăтлăха.

— Сашши хăй нумай вăхăт пулчĕ-и сирĕн патра?

— Çук, ир енне тухса кайрĕ. Вăл ман пата ĕçпе килнĕ пулнă... Партизансен кĕпи-йĕмĕсем хуралса çитнĕ, анчах вармантa çума май килмен. Вара вĕсем таврари ялсенчи ман йышши хĕрарăмсемпе калаçса татăлма шут тунă. Паллах, эпĕ пĕр самахсăрах килĕшрĕм. Кайрантарахпа çăкăр та пĕçерттерме пуçларĕç. Пĕр-пĕр тĕттĕм каç çăнăх килсе параççĕ те пĕр-икĕ кунран килсе çăкрине илсе каяççĕ. Ĕçĕ пысăках мар ĕнтĕ ку, çапах та хама пысăк ĕç тунă пекех туйăнатчĕ. «Тăшмана аркатма эпĕ те пулăшатăп», теттĕм. Пуринчен ытла, партизансем унта капла тунă, кунта апла тунă, тенине илтсен пит савăнаттăм вара...

Çапла чылай вăхăт иртрĕ. Пĕринче Саша тепĕр партизанпа пĕрле çăкăр илме килчĕ те темшĕн ман сывлăх çинчен, вăй-хал çинчен ыйтма пуçларĕ. Аптрамастăп-ха, терĕм. Вара вăл мана хулари вăрттăн ĕçлекен коммунистсене тĕрлĕ «хаклă йышши çимĕç» леçсе тăма сĕнчĕ. Çаплах каларĕ: «Нимĕçсене тăрантармалли хаклă йышши çимĕç», терĕ. Эпĕ вăл мĕн çинчен каланине тăруках ăнланса та илеймерĕм.

— Таварне çунашкапа туртса каймалла пулать,— терĕ Саша.— Халĕ вĕт çулсем тăрăх çунашкасем туртса çӳрекенсем нумай. Кăштах çăнăх, кăштах çĕрулми, сухан хураççĕ те унта та кунта тăварпа, краççынпа, йĕпçиппе улăштарма каяççĕ. Санăн та çавăн пекех çӳремелле пулать. Анчах сан çăнăху ăшĕнче тимĕртен тунă «хуплусем» пулаççĕ. Ĕçĕ ытла канлех мар ĕнтĕ, анчах, асăрханарах ĕçлесен, хăрамаллиех çук. Тумланасса чухăнтарах тумланăн...

Эпĕ килĕшрĕм. Саша мана ĕçе мĕнле тумаллине, ăçта çитсен мĕн каламаллисене питĕ тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Ик кунтан вара эпĕ çунашка туртса хулана кайрăм. Çул çинче «мешочниксем» чăнах та нумай иккен. Кăшт кайсанах пĕр старикпе пĕрлешрĕм те унпа пĕрле хулана чиперех çитрĕм.

Каç пулнăччĕ. Унта та кунта мăшăрăн-мăшăрăн нимĕç салтакĕсем çӳретчĕç. Тӳрех вĕсен куçĕ тĕлне пулас мар тесе, эпĕ хӳмесем çумĕперех йăпшăна-йăпшăна кайса, тепĕр çур сехетрен Саша каласа янă çурта шыраса тупрăм. Вăл хушнă пекех, сулахай енчи чӳречерен туя веçĕпе тăвată хутчен шаккаса илтĕм. Кĕçех мана хирĕç урама пĕр ватă хĕрарăм тухрĕ.

— Мĕн кирлĕ сана?

— Тăлăх карчăка çĕр выртма ямăр-ши?— терĕм эп ăна.

Вара вăл мана килхушшине илсе кĕртрĕ те пуçĕпе ман çунашка еннелле сулса: «Мĕнле тавар илсе килтĕн?» тесе ыйтрĕ.

— Аламан çăнăх,— терĕм.

Текех вăл манран ыйтса тăмарĕ, мĕншĕн тесен Саша хушнисене эпĕ йĕркипех каласа пытăм. (Кайран вăл сăмахсене манăн темиçе хут та каламалла пулчĕ, хулана кашни пымассеренех çавнашкал «аламан çăнăх илсе килтĕм», теттĕм. Ку сăмах — партизансемпе хулари коммунистсен вăрттăн сăмахĕ пулнă.)

— Çапах та, мĕн турттарнă вара эсир унта, Варвара Васильевна?— тесе ыйтрăм эпĕ, унăн ĕçĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлес килнипе.

Вăл çемçен кăна кулса илчĕ.

— Каларăм вĕт: «тимĕр хуплусем»... минăсем. Нимĕçсен машинисем сахал мар сывлăшалла сикнĕ вăл «хуплусене» пула. Саша каласа паратчĕ мана кайран. Савăн, Варвари инке, хуларисем ĕнер фашистсене каллех сан кучченеçӳсемпе чыхăнтарнă, тетчĕ... Пурĕ хулана эпĕ сакăр хут кайса килтĕм. Ĕç аванах пыратчĕ. Анчах çур енне, партизансем питĕ йышланса нимĕçсене пур çĕрте те сиен тума тапратсан, вĕсем çул çинчи кашни çыннах тыта-тыта тĕрĕслеме пуçларĕç. Çавăн чух тытрĕç те вара мана вĕсем... Хулана çитесси нумай та юлманччĕ. Аякранах куртăм: кĕпер патĕнче иккĕн тăраççĕ... «Мĕн кĕтсе тăраççĕ-ши кусем?» тетĕп. Тем ырă мар пуласса сисрĕ пулас ман чĕре, темле хăвăрт-хăвăрт тапма тытăнчĕ. Кĕпер патнерех çитсен, уççăнах уйăрса илтĕм: иккĕшĕ те — нимĕç, кĕске пăшалĕсене мăйĕсенчен çакса янă. Çапах та хама хам лăплантарма тытăнтăм: «Ан хăра, нимĕн те пулмасть», тетĕп...

— Погодить, стоять!— терĕ пĕр салтакĕ, эпĕ вĕсемпе танлашсан.— Показайт паспорт!

Эпĕ тӳрех хĕврен нимĕçсем хăйсем панă выльăх паспортне кăларса патăм.

— Номьер!

Эпĕ сăхман çухавине вĕçертсе мăй çинче çакăнса тăракан хăма таткине кăтартрăм.

— Асмонь...— тесе вуларĕ пĕр нимĕçĕ номер çине çырнă ял ятне. Тепри паспорт çине пăхса илчĕ те, пуçĕпе сулса:

— Я, я,— терĕ. Ку ĕнтĕ «çапла, çапла», тенине пĕлтерчĕ. Ну, хăтăлтăм, хăрушлăх иртсе кайрĕ, терĕм хам ăшăмра, анчах та савăнма ытлашши васканă-мĕн эпĕ. Пĕр нимĕçĕ çунашка патне пырса миххе урипе тапрĕ.

— Что везьёт? Зачем?

— Çăнăх илсе каятăп, ăçта та пулин тăварпа улăштарас, тетĕп...

Нимĕç йăпăр-япăр алсишне хыврĕ те миххе çара аллăн хыпашлама тапратрĕ. Вăл михĕре темле хытă япала пуррине сисрĕ пулмалла: юлташне темскер каларĕ те çавăнтах михĕ çыххине çĕçĕпе татрĕ, вара шинель çаннине чавси таран çĕклесе, аллине çăнăх ăшне чиксе ячĕ. Манăн куç хуралса килчĕ, ура çинче аран тытăнса тăтăм... Нимĕç михĕрен мина туртса кăларчĕ... Иккĕшĕ те пĕр харăс кăшкăрса ячĕç... Пĕри мана автомачĕпе тĕллерĕ, çав самантрах тепри чукмар пек сулăмлă чышкипе пуçран çапса ӳкерчĕ.

— Зобак! партизан! смерть!— тенине çеç илтрĕм эпĕ.

... Унтан вĕсем мана васкасах хулана илсе кайрĕç. Эпĕ темле çăра тĕтре ăшĕнче пынă пек утса пытăм. Вăхăтран вăхăта хама çурăмран пăшал кĕпçисемпе чышнисене тата чĕре siксе тухас пек тапнине çеç туйрăм. Маншăн халь пурпĕр пулнă ĕнтĕ: хĕнеççĕ-и, вĕлереççĕ-и... Каçару пулас çук, мана вĕсем минăсемпех тытрĕç, ăна хирĕç нимĕн те тупса калама май çук. Пуçра пĕр шухăш кăна вĕресе тăчĕ: епле пулсан та парăнас марччĕ, вĕçне çитиччене çирĕп пуласчĕ, пĕр сăмах та калас марччĕ тăшмансене, ним те пĕлтерес марччĕ вĕсене... Вăй çиттĕрех, чĕре çирĕп пултăрах!

— Малтанах вĕсем мана тĕттĕм те сивĕ подвала чышса кĕртсе ячĕç. Эпĕ, ывăнса çитнĕскер, кăшт та пулин ларса канас шутпа, сак тавраш çук-ши, тесе, хыпашлама пикентĕм. Анчах малалла пĕр-икĕ утăм ярса пуссанах темле çемçе япаларан такăнтăм. Мĕн ку? Кукленсе хыпаласа пăхрăм та, манăн пĕтĕм шăмшак сăрлат-

са илчӗ. Урайӗнче, тӗттӗм ҫӗрте, этем кӗлетки выртать иккен. «Ӑам кунта? Ӑам эс?»— тесе темиҫе хутчен те ыйтрӑм. Чылай хушӑ сывламасӑр тӑтӑм. Ответ пулма мар, ҫав ҫын сывлани те илтӗнмерӗ. Вӑл вилӗ иккен!.. Эп часах тепӗр еннелле сиксе ӳкрӗм, анчах каллех тепӗр виле ҫине пырса тӑрӑнтӑм. Ӑаялла чакма тӑрсан татах такамӑн алли е ури ҫине пусрӑм... Подвал тулли виле выртать-мӗн. Мана вилесем патне килсе чикнӗ... Аран-аран стена патне ҫитсе тайӑнтӑм та куҫа хупрӑм.

— Чӗрӗллех пытарчӗҫ пулать... Ку чул шӑтӑкран тек тухас ҫук ӗнтӗ эпӗ.. Хӗвел ҫутине курас ҫук,— терӗм. Ӑш пӑтранма пуҫларӗ манӑн, пуҫ кашлама тапратрӗ... Тем вӑхӑт тӑнӑ эп ҫавӑн пек — пӗлместӗп, те тӑна ҫухатнӑ, те пӑртакках тӗлӗрсе кайнӑ. Сасартӑк куҫран вӑйлӑ ҫутӑ пырса ҫапрӗ. Ӑартах сиксе куҫа уҫрӑм та хама электричество хунарӗпе ҫутатнине куртӑм. «Тух!»— терӗ хулӑн сасӑ. Тахӑшӗ алӑран тытса туртрӗ, унтан ӗнсерен чышрӗ. Эп ним туймасӑр, ним ҫинчен те шухӑшлама пултараймасӑр утрӑм...

Таҫтан-таҫтан, темле кукӑр-макӑр пусмасем, тӗттӗм коридорсем тӑрӑх ҫавӑрса ҫӳресе, мана пӗр пысӑках мар пӳлӗме илсе пычӗҫ. Пӳлӗмӗнче ҫап-ҫутӑ электричество ҫунать; тӗттӗмрен пынӑскер, эпӗ пӗр вӑхӑт пӑхма та пултараймарӑм. Куҫ кӑштах хӑнӑхсан тин куртӑм: симӗс пуставпа витнӗ мӑн сӗтел хушшинче икӗ «тимӗр хӗреслӗ», сарӑ уссисене ҫӳлелле пӗтӗрсе хӑпартнӑ самӑр нимӗҫ офицерӗ ларать, сӗтел пуҫӗнче хайхи хамӑр ялти Пудов кулак хӗрӗ, мана иртнӗ кӗркунне хам килтех ним пӗлми пуличчен хӗнесе хӑварни, вырнаҫнӑ. Иккӗшӗ те ман ҫине шуйттан ҫине пӑхнӑ пек пӑхаҫҫӗ.

Салтак мана ҫурӑмран тӗксе сӗтел умнех илсе пычӗ. Эпӗ чул пек хытса тӑтӑм.

— А-а! Хамӑр ял!..— терӗ те Парашка (Пудов хӗрӗ ҫапла ятлӑччӗ вӑл), пӗветнӗ тутисене чалӑштарса кулса илчӗ — Каллех тӗл пултӑмӑр эппин? Э?

Эпӗ ним те чӗнмерӗм.

— Ну, хальхинче тӗпӗ-йӗрӗпех каласа паратӑн пуль, тетӗп, мӗншӗн тесен тунма та, кутӑн чакма та май ҫук. Сана минӑсемпех тытнӑ ав...

Хӑй вӑл манран та ытларах пӑлханчӗ пулас. Сӑмахне каласа пӗтерне-пӗтерменех ҫӑварне пирус хыпса чӗртсе ячӗ.



— Ну, пуçла... Ним пăркаланмасăр, йĕркипе кала!

Эп малтанхи пекех ним чĕнмесĕр тăтăм. Пĕр минут иртрĕ, иккĕ иртрĕ. Вĕсем ман çине пăхрĕç, эп — вĕсем çине. Пĕрне-пĕри çисе ярас пекех ĕнтĕ. Унтан Парашкăпа нимĕç пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç. Нимĕç пуçĕпе сулчĕ. Вара Парашка сасартăк пирусне сĕтел çине пусса сӳнтерчĕ те аяккарахра тăракан пукана илсе мана лартса пачĕ.

— Лар! Чипер, йĕркеллĕн калаçар-ха,— терĕ.

Ывăнса çитнĕскер, эп тиркесе тăмарăм, лартăм. «Хăтланăрах, хуть те мĕнле чееленĕр, çапах нимĕн те пĕлес çук эсир манран...» терĕм хам ăшăмра.

Парашка каллех пĕр минут пек мана куçран тӳррĕн пăхса ларчĕ, ман чĕрере мĕн пуррине курма тăрăшнă пекех пăхрĕ, унтан кулса иленçи турĕ те темиçе хутчен пуçне пăркаласа илчĕ.

— Тĕлĕнетĕп эпĕ санран...— терĕ вăл.— Мĕн хăтланатăн эсĕ, мĕн ухмахланатăн? Камсем хыççăн каятăн?.. Неушлĕ вара эс халĕ те нимĕçсене çĕнтерме май пур, тетĕн? Ăнлан, вăл нихçан та пулас çук, нимĕçсене кунтан халь тин никам та каялла хăваласа яраймасть! Çавăнпа та вĕсене хирĕç тăни — пĕр усăсăр япала, харпăр хăйĕн пурнăçне пĕтерни çеç пулса тухать. Ак, эсĕ лекрĕн ĕнтĕ, темле хăтăлас тесен те, хăтăлма пултарас çук, сана хăвăн тусусем те çăлас çук... Анчах та санăн ывăлу пур вĕт, санăн ăна пăхса ӳстерес пулать. Ывăлушăн тăрăшас вырăнне эс ăна тăлăха хăваратăн халь...

Парашка самантлăха калаçма чарăнчĕ, хулпуççи урлă нимĕç çине пăхса илчĕ. Лешĕ малтанхи пекех, чул пек хытса, нимĕн те чĕнмерĕ, пуçĕпе хуллен тайрĕ çеç. «Ăнлантар малалла», терĕ пулас.

«Лăпăртатăрах, ухмах тĕлне пултăмăр тетĕр пулсан»,— шухăшларăм хам ăшăмра.

— Ну, мĕн тума шутлатăн ĕнтĕ?— ыйтрĕ Парашка.

— Эп шутланинчен мĕн усси?— терĕм эпĕ.— Пурпĕрех вĕлеретĕр вĕт.

Вăл йĕрĕнчĕклĕн кулса ячĕ.

— Пурнăçна çăлас килмест-и вара санăн?

— Сиртен çăлăнăç кĕтместĕп эпĕ...

Каласа пĕтерме памарĕ вăл мана:

— Каçарма та пултаратпăр эпир,— терĕ.— Хăвна çăласси те, ачуна çăласси те хăвăнтан килет.

«Ачуна» тесен, чĕре пушшех йĕплесе ыратса кайрĕ

манăн: «Неушлĕ Петьăна та мĕн те пулин тума шутлаççĕ ку урнă кашкăрсем?»

— Ăна валли санăн çаксене çеç каласа памалла,— терĕ Парашка малалла, питне ман патарах илсе пырса.— Кам парса ячĕ сана çав минăсене? Камсем валли илсе килеттĕн вĕсене хулана? Урăх эпир санран нимĕн те ыйтмастпăр. Çавсене каласанах кăларса яратпăр.

Вăл, пукан хыçĕ çине тайăнса, аялти тутине çыртса лартрĕ. Хытă пăлханчĕ пулмалла çав. Эпĕ çав ыйтусене хирĕç тĕрĕссипе каласа парсанах, вĕсен пысăк çĕнтерӳ пулмалла пулнă-çке!

Анчах эпĕ нимĕн те каламарăм, мĕншĕн тесен эпĕ кайран мĕн пулассине пит аван чухланă: эпĕ хама çеç мар. хамăн чи çывăх та чи хаклă тусăмсене те пĕтернĕ пулăттăм.

Манăн Парашкăна темĕн тĕрлĕ хаяр та усал сăмахсем каласа тăкас кăмăл çĕкленме пуçларĕ. Нимĕç сучки, сутăнчăк, çĕлен-калта... Кама çавăрма хăтланатăн эсĕ тăшман енне, йытă пуçĕ?

— Илтрĕн-и эсĕ ман сăмахсене?— сассине тăруках хытарчĕ хайхискер, эп нимĕн те чĕнменнине пула.

— Илтрĕм,— терĕм эпĕ.

— Ма нимĕн те каламастăн эппин? Ытларах шарламасăр ларсан, хăвна çăмăлтарах пулĕ, тетĕн-и? Асту, пачах урăхла пулса тухма пултарать!

Сисрĕм: ку юхха каллех тарăхма пуçларĕ.

— Ну, калатăн-и, каламастăн-и?— сасартăк кăшкăрса ячĕ вăл.—Пурăнас килет-и санăн е халех йытă вилли пулса выртас килет?

Эпĕ ĕнтĕ: «Халь пуçланать... Халь пуçланать...» тесе лартăм.

Йăнăшмарăм иккен. Парашка сиксе тăрса ман паталла чупса пычĕ те пĕрех айăкран тапрĕ. Эпĕ ӳкрĕм. Çав самантрах икĕ нимĕç салтакĕ мана тăрăхла сак çине тăсса хучĕç те тимĕр хулăсемпе хĕнеме тапратрĕç. Пĕр вунă-вуникĕ хут çапсанах, эпĕ ăнран кая пуçларăм. Хăлхара тимĕр хулăсем шăхăрни тата Парашкăн ирсĕр сасси кăна янраса тăрать.

— Калатăн-и, каламастăн-и? Кам ячĕ? Кам патне илсе килтĕн?..

Унтан сасартăк мана тăратса лартса, питрен сивĕ шывпа сапрĕç.

— Туятăн-и эпир мĕн тума пултарнине?— хăлха патне пырсах кăшкăрчĕ Парашка.— Асту, ку пуçламăш анчах-ха. малашне эпир сан чунна йыт чӳпĕкĕ туса тăкăпăр! Ну, кала хăвăнтан мĕн ыйтнине! Кала, ват йытă!

Эпĕ çаплах нимĕн те чĕнмерĕм.

Мана вăл темле йывăр япалапа пуçран çапрĕ. Урăх нимĕн те астумастăп. Тăна кĕрсен, хама каллех леш вилесем тултарнă подвала пырса чикнине тавçăрса илтĕм. Мĕн чухлĕ выртнă эпĕ унта — пĕлместĕп. Те пĕр талăк, те иккĕ, те виççĕ... Подвала ниçтан та çутă кĕмен пирки халь кăнтăрла е каç пулнине те чухласа илме май килмерĕ. Тăрса ларас тесеттĕм, анчах пĕр вăй та юлманнипе тата пĕтĕм шăмшак тӳсмелле мар ыратнипе вырăнтан та хускалаймарăм.

— Вилетĕп пулмалла ĕнтĕ...— тесе шухăшларăм та, çавăнтах Петьăна аса илтĕм...— Вăл мĕнле-ши? Кам та пулин хĕрхенсе, хăй патне илĕ-ши ăна? Пĕр татăк çăкăр парĕ-ши?

Питĕ йывăр, тӳсмелле мар йывăр пулса кайрĕ мана. Ку таранччен тӳснĕччĕ эпĕ, хама темле асаплантарсан та, тăшмансем умĕнче пĕр тумлам куççуль те кăларманччĕ, анчах кунта мана никам та курмасть, йĕри-тавра хытнă вилесем çеç выртаççĕ, вĕсем нимĕн те илтес çук. Эпĕ кӳтсе çитнĕ чун çемçеличченех макăртăм вара... Хам çинчен шухăш та пулмарĕ, мĕншĕн тесен мана пурпĕрех никам та килсе çăлас çукчĕ. Анчах Петя... Пĕчченех тăлăха тăрса юлать, мĕскĕнĕм... Мирлĕ вăхăтра пулсан, колхозĕ те пулăшмалла, патшалăх та пăрахас çук, хысна шучĕпе вĕрентме те ямалла. Анчах халь... халь ăна вĕçĕмсĕр асап çеç тӳсме тивет... Çавăншăн хурланчĕ ман чун, çавăн пирки тӳссе тăраймарăм... Тепĕр тесен, тен, чĕре те сиснĕ-и çав кунах ырă мар пуласса...

Вăхăт вĕçĕмсĕр вăраххăн тăсăлчĕ. Куççулĕ типрĕ манăн, кăшт лăпланнă пек те пултăм. Халь ĕнтĕ эпĕ хам фашистсене хирĕç çав тери сахал ĕçленĕшĕн кӳреннипе ăшчик çунма пуçларĕ. Саша çине те тарăхса илтĕм: мĕншĕн вăл мана партизансен ĕçне малтарахран хутшăнтарман?

Сасартăк подвал алăкĕ чăнкăртатса уçăлчĕ те, тĕттĕмре электричество çути ялкăшса илчĕ.

— Каллех мана илме килчĕç пулĕ ĕнтĕ,— шухăшларăм эпĕ, анчах хускалмарăм, куçа хупсах выртрăм.

Нимĕççем чăнах та мана шыраççĕ-мĕн. Вĕсем пĕр виле патĕнчен тепĕр виле патне пырса хунарĕпе çутатса пăхрĕç, вĕсене урисемпе тĕрте-тĕрте чĕрри-виллине тĕрĕслерĕç, хăйсен чĕлхипе темскер пакăлтатса калаçрĕç. Унтан ман пата та çитрĕç. Пĕри кукленсе ман ал тымарне тытса пăхрĕ, вара, эпĕ вилменнине туйрĕ пулмалла та, çав алранах карт! туртса тăратса лартрĕ.

— Пойдьем, скотт!

Эпĕ сулăнса кайса каллех ӳкме пуçларăм, анчах тепри мана ик хул айĕнчен ярса тытса ура çине тăратрĕ те хыçалтан тапа-тапа уттарса кайрĕ. Каллех çав тĕттĕм коридорсем, кукăр-макăр пусмасем тăрăх çаврăнса хайхи пӳлĕме çитсе кĕтĕмĕр. Эпĕ ура çинче тăрайманнине кура пулас, тӳрех стена çумĕнчи пукан çине лартрĕç мана.

— Паян мĕнле асаплантараççĕ-ши тата?.. Хăвăртрах персе пăрахсан авантарах пулĕччĕ...

Пуçăм çурăлса тухас пек ыратса кашлать, пĕтĕм шăмшак вутпа хĕртнĕ пек чашкăрса тăрать, халăм пĕтсе çитрĕ...

Анчах вĕсем мана ытла васкасах вĕлерме шутламан иккен. Мана вĕлернинчен усă çук-çке-ха вĕсене, вĕсем вара нимĕн пĕлмесĕрех юлма пултараççĕ. Хăйсем пĕлес тенине епле майпа та пулсан пăчăртаса кăларасшăн манран, çавăнпа та чи пысăк та хăрушă асап шухăшласа кăларнă ман валли...

Малтан сулахайри пӳлĕмрен икĕ фашист тухса сĕтел хушшине пырса ларчĕç, ман çине пăха-пăха илеççĕ. Пĕрине палларăм — вăл мана Парашка малтанхи хут допрос тунă чухне сăнаса ларнă икĕ «тимĕр хĕреслĕ» офицерах иккен. Çур минут та иртмерĕ пулĕ,— вăл сĕтел çинчи шăнкрав çине пусрĕ. Вара сылтăм енчи алăк ярах уçăлчĕ те, хайхи йытă — Парашка çак пӳлĕме... манăн ывăла, Петьана, аллинчен туртса тухрĕ! Манăн чĕрем тапма пăрахрĕ, куç нимĕн курми хуралса килчĕ...

— Авă мĕншĕн... ав мĕншĕн ачана асăнчĕ вăл ун чухне!...— шухăшларăм эпĕ, иртнĕ допроса аса илсе. Ун чухне мана Парашка «ачуна та çăлма пултаратăн», терĕ-çке?.. Эппин, вĕсем мана хама çеç мар, манăн ачана та пĕтерсе хурасшăн. Мĕскĕн Петя! Епле майпа илсе килнĕ-ши ăна кунта? Тен, тем тĕрлĕ те асаплантарса пĕтернĕ? Тен, асапсене тӳсеймесĕр, вăл мĕн те пулин каласа та панă вĕсене?.. Хытă асăрхаттарнăччĕ эпĕ ăна,

темле пулсан та, ют çынсене нимĕн те калама юрамасть, тесе вĕрентнĕччĕ. Тӳсеймерĕ пулсан анчах...

Çĕр тĕслĕ шухăш çаврăнса илчĕ ман пуçра кĕске вăхăтрах.

Парашка çав хушăра Петьăна сĕтел умĕнчи пукан çине пырса лартрĕ. Эпĕ ĕнтĕ халь Петьăн шурса кайнă сăнĕсĕр, унăн хăранипе сиксе тухас пек чарăлнă куçĕсĕр пуçне пӳлĕмре ним те курмарăм. Хам çинчен нимĕн те шухăшлайми пулса çитрĕм, пĕтĕм шухăш та ывăлăм çинче кăна пулчĕ. Ку таранччен мĕн пулнă-ши ăна, малашне мĕн пулать-ши?

Парашка нимĕçсемпе темскер калаçса илчĕ. Унтан вăл Петя çумне тăрса ăна хулпуççинчен тĕртрĕ.

— Ну, ачам... Çак кам-ха вăл?— ман çинелле кăтартса ыйтрĕ вăл Петьăран.— Сан аннӳ мар-и?

— Анне...— пăшăлтатрĕ Петя.

— Эс ювататăн-и ăна?

— Юрататăп...

— Хĕрхенетĕн-и?

Петя чĕнмерĕ, унăн куçĕ тата ытларах чарăлчĕ.

— Хĕрхенместĕн-и эппин? — Парашка темиçе самант кĕтсе тăчĕ, унтан каллех ыйтрĕ:— Акă халь санăн аннӳ тĕрмере ларать... Шел мар-и вара ăна? Сан ăна тĕрмерен кăларассу килмест-и?

— Килет...— малтанхинчен те шăппăнтарах ответ пачĕ Петя.

— Эпир ăна паянах, ак халех кăларса яма пултаратпăр, вара эсир иксĕр чип-чиперех киле каятăр.

Петя ун çине тĕлĕнсе, ĕненмесĕртерех, хăраса пăхрĕ. Парашка малалла илĕртме тытăнчĕ.

— Ĕненместĕн-и? Чăнласах калатăп. Ма улталас-ха сана?

— Кăларăр...— терĕ Петя. Унăн сăнĕ кăшт çеç çутăлнă пек пулчĕ.

— Кăларатпăр,— терĕ те Парашка тата тепĕр хут пӳлĕмри нимĕçсем çине пăхса илчĕ.— Анчах эс пире сирĕн пата камсем пырса çӳренине тата аннӳне хулана кайма кам хушнине каласа пар. Ним пытармасăр каласа пар, вара сире иксĕре те çак самантрах кăларса ятпăр. Юрать-и?

Ман чĕре тата хытăрах пĕçерсе кайрĕ...

— Петя... Ывăлăм!— хам сисмесĕрех пăчăртанса тухрĕ ман пыртан. Çав самантрах Парашкăпа пĕр ни-

мĕçĕ ман еннелле çавранса харăс кăшкăрса пăрахрĕç:

— Молчать!

— Ну, кала часрах,— васкаса хистеме тапратрĕ Парашка манăн ывăла.— Кала та, аннӳне çăлатăн вара... Камсем пыратчĕç сирĕн пата? Хулана аннӳне кам ăсататчĕ? Мĕн калаçатчĕç вĕсем?

Петя ни вилĕ, ни чĕрĕ пулса ларчĕ, анчах... нимĕн те каласа памарĕ тăшмансене.

— Пĕлместĕп, курман эпĕ никама та!— терĕ çеç.

— Суятăн, йытă çури!— сассине тăруках хытарчĕ Парашка.— Епле ăнланаймастăн эсĕ: тунса тăнипе эсĕ аннӳне пĕтеретĕн!

— Эп сире килтех каларăм вĕт нимĕн те пĕлместĕп тесе...— макăрса ячĕ Петя.— Мĕн тата эсир... Никам та пыман пирĕн пата, эпир аннепе иксĕмĕр кăна пурăннă...

Ман хамăн та, чĕрене тем пек хытарсан та, куççуль шăпăрах юхса анчĕ. Ку ĕнтĕ, пĕр енчен, хамăн ача çав тери çирĕп пулма пултарнăшăн, тепĕр енчен ăна хĕрхеннипе çапла пулса тухрĕ.

— Каламастăнах пулсан, эс хăвăн аннӳне юратмастăн та, хĕрхенместĕн те эппин,— пĕветнĕ тутисене чалăштарса илчĕ Парашка.— Ну... Эпир те хĕрхенсе тăмăпăр ăна! Сана хăвна та хытă лекме пултарать, мĕншĕн тесен эсĕ пӳтсĕр ача иккен!

Тахăшĕ систернипе ман çине сасартăк тĕреклĕ нимĕç салтакĕ сиксе ӳкрĕ те манăн аласене хыçалалла пăрса асаплантарма тапратрĕ. Тӳсме çуккипе эпĕ йынăшса ятăм.

— Юлашки хут ыйтатăп санран!— каллех чупса пычĕ хайхи Парашка ура çине сиксе тăнă Петя патне.— Вĕлеретпĕр аннӳне! Ăна эсĕ çеç çăлма пултаратăн, йытă çури! Кала мĕн ыйтнине!..

Пуç çӳлелле çĕкленсен куртăм: Петя сиксе чĕтрет, Парашка ăна револьверпа юнаса тăрать.

— Ан тивĕр аннене, вăл айăплă мар!— тесе, калама çук хыттăн кăшкăрса макăрса ячĕ те Петя, ман паталла ыткăнчĕ. Анчах ăна сĕтел хушшинчи нимĕçсенчен пĕри хăваласа çитсе каялла тĕртсе ячĕ. Малтанхи допрос вăхăтĕнчи пекех, мана сак çине тăсса хурса, тимĕр хулăсемпе хĕнеме тапратрĕç. Эпĕ хамăн ывăл ниçта кайса кĕрейми хăрушла кăшкăрнине илтрĕм, анчах та часах ăнран тухнă пулмалла — малалла мĕн пулнине пĕлместĕп...

...Анчах та пирĕн асапсем çакăнпа та вĕçленсе çитмерĕç-ха.

Тепĕр кунне мана подвалтан каллех сĕтĕрсе тухрĕç. Хам мĕн тери вăйсăрланса çитни çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Кашласа тăракан пуçри шухăшсем пĕр Петя çинчен çеç пулчĕç. Персе пăрахман-ши ăна? Юлашки хут та пулин курса юлмăп-ши?

Допрос вăрăма пымарĕ. Эпир ывăлпа иксĕмĕр те фашистсене нимĕн те каласа паманни вĕсене çав тери тарăхтарса çитернĕ ĕнтĕ, çавăнпа та вĕсем хăйсен ĕçне татăклăн туса хума шут тытнă курăнать.

Мана пӳлĕме пырса лартсан кăшт тăхтасанах, вĕсем Петьăна та илсе пычĕç. Чĕре çурăлсах каятчĕ... Ăна та хĕнесе пĕтернĕ иккен, тискерсем, ачан пичĕ-куçĕ шыçса тухнă, çамки çинче юн хытса ларнă, хăй аран сывлать...

— Текех сана ачашласа тăмастпăр ĕнтĕ, йăлăхтарчĕ пире ку вăйă,— терĕ Парашка, пирусне чăмла-чăмла.— Çитет! Халĕ юлашки калаçу пулать. Нумай ыйтмастпăр санран, çакна кăна ответ пар: кам патĕнчен, ăçтан илсе килтĕн эс вăл минăсене, кама памаллаччĕ вĕсене санăн? Срок сана — виçĕ минут, унтан вара...— Вăл пĕрре аллинчи сехет çине, тепре сĕтел хушшинчи чул сăнлă нимĕçсем çине пăхса илчĕ те вĕсене темскер каларĕ.

— Я, я,— терĕç нимĕçсем.— Гут.

Вăхăт шурĕ. Эпĕ чĕнмерĕм. Йывăррăн сывласа, шăлсене çыртса ывăл çине пăхса лартăм. Парашка чăнласах каланине ĕнентĕм эпĕ, мĕншĕн тесен ку историн вĕçĕ хăçан та пулин çитмелле пулнă-çке-ха.

— Паллах, мана вĕлереççĕ вĕсем. Е персе пăрахаççĕ, е çакаççĕ... Петьăна чĕррĕн хăварсассăнччĕ хуть!..

Анчах эпĕ йăнăшнă иккен. Вĕсен пачах урăхла шухăш пулнă. Вĕсем ман валли вилĕмрен те хăрушăрах асап шухăшласа тупнă...

— Вăхăт иртрĕ,— терĕ Парашка.

Эпĕ сасартăк ыйхăран вăраннă пек пултăм. Сĕтел хушшинчи нимĕç сехет çине пăхса пуçĕпе сулчĕ. Хураллакан салтаксенчен пĕри мана сĕтел пуçне илсе пырса тăратрĕ те аллăмсене хыçалалла тытрĕ. Тепри Петьăна сĕтелĕн тепĕр пуçне илсе пычĕ. Унăн сулахай аллине сĕтел хĕррине хучĕ.

— Мĕн тăвасшăн кусем? Мĕн шут тытнă?— тесе шухăшлама ĕлкĕртĕм кăна эпĕ, Петя çумне тепĕр хĕрлĕ

çӳçлĕ самăр нимĕç — чăн-чăн мясник ĕнтĕ!— пырса тăчĕ.

— Юлашки хут...— терĕ Парашка ман çине куçхаршисем айĕн çав тери тискеррĕн пăхса.— Кам ячĕ? Кам патне?

Эпĕ чĕнмерĕм. Пыра тем тулнă пек пулчĕ, куç каллех хуралса килчĕ. Самант иртрĕ, иккĕ...

— Говорить!— кăшкăрчĕ тимĕр хĕреслĕ фашист.

Çав вăхăтрах Петьăпа юнашар тăракан самăр нимĕç хĕç пек сарлака, çап-çутă штык çĕклерĕ.

— Говорить!— каллех кăшкăрчĕ тимĕр хĕресли.— Кому ходиль, зобак?

Ответ вырăнне манăн пыртан темле тискеррĕн йынăшнă сасă çеç тухса кайрĕ. Сывлăшра хурçă штык ялтăртатса илчĕ. Унтан Петя «а-а-а!..» тесе кăшкăрни илтĕнчĕ. Эпĕ кĕçех çĕре тĕшĕрĕлсе анаттăм, анчах хама хыçалтан тытса тăраканни ӳкме памарĕ, çитменнине тата, Петя çывăхнерех тĕксе пычĕ. Ăнран тухса каяттăм: ман ачан сулахай аллин пуç пӳрнине патах касса татнă, юн палкать кăна, хăй çав тери кăшкăрать, аллине сĕтел çинчен илме хăтланать, урисемпе ниçта та кайса кĕреймесĕр тапăртатать, анчах та нимĕн те тăваймасть — фашист ăна хĕскĕчпе хĕстернĕ пекех хытă тытса лартнă...

Кинжал каллех сывлăша çĕкленчĕ.

— Кала!— çухăрчĕç темиçен пĕр харăс.

— Каламастăп! Вĕлерĕр! Ăна та, мана та вĕлерĕр, татăкăн-татăкăн ваклăр — нимĕн те каламастăп!— кăшкăрса ятăм эпĕ вĕсене хирĕç, юлашки вăя пухса.

Мана тахăшĕ çупса ячĕ, çав вăхăтра каллех штык ялтăртатрĕ, татах Петя шари-и! кăшкăрса яни илтĕнчĕ... Тахăш самантра курчĕ куçăм: унăн аллине ывăç тупанĕ таранах касса татнă...

Эпĕ ĕнтĕ ăнран тухса урнă пекех пулса кайрăм пулмалла.

— Чуниллисем, неушлĕ эсир пире çапла парăнтарма шутларăр? Пустуй ĕмĕтленетĕр! Нихçан та пулас çук вăл!— тесе кăшкăртăм.

Кинжал татах ялтăртатрĕ...

* * *

Варвара Васильевна калама чарăнчĕ.

— Çакăн хыççăн гестапора хама мĕн-мĕн тунине нимĕн те астумастăп, тĕрмене пырса пăрахсан тин тăна

кĕнĕ эпĕ,— терĕ те вăл кăшт ларсан, ассăн сывласа илчĕ. Çак пур асаилӳсем унăн нумай хĕн-хур курнă, нимĕнпе виçме çук асап тӳснĕ чĕрине мĕн тери ыраттарнине туйса, эпир тек нимĕн те ыйтасшăн марччĕ унран, анчах вăл хăйĕн калавне вĕçне çитиччченех каласа парас терĕ курăнать. Хăвăн хуйху-суйху çинчен çывăх çынна каласа парсан, чĕрене çăмăлтарах пулать-çке.

— Тăвата уйăх хупса усрарĕç мана тĕрмере...— терĕ вăл малалла.— Ырă çынсем пулăшнипе кăштах ура çине таракан пулсан, мана каллех допроссене сĕтĕрме тапратрĕç. Кама та пулин партизан вырăнне шутласа хупаççĕ-тĕк — мана туртса тухаççĕ: «Çак çынна ăçта курнă эс? кам вăл? мĕн ятлă?»— анчах эпĕ нимĕн те пĕлместĕп. Кашнинчех патак лекетчĕ вара. Чĕррĕн тухассăн шутламан ĕнтĕ... Допроссенче пулман вăхăтра хамăн хуйхăм асаплантаратчĕ: Петя çинчен çав гестапора пулнă юлашки каç хыççăн эпĕ нимĕн те пĕлмен-çке...

Хĕрарăм каллех йывăррăн сывласа илчĕ.

— Тĕрминчен эпĕ пачах кĕтмен çĕртен тухрăм. Тĕрĕссипе, тухрăм темелле те мар, тухса ӳкрĕм, темелле.— Варвара Васильевна ку тĕлте кăштах кулнă пек пулчĕ.— Асапланса, вăйсăрланса, ырханланса çитнĕ çынсем пирĕн камерăра кашни кунах вуншарăн вилетчĕç. Вĕсене вара надзирательсем кашни ирех сĕтĕрсе тухса каятчĕç. Вилнисемпе пĕрле вилсе çитейменнисем те часчасах лекетчĕç. Калăпăр, çын тăраймасть, калаçайми те пулса çитнĕ, паян вилмесен — ыран вилетех вăл... Мĕн тума ыранччен кĕтес, пĕрре килнĕ чух, çула май тенĕ пек, хула хыçне кайса пăрахма пулать-тĕк? Эпĕ вара шăпах çавăн йышши «виле» шутне лекрĕм. Мана хула хыçĕнчи танксене чарса лартма алтнă канава вилесемпе пĕрле чĕрĕллех илсе кайса пăрахрĕç. Пырать-ха, çулла пулчĕ ку, атту тĕрмере вилейменнине канавра шăнса вилмелле пулатчĕ...

Варвара Васильевна пирĕн куçран пăха-пăха:

— Чăнах та, тĕлĕнмелле вĕт?— тесе ыйтрĕ.

— Пит те тĕлĕнмелле,— килĕшрĕмĕр эпир.

— Çав канавра кăштах чун кĕнĕ мана,— çăмăлтараххăн сывласа ячĕ вăл халь.— Ир пырса пăрахнăскер, кăнтăрлапа вилесем хушшинчен майĕпе упаленсе тухрăм. Каллех хамăрăн ырă çынсем тĕл пулчĕç — пĕр карчăкпа старик. Вĕсем çав канава икĕ уйăх хушши кашни кунах пыра-пыра пăхнă иккен: фашистсем тытса кайнă

хăйсен ачисене шыранă. Мана курчĕç те — хăйсем патне илсе кайрĕç.

...Киле эпĕ тепĕр икĕ эрнерен, кăштах вăй кĕрсен, таврăнтăм. Полицайсем манăнне пĕр япала та хăварман, мĕн пуррине тĕппипех шăлса тухса кайнă, катăк тăм куршак та пулин юлман хăть, анчах эпĕ, тупата, ун пирки пĕртте хуйхăрмарăм. Эпĕ урăххи çухаласран хытă хăранăччĕ. Ак çакăн пирки... Варвара Васильевна хĕвĕнчен сăран хуплашка хушшине хĕстернĕ пĕчĕкçеç кĕнеке кăларса тыттарчĕ мана. Эпĕ ăна уçрăм та:

— Партийный билет № 0512253,— тесе çырнине вуларăм.

— Нимĕçсем манăн пĕтĕм пурлăха, юратнă ачама, сывлăха туртса илчĕç, анчах кăна — чи хаклине — эпĕ çавах та упраса хăварма пултартăм... Эпĕ ăна çак Мишăна 1941 çулта çырмари окопа вырнаçтарса килнĕ каç çĕр айне алтса пытарсаттăм, тĕрмерен таврăнсан вара тӳрех чавса кăлартăм та текех хамран пĕртте уйăрмарăм... Эсир таврăнасса кĕтрĕм...

— Халь ĕнтĕ кĕтсе илтĕн,— терĕ те Палюков, çак нихçан сивĕнме пултарайман хĕрӳ чĕреллĕ ватă совет хĕрарăмĕшĕн савăнса кулса илчĕ.

— Кĕтсе илтĕм çав...— Варвара Васильевна пĕр хушă пирĕн çине çав тери ăшă куçĕпе пăхса ларчĕ, унтан:

— Анчах эпĕ эсир килессе ним тумасăр, алăсене усса кĕтсе ларнă пек ан шутлăр,— терĕ.— Эп тĕрмерен таврăнсан ик-виç кунранах ман пата партизансем çӳреме тытăнчĕç. Вĕсенчен пур хыпарсене те пĕлсе тăраттăм. Чăн малтан, вĕсем мана хамăр хулари гестапо çуртне пирĕн самолетсем вĕçсе килсе бомбăпа тĕпренех аркатни çинчен пĕлтерсе савăнтарчĕç. Гестапо пуçлăхĕ — хайхи икĕ тимĕр хĕреслĕ нимĕç те, мана асаплантаракан сутăнчăк Парашка та, ыттисем те нумайăшĕ хупланнă тет унта... Бомбăсене хăш çĕре пăрахмаллине тĕллеттерекенĕ пирĕн тăван, хайхи Саша пулнă. Хăех килсе каласа пачĕ мана ун çинчен. Ыталасах чуптурăм вара эпĕ ăна! Унтан Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтерме тытăнчĕç. Кавказри, Сталинградри, Ростов хули патĕнчи çапăçусем çинчен каларĕç. Вĕсем мана каласçĕ — эпĕ вăл сăмаха пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн хамăр хĕрарăмсем хушшинче саратăп... Атту хăшпĕр çынсем эсир каялла килсе пире хăтарасса шанма та пăраха пуçланăччĕ пĕр

хушă. Ну, ун пек ырă хыпарсем киле пуçласан, кĕтнĕ-çемĕн кĕтме тытăнчĕç те — кĕтсе илчĕç...

Варвара Васильевна сĕтел çине пăхса хуллен кулса илчĕ.

— Пăх-ха, сăмах-юмахпа эпир кусем çинчен манса кайнă-çке!— терĕ вăл, тулли черккесем çине кăтартса.— Ĕçсе ярар-ха эсир килнĕ ятпа!

* * *

Ун патĕнчен эпир тулта пăч-тĕттĕм пулса ларсан тин тухрăмăр. Çапăçу шавĕ халь паçăрхинчен те инçетерех-ре кĕрлетчĕ. Пирĕн чаçсем нимĕçсене тата малалла хă-валаса кайнă. Малти линирен тупăсем кĕрĕслеттернĕ сасăсем кăна илтĕнкелеççĕ, пăшал-пулемет сассисем ил-тĕнмиех пулнă ĕнтĕ.

Эпир урам тăрăх ним чĕнмесĕр утрăмăр, иксĕмĕр те Варвара Васильевна каласа панисем çинчен шухăшла-са пытăмăр. Ытла та чĕре патне кĕрсе ларчĕ унăн кала-вĕ, ĕмĕр манмалла мар асра юлчĕ.

— Тĕрĕс калаççĕ,— сăмах хушрĕ Палюков чылай хушă калаçмасăр пынă хыççăн,— пирĕн халăх пурнăçа, ирĕке, хăйĕн тивĕçне юратни — вилĕмрен те вăйлăрах çав...

— Паян иксĕмĕр илтни ăна нимрен те лайăхрах кă-тартса парать ĕнтĕ,— килĕшрĕм эпĕ.

1943—1945,
Белорусси — Шупашкар.





## КУККУК

*Юратнă йăмăкăма —*
*ОЛИМПИАДĂНА*

### I

Чăн малтанхи хут эпĕ вăл тĕлĕнмелле хĕре Мускав облаçĕнчи Уварово станцийĕ таврашĕнче куртăм. Госпиталь хыççăн эпĕ запаслă полка лекнĕччĕ, унтан вара, пополненипе пĕрле, мана çав Уварово патĕнче çапăçакан стрелковăй дивизие ячĕç. Шăтăк-путăклă, лакăмлăсулнăклă çул тăрăх çĕр каçа грузовик çинчĕ силленсе пынă хыççăн эпир ир енне пĕр вăрман çумне йăпшăннă пысăках мар яла çитсе кĕтĕмĕр.

— Анăр, тек каймастпăр,— тесе кăшкăрчĕ пире кабинăран сиксе тухнă çамрăк офицер.— Малалла ĕнтĕ машинăпа мар, хырăмпа шуса каймалла пулать,— шӳт туса илчĕ вăл.

Фронт линийĕ çывăххине эпир хамăр та аванах чухларăмăр. Кунта артиллери пени çеç мар, малти позицисенче пулеметсем тăкăртатни те уççăнах илтĕнетчĕ ĕнтĕ. Салху сăнлă каçхи хура вăрман тăрри тек-текех нимĕç ракетисен сивĕ çутипе çутăла-çутăла илетчĕ. Кунсăр пуçне çул çинче аманнă боецсене тиенĕ машинăсем чылай тĕл пула-пула иртсе кайрĕç. Самаях тĕттĕм

пулнӑ пулин те, эпир ҫав боецсене нумаях та пулмасть амантнине асӑрхаса илтӗмӗр: пуҫӗсене ҫыхнӑ, аллисене мӑйран ҫакса янӑ бинчӗсем ытла та шурӑ, тасаччӗ. Паллах ӗнтӗ, ҫапӑҫу хирӗнчен халь ҫеҫ илсе тухнӑ вӗсене...

— Мӗнех вара, пирӗншӗн пулсан — хуткупӑс, хушаҫҫӗ-тӗк — анӑпӑр,— терӗ манпа юнашар ларса килнӗ Ямуткин хушаматлӑ Хӗрлӗ Чутай йӗкӗчӗ, связистсен шкулӗнчен халӗ ҫеҫ вӗренсе тухнӑскер.— Кунта ҫити билетсӑр илсе килнӗшӗн те тавтапуҫ!

Ҫак сӑмахсемпе вӑл машина ҫинчен никамран малтан, ҫав тери ҫӑмӑллӑн сиксе анчӗ. Ун хыҫҫӑн эпӗ, унтан вара ытти салтаксем те сике-сике анса тӑчӗҫ. Унччен те пулмарӗ, шофер газ пачӗ те, пире илсе килнӗ машина малалла кайса тӗттӗм урамра куҫран ҫухалчӗ.

Ҫав самантрах хыттӑн команда пани илтӗнчӗ:

— По-четыре стройся!

Эпир хӑпӑл-хапӑл йӗркеленсе тӑтӑмӑр та командир хыҫҫӑн утрӑмӑр. Пӗр вунпилӗк минутран пире ял вӗҫӗнчи вӑрман хӗрринчех ларакан пысӑках мар чул ҫурта илсе пычӗҫ. Кунта вӑрҫӑччен шкул пулнӑ пулмалла: снаряд гильзинчен тунӑ тӗксӗм лампа ҫутинче эпӗ стена ҫинче полушарисен ҫӗтӗк картти ҫакӑнса тӑнине асӑрхарӑм.

Ҫӗрле пулин те, пире вӗри апат ҫитерчӗҫ, апат умӗн эрех те лекрӗ ӑшӑнмалӑх, унтан вара канма хушрӗҫ. Ҫав вӑхӑтра тул та ҫутӑлма пуҫларӗ. Пӗртен-пӗр чӳрече витӗр (ытти тӑватӑшне фанера таткисемпе, улӑмпа питӗркелесе лартнӑччӗ) ирхи кӗрентерех ҫутӑ шуса кӗчӗ. Сарлака урайне хамӑрӑн плащ-палаткӑсене сартӑмӑр, пуҫсем айне кутамккасене хутӑмӑр та, йӗркипех выртса тухрӑмӑр.

— А-ах, лайӑх-ҫке,— тутлӑн карӑнса илчӗ каллех манпа юнашар вырнаҫнӑ Ямуткин.— Курорт Минеральные воды... Вӑл та начартарах пулӗ кунтан. Салтакӑн та телей пурах иккен!

Тем вӑхӑт ҫывӑрнӑ эпир — ӑна пӗлместӗп. Вӑратман пулсан, татах та ҫывӑраттӑмӑр-и тен, анчах «подъём!» команда пулчӗ те, хӑвӑрт кӑна сике-сике тӑтӑмӑр.

— Малти линие каятпӑр пулас,— терӗ Ямуткин, ҫипуҫне васкавлӑн тирпейлесе.

— Пулма та пултарать, хӑяккӑн выртса пурӑнма килмен вӗт эпир кунта,— терӗм эпӗ.

Анчах эпир шухăшлани тĕрĕсех пулмарĕ. Пире каллех питĕ лайăх апатлантарчĕç, унтан политинформаци пулчĕ. Юлашки эрне хушшинче эпир, пĕрмай çул çинче пулнипе, ни радио итлемен, ни ретлĕн хаçат вуламанччĕ те — политрук сăмахне каçса кайсах итлесе лартăмăр. Питех те хăпартса ячĕ вăл пирĕн кăмăла. Мускав патĕнче аркатса янă хыççăн фашистсем тăтăшах чакаççĕ-мĕн, ниçта та тытăнса тăма вăй çитерейместĕ.

— Илтрĕн-и? Кĕскен каласан, не так страшен чорт, как его малюют!— терĕ Ямуткин, политинформаци хыççăн чĕлĕм туртма тула тухсан. (Хĕрлĕ Чутай чăвашĕсем вырăссен çавăн пек çунатлă сăмахĕсене питĕ пĕлеççĕ вара...) — Пур фронтсенче те çавăн пекех хӳтерме тытăнсан, хыçран пăс тухса кăна пырать акă вĕсен! Мĕнле шухăшлатăн эс?

— Сан пекех шутлатăп...

Пирĕнпе пĕрле килнĕ ытти «пополненецсем» те, ушкăнăн-ушкăнăн чĕлĕм туртса тăрса, çавăн майлах хавассăн калаçаççĕ. Пурин те кăмăлĕсем çĕкленни, вĕсем пурте çапăçава пĕр шиксĕр, чĕрисенчи çирĕп ĕненӳпе кĕрсе каясси уççăнах палăрса тăрать. Вăрман хыçĕнчен пĕрмай орудисем ухлатни, инçетре пулеметсем таттисĕр тăкăртатни илтĕнет, пуç тăрĕнче фашистсен самолечĕсем вĕçеççĕ, анчах вĕсем çине халĕ никам та çаврăнса пăхмасть. Этем чĕринче çирĕп ĕненӳ пулсан, вăл нимрен те хăрамасть çав...

— Юлташсем, кĕрĕр, халех концерт пуçланать!— тесе кăшкăрни илтĕнчĕ сасартăк крыльца çинчен.

Маншăн ку пĕртте тĕлĕнмелле пулмарĕ, эпĕ артистсем малти линиех, блиндажсенех пынине те курнă, анчах фронта пуçласа килнĕ салтаксем хăйсене концерта йыхăрнине илтсен, пĕр-пĕрин çине иккĕленерех, тăй-тăй пăхкаласа илчĕç.

— Мĕн терĕ вăл?
— Концерт? Мĕнле концерт?
Ямуткин мана куçран шăтарасла пăхсах ыйтрĕ:
— Шӳт пулчĕ-и ку е... чăнах?
— Чăнах пулма кирлĕ,— терĕм эпĕ.— Атя, кĕрер!

Шкулăн чи пысăк пӳлĕмĕнче эстрада пекки тунă иккен. Тенкел-пукан çуккипе салтаксем урайнех ларнă. Эпир кĕнĕ чухне чĕлĕм тĕтĕмĕ çăра пĕлĕт пек йăсăрланатчĕ, анчах алăка уçса яма хушрĕç те, пĕр пилĕк ми-

нутран сывлăш кăштах уçăлчĕ. Унтан эстрада çине кăпăрах пĕр 10—12 музыкант тухса тăчĕç.

— Охо,— терĕ ман Ямуткин, лайăхрах вырнаçса ларса,— ара, ку чăн-чăн джаз вĕт! Кур-ха, пирĕн асатте чĕлĕмĕ пек кукăр трубасем те пур! Ĕмĕрне те шутламан фронтра кун пекки пуласса...

— «Пурте фронт валли», тенине пĕлместĕн-им?

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ...

Çав концертра мĕн-мĕн пулнине халь лайăххăн астусах çитерейместĕп ĕнтĕ. Малтан питĕ хаваслă марш каларĕç, унтан пурте пĕлекен юрăсем — «Катюша», «Моя любимая» тата ыттисем те пулчĕç, вырăс хирĕсенче шăнса хытнă, пыйтланса кайнă фрицсем çинчен пĕчĕк пьеса выляса пачĕç, унтан вара...

Унăн вара пире Ямуткинпа иксĕмĕре пуçĕпех тĕлĕнтерсе яни пулчĕ. Паçăр пире политинформаци туса панă политрук конферансье вырăнне пулнăччĕ те, çавă, черетлĕ номер пĕтнĕ хыççăн, эстрада çине тухса темле «красноармеец Мурзаева» юрласси çинчен пĕлтерчĕ. Ун хыççăнах пĕчĕкрех пӳллĕ, сарлакарах питлĕ, кăштах хуратутлă, сап-сарă çӳçлĕ те кăвак куçлă хĕр-салтак тухса тăчĕ. Сăнран ытлашши илемлĕ темелле те марччĕ ăна, анчах питĕ кăмăллă пек курăнчĕ.

Баянист темиçе вăрăм аккорд турĕ, хĕр-салтак кăкăрĕ тулли сывласа илчĕ те юрласа ячĕ...

Тĕлĕнмелле уçă, янравлă, çепĕç, хăлхана ачашлакан ырă сасă пулнă иккен унăн! Çăлкуçĕнчен шăнкăртатса тухакан тăп-тăрă шыв пекех туйăнса кайрĕ вăл пире. Çав тери ăста, çăмăллăн, пысăк туйăмпа юрласа, вăл пĕр минутранах пӳлĕмри пĕтĕм халăха хăйне парăнтарчĕ. Пуринчен ытла, вăл:

> Если ранили друга —
> Перевяжет подруга
> Горячие раны его...

тесе юрласа ярсан, пĕтĕм çан-çурăм темле сăрăлтатса илчĕ. Куç умне çавăнтах вăрçă хирĕ, унта та кунта çĕрпе çулăм, тĕтĕмпе хăрăм çӳлелле сирпĕнни, атакăна ыткăнакан салтаксем тухса тăчĕç. Акă, пĕр салтакĕ чупнă çĕртех аллипе кăкрине тытса каялла ӳкет, унăн пӳрнисем хушшипе вĕри те çăра юн юхса анать. Çав самантрах, вут-çулăмран хăрамасăр, шăхăрсах тăракан пульăсем айĕн, ун патне çамрăк хĕр чупса пырать, салтакăн суранĕсене çыхать, унăн хаклă пурнăçне çăлать...

Тем териех алă çупрăмăр эпир çав хуратутлă сар хĕр юрласа пĕтерсен. «Бис, браво, би-ис!»— тесе кăшкăрчĕç салтаксем. Политрук çитес номер çинчен пĕлтерме тухрĕ — ăна калама памарĕç, вăйлăн алă çупнипе унăн сасси илтĕнмерĕ те. Хĕрĕн ирĕксĕрех иккĕмĕш хут юрласа памалла пулчĕ. Каллех каçса кайсах алă çупрăмăр. Юлашкинчен политрук, аллине çĕкле-çĕкле, салтаксене аран шăплантаркаларĕ те:

— Чăваш халăх юрри,— терĕ.

Куна эпир пачах та кĕтменччĕ вара! Кĕтме мар, шутлама та пултарайман ун çинчен... Чăваш халăх юрри!.. Чăваш çĕршывĕнчен пин çухрăмра, фронт сывăхĕнчи темле вăрманти пĕчĕк ялта, çак çурри ишĕлнĕ çуртра, тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан çынсем умĕнче, вĕсем çапăçăва кĕме хатĕрленнĕ чух...

Пирĕн чĕресем чăн та сиксе тухас пекех тапма тытăнчĕç. Туйăмсем тăруках пăтрашса кайрĕç: çав тери хĕпĕртесе, савăнса та илтĕмĕр эпир, çав вăхăтрах шиклентĕмĕр те... Хăш юрра юрлĕ-ши ку хĕр? Лайăх юрлама пултарĕ-ши?

Çак шухăшсем пĕр кĕске самантрах çиçĕм пек вĕçсе илчĕç.

Анчах та эпир ахалех пăшăрханнă иккен...

Малтанхинчен те темиçе хут лайăхрах юрласа пачĕ çак хĕр чăваш юррине. Пĕтĕм чĕрипе, пĕтĕм чун хавалĕпе, хăйĕн сассин пĕтĕм пуянлăхĕпе юрларĕ вăл.

Кукку! Кукку!<br>
Авăтать куккук,<br>
Янăрать вăрман...

Унăн юррине итленĕ чух эпир пурне те манса кайрăмăр. Эпир вăл самантра çак ишĕлчĕк çуртра, пăчă пӳлĕм урайĕнче хĕсĕнсе ларман, çук. Эпир хамăр çуралнă çĕршывра, таçта Атăл леш енче, пĕр-пĕр хурăн ращинче, çемçе курăк çинче, таса сенкер пĕлĕт айĕнче ларнă. Пирĕн тавра — çĕр тĕслĕ чечек, сывăхрах çăлкуçĕ лăпкăн кăна, пĕр çемĕпе шăнкăртатса выртать, вăрмантан куккук сасси илтĕнет:

Кукку! Кукку!

Ой, мĕнешкел тăвăл пуçланса кайрĕ çав хĕр юлашки хут «кукку!» тесе илсе пуç тайсассăн! Салтаксем юрăçа саламласа кăшкăрчĕç, алă çупрĕç, татах тепре юрласа

пама ыйтрĕç. Хĕр, именнипе ним тума пĕлмесĕр, пуçне тая-тая тăчĕ, унăн питçăмартийĕсем пиçсе çитнĕ хăмла çырли пек хĕрелсе кайрĕç.

— Епле пулсан та паллашас пулать ку хĕрпе,— тесе кăшкăртăм эпĕ çав хушăра Ямуткин хăлхинчен.— Пĕлес: кам вăл, ăçтискер, мĕн тăвать кунта...

— Тĕрĕс, тĕрĕс,— пуçĕпе сулчĕ Ямуткин, çаплах алă çупма чарăнмасăр.— Хамăр патри вĕт, мур çименскер! Епле кăна пулма пĕлнĕ... Акă концерт пĕтсессĕнех паллашатпăр!

Анчах çавăн чухне паллашасси пулмарĕ пирĕн.

Халăх лăпланса пынă май хĕр-салтак, баянист çине пăхса илсе, çĕнĕрен юрлама хатĕрленсе тăнăччĕ кăна — тулта сасартăк хăрушла вăйлă взрыв кĕмсĕртетрĕ, пӳлĕмри юлашки чӳрече чăнкăртатса сирпĕнчĕ, пĕтĕм çурт сивчир тытнă пек чĕтренсе илчĕ. Самантран татах умлăхыçлăн икĕ взрыв пулчĕ.

Пире фашистсен самолечĕсем бомбăлама тытăннă.

Концерт татăлчĕ, пире халех вăрман тăрăх сапаланма хушрĕç. Пĕлеймерĕмĕр вара çав тĕлĕнмелле юрăçă камне. Вăл чăваш хĕрĕ иккенĕ çеç паллă пулчĕ пирĕншĕн...

2

... Кун хыççăн кун, эрне хыççăн эрне иртсе пычĕ. Эпир тăтăшах çапăçусенче пултăмăр. Ним çинчен те шухăшлама вăхăт çукчĕ,— пĕрмай вут айĕнче, пĕрмай лини çинче. (Эпĕ те, Ямуткин пекех, ун чух связист пулнă.) Хĕр-юрăçă çинчен мансах кайнăччĕ эпĕ вăл хушăра.

Пĕр каçхине Ямуткин аса илтерчĕ çавна.

— Паян эпĕ политотделта пултăм,— терĕ вăл мана тарăн çырмара, кухня патĕнче тĕл пулсан.— Кандидат карточкине илтĕм...

— Чунтанах саламлатăп куншăн,— тесе, ун аллине хыттăн чăмăртарăм эпĕ.— Чыслăн илсе çӳреме сунатăп ăна...

— Тавтапуç, юлташăм, ырă сăмахушăн!— Ямуткин кăкăрĕ умĕнчи кĕсйине мăнкăмăллăн пăхса илчĕ. Унтан сасартăк:

— Э! Астуман та калама! Лешне куртăм,— терĕ.

— Кама — лешне?— ăнланаймарăм эпĕ.

— Куккука ара...

— Мĕнле куккука тата?

— Мантăн-им, хамăр фронта килнĕ кун концертра куккук юррине юрласа пачĕ пĕри.

— Э-э-э!— аса илтĕм те эпĕ сар çӳçлĕ чăваш хĕрне, васкасах ыйтса пĕлме тытăнтăм.— Ăçта куртăн?— Паллашрăн-и? Калаçрăн-и?

— Çук çав, паллашаймарăм та, калаçаймарăм та,— терĕ Ямуткин, темшĕн сасартăк именнĕ пек пулса.—Май килмерĕ, аякран çеç курса юлтăм. Пирĕн пекех связист пулмалла вăл, пĕр сержантпа катушкăсем çĕклесе иртсе кайрĕ. Хăй çав тери савăнăçлă, тем пирки ахăлтатса çеç пырать...

— Э-эхх, эсĕ те çав! Ахаль чух: эпĕ, эпĕ, тетĕн, анчах хĕрпе паллашма хăюлăх çитерейместĕн! — юриех намăслантарнă пек турăм юлташа.— Хăваласа çитмеллеччĕ сан ăна... çапла та çапла, эпĕ Ямуткин, санăн земляку. Хĕрлĕ Чутайсем, санпа çывăхрах паллашма кăмăлăм пур манăн, темеллеччĕ... Çапах та, тен, паллашрăн пулĕ, мана юри каламастăн? Ан хăра, эп туртса илес çук, ман валли ытла çамрăк вăл...

— Паян манăн вăл шухăш пулман,— терĕ те Ямуткин мана хирĕç, хăй хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрĕ. Вăл мĕншĕн хĕрелнине ăнлантăм эпĕ: каччă чĕринче юрату çуралма пуçланă. Мĕн тăвас тетĕн, çамрăклăх!

Çакăнпа хĕр çинчен сăмах-юмах каллех татăлчĕ пирĕн. Пĕр хушă ун пирки эпĕ те, Ямуткин та пачах асăнмасăр пурăнтăмăр. Вăхăчĕ хĕрсем çинчен калаçмалли вăхăт марччĕ çав...

...Май уявĕ умĕн пире малти линирен тыла илсе тухрĕç те, эпир самаях лăпкă пурнăçпа пурăнма пуçларăмăр. Анчах связистсем валли ĕç тупăнать вăл.

Бомбежка вăхăтĕнче штабри радиотехника амантнă пирки политотделпа дивизи хаçачĕн редакцийĕ çĕнĕ вырăнта темиçе кун радиосăр ларнă, çавăнпа та пирĕн рота командирне радио ĕçне лайăх пĕлекен çын тупса яма хушнă пулнă.

Çак ĕç шăпах мана лекрĕ.

Политотдел пирĕн подразделенирен пĕр виçĕ километрта, шултра юманлăхра вырнаçнă-мĕн. Кăнтăрла иртсен эпĕ вĕсен çĕрпӳртне шыраса тупрăм та ĕçе тытăнтăм. Пĕли-пĕлми çынсем чаваланса, приемнике пăссах пăрахнă иккен. Каçченех тăрмашрăм, аран-аран йĕркене кĕрткелерĕм.

Малтанах çĕрпÿртре çынсем чылайччĕ, анчах каçалапа пурте таçта саланса пĕтрĕç те, вара пĕр кĕтессе вырнаçса ларнă дежурнăй телефонистпа иксĕмĕр çеç тăрса юлтăмăр. Приемник ĕçлеме тытăнсан, ăна лайăххах тĕрĕслес шутпа, эпĕ хум çинчен хум çине куçса пытăм. Акă Мускав, акă Тбилиси, ак Куйбышев, Хусан... Пурте лайăх, уççăн илтĕнеççĕ. Унтан регулятора тата кăштах пăртăм та, ман приемник сасартăк... чăвашла калаçма тапратрĕ!

Ак тĕлĕнтермĕш! Шупашкар!..

— Çакăнпа çĕнĕ хыпарсене парса пĕтеретпĕр. Тепĕр минутран концерт итлĕр,— терĕ диктор.

Эпĕ малтанах хытнă пек пулса, сывламасăр лартăм. Çав тери савăнмалла-çке-ха! Ак халех, тепĕр самантранах, хамăрăн тăван хуларан, тăван чĕлхепе, тăван юрăсем илтетĕп!..

Минут мана сехет пек туйăнчĕ.

Шăп çав вăхăтра ман çурăм хыçĕнче çĕрпÿрт алăкĕ уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Анчах эпĕ çаврăнса та пăхмарăм, мĕншĕн тесен приемник çинчен куç илсенех Шупашкар хумне çухатассăн туйăнчĕ.

— Радио ĕçлеме пуçларĕ-и?— ыйтрĕ халь çеç кĕрсе тăнă çын. Вăл хĕрарăм пулнă иккен.

— Пуçларĕ,— терĕм эпĕ, ун çине пăхмасăрах.

— Ма калаçмасть эппин?

— Перерыв.

Унтан хĕрарăм кĕтесри телефонистпа тем çинчен калаçса илчĕ. Каллех алăк уçăлса хупăнчĕ, тахăшĕ тухса кайрĕ пулмалла.

— Концерт пуçлатпăр,— терĕ Шупашкар дикторĕ тинех.— Чăваш халăх юррисене итлĕр...

— Мĕн? Мĕн? Мĕнле станци?— сасартăк çав тери тĕлĕнсе ыйтрĕ хĕрарăм сасси телефонист ларнă кĕтесрен.

— Чăвашсен станцийĕ, Шупашкар,— часрах ответ патăм эпĕ, хама итлеме кансĕрлесрен хăраса.

— Пулма пултараймасть! Çакăнта çити илтĕнет-и вара вăл?

— А мĕн? Илтĕнет çав...— Эпĕ тинех каялла çаврăнса пăхрăм та, паçăрхи телефонист вырăнĕнче хайхи «куккук»— концертра чăвашла юрланă хуратутлă хĕр ларнине курах кайрăм! Куçĕ хăйĕн ялкăшать кăна, тутине çыртса лартнă, тÿсме çук пăлханать пулас...

Приемникрен вăйлă хор юрлани илтĕнме пуçларĕ:

Анатран хăпарать шурă пăрахут,
Шупашкар тĕлне çитсессĕн...

— Пирĕн! Пирĕн юрă вĕт ку!— пĕтем чĕререн савăнса кăшкăрса ячĕ те хĕр, ман патăма чупса пычĕ.— Чăваш юрри! Ăнланатăр-и эсир çавна!

— Питĕ лайăх ăнланатăп,— терĕм эпĕ ăна хирĕç чăвашла, кăшт куларах.

— Эсир чăваш-и?— тата ытларах тĕлĕнчĕ хĕр.

— Кам пулам-ха тата? Тĕп чăваш.

— Ну... эпĕ те чăваш!— Вăл çавăнтах мана хăй аллине тăсса пачĕ.

— Пит лайăх пĕлетĕп эсĕ чăвашне.

— Мĕнле майпа?

— Кайран калăп. Халь итлер-ха. Хамăрăн юрăсене итлеменни пит нумай пулать, тунсăхласа çитрĕм.

— А эпĕ... Эпĕ! Вилетĕп вĕт...

Каç пулнă май çĕрпӳртре тĕттĕмленчĕ. Приемникпе юнашарах лампа ларатчĕ, анчах ăна çутасси пирĕн пуçа та пырса кĕмерĕ. Пире çак самантра нимĕн те кирлĕ пулман, эпир нимĕн çинчен те шухăшламан, чĕресем тăван халăхăн юррисемпе тулнă, вĕсем пирĕн пĕтĕм туйăмсене çавăрса илнĕ. Куç умĕнче — çутă Атăл, вăтă Шупашкар, унăн илемлĕ урамĕсем, ешĕрекен сачĕсем, хула таврашĕнчи анлă хирсем, сип-симĕс вăрмансем... Тахăш самантра хĕр çине пăхса илтĕм те, вăл куçне хупнă пекех ларнине асăрхарăм. Паллах, унăн чунĕ те лере, инçетре, çак юрăсене юрланă çĕрте пулнă.

Юрă хыççăн юрă шăранчĕ: «Туй», «Олту», «Кĕреке»... Эпир вĕсене килте чух вуншар, тен, çĕршер хут та илтнĕ пулĕ, анчах вĕсем нихçан та пирĕншĕн паянхи пек хаклă, çывăх пулман-тăр...

— Куккук юрри,— тесе пĕлтерчĕ диктор.

— Ак хайхи, сирĕн юрă,— терĕм хĕре, хулĕнчен хуллен тĕртсе илсе.

Вăл сасартăк ыйхăран вăраннă пек картах сиксе, куçне хăвăрт-хăвăрт мăчлаттарса илчĕ.

— Мĕншĕн манăн?

— Эсир юрларăр пĕркунне...

— А-а... Юрататăп çав эп ăна. Экзамен панă чух та çавнах юрласаттăм...

Инҫетри солистка пӗр ҫаврӑм юрласа илсен, хӗр тӳсеймерӗ, унпа пӗрлех юрла пуҫларӗ.

Кукку! Кукку!
Авӑтать куккук,
Янӑрать вӑрман...

Сассӑм кӑшт та пулин сасӑ манерлӗ пулнӑ пулсан, эпӗ те унпа пӗрле юрласа янӑ пулӑттӑм, анчах шӑпчӑк сассипе сӗрмен урапа сассине хутӑштарсан дуэт пулас ҫуккине пӗлсе, ҫӑварӑма уҫмарӑм. Ҫапах та, чӗрем пурпӗр юрларӗ. Чӗремре эпӗ те ҫав вӑхӑтра хамран пин ҫухрӑмри хорпа, унӑн юррисене итлекен тӑван халӑхпа пӗрле пултӑм.

Концерт пӗтрӗ. Шупашкар станцийӗ ӗҫлеме чарӑнчӗ, анчах тӑван юрӑсем ҫаплах-ха илтӗнсе тӑнӑ пек туйӑнчӗ. Эпир ним чӗнмесӗр, хамӑра такам ырӑ кӑмӑлпа тухатса хӑварнӑ пек лартӑмӑр. Ытла та вӑйлӑ пырса тиврӗҫ пирӗн чӗресене тӑван юрӑсем!

— Епле шутлатӑр эсир...— сӑмах пуҫларӗ хӗр чылай вӑхӑтран.— Пире фашистсем ҫӗнтернӗ пулсан, пирӗн юрӑсем пӗтетчӗҫ вӗт?

— Паллах, пӗтетчӗҫ,— терӗм эпӗ, хӗрӗн шухӑшне ӑнланма тӑрӑшса.

— Ой, епле хӑрушӑ пулнӑ пулӗччӗ вӑл!— хаштах сывласа ячӗ хӗр.— Тавҫӑрса илме те ҫук ӑна... Юрӑ — чӗре сасси, халӑх кӑмӑлӗ, унӑн туйӑмӗ... Халӑхран унӑн юррисене туртса илни ӑна вӗлернӗ пекех пулать...— Хӗр пӗр хушӑ чӗнмесӗр ларчӗ те унтан ерипен кӑна хушса хучӗ:—Тӗрӗссипе, эпӗ фронта та ҫавӑн пиркиех килтӗм...

— Мӗн пирки?— ӑнлансах ҫитерейменрӗм эпӗ.

— Хамӑрӑн юрра хӳтӗлеме. Пирӗн юрӑ ӗмӗр-ӗмӗр ирӗклӗн янӑратӑр, ӑна никам та, нихҫан та хупласа лартма ан пултартӑр, тесе. Юрӑ — манӑн пурнӑҫ вӗт...

— Эсӗ фронта хӑвӑн ирӗкпех килнӗ-и вара?

— Тата. Директор тем тусан та фронта ярасшӑн марччӗ мана, эпӗ военкомата кайса заявлени панине пӗлсен темиҫе хутчен те хӑйӗн кабинетне чӗнтерсе ӳкӗтлерӗ. «Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлеме пирӗн сансӑр та вӑй ҫителӗклӗ... Пӑрах вӑл шухӑша, ан кай, вӗренес пулать санӑн, унта тата эсӗ сассуна та ҫухатма пултаратӑн», тет.

— Ӑҫта вӗреннӗ эсӗ?

— Музыка училищинче. Тăваттăмĕш курсраччĕ ĕнтĕ, кăçал пĕтерсе тухмаллаччĕ... Директор манăн сасă çухаласси çинчен калаççан, тӳссе тăраймарăм, тӳрех татса хутăм: тăшмансем валли усрамалла-и хамăн сассăма?— терĕм.— Хĕр çемçен кăна кулса илчĕ.— Эпĕ хам пĕчĕккĕ пулсан та, характер самаях пысăк манăн! Анчах та директор мана ăнланаймарĕ: мĕншĕн тăшмансем валли?— тет.— Хамăр халăх валли упрамалла, сан пек сасăллă çынсем кашни кунах çуралмаççĕ, тет. Ăнлантартăм вара хамăн шухăша: енчен те пире фашистсем çĕнтерес пулсан, эпир пачах та юрлаймастпăр, темĕнле ылтăн пек сасă та кирлĕ пулмасть, эпĕ хамăрăн юрăшăн, юрламалли тивĕçшĕн çапăçма каятăп, терĕм. Эпĕ комсомолка, сывлăхăм пур, тылра юлма пултараймастăп, ан та ӳкĕтлĕр, терĕм. Калаçу-тавлашу çавăнпа пĕтрĕ те вара пирĕн. Эпĕ çав кунах тухса кайрăм... Музыкăна вĕренме тытăниччен эпĕ пĕр пилĕк уйăх телефонисткăра ĕçленĕччĕ те, çав питĕ вырăнлă пулчĕ. Тӳрех связе лекрĕм...

— Фронтра нумайранпа-и вара?

— Пĕлтĕрхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа. Малтан эпир Мускав патĕнче оборонăра тăтăмăр, унтан наступлени пуçланчĕ...

— Малти линирех пулман пулĕ те?

Хĕре ку ыйту кăмăла каймарĕ пулас. Вăл кăштах тытăнса тăчĕ те, ответ парас вырăнне, хамран ыйтрĕ:

— Сире мĕнле пек туйăнать?

— Аçтан пĕлес-ха ман ăна...— мăкăртатса илтĕм эпĕ, хамăн ыйту вырăнсăр пулнине туйса.

— Эсир, арçынсем, яланах çапла: вăрçăра хăвăра çеç пултаруллă тесе шутлатăр,— кӳренерех каларĕ хĕр.

— Çук, уншăн мар...— тӳрре тухма тăрăшрăм эпĕ.

— Ан калăр ĕнтĕ, ним те ан калăр,— аллипе сулчĕ вăл.— Хĕрсем вăрçăра ним тума та пултараймаççĕ, тесе шутлатăр эсир. Анчах та йăнăшатăр...

Çак вăхăтра кĕтесре зуммер нăйлатни илтĕнчĕ те, хĕр часрах аппарат патне ыткăнчĕ. Çĕрпӳрте васкасах политотдел секретарĕ пырса кĕчĕ. Приемнике йĕркене кĕртни çинчен ăна пĕлтерсе, эпĕ хамăрăн подразделение таврăнма ирĕк ыйтса илтĕм.

Алăк патне çитсен каялла çаврăнса тăтăм та, кĕтесре вырнаçнă хĕре честь парса:

— Сыв пулăр, юлашки сăмахшăн ан çиленĕр...— терĕм.

Вăл ман çине пăхса кăмăллăн, куçне хĕсерех, типтикĕс шурă шăлĕсене кăтартса кулса ячĕ:

— Ман характертан хăрарăр-им? Çук, эпĕ ун пекех хаяр мар. Тепре куриччен!

— Пирĕн паталла пырса тухăр...

— Хăвăр килĕр. Тен, унта сирĕн чăвашсем татах пур?

— Пур тепре, манăн çывăх юлташах, питĕ хастарлă каччă...

— Ăна та ертсе килĕр. Земляксем пĕр-пĕринпе тĕл пулни — аван вăл. Хамăр енчи çынсене курсан, тăвансене курнă пекех туйăнать мана. Ыттисемшĕн те çавăн пекех пулĕ, тетĕп.

— Тĕрĕс калатăр...

## 3

Ротăна таврăнсан, эпĕ тӳрех Ямуткина шыраса тупрăм та ăна çак паянхи тĕлпулу çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа патăм. Ниçта кайса кĕрейми вĕтеленсе илчĕ вара вăл.

— Ара, ку санăн чăваш çĕршывне кайса килнĕ пекех пулнă вĕт, мур пуçĕ! Ну, ăнать те иккен сан тĕллĕн!

— Ничево, Прокоша, ытлашши ан кӳрен, тепринче акă иксĕмĕр те кайăпăр ун патне,— терĕм эпĕ ăна хирĕç.— Куккук сана та илсе пыма хушрĕ хăнана...

— Ан палка кирлĕ мара! Мана палламасть те вĕт вăл...— кĕвĕçнĕ пек пулчĕ Ямуткин.— А эсĕ çулне тупнă ĕнтĕ...

— Çук, чăнах та иксĕмĕре те чĕнчĕ!— çине тăрсах каларăм эпĕ.

— Хăçана?

— Срокĕ паллă мар вара.

— Ну, эппин пулас çук япала вăл. Ăна раштавра аелати авăтасса кĕтнĕ пекех кĕтес пулать...

Пĕр сăмахпа каласан, манăн тусăн кăмăлĕ хуçăлчĕ. Хăйĕн Шупашкар сассине илтмелле пуласса та, «куккукпа» курса калаçасса та шанмарĕ вăл. Анчах ĕçсем сасартăк урăх майлă çаврăнса тăчĕç, пирĕн ĕмĕт тепĕр темиçе кунтанах çитрĕ.

Майăн пĕрремĕшĕнче пирĕн çав тери пысăк праçник

пулчӗ. Вӑл кун пирӗн дивизие Мускав патӗнчи ҫапӑҫусемшӗн Хӗрлӗ Ялав орденӗ пачӗҫ те, ҫапӑҫусенче уйрӑмах палӑрнӑ воинсене те нумайӑшне наградӑларӗҫ. Ҫав майпа кашни подразделенирех темиҫешер ҫын (паллах, чи лайӑххисене) уйӑрса дивизи штабӗ патне митинга ячӗҫ. Ҫавӑнта эпир Ямуткинпа иксӗмӗр те пултӑмӑр.

Сарлака уҫланкӑ хӗррине, ҫӗр ҫулхи юмансем айне, хӑмасем сарса вӑхӑтлӑх сцена тунӑччӗ. Салтаксем, кӗҫӗн командирсем, офицерсем, пӗрин хыҫҫӑн тепри, хӑйсене чӗннӗ тӑрӑх сцена ҫине хӑпарса, хӗрлӗ пуставпа витнӗ сӗтел пуҫӗнче тӑракан ҫӳлӗ те яштака кӗлеткеллӗ генерал аллинчен наградӑсем илчӗҫ. Аялта тӑракансем таттисӗр алӑ ҫупрӗҫ, оркестр туш каларӗ. Унччен пирӗн дивизире наградӑсене никам та алла илмен пулнӑ-ха, паян пуҫласа панӑ вӗсене, ҫавӑнпа та уйрӑмах чаплӑ пулчӗ ку уяв, яланлӑхах асра юлчӗ вӑл.

Тарас Бульба евӗрлӗ украинец-артиллериста Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр тыттарнӑ хыҫҫӑн наградӑланисен списокне вуласа пыракан офицер:

— Медалью «За отвагу» награждены... Красноармеец Мурзаева, Анастасия Ивановна,— терӗ.

Ҫавӑн хыҫҫӑнах сцена ҫине лутрарах хӗр-салтак чупса хӑпарса генерал умне ҫирӗппӗн утса пырса тӑчӗ.

— Пӗтрӗ пуҫ! Акӑ хайхи! Пӑхсам!— мана чавсипе айӑкран чышса илчӗ Ямуткин.

— Тӗрӗс, ҫавӑ... Куккук!— терӗм эпӗ те.

Тупата, ним хушмасӑрах калатӑп: кайранхи вӑхӑтсенче эпӗ хам та темиҫе награда илсе курнӑ, анчах Настя медаль илнӗ чухнехи пек нихҫан та пӑлханман, ун пек нихҫан та савӑнман!.. Мана ҫав медале ҫак хуратутлӑ хӗр мар, пӗтӗм чӑваш ҫӗршывӗ, унта пурӑнакан пур ҫамрӑксем илнӗн туйӑнса кайрӗ. Епле чыс! Епле хисеп!..

Йӑпӑрт кӑна Ямуткин ҫине пӑхса илтӗм те, вӑл та манран кая мар пӑлханса тӑнине асӑрхарӑм. Куҫӗ ҫав тери савӑнӑҫлӑн ялкӑшать, тутисем кула-кула илеҫҫӗ.

— Служу Советскому Союзу!— тесе честь пачӗ те пирӗн хӗр хӑйӗн аллине генерал чӑмӑртанӑ хыҫҫӑн, малтанхи пекех строевой утӑмпа утса анса, халӑх хушшинче ҫухалчӗ.

— Ну, куна паян тытасах пулать,— терӗ Ямуткин, пилоткине чалӑштарса лартса.— Аллине тытса чӑмӑртамасӑр май килмест... Ах, каҫӑр сӑмса! Пӑхма — нимех те мар хӑй, анчах чӗри питӗ вӗри курӑнать!

— Фронта хăй ирĕкĕпе ахальтен килмен ĕнтĕ вăл,— терĕм эпĕ,— кашниех пултараймасть ăна.

Наградăсем парса пĕтерсен, генерал паттăрсене саламласа питĕ хĕрӳллĕ сăмах каларĕ, Тăван çĕршыв телейĕшĕн çĕнĕрен çĕнĕ паттăрла ĕçсем тума чĕнчĕ. Нумай хушă таврари вăрман эпир хăватлăн «урра» кăшкăрнипе янăраса тăчĕ, унтан концерт пуçланчĕ. Ыттисем хушшинче пирĕн Настя та тухса юрларĕ. Сассипе çеç мар, пĕтĕм чĕрипе, чунĕпе юрларĕ вăл... Ăна алă çупса пирĕн алтупанĕсем те ыратакан пулчĕç — çав тери лайăх юрларĕ, итленĕçемĕн итлес килчĕ ăна!

Пĕр улт-çичĕ юрă та юрлаттарчĕç пирĕн хĕре, ывăнтарсах çитерчĕç. Юлашкинчен вăл, пиçнĕ çырла пек хĕрелсе, темиçе хут пуç тайрĕ те сцена çинчен чупсах анса кайрĕ.

— Атя!— терĕ Ямуткин, мана тĕртсе.

— Ăçта?— ыйтрăм эпĕ.

— Ун патне! Шăп халь тытма лайăх та ĕнтĕ ăна, атту кайран вăл каллех куçран çухалма пултарать...

Эп килĕшрĕм. Çавăнтах эпир халăх хушшинчен тĕрткелешсе тухса сцена хыçне пытăмăр та хамăр хĕре тĕл пултăмăр.

— Ырă кун, Мурзаева юлташ...

— Кунĕ ырă та-ха, питĕ ывăнтăм,— терĕ вăл, аллине ман паталла тăсса.

— Хăвăр айаплă уншăн,— терĕ Ямуткин, ун çинелле именӳллĕн, çав вăхăтрах шăтарас пек пăхса.

— Епле — хам айăплă?

— Ытлашши лайăх юрлатăр, çавăнпа...

— Ай, ан кулăр-ха куçăнах! Лайăх юрлама нумай вĕренес пулать-ха ман пеккисен...

Эпĕ ăна Ямуткинпа паллаштартăм.

— Награда илнĕ ятпа юриех сире саламлама килтĕмĕр. Йышăнсамăрччĕ пирĕн чĕрери ăшă салама,— терĕ Ямуткин.

— Çав тери савăнтартăр эсир паян пире,— хушса хутăм эпĕ.

— Тавтапуç...— тата ытларах хĕрелсе кайрĕ Настя.— Сире те часах çавăн пек саламлamалла пуласса шанатăп...

— Çаплах пултарччĕ, эсир шанни харама ан кайтăрччĕ,— кулса илчĕ Ямуткин, хĕр çинчен çаплах куçне илмесĕр.

— Пулатех вăл...

Калаçу пĕр вăхăтлăха татăлчĕ. Настя пилоткине хывса çӳçне тӳрлетме тытăнчĕ, эпир унăн кăкри çинче йăлтăртатакан çап-çутă пысăк медаль çине пăхса тăтăмăр...

— Юлташсем,— терĕ Настя сасартăк,— эсир халĕ пĕр çур сехет пек пушă пулма пултаратăр-и?

— Мĕн тума?

— Эп мĕнле пурăннине пырса курма... Килĕшетĕр-и?

— Эпир хаваслансах килĕшĕпĕр те-ха... Командиртан кайса ыйтас пулать малтан.

— Халех кайса ыйтатăп, кунтахчĕ-ха вăл!— тӳрех персе ячĕ манăн Ямуткин.

— Вĕçтерĕр эппин,— терĕ Настя.— Уяв паян, неушлĕ пăртак чуна уçăлтарма юрамасть? Çитменнине, эпир ăнсăртран тĕл пулнă земляксем, хамăр ялсем, темелле...

Ямуткин пĕр виçĕ минутранах таврăнчĕ.

— Пĕтĕмпех йĕркеллĕ,— терĕ вăл хаваслăн.— Çур сехет мар, виçĕ сехет çӳреме ирĕк пачĕ. Ӳсĕр пулма çеç хушмарĕ...

— Питĕ аван! — аллисене çупса илчĕ Настя.— Атьăр эппин, тăрар мар кунта...— Вăл пире алăсенчен тытрĕ те чупнă пекех туртса кайрĕ хăй хыççăн.

Чăнкă сăрт çумне, çăра çулçăллă çӳлĕ юмансем айне алтса тунă çĕрпӳрт умне пырса тăрсан, вăл пире тăрук куçсенчен пăхса ыйтрĕ:

— Çакăн пек ырă çанталăкра çĕр айĕнче пăчăхса ларни килĕшӳсĕр пулĕ вăл, э? Вăрманта, уçă сывлăшра, авантарах пулĕ?

— Пирĕншĕн пурпĕр,— терĕм эпĕ.— Хăвăрăн ирĕк. Эсир хуçа вĕт паян, эпир мар...

— Эп пулсан — эпех пулам. Эппин, эсир пĕр минут тăрăр-ха çакăнта, эп халех тухатăп...

Настя çĕрпӳрте чупса анса кайрĕ. Эпĕ Ямуткин çине пăхса илтĕм те Настя кĕрсе кайнă алăк еннелле пуçпа султăм:

— Епле, кăмăла каять-и?

— Ан та кала, ача...— хаштах сывласа илчĕ манăн тус.— Хĕр мар, çулăм иккен. Епле кăна пулма пĕлнĕ...

Эпир тек калаçаймарăмăр — Настя хулхушшине хаçатпа чĕркенĕ япала хĕстерсе çĕрпӳртрен сиксе те тухрĕ.

— Кайрăмăр! Ав çавăнта питĕ илемлĕ вырăн пур...

Вăл сăрт çинелле кăтартрĕ те йывăççем хушшипе авкаланакан ансăр сукмак тăрăх чупса хăпарса кайрĕ. Эпир аран ĕлкĕрсе пытăмăр ун хыççăн. Кайсан-кайсан, вăл чăнах та çав тери илемлĕ пĕр пĕчĕк уçланкăра чарăнса тăрса юрласа ячĕ:

Кукку! Кукку!
Янăрать вăрман...

— Мĕнле, килĕшет-и сире кунта?— ыйтрĕ вăл пирĕнтен çавăнтах.

— Питĕ аван-çке...

— Апла пулсан — ларăр. Уяв ячĕпе, хамăрăн малашнехи телее йыхăрса, эпир çакăнта кăштах хăналанса илĕпĕр...

Настя хулхушшинчи хаçатне сӳтрĕ те пирĕн ума çур литр кĕленчи, пĕр банка консерва, çăкăр, виçĕ кашăк тата виçĕ снаряд пуçĕ кăларса хучĕ.

— Бокалсем вырăнне пулаççĕ кусем...

Манăн Ямуткин, çаксене курсан, куçне чарсах пăрахрĕ.

— Гениальнăй çын иккен эсир,— кулса илчĕ вăл.— Кун пеккине шухăшласа кăларма чăнах та уйрăм йышши ăс кирлĕ!

— Юрĕ, юрĕ, комплиментсене кайран калăпăр, малтан хăналанар. Тытăр эппин бокалсене, унсăрăн тултарма май килмест,— хуçалла хушрĕ пире Настя.

Эпир снаряд пуçĕсене тытрăмăр, вăл тултарса пачĕ.

— Мĕншĕн ĕçĕпĕр ĕнтĕ?— ыйтрăм эпĕ, ун çине пăхса.

— Паллах, пулас çĕнтерӳшĕн,— терĕ Настя.

— Тата çĕнтерӳшĕн çапăçса награда илме тивĕçлĕ пулнисемшĕн,— хушса хучĕ Ямуткин.

— Хирĕçместĕп...

Иккĕмĕш черккине эпир ятарласах Настя ячĕпе ĕçрĕмĕр. Паллах ĕнтĕ, кăштах хĕртĕмĕр, чĕлхесем çыпăçуллăрах çаврăнма пуçларĕç, сăмах-юмах тупăнсах пычĕ. Пĕр-пĕринпе питĕ лайăх паллашса çитрĕмĕр: вăрçăччен кам мĕнле пурăннă, мĕн ĕçленĕ... Анчах та манăн пуринчен ытла Настя паянхи наградăна мĕншĕн илнине пĕлес килчĕ. Кун çинчен тӳрех ыйтма аван мар пек туйăнчĕ, сăмахĕ ниепле те вăл еннелле çаврăнса пымарĕ. Çакăнта мана Ямуткин пулăшрĕ вара, вăл та çавăн çинченех шухăшласа ларнă пулнă иккен.

— Кăмăлсăр ан пулăр, тархасшăн, Настя,— аякран

пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне,— анчах та манăн пĕр ыйту пур... пĕлес килет...

— Мĕнле ыйту? Қалăр...

— Мĕншĕн пачĕç сире çак хаклă наградăна? Мĕнле паттăр ĕçшĕн?

Настя темшĕн тутине çыртса лартрĕ.

— Питĕ пĕлес килет, кăмăл тăвăр тархасшăн,— терĕ Ямуткин каллех, хĕр çинчен куç илмесĕр.

Настя чĕнмерĕ. Ана çакăн пек ыйтни кăмăла каймарĕ курăнать. Пĕр хушă нихăшĕ те пĕр сăмах та шарламарăмăр. Темле аван мар пулса тăчĕ. Вара эпĕ сăмах хушрăм:

— Чăнах, Настя, манăн хамăн та ун çинчен ыйтассăм килетчĕ...

Пирĕн хĕр хаштах сывласа илчĕ те аяккалла пăхрĕ.

— Ой, юратмастăп-çке эпĕ хам çинчен каласма...

— Эсир кĕскен кăна...

— Аса та илес килмест манăн ăна. Йывăр.

— Эпир, паллах, ирĕксĕрлеместпĕр, çапах та...

— Паян хамăр туслашнă ятпа каласан анчах ĕнтĕ...

— Ну, çав ятпа пултăр...

## 4

... Акă мĕн каласа пачĕ вара вăл пире.

Фашистсене Мускав патĕнче аркатма тытăннă кунсенче вĕсен полкĕ пĕррехинче питĕ пысăк салашăн çапăçнă. Çав салана шăп варринчен пысăках мар юханшыв икке уйăрса тăнă. Шывăн пĕр енче — пирĕннисем, тепĕр енче — гитлеровецсем пулнă. Икĕ связистпа, пĕр çамрăк лейтенант-минометчикпа пĕрле, Настя шыв урлă çĕрле провод туртса каçнă та пĕр çӳлĕ чул çурт тăрринче вырнаçса ларнă. Тул çутăлма пуçласанах вĕсем телефон тăрăх хамăрăннисене минометсенчен хăш тĕле пемеллине пĕлтерме тытăннă. Сасартăк çыхăну татăлнă. Лейтенант пĕр связистне линири татăлнă вырăна тупса тӳрлетме хушнă. Вунă минут, унтан çирĕм минут та иртнĕ — связист таврăнман. Лейтенант ун хыççăн иккĕмĕш связистне янă, анчах ку та çухалнă. Пирĕн минометсем ним йĕркесĕр пеме пуçланă, минăсем пачах та кирлĕ мар вырăнсене ӳке-ӳке çурăлнă. Аптраса çитнĕ лейтенант вара Настя çине пăхса илнĕ... Паллах, унăн Настьăна лини çинчи татăлнă вырăна шырама хушма

шухăш пулнă, анчах çав вăхăтрах вăл ăна шансах та кайман. Икĕ вăйпитти арçын нимĕн те тăваймарĕç пулсан, çав ача пÿллĕ хĕр мĕн тума пултартăр-ха?..

Лейтенант çавăн пек шутланине Настя унăн куçĕнчен пăхсах ăнланнă.

— Кăлăхах шанмастăр, лейтенант юлташ,—тенĕ вăл.

— Усăсăр пĕтме пултаратăр,— тенĕ лейтенант.— Хамăн каяс пулĕ...

Капла калани вара Настьăна кÿрентерсех пăрахнă.

— Сирĕн ĕç мар ку,— татса хунă вăл.— Эсир командир, сирĕн наблюдательнăй пунктрах пулас пулать. Эпĕ — боец, линие манăн кайса тÿрлетмелле.

Çак сăмахсемпе вăл чул çурт маччи çинчен аннă та, провод тăрăх, тарăн юра сирсе, хырăмпа шуса кайнă. Çав вăхăтра, пирĕн минометсем йĕркеллĕн перейменнипе, фашистсем хăюлланса хăйсен шăтăкĕсенчен туха пуçланă. Пур енчен те пульăсем шăхăрнă, минăсем çурăлнă, осколоксем сирпĕннĕ. Чул çурт патĕнчен пĕр 100—150 метр шуса кайсан, Настя пĕрремĕш связист вилĕ выртнине курнă. Ун патĕнче чарăнса тăмасăрах, малалла шуса кайнă. Çырма хĕррине çитсен, Настя тепĕр связисчĕ пуçĕпе юр ăшне тăрăннине асăрханă. Вăл провод çинчех выртнă. Настя ун патне упаленсе çитнĕ те, вăл йывăррăн сывласа йынăшнине илтсе, ăна çăлма шут тытнă. Анчах та салтакăн чăн малтан боевой задание пурнăçа кĕртес пулать. Çавăнпа та Настя вăл боеца çывăхри мунча хыçне — хăрушсăртарах вырăна сĕтĕрсе кайса хунă та каллех провод тăрăх кайнă. Сăрт çамкине çитсен, вăл пульăсем пăр пек çуса тăракан вырăна лекнĕ. Пĕлме çук, тен, пĕр-пĕр нимĕç салтакĕ ăна курса тĕллесех пенĕ-и... Кашни самантрах вилĕм кĕтнине пĕлсе, вăл çырма тĕпнелле çăмха пек йăваланса анса кайнă. Ун телейне, телефон провочĕ шăпах çакăнта, хÿтĕ çĕрте татăлнă пулнă, пĕр-пĕр осколок лекнĕ ĕнтĕ ăна. Настя провода йăпăртах сыпăнтарнă та, хăй çумĕнчи аппаратне включить туса, трубкăна темиçе хутчен: «Роза! Роза! Мана илтетĕр-и? Мана илтетĕр-и?» тесе кăшкăрнă.

— Пĕр те пĕр урăх çĕрте те татăлнă пулсан — капут,— тесе шикленнĕ хăй çав вăхăтрах.— Ăна шыраса вăхăт татах вăраха каять те, вара...

Анчах ĕçсем йĕркеллех пулнă. Трубкăра лейтенант сасси илтĕннĕ:

— Маттур, йăмăкăм! Илтетĕп! Тавтапуç!..



Настя часрах каялла, сăрт çинелле чаваланса хăпарнă... Сăрт çамкинче вăл каллех пульăсен çумăрĕ витĕр тухнă, унтан аманна связист патне — ăна илсе каяс тесе шуса пынă, анчах та связист унччен вилнĕ пулнă ĕнтĕ. Настя вара часрах лейтенант патне чупнă. Вăл чул çурт маччи çине хăпарнă тĕле лейтенант телефон тăрăх хамăрăн миномет батарейине даннăйсем пама пуçланă та-мĕн...

Çапăçу татах вăйланса кайнă. Таврари сывлăш чĕтресе тăнă, взрыв çине взрыв пулнипе хăлхасем ним илтми пулса ларнă. Чылай вăхăт иртнĕ çапла... Унтан сасартăк пуç тăрринче темскер çав тери вăйлăн шартлатнă, шатăртатнă та, пĕр-икĕ минут хушши Настьăпа лейтенант нимĕн те курман, илтмен... Тĕтĕм-хăрăм сирĕлсен, çурт тăррине снаряд тивсе çурри таран сӳсе кайни палăрнă, вĕсем хăйсем уçă çĕртех пулнă. Настьăпа лейтенант унталла-кунталла пăхса çаврăнма та ĕлкĕреймен, сывăхрах автомат шатăртатни илтĕннĕ, вара лейтенант тăруках хăйне сулахай аякĕнчен тытса тайăлса кайнă. Настя ун патне çитиччен унăн чĕри тапма та чарăннă...

Настя халь пĕчченех юлнă. Ăна асăрханă фашистсем çине-çине пеме тытăннă. Малтанах вăл çухалса кайнă пек пулнă, анчах часах автоматне тытса карниз хыçне выртнă та майлăрах самант кĕтме тытăннă. Ик-виçĕ минут иртсен, фашистсем ăна вилнĕ тенĕ пулмалла. Хирĕç ларакан çурт кĕтесси хыçĕнчен харасах улттăн-çиччĕн сиксе тухса ун патнелле ыткăннă. Настя вĕсене курсанах сывлами пулса тĕлленĕ те спусковой крючок çине пуснă... Виççĕшĕ çавăнтах тĕшĕрĕлсе аннă, ыттисем каялла. хӳтлĕхелле тапса сикнĕ.

Çакăн хыççăн вара фашист салтакĕсемпе Настя хушшинче çав тери хăрушă дуэль пуçланса кайнă. Вĕсем йышлăн пулнă, Настя — пĕччен. Анчах хăй пĕччен пулнине палăртас мар тесе, вăл вырăнтан вырăна куçа-куçа пенĕ. Пĕр çур сехет ытла пынă çак тан мар тытăçу... Настьăн патронĕсем те пĕтме пуçланă, вăл ĕнтĕ сайра хутра çеç кĕске-кĕске черетсем кăларса янă, тĕл тивертме шанчăк пулсан кăна пенĕ. Юлашки самант валли гранатăсем хатĕрлесе хунă. Çав вăхăтра нимĕçсем урам веррине хăвăрт кăна противотанковăй тупă кустарса кăларнă та чул çурт çинелле умлăн-хыçлăн виçĕ хутчен персе янă.

Настя ним пĕлми пулса выртнă. Унăн кĕлеткине те-

миçе осколок кӗрсе ларнӑ. Мӗн чухлӗ вӑхӑт выртнӑ вӑл çавӑн пек — ӑна пӗлме пултарайман, анчах куçне уçсанах, ун хӑлхине тахӑш тӗлте васкавлӑн нимӗçле мӑкӑртатни илтӗнсе кайнӑ. Вӑл часрах тӑрса ларса пӗр гранатине çавӑрса тытнӑ. Татах итленӗ. Нимӗçсем калаçни çурт хыçӗнче, çенӗхре илтӗннӗ.

— Ман пата килеççӗ кусем, мана тытасшӑн...— тенӗ те Настя, труба çуммипе çенӗх еннелле шуса кайнӑ. Унччен те пулман — карниз хыçӗнчен нимӗç автомачӗн кӗпçи курӑннӑ. Çав самантрах Настя хӑй аллинчи гранатине ывӑтса янӑ...

— Хам та тепӗр хут ним пӗлми пулса выртнӑ вара çавӑнта,— тесе вӗçлерӗ Настя хӑйӗн калавне.— Унтан, тӗлӗкри пек, «урра» кӑшкӑрни илтӗнсе кайрӗ. Пирӗннисем çырма урлӑ каçса яла пӗтӗмпех ирӗке кӑларнӑ иккен...

... Настя калавне эпир çав тери тимлесе, хӑй çинчен куç илмесӗр итлесе лартӑмӑр. Тӗрӗссипе каласан, ку истори пулма та пултарайман пек, ӑна юри шухӑшласа кӑларнӑ пек туйӑнчӗ мана. Ăçтан-ха çакӑн пек иксӗлми вӑй, хӑюлӑх, нимрен хӑрами паттӑрлӑх шӑнăçма пултартар çак пӗчӗк хӗр чӗринче? Хӑçан, ӑçта, хӑш çӗршывра пулнӑ-ши кун пекки?..

Тата ытларах хисеплес, ӑшшӑн савас килсе кайрӗ ман ӑна. Чи çывӑх çын, тӑван, пӗр аннерен çуралнӑ йӑмӑк вырӑнне шутлас килчӗ.

— Епле маттур эс... Епле маттур, йӑмӑкӑм!— терӗм хам ӑшӑмра.

Çав хушӑрах эпӗ хулпуççи урлӑ Ямуткин çине пӑхса илтӗм. «Тӗрӗс калатӑп-и эп, çук-и?»— тесе ыйтнӑ пек пулчӗ ӗнтӗ ку.

Манӑн тус куçӗ калама çук ӑшӑ çутӑпа çутӑлса тӑратчӗ. Чӗре тӗпӗнчен тухса тӑракан юратупа тулнӑччӗ... Кунтан ним тӗлӗнмелли те пулман: Ямуткин çамрӑк çынччӗ, тен, унччен вӑл чӑнласа юратса та курман пулӗ...

— Ма нимӗн те чӗнместӗр? Е хам сӳпӗлтетнипе йӑлӑхтарса çитертӗм-и?— терӗ Настя, пӗрре ман çине, тепре Ямуткин çине пӑхса илсе.— Кӑмӑлсӑр ан пулӑр ӗнтӗ...

— Ой, çук, çук, мӗн эсир?

— Питӗ тӗлӗнтертӗр-ха пире...— терӗмӗр ӑна хирӗç, тӳрре тухма тӑрӑшнӑ пек.

— Мĕн тĕлĕнмелли пур-ха унта питех? Ун пек йывăрлăха лексен, хуть те кам та çавăн пек тумалла ĕнтĕ.

— Вăл апла та-ха, çапах та тепри хăраса ӳкме, çухалса кайма пултарать...

— Ну, хăракан салтак — салтак мар вара вăл. Тăшмана хирĕç çапăçнă чух хăрани — тивĕçсĕр япала...— Настя сасартăк темшĕн айăпа кĕнĕ çын евĕр пăхса илчĕ.— Анчах юлашки вăхăтра эпĕ вăрçăри пек мар, килти пекех пурăнатăп-ха... Малти линие яма ыйтса темиçе рапорт та çырса патăм — ямаççĕ. Политотдел начальникĕ чарса тăрать: эпĕ дивизи клубĕ çумĕнчи ансамбль валли кирлĕ имĕш...

— Тĕрĕс калать,— терĕ Ямуткин.— Сирĕн пек юрлаканни кам пур тата унта? Эсир — солистка...

— Э-э, ан калăр тархасшăн,— аллипе сулчĕ Настя.— Юрлама килмен эп кунта... Халлĕхе пурăнкалам та-ха, наступлени пуçлансан, пурпĕрех тылра лармастăп. Генерал патне çитетĕп!

Çак сăмахсемпе вăл снаряд пуçĕсене тепĕр хут тултарса пачĕ.

— Ĕçсе ярăр... Юлашки тутлă пулать, теççĕ-и-ха çав?— кулса илчĕ вăл.

— Мĕншĕн пĕтĕмпех пире? Хăвăра валли ма ямастăн?

— О-о, çук, çук, мана çитет...— кула-кула пуçне пăркаларĕ пирĕн хĕр.— Куна та ĕçместĕмччĕ те, пĕр сăлтав пулчĕ. Анчах та эсир ман çинчен: награда илнĕ ятпа ĕçрĕ, тесе ан шутлăр...

— Мĕнле сăлтав тата?

— Паян эпĕ... çирĕм çул тултартăм...

— Мĕншĕн маларах каламарăр вара кун çинчен? — хыпăнса ӳкрĕмĕр эпир.

Настя именнĕ пек пулчĕ.

— Каларăм вĕт сире... Хам çинчен калаçма юратмастăп эпĕ.

— Ну, апла пулсан, сире нумай-нумай çул пурăнма, чăваш ятне чапа кăларакан артистка пулма сунатпăр!— терĕм те эпĕ, Ямуткинпа иксĕмĕр снаряд пуçĕсене шаклаттартăмăр.

— Тавтапуç,— терĕ Настя, пирĕн çине ăшшăн пăхса.— Тăшмана çĕнтернĕ хыççăн, вăрçă пĕтсен, тен, чăнах та артистка пулăп... Пурăнасчĕ çав телейлĕ самантчен...

— Пуранатпăр, Настя! Эсир Мускаври Пысăк театрта юрланине те илтĕпĕр-ха!..

Эпир Настьăна тата тепĕр хут пуç тайса ĕçрĕмĕр. Çав вăхăтра çырмаран сасартăк горнист выляни илтĕнсе кайрĕ.

— Мĕн ку?— пĕр-пĕрин çине тĕлĕнерех пăхса илтĕмĕр эпир.

— Мĕне пĕлтерет?

— Боевая тревога,— терĕ Настя, ура çине сиксе тăрса.

Чăн та ку боевая тревога пулнă-мĕн. Ана илтсен салтакăн пĕр минут та тытăнса тăма юрамасть, часрах хăй вырăнне васкамалла, стройра пулмалла.

— Тепре куриччен сывă пулăр эппин!

Эпир Настя аллине хыттăн чăмăртарăмăр та анаталла чупрăмăр...

1948,
Шупашкар.



# Тӗрлӗ ҫулсенчи калавсем





## СĔРМЕКУПАС

*Хирпӳ Кĕркурине*

Кăçал çуркунне çеç Хĕрлĕ Сормовăри верфьрен шыв çине антарнă «Комсомолец» пăрахут июлĕн пĕрремĕшĕнче Мускав портĕнчен тухрĕ те виççĕмĕш кун ĕнтĕ анаталла каять. Çав хушăра вăл Мускав шывĕ çинчи нумай шлюзсем витĕр тухрĕ, Коломна, Рязань, Муром хулисем, сахал мар заводсем, саласемпе колхозсем тĕлĕпе иртрĕ. Халĕ акă вăл хăйĕн хĕрлĕ тĕслĕ тимĕр кăкрипе Ока шывне хăватлăн çурса, ăна ик еннелле сирпĕнтерсе пырать. Пăрахут хыççăн вĕçĕмсĕр кăтра хум выляса юлать...

Эпир виççĕн: эпĕ тата манăн икĕ юлташ. Эпĕ те, вĕсем те — студентсем, çуллахи каникула таврăнатпăр. Билетсем пулманнипе, малтанхи икĕ кун хушши пирĕн тăваттăмĕш класрах унта-кунта хĕсĕнкелесе пымалла

пулчĕ; эпир пăрахут çинче канма ĕмĕтленнĕччĕ, анчах ун вырăнне асап кăна пулчĕ — ретлĕ ларма та, выртма та май килмерĕ. Виççĕмĕш кунĕнче тин, кăнтăрла иртсен, çӳлте вырăнсем пушанкаларĕç те, капитанăн пĕрремĕш помощникĕпе калаçса татăлса, иккĕмĕш класа куçрăмăр.

Каç пуласпа эпир чылай хушă палуба тăрăх пăрахут тавра утса, уçăлса çӳрерĕмĕр, çутçанталăк илемĕпе килентĕмĕр, унтан, каçхи апат çиес тесе, салона кĕтĕмĕр.

Кунта калама çук таса та тирпейлĕ. Малти кĕтесре урайĕнчен маччана çитекен пысăк тĕкĕр çутăлса тăрать, кантăксем çинче çутă-симĕс бархат чаршавсем. Сĕтелсем çине хитре хрусталь вазăсемпе тĕрлĕрен тĕрлĕ чечексем лартнă, хыçалти стена çумĕнче, икĕ кантăк хушшинче, йăм-хура пианино йăлтăртатса тăрать...

Хĕл каçа тасалăх енчен ытла мухтамаллах та мар общежитисенче пурăннăскерсем, тата костюмсем те салонсенче çӳремеллискерсемех пулман пирки, эпир малтанах темле именнĕ пек пулса тăтăмăр. Анчах салонра ларакан ытти пассажирсем те — пĕр пит те самăр, пĕтĕмпех пурçăн ăшне путнă, пурин çине те ылтăнланă лорнет витĕр çеç пăхакан хĕрарăмсăр пуçне — пурте хамăр евĕрлине кура, именнĕ пек пулни часах иртсе кайрĕ.

Эпир салон варринчи тăрăхла сĕтел хушшинче вырнаçса ларса, ватăрах арçын-официанта чĕнсе илтĕмĕр те, хамăра апат пырса пама ыйтрăмăр. Пире хирĕç, сĕтелĕн тепĕр вĕçĕнче, пичĕсемпе мăйĕсене те, хулĕсене те бронза тĕслĕ пуличченех хĕвелпе пĕçертсе янă икĕ хĕр çисе ларaççĕ. Пĕри хурарах сăнлă, куçĕ те тĕксĕм, тепри вара сап-сар çӳç-пуçлă, куçĕ хирти утмăлтурат чечекĕ тĕслĕ. Вĕсем тем сăлтавпа пирĕн çине тек-текех пăхкаласа, хăйсем хушшинче темскер калаçса, хуллен кула-кула илеççĕ.

— Мĕнлескерсем, камсем-ши кусем?— шухăшларăм эпĕ хам ăшăмра.— Паллашсан юратчĕ, вăхăта интереслĕрех иртterme пулать...

Эп çапла шухăшларăм çеç — манăн туссенчен пĕри, Юсуф, вĕсемпе сăмах пуçласа та ячĕ.

— Апат çинĕ чух калаçсан, пыра лартма пулать, теççĕ...

Юри тунă пекех, пĕр хĕрĕ шăп çав самантра чыхăнчĕ.

— Каларăм вĕт!

Эпир те, хӗрсем хӑйсем те кулса ячӗҫ. Ҫавӑнтан пуҫланса кайрӗ те вара пирӗн паллашу. Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах тупӑнса пычӗ пирӗн хушӑмӑрта.

— Инҫе каятӑр-и эсир?— ыйтрӑм эпӗ кӑшт тӑхтасан.

— Сталинграда,— терӗ пӗр хӗрӗ, кӑлкан пек ҫӳҫли.— Эсир хӑвӑр тата?

— Тӗрлӗренех пур... Ҫывӑхарах каяканни те, инҫе каяканни те.

— Ҫапах та, ӑҫта ҫитиччен? Тен, пире валли попутчиксем пулатӑр эсир?

Эпӗ хамӑн юлташсем ҫине пӑхса илтӗм те, вӗсем хӑйсем ҫинчен каланине хирӗҫ пулас ҫуккине кура, хӗрсене чӑннине каласа патӑм.

— Эпир кунпа иксӗмӗр,— терӗм хампа Ванюк ҫине кӑтартса,— Шупашкара ҫитме ӗмӗтленетпӗр, ак ку юлташ... (пуҫпа Юсуф еннелле султӑм)— Хусана каять...

— Эсир студентсем-и?

— Тӗп-тӗрӗс пӗлтӗр... Эсир хӑвӑр тата?

— Эпир — Сталинградри трактор заводӗнчен.

— Мускава мӗнле, ӗҫпе килтӗр-и, е...

— Ҫук, ахаль... Канса ҫӳретпӗр,— терӗ хурарах хӗрӗ,— курорт вырӑнне...

Пирӗн калаҫу часах ӑнса кайрӗ. Официант пире апат пырса пачӗ, эпир ҫиме тытӑнтӑмӑр, анчах калаҫу пӗртте татӑлмарӗ. Эпир хӗрсем ҫинчен, вӗсем пирӗн ҫинчен ыйтса пӗлчӗҫ. Ҫамрӑксем пӗр-пӗринпе хӑвӑрт паллашса каяҫҫӗ вӗт...

Вӗсен пурнӑҫ кун-ҫулӗ пирӗн ҫӗршыври нумай пин шер ҫамрӑксен кун-ҫулӗ евӗрлех-мӗн. Иккӗшӗ те рабочи хӗрӗсем, иккӗшин те ача чухнехи ҫулӗсенче пӗр ҫуӑ кун та пулман, хурапа шурра нумай курма тивнӗ, граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче пӗри ашшӗне, тепри пӗртен-пӗр пиччӗшне ҫухатнӑ (урӑх унӑн никам та пулман). Иккӗшӗ те ача ҫуртӗнче ӳснӗ, унтан ФЗУ шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ, кайран заводра ӗҫлеме пуҫланӑ. Лайӑх ӗҫленӗшӗн преми хыҫҫӑн преми илсе пынӑ, каҫ-каҫ завод ҫумӗнчи техникумра вӗренме пуҫланӑ... Кӑҫал, ҫӑва тухсан, завод дирекцийӗ вӗсене отпуск вӑхӑтӗнче пӑрахутпа Сталинградран Мускава кайса килмелли путевкӑпа премиленӗ. Халӗ, Мускавра вунӑ кун пурӑннӑ хыҫҫӑн, вӗсем хӑйсен тӑван заводне таврӑнаҫҫӗ-мӗн.

Апат ҫисе пӗтерсен те чылай хушӑ сӑмахласа лартӑмӑр эпир. Ӗнтӗ каҫ та пулчӗ, пӑрахут ҫинчи пур лампоч-

кăсем те пĕр харăс çуталса ялкăшма тытăнчĕç. Тата кăшт тăхтасан, Анюта ятлă хĕрĕ — сап-сарри — пианино умне пырса ларчĕ те çăмăл кăна кĕвĕ каласа илчĕ. Унтан, винтăллă пукан çинче ларнипех пирĕн еннелле вăр-р... çавранса:

— Тен, эсир вылятăр?— тесе ыйтрĕ.

— Чăнах, чăнах, юлташсем... Вылятăр вĕт эсир, паçăр сирĕн каютăран сĕрмекупăс сасси илтĕнетчĕ,— терĕ хурараххи, Бэла ятли.

Манăн юлташсем тăруках нимĕн те каламарĕç, эпĕ вара вĕсем çине ыйтуллăн пăхса илтĕм.

«Епле, тусăмсем... кăмăл пур-и сирĕн?»

— Выляс тесен, выляма пулать пуль,— терĕ вара Ванюк.

Анюта çавăнтах пукан çинчен сиксе тăчĕ. Ун вырăнне Ванюк йышăнчĕ. Эпир ун тавра вырнаçса лартăмăр. Кĕçех Ванюк çăмăл аккордсем туса клавишсене тĕрĕслесе тухрĕ те хĕрсем çине пăхса ыйтрĕ:

— Мĕскер каласа парас сире?

— Хуть те мĕн, хуть те мĕн! Хăвăр мĕн юрататăр, çавна калăр!— терĕç хĕрсем.

— Апла пулсан, юрĕ эппин...

Анчах Ванюк выляма пуçлас тесе темиçе аккорд тума çеç ĕлкĕрчĕ — сасартăк хайхи лорнетлă хĕрарăм сĕтел хушшинчен пуканне хыттăн шутарса сиксе тăчĕ те, хăйĕн çич-сакăр çулхи хытанка хĕрачине аллинчен тытса, юриех пурне те илтĕнмелле:

— Пойдем отсюда, Нелли, сейчас здесь барабанить начнут! Нигде покоя нет нам с тобою!— тесе хучĕ. Пурте тĕлĕнсе ун çинелле çаврăнса пăхрĕç. Çав самантрах хĕрарăм ачине хăй хыççăн чуптарса, пант, пант, пант! утса тухса кайрĕ.

— Епле вăйлă характер!..— ун хыçĕнчен пăхса кулса илчĕ Бэла.

— Характер мар ку, ухмахлăх!— çилĕпе каласа хучĕ Анюта.— Тӳсме пултараймастăп çавăн пек «фруктсене»!

— Ун пеккисем çине çаврăнса та пăхас пулмасть,— терĕ те Ванюк, каллех темиçе аккорд турĕ.

— «Çуркунне»,— терĕ вăл.— Норвеги композиторĕ Григ çырнă япала...— Çавăнтах унăн аллисем клавишсем тăрăх калама та çук çăмăллăн чупма пуçларĕç. Кĕвĕ малтан майĕпе, лăпкăн пуçланса кайрĕ, унтан çӳлел-

ле хăпарнăçемĕн хăпарçа пычĕ, кăштах тăхтасан вара пианино çав тери вăйлă та çĕнтерӳллĕ янрама тапратрĕ...

— Пăр каять!— кăшкăрчĕ Ванюк. Хăй çав вăхăтрах хĕрнĕçемĕн хĕрсе пычĕ, вăл ĕнтĕ пӳрнисемпе çеç мар, хулпуççийĕсемпе кăна та мар, пĕтĕм кĕлеткипе вылярĕ... Кĕвĕ чылай хушă çӳлĕ сыпăкра хĕрӳллĕн янраса тăчĕ, унтан майĕпе чакса, лăпланса пычĕ те пачах анса ларчĕ. Ванюк выляма чарăнчĕ.

— Браво, браво!..— хавассăн кăшкăрса алă çупса ячĕç хĕрсем. Вĕсемпе пĕрле салонри ытти хăшпĕр пассажирсем те — çутă куçлăхлă, чылаях шупкаланнă шĕвĕртерех сухаллă, рабочи тĕслĕ çын, унпа юнашар ларакан ватăрах хĕрарăм (унăн арăмĕ пулас), кĕтесре пĕрмай шахмăтла выляса пыракан вăтам çулсенчи икĕ çынпа вĕсем çумĕнчи хĕрарăм та алă çупса ячĕç.

— Тата выльăр, тата!— хыпăнса ыйтрĕç хĕрсем.

Ванюк нимĕн те шарламарĕ, клавишсем çине пăхса кăштах шухăша кайнă пек пулса ларчĕ те каллех выляма пуçларĕ. Ку кĕвви вара малтанхинчен пачах расна пулчĕ, эпĕ часах вăл чăвашла япала пулнине тавçăрса илтĕм, анчах мĕнле япала, кам произведенийĕ пулнине ниепле те чухлаймарăм... Кĕвĕре малтанах вĕçĕмсĕр хурлăх, хуйхă илтĕнчĕ, кăштах тăхтасан унта ӳссех пыракан тарăху янăрама пуçларĕ, пĕр вăхăт пĕтĕмпех пăтрашса кайса таттисĕр савăк шав кĕрлесе тăчĕ, унтан вара çав шавран савăнăçлă, çĕнтерӳллĕ сасăсем çиеле тухрĕç...

— Мĕнле япала ку, камăн? Темскерле, хĕвелтухăçĕнчи кĕвĕсем нумай пек туйăнать кунта,— терĕ шахматистсенчен пĕри, Ванюк выляма чарăнсан.

Анчах Ванюк ăна ытла тăруках ответ памарĕ. Унтан шахматист çине пăхрĕ те, хуллен кăна:

— Никамăн та мар вăл,— тесе хучĕ.

— Мĕнле никамăн та мар?— тĕлĕнчĕ шахматист.— Ăна кам та пулин çырнă вĕт-ха, хăйне тĕллĕн пулман вăл?

— Эп ăна хам çырнă,— терĕ Ванюк, çĕнĕрен аккордсем туса.

Капла калани шахматиста пуçĕпех тĕлĕнтерсе пăрахрĕ вара.

— Эсир... тĕрĕснех калатăр-и? Шӳт тумастăр-и?..

Каçарăр, анчах темшĕн ĕненсех çитес килмест манăн... Ара, ку вĕт...

— Мĕншĕн ĕненес килмест?— каласа пĕтерме памарĕ ăна часах вĕриленекен Юсуф. Шахматист çавăн пек иккĕленсе тăни ăна чĕринченех пырса тиврĕ пулмалла.— Пирĕн искусствăра ку чухне талантлă çамрăксем сахал ĕçлеççĕ-и-мĕн?

— Вăл апла та-ха, анчах çапах та...— тӳрре тухассăн пек пулчĕ шахматист.

— Нимĕнле «анчах» та çук. Эпир совет çĕршывĕнче пурăннине манас пулмасть, юлташ... Паян эпир колхозник е ахаль рабочи, темиçе çултан — инженер, агроном, музыкант, художник е тата кам та пулин çавăн пекки...

— Тĕрĕс, тĕрĕс,—хушса хучĕ Анюта.— Акă, сăмахран, пирĕн заводра ик-виç çул каялла музыкăна тата живопиçе вĕрентекен студисем уçрĕç. Çамрăк рабочисем аллă çын таран вĕренеççĕ унта ĕç хыççăн. Питĕ пултаруллисем пур, нумайăшĕ пысăк шанчăк параççĕ, тет...

Шахматист куна хирĕç нимĕнех те калаймарĕ.

— Паллах, ку тĕрĕс вăл, талантсем нумай халăхра...— тесе мăкăртатса илчĕ кăна вăл.— Эпĕ хам тĕлĕннипе çеç каларăм. Музыки мана питĕ килĕшрĕ!

Çакăн пек калаçса илнĕ хыççăн манăн хамăн юлташсен пултарулăхне тата ытларах кăтартас килчĕ. Эпĕ Юсуфа кăшт çеç айăкĕнчен тĕртсе илтĕм.

— Сĕрмекупăсна илсе тух-ха...

Вăл манăн шухăша тӳрех ăнланчĕ пулмалла. Ванюка хăлхинчен шăппăн кăна темскер каларĕ те, каютăна кайса хăйĕн сĕрмекупăсне тата пĕр тĕрке тĕрлĕрен нотăсем çĕклесе килчĕ. Кун хыççăн вара салонра чăн-чăн концерт пуçланса кайрĕ...

Малтан манăн юлташсем — хăшне пĕрле, хăшне уйăммăн — Хĕвеланăçĕнчи чаплă композиторсен: Шопен, Бетховен, Лист, Верди тата ыттисен произведенисене выляреç, унтан вырăссене тытăнчĕç: Чайковский, Глинка, Римский-Корсаков, Бородин... Нумай выляреç вĕсем, пит пысăк аудитори умĕнче концерт панă пекех, пĕтĕм чĕререн хĕрсе кайса выляреç. Малтанласа салонра пирĕнсĕр пуçне çич-сакăр çын çеçчĕ, анчах, «концерт» пуçланса кайсан, итлекенсем йышланнăçем йышланчĕç, пĕрремĕш класри пассажирсем те пирĕн салона куçреç, пăрахут команди членĕсем те — ку хушăра вахтăра пулманнисем — нумайăшĕ пычĕç. Вĕсем çеç

те мар, эпир пианино ҫинче параппан ҫапасран хăраса тухса тарнă лорнетлă хĕрарăм та каялла таврăнса пычĕ. Вара ҫак тĕрлĕ тĕслĕ пĕтĕм халăх чăваш каччипе тутар джигичĕ тĕнчери музыка классикĕсен произведенийĕсене ҫав тери пысăк ăсталăхпа вылянине калама ҫук кăмăлласа итлерĕ...

Анчах та музыка паҫăр асăннă ҫутă куҫлăхлă, чылаях шупкаланнă сухаллă ҫынна пуринчен ытла пăлхатнине сисрĕм эпĕ. Ванюкпа Юсуф пĕр-икĕ япала выляса парсанах вăл хăй малтан ларнă вырăнтан тăрса музыкантсем ҫывăхнерех пырса ларчĕ. Унтан, тепĕр вунă минутран, пуканне илсе аяккарах, Ванюкпа Юсуфăн пичĕсене курма май пур ҫĕре вырнаҫрĕ. Итленĕ чух вăл, музыкăна лайăхрах ҫăтасшăн пулнă пек, тек-текех ӳсĕркелесе пырне тасатрĕ, темшĕн куҫлăхне тыта-тыта тӳрлетрĕ, музыка чарăнсан, пуринчен хытăрах ал ҫупрĕ...

— Мĕнле ҫын ку? Мĕншĕн ун пекех пăлханать вăл?— тĕлĕнерех шухăшларăм эпĕ ун ҫинчен.

... Вăхăт вуниккĕ патнелле сулăнсан тин вĕҫлерĕҫ хăйсен концертне манăн тусăмсем. Пассажирсем татах та выляттарасшăнччĕ вĕсене, анчах Юсуф вĕсем ыйтнине хирĕҫ кăмăллăн кулса пуҫне тайрĕ те:

— Питĕ пысăк тав сире пирĕн концерта ăшă кăмăлпа итленĕшĕн, анчах та этем тени — ывăнакан япала... Ҫитменнине, вăхăт та чылая кайрĕ, ҫавăнпа та — ыр каҫ пултăр сире,— терĕ.

Эпир хамăрăн каютăна кайрăмăр. Ҫынсем те майĕпе саланчĕҫ.

Тепрер пилĕк минутран, ҫывăрма выртиччен кăштах уҫăлса ҫӳрес тесе, эпĕ палуба ҫине тухрăм.

Тулта — ăшă, тӳлек те ҫутă каҫ. Пăрахут сăмсинелле пырсан, куҫ умне ытармалла мар илемлĕ картин тухса тăчĕ. Пĕр енче, сылтăмра, ҫемҫе те хура симĕс кĕҫҫепе витĕннĕн туйăнакан ҫӳлĕ ҫăмламас тусем, вĕсен ҫийĕнче яп-яка, сенкер кĕрентерех пĕлĕт; тусемпе пĕлĕт сăнĕсем шыв ҫине ӳксе тĕкĕрти пек курăнса пыраҫҫĕ; сулахайра — вĕҫĕ-хĕррисĕр улăхсем тăсăлаҫҫĕ, вĕсем тăрăх утă капанĕсем пысăк хура пăнчăсем пек сапаланнă. Пирĕн умра, унта та кунта — хĕрлĕ, симĕс, шурă бакенсен ҫутисем шыв ҫинче выляса тăраҫҫĕ. Ҫак пĕтĕм илем ҫине пăхса тăрсан, чи чаплă художник-пейзажистсен картинисем аса килсе каяҫҫĕ. Анчах ку танлаштару темиҫе самантранах ҫухалать, мĕншĕн тесен вăл картинсем ҫин-

чи шăхлич калакан кĕтӳçсене, мăн кимĕсене вĕренсемпе туртакан халтан кайса çитнĕ бурлаксене пирĕн çул çинче пĕрехмай куранса иртекен çӳлĕ трубаллă заводсемпе, тулли баржăсене тăвалла ухлатса сĕтĕрекен вăйлă буксирсемпе ниепле те юнашар тăратма май килмест...

— Çук, çук,— тетĕн хăвна ху.— Пирĕн пурнăç сăнĕсем йăлтах урăхла халь. Пейзажсем те ĕлĕкхи мар... Вĕсене ӳкерсе кăтартма пире хамăрăн Левитансемпе Репинсем кирлĕ!

... Сасартăк палуба тăрах такам ман паталла утса пыни илтĕнчĕ. Умри улшăнсах пыракан картинсем çине пăхса, аялта шыв епле чашлатса пынине итлесе тăраканскер, эпĕ каялла çаврăнса пăхмарăм. Кĕçех ман çумма паçăрхи çутă куçлăхлă старик пырса тăрса палуба карлăкĕ çине чавсаланчĕ.

— Темле, çывăрас килмест...— терĕ вăл, кăштах тăхтасан.— Çанталăк ытла та лайăх кĕçĕр...

— Çанталăкĕ питĕ хӳхĕм çав,— çирĕплетрĕм эпĕ унăн сăмаххине.

— Ялта халĕ утă çулаççĕ...

Калаçу ăнмарĕ, татăлчĕ. Ялта халĕ утă вăхăчĕ пулнине эпĕ хам та пĕлнĕ, мана ун çинчен калани кирлĕ те пулман. Урăххи çинчен калаçма сăмах тупăнмарĕ... Вара эпир чылай вăхăт ним шарламасăр, кашни хăйĕн шухăшĕсене шухăшласа, ним тĕлсĕр пăхса тăтăмăр. Старик пирус чĕртсе ячĕ, куçлăхне хывса шăлса тăхăнчĕ. Унтан тăрук ман еннелле çаврăнса тăчĕ те:

— Итлĕр-ха... Çав музыкантсем — сирĕн юлташăрсем-и вĕсем?— тесе ыйтрĕ.

— Манăн юлташсем-çке. Ма вара?

— Так, ахалех... Ăçта вĕреннĕ вĕсем ку ĕçе?

Эп каласа патăм. Старик темшĕн тарăннăн сывласа илчĕ.

— Н-да, самана...

«Мĕнле этем вара ку?— шухăшларăм эп ун çинчен тепĕр хут, вăл паçăрхи концерт вăхăтĕнче хăйне еплерех тыткаланине аса илсе.— Мĕн кирлĕ ăна?»

Вăл пăртак шухăша кайса тăчĕ те татах ыйтрĕ:

— Малтан камсем пулнă вара вĕсем?

— Малтан-и? Никам та мар... Ялти ачасем кăна,— терĕм эпĕ, унăн ыйтăвне тӳррĕн ăнланса.

— Вăл мар-ха... Эпĕ урăххи çинчен пĕлесшĕн. Вĕсен

ашшĕ-амăшĕсем камсем пулнă? Вĕреннĕ çынсем мар-и? Тен, пуянскерсем пулнă?

Старик шухăшне эпĕ ăнлантăм та, «çук, апла мар», тесе пуçа пăркаларăм.

— Сирĕн питех пĕлес килет пулсассăн...

— Пĕлес килет çав, питĕ пĕлес килет!— мана каласа пĕтерме те памарĕ старик.— Çав тери интереслĕ-ха вăл маншăн...

— Вĕсем иккĕшĕ те тăлăхскерсем пулнă,— кала пуçларăм вара эпĕ.— Сĕрмекупăс калаканни — тутар ачи— вунтăватă çула çитиччен пĕр суккăрпа вокзалсемпе пристаньсем, ташаяксемпе* сапантуйсем тăрăх çӳренĕ. Суккăрĕ хуткупăс каланă, ку — сĕрмекупăс. Хăйсене çавăнпа тăрантаркаласа пурăннă вĕсем... Пĕррехинче, Самар енчен пăрахутпа хăпарнă чух, вĕсене тутарсен музыка шкулĕнче вĕрентекен икĕ преподаватель тĕл пулнà та çак ачапа шкула вĕренме кĕресси çинчен калаçма тытăннă. Ку килĕшнĕ. Леш старикĕ те хирĕçсе тăман, санăн пĕтĕм пурнăçу — малта, май килнĕ чух епле пулсан та вĕренме тăрăш, çын пулăн, тенĕ. Çавăн хыççăн ку ача тăвата çул хушши Хусанта вĕреннĕ, халь ĕнтĕ икĕ çул Ленинградра вĕренет...

— Тепри тата?

— Тепри — чăваш ачи, унăн биографийĕ те çав манерлех... Хăйĕн тăван амăшĕ пулман, вăл амаçурипе пурăннă. Ну ĕнтĕ, амаçурипе пурнăç еплелле пулни каламасăрах паллă: паян тутă та ыран выçă, паян çупкă та ыран тапкă. Çавăн пирки ку ача килтен пăрăнарах панă, пуринчен ытларах килте мар, ялти тĕрлĕ кĕсле-тăмрасем тăвакан пĕр уксак старик патĕнче пурăннă. Лешĕ ăна хăйпе ĕçлеме хăнăхтарнă, çав хушăрах, хăй пĕлнĕ таран, музыкăна та вĕрентнĕ. Пурăна-киле, хайхискер, ку ача старикрен хăйĕнчен те irттерме пуçланă: паян мĕнле кĕвĕ илтнĕ — ăна ыран калама та пултарнă. Илтнĕ кĕвĕсене калани çитмест, хăй ăссĕн çĕнĕ кĕвĕсем шухăшласа кăларма пуçăннă... Тепрер икĕ çултан вара, ялти комсомол ячейки пулăшнипе, вăл Шупашкара кайса хăй юратнă ĕçе вĕренме вырнаçнă. Унтан, Юсуф пекех, Ленинграда, консерваторине кĕнĕ. Çапласкерсем пулнă вĕсем...

Эп каласа панине çав тери тимлĕн, тарăн шухăша

---

* *Ташаяк* — ярмарка (тутар сăмахĕ).

кайса итлесе тăнă старик аллинчи çунса пĕтнĕ пирус тĕпне карлăк урлă Оканалла ывăтрĕ те, мана куçран пăхса:

— Вĕсен пĕтĕм историйĕ те çав кăна-и вара?— тесе ыйтрĕ.

— Мĕн пултăр тата урăх? Акă, тепĕр ик-виç çул иртет те, вĕсем консерваторинчен вĕренсе тухса пысăк ăстасем пулаççĕ... Питĕ анлă çул уçăлать вĕсен умĕнче...

Старик нимĕн те каламарĕ. Чылай вăхăт пăрахут сăмси çурса пыракан шыв шавланисĕр тата трюмра, машин пайĕнче, хăватлă двигательсем хуллен кĕрленисĕр пуçне нимĕнле сас-чĕв те илтĕнмерĕ.

— Н-да... Самана...— терĕ унтан старик каллех.

— Мĕскер апла?— ыйтрăм эпĕ.

— Самана урăхла, пурнăç пачах расна, тетĕп... Ĕлĕкхипе танаштарсан, мĕн каласси пур!..

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ,— килĕшрĕм эпĕ, анчах вăл мĕн каласшăн пулнине ăнланаймарăм-ха.

— Эсир халь çеç каласа пани юмах евĕрлĕ вĕт вăл,— терĕ старик малалла.— Анчах та эсир ак мана итлĕр-ха, эп сире епле истори каласа парам... Пуçланасса вăл эсир каласа кăтартнă историсем майлах пуçланать, анчах вĕçĕ... вĕçĕ вара пачах та урăхла унăн. Кăмăлăр пур-и?

— Тархасшăн ара, итлетĕп,— терĕм эпĕ.— Пурпĕр ыйхă килмест тата пăчă каютăна кĕме кăмăл та çукрах...

Эпир пăрахут сăмсинчи хыçлă тенкел çине лартăмăр.

— Пĕр вăтăр çул ĕлĕкрех, япун вăрçи те пуçланманччĕ-ха ун чух, эпĕ хальхи пек заводра ĕçлемен, ялта пурăннă,— тесе пуçларĕ старик хăйĕн калавне.— Пирĕн ялта, вăл вулăс центрĕ пулнипе, эрнекун питĕ пысăк пасар пулатчĕ, тĕрлĕ çĕртен купцасем, усламçăсем нумай пырса тулатчĕç. Хамăр ялта та пурччĕ вĕсем. Хальхи майлă каласан, интеллигенци те пулнă пирĕн: становой, вăрман улпучĕ, икĕ учитель, пуп таврашĕсем виççĕн-тăваттăн... Пĕр сăмахпа, пирĕн ял пуян та чаплă ял тесе шутланнă. Анчах, тĕрĕссипе каласан, пуянсем ялта çич-сакăр кил çеç пулнă, ыттисем вара... хăшĕсем çĕнĕ тырра çитиччен аран-аран сиплешкелесе пынă, теприсен раштаврах çимелли пĕтнĕ. Ун пеккисем ытларах пулнă. Ну, вĕсен пурнăçĕнче нимĕнле ырлăх та пулманнине хăвăрах чухламалла ĕнтĕ эсир, вĕсем темле тăрăшсан та, темле тертленсен те «ыр çынсем» çывăхне те

пырайман, вёсен пурнăçĕнчи хуть те епле ĕмĕтсем те татăлса пынă...

— Çак пирĕн «пуян та чаплă» ялта, çырма хĕрринчи пĕр пĕчĕкçеç, тĕтĕмпе пăнтăхса ларнă хура пӳртре Улемпи ятлă ик ачаллă тăлăх арăм пурăнатчĕ. Унăн упăшки пĕр хуçа патĕнче вăрман касса пурăннă чух юман айне пулса вилнĕ. Ачисене епле те пулин выçтарса вĕлерес мар тесе, Улемпи пĕрмай пупсемпе становой патĕнче лăш курмасăр ĕçлетчĕ... Çавăн пирки унăн хăй ачисене пăхма та вăхăт юлман, ачисем хăйсем тĕллĕнех ӳснĕ, мĕн тăвас килнĕ — çавна тунă, никам та чаракан пулман вĕсене...

— Çапла пурăннипе, Улемпин аслă ачи — Петруш, тетчĕç ăна — вунпилĕк çулсене çитнĕ çĕре сĕрмекупăс калама вĕреннĕ. Таçта вĕреннĕ ăна вăл, темле вĕреннĕ — пĕлместĕп, анчах та тĕрлĕрен тĕрлĕ çемĕсем калатчĕ, çеммисене тĕлĕнмелле хитре кăларатчĕ... Паллах ĕнтĕ, шкулта вĕренменскер, вăл сирĕн юлташăрсем пек нотăсем çине пăхса мар, ахалех калатчĕ, анчах çапах та лайăх тухатчĕ хăйĕн, пурте юрататчĕç унăн музыкине. Хăй те каçсах каятчĕ çав уншăн. Сĕрмекупăспа вăхăт иртternĕшĕн амăшĕ хăйне яланах вăрçнă пулин те — пăрахмастчĕ ăна, кăшт май пулсанах çавăрса тытатчĕ. Тепĕр чухне, каç-каç, унăн тантăшĕсем урамра тĕрлĕрен вăйăсем вылятчĕç, анчах Петруш ăçта та пулин, халăхран аяккарах — е ял хыçĕнчи ката çумне, е арман пĕви хĕррине кайса ларатчĕ те таттисĕр макăртатчĕ хăйĕн кивĕ сĕрмекупăсне...

— Пурăна-киле çав Петруша сĕрмекупăс калама ĕçкĕсене, туйсене илсе çӳреме пуçларĕç. Малтанах ӳсĕрсем патне каясшăн пулман вăл, вĕсенчен йĕрĕннĕ, тен, хăрани те пулнă пулĕ, анчах амăшĕ ăна ниçтан та пĕр пус ĕçлесе тупмастăн тесе макăра-макăра ятлаçнипе, унăн ирĕксĕрех килĕшмелле пулнă. Пуянсен пĕр ĕçки те иртместчĕ вара Петрушсăр, виçшер кун тытатчĕç хăйсем патĕнче. Ну, уншăн ăна парсан паратчĕç пĕр аллă пус...

— Чылай вăхăт иртрĕ çапла... Пĕрре, çулла пуçламăшĕнче, пирĕн ялти учитель патне урăх ялсенчи иквиç учитель хăнана пынă пулнă. Çавсенчен пĕри, каçалапа арман пĕвине шыва кĕме кайсан, Петруш сĕрмекупăс каласа ларнине илтнĕ те ун патне пырса калаçма пуçланă, хăйĕн çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе ыйтса пĕлнĕ. Вăл ыйтнипе Петруш тата темиçе çемĕ каласа парсан, учитель хăни

ăна вĕренме кайма кирли çинчен, вĕренсен вăл чăн-чăн ăста музыкант пулма пултарни çинчен ăнлантарма тытăннă. Кĕскен каласан, Петруша пит те хаваслантарса янă вăл, çавăнтан вара Петруш пĕр вĕренме каясси çинчен кăна шухăшласа пурăнма тытăннă...

— Çимĕксенчи карусельсенче, ĕçкĕсенче, ăçта май килнĕ — çавăнта сĕрмекупăс каласа çӳресе, Петруш çăвĕпех укçа пухнă. Çуртыррисем вырас вăхăт çитсен вара, кушиле пĕр çăкăрпа вунă-вуник çăмарта пĕçерсе чиксе, купăсне хутаçпа çĕклесе, хайхи учитель хăни панă адрес тăрăх килтен тухса кайнă. Вăл ăçта, мĕнле хулана кайса çӳренине халь астусах çитейместĕп,— Хусанччĕ пулас,— анчах та... раштавччен ик-виç эрне малтан Петруш киле каялла таврăнса çитрĕ. Хальхи пекех астăватăп: эп ăна каçалапа урампа иртсе пынине куртăм. Аран-аран палласа илтĕм хăйне... Тумтирĕ — йытăсем туллана евĕрлĕччĕ, пуçне темле çĕтĕк шаль таткипе чĕркенĕ, пĕр уринче — тăпăлса тухнă çăпата, тепринче — çăм калуш пекки. Çурăмĕ хыçĕнчи хутаçĕнчен сĕрмекупăс курăнса пырать. Тĕлĕннипе пĕр сăмах та чĕнеймерĕм эп ăна, тепĕр тесен унăн хăйĕн те çынсемпе калаçас кăмăлĕ пулман пулĕ, вăл сивĕпе хутланса, курпунне кăларса анаталла утса кайнине куçран çухаличченех пăхса тăрса юлтăм... Кайран пĕлтĕм — ял хушшинче çавăн пек сăмах сарăлчĕ: вăл хăй ăçта çитес тенĕ çĕре çитнĕ иккен, хăй кĕрес тенĕ шкула экзамен та чиперех панă, пĕр ик-виç эрне пек вĕреннĕ, анчах, вĕреннĕшĕн тӳлеме укçа пулманнипе, ăна шкултан кăларса янă... Хуларан вара вăл пĕр пус укçасăр, пĕр татăк çăкăрсăрах тухса кайнă та, çул çинче унта-кунта ĕçлекелесе, тепĕр чух «христаради» ыйтса илсе, виççĕр çухрăм ытла çуранах килнĕ...

— Çав хĕлте Петруш килтен ниçта та тухмарĕ. Сайра хутра çеç, хăйне пыра-пыра чĕнсен, унта-кунта кайкаласа килетчĕ. Ку та укçашăн кăна пулнă. Хăй ĕнтĕ калама та çук хуйхăратчĕ курăнать, пĕрмай салху çӳретчĕ, куçĕ путса анса ларнăччĕ, çынсемпе питех те калаçмастчĕ, ялан пĕччен пулма тăрăшатчĕ.

... Вăрăм хĕл иртрĕ те, каллех çулла пулчĕ. Труйскире пирĕн — престол, ялта пысăк çимĕк пулать. Çак çимĕк тĕлне становой патне Атăл тăрăхĕнчи пĕр хулара лавкка тата трахтир тытса пурăнакан пиччĕшĕ килнĕ-

мĕн. Ну ĕнтĕ, пиччĕшĕ килнĕ ятпа становой хăнасем пухнă, ĕçкĕ пуçласа янă, хăнисене ташлатма Петруша чĕнтернĕ. Икĕ кун тĕпĕртетнĕ вĕсем, Петрушĕ купăс каласа халтан кайсах çитнĕ, тетчĕç... Анчах становой пиччĕшне Петруш çавăн чухне кăмăла кайнă пулас, вăл ăна хăй патне, хулана чĕнме пуçланă. Мĕнлерех калаçса татăлнине пĕлместĕп, анчах та Петруш леш трахтир хуçи хăйне вĕренме пулăшма пулнипе çеç кайма килĕшнĕ, тет. Тепĕр ик-виç кунтан тухса та кайнă вара вĕсем...

Анчах та пĕрре ăнманни — ăнмастех çав вăл. Çип çинçе тĕлтен татăлать, теççĕ...

Тепĕр тăват-пилĕк уйăхран Петруш каллех киле таврăнса çитрĕ. Каллех малтанхи евĕрлех, каллех çуран, пĕр сĕрмекупăсĕпе çеç... Мĕн пирки пуль, тетĕр эсир? Пуян çын чухăна этем вырăнне хуман пирки!.. Çав становой пиччĕшĕ ăна хăй патне илсе çитерне те ним йĕркесĕр, сывлăш çавăрма та памасăр ĕçлеттерме тытăннă иккен. Кăнтăрла кунĕпех кил таврашĕнче тăрмашнă вăл — вутă çурнă, шыв йăтнă, урай çунă, тем те пĕр, каçхине вара çурçĕр иртичченех, ӳсĕрсем саланса пĕтиччченех трахтирте сĕрмекупăс калаттарнă ăна... Вĕренесси çинчен шухăшламалли те пулман. Петруш хăйĕн хуçине кун çинчен аса илтерсенех, лешĕ ăна: «Ĕçле эсĕ лайăххрах, ан ӳркен, ĕçлесен ман патра ахаль те выçă вилес çук эсĕ!»— тесе хунă çеç. Паллах, кун хыççăн Петрушăн кăмăлĕ пĕтĕмпех хуçăлнă, ним тума та пĕлмен вăл, каллех хуйха ӳкнĕ... Анчах хуçипе хытăрах калаçма хăюлăх çитеймен пулмалла çав унăн.

— Çав хушăрах тата кĕтмен инкек сиксе тухнă: хуçа арăмĕн сасартăк ылтăн сехет çухалнă. Тĕрĕссипе, сехетне хуçан ывăлĕ, тăмсайрах гимназист, картла выляса янă, тет, анчах, сехет çукки палăрсан, айăпне пĕтĕмпех Петруш çине йăвантарнă. Пирĕн килте ют çын никам та пулман, унсăр (Петрушсăр ĕнтĕ) сехете урăх пĕр çын та илме пултарайман, тенĕ. Вара трахтир хуçи, вырсарни майĕпе чылай сыпнăскер, Петруша ним майсăр хĕнесе пĕтерсе кăларса ывăтнă. Тек ниçта та кайма çуккипе, мĕскĕнĕн каллех киле таврăнмалла пулнă...

... Киле çитсенех вăл питĕ хытă чирлесе ӳкнĕ. Чирленĕ чух вара калама та çук хытă аташрĕ тет. Анран тухса кайса, текех хăй айăплă марри çинчен кăшкăрашрĕ тет... Пĕр эрне пек çавнашкал асапланнă хыççăн унăн чĕри ĕмĕрлĕхех тапма чарăннă...

— Çапла вĕçленчĕ вара пирĕн çамрăк музыкант Петрушăн телейсĕр пурнăçĕ, çапла пĕтрĕ унăн таланчĕ,— терĕ старик, ассăн сывласа илсе.— Халь пулсан, санăн юлташусем пекех вĕренсе çын пулатчĕ ĕнтĕ вăл, анчах уи чухнехи самани вĕт... э-эх! Мĕн каламалли пур ĕнтĕ ун çинчен! Аса илме те йывăр...

Старик калама чарăнчĕ. Унăн калавĕ мана çав тери пăлхатса ячĕ, эпĕ чылайччен ним чĕнмесĕр, йывăр шухăша кайса лартăм. Хам пурнăçра илтнĕ çавăн евĕрлĕ хурлăхлă историсем татах аса килчĕç. Петруш пеккисем сахал мар пулнă вĕт; чухăнсем хушшинчен тухнă нумай талантлă çамрăксем, хăйсен пултарулăхне аталантарма май çуккипе, пӳртрен раштав сиввине илсе тухнă чечексем пекех хăрса ларнă...

— Халь мĕске-ер!.. Хальхи çамрăксем мĕне вĕренес тенĕ — çавна вĕренме пултараççĕ. Телейлĕ вĕсем!— тесе хучĕ те старик, хуллен тăрса утрĕ.

Унăн сăмахĕсем тăруках ман шухăшсен юхăмне улăштарса ячĕç.

— Çапла, юлташ, çапла! Тĕрĕс калатăн эсĕ! Эпир телейлĕ çав, пирĕн телей халĕ хамăрăн алăра,— тесе калас килчĕ манăн ăна, анчах та вăл палуба çинчен кайнăччĕ ĕнтĕ.

Эпĕ пĕчченех юлатăп та шухăшсемпе тăван Шупашкара вĕçсе ӳкетĕп. Мана уявсем вăхăтĕнчи демонстрацисем аса килеççĕ, эпĕ Хĕрлĕ площадьри трибуна умĕпе савăнăçлăн юрласа иртекен çамрăксене куратăп. Вĕсем хушшинче çамрăк музыкантсемпе художниксем, артистсемпе юрă ăстисем, сăвăçсем нумай... Мĕн чухлĕ иксĕлми хаваслăх вĕсенче, мĕн чухлĕ вĕресе тăракан вăй! Вĕсем пурте ирĕклĕ çĕршывăн телейлĕ ачисем, совет самани ӳстернĕ чечексем...

1933,
Мускав.





## ЭТЕМ ТЕЛЕЙĔ

— Итле-ха, корреспондент юлташ, эсĕ çитес вырсарникун вăхăт тупса пирĕн района пыма тăрăш-ха,— терĕ мана Шупашкар урамĕнче ăнсăртран тĕл пулнă «Çутă çул» колхоз председателĕ Иван Васильевич Машкин.

Эпĕ вĕсен колхозĕнче пĕр виçĕ эрне маларах çеç, унта гидростанцие ĕçе янă кун, пулнăччĕ те, халĕ вăл мана каллех хăйсем патне чĕннинчен кăштах тĕлĕнтĕм.

— Эсĕ ку хушăра тата мĕн те пулин туса лартмарăн пулĕ те?

— Çук, эпĕ сана хамăр колхоза чĕнместĕп, эсĕ района пыр, район центрне...

— Мĕн пулать вара унта? Пĕр-пĕр канашлу-и, пуху-и?

— Çук, пуху таврашĕ мар. Колхоз лашисем ăмăртаççĕ. Бега пулать эппин, колхоз урхамахĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ,— ăнлантарса пачĕ Иван Васильевич.

— О! Ку питĕ аван япала! Пыратăп!— терĕм эпĕ.

— Станцире ансан, малтан пирĕн пата кĕр эсĕ, пĕрле кайăпăр...

Эпир калаçса татăлтăмăр та пĕр-пĕрне алă парса уйрăлтăмăр. Тепĕр виçĕ кунтан вара, ирхине пĕр вунпĕр

сехетре, эпӗ «Ҫутӑ ҫул» колхоза ҫитрӗм. Иван Васильевич тӗлне лаша кӳлсе тӑратнӑччӗ ӗнтӗ.

— Сана кӗтсех ҫак тарана юлтӑм эпӗ,— терӗ председатель, эпир унпа тӑрантас ҫине вырнаҫса ларсан.— Ыттисем пирӗн ирех тухса кайрӗҫ. Васкас пулать, ӗлкӗреймӗпӗр тата...

Пӗр хушӑ эпир калаҫмасӑр пытӑмӑр. Уя тухсан тин сӑмах хускалса кайрӗ пирӗн.

— Ӑмӑртӑва эсӗ ху та хутшӑнатӑн пулӗ?— ыйтрӑм Машкинран.

Вӑл ман ҫине хулпуҫҫи урлӑ пӑхса ҫемҫен кулса илчӗ.

— Хам мар ӗнтӗ, лашасем...

— Ну, вӑл паллах... Миҫе лаша кӑларатӑн?

— Иккӗ.

— Наездникӗсем мӗнле-ха санӑн, шанчӑклӑ-и? Ун пек чухне жокейсенчен нумай килет вӗт, лашана чипер тытса пырса чуптарма пӗлнинчен...

— Тӗрӗс. Анчах та манӑн вӑл енчен шанчӑклӑ-ха. Иккӗшӗ те кавалерист пулнӑскерсем, пӗри ку вӑрҫӑра пули-пулми ҫӗрте мар, Доватор генерал патӗнчех служить тунӑ.

— Апла пулсан, юрать хуть...

... Район сали хыҫӗпе пысӑках мар шыв авкаланса юхать, унӑн сулахай енче таҫта ҫитиех улӑх сарӑлса выртать. Ҫав тип-тикӗс улӑхра халӗ лашасем чупмалли «ипподром» тунӑ. Халӑх тем чухлех пухӑннӑ кунта. Ватти те, вӗтти те, каччи те, хӗрӗ те пырса тулнӑ. Вырсарникунсенче ҫак район центрӗнче пысӑк пасар пулать те — ҫав пасарти халӑх паян пӗтӗмпех улӑха аннӑ пулас. Ҫынсем пӗчӗкҫеҫ хӗрлӗ ялавсемпе паллӑ тунӑ ҫул хӗррипе кӗпӗрленсе тӑраҫҫӗ, кӑшт аяккарахра вара, сылтӑмарах, ӑмӑртма илсе килнӗ лашасем тӑраҫҫӗ. Хӑшӗсене кӳлнӗ те, «юн вылямалӑх» унталла-кунталла чуптаркалаҫҫӗ.

— Эсӗ трибуна ҫине хӑпар, эпӗ ҫавӑнта кайса пӑхам, пирӗннисем мӗнле унта...— лашасем еннелле тӗллесе кӑтартрӗ Иван Васильевич.— Ҫыннисем шанчӑклӑ пулсан та, тӗрӗслени нихҫан та кансӗрлемест...

Эпӗ тӑрантас ҫинчен анса улӑх варринчи трибуна патнелле утрӑм. Кунта районти пур руководительсем те пухӑннӑ, ялхуҫалӑх министерствинчен те пур иккен. Райисполком председателӗ, хӗрлӗ сӑн-питлӗ лутрарах

самăр çын, аллипе лашасем чупмалли çул çинелле кă-тартса, рупор витĕр кăшкăрса темле распоряженисем парать.

— Ăмăртаканнисем нумай пулаççĕ-и? — ыйтрăм эпĕ хампа юнашар тăракан милици капитанĕнчен.

— Вунултă колхозран, çирĕм тăватă лаша,— терĕ вăл мана.— Вунтăваттăшĕ кӳлĕнсе чупаççĕ, саккăрă-шĕ — юланпа. Интереснă пулма кирлĕ-ха, вăрçă хыççăн пирĕн районта кун пекки пирвайхи хут пулать...

— Курăпăр.

Ирхине çанталăк сулхăн та пĕлĕтлĕччĕ, темле ви-тĕрех тивекен çил вĕретчĕ, халĕ пĕтĕмпех уяртса ячĕ, хĕвел çуллахи пекех ăшшăн пăхма пуçларĕ, çил те лăп-ланчĕ.

— Ку питĕ аван-ха,— терĕ райисполком председате-лĕ, тӳпенелле пăхса илсе.— Эпĕ çумăр пуласран хăра-наччĕ, пĕтĕм халăха тартса пĕтеретчĕ вăл пирĕнне... Кун пек япаласене халăхсăр иртерни — мĕн усси вăл? Пуçлар пулĕ...

— Пуçлас, пуçлас,— пуçĕпе сулса илчĕ халь çеç три-буна çине хăпарнă райком секретарĕ, сар сăран пальто тăхăннă платна çын.— Вăхăта сая ярас мар.

— На ста-арт!..

Трибуна айĕнче пысăк тимĕр татăкне çапса чанлат-тарни илтĕнчĕ. Çӳлте тăракансем пурте сехечĕсене кă-лара-кăлара тĕрĕслеме тытăнчĕç. Эпĕ те сехете кăларса пăхрăм: шăп пилĕк минутсăр вунвиçĕ сехет.

Ăмăртса чупма кӳлнĕ лашасене трибуна тĕлĕнчи «старт» тесе çырнă хĕрлĕ пусма патнелле илсе пыма пуçларĕç. Пĕр мăшăр, ик мăшăр, виççĕ... Лашисене пĕ-рине те хурламалла мар вара — пурте çăмарта пек мăн-тăр, мăйĕсем хур ақисен пекех, хăйсем ниепле те вырăн-та тăма пĕлмеççĕ, малти урисемпе кукалеççĕ, пуçĕсене ывăтаççĕ... Пăхма кăмăллă!

— Пуçлатпăр!— рупор витĕр кăшкăрчĕ райисполком председателĕ.— Пĕрремĕш мăшăр — «Çĕнĕ пурнăç» кол-хозпа Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз лашисем... Впере-ед... марш!

Вăл аллипе сывлăша каснă пек сулса ячĕ, аялта, икĕ юпа çумĕнче тăракан икĕ çын та çав самантрах алли-сенчи флажоксемпе сулчĕç. Юпасем хушшипе чупмалли çул çине йăм-хура икĕ лаша ухă йĕпписем пек ыткăнса тухрĕç...

Амăрту пуçланчĕ. Пĕтĕм халăх пĕринчен тепри иртме тăрăшса чупакан урхамахсем çинелле, сывлăш çавăрмасăр тенĕ пек, тинкерсе пăхать. Хăшĕ мала тухĕ? Хăшин халăх умĕнче намăс курмалла пулĕ? Калама хĕн, мĕншĕн тесен иккĕшĕ те халлĕхе пĕр пекех çивĕч чупаççĕ. Акă ĕнтĕ, вĕсем инçетре...

Председатель стартран тепĕр мăшăр кăларса яма хушать. Кăшт тăхтасан — виççĕмĕш мăшăр ыткăнса тухать...

— Лайăх чупаççĕ вĕт, э?— тет ман хăлхаран тахăшĕ.

Йăпăрт кăна çаврăнса пăхатăп та Иван Васильевич Машкина куратăп.

— Тĕрĕс, питĕ лайăх чупаççĕ... Санăн хăвăн лашусем час тухаççĕ-и-ха тата?

— Темшĕн, пире чăн юлашкинчен ямалла тунă,—терĕ вăл.— Ытла малтанах намăс кăтартас мар, тенĕ пулмалла...

Анчах та эпĕ вăл чеен пăхса кулнине сиссе юлтăм.

...Малтан кăларса янă мăшăр финиш патнелле çывхарнă май халăх çав тери шавлама тапратрĕ, мĕншĕн тесен пĕр лаши самаях кая юлма пуçларĕ. Трибуна çинчисем те пăлханса калаçма, шавлама, тавлашма тытăнчĕç.

— Хăшин ку? Хăш колхозăн?

— «Çĕнĕ пурнăçăн» пулмалла...

— Çук, Ленин колхозĕн. Куратăн, малтинчен çӳлĕрех.

— Çӳлĕрех, анчах та юлать хăй.

— Чим-ха, чим, çитме пуçларĕ!..

— Çитет!

— Асту, иртсе те каять акă...

— Çук ĕнтĕ, пулаймасть пулĕ халь тин!

— Çапах та, хăшин юлать-ха?

— Ленин колхозĕн,— тавлашăва тăруках татса пачĕ бинокльпе пăхса тăракан милици капитанĕ.— Çыннине паллатăп, колхозри комсорг вăл...

Финиш патне çитесси пĕр виççĕр метр пек юлсан, хайхи чылаях кайра пыракан çӳлĕ лаша малта чупаканнипе танлашрĕ. Вĕсем халĕ пĕр тан — пуçпа пуç пыраççĕ. Халăх вĕсем çине пĕр сас кăлармасăр, шак хытса кайнăн пăхса тăрать...

Ёнтӗ финиш ҫывӑхрах. Юлсан юлчӗ пулӗ 100—120 метр. Анчах халь ҫеҫ малтине хӑваласа ҫитнӗ лаша каллех юлма пуҫларӗ.

— Ҫук, пулмасть ёнтӗ унӑн мала тухасси,— терӗ тахӑшӗ.

— Паллах, юлчӗ,— хаштах сывласа ярса килӗшрӗ унпа тепри.

Ҫапах та, хӑшӗ мала тухасси ҫинчен татсах калама иртерех пулнӑ-мӗн. Финиша ҫитесси пурӗ те пӗр аллӑ метр юлсан, Ленин колхозӗн лаши малтине тепӗр хут хӑваласа ҫитрӗ те ҫавӑнтах унран ҫур кӗлетке таран мала тухрӗ.

— А-а-а!— кӑшкӑрса ячӗ халӑх.

— Хытӑрах хӑвала!..

— Яра пар, а-а-а!

Унта-кунта алӑ ҫупнисем илтӗнчӗҫ. Халӗ ёнтӗ пӗтӗм ӗҫе юлашки темиҫе самант татса парать. Хӑшӗ лайӑхрах усӑ курса юлӗ унпа?

Пӗр секунд, виҫҫӗ, пиллӗк... Финиш — вунӑ метрта. Ленин колхозӗн лаши пӗтӗм кӗлеткипе мала тухса ҫитрӗ. Тата ик-виҫӗ секундран вӑл, икӗ юпа хушшине карнӑ хӗрлӗ хӑюва кӑкрипе пырса ҫапӑнса татрӗ те малалла вӑркӑнса иртсе кайрӗ...

— А-а-а! — савӑнӑҫлӑн, хавасланса кӑшкӑрса ячӗ халӑх каллех, шӑпа́р-шӑпӑр-шӑпӑр алӑ ҫупса.

— «Ҫӗнӗ пурнӑҫӑн» икӗ секунд кая юлчӗ,— тесе пӗлтерчӗ милици капитанӗ, аллинчи секундомерӗ ҫине пӑхса.

— Пӗр сӑмахпа каласан, иккӗшӗ те маттур!— терӗ райисполком председателӗ, ҫӑмӑллӑн сывласа илсе.

— Н-да, хурламалла мар...

— Питӗ аван!

Кӗҫех финиша иккӗмӗш мӑшӑр ыткӑнса ҫитрӗ, унтан виҫҫӗмӗш, тӑваттӑмӗш... Вӗсем ҫитсе пынӑ май ҫул ҫине ҫӗнӗрен ҫӗнӗ мӑшӑрсем тухса вӗҫрӗҫ. Юлашкинчен, райисполком председателӗ рупор витӗр:

— «Хӗрлӗ ялавпа» «Ҫутӑ ҫул» колхозсен лашисем каяҫҫӗ!— тесе пӗлтерчӗ.

Чупмалли ҫул ҫине эпӗ пӗрре кӑна мар ҫӳресе курнӑ тимӗр-кӑвак ӑйӑрпа кӑшт ҫӳхерех, питӗ илемлӗ ҫӳрен лаша тухрӗҫ. Манпа юнашар тӑракан Иван Васильевич йӑпӑр-япӑр пирус кӑларса хыпрӗ. Унтан шӑрпӑк тытса ҫутрӗ, анчах шӑрпӑкӗ ҫавӑнтах сӳнчӗ, тепре ҫут-

рĕ — пирусĕ каллех чĕрĕлеймерĕ. Вара вăл пируса лутăркаса аялалла печĕ.

— Пăлханать...— шухăшларăм эпĕ.— Паллах ĕнтĕ, намăс курасран шикленет!

Анчах пăшăрханмалли нимĕн те курăнмарĕ-ха. Тимĕр-кăвак ăйăрпа çӳрен лаша пĕр пекех хитре чупаççĕ. Хăшĕ мала тухасси çинчен халлĕхе ним калама та çук-ха...

Лашасем стартран пĕр çур километр пек кайсан, Иван Васильевичпа иксĕмĕр хушăмăра такам ним чĕнмесĕр-ыйтмасăр, хулпуççипе хирĕнсе, йывăррăн сывласа кĕрсе тăчĕ. Мана вăл карлăк çумне хĕстерсех лартрĕ, çитменнине тата ура çине пусрĕ.

— Чимĕр-ха, юлташ... мĕн эсир кун пекех...— терĕм ăна эпĕ.

Ман еннелле «Çутă çул» колхозра пĕркун хама ăйăрпа илсе çӳренĕ сарăрах сухаллă старик пăхса илчĕ.

— Каçарăр...— терĕ вăл айăпа кĕнĕн, хĕсĕкрех кăвак куçĕсене мăчлаттарса.— Аялтан питĕ япăх курăнать, анчах манăн курса тăмасан юрамасть... Пирĕн «Çилçунат» чупать-çке халь...

— Пĕлетĕп.

Иван Васильевич ăна сасăранах палларĕ пулмалла, пуçне ун еннелле çавăрмасăрах ыйтрĕ:

— Кӳлнине лайăх тĕрĕслерĕн-и, Антип Петрович?

— Пурте йĕркеллĕ, Иван Васильч. Çĕр сухрăм чупсан та, ним те пулас çук!

Старик пирĕн хушша лайăхрах вырнаçса карлăк çине чавсаланчĕ те, инçетрен инçете ыткăнса пыракан лашасем çине куç илмесĕр пăхса, хытнă пек пулчĕ...

Темиçе минутран лашасем трибуна еннелле килме пăрăнчĕç. «Çилçунат» çӳрен лашаран чылай малта пычĕ, анчах, кăшт тăхтасан, лешĕ ăна майĕпе хăваласа çитме пуçларĕ. Çакна кура, пирĕн Антип Петрович палăрмаллах пăлханма тапратрĕ. Лашасене самантлăха та куçран вĕçертмесĕр, вăл, çак трибуна çинче пĕр-пĕччен пулнă пек, хăй тĕллĕн калаçса тăчĕ.

— Эккей, пире хăваласа çитесшĕн тата, упăте! Ан та тапаçлан пустуй, пурпĕр хевтӳ çитеймест...

Анчах çӳрен лаша «Çилçуната» çитсех пырать. Антип Петрович, лаша вырăнне хăй чупнă пек, хул калакĕсене хăвăрт-хăвăрт выляткаласа илчĕ. «Хăвăртрах, хă-

вăртрах, ак çапла!»— тесшĕн пулчĕ пулмалла ĕнтĕ вăл хăйсен лашине.

Çак вăхăтра «Çутă çулăн» наездникĕ сасартăк йăнăш туса хучĕ. Пĕр пек тикĕс, вăрăммăн юртса чупакан лашана вăл тилхепипе кăрт-карт турткаларĕ те, лаша тăруках сикме тытăнчĕ. Анчах та, саккун тăрăх, ăмăртура лашана сиккипе яма юрамасть, юртăпа çеç чуптармалла. Наездник ку йĕркене пĕлнех ĕнтĕ, çавăнпа та вăл лашана юртă çине куçарма хăтланса пăхрĕ, çав хушăрах çӳрен лаша тимĕр-кăвак ăйăртан вăшт кăна иртсе кайрĕ...

Пĕтĕм халăх шавласа, ахăлтатса илчĕ. Антип Петрович вара, сисмен хушăра хăйне такам айăкĕнчен пырса чышнă пек, тăрук йынăшса ячĕ.

— О-ой! Мĕн хăтланчĕ ку эсрел! Ой, пулать те-çке ухмах...

Вăл икĕ аллипе икĕ питçăмартине тытса лартрĕ.

— Вăт каттăршни, вăт шуйттан кĕвенти!.. Мĕн тума турткаларĕ-ха вăл ăна, мĕн тума? Ы-ых, сана-а!..

— Ан палкаса тăр,— терĕ ăна Иван Васильевич, хулпуççи урлă шурă куçпа пăхса илсе.

— Каларăм сана, ан шан вăл туй ачине, терĕм! Ав мĕн туса хучĕ халь... Пĕтĕм район умĕнче намăс кăтартать! Хаçатра та çыраççĕ ĕнтĕ, «Çутă çул» лаши кая юлчĕ, теççĕ... Мана та асăнаççĕ унта: ват ухмах, лашине вĕрентеймен, çапах та ăмăртăва кăларса янă, теççĕ... Ăçта хурас ку намăса?— çаплах лăпланаймасăр, карлăка чышса илчĕ старик.

— Вăхăт пур-ха, тен, хăваласа çитсе иртсе те кайĕ,— терĕм эпĕ, вĕсен «Çилçуначĕ» каллех юртă çине куçса пит аван пынине курса.— Авă, пăх-ха...

— Темĕн, ачам, темĕн!.. Халь тин пулаймасть пулĕ, ытла мала кайрĕ леш çӳрен явăлĕ,— терĕ старик, сиккелекен пӳрнисемпе сухал вĕçне пĕтĕркелесе.

Чăнах та, ĕçсем аванланма пуçларĕç. «Çилçунат», хăй малтан тунă йăнăша ăнланса илнĕ пекех, халь çав тери лайăх чупса, çӳрен лашана çитнĕçемĕн çитсе пычĕ. Вĕсен хушши пĕр пилĕк метр çеç юлчĕ ĕнтĕ. Анчах çав пилĕк метр текех ниепле те чакмарĕ. Кăштах хавасланнă Антип Петровичăн сăнĕ каллех тĕксĕмленчĕ, вăл йăшаланчĕ, сухалне ывăçла-ывăçла туртрĕ, çĕлĕкне хывахыва кукшине шăла-шăла илчĕ.

— Шапаш! Пулмарĕ! Ял кулчĕ! Паянах конюхран тухатăп!— хăшт та хашт сывла-сывла илчĕ вăл.

Иван Васильевич хăй пăлханнине палăртасшăн пулмарĕ, çапах та унăн та сăмса çунаттисем сиккелерĕç...

Анчах кăлăхах пулчĕ вĕсем çав тери пăшăрханса, пăлханса тăни. «Çилçунат» вĕсене намăс кăтартмарĕ. Чи юлашки метрсенче вăл çӳрен лашана хăваласа çитрĕ те, хĕрлĕ хăйăва вĕсем иккĕшĕ те пĕр харăс татса иртсе кайрĕç...

Халăх шавласа тăвăллăн алă çупма тытăнчĕ; Антип Петрович, ним тăвайман енне, чышкипе карлăк урлă такама юнаса, кулăшла çинçе сасăпа кăшкăрса ячĕ:

— Шалиш! Пире тăруках çĕнеймĕн!..

— Каларăм вĕт сана...— сăмах хушма тăтăм эпĕ ăна, анчах вăл мана тӳрех пӳлсе хучĕ:

— Мĕн каламалли пур? Эпир аяла пулас çуккине эпĕ хам та пĕлнĕ!

— Мĕн эппин анчăк çури пекех йынăшса тăтăн? — тĕксе илчĕ ăна Иван Васильевич, çемçен кулса.— Иккĕлентĕн курăнать çав...

— Чунĕ çавăн пек манăн...— тӳрре тухасшăн пулчĕ старик.— Хамăр колхоза кӳрентернине тӳсме пултараймастăп. Луччă эс мана хама тем ту, анчах колхоза — ан тив! «Çутă çул» ячĕ яланах çутă та таса пултăр манăн! Çавăнпа вăл...

— Сирĕн тата юланпа ăмăртакан та пур-ха вĕт?— ыйтрăм эпĕ вĕсенчен.

— Уншăн хăрамастăп-ха эпĕ,— аллиле сулчĕ Антип Петрович.— «Акăш»— чăн-чăн кайăк вăл пирĕн, çĕр çийĕн чупмасть — вĕçет!

— Енчен, ыттисем те çавнашкалах вĕçеççĕ пулсан?

— Çу-ук, пустуй халап ку!

Старик темиçе самант хушши ман çине куçне хĕссе пăхса тăчĕ, унтан сасартăк:

— Эсĕ хаçат çынниччĕ-и-ха çав?— тесе ыйтрĕ.

— Çапла...

— «Çутă çул» колхоз лаши «Акăш» пурне те çĕнтерчĕ тесе, халех телеграм çаптарма пултаратăн!

— Мĕнле пулĕ-ха унта, курăпăр...

— Курмасăрах паллă. Йăнăш пулмасть.

— Ытла мухтанчăк-çке эсĕ, Энтип пичу... Çынна тиркетĕн, ху вара шăп та шай туй ачи пек хăтланатăн,— кулса илчĕ Иван Васильевич.



— А эпĕ туйра та маххă парас çук,— чарусăрах паттăрланса кайрĕ старик,— сухал кăвакарать пулсан та, чунăм çамрăк-ха. Тавай акă, Октябрь праçникĕнче иксĕмĕр ăмăртса ташласа пăхар...

... Юланутсен ăмăртăвĕ старик сăмахĕсем тĕрĕс пулнине кăтартрĕ. Колхоз рысакĕсен кĕрешĕвĕ питĕ йывăр пулчĕ, пурте çав тери лайăх чупрĕç, пуринчен ытла «Çĕнтерӳ» колхозăн хушка çамкаллă айăрĕ питĕ вăйлă чупрĕ, вăл темиçе хутчен те чи мала тухса кăтартрĕ, ăна кура пирĕн Антип Петрович каллех ниçта кайса кĕрейми пăлханчĕ, çапах та финиша пурпĕр «Çутă çулăн» шурă «Акăшĕ» чăн малтан çитрĕ.

Курса тăракан халăх кĕрлесе алă çупнă вăхăтра вара Антип Петрович ман çине пăхса пĕр сăмах çеç каларĕ:

— Куртăн-и?— Унтан хăрах куçне хĕссе:— Тоттă!— терĕ те, трибуна çинчен сиксе анса, лашасем патнелле чупса кайрĕ.

Эпир ун çине пăхса, кăмăллăн кулкаласа юлтăмăр...

* * *

Райисполком председателĕ хăш колхоз лаши мĕнле чупни, финиша миçе минутран çитни çинчен, «Çутă çул» лашисем иккĕшĕ те чи пысăк призсем илме тивĕçлĕ пулни çинчен пĕлтерсен, эпир Иван Васильевичпа иксĕмĕр пĕтĕм халăхпа пĕрле улăхран хăпартăмăр та, ялхуçалăх пайне кĕрсе тухнă хыççăн, апатланас тесе, чайная кайрăмăр.

Пасар кунĕ пулнă май халăх кунта лăкахчĕ. Пушă вырăн ăçта пуррине пăхкаласа тăнă чух ытти çынсен сассисем хушшинче эпĕ тăруках Антип Петровичăн сассине уйăрса илтĕм. Кĕçех хăйне те куртăм: кĕтесри пĕр сĕтел хушшине хăй пек ватăрах çынсемпе кĕрсе ларнă та çав тери хĕрӳллĕн калаçать...

— Лашана ăна хăвăнтан та ытларах юратас пулать, тăванăм, унсăрăн нимĕн те тухмасть! Лашан йăлисене çеç мар, унăн чунне те пĕлес пулать. Анчах эсир ун çине ахаль выльăх çине пăхнă пек çеç пăхатăр, çавăнпа сирĕн лашăрсем ним тĕшне те тăмаççĕ...

— Илтетĕн-и?— ун еннелле пуçпа сулса кăтартрăм эпĕ Иван Васильевича.— Санăн сар сухал чунне уçнă пулмалла, ав епле лекци вулать!

— Ничего, паян эпĕ ăна хам та хăналама хатер,— терĕ «Çутă çул» председателĕ.— Вăл пулман пулсан, тен, эпир çĕнтерейместĕмĕрччĕ те-и...

Часах эпир те вырăн тупса лартăмăр.

— Мĕнле çын вара вăл санăн?— ыйтрăм эпĕ, пуçпа каллех Антип Петрович сасси илтĕннĕ çĕрелле сулса.— Пит те хăйне майлă çын пек туйăнчĕ вăл мана...

— Вăл-и? Шутсăр хăйне майлă этем! Унăн пурнăçĕ çинчен кĕнеке те çырма пулать ман шутпа,— терĕ Иван Васильевич.— Пирĕн вăхăтра çын мĕнле ӳссе пыни çинчен çырас тетĕн пулсан, унăн пурнăçне ил кăна...

— Колхозра кам пулса ĕçлет?

— Аслă конюх вăл...

— Унччен кам пулнă?

— Колхозчен-и?

— Ну, колхозчен, тейĕпĕр...

— Никам та мар. Хăй каларĕш — ял кулли. Çын вырăнне те хуман ăна ялта. Тĕрĕссипе каласан, ĕлĕк чух ячĕ те çукчĕ унăн, ăна «Чăпăркка» тесе кăна чĕнетчĕç...

— Мĕншĕн тата ун пекех?

— Историйĕ вăрăм...

— Çапах та... эсĕ хăвăрăн лашăрсем паян лайăх чупни унтан килет, терĕн пулсан, манăн ун çинчен пурпĕр пĕлмелле ĕнтĕ.

Иван Васильевич мана куçран чăр-р... пăхрĕ те:

— Сирĕн енче «мытарник» тенĕ сăмах пур-и?— тесе ыйтрĕ.

— Пур-çке. Улшуç тени пулать вăл.

— Ну, вăт, çак Энтип, хальхи пек каласан Антип Петрович, эпĕ астăвассах пирĕн ялти пĕр мытарник патĕнче тарçăра пурăнатчĕ. Пуянччĕ лешĕ — Арçури Иванĕ, тетчĕç ăна пирĕн — яланах тăват-пилĕкшер лаша тытатчĕ. Килĕнче нимĕн те туман вăл, пур ĕçе те çак Энтип туса пурăнатчĕ. Хăй вара пĕрмай пасарсем тăрăх чупатчĕ, пĕрмай таçта çӳретчĕ. Ялтан пĕрре кӳлсе тухса кайнă лашапа нихçан та тепĕр хут каялла килсе кĕмен вăл. Паян пĕр тĕслĕ лаша унăн, ыран тепĕр тĕслĕ... Тепĕр чухне пĕр пасартах виç-тăват лашана çитетчĕ, тет. Хам та астăватăп: мĕн тĕрлĕ лаша илсе килсе кăтартмарĕ пулĕ вăл! Пысăкки те, пĕчĕкки те, рысакĕ те, ломовикĕ те пулнă унăн, пĕрне «орловски», тет, теприне «чипирак...» Пĕр-пĕр пасартан çĕнĕ лашапа, нателă хĕрĕнкелесе килетчĕ те (сутнă-илнĕ чух мăкриччи пу-

лать-ҫке) килне кӗриччен малтан урамсем тӑрӑх темиҫе хут ӗрӗхтерсе ҫаврӑнатчӗ вара. Ҫӗрле тури хапха патӗнче ши-и-и! шӑхӑрни илтӗнсен, пӗтӗм ял пӗлетчӗ: Арҫури Иванӗ ҫӗнӗ лашапа килет...

Хӑйӗнпе пӗрле вӑл час-часах ҫак Энтипе те илсе каятчӗ. Пуринчен ытла, пӗррехинче ӳсӗрпе ҫуна ҫинчен ӳксе юлса юр айӗнче ҫӗр каҫнӑ хыҫҫӑн илсе ҫӳреме пуҫларӗ вӑл ӑна — хӑйне сыхлама ӗнтӗ.

Хуҫипе пӗрле ҫӳресе, улшуҫ «ӗҫне» Энтип те вӗренсе пынӑ. Чуман лашана шухӑлатма, ваттине ҫамрӑклатма, вӗрилле пулнине сыватма пит лайӑх вӗренсе ҫитнӗ. Тепӗр чух, хуҫа йӑлипе, Энтип те ял тӑрӑх ӗрӗхтерсе ҫӳрекелетчӗ вара. Анчах ял ҫыннисем кулатчӗҫ кӑна унран, мӗншӗн тесен унӑн хӑйӗн пиҫиххи хыҫне чиксе ҫӳрекен чӑпӑрккисӗр пуҫне нимӗн те пулман-ҫке. Хӑйне те вара Чӑпӑркка Энтипӗ тесе ят пачӗҫ. Пуринчен ытла хӗрсенчен лекетчӗ ӑна: авлансан, эс арӑмна лаша вырӑнне кӳлсе чупма тытӑнатӑн пулӗ-ха, тетчӗҫ...

Ну, паллӑ ӗнтӗ, улшуҫ ӗҫӗ вӑл картла вылянипе пӗрех. Паян телей пулать, анчах тепринче кӗсъе тӗпӗ те яп-яка, ҫири тумтире те сутма тивет. Арҫури Иванӗн те ӗҫсем ӑнма пӑрахрӗҫ, виҫ-тӑват лашаран пӗр лашапа тӑрса юлчӗ, унтан юлашки те ӳксе вилчӗ. Те — хуйхисуйхипе, те ытла та хӑнӑхса ҫитнипе — вӑл тата ытларах ӗҫме тытӑнчӗ те часах хӑй те тирпейленсе выртрӗ. Хайхи Энтип пирӗн ӗҫсӗр тӑчӗ юлчӗ. Унталла, кунталла... Мӗн тӑвас? Пӗр хусах арӑм патне киле кӗчӗ, ҫулсерен пӗрер ача пулса пычӗ вӗсен, анчах ҫиме ҫӑкри пулмарӗ. Революци пуличчен пӗр ҫул малтан ӑна салтака илсе кайрӗҫ, унтан киле килсе кӑшт кӑна пурӑнчӗ те — граждан вӑрҫине кайрӗ. Тӑватӑ ҫултан таврӑнчӗ те хуҫалӑхне ура ҫине тӑратма хӑтланчӗ, лаша та туянса пӑхрӗ, пӗр хушӑ волисполкомра кучер та пулса пӑхрӗ, ҫапах та усси питех пулмарӗ...

Унтан вӑл сасартӑк ҫемйи-мӗнӗпех таҫта кайса ҫухалчӗ. Ҫук та ҫук ҫын, никам та нимӗн те пӗлмест ун ҫинчен. «Телей шырама кайнӑ вӑл, пуйса килет пулӗ ӗнтӗ», тесе кулатчӗҫ ун пирки пирӗн усалтарах чӗлхеллӗ ҫынсем. Анчах вӑл, тӗрӗссипе, Горький ҫывӑхӗнчи ӑратлӑ лашасем ӗрчетекен пӗр пысӑк совхоза конюха кайса кӗнӗ иккен. Мӗн тӑвас тетӗн, чунӗ чӑтайман ӗнтӗ унӑн лашасемсӗр пурӑнма!

Чылай ҫулсем ӗҫлерӗ вӑл унта.

Çав вăхăтра колхозсем пуçланчĕç. 1930 çулта эпир те колхоз турăмăр, выльăхсене — вăл шутрах лашасене те — пĕрлештертĕмĕр, çултан-çул хунаттарса пытăмăр.

Энтип çинчен манма та пуçланăччĕ ĕнтĕ... Пĕррехинче, никам кĕтмен çĕртен, вăл сасартăк яла килсе кĕчĕ. Правленине пычĕ те кăшт-кашт калаçса ларнă хыççăн:

— Йăлăхрăм аякра пурăнса, яла таврăнатăп, чун килеллех туртать,— тесе хучĕ.

— Килех ара, кам чарать киле килекене,— терĕмĕр эпир. (Эпĕ ун чухне счетоводра ĕçлеттĕм.) — Колхоза та кĕрес тетĕн-и вара?

— Халăхран уйрăм мĕнле пурăнас-ха? Çав шутпа таврăнатăп та ĕнтĕ,— тет.— Анчах эсир мана лашасем патне ярăр, ку енчен эпĕ халь опытлă çын...

— Вăл ĕнтĕ халăхăн ĕçĕ,— тетпĕр,— колхозниксем мĕн шут тăвĕç — çапла пулĕ.

Çав каçах пирĕн правлени ларăвĕ пулмаллаччĕ. Энтип заявлени çырса пачĕ: çапла та çапла, хăвăрăн йыша илме ыйтатăп...

Каç-каç пирĕн правлени çуртне яланах халăх пухăнатчĕ — хăшĕ ĕçпе, хăшĕ ахалех, чĕлĕм йăсăрлантарса калаçса ларма. Клуб çукчĕ те пирĕн ун чух, пухусем те правленирех пулса иртетчĕç... Çак Энтип заявлени панă каç та çынсем нумай пырса тулчĕç. Правлени ларăвĕ колхоз пуххи пекех пулса иртрĕ.

Малтанхи пĕр-икĕ ыйтăва татнă хыççăн председатель Чăпăркка заявленине вуласа пачĕ.

— Ну, мĕнле тăвăпăр, халăх?— ыйтрĕ вăл.

Колхозниксем тăруках нимĕн те чĕнмерĕç, темле иккĕленерех, пĕр-пĕрин çине пăхса пăшăлтаткаласа çеç илчĕç. Хыçалта, алăк патĕнче, пĕр-иккĕн чăх-чăх-чăх кулни те илтĕнчĕ.

— Калăрсамăр хăвăрăн шухăшăра! Мĕнле, илмелле-и ăна колхоза, çук-и? Тен, ыйтса пĕлмеллисем пур?

Председатель çакăн пек çине тăрсах ыйтнă хыççăн вара, пуринчен малтан, кăмака умне пĕшкĕнсе чĕлĕм паккаса ларакан Кирук мучи, правлени членĕсенчен пĕри, шутсăр çивĕч чĕлхеллĕ старик, аллине çĕклерĕ:

— Мана сăмах пар-ха!

— Тавай, çĕмĕрттер,— терĕ председатель.

— Епле калас...— вăраххăн пуçларĕ Кирук мучи,— Энтип халĕ ĕнтĕ пирĕн яла инçетрен качча килекен хĕр пек пулса тухать. Тĕрĕссипе, вăл пирĕн ялсемех-ха, ан-

чах та ку колхозченех пулнӑ та, ӑна шута илмелли ҫук. Што ун чухнехи, што хальхи пурнӑҫ — йӑлтах расна. Ун чух эпир кашни уйрӑм йӑва ҫавӑрма хӑтланнӑ, халӗ, пыл хурчӗсем пек, пӗрле ӗҫлесе пӗтӗм пурлӑха пӗрле пухса пыратпӑр...

— Эсӗ таҫталла ан кай, ӗҫ ҫинчен кала,— пӳлчӗ ӑна пӗр ҫамрӑк. Анчах Кирук мучи ун ҫине ҫаврӑнса та пӑхмарӗ.

— Пирӗн, чӑвашсен, ӗлӗкренпех ҫапла йӑла пулнӑ: ют яла хӗр илме каяс пулсан, эпир унӑн мӗнле тупра пуррине пӗлме тӑрӑшаттӑмӑр... Ӗне параҫҫӗ-и ӑна, тиха-и, пушмак пӑру-и...

— Мӗн каласшӑн вара эс кунпа?— каллех пӳлчӗ ӑна тепӗр сасӑ.

— Ҫавнах!— татса хучӗ Кирук мучи. Унтан сӳннӗ чӗлӗмне кӗсйине чикрӗ те малалла хӗрӳллӗнрех калама тытӑнчӗ.— Тата эпир, хӗр пӑхма кайсан, вӑл ӗҫкӗ-ҫикӗре ташлама пултарнине ҫеҫ мар, ӗҫре мӗнлине те пӗлме тӑрӑшаттӑмӑр: тырӑ вырма, авӑн ҫапма пултарать-и, ӗне сума, ҫӑкӑр пӗҫерме пӗлет-и...

Кирук мучи мӗн ҫинчен калаҫнине халь пурте ӑнланчӗҫ. Унта-кунта пӑшӑлтатнисем илтӗнчӗҫ, тахӑшӗ каллех хуллен кулса илчӗ, анчах мучие никам та пӳлмерӗ.

— Вӑт ӗнтӗ,— терӗ вӑл малалла,— халӗ Энтипе илер... Мӗнле тупрапа килет вӑл пирӗн колхоза? Мӗнпе пуянлатать вӑл ӑна?

— Хальччен чӑпӑркки те ҫухалнӑ пулӗ-ха!— терӗ тахӑшӗ хыҫалта.

— Тата мӗн ӗҫлесе, мӗн усӑ кӳме пултарать вӑл пире?— Кирук мучи, самантлӑха чарӑнса, правленире ларакан ҫынсене пӑхса ҫаврӑнчӗ.— Эпӗ вӑл лашасем патне каясшӑн тенине илтрӗм, анчах та эпир ӑна хамӑрӑн лашасем ҫывӑхне нихҫан та ярас ҫук, мӗншӗн тесен вӑл яланах лаша мурӗ пулнӑ. Астӑватӑр пулӗ вӗсем Арҫури Иванӗпе иккӗшӗ мӗн хӑтланнине? Лашасене вӑл пушӑпа кӑна хӑваланӑ, сӗлӗпе хӑвалама пӗлмен. А эпир халӗ сӗлӗпе хӑвалатпӑр! Пӗр сӑмахпа каласан, эсӗ, Энтип, ан ҫилен те, ху халь ӑҫтан килнӗ — ҫавӑнтах кай, шӑллӑм! Ҫав кӑна манӑн сӑмах-юмахӑм...

Кирук мучи каллех кӑмака умне кукленсе ларчӗ. Пӗр хушӑ пӳлӗмре шӑпах пулчӗ...

— Тата кам калас тет?— ыйтрӗ председатель.

— Мӗн каламалли...

— Тĕрĕс ĕнтĕ...

— Наянсем ахаль те пур-ха пирĕн...— хăюсăртарах сасăсем илтĕнчĕç ăна хирĕç.

Тепĕр хушă каллех шăп пулчĕ.

— Çапах та, эпĕ Кирук мучи сăмахне тĕрĕсех тесе шутламастăп,— терĕ вара председатель.— Энтип пичче унтанпа улшăнма та пултарнă. Пурнăç улшăнса пынă май çынсем те улшăнаççĕ-çке... Тен, халĕ вăл хăй каласа парĕ пире?

— Калатăр, калатăр, итлесе пăхас,— терĕç темиçен пĕр харăс.

Кирук мучи каланă чух Энтип пĕрре хĕрелсе, тепре кăвакарса, çĕрелле пăхса, правленире ытла ăшах мар пулсан та йĕп-йĕпе тарласа ларчĕ. Хытă пăлханчĕ ĕнтĕ, паллах. Хăйне сăмах парсан вара хашт! сывласа илчĕ те, ура çине тăрса, тарланă çамкине сăтăркаларĕ, унтан халăх çине сасартăк çав тери хăюллăн пăхрĕ...

— Тăвансем, ял халăхĕ,— терĕ вăл кăштах чĕтрекен сассипе.— Эсир ман çинчен хуть те мĕнле шухăшлама пултаратăр, вăл сирĕн ирĕк... Кирук пичче, авă, мана ĕлĕкхи пекех çын выранне хумасть иккен. Уншăн эпĕ ним чухлĕ те кӳренместĕп... Кӳренместĕп, мĕншĕн тесен эпĕ хама хам пĕлетĕп. Эсир ĕнтĕ мана ĕлĕкхи Чăпăркка Энтипĕ пек шутлатăр, анчах хальхине пĕлместĕр. Çавăн пирки эсир мана хăвăрăн йыша илмесен те пултаратăр... Çапах та, тăвансем, эсир хăвăрăн çинчен шухăшласа пăхăр-ха! Вара ман çинчен те калаçма пулĕ. Кирук мучие хăйнех илер. Кам пулнă вăл? Кĕлмĕçĕ пулнă! Астăватăр пулĕ унăн çĕрĕк пӳртне? Ăна икĕ молодеццă пырса хăрах енчен вăйлăрах тĕксенех, вăл йăванса кайма пултарнă. Çур хĕле çитсен, унăн ачисем ялсем тăрăх ыйткалама тухса каятчĕç. Анчах халĕ вăл пятистеннăй пӳрт лартнă, тет, ачисем те вĕреннĕ çынсем пулнă, теççĕ, ăна хăйне те правленине суйланă ав эсир. Мĕн пирки пулнă çакă? Совет влаçне, колхоза пула! Анчах мĕншĕн-ха вăл пĕр хăйне кăна çавăн пек пурнăçпа пурăнма пуçланă тесе шутлать? Тĕрĕс мар ку! Е Совет влаçĕ пĕр уншăн кăна пулнă? Çак çулсенче ытти çынсем те этемле пурăнма тытăнман-ши вара, вĕсем улшăнман-и?..

Энтип ассăн сывласа илчĕ.

— Эпĕ нумай калаçса сире чăрмантарса тăмăп. Маншăн ак çак хутсем лайăхрах каласа парĕç...

Вăл пустав пиншакăн шалти кĕсйинчен пĕр тĕрке темле хутсем туртса кăларчĕ те вĕсене сĕтел çине, председатель умне, пырса хучĕ.

— Грамотăсем вĕсем. Хисеп грамотисем... Çиччĕ! Вĕсене мана совхозра лашасене лайăх пăхнăшăн панă!

Сĕтел çывăхнерех ларакансем тӳрех çав илемлетсе пĕтернĕ хут листисене пăхма тытăнчĕç. Энтип малалла каларĕ. Унăн сасси хăпарнăçемĕн хăпарса пычĕ.

— Пурлăх енчен те ытла чухăнах мар эпĕ. Паян куна икĕ ĕне тытатăп, пĕрине хама преми выранне панă пăруран ӳстертĕм, теприне ывăл ячĕпе укçалла илтĕм. Ывăлĕ манăн жокея вĕренет...

— Мĕнле эккея?— ыйтрĕ тахăшĕ.

— Эккей мар, жокей, лашасене ăмăртса чупма вĕрентекенни,— терĕ Энтип.— Паллах, колхоза килсенех пĕр ĕнине колхоза паратăп. Çитменнине, ĕнисем манăн ахаль йышшисем мар, симментальски ăрата, ун пеккисене куçупа та курман-ха эсĕ, Кирук мучи!

— Ун пекех пуян пурăнатăн пулсан, мĕн тума килетĕн эппин пирĕн пата?— парăнасшăн пулмарĕ Кирук.

— Чун туртать! Хамăн тăван ялта та совхозри пекех чаплă выльăхсем усрас килет, урăх нимшĕн те мар,— татса хучĕ те Энтип, тарăннăн сывласа илчĕ.— Кунта тата тахăшĕ чăпăркка çинчен асăнчĕ. Ку ĕнтĕ пачах та ачалла пулчĕ. Ана калаканни манран тăрăхласшăн пулчĕ пулмалла та, анчах вăл мана ним чухлĕ те тивмест. Чăпăркка çук ĕнтĕ,— сассине татах хăпартрĕ вăл,— мана совхоз директорĕ Волошин юлташ хăй, академисенче вĕреннĕ çын, хальхи вăхăтра Антип Петрович тесе чĕнет... Эпĕ ăна хам яла килесси çинчен каласа парсан та, вăл мана ырларĕ. Тĕрĕс, тет, кайса вĕрент вĕсене выльăх-чĕрлĕх усрама, мĕншĕн тесен колхозсем выльăх нумай усрани колхозниксемшĕн хăйсемшĕн те, патшалăхшăн та пит аван, тет... Урăх эпĕ нимĕн те каламастăп. Ытти — сирĕн ирĕк...

Вăл, хăй выранне ларса, каллех çамки çинчи тарне шăлса илчĕ.

Ĕлĕк «Чăпăркка» пулнă çын çакăн пек ăслă калаçни пурне те çав тери тĕлĕнтерсе ячĕ, никам та нимĕн те чĕнмерĕ, Кирук мучи те шăпах пулчĕ. Пурте Энтип мĕн тери улшăннине, вăл пачах та урăх çын пулса тăнине, ырă ĕмĕтсемпе пурăннине куртăмăр, пурин те кăмăлĕсем ун майлă çаврăнчĕç...

— Тата камăн калас килет?— ыйтрĕ председатель.

Пĕр-икĕ минут иртрĕ, анчах чĕнекен пулмарĕ. Вара председатель хăй каларĕ:

— Ман шутпа, юлташсем, Энтип... Антип Петрович пирĕн колхозра питĕ усăллă çын пулма пултарать. Эпĕ унăн хучĕсемпе паллашрăм, совхозра вăл пысăк хисепре пулнă...

Çакăн хыççăн вара Энтипе пĕр сасăпах колхоза илчĕç.

Тепĕр икĕ эрнерен вăл, пĕтĕм çемйипех, пĕтĕм пурлăхĕпе, выльăхĕсемпе йăтăнса çитрĕ те тӳрех конюхра ĕçлеме тытăнчĕ. Чăн та, нумай чăрмав кӳчĕ вăл правление: ку апла мар, куна çапла тумалла, ку кирлĕ, вăл кирлĕ, тем те пĕр... Анчах эпир вăл ыйтнисене пĕтĕмпех туса пытăмăр. Пĕр-икĕ çултан вара пирĕн лашасем палламалла мар пулса кайрĕç, вĕсем пекки районĕпе те пулман. Вăрçă пуçлансан, фронт валли эпир пĕр харăс пилĕк ломовик, виçĕ рысак патăмăр. Юлашкинчен Антип Петрович хăй те тухса кайрĕ. Фронтра вăл полк командирĕн ездовойĕ пулнă, тет. Виçĕ медаль илсе килчĕ, унтан вара каллех конюхра ĕçлеме пуçларĕ.

— Çавăн пек çын вăл, пирĕн Антип Петрович,— тесе вĕçлерĕ «Çутă çул» председателĕ хăйĕн калавне.— Пĕтĕм чунне, вăйне-халне парса ĕçлет. Ывăлне те хăйĕнпе пĕрлех ĕçлеттерет. «Акăшпа» чупса приз илекенни — унăн ывăлĕ вăл, Доватор генерал патĕнче пулнăскер. Сăмах майĕн каласан, нумай пулмасть эпир ăна леш Кирук мучин чăн кĕçĕн хĕрне илсе патăмăр — Энтиппе Кирук тăванлашрĕç. Туйĕнче ыталансах ташларĕç вара, пĕтĕм халăха тĕлĕнтерчĕç!

Иван Васильевич пĕр хушă чĕнмесĕр ларчĕ, унтан каллех, тем çинчен аса илсе, калаçма пуçларĕ.

— Тĕлĕнмелле çемье... Хĕрĕ пур — вăл та конюхра ĕçлет. Шутсăр тăрăшаççĕ... Кăçал çуркунне пирĕн икĕ кĕсре, хăмланă хыççăн, темшĕн сĕт антармарĕç те, Энтип çемйи çав тихасене, пăрусене ĕмĕртнĕ пек, пӳрнесем тăрăх ĕмĕртсе пурăнчĕ. Унтан, амáшĕсен çиллисене массаж тăва-тăва, пурпĕр сĕт антарттарчĕç... Тепĕр чух — пăхма та кулăшла! Лашасене ĕçе парса ярсан, Антип Петрович вĕсем хыççăн хăй пăхса çӳрет. Кам та пулин лашана «кӳрентерсен» (çаплах калать вăл) — чăтса кăна тăр вара вăл çын! Çав тери юратать лашасене! Эпĕ ѐмĕр-ĕмĕр лайăх лашасем тытма ĕмĕтленнĕ, вăл маншăн

чи пысăк телей пулнă, халĕ эпĕ çав телее тупрăм ĕнтĕ, мана урăх нимĕн те кирлĕ мар, тет...

— Çапла çав, кашни çыннăн хăйĕн ĕмĕчĕ пур, çав ĕмĕт тулсан вара вăл телейлĕ пулать,— килĕшрĕм эпĕ.

... Тепрер сехетрен эпир «Çутă çула» каялла кайма тухрăмăр. Хальхинче эпир «Çилçунатпа» кайрăмăр. Ларкăç çинче Антип Петрович ларса пычĕ. Хире тухсан вăл, пирĕнпе чип-чипер калаçса пынă çĕртенех, сасартек туй юрри юрласа ячĕ.

— Ытла та савăнăçлă-çке эс паян, Энтип пичу,— пaçăр ху каланă туй ачи пекех,— терĕ ăна председатель.

Антип Петрович вăшт кăна пирĕн еннелле çаврăнчĕ те хăйне кăкринчен çапса илчĕ.

— Эпĕ мар ăна, Иван Васильевич, манăн чун юрлать... Чу-ун!.. Ăнлан эсĕ çавна!..— терĕ вăл.

Колхоз урхамахĕ тикĕс çул тăрăх çил пек ыткăнса пычĕ.

Каç пулса килнĕ май, пирĕн умра çĕршер çут çăлтăрсем пек электролампочкăсем ялкăшни курăнма пуçларĕ.

1948,
Шупашкар.





## ЫРА КАМАЛ

...Район центрне эпӗ каҫ пуласпа тин ҫитрӗм. Учрежденисем хупӑннӑччӗ ӗнтӗ, хама кирлӗ ҫынсене тупма пулмарӗ. Ирччен нимӗн те тӑваяс ҫуккине кура, эпӗ колхозник ҫуртне кайрӑм, анчах кунта та ӗҫ ӑнмарӗ манӑн — ремонт пырать иккен, урайне ҫӗнӗрен сараҫҫӗ, кӑмакасем тума кирпӗч, тӑм, хӑйӑр пырса тӑкнӑ. Аҫта каяс? Палланӑ ҫынсем ҫукчӗ манӑн ку салара... Кӑштах шухӑшласа тӑтӑм та, хамӑн яланхи йӑлапа, районти хаҫат редакцинелле ҫул тытрӑм.

Мана унта хитре кӑмпа евӗрлӗрех сап-сар беретне ӗнси ҫинех лартса янӑ ҫамрӑк кӑна хӗр кӗтсе илчӗ. Тӗрӗссипе, кӗтсе илчӗ темеллех те мар ӗнтӗ: эп пырса кӗнӗ чух вӑл алӑк ҫине «редактор» тесе ҫырнӑ пӳлӗмри сӗтел хушшинче кӗнеке вуласа ларатчӗ. Хӑйне ырӑ сывлӑх суниччен вӑл пуҫне те ҫӗклемерӗ, умӗнчи кӗнекипе сӑмахланӑ пек кӑна:

— Полоса* пулса ҫитрӗ-и? — тесе ыйтрӗ.

---

* Хаҫат страници.

— Ана пӗлместӗп вара,— терӗм эпӗ, ун патнерех пырса. Ҫав вӑхӑтрах хам ӑшӑмра: неушлӗ ку хӗрача — редактор?— тесе шухӑшларӑм.

Ют ҫын сассине илтсен, вӑл пуҫне вӑшт кӑна ҫӗклерӗ те ман ҫине хӑйӗн хура шӑрҫа пек ҫаврака куҫӗпе ҫӑтӑр... пӑхса илчӗ.

— Каҫарӑр, эпӗ Натюк килчӗ пуль, терӗм... Типографирен наборщица полоса илсе килмеллеччӗ.

— Эсир хӑвӑр кам пултӑр кунта?

Хӗр ытла тӳрех ответ памарӗ, ман ҫине шанман пекрех пулса, куҫне хӗсерех пӑхса илчӗ.

— А эсир хӑвӑр кам пулатӑр?

Эп каласа патӑм.

— А-а, пӗлетӗп! Вулакаланӑ сирӗнне...— Вӑл сӗтел урлӑ кармашсах, мана хӑйӗн пӗчӗкҫеҫ, анчах та питӗ ҫирӗп аллине тӑсса пачӗ.— Нина Фомина, редакци секретарӗ. Тӗрӗсрех каласан, вӑхӑтлӑх секретарь, сентябрьччен.

— Ма унччен кӑна тата? Кӑмӑла каймасть-им ку ӗҫ?

— Кӑмӑла каясси каfive те, вӗренмелле-ҫке? Вӑтам шкул пӗтернӗ хыҫҫӑн икӗ ҫул колхозра ӗҫлерӗм, кӑҫал вӗренме каясшӑн.

— Аҫталла чун туртать? Хӗрсем медицинӑна юратарах паракан...

Нина аллинчи кӗнекине хупса аяккалла илсе хучӗ.

— Ҫук, эп вӑл енӗпе шут тумарӑм-ха. Пединститута, литфака каяс тетӗп... Литературӑна юрататӑп та...

— Хӑвӑр та ҫыркалатӑр пуль эппин?

Вӑл тӑруках кӗрхи анис пек хӗрелсе кайрӗ.

— Кӑшт кӑна... Сӑвӑсемпе аппаланатӑп...

Эпӗ унӑн ӗмӗтне питӗ ырларӑм:

— Тӗрӗс тӑватӑр, тӗрӗс! Ҫыракансем хушшинче хӗрарӑмсем ытла та сахал пирӗн. Вырӑссен, авӑ...

Хӗр мана каласа пӗтерме памарӗ:

— Пӗлетӗп, пӗлетӗп... Вӗсен нумайӑшӗ ҫыраҫҫӗ. Анчах та шикленетӗп-ха пӑртак: йывӑр ӗҫ вӗт вӑл, кӗнеке ҫырма питӗ ӑслӑ ҫын пулас пулать. Те пултарӑп, те ҫук...

Ҫапла эпир темиҫе минут хушшинчех паллашса кайрӑмӑр. Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах. Нина улттӑмӗш класрах сӑвӑсем ҫырма тытӑннӑ иккен, вӗсене малтан шкулти журналта, унтан районти хаҫатра пичетленӗ, пӗлтӗрпе

кăçал унăн хĕшпĕр сăввисем Шупашкарти журналсенче те тухнă. Пуринчен ытла, вăл юрăсем çырма ĕмĕтленет:

— Хамăрăн хаваслă пурнăç çинчен, çынсен телейĕ çинчен çырасчĕ. Пĕтĕм халăх юрлатăрччĕ вĕсене...

Кăшт тăрсан, типографирен ыран тухмалли хаçат страницин оттискне пырса пачĕç те, вăл ăна çав тери тимлĕн вулама тытăнчĕ. Ун хыççăн полосана эпĕ те пăхкаласа тухрăм. Тепĕр страницине пырса париччен вара эпир каллех, пĕр-пĕрине тахçантанпа палланă çынсем пек, шăкăл-шăкăл калаçса лартăмăр. Вăл Шупашкар çинчен ыйтса пĕлчĕ, хальхи вăхăтра чăвашла мĕнле çĕнĕ кĕнекесем тухнипе интересленчĕ, унтан эпĕ вĕсен районĕнчи çĕнĕ хыпарсем çинчен ыйтма тытăнтăм. Нина вара мана тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ: пурне те пĕлет иккен!.. Қамсен хирĕсенче кăçал тырă вăйлă пулнă («лашапа пырса кĕрсен, пĕкĕ курăнмасть, ĕçкунĕ пуçне кăçал сахалтан та виçшер кило илеççĕ!»), ăçта выльăхчĕрлĕх пысăк тупăш парать («ĕнисем — лаша пек, сыснисем — хĕл каçнă пăру çӳлĕш...»), районти колхозсем кăçал миçе автомашина илнĕ («виççĕшĕ «Победăсем» туянчĕç!»), ăçта çĕнĕ пĕвесемпе кӳлĕсем тунă («хуть те катерсемпе ярăнса çӳре!»), ăçта çĕнĕ шкулсем туса пĕтереççĕ...

— Ытларах курса çӳрĕр-ха эсир пирĕн районта, питĕ усăллă пулĕ сире,— хавассăн ӳкĕтлерĕ вăл мана, хăйĕн куçĕсем ялкăшса кăна тăчĕç.

Сăмах колхозсенчи садсем пирки пуçлансан (манăн шăпах вĕсем çинчен ытларах пĕлмеллеччĕ), вăл самантлăха шухăша кайнă пек пулчĕ. Эпĕ, ăна кансĕрлес мар тесе, ним те чĕнмерĕм.

— Сачĕсем сахал мар-ха пирĕн халь,— терĕ вăл унтан,— пур колхозсенче те ĕрчетме тытăнчĕç юлашки çулсенче, анчах... (Нина каллех шухăша кӳрĕ...) анчах та сирĕн чи лайăххине курас килет пулсан, эсир тӳрех Виççырмари «Çĕнĕ пурнăçа» кайăр, унти пек сад пирĕн районĕпе те урăх çук-ха халлĕхе. Вунçичĕ гектар çинче икĕ пин ытла улмуççи, вĕçĕмсĕр чие, слива, хăмла çырли, темиçе тĕрлĕ хурлăхан, çĕр çырли, тата тем те пĕр: виноград, груша... Кĕрсен, тухас килмест — мăн хуласенчи ботаника сачĕ пек туйăнса каять. Çĕр тĕрлĕ чечек те пулĕ... Мĕн тери йĕркеллĕ тата! Чи культурăллă сад вăл пирĕн районта! Ытти колхозсенчен ялан курма пыраççĕ. Акă, пĕр-икĕ эрне каялла унта районти сад ăс-

тисен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Пĕр сăмахпа, курмалăх пур сире. Пур енчен те вăйлă колхоз вăл. Қайăр!

Эп çавăнтах колхоз ятне çырса хутăм та унта мĕнле каймалли çинчен ыйтса пĕлтĕм.

— Инçе мар,— терĕ Нина,— шоссепе пĕр ултă километр кайсан сулахаялла пăрăнса кĕмелле. Эп хам та пырăттăм та сирĕнпе — манăн шăпах унта ĕç пурччĕ — анчах редактор командировкăра-ха.

— Сад ăсти кам-ха вăл колхозра?— ыйтрăм эпĕ, блокнота кĕсъерен тепĕр хут кăларса.

Хĕр, темшĕн, кăштах хĕрелсе илчĕ:

— Хушаматне... астусах каймастăп. Патне пырсан ыйтса пĕлетĕр унта, хăйне те куратăр ĕнтĕ. Вăл яланах садра пулать, тухма та пĕлмест...

Ирхине вара эпĕ, Нинăпа кăмăллăн сывпуллашса, ӳлĕмрен Шупашкарта тĕл пуласси çинчен калаçса илçе, велосипед çине лартăм та тап-такăр çулпа Виççырма еннелле вĕçтертĕм. Таврари пурнăçа хăйĕн пурнăçне пĕлнĕ пекех пĕлекен, ун çинчен чăн-чăн çамрăк хĕрӳлĕхпе калаçакан, малашне халăх валли хаваслă юрăсем çырма ĕмĕтленекен пĕчĕк пике нумайччен ман куç умĕнчен каймарĕ.

* * *

Ку яла ахальтен мар Виççырма тесе ят панă иккен. Вăл чăнах виçĕ тарăн çырма пĕрлешнĕ çĕрте вырнаçса ларнă. Шоссе енчен чăнкă сăрт хĕррине пырса тухсан, çав çырмасем мана виçĕ юплĕ сенĕк пек курăнса кайрĕç. Çырмасем хушшинчи тăвайккисем çумне — пĕр йĕркесĕр, унта та кунта — çуртсем çыпăçса ларнă, çумăр хыççăн тапса тухнă кăмпасем пек. Варринчи тăвайккинче кăна тимĕр витнĕ виçĕ пысăк çурт, пĕлĕтелле кармашакан икĕ радиомачта тата ял хыçĕнчи фермăсен çĕнĕ чуспа витнĕ вăрăм çурчĕсем уйрăммăнах палăрса тăраççĕ.

— Ĕлĕк чух камăн хăш тĕле кил-çурт лартас килнĕ, çавăнта пырса лартнă пулмалла ĕнтĕ,— шухăшларăм эпĕ.

Анчах çырма хĕррисемпе тăсăлакан çӳлĕ те сарлака, сип-симĕс «чĕрĕ хӳмесем», пур сăртсем çинче те, лапамрах вырăнсенче те ешĕрекен йывăçсем — шахмăт йĕркипе лартса тухнă пиншер йывăç!— мана инçетренех çав тери кăмăла кайрĕç. Чăнкă çырантан эпĕ вĕсем çинче тем самантчен ытараймасăр пăхса тăтăм.

Колхоз правленине нумай шыраса ҫӳремелле пулмарӗ, ҫырмари мӑн пӗвере шыва кӗрсе тухнӑ вӗтӗр-шакӑрсем тӳрех ял варринчи икӗ хутлӑ ҫурта тӗллесе кӑтартрӗҫ.

— Правлени ав ҫавӑнта, иккӗмӗш хутра... Сулахай енчи пусмапа хӑпармалла.

— Анчах Лексей Васильч ҫук-ха унта, халь ҫеҫ мотоциклпа хире тухса кайрӗ,— хушса хучӗ пӗри, ыттисенчен кӑшт ҫӳлӗрех, кӑн-кӑвак куҫлӑ, шӗвӗр сӑмси вӗҫне хӗвелпе пӗҫертсе янӑ арҫын ача.

— Кам вӑл Алексей Васильч?

— Председатель ара...

— Тавтапуҫ пӗлтернӗшӗн, ҫапах кама та пулин тупатӑпах пулӗ-ха,— кӑмӑллӑн кулса илтӗм эпӗ.

Правленире чӑнах та пӗр ватӑ счетовод кӑна ларать-мӗн. Эпӗ хам мӗншӗн килнине каласа парсан, вӑл куҫлӑхне хывса хучӗ те эпӗ сӗннӗ пируса илсе чӗртнӗ май:

— Шел, килни вӑхӑтлах пулмарӗ сирӗн,— терӗ.

— Мӗншӗн апла?

— Иван Фомич — пирӗн сад ӑсти ӗнтӗ вӑл — ирхине Шупашкара тухса кайрӗ. Аманнӑ ури ыраткалать-ха унӑн ҫаплах... Паян пирӗн икӗ машинӑпах ҫырла сутма кайрӗҫ те, вӑл та вӗсемпе ҫул-путьти ларса кайрӗ. Поликлиника кӗретӗп, терӗ.

— Садра вӑл пӗр пӗччен ӗҫлемест пулӗ вӗт, тен, мана кам та пулин урӑххи паллаштарӗ?

— Пӗччен мар та-ха, бригадипех ӗҫлеҫҫӗ унта, ҫапах та вӗсем, епле калас, симӗсрех-ҫке, ун чухлех пӗлеймеҫҫӗ. Иван Фомичӗ пирӗн — асли, главнӑй Мичуринӗ, темелле.

Эпӗ ним калама аптрарӑм, анчах счетовод хӑех урӑх шухӑш тытрӗ:

— Тепӗр тесен, Марине пултарать те пулӗ...

— Кам вӑл?

— Иван Фомичӑн хӗрӗ, унпа пӗрлех ӗҫлет. Маттур хӗр, кӑҫал ултӑ уйӑх курсра вӗренсе килчӗ-ха.

— Пит аван апла пулсан!— терӗм эпӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн старик юнашар пӳлӗмрен техничкӑна чӗнчӗ те мана сада, ҫав Марине патне илсе кайма хушрӗ.

— Вӑл халь Пӑру варӗнче пулма кирлӗ, унта паян кунӗпех ҫырла татмалла...

Тарье инке (ун ятне эпĕ кайран пĕлтĕм) калаçма юратакан карчăк-мĕн. Эпир урама тухсанах, вăл манпа сăмах пуçласа ячĕ.

— Кăçал ĕнтĕ мĕн чухлĕ халăх ăсатрăм пуль ку сада. Килеççĕ те килеççĕ. Таçтан та, такам та килет. Пурте курасшăн. Те чăнах та пирĕн сад пекки урăх ниçта та çук?

— Чăрмантараççĕ эппин?

— Вăл та пур çав. Иванĕ темле йăлăхмасть пĕр вĕçĕм каласа кăтартса. Ваттисем килни татах-ха хуть, атту вĕт леш хĕрлĕ пĕсехеллисем те килсе чăрмантараççĕ, иртнĕ эрнере таçти шкултан пĕр аллăн пуль кĕпĕртетсе килчĕç. Вĕсене мĕн кирлĕ-ши? Сад тăвасси пур-и вăл йĕпе сăмсасен? Яра кун ирттерчĕ Иван çавсемпе...

— Вĕренесшĕн ĕнтĕ вĕсем, инке...

— Вĕренесшĕн... — кăмăлсăр мăкăртатса илчĕ Тарье. — Кунта вĕсемшĕн пĕр-пĕр институт мар вĕт!

— Тепĕр чух çынсем лайăх ĕçленине кайса курни институтран та усăллăрах пулать, инке...

...Сада •кĕрсен, эпĕ тӳрех темĕн пысăкăш çаврака клумба умне пырса тап! чарăнтăм. Куç йăмăхсах кайрĕ. Хĕрлĕ, сарă, шурă, кăвак, сенкер, кĕрен... Чечекĕсем пурте таса, вăйлă, парка. Аçта курнă-ши эпĕ кун пек чечексене? Астумастăп... Мĕнешкел илем!

Анчах та манăн çав чечексем çине пăхса нумай киленсе тăрасси пулмарĕ. Хамран чылай мала кайнă Тарье мана кăшкăрсах чĕнсе илчĕ.

— Атя эппин часрах, ман васкамалла!

Çак сăмахсене кăмăлсăртарах калани ăна тĕрлĕ экскурсантсемпе «командировочнăйсем» чăнах та йăлăхтарса çитернине тата тепĕр хут палăртрĕ. Эпĕ тӳрре тухма пикентĕм:

— Чечекĕсем ытла та пит хитре-çке... Ытарма çук!

Тарье аллипе сулчĕ кăна:

— Ун пеккисем лерелле те туллиех.

Эп ăна хуса çитсен, вăл татах мăкăртатса илчĕ:

— Ӳстереççĕ çав усăсăр курăк. Ача вăййи. Силос тума та юрăхсăр.

Манăн унпа тавлашас кăмăл пулмарĕ. Темле юмахри çĕршыва лекнĕ пек, унăн та кунăн пăхкаласа, пуринчен те тĕлĕнсе пытăм эпĕ. Редакцири Нина тĕрĕснех каланă иккен мана: питĕ тăрăшакан çын ĕçленĕ кунта, унсăр çакăн пек ырă сад нихçен та пулас çук çав...

Çамрăк улмуççисен тӳп-тӳрĕ речĕсем тăвалла та, анаталла та таçта çитиех тăсăлаççĕ, вĕсемпе черетленсе вишни, слива, груша йывăççисем çавăн пекех ретĕн-ретĕн ӳсеççĕ, çав ретсем хушшипе çырла йăранĕсем хăйсен пиççе çитнĕ хĕп-хĕрлĕ çырлисемпе илĕртсе выртаççĕ. Чечекĕсем тата, чечекĕсем!.. Кăшт каятăн та — клумба, тата кăшт утатăн та — каллех клумба. Хăшĕ çаврака, хăшĕ тăваткал, теприсем çăлтăр евĕрлĕ тунă.

Эпир çырма тĕпĕнчи пĕве урлă каçса тепĕр енчи сăрталла хăпарма пуçласан, сасартăк хаваслă юрă илтĕнсе кайрĕ. Хĕрсем юрлаççĕ... Сассисем уçă, вăйлă, янравлă. Кăшт кайсан, юрă сăмахĕсем те уççăнах илтĕнчĕç:

Татас терĕм çырлине,
Шуррине мар, хĕрлине.
Анчах хĕрли пулмарĕ те,—
Пиçсе çитмен, мĕн тăвас?..

Малти улмуççисемпе вишнисем хушшинче шап-шур кĕпеллĕ, кĕрен, сенкер, сарă, кăвак (клумбăсем çинчи чечексем пекех!) тутрисене «майралла» çыхнă хĕрсем хăйсем те курăнчĕç. Пурте йăрансем çинелле пĕшкĕннĕ, хĕрсех çырла татаççĕ, хăйсем çав вăхăтрах юрă шăрантараççĕ...

Савас терĕм каччине,
Хурине мар, саррине,
Анчах сарри пулмарĕ те,—
Чун ыратать, мĕн тăвас?..
Ах, мĕн тăвас, мĕн тăвас,
Чуна мĕнле йăпатас?..

Хĕрсем патне çитсен, эпĕ вĕсене саламларăм та, вĕсем юрланине мухтаса илнĕ хыççăн:

— Аçта вĕреннĕ эсир ку юрра?— тесе ыйтрăм.

Ответ вырăнне хĕрсенчен пĕри, сенкер тутри айĕнчен тухса кайнă сарă çӳçне тӳрлетсе, ман çине пăхса кулса илчĕ:

— Эсир мĕн, пирĕн пата Шупашкарти театрсем килмеççĕ тетĕр-им?

Ку ёнтĕ хĕрсем çак юрра артистсенчен вĕренсе юлнине пĕлтерчĕ.

— Час-часах юрлатăр-и кун пек юрăсене?

— Макăрман чух яланах юрлатпăр,— терĕ çав хĕрех.

— Макăрасси те пулкалать-и-мĕн?

— И-и, тепĕр чух макрана хĕвĕнтеретпĕр кăна...

— Мĕн пирки-ши тата вăл?

— Юрринчех каланă-иç: анчах сарри пулмарĕ те, чун ыратать, мĕн тăвас?— Хĕр пуçне кулăшла сулкаласа илчĕ. Ыттисем те пурте кулса ячĕç.

— Ак, çак Настаçăн чĕлхине!— мăртлатса илчĕ Тарье инке. — Ют çынтан именесчĕ хуть!

— Халь ют çынсем çук, пурте хамăрăн,— татса хучĕ ăна хирĕç Наçтаç.— Пĕр çĕршывра пурăнатпăр.

— Сана сăмахпа çĕнтерес çук ĕнтĕ, çава пекех сан чĕлхӳ. Мĕнле упăшка лекĕ-ши сана! Çирĕпреххи лексен...

— Çемçешкине каймастăп та эпĕ. Арçын тени — çирĕп пултăр вăл, кĕсел пекки кама кирлĕ?— каллех парăнмарĕ хĕр.

Тарье аллине кăна сулчĕ:

— Тьфу сана!— Унтан ыттисем еннелле çаврăнчĕ те: — Марине ăçта сирĕн?— тесе ыйтрĕ.

— Ав килет,— тăвалла пуçĕпе сулса кăтартрĕ тахăшĕ.

— Ну, апла пулсан эп кайрăм, манăн сирĕнпе палкаса тăма вăхáт çук,— терĕ те Тарье, васкасах каялла кайрĕ.

Хĕрсем, ун хыççăн пăхса, темшĕн кулкаласа юлчĕç.

— Уяр аслати...

Тепĕр минутран пирĕн пата хайхи Марине — пуçне кăвак тутăр çыхнă, шурă кĕпи çинчен арçынла çĕлетнĕ хура пиншак тăхăннă, вăтам пӳллĕ, пĕр çирĕмелле çитнĕ хĕр пырса тăчĕ. Эпĕ унăн сăн-пичĕ, çĕмĕрт пек куçĕ çине пăхрăм та, вăл мана тӳрех редакцири Нинăна аса илтерчĕ.

— Пулаççĕ те иккен пĕр сăнлă çынсем... — шухăшларăм хам ăшăмра. — Тĕлĕнмелле...

Вăл мана сывлăх сунса алă пачĕ, унтан хĕрсен карçинккисем çине пăхкаласа илчĕ те:

— Миçешер хут леçрĕр?— тесе ыйтрĕ.

— Икшер кăна-ха, виççĕмĕшне тултаратпăр,— терĕç ăна хирĕç.

Марине тӳрех кăмăлсăр пулни палăрчĕ.

— Эсир мĕн — кулатăр-и?— куçхаршисене пĕр çĕрелле пĕрсе лартрĕ вăл. — Паçăрах каларăм вĕт сире — çырла илме Шупашкартан машина килет, ăна пĕр минут та ытлашши тытса тăма юрамасть, простойшăн тӳлеттереççĕ, терĕм. Анланмарăр-им çавна? Çыратăп та паратăп акă — хăвăр шутран тӳлемелле туччăр...

Ана хирĕç чĕнекен пулмарĕ. Пĕри кăна сас пачĕ:

— Атьăр эппин,васкар, хĕрсем...

Марине аллинчи сехечĕ çине пăхса илчĕ:

— Халь — вунпĕр, машина виççĕ тĕлнелле килмелле...

— Ан пăшăрхан, ĕлкĕретпĕр! Хуть те ик машинăпа килччĕр,— терĕ паçăр Тарьепе тавлашнă Наçтаç, çырла тултарнă карçинккине çĕклесе.— Маххă паракан марччĕ-ха эпир!

Ик-виçĕ утăмран вăл каллех çав тери уçă сасăпа юрласа ячĕ:

Татас терĕм çырлине,
Шуррине мар, хĕрлине...

* * *

...Виçĕ сехет ытла çӳрерĕмĕр эпир «Çĕнĕ пурнăç» садĕнче. Марине мана пурин çинчен те тĕплĕн ăнлантарчĕ, садри пур йышши улмуççисемпе те, çырла йывăççисемпе те паллаштарчĕ, вĕсене хăçан лартнинс, мĕнле пăхса ӳстернине, вĕсен çимĕçсем мĕнле пулассине каласа пачĕ. Кĕнеке тăрăх вуланă пекех каларĕ вăл, пĕр чарăнмасăр, чунтан хавасланса...

Улмуççи сорчĕсене эпĕ хăшне-пĕрне кăна пĕлнĕ: анис, боровинка, антоновка, китайка. Эп астăвасса, пирĕн садсенче те çавсем кăна пулатчĕç. Анчах «Çĕнĕ пурнăç» садĕнче çĕнĕ сортсем питĕ нумай иккен.

— Акку акă — бельфлер-китайка, лешĕ — ранет бергамотный, унпа юнашарри — пепин шафранный, ку — славянка. Вĕсем пурте Мичурин сорчĕсем,— ăнлантарчĕ мана Марине. — Ку акă — штрейфлинг, урăхла ăна «осеннее полосатое» теççĕ, кĕрхи сорт. Çакă — малиновка, урăхла каласан — «суйслепское», çуллахи сорт. Анчах сивĕрен пачах та хăрамасть...

Грушăсемпе вишнисем, сливăсемпе хурлăхансем, хăмла çырлисемпе крыжовниксем хушшинче çӳренĕ чух та Марине пĕрмаях эпĕ ку таранччен илтмен сортсен ячĕсене каласа пычĕ:

— Бергамот красный, тонковетка... Краса севера, любская... Ренклод-реформа, зюзинская... Мальборо, усанка... Галиаф, версальская белая... Авенариус, финик...

Марине садри кашни йывăçа, кашни тĕме çавăн пек лайăх пĕлни мана самаях тĕлĕнтерчĕ. Таçта аслă шкулсенче вĕреннĕ çын мар вĕт-ха, ялти хĕр кăна! Неушлĕ çур çул хушши курсра вĕреннипех çавăн пек нумай пĕлекен пулса килнĕ вăл?..

Кайран, пĕтĕм садпа паллашса тухнă хыççăн, пĕр лапамрах вырăнти пысăк клумба умĕнчи сак çине канма ларсан, эп ун çинчен ятарласах ыйтса пĕлес, терĕм.

— Сад ĕçне эсир хăçан кун пекех вĕренсе çитнĕ?

Марине именнĕ пек пулчĕ.

— Аттерен вĕренкелерĕм пулмалла ĕнтĕ... Вăл питĕ ăста пирĕн. Вăрçа кайса килнине шутламасан, вунпилĕк çул ытла садра ĕçлет те... Ку сада вăл пĕтĕмпех хăй аллипе лартса ӳстернĕ. Эпĕ яланах унпа пĕрле пулнă. Хăнăхса çитрĕм вара...

Эп ыйтнипе Марине мана кĕскен кăна хăйсен сачĕн историне каласа пачĕ. Халь темĕн тĕрлĕ улмуççисемпе çырла йывăççисем ешĕрекен, çав тери илемлĕ чечексемпе тулнă сад вырăнĕнче пĕр вунпилĕк çул каярах пачах та нимĕн те пулман. Юр кайнă хыççăн шăтса тухнă курăк та çийĕнчех хăрса, кукăрăлса ларнă, çавăнпа та вырьăхсем те килмен кунта. Тахçан авал çак çырма-çатрасенче вăрман пулнă, теççĕ, анчах ăна хăçан касса пĕтернине ваттисем те астусах каймаççĕ. Вăрманне пĕтернĕ хыççăн вара ку çĕр нумай-нумай çулсем хушши ним усăсăр выртнă, унта мĕн те пулин тума май пулас· си çинчен никам та, нихçан та шухăшламан...

Вăрçă пуçланиччен пĕр пилĕк-ултă çул малтан, ялти колхоз çирĕпленсе çитме пуçласан, Маринесен ашшĕпе тепĕр старик — иккĕшĕ те сад ĕçне питĕ юратаканскерсем — çав çырмасенчен пĕринче сад лартса ĕрчетесси çинчен сăмах хускатнă. Темиçе пухура та сӳтсе явнă вĕсен шухăшне, анчах килĕшекенсем питĕ сахал пулнă. Ĕненмен, ĕненесшĕн те пулман вĕсене.

— Кирлĕ мара калаçатăр!

— Çав хытă тăм çинче мĕн ӳстĕр?..

— Укçине пĕтерĕпĕр, усси пулас çук. Мĕн пустуй расхут тăвас? Айвансем эсир!..

Икĕ çул пынă çак тавлашу. Анчах юлашкинчен, пуринчен ытла çамрăксем хытă тăнипе, килĕшнĕ-килĕшнех. Паллах, пурте мар, хăшĕсем тăрăхланă çеç. Тăрăхланă çеç те мар, сиенлеме те пăхнă.. Çамрăк улмуççисемпе çырла йывăççисем кăштах хăпарма пуçласанах, йĕри-

тавра тытнă карта сыпăкĕсене сӳте-сӳте пăрахса выльăхсем кĕртсе янă, йывăçсене алăпа кăкла-кăкла ывăтни те пулнă. Колхоз тăшманĕсем тунă ĕнтĕ ăна. Хурал тăратмах тивнĕ çавăн пирки...

Тăват-пилĕк çул хушшинче йывăçсем самаях ӳснĕ. Вĕсем хушшине лартнă çĕр çырли колхоза çултан-çул пысăкрах тупăш пама пуçланă. Вара çынсем сада аслă-латасси çинчен те калаçма тытăннă. Анчах хĕрĕх пĕрремĕш çулхи хĕлле пĕр улмуççи те юлман — пĕтĕмпех шăнса хăрнă. Темиçе çул ĕçлени йăлтах харама кайнă...

Çапах та, сад ăстисем аллисене усман, кĕркунне çĕнĕрен лартма ĕмĕтленнĕ. Анчах çак ĕмĕт пурнăça кĕреймен — çулла вăрçă пуçланнă. Арçынсем пурте тенĕ пекех фронта тухса кайнă, вĕсен шутĕнче Маринесен ашшĕ те пулнă.

Сад çултан-çул пăчланса пынă...

Хĕрĕх виççĕмĕшĕнче, çуртыррисем вырнă вăхăтра, Маринесен ашшĕ госпитальрен хăрах урапа таврăннă. Килнĕ каçхине пĕлĕш-тантăшсемпе шăкăл-шăкăл калаçса ирттернĕ хыççăн тепĕр кунне ирпе ирех вăл икĕ туйи çине тайăннă та Пăру варне кайнă. Нумайччен çӳренĕ вăл унта, чĕрĕ юлнă кашни йывăç кутнех пĕшкĕнсе ларса пăхнă. Унтан тӳрех правление каçнă та колхоз председательне:

— Урăх ĕçе юрăхлă мар эпĕ, каллех сад тума тытăнатăп,— тенĕ.

— Вăй çук-çке халь пирĕн, çынсем те çитмеççĕ, вăрçă чарăниччен тăхтамалла пулать пуль,— теме пăхнă лешĕ ăна хирĕç.

— Пĕчченех тăватăп, эсир мана выльăхсем кĕрсе каясран картисене юсаса парăр кăна,— тенĕ. — Хамăн ачасене ĕçлеттеретĕп, шкулта вĕренекенсене чĕнтерĕп... Питĕ чаплă сад тăватăп! Кайран хăвăрах тав тăватăр ак мана.

Председателĕн килĕшмелли кăна юлнă.

...Марине клумба çинчен пĕр пысăк шурă роза чечекне татса илсе шăршласа пăхрĕ те ăна аллинче çавăркаланă май:

— Сакăр-тăхăр çул хушшинче çакăн пек сад пулчĕ вара,— терĕ. — Йывăççенчен нумайăшĕ çимĕç параççĕ ĕнтĕ. Çырлисем пирки калаçмалли те çук — питĕ тупăшлă. Çырла укçипех пĕлтĕр кашни киле радио кĕртрĕмĕр, кăçал клуб тăваççĕ.

— Халь ёнтĕ сада пурте юратаççĕ пуль?

Марине çемçен кăна кулса илчĕ:

— Мĕнле юратас мар-ха? Анланса çитрĕç. Килсенче те ĕрчетеççĕ. Улмуççисĕр çырла йывăççисемсĕр пĕр кил те çук халь пирĕн. Питомникĕсем хамăрăн та...

Вăл тата тепĕр илемлĕ чечек татса илчĕ.

— Кусене пирĕн шкул ачисем ӳстереççĕ, вĕсем шефа илнĕ. Садра ĕçлени вĕсене биологи вĕреннĕ чух питĕ усăллă-çке-ха. Тупăш та илеççĕ хăйсене валли...

— Мĕнле майпа?— тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Хулана кайса сутатпăр. Кун пек чечексемшĕн унта вилсех каяççĕ вĕт. Укçи — шкул валли пулать. Кăçал чылай кĕнекесем, пособисем туянчĕç-ха вăл укçапа, аквариум турĕç...

Шкул пирки калаçнă май эпĕ Марине хăй миçе çул вĕренни çинчен ыйтрăм.

— Пĕр-икĕ хут та пăрахмалла пулчĕ çав манăн — пурнăçĕ çавнашкалччĕ, çапах та вунă класс пĕтеркелерĕм,— терĕ вăл.

— Малалла каяс темерĕн-и вара?

— Малалла... вĕренетĕп эпĕ.— вăрттăн япала çинчен пĕлтернĕ пекрех ответ пачĕ Марине. — Заочница, Горькинчи садпа пахча институтĕнче. Иккĕмĕш курса куçрăм.

— Авă мĕншĕн сад ĕçне çав тери лайăх пĕлетĕн иккен эсĕ!

Çак вăхăтра ту енчен хыттăн кăшкăрса чĕнни илтĕнчĕ:

— Марине-е!..

Çамрăк хĕр—сад ăсти—вăшт кăна ура çине сиксе тăчĕ.

— Хуларан машина килчĕ пулмалла, çырла ăсатас пулать... Эсир халь тӳрех Шупашкара каятăр-и? Сирĕн хăвăрăн машина пур-и? Атту çаксемпе пĕрле кайма пулать,— пуçĕпе тăвалла сулса илчĕ вăл.

— Çук-ха, эп васкамастăп,— терĕм ăна хирĕç,— сирĕн правленинче пулатăп, председателе курмалла. Тен, сирĕн аçу та килсе çитĕ, унпа курса калаçсан аванччĕ.

— Килет те пулĕ, нумаях тăмалла мар. Енчен те вăл тӳрех кунта анса юлсан, эп каласа парăп ăна.

Эпир пĕр-пĕрине ал парса уйрăлтăмăр. Марине чупнă пекех тăвалла хăпарса улмуççисем хушшинче çухалчĕ.

* * *

Правленире халĕ никам та çукчĕ. Председатель хиртен таврăнман, счетовочĕ кăнтăрлахи апата кайнă пулмалла. Кам та пулин килессе кĕтсе, эпĕ сĕтел çинче выртакан хаçатсене пăхкаласа лартăм, анчах вĕсем киввисем кăна пулнă. Унтан эпĕ, ним тума аптранă енне, стена çинчи плакатсене вулама тытăнтăм. Хăшĕсем выльăхсене лайăхрах пăхса усрама, теприсем çĕрулмине тăваткал тĕмпе лартма, виççĕмĕшсем йĕтĕн акса тума вĕрентеççĕ... Сасартăк, çав плакатсем хушшинче пĕр илемлĕ пысăк рамка çакăнса тăнине асăрхарăм. Рамка ăшĕнче, кантăк айĕнче — фото-портретсем курăнаççĕ.

— Колхозри паллă çынсем пулĕ-ха кусем,— терĕм те хам ăшăмра, рамка патне пырса тăтăм.

Эп йăнăшман иккен. Кантăк айĕнче чăнах та «Çĕнĕ пурнăçри» ĕçре палăрнă çынсен сăнĕсем пулнă. Килти художник — пĕр-пĕр шкул ачи пуль ĕнтĕ — пур портретсене те йĕри-тавра чечексемпе илемлетсе, эрешлесе лартнă.

— Ĕне ферми заведующийĕ П. Кошкина... — вуларăм эпĕ хĕрринчи фотографи айĕнче.— Кайăк-кĕшĕк ферминче ĕçлекен А. Иванова... Конюх И. Ястахов, строительсен бригадирĕ В. Нестеров... Сад ăсти И. Фомин...

Эпĕ ку портрет тĕлĕнче чарăнса тăтăм. Çакă иккенха вăл, çап-çара çырмасенче çав тери чаплă сад туса хураканни!..

Фотографи çинчен шуранкарах сăнлă, пысăках мар уссиллĕ, сайралма пуçланă çӳçне сылтăмалла тирпейлĕн тураса хунă, кăшт хĕсĕкрех куçлă 45—47 çулхи çын пăхса ларать. Салтак гимнастеркипе, сулахай кăкри çинче «Слава» орденĕпе икĕ медаль, сылтăм енче — «Гвардия» значокĕ. Хăй кăмăлсăртарах пулнă пек курăнать, ахăртнех фотограф ăна объектив умне ирĕксĕрлесех лартнă.

Кăштах пăхса тăрсан, темшĕн ку çынна эпĕ палланă пек, ăна таçта курнă пек туйăнса кайрĕ. Аса илме тăрăшса, фото çине тинкеререх пăхрăм. Тĕрĕс, тĕрĕс! Ку çынна эпĕ курнах. Анчах хăçан, ăçта? Фронтра пулĕ ĕнтĕ... Пирĕн дивизире чăвашсем нумайччĕ, пĕррехинче эпир орденсемпе медальсем илнĕ земляксене пухса канашлу пекки те туса ирттернĕччĕ, пурте пĕр кăмăллă пулса, чăваш халăхĕ патне çыру çырса ятăмăр: Тăван çĕршывăн телейĕпе ирĕклĕхĕшĕн юлашки юн тумламĕ

юлмиччен çапăçатпăр, анчах та тăшмана çĕнтеретпĕрех!— тесе тупа турăмăр... Çав канашлура пулнă-ши ку çын? Е эп ăна урăх çĕрте, урăх чухне курнă-ши?

Вăхăт нумай иртрĕ-çке унтанпа, ăçтан пурне те астуса çитеретĕн? Хăйне курсан, аса илеттĕм те-ха ĕнтĕ... Тен, вăл та мана астăвать...

Пĕр сăмахпа, сад ăсти портретне курни мана хытах пăлхатса ячĕ. Ун çине эпĕ тата тимлĕреххĕн пăхрăм та, вăл мана питĕ çывăх паллантă çын пекех туйăнса кайрĕ.

Коридорта çын сассисем илтĕнчĕç. Кĕçех правление счетоводпа икĕ йĕкĕт пырса кĕчĕç — иккĕшĕ те пĕр пек сенкер «футболкăсемпе», чĕр пиртен çĕлетнĕ вăрăм брюкисемпе. Пичĕсем, кăкрисем, аллисем хĕвелпе пиçсе пăхăр тĕслех пулса кайнă хăйсен.

— Паллашăр,— терĕ счетовод,— пирĕн спортсменсем кусем, халь кăна ăмăртуран рекордсемпе таврăнчĕç... Пиншер метр чупса, республикипе чи малти вырăна тухнă, халь Куйбышева кайса тĕлĕнтересшĕн-ха тата...

Шупашкарта колхоз спортсменĕсен ăмăртăвĕ пуласси çинчен илтнĕччĕ эпĕ, анчах халь вăл мана питех те интереслентермерĕ-ха, ячĕшĕн çеç: «Ну, мĕнле, аван иртрĕ-и?» — тесе ыйтса пĕлтĕм те тӳрех счетовода портретсем патне чĕнсе илтĕм:

— Сад ăсти çак эппин сирĕн?

— Самăй çавă... Фомин, Иван Фомич... Сачĕ кăмăла кайрĕ-и сире?

— Сачĕ питĕ аван-ха, каламалли те çук, анчах манăн ăна лартса ӳстерекенни çинчен ыйтса пĕлес килет... Вăрçăра аманнă терĕр-и-ха эсир ăна?

— Сулахай ури çук.

— Ăçта, хăш фронтсенче пулнă-ши вăл? Илтмен-и?

— Ăна пĕлсех çитейместĕп так-тă,— терĕ те старик, çамрăк спортсмен çине пăхса илчĕ. — Акă, Микула пĕлет-и тен, вăл унăн чăн кĕçĕн шăллĕ пулать...

Йĕкĕт мана пĕр тытăнса тăмасăрах каласа пачĕ:

— Малтан вăл Мускав патĕнче çапăçнă, унтан, хĕрĕх иккĕмĕш çулта, Ржев тăрăхĕнче пулнă. Кайран вĕсене кăнтăралла куçарса кайнă та, вĕсем Орелпа Курск хушшинче чылай тăнă, хĕрĕх виççĕмĕш çулта, кĕр енне, Белоруссине çитнĕ...

— Хăш тĕлте аманнă-ши?

— Темле шыв урлă каçнă чух. Днепр патне çитеспе...

Тӗрӗссипе, йӗкӗт мана пирӗн дивизи ӑҫта-ӑҫта пулнине каласа кӑтартрӗ. Халь ӗнтӗ манӑн ним иккӗленмелли те пулмарӗ. Сад ӑсти портречӗ ҫине тата тепӗр хут пӑхрӑм та пӗтӗмпех аса илтӗм. Ку ҫынна эпӗ питӗ лайӑх паллана!..

* * *

...Пин те тӑхӑрҫӗр хӗрӗх виҫҫӗмӗш ҫулхи февраль уйӑхӗн юлашки кунӗсенче эпир Елец станцийӗнчен тапранса тухрӑмӑр та хӗвеланӑҫнелле, Украина еннелле кайрӑмӑр.

Ҫуркунне, шыв-шур тапрансан, пирӗн Севск хули патӗнче чарӑнмалла пулчӗ. Нумай вӑхӑт пултӑмӑр эпир оборонӑра — тӑватӑ уйӑха яхӑн. Йӑлӑхтарсах ҫитерчӗ пӗр вырӑнта тӑни, мӗншӗн тесен пурин те часрах малалла, тӑшмана ҫӗмӗрсе хӗвеланӑҫнелле каяс килнӗ...

Анчах этем тени вӑл таҫта пулсан та лайӑхрах, кӑмӑла каймалларах пурӑнма тӑрӑшать. Хӑйӗн пурнӑҫне илемлетесси те, чунне йӑпатасси те килет унӑн...

Ҫакна эпир ҫӗршыв типме пуҫласанах асӑрхарӑмӑр. Май уйӗ умӗн пирӗн подразделенисем пурӑнакан вырӑнсенче пур ҫӗрте те икӗ енчен чулсем сарса тухнӑ, таса хӑйӑр сапнӑ тикӗс ҫулсем тунине куртӑмӑр. Артиллеристсен батарейисенче чӑн-чӑн скверсемех тунӑччӗ: варринче ҫӑлтӑр пек клумба, ун тавра — хӑва тураттисенчен авса тунӑ хыҫлӑ саксем, сӗтел. Саперсем пирки калаҫмалли те ҫук: пӗр айлӑмра, ҫӗр ҫулхи юмансем айне, вӗсем тем те пӗр туса тултарнӑччӗ — столовӑй, уҫӑ сывлӑшри хӗрлӗ кӗтес, сӗтелсем ҫинче — консерва банкисенче ӳстернӗ чечексем... Вӑрманти санатори, тейӗн!

Чечексем тылри подразделенисенче кӑна мар, чӑн малти линире те тӗл пулатчӗҫ. Ку вара ытлах та тӗлӗнмеллеччӗ, чуна ҫав тери савӑнтаратчӗ...

Пӗррехинче эпӗ хӗллехи ҫапӑҫусенче нумай хутчен чапа тухнӑ стрелковӑй батальонра пултӑм. Батальон штабӗ ҫӑра вӑрманти уҫланкӑ хӗрринче, лапамрах ҫӗрте вырнаҫнӑ. Ҫитрӗм те — тӗлӗнсех кайрӑм: кашни ҫӗрпӳрт умнех чечек клумбисем туса лартнӑ... Тем тери илемлӗ чечексем ӳсеҫҫӗ! Ытармалла мар... хӗрлӗ, кӑвак, сенкер, сарӑ... Хӑшӗсем халь тин ҫурӑлма тытӑннӑ, ҫав тери ачашшӑн курӑнаҫҫӗ...

Чылайччен куç илеймесĕр пăхса тăтăм эпĕ вĕсем çине. Таçта çывăхрах нимĕç снарячĕсем ӳке-ӳке çурăлаççĕ, кĕçех пирĕн батарейăсем те ухлатма тытăнчĕç, пуç тăринче сывлăшри çапăçу пуçланчĕ пулмалла, самолетсем кĕрлени хăлхасене хупласах лартрĕ, пулеметсем таттисĕр шатăртатрĕç, анчах та эпĕ çаплах çак çĕр çинчи илемпе киленсе тăтăм... Мана вĕсем вăрçăчченхи лăпкă, телейлĕ пурнăçа, ешĕрекен уйсемпе çарансене, чечекленекен садсене аса илтерчĕç. Чĕрем ыратмаллах пăчăртанса илчĕ манăн.

«Пĕтĕм çĕршывăмăр чечекленетчĕ... Ак çак чечексем пекех илемлĕччĕ пурнăç... Анчах хурахла килсе тапăннă тăшман пирĕн чечексене таптаса тăкрĕ, пурнăçа пăсса ячĕ, чечекленекен пин-пин ялсемпе хуласене çунтарса, ишсе тăкрĕ, кĕлпе хăрăм туса хучĕ...»

Эп çавăн пек шухăшласа тăнă вăхăтра çĕрпӳртрен батальон командирĕ, капитан Чайка — çӳлĕ, патвар, пысăк кăвак куçлă украинец тухса тăчĕ.

— Салам, лейтенант! — аллине çĕклесе илчĕ вăл мана курсан.

— Салам, капитан.

— Эсĕ мĕн туса çӳретĕн кунта?

— Сан патна килсеттĕм те, çак чечексене курсан, ытараймасăр чарăнса тăтăм-ха...

— Килĕшет-им?

— Ан та кала! Малти линире кун пек ырлăх пулассине теприсем ĕмĕрне те ĕненес çук...

— Мĕншĕн? — терĕ капитан. — Çын пурăннă çĕрте пурте пулма пултарать. Эпир вут-çулăм ăшĕнче пурăнатпăр пулсан та, пирĕн илемлĕх туйăмĕ, эстетика тени çухалман-ха вĕт.

— Ку тĕрĕс, — килĕшрĕм эпĕ. — Çапах та, тупăсемпе чечексем хушшинче дистанци питĕ пысăк-çке.

— Йăнăшатăн, тусăм, — терĕ те мана хирĕç капитан, çĕрпӳрт умĕнчи тенкел çине ларчĕ. — Нимĕнле дистанци те çук вĕсем хушшинче. Пачах урăхла: вĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăраççĕ! Пирĕн тупăсем хамăрăн çĕршыва каллех чечекленекен сад пек тăвассишĕн пенине ăнланмастăн-им вара эсĕ?

— Ана ăнланатăп...

Эпир пируссем тивертсе ятăмăр. Капитан малалла калама тытăнчĕ. Вăл яланах кăшт «философиллерех»



каласма юрататчĕ те, халĕ те унăн сăмахĕ çавăн пекрех пулчĕ.

— Салтакăн чунĕ хытса, ним туйми пулса ларать, теççĕ хăшпĕрисем. Тĕрĕс мар вал. Ман шутпа, салтак чунĕ пуринчен те пуянтарах, мĕншĕн тесен вăл пурнăç хакне никамран та лайăхрах пĕлет, ăна никамран та хытăрах юратать. Пурнăçа юратса, вăл хăй пурнăçне шеллемесĕр вут ăшне кĕрсе каять... Пурнăçа юратакан çын, паллах, çĕр çинчи, çутçанталăкри мĕнпур ырлăха, çак çут хĕвеле те, сенкер пĕлĕте те, вăрмансемпе хирсене те, çарансемпе садсенчи чечексене те пĕтĕм чĕререн юратать. Вĕсемсĕр вăл пурăнма та пултараймасть, вĕсемсĕр унăн пурнăçĕ тулли пулмасть... Çавăнпа та салтаксем пушă минутсенче чечексем пăхса ӳстернинчен, вĕсемпе хăйсен чунĕсене йăпатнинчен ним тĕлĕнмелли те çук...

Капитан Чайка тĕрĕссине каларĕ. Эп унпа пĕтĕмпех килĕшрĕм.

Пĕр хушă, сăмах сасартăк пĕтсе ларнă пек, ним те чĕнмерĕмĕр, унтан эпĕ каллех умри клумба çине пăхса илтĕм те:

— Çапах та, кам тăрмашать-ха санăн ку... ботаникăпа?— тесе ыйтрăм. — Вĕренмен çынах мар пуль ĕнтĕ, специалист пулĕ...

— Пĕлетĕн эс ăна,— терĕ Чайка. — Санăн земляку вăл, чăваш... Мужик — во!— Капитан пуç пӳрнине çӳлелле çĕклесе кăтартрĕ. — Аллисем ылтăн унăн, тем тума та пултарать. Акă, пăх-ха...

Вăл китель кĕсйинчен дюр-алюминирен тунă, темĕн тĕрлĕ эрешлесе пĕтернĕ çутă портсигар туртса кăларчĕ.

— Çакна та вăл туса пачĕ...

— Чăваш, тетĕн?

— Чăваш çав. Эсĕ ун çинчен пĕлтĕр кĕркунне, хамăр Ржев тăрăхĕнче çапăçнă чух, хаçатра та çырса кăлартăн. Эсĕ ху, тен, ун çинчен манса та кайнă пулĕ, анчах эпĕ хамăн боецсем çинчен çырнисене пурне те пухса пыратăп...

— Мĕн пирки çырнăччĕ-ши?

— Дубки ялĕ çумĕнчи «тухатнă армана» астăватăн-и?

— Çавă-и вăл? Çав арманти мелник-и?

— Шăп çавă.

Дубки патĕнчи çил арманне эпĕ нихçан та манма пул-

тарайман. Пĕр хушă ун çинчен пĕтĕм дивизи калаçрĕ вĕт. Ытла та тĕлĕнмелле истори пулса иртрĕ унта.

Октябрь праçникĕ умĕн темиçе кун малтан, сĕм тĕттĕм каç, çак Чайка капитанăн батальонĕ тăшман йышăннă Н. станцине сасартăк тылран кайса тапăннă та унти гарнизона пĕр çын юлми аркатса тăкнăччĕ. Пирĕн алла унта трофейсем нумай лекнĕччĕ, вĕсен шутĕнче темиçе вагон тырă — ырашпа тулă пулнă. Ăна гитлеровецсем таврари ялсенче çаратса пухнă та Германие ăсатма хатĕрленĕ-мĕн, анчах çул юсавлă пулман пирки хăвăртах ăсатайман. Халь вара хамăрăн тырă хамăр аллах лекрĕ. Дивизи командирĕ ăна халех авăртса çăнăх тума хушнă:

— Праçникре салтаксем кулачă çиччĕр!

Подразделенисенче арман ĕçне пĕлекен çынсене шырама тытăннă. Ун пеккисем часах тупăннă, вĕсем хушшинче Чайка батальонĕнчи пулеметчик, Ишлей чăвашĕ Иван Фомин, пулнă. Пирĕн телее, малти линирен пĕр-икĕ километртра, Дубки ялĕ хыçĕнчи сăртра, пĕр çил арманĕ вут-çулăмран темле çăлăнса юлнă-мĕн. Боецсем ăна кайса тĕрĕсленĕ те унăн шалти «механизмĕсем» чиперех пулнине курнă, вара часрах çунаттисене юсаса ĕçе янă.

Çак арман тăшман енчен те лайăх курăннă. Унăн çунаттисем хăйсем еннелле пăхсах çаврăнма тытăннине асăрхасан, фашистсем ăна артиллерирен пеме тапратнă. Пилĕк снаряд, вуннă, çирĕм, вăтăр кăларса янă вĕсем сăрт çинче пĕр-пĕччен çаврăнса тăракан арман çине, анчах ниепле те лектереймен. Тăшмансенчен мăшкăлланă пекех, вăл пурпĕр çунаттисемпе сулкаласа тăнă...

Тепĕр кун ирхине, арман çаплах ĕçленине кура, тарăхнипе урсах кайнă фашистсем ун çине темиçе хут артналетсем тунă. Взрыв хумĕпе арманăн икĕ çунатти татăлса аннă, анчах каç пуласпа пирĕн салтаксем вĕсене çĕнĕрен туса çакнă. Арман пӳлмине каллех çăнăх юхма тытăннă...

Виççĕмĕш кунĕнче нимĕçсем каллех налет туса арманăн хăрах енне ишĕлтерсе антарнă. Фомина хăйне аллинчен амантнă, унăн икĕ помощникĕ пачах стройран тухнă, анчах арман çаврăнма чарăнман. Нимĕçсем кăна мар, хамăрăннисем те тĕлĕннĕ:

— Чăнах та, такам тухатнă пуль ку армана!

Пĕр эрне хушшинче тăшман çак арман çине виççĕр снаряда яхăн кăларса янă, анчах çав хушăрах Фомин трофейлă тырра пĕтĕмпех авăртса пĕтернĕ...

Çавăн хыççăн вара эпĕ унăн паттăрлăхĕ çинчен хаçатра çыртăм.

— Халь ăçта вăл санăн?— ыйтрăм Чайкăран. — Чиперех-и, сывах-и?

— Лайăхах пурăнать,— терĕ капитан. — Малти позицире «максимпа» ларать-ха. Кăмăлу пулсан, çитсе курăпăр. Унта тата тĕлĕнмеллерех япала пур...

— Мĕн-ши тата?

— Патне çитмесĕр каламастăп...

Эпĕ хаваслансах килĕшрĕм те, тепĕр çур сехетрен эпир тарăн та сарлака çырма хĕррипе кукăр-макăррăн алтса кайнă траншейăна пырса кĕтĕмĕр. Çырма леш енче, темиçе ретлĕ пралук картисем хыçĕнче, нимĕçсем ларнă. Таврара шăпахчĕ, хутран-ситрен кăна уйрăм-уйрăм пульăсем сăпсасем пек шăхăрса иртсе каятчĕç. Тĕл пулакан салтаксене саламласа, траншея тăрăх чылай утрăмăр та пĕр блиндажа пырса кĕтĕмĕр,— кунта «пулемет йăви» пулнă.

— Салам, ăмăрткайăксем! Салам, Фомин, салам, Ахметов!

— Здравия желаем, капитан юлташ!— йăрстах тăсăлса честь пачĕç боецсем.

Чайка каштасенчен тунă сак çине ларчĕ, боецсем мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ иккен, ĕнерпе паян фрицсем питех чăрмантарман. Ирхине зенитчиксем пĕр «Юнкерса» çапса антарнă. Сывлăхсем пурин те аван, наступлени хăçан пуçланассине пĕлменни кăна пăшăрхантарать.

— Траншея стенисене шинель аркисемпе шăлса çӳресе йăлăхрăмăр-çке-ха...

— Нумай юлмарĕ ĕнтĕ кĕтесси, кун чухлĕ тӳснине тӳсес пулать,— лăплантарчĕ Чайка. Унтан Фомин еннелле çаврăнчĕ те:

— Эп сан патна хăна илсе килтĕм,— терĕ. — Паллатăн-и?

— Паллатăп, пĕлтĕр тĕл пулса калаçнăччĕ... — терĕ Фомин кăмăллăн.

— Лейтенант чечексене питĕ юратать, кăтарт-ха хăвăн пултарулăхна, тĕлĕнтĕр пĕрре,— куçне чеереххĕн хĕссе илчĕ комбат.

— Кăтартма пулать, анчах перкелеççĕ унта... — терĕ ăна хирĕç Фомин.

Эпĕ вĕсем мĕн çинчен калаçнине пĕртте ăнланмарăм.

— Нимех те мар, тӳрех персе антармӗҫ,— аллипе сулчӗ Чайка.— Атя, тухса курар.— Вӑл тӑчӗ те блиндаж алӑкӗ патнелле утрӗ, ун хыҫҫӑн эпир те тухрӑмӑр. Тепӗр самантран вӑл траншея хӗррисенчен тытса вӑшт кӑна ҫӳле хӑпарса тӑчӗ. Эпӗ те ҫавӑн пекех турӑм.

— Пӑх ӗнтӗ, лейтенант...

Ак япала! Бруствер хӗррипе — унталла та, кунталла та — тӑршшипех чечексем ӳсеҫҫӗ иккен. Ансӑртран тухса ларса ҫурӑлнӑ чечексем мар, ҫын аллипе лартнӑ чечексем!.. Хӗрлӗ, сарӑ, кӑвак, сенкер... Ҫав тери илемлӗ, чуна йӑпатакан, куҫа ачашлакан чечексем...

— Куртӑн-и?

— Куратӑп...

Ҫывӑхрах пульӑсем пӑрҫа сапнӑ пек тӑкӑнса тусан сирпӗтрӗҫ. Пире тӑшман пулеметчикӗсем асӑрхарӗҫ пулмалла ӗнтӗ. Ирӗксӗрех траншейӑна анмалла пулчӗ.

— Эсир, писательсем, ялан контрастсем шыратӑр,— терӗ Чайка, эпир каллех блиндажа таврӑнсан. — Ак сана контраст. Фашист салтакӗ иртнӗ ҫӗрте — вилӗм, асап, вут-ҫулӑм, кӗл те кӑмрӑк... Пирӗн салтак малти позицире те чечек ӳстерет! Ӑнланатӑн-и, мӗне пӗлтерет вӑл?

— Паллах, ӑнланатӑп...

— Чечек — телейлӗ пурнӑҫ символӗ вӗт-ха. Ҫапӑҫусенче пиҫнӗ салтак хирти чечеке татса илсе пӑхать пулсан, вӑл хӑйӗн, пӗтӗм ҫӗршывӑн телейӗ ҫинчен ӗмӗтленет, ҫав телее мӗнле тӑвасси ҫинчен шутлать... — Капитан тӑрук Фомин еннелле ҫаврӑнчӗ.— Вӑрҫӑ хыҫҫӑн эсӗ мӗн тума шутлатӑн?

— Колхозра питӗ пысӑк сад тума шутлатӑп,— пӗр тытӑнса тӑмасӑр ответ пачӗ салтак. — Вӑрҫа киличченех тытӑннӑччӗ те — кансӗрлерӗҫ... Халь пӗтсе ларчӗ пуль ӗнтӗ, пӑхакан ҫук...

— Унта чечексем те ӳстеретӗн ӗнтӗ?

— Чечексӗр мӗн илемӗ пултӑр?— Вӑл кӑштах шухӑша кайнӑ пек пулчӗ те хуллен хушса хучӗ: — Чечексӗр — илем ҫук, илемсӗр — пурнӑҫ та пурнӑҫ мар.

— Тӗрӗс, Фомин. Пурнӑҫа ӑна питӗ илемлӗ тӑвас пулать. Пур енчен те... Этемӗн чунӗ ялан юрласа тӑтӑр!

— Ҫавӑншӑн ҫапӑҫатпӑр та, капитан юлташ... Вӑрҫине часрах пӗтересчӗ кӑна, кайран мӗн тумаллине пӗлеттӗмӗр-ха ӑна!— терӗ юлашкинчен Фомин. — Ӑс та, вӑй та ҫитерӗттӗмӗр...

* * *

Çакăн хыççăн ăна пĕрре те курма тӳр килмерĕ. Кĕр енне, эпир наступлени туса пырса Белоруссие, Сож шывĕ хĕррине çитсен, капитан Чайка мана пĕррехинче хăйĕн юратнă пулеметчикĕ йывăр аманни, ăна тыла ăсатмалла пулни çинчен каласа пачĕ.

— Питĕ шел, çав тери лайăх салтакчĕ,— терĕ вăл.

Унтанпа нумай çулсем иртрĕç. Вăхăт чылайăшне мантарать... Фронтри «чечек ăсти» çинчен те маннăччĕ эпĕ. Анчах пулаççĕ вĕт пурнăçри телейлĕ тĕлпулусем! Ансăртранах пирĕн çулсем пĕрлешрĕç.

Фомин киле таврăннă иккен, таврăннă та — тӳрех хăй юратнă ĕçе тытăннă, хăйĕн çутă ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ. Унăн сачĕ пек сад районĕпе те çук тет авă...

Кăнтăрла иртсен пĕр пилĕк сехетре Иван Фомич хуларан килсе çитрĕ. Вăл правление кĕрсенех, эпир пĕр-пĕрине палласа илтĕмĕр. Сахал улшăннăччĕ вăл, çамки çинчи картсем кăна хушăннă пек туйăнчĕ. Сăнĕ çав-çавах кăмăллă, йăваш, калаçăвĕ лăпкă, сăпайлă.

Вăл мана хăй патне илсе кайрĕ. Вăрçă хыççăн çĕнĕ пӳрт туса лартнă — илемлĕ, тăп-тăп, чуспа витнĕ «пятистеннăй» пӳрт. Пӳрчĕ умĕнче — сенкер сăрпа сăрланă решетке карта, хыçĕнче — çырла йывăççисем, чечексем. Пӳртĕнче те питĕ тирпейлĕ, таса. Чӳречисем çинче — тĕрлесе илемлетнĕ шурă чаршавсем, сĕтелне кăвакрах çиттипе витнĕ, ун тавра — магазинран илнĕ хыçлă пукансем, малти кĕтесре радиоприемник тĕкĕр пек çуталса ларать, стена çинче пысăк çĕнĕ сехет шаккать. Кашни япала хăй вырăнĕнче — кил хуçисем йĕркелĕхе, тирпее юратакан çынсем пулнине палăртаççĕ...

Нумайччен калаçса лартăмăр эпир. Вăрçăрисене те аса илтĕмĕр, хальхи çинчен те калаçмаллисем сахал мар тупăнчĕç. Эпĕ унăн сачĕ хама кăмăла кайни çинчен каласан, вăл çав тери хавасланса калаçма тытăнчĕ.

— Сахал-ха ку, сахал!.. Эпир пĕтĕм яла садсемпе карталаса илесшĕн, пĕр çырма та, пĕр усăсăр çĕр лаптăкĕ те ахаль ан выртăр... Колхозниксен те килренех улма-йывăç, çырла-чечек пултăр. Тăватпăрах эпир ăна! Пире кура ытти ялсем те çавăн пекех тăваççĕ акă, ăна эпĕ шансах тăратăп.

— Питĕ лайăх шухăш,— ырларăм эпĕ. — Ун çинчен эсĕ вăрçăрах ĕмĕтленеттĕн çав...

— Халь вăй илтĕмĕр ĕнтĕ, мĕн шутласа хунине пурне те тума пулать! Телейĕ хамăр алăра-çке вăл, тăрăшни кăна кирлĕ!

...Урамра тĕттĕмленме пуçласан, Иван Фомичăн килйышĕ пуçтарăнса çитрĕ: арăмĕ фермăран таврăнчĕ, садран килнĕ Марине ĕне суса, выльăхсене хупса кĕчĕ. Кăшт тăрсан пĕр вуник çулхи ывăл ачи те урамран чупса пычĕ.

— Нина килмерĕ-и?— ыйтрĕ вăл хашкаса.

— Çук, килмен,— терĕ амăшĕ,— килме пулнăччĕ-им?

— Шăматкун ман валли çамрăк техниксен кĕнекине илсе килетĕп, терĕ. — Ача кăмăлсăр пулни сисĕнчĕ. — Миçе хут улталарĕ ĕнтĕ...

— Илсе килĕ-çке ĕнтĕ, мĕн питĕ васкатăн?— пӳлчĕ ăна Марине.

— Кайран кĕнекисем пĕтеççĕ акă,— çаплах лăпланмарĕ ача. — Мана халех кирлĕ, чертежсăр моделĕ ниепле те пулса çитмест...

— Кам вара сана ун пекех кӳрентерекен çын?— ыйтрăм эпĕ, юриех ун майлă пулас шутпа.

— Нина ара...

— Вăталăх хĕр манăн,— терĕ Иван Фомич,— районта ĕçлет те-ха вăл вăхăтлăха...

— Ăçта ĕçлет?

— Хаçат кăларнă çĕрте.

Эпĕ тӳрех тавçăрса илтĕм: ĕнер каç редакцинче курнă çамрăк хĕр — Иван Фомич хĕрĕ пулнă иккен, урăх никам та мар!

«Пăх-ха, епле чее, хăйсем патне килме хушать, хăйĕн çинчен каламасть...»— кулса илтĕм ăшăмра. Çавăнтах ашшĕне:

— Паллатăп эп ăна, пит маттур хĕрача,— терĕм.

— Маттурри-мĕнĕ... — Иван Фомич кăштах тытăнса тăчĕ. — Пăртак хирĕççе илтĕмĕр-ха эпир унпа. Эп ăна агронома вĕренме ярасшăнччĕ, вăл хăлхана та чикесшĕн мар, кĕнеке ĕçне вĕренетĕп, терĕ. Темле, пĕчĕкренех çав еннелле туртăнса пычĕ те — юрататех пулмалла ĕнтĕ. Шарламарăм вара...

— Ун пек специалистсем те питĕ кирлĕ вĕт. Çамрăксенчен хатĕрлемесен, ăçтан пулччăр вĕсем?

— Хăйĕнне хăй пĕлтĕр ĕнтĕ, пирĕн ăспа пурăнас çук вĕсем,— хутшăнчĕ амăшĕ.

— А ку кам пуласшăн тата сирĕн?— ывăл ачи енелле пуçпа сулса илтĕм эпĕ.

— Тракторист пулатăп, тет-ха. Кунĕн-çĕрĕн тимĕр таткисемпе, темле гайкăсемпе тăрмашать...

— О-о, ку питĕ лайăх ĕмĕт!— мухтарăм эпĕ.

Килтисем кăмăллăн кулса илчĕç.

— Пулмастăп тетĕр-и?— çиленнĕ пек пулчĕ ача.— Курăр акă, ÿсем кăна!

— Пулатăн, ывăлăм, пулатăн!— терĕ вара ашшĕ.— Лайăхрах вĕренме тăрăш, пулатăн.

...Каçхи апат хыççăн та эпир нумай калаçса лартăмăр. Ялти пур çĕн хыпарсем çинчен те пĕлтĕм эпĕ: çак кунсенче колхоз «брабансон» ăйăр туянни çинчен те, лавккана илсе килнĕ вунă радиоприемнике ик кунтах сутса пĕтерни çинчен те, кăçал кашни гектартан çирĕм центнертан кая мар тырă илессине те, шкулти учительсем те, колхозри агрономпа зоотехник та çак ялсемех пулнине те, колхоз утарĕ сакăрвун вĕллене çитнине те, çырмари пĕвесенче пулă нумай пулнине те, тем те.

Ирхине мана Иван Фомич килйышĕ чи çывăх тăвана ăсатнă пекех ăсатрĕ.

— Татах килсе курăр пирĕн пата çакăн пек. Акă часах панулми пиçсе çитет...

Эпĕ çул тăршшипех вĕсем çинчен шухăшласа пытăм:

— Чăн-чăн совет çыннисем çав... Ырă кăмăллă çынсем. Ашшĕ-амăшĕ те, ачисем те!

1953,
Шупашкар.





## ХАЛĂХ ЫВĂЛĔ

*Очерк*

Çуркунне. Уйсенче юр ирĕлсе пĕтнĕ ĕнтĕ, сăртлăрах выранăсенче çĕр типме те пуçланă, анчах çырма-çатрасенче, шырлансенче унта та кунта шурă юр лаптăкĕсем курăнаççĕ-ха. Çанталăк ăшă, уяр, сенкер тӳпе çуса тасатнă пек таса, ниçта пĕр пĕлĕт татки те çук; кун пекех пулсан, тепрер эрнерен çуракине те тухмалла пулĕ...

Вăхăт — шăп кăнтăрла. Сарлака уй урлă тăсăлса выртакан лаша çулĕ хĕррипе, такăрлатнă сукмак тăрăх, умлăн-хыçлăн икĕ çын пыраççĕ. Малта пĕр вуникĕ çулхи арçын ача утать; вăл саплăк çине саплăк хунă кĕске пиншак, хура сурăх тирĕнчен çĕленĕ çĕлĕк тăхăннă, уринче — кивĕ çăпата, çурăмĕ хыçне кушил çакнă. Ун хыççăн, сылтăм аллипе туя çине тайăнса, пусмассерен уксахласа, сайрарах сухаллă, шуранка сăнлă, пĕр хĕрĕхелле çитнĕ арçын пырать. Ку ĕнтĕ арçын ачан ашшĕ

пулас. Вăл та çурăмĕ хыçне михĕ кутамккаласа çакса янă.

Инçетрен килеççĕ пулмалла вĕсем, питĕ ывăннă курăнать, урисенчен чул çыхса янă пекех аран-аран ярса пусаççĕ...

— Шыв ĕçес килет манăн, пĕтĕм çăвар маччи типсе ларчĕ,— кушăрканă тутисене çуласа илет ача, ашшĕ çине салхуллăн пăхса.

— Тӳс ĕнтĕ пăртак, Мишша, часах акă яла çитетпĕр. Унта ларса канăпăр, çырткалăпăр, шывне те тăраничченех ĕçĕпĕр...

Татах ним чĕнмесĕр утаççĕ ашшĕпе ывăлĕ. Çухрăм, иккĕ, виççĕ. Тепрер сехетрен тин вĕсем пĕр яла пырса кĕреççĕ те, ик-виç кил тĕлĕпе иртсенех, япалисене хӳме çумĕнче выртакан пĕрене çине хывса хураççĕ. Ачи часрах килхушшине кĕрсе шыв ыйтса ĕçет,— пĕр курка, иккĕ, унтан каллех урама тухса ашшĕпе юнашар ларать те вăл хуçса панă тип çăкăра кăшлама тытăнать. Хырăм выçсан, тип çăкăр та питĕ тутлă-çке вăл!

Урамăн тепĕр енче ачасем мечĕкле выляççĕ. Пĕри мечĕке ывăтса парать, тепри калак пек тунă хăмапа çапса ярать, виççĕмĕшĕ, ăна ик аллипе тытса, тараканнисене перет... Шавлаççĕ ачасем, кулаççĕ, тавлашни те пулать. Мишша вĕсем çине çав тери ăмсанса пăхса ларать. Ывăннă пулин те, вăл халех сиксе пырĕччĕ ачасем патне, мечĕке никамран та хытăрах перĕччĕ, пуринчен те çивĕчрех чупĕччĕ! Анчах вăйă çинчен шухăшламалли çук çав унăн, кĕçех акă ашшĕ хăйĕн ыратакан урисене кăшт кантарать те, вĕсем каллех тăрса малалла каяççĕ. Утмалла-çке вĕсен, шав утмалла, ăçта та пулин ĕç тупăнсан тин чарăнма пултараççĕ ашшĕпе ывăлĕ...

Анат енчен вĕсем патне пĕр ватăрах çын çывхарса пычĕ. Вăл та, Мишша ашшĕ пекех, туяпа, уксахлать.

— Ара, Степан Ефимч, эсĕ тем ку!— аллине çĕклесе чылай аякранах саламларĕ вăл. — Ай, курманни нумай пулать-çке сана... Аçталла çул тытрăн капла?

Вăл пĕренесем çинче ларакан ашшĕпе ывăлне те алă пачĕ те, вĕсемпе юнашар ларса, чĕлĕм чĕртнĕ май çине-çинех тĕпчеме тытăнчĕ:

— Ну, мĕнле пурăнкалатăн кутăруçăн, тусăм? Тавай, каласа кăтарт... Килӳ-йышу мĕнле? Ку — сан ывăлу пуль? Ачусем татах та пур-и?

— Мухтанмаллах мар, тăванăм,— терĕ ăна хирĕç

Мишша ашшӗ, ассӑн сывласа илсе. — Сывлӑхӑм начартарах, аманнӑ ури пӗрмай ыраткалать, час-часах кӑкӑрсӑр пулса ларатӑп, сывлӑш ҫитмест... Ачисем — ултӑ тан, пӗринчен тепри пӗчӗккӗ, ак ҫак чӑн асли те вуниккӗ ҫине тин пусрӗ-ха. Кӑшт та пулин укҫа ӗҫлесе тупас тесе, кӑмакасем купаласа ҫӳретӗп мар-и... Хама пулӑшма ывӑла та шкула ҫӳреме пӑрахтарсах илсе тухрӑм ак, мӗн тӑвас тетӗн? Анчах ӗҫӗ те питех тупӑнса каймасть-ха. Ӗнертенпе ултӑ ял витӗр тухрӑмӑр — кӑмака тутаракансем тупӑнмарӗҫ, пӗтӗм ӗҫӗ те пӗр ҫынна мӑръе юсаса пани ҫеҫ пулчӗ. Сирӗн ялта та илтӗнмест пуль кӑмака купалаттарас текенсем?

Ҫын шухӑша кайнӑ пек пулчӗ, унтан аллинчи туйипе ҫӗре так! чышса илчӗ.

— Пур, Степан Ефимчӑ! Ӗҫ тупатпӑр! Халь кӑна колхоз правленинче калаҫса ларчӗҫ: кӗнчелерти кӑмакасене иккӗшне те юсас пулать, иртнӗ хӗлле те хӗлӗпех шӑнса лартӑмӑр, теҫҫӗ. Кирпӗчӗ пур вӗсен, тӑмне-хӑйӑрне тупса параҫҫӗ. Атя, халех председатель патне каятпӑр, тусӑм...

— Ой, тем пекехчӗ-ҫке, тем пекехчӗ ӗҫ тупӑнсан! Ахаль утса йӑлӑхрӑмӑр ӗнтӗ... — каллех йывӑррӑн сывласа илчӗ ача ашшӗ.

— Пулать, пулать ӗҫ!— хавхалантарчӗ ӑна юлташӗ.

Пӗр эрне ӗҫлерӗҫ вара ашшӗпе ывӑлӗ ҫак ялти колхоз правленинче. Степан Ефимчӑ кӑмакисене сӳтсе тӑкрӗ, кив кирпӗчсене тасатрӗ, унтан ҫӗнӗрен купалама тытӑнчӗ; Мишша килхушшинчен ҫӗнӗ кирпӗч ҫӗклерӗ, тӑм ҫӑрчӗ, ӑна витре ӑшне тултарса кӗртсе пачӗ. Хытӑ ӗҫлерӗ вӑл, ашшӗн ӗҫне епле те пулсан ҫӑмӑллатас тесех тӑрӑшрӗ. Правлени таврашне хутран-ситрен пырса тухакан хӗрарӑмсем, вӑл мӗнлерех ӗҫленине курса, пӗрпӗрин хушшинче питех те хӗрхенсе калаҫрӗҫ ун пирки:

— Ай-уй, мӑнтарӑн, шӑмшаккине пӗчӗклех ҫӗмӗрет вӗт! Ҫавӑн чухлӗ кирпӗч йӑт-ха эсӗ!

— Тӑмне ҫӑрасси те ҫӑмӑл мар, мӗн каласси пур.

Анчах, темле йывӑр пулсан та, Мишша хӑй ывӑннине кӑтартасшӑн пулмарӗ. Юратман вӑл хӑйне хӗрхеннине, кӳрентернӗ пекех туйӑннӑ ку ӑна, мӗскӗн вырӑнне хунӑн туйӑннӑ.

Пурӑнасса вӗсем хайхи леш уксах ҫын патӗнче, хӑйсене ӗҫ тупса паракан килӗнче пурӑнатчӗҫ. Вӑл — эпир ӑна Иван пичче, тейӗпӗр,— пӗрремӗш тӗнче вӑрҫинче

Мишша ашшĕпе пĕрле пулнă иккен, вунулттăмĕш çулта вырăс çарĕсем Австрие çĕмĕрсе кĕрсе кайнă чух иккĕшĕ те пĕр снарядран аманнă, кайран госпитальре те пĕрле выртнă, киле те пĕрлех таврăннă. Фронтра çуралнă туслăх — çав тери çирĕп, ĕмĕре пыракан туслăх вăл. Çавăнпа та Иван пичче халĕ Степан Ефимчăпа унăн ывăлне чи çывăх тăвансене пăхнă пекех пăхса усрарĕ. Ерçне хушăра вĕсем ĕçленĕ çĕре те чĕлĕм туртма пĕрре кăна мар пырса ларчĕ.

— Маттур санăн ывăлу, ĕçчен çын пулать,— терĕ вăл пĕррехинче Мишша ашшĕне, вĕсем ĕçрен таврăнса апат çиме ларсан. — Ӳссен хăвáнтан та ирттерет акă вăл, тупата! Паян пăхса тăтăм та, мăн çын пекех тĕрмешет вĕт, шĕпĕн...

— Ĕçлемесен çăкăр çиме çук-çке,— терĕ ăна хирĕç Степан Ефимчă. — Анчах «çăкăр хурчĕсем» пирĕн — пӳрт тулли, çăварĕсене курак чĕпписем пекех караççĕ: «пар, пар, пар...»

— Вăл çавăн пек ĕнтĕ,— килĕшрĕ Иван пичче. — Анчах куна, Мишшине, эсĕ çак ĕçпе ĕçлеме çине тăрсах вĕрент, тулкки пулать унран. Кам пĕлет, тен, кайран чăн-чăн каменщик пулса тăрĕ! Халĕ, ав, пур çĕрте те епле пысăк стройкăсем пуçланса кайрĕç. Пиншер, вуншар пин каменщик, бетонщик, штукатурщик кирлĕ вĕт унта, ĕç — мăй таран!

— Малтан ӳсес пулать-ха...

— Уншăн ан хăра, ӳсет! Пĕрре хăйĕн çулĕ çине тухсан, хăех каять малалла. Халь ĕлĕкхи пек мар вĕт — çулсем уçă вĕсемшĕн. Хуть те мĕне вĕрен, хуть те мĕнле ĕç суйласа ил хăвна валли, ан ӳркен кăна! Ĕлĕкхипе танлаштарсан, мĕн каламалли пур...

Вĕсем калаçнине пĕчĕк Мишша тимлесех итлерĕ, тавçăрса илчĕ: пур çĕрте те халĕ пысăк çуртсем, заводсемпе фабрикăсем тăваççĕ, вĕсене тунă çĕрте ĕçлекенсем нумай кирлĕ... Кун çинчен шкулта та вĕрентеççĕ вĕт. Днепрострой, Магнитострой, Автострой тата ытти «стройсем» çинчен учебниксенче те çырнă, журналсенче ӳкерчĕксем те нумай, сăвăсем те тухаççĕ.

Анчах вĕсене Мишша хăй куçĕпе курĕ-ши хăçан та пулин? Курасси пулмасть пулĕ çав... Акă, вĕсем кунти кăмакасене туса пĕтереççĕ те каллех ялсем тăрăх каяççĕ. Каллех кирпĕч йăтмалла, тăм çăрмалла... Ашшĕ, чирлĕскер, ĕçлеме инçете каяс çук, пĕччен тухса кайма

Мишша ытла пĕчĕккĕ-ха, ăна ĕçе те никам та илес çук. Тата, вăл кайсан, ашшĕне пулăшакан та пулмасть. Кампа ĕçлетĕр вăл? Ĕмĕрех хальхи пек çӳремелле пулать пуль çав Мишшан...

— Хитекушкăнĕнчи Уксах Çтаппан тунă кăмака лайăх туртса çунать, пӳрте тĕтĕм тухнине ĕмĕрне кураймастăн, сахал вутăпах вĕри пулать, кукăльсем наччас пиçсе тухаççĕ,— тенĕ Степан Ефимч ĕçĕ пирки Элĕк тăрăхĕнче. — Ытарайми кăмакасем тăвать вăл!..

Анчах вăрçăра йывăр аманса килнĕ çын хытах ĕçлеймен, шав сывмарланнă. Çавăнпа та вăл çак ĕçе хăйĕн аслă ывăлне вĕрентме васканă: çемье сасартăк ашшĕсĕр тăрса юлас пулсан, кам тăрантарĕ ăна? Пĕтĕм йывăрлăх Мишша çине тиенет вĕт ун чух... Çав шутпа ĕнтĕ ашшĕ хăйĕн ывăлне çуркуннехи шыв-шур вăхăтĕнчен пуçласа хура кĕркуннечченех хăйĕнпе пĕрле илсе çӳренĕ.

Хăвăрт хăнăхса пынă Мишша кăмака тăвас ĕçе. Ашшĕпе иккĕшĕ пĕрле ĕçлесе, халĕ вĕсем тыткаламалăх укçа та тупкаланă. Анчах çав вăхăтрах вĕсен çемйинче сасартăк пысăк хурлăх пулса тăнă: чирлекелесе пурăннă амăшĕ кĕтмен çĕртен вилсе кайнă. Унтан ашшĕ те пĕрмай чирлеме пуçланă, ĕçлейми пулнă.

Степан Ефимч çемйи ун чухне колхозра ĕçлесе хăйсене çителĕклĕ тырă тăвайман, унăн чăн аслă ачи Мишша та вунтăваттăра çеç пулнă вĕт-ха! Питĕ йывăр вăхăтсем çитсе килнĕ вĕсемшĕн...

Пĕррехинче Степан Ефимч патне кӳршĕ ял çынни пырса кĕнĕ.

— Манăн малти пӳртри пĕчĕк кăмака — подтопкă йăтăнса анать, пăсса купаласа параймăн-ши?— тенĕ вăл кил хуçине.

— Тем пекех пырăттăм та, чирлетĕп-çке, халăм çук,— ассăн сывласа илнĕ Степан Ефимч. Хăй çавăнтах çĕтĕк кĕпине сапласа ларакан аслă ывăлĕ çине пăхса илнĕ.

— Мишша, тен, эсĕ кайса туса парăн?

— Кайма пултаратăп, ма каяс мар?— тенĕ ывăлĕ, ним тытăнса тăмасăрах.

Кӳршĕ ял çынни ашшĕпе ывăлĕ шӳтлесе калаçаççĕ пулĕ, тесе шутланă та тухса каяс шутпа ура çине тăнă.

— Урăх çĕрте шырас пулать эппин пĕр-пĕр маçтăр,— тенĕ вăл. — Санах тутарас тесеттĕм те — май килмерĕ...

Вăл аллине тăсса сывпуллашма тăнă, анчах Степан Ефимч ăна çавăнтах чарнă:

— Эс тăхта-ха, тăхта! Эп сана кулса мар, чăнласах калатăп. Ман Мишша пултарать вăл...

— Çавăн пек пĕчĕкскер кăмака тума пĕлет-и?—иккĕленсе илнĕ ют çын. — Ан çилен те эсĕ, анчах шанаймастăп эп ăна... Тем тесен те, кăмака вăл вăхăтлăх япала мар-çке, ăна кашни çул тумастăн.

— А эсĕ ан хăра, шанчăклах пулать!— ĕнентернĕ Степан Ефимч. — Ытах шанмастăн пулсан, пĕр-икĕ хут хам пырса пăхăп, япăх пулмĕ.

— Апла татах хуть...

Тепĕр кунне, ашшĕн хатĕрĕсене илсе, Мишша çав çын патне кайса ĕçе тытăннă. Вăл мĕнле ĕçленине ашшĕ чăнах та кая-кая сăнанă, анчах хăй пĕр кирпĕч те тытса хуман, сăмахпа калакаланă çеç.

— Хăй тĕллĕн ĕçлесен, çын хăвăртрах вĕренет...

Мишшан пĕрремĕш кăмаки çав тери лайăх пулса тухнă, хутса ярсанах вăл пăравус пек кĕрлесе çунма тытăннă.

— Чăн та маттур иккен эс, Мишша! — çурăмĕнчен лăпкаса илнĕ ăна кил хуçи тулли кăмăлпа...

Çавăн хыççăн, кĕркуннеччен, Мишша тата темиçе çынна кăмакасем туса панă. Ун çинчен халăх хушшинче ырă ят сарăлнă:

— Пĕчĕклех маçтăр пулса тăчĕ вĕт çав ача!

Анчах кăмака тăвасси — ялан тупăнакан ĕç мар çав, пĕр ун çине çеç шанса пурăнма йывăр. Çавăнпа та Мишша тимĕрçе вĕренме шут тытнă; тимĕрçĕ валли ĕç çулла та, хĕлле те туллиех. Вара вăл ялти ватă тимĕрçĕ патне лаççа çӳреме тытăннă, ăна пулăшнă, лешĕ мĕнле ĕçленине сăнанă.

...Пĕрре, кĕтмен çĕртен, ăна колхоз правленине чентернĕ. Хытă тĕлĕннĕ кун пирки Мишша: мĕн тума чĕнеççĕ-ши? Пĕр-пĕр ĕç хушасшăн-ши? Ятлама сăлтавĕ çук пек... Хăра-хăрах кĕнĕ председатель патне. Анчах кăлăхах пăшăрханнă иккен вăл.

— Акă мĕн, Мишша,— тенĕ ăна председатель,— эсĕ тимĕрçĕ ĕçне юрататъ тенине илтрĕм эпĕ. Тĕрĕс-и ку сăмах?

— Тĕрĕс... Камăла каять мана ку ĕç.

— Чăн-чăн тимĕрçех пулас килет-и вара санăн?

— Килет.

— Апла пулсан, эпир сана вĕренме ярăпăр. МТС-ра тăхăр уйăхлăх курс уçăлать. Вĕренсе тухатăн та хамăр патах таврăнатăн. Пире тимĕрçĕ ак çапла таранах кирлĕ!— Председатель хăйне шĕвĕр пурнипе мăйĕнчен сĕрсе илнĕ. — Мĕн калăн ĕнтĕ çакăн пирки?

— Ярăр!— хаваслансах ответ панă Мишша. — Атте те чарас çук мана унта кайма!

— Аçупа калаçрăм ĕнтĕ эпĕ, вăл хирĕç мар, анчах санпа хăвăнпа калаçма хушрĕ, вăл халь хăйĕншĕн хăй хуçа, терĕ... — çемçен кулса илнĕ колхоз председателĕ.

— Питĕ аван апла пулсан!

Çапла вара вунпиллĕкри Мишша тата тепĕр ĕçе вĕреннĕ. Курсран таврăнсан колхоз тимĕрçи пулса тăнă та вăл, пĕтĕм çамрăк хастарлăхпа ĕçе тытăннă. Ялхуçалăх машинисене юсанă, урапа кустăрмисене шинланă, колхозри çĕнĕ çуртсем валли кирлĕ тимĕр япаласем тунă. Ырми-канми ĕçленĕ...

— Ылтăн аласем пирĕн Мишшан,— тенĕ ун çинчен колхозниксем,—çамрăк пулин те, тем тума та пултарать!

...Унтан вăрçă пуçланнă. 1941 çулта Мишшан çара кайма çул çитмен пулнă-ха, вăл халлĕхе килтех пурăннă. Пĕр-ик уйăх хушшинчех ялта пĕр вăйпитти арçын та юлман, пурте фронта кайса пĕтнĕ, çавăнпа та колхозри пĕтĕм ĕç хĕрарăмсемпе ӳссе çитмен çамрăксем çине тиеннĕ. Пурне те тумалла пулнă вĕсен: кăçалхи тырпулне пуçтарса кĕртмелле, килес çул валли акса хăвармалла, выльăх апатне те хатĕрлемелле, вутти-шанкине те касмалла, çулĕсене те юсамалла, тем те... Пурте фронт валли! Тыл фронта мĕн кирлине çителĕклĕ парса тăмасан, ирсĕр тăшмана çĕнме çук. Комсомолец Михаил Степанов çакна питĕ лайăх пĕлнĕ, çавăнпа та вăл ырми-канми ĕçленĕ, ыттисене те ĕçлеме хавхалантарнă.

— Эпир фронт валли панă кашни ытлашши пĕр пăт тырă, кашни килограмм аш-какай çĕнтерӳ кунне çывхартма пулăшать!..

1943 çул пуçламăшĕнче унăн хăйĕн те «ят тухнă». Тĕрĕссипе каласан, вăл çак кун çинчен тахçанах ĕмĕтленсе пурăннă, районти çар комиссариатне заявлени çырса та пăхнă, анчах лерисем ăна: «Вăхăт çитсен ха-

мăрах чĕнетпĕр», тесе ответ панă. Халĕ вара чăн та чĕнсе илнĕ. Малтан Мишша пĕр хулари автомотополка лексе шофера вĕреннĕ, икĕ уйăхранах малти позицине боеприпассем — снарядсем, минăсем, патронсем — турттарма тытăннă, çĕр тĕрлĕ хăрушлăх витĕр те тухнă... Дивизи командирĕн бронемашинине илсе çӳрекен шофера бомбежка вăхăтĕнче вĕлерсен, кĕçĕн сержант Степанова ун вырăнне лартнă, анчах нумай çӳреме тӳр килмен. Машина каллех бомбежка айне лексе арканнă, Степанова контузи пулнă, вăл пĕр уйăх хушши ним илтмесĕр госпитальте выртнă...

Унтан тухсан, авиаполка янă. Михаил Степанов аэродромра самолетсем патне бомбăсем илсе пырса тăракан моторист ĕçне тума тытăннă. Çăмăл ĕç пулман ку — фашист çăханĕсем пирĕн аэродромсене сăнасах тăнă, вĕсене аркатма тăрăшнă. Вилĕм ялан пуç çийĕнчех явăннă... Пĕррехинче (ку ĕнтĕ Румынире пулнă) вĕсем питĕ йышлăн вĕçсе пырса калама çук нумай бомба такса хăварнă. Кашниех тĕл пырса лекнĕ пулсан, таврара нимĕн те юлман пулĕччĕ. Çавăн чух вара Степанова тепĕр хут контузи пулнă. Хирти госпитальрен ăна инçетри тыла ăсатма палăртнă, анчах Степанов, кун çинчен пĕлсен, сестра урлă аслă врача чĕнтернĕ те унпа ятлаçнă пекех калаçма тытăннă:

— Эпĕ нимĕнле тыла та каймастăп! Çĕнтерӳ çывхарса килнĕ вăхăтра таçта мур шăтăкне, фронтран аякка каятăп-и вара? Çук, çук, эсир мана халĕ çыхса пăрахса ăсатсан та, эпĕ пурпĕр тарса килетĕп. Пĕр кун та пурăнмастăп тылра!

Ăна вара чăнах та ниçта та ăсатман.

Вăрçă пĕтсен пĕр çулталăкран Михаил Степановсен авиачаçĕ Румыниран хамăрăн çĕршыва таврăннă. Вăл чарăнса тăнă вырăнта вăрçă вăхăтĕнче пĕр хушă нимĕçсен аэродромĕ пулнă. Çак таврари халăха, тыткăна лекнĕ совет салтакĕсене ирĕксĕрлесе, ним хĕрхенмесĕр ĕçлеттерсе, аэродромăн темĕн пысăкăш лаптăкне пĕтĕмпех асфальт сарнă вĕсем. Совет Çарĕ хăватлăн хĕссе килнипе васкасах тухса тармалла пулсан, вĕсем ăна çĕмĕрме те ĕлкĕреймен. Пирĕн командовани халĕ çав чип-чипер аэродрома сая ярас темен, унпа усă курма шут тунă.

Анчах çав аэродром çывăхĕнче пĕр çурт таврашĕ те пулман, пур еннелле те çеçенхир кăна сарăлса выртнă...

— Палаткăсенчех пуранатпăр-ши вара кунта?— шухăшланă боецсем. — Çулла аван та-ха вăл, анчах хĕл çитсен мĕн курмалла пулĕ?

Пĕр-ик кунтан, ирхи проверка вăхăтĕнче, Степановсен роти умне вĕсен командирĕпе пĕрле темле палламан çар инженерĕ тухса тăрать.

— Юлташсем, сирĕн хушăра строительсем пур-и?— тесе ыйтать вăл.

Салтаксем нихăшĕ те чĕнмеççĕ, пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илеççĕ çеç.

— Строительсем пур-и, тетĕп!—каллех ыйтать инженер, строй умĕн утса пырса. — Каменщиксем, бетонщиксем, штукатурсем...

— Неушлĕ сирĕнтен нихăшĕ те çара киличчен стройкăра ĕçлесе курман?— Халĕ ĕнтĕ рота командирĕ ыйтать. — Тен, килте чухне кăмака та пулин купаланă?

Темиçе самант хушши каллех шăп пулать, унтан сулахай флангра тăракан пĕр аслă сержант аллине çĕклет.

— Эп купаласа курнă. Кăмака тума пултаратăп...

Пурте карах ун еннелле çаврăнса пăхаççĕ. Ку — пĕр взводри командир помощникĕ, боецсене дисциплина тĕлĕшпе яланах çирĕп тыткалакан Михаил Степанов иккен. Вăл, «вольно» команда пулнă пулин те «смирно» тăрса, ют командир çине шăтарас пек пăхнă.

— Мĕн тумалла пулать, инженер-майор юлташ?

— Пирĕн хамăр валли çуртсем тума тытăнмалла. Нумай çуртсем тумалла: штаб, казармăсем, столовăй, гараж тата тем те пĕр... Материалсене ыранах кÿрсе килме пултараççĕ, строительсем кăна çук.

— Эпĕ çуртсем тусах курман та ĕнтĕ... — иккĕленсе илет аслă сержант.

— Вĕрентетпĕр! Ну, тата кам ĕçлес тет стройкăра? Хамăр валли тăватпăр вĕт, астăвăр!

...Килĕшекенсем чылай тупăннă. Тепĕр темиçе кунтан çеçенхирте строительство пуçланса та кайнă. Çурт стенисене купалама тытăнсан, инженер стройкăра ĕçлеме пуринчен те малтан килĕшнĕ аслă сержант Степанов самаях ăста ĕçленине кура, ăна начальник пекки туса хунă, хăй мĕн пĕлнĕ таран ыттисене вĕрентме хушнă, вара салтаксем, юлташла кулкаласа, ăна «пирĕн прораб» тесе чĕнме пуçланă. Вăл ертсе пынипе строительсен команди кĕркуннеччен темиçе çурт купаласа лартнă. Ĕçсем ăннăçемĕн ăнса пынă.

— Атьсемӗр! Салтак тени вӑл ишӗлтерме кӑна мар, хӑй те тем те пӗр туса хума пултарать иккен!.. — шӳтлекелесе илнӗ салтак-строительсем хӑйсем хушшинче.

Хӑрушӑ вӑрҫӑ вут-ҫулӑмӗ витӗр тухнӑ салтаксем, ҫӗнтерӳҫӗ-воинсем час-часах хӑйсем тӑван килӗсене таврӑнсан мӗн тӑвасси, мӗн ӗҫлесси ҫинчен калаҫнӑ. Кашнин хӑйӗн шухӑшӗ, хӑйӗн ӗмӗчӗ, хӑйӗн планӗсем пулнӑ.

— Мӗн хуйхӑрмалли пур ӗҫ пирки!— тенӗ пӗрисем, ҫурт стени ҫине кирпӗч хыҫҫӑн кирпӗч хурса. — Эпир рекорд лартакан каменщиксем пулсах таврӑнатпӑр вӗт килсене!

— А мӗн? Япӑх мар ку! Халӗ, вӑрҫӑ хыҫҫӑн, юсамалли те, ҫӗнӗрен тумалли те темӗн чухлех пулать...

— Тен, ытла пурте ун пекех пулаймӑпӑр, анчах пирӗн Степанов — каменщик пулатех ӗнтӗ, уншӑн иккӗленмелли ҫук!

Кун пирки Михаил Степанов хӑй те ҫавӑн пекрех шухӑшланӑ-мӗн. Кӑмӑла кайнӑ ӑна каменщик ӗҫӗ. Питӗ ырӑ-ҫке вӑл: ним ҫук ҫӗрте ҫӗр алтса ҫурт никӗсне хыватӑн та купалама тытӑнатӑн. Кирпӗч хыҫҫӑн кирпӗч, кирпӗч хыҫҫӑн кирпӗч... Кӗҫех стенасем ҫӗртен уйрӑлса ҫӳлелле хӑпарма тытӑнаҫҫӗ — метр хыҫҫӑн метр. Унтан акӑ пӗр этаж пулса ҫитет, иккӗмӗшӗ ӳсме тытӑнать, виҫҫӗмӗшӗ, тӑваттӑмӗшӗ... Куран — ик-виҫ уйӑхран ҫурт кӳлепи пулса та ҫитет. Шалта урӑххисем ӗҫлеҫҫӗ — штукатурсем, платниксем, столярсем, ҫав вӑхӑтрах ҫурт тӑррине те витсе лартнӑ ӗнтӗ. Ҫурт пулчӗ те. Хамӑр валли, пирӗн ҫынсем валли, хӑйӗн телейӗшӗн кӗрешсе темӗн тӗрлӗ нуша витӗр тухнӑ, пур йывӑрлӑхсене те ҫӗнтернӗ халӑх валли. Пӗр ҫуллӑха мар, вуншар, ҫӗршер ҫуллӑха пулаҫҫӗ вӗсем, хамӑрӑн ачасем, ачасен ачисем валли пулаҫҫӗ. Мӗн пур-ха ӗнтӗ ҫакӑнтан пархатарли?..

...1950 ҫулхи ҫуркунне, шыв-шур вӑхӑтӗнче, Михаил Степанов тӑван Хитекушкӑнне таврӑнать. Вӑл килнине пӗлсен, вӗсем патне кӳршӗ-маршӑсем пухӑнаҫҫӗ, колхоз председателӗ те пырать. Пурте саламлаҫҫӗ ӑна, киле чипер таврӑннӑ ятпа ырӑ сунаҫҫӗ. Унтан сӑмах пулас пурнӑҫ ҫинчен тапранса каять.

— Ну, Мишша, мӗн тума шутлатӑн ӗнтӗ килте? Ялтах пурӑнатӑн-и е ӑҫта та пулин хуланалла ҫул тытатӑн?

— Тен, каллех тимĕрç лаççинчи сунтал патне таврăнан?

— Шофер та кирлĕ пире, колхоза кĕçех иккĕмĕш машина килет.

— Шоферĕ тупăнĕ-ха вăл, бригадир тăвас ăна!

Погонĕсене вĕçертсе хума та ĕлкĕреймен аслă сержант çак ыйтусене хирĕç нимех те калайман.

— Пĕлместĕп-ха, шухăшласа пăхас пулать.

Курма пынă çынсем салансан, каçхине, вăл халĕ ĕнтĕ татах ватăлса кайнă ашшĕне хăйĕн шухăшне пĕлтернĕ:

— Санпа пĕрле кăмака туса çӳрени усăллă пулчĕ лере... Çуртсем турăм. Каменщик ĕçне самаях чухланă пек туйăнать... Шупашкарта халĕ питĕ вăйлă строительство пырать, тенине илтрĕм эпĕ, пир-авăр комбиначĕ тăваççĕ тет-и çав? Кайса пăхас, тетĕп çавăнта. Хам хулара пурăнсан шăллăмсене вĕрентме те ансатрах пулĕ вара. Мĕнле шутлатăн эсĕ, атте?

— Юрать те пулĕ, ывăлăм, чуну унталлах туртать пулсан,— тенĕ ашшĕ.

Пĕр-ик эренерен Михаил Шупашкарти пир-авăр комбинатне тунă çĕре пырса та çитнĕ.

— Çартан таврăнтăм, ĕçлес пулать. Çичĕ çул хысна çăкрине çирĕм, çитет пулĕ. Каменщик пулма кăмăл пур,— тенĕ вăл, кадрсен пайĕн начальникĕ умне документчĕсене кăларса хурса.

— Ку ĕçпе ĕçленĕ-и эсĕ хăçан та пулин?— ыйтнă лешĕ.

— Ытла ĕçлесех кайман та... пултарассăн туйăнать. Вĕренетĕп!

— Тен, пĕр-пĕр урăх çĕре вынаçтарас сана? Ĕç нумай кунта, çынсем çитмеççĕ,— тесе пăхнă начальник.

— Çук, манăн стройкăра кăна пулас килет. Ытти ĕçе районра та вырнаçма пултарнă. Çуртсем тăвас килет,— урăх ним те мар.

Çамрăк салтак çавăн пек çине тăрсах ыйтнине кура, начальник килĕшнĕ.

— Юрĕ эппин, стройкăна-тăк — стройкăна пултăр... Вĕренме эпир сана Парамонов бригадине ярăпăр. «Ваня пичче» теççĕ ăна пирĕн. Хаяртарах ĕнтĕ старикки, анчах ĕçе питĕ лайăх пĕлет, опычĕ пысăк. Ну, лайăх вĕренесси, маçтăр пуласси вăл хăвăнтан килет, ху тăрăшнинчен.

— Эпĕ салтак, начальник юлташ, ăна-кăна чухлакалатăп — çарти пек честь парса тухса кайнă Михаил Степанов ун патĕнчен.

Анчах пĕтĕм стройкипе чапа тухнă бригадăра ĕçлесе вĕренесси пулайман унăн.

— Сан пек ĕçе пĕлмен шĕвĕрсем ахаль те туллиех манăн, илместĕп!— тенĕ «Ваня пичче», кадрсен пайĕнчен илсе пынă хута каялла тавăрса парса. — Ман бригада кунта университет мар пулĕ? Ăраççĕ те ăраççĕ — вĕрент тавай! Эпир вĕт лăпăр-лапăр çурт мар, промышленность корпусĕ тăватпăр, кунта лайăх маçтăрсем кирлĕ!..

— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн? Сирĕн пата килме хушрĕç те...

— Яччĕр ав пурăнмалли çуртсем тунă çĕре, унта тĕрлĕрен шăкăр-шакăр ĕçсем туллиех. Кунта ĕçлесси çинчен ан та шутла,— аллипе сулнă бригадир.

Çакăн пек калани Михаила хытах кӳрентернĕ, анчах, ватă бригадирпа калаçса татăлас çуккине кура, ирĕксĕрех тепĕр хут кадрсен пайнелле утма тивнĕ унăн.

— Йышăнмасть мана Ваня пичче. Тиркесе тăкрĕ. Пурăнмалли çуртсем тунă çĕре кайма хушать...

— Çавăн пек-çке вăл старик пирĕн, хăй мĕн шутланă, çавна тăвать, кăмăлĕ пулмасан ниепле те итлеттерейместĕн ăна,— пуçне пăркаласа илнĕ те кадрсен начальникĕ, Степанова çĕнĕ хут çырса панă.

Пурăнмалли çуртсем тăвакан участокра çамрăк техник-строитель Александр Иванович Никитин, хăй те салтак пулнăскер, Степанова питĕ ăшшăн йышăннă.

— Тин çеç демобилизаципе таврăнтăн пулать? Ĕçлес, тетĕн? Питĕ аван. Каменщиксем кирлĕ пире. Малтанлăха çак çуртсем тавра тимер карта тума чул юпасем купаласа пăх-ха. Çарта çуртсем тунă пулсан, тен, сана вĕрентме те кирлĕ мар? Ну, кайран курăнĕ-ха унта...

Пулас каменщика техник ĕç вырăнне илсе кайнă, чертежсемпе паллаштарнă, юпасене мĕнлерех купаласси çинчен ахаль те каласа ăнлантарнă.

— Çирĕп кăна мар, хитре те пулччăр вăл юпасем,— тенĕ вăл юлашкинчен,— рабочисем пурăнмалли поселока илем парса тăччĕр...

Степанова пулăшма прораб пĕр çын уйăрса панă. Тепĕр кунне вăл ĕçе тытăннă.

Хытă тăрăшнă Михаил. Вырăнтан хусканмасăр, йĕритавралла пĕрре çаврăнса пăхмасăр тенĕ пек ĕçленĕ. Унăн сылтăм аллинчи кельма* выляса кăна тăнă, сулахайĕпе вăл кирпĕч хыççăн кирпĕч хунă, кирпĕч çине кирпĕч!

— Тавай, тавай, хăвăртрах çаврăнкала,— васкатнă Михаил хăйне пулăшакана, лешĕ пĕр минут та ĕçсĕр тăман пулин те. — Эпир паян санпа иксĕмĕр экзамен тытатпăр вĕт-ха! Намăс курас марччĕ мĕнле те пулсан!..

Акă, пĕр юпи пулса çитнĕ. Унтан тепри те çĕр ăшĕнчен кăмпа пек шăтса тухса çӳлелле хăпарма пуçланă... Çынсем кăнтăрлахи апат тунă; хăшĕ столовăйне кайнă, хăшĕ ĕç патĕнчех ларса çинĕ,— Степанов çаплах ĕçленĕ, хырăм выçнине те сисмен вăл: виççĕмĕш, тăваттăмĕш юпасене купаланă. Хĕвел йăлăмри вăрмансем еннелле сулăннă, ĕç кунĕ пĕтнĕ, Степанов ăна та асăрхаман. Тахăшĕ ун патне çывăхах пырса, кăмăллăн:

— Ну, ĕçсем мĕнле пыраççĕ, маçтăр?— тесе ыйтсан тин вăл кельмăна хурса йĕп-йĕпе çамкине çанни вĕçĕпе шăлса илнĕ.

— Ĕçлетпĕр-ха...

— Паянлăха çитет те пулĕ, юлташ.

Ун патне прорабпа тепĕр çын пынă иккен. Вĕсем Степанов кун каçа тунă ĕçе шутлама тытăннă. Çамрăк каменщик иккĕленсе, çав тери пăшăрханса тăнă:

— Норма тулман пуль ĕнтĕ, намăс куратăп...

Кăлăхах пулнă ку! Прораб, хăйĕн блокночĕ çине темскер çырса хурса, малтан ассăн сывласа илнĕ пек тунă, унтан çемçен кулса каланă:

— Виççĕр процент пулнă санăн паян, тусăм!

— Кулатăр эсир,— тенĕ Михаил, ун çине шанмасăртарах пăхса. — Пулма пултараймасть...

— Пултарнă çав!

— Ак сана... ученик!— тенĕ тепри. — Кун пеккисене курманччĕ-ха эпир кунта. Маттур! Тулкки пулать санран.

Вĕсем пурте чĕлĕм туртма ларнă. Халь тин вара Михаил хăй питĕ ывăннине, аллисем чĕтренине туйнă. Чĕри савăнăçлăн тапнă унăн: вăл намăс курман паян, хăйĕн пултарулăхне аванах кăтартнă!

---

* Кирпĕчсем хушшине раствор ăсса хумалли калак.

Тепӗр кунне те ҫаван пекех ӗҫленӗ Михаил, виҫҫӗмӗшӗнче те, эрнипех. Карта юписене купаласа пӗтерсен, ӑна водопровод колонкисем валли «ҫӑлсем» тума хушнӑ. Ку ӗҫ малтанхинчен чылай кӑткӑсрах пулнӑ, Михаила пулӑшса пыма тӑхӑр ҫын панӑ. Уйӑх иртсен вара унӑн пӗтӗм ӗҫне хисеплесе пӑхнӑ та, нормӑна вӑл 350 процент тултарни палӑрнӑ.

— Тӗрӗслев срокӗ иртсе кайрӗ санӑн,— тенӗ ӑна участок начальникӗ, хӑй патне чӗнсе илсе. — Тин ӗнтӗ эсӗ ученик мар, чӑн-чӑн каменщик пулса тӑтӑн, Степанов юлташ!

Квалификаци комиссийӗ ӑна пиллӗкмӗш разряд панӑ. Анчах вӑл стройкӑра пӗтӗмпе те пӗр уйӑх кӑна ӗҫленӗ пулнӑ вӗт-ха! Стройкӑра малалла ҫаван пек хӑвӑрт «сикни» чӑн та сайра пулать.

Виҫӗ уйӑхран, Михаил Степанов ӗҫре хӑйне тата лайӑхрах палӑртсан, унӑн ятне стройкӑри хисеп хӑми ҫине те кӗртсен, ӑна, ҫамрӑк та хастарлӑ коммуниста, комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадин бригадирӗ туса хунӑ. Анчах ытлашши савӑнмаллиех пулман куншӑн: бригадӑна пуринчен ытларах стройкӑна нумаях та пулмасть ялсенчен килнӗ ҫамрӑксем пухӑннӑ. Вӗсене пурне те вӗрентме тӳр килнӗ. Ҫапах та хӑйне шанса панӑ ӗҫрен Михаил хӑраса ӳкмен, юлташӗсене вӑл ҫине тӑрсах вӗрентнӗ.

Шупашкар варринче, Карл Маркс урамӗнче, госбанкпа тӗлме-тӗл, ялхуҫалӑх институчӗн ҫӗнӗ общежитийӗ пур. Питӗ илемлӗ, тӑватӑ хутлӑ ҫурт. Степапнов бригади чӑн малтан ҫав ҫурта купаланӑ. Унтан бригадӑна комбинатри ТЭЦ-а (теплоэлектроцентраль) тунӑ ҫӗре куҫарнӑ. Анчах бригада членӗсем халь чылайӑшӗ улшӑннӑ, ҫӗнӗ ҫынсем хутшӑннӑ, ҫавӑнпа та вӗсене каллех вӗрентме тивнӗ.

— Асӑнмалӑх шута илсе пытӑм эпӗ,— терӗ пире Михаил Степанович, эпир унпа стройкӑра тӗл пулса калаҫнӑ чух,— хама чӑн малтан бригадир тунӑранпа эпӗ пурӗ ҫӗр те ултӑ ҫынна каменщика вӗрентнӗ. Вӗсемпе пӗрле эпӗ чылай ҫуртсем купаларӑм...

Эпир вӑл кунта хӑш-хӑш ҫуртсене туни ҫинчен ыйтрӑмӑр. Иккӗмӗш этажа ҫити хӑпартнӑ пӗр ҫӗнӗ ҫурт тӑрринче тӑрса, Михаил Степанович пире унталла та кунталла кӑтартма пуҫларӗ.

— Çак поселокри тăватă хутлă çуртсенчен эпир 22, 24, 25, 30-мĕш çуртсене тунă çĕрте ĕçленĕ... Акă вĕсем. Декабристсен урамĕнче тăватă çурт тунă. Общежити, больница. Ятарласа пир-авăр комбиначĕ валли уçнă вунпĕрмĕш номерлĕ вăтам шкула, çăкăр заводне, ТЭЦ-ăн тĕп мастерскойĕсене купаланă. Комбинатан пир-авăра шуратса сăрлакан фабрикине, ФЗО шкулĕн çуртне тунă...

— «Чылай» мар, питĕ нумай çуртсем тунă эсир, Михаил Степанович!— терĕмĕр эпир.— Ăçталла пăхсан та, эсир тунă корпуссем курăнаççĕ вĕт-ха. Мĕн чухлĕ вăй хунă эсир кунта!..

— Эп пĕччен-им?— кулса илет Михаил Степанович.— Халăхпа пĕрле. Анчах халăх тени вăл, хăвăрах пĕлетĕр, тем тума та пултаракан вăй!

* * *

Мĕн каламалли пур ĕнтĕ — кашни ĕçрех ăсталăх кирлĕ. Анчах ăста пулма — вĕренес пулать, унăсăрăн малалла каяймастăн. Куллен вĕренес пулать, çине тăрса, тăрăшса.

Михаил Степанович вĕреннĕ. Стройкăри техминимум кружокне çӳренисĕр пуçне, вăл çурт-йĕр тăвасси çинчен, уйрăмах малта пыракан каменщик-новаторсен опычĕ çинчен çырнă кĕнекесене ытларах тупса вулама тăрăшнă. Ун пек кĕнекесем халĕ унăн тем териех пухăннă.

Пĕррехинче Степанов Мускаври паллă каменщик Шавлюгин кĕнекине вуласа тухнă. Вăл каменщиксене пилĕкшер çынлă звеносем туса ĕçлеме сĕннĕ. Звенори кашни çыннăн хăйĕн уйрăм ĕç пулмалла, çав вăхăтрах вĕсем пĕр-пĕрине тăтăшах пулăшса, ĕçе ăнăçлăрах, хăвăртрах туса пыма май памалла.

Ку таранччен Степанов бригадинче икшерĕн ĕçленĕ— пĕри кирпĕч хурать, тепри ăна пулăшса пырать. Çак майпа темле тăрăшса ĕçлесен те, сменăра 3—4 пин кирпĕчрен ытла хурăнман.

— Шавлюгин пек «пиллĕкĕн» ĕçлесе пăхсан мĕнле пулĕ-ши?— пĕр-икĕ кун шухăшласа çӳренĕ Михаил Степанович. Унтан прорабпа калаçса пăхнă. Лешĕ ку шухăша ырланă:

— Санăн кун пек ĕç ăнсан, ыттисене те çапла ĕçлеме хăнăхтаратпăр вара...

— Вăл паллах. Анчах материалсем пирки чăрмавсем ан пулччăр, кирпĕчпе раствор вăхăтра тата çителĕклĕ парса тăрăр.

— Ун пирки ан пăшăрхан!

Тепĕр ирхине Степанов çĕнĕлле, «пиллĕкĕн» ĕçлеме тытăннă. Кашни хăй вырăнĕнче, хăçан мĕн тумаллине тата мĕнле тумаллине пĕлет.

Стройкăра чăн малтан ĕçлеме пуçланă кун пăлханнă пекех пăлханнă бригадир. Мĕнле пулĕ-ши ĕнтĕ? Лайăх пример кăтартас вырăнне, намăс курас марччĕ!

Ĕç ăннă. Рет хыççăн рет хутшăннă, çурт стенисем хăпарсах пынă. Смена вахăчĕ иртсен шутласа пăхнă та, Степановăн «пятерки» 7 пин кирпĕч хуни палăрнă. Анчах ку вăл пуçламăш кăна пулнă-ха. Тепĕр кунне вĕсем 11 пин кирпĕч хунă, виççĕмĕшĕнче — 12, унтан 14, 15 пин!

Ку рекорд пурне те тĕлĕнтерсе янă. Кун пекки унччен малтан çак стройкăра пĕрре те пулман. Пилĕк çын пĕр сменăра 15 пин кирпĕч купаланă... Хăшĕсем ĕненмен, иккĕленнĕ:

— Пахалăхĕ мĕнле-ха вĕсен? Лăп та лап, чалăш та чĕлĕш купаласа кайни кама кирлĕ вăл?!

Ятарласа тунă комисси «пятерка» ĕçне тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă. Чиперех пулнă иккен! Стенасем тип-тикĕс, яка, штукатурка тума та аван,— нимĕнле шăйрăксем те çук.

Çакăн хыççăн ытти бригадăсенче те чылайăшĕ çавăн пек «пиллĕкпе» ĕçлеме пуçланă, хăшĕсем тата Мускаври тепĕр паллă каменщик Максименко меслечĕпе — «улттăпа», виçĕ мăшăрăн ĕçлеме тытăннă. Михаил Степанов пуçарăвĕ стройкăра ĕçри чи тухăçлă, çĕнĕ йышши меслетпе усă курас юхăма вăйлатнă.

— Ĕçе хăвăрт туни çителĕклĕ мар-ха вăл, ĕçĕн пахалăхĕ те лайăх пулмалла!— тет Михаил Степанович.

Çав шутпа вăл хăйĕн бригадинчи çынсен ĕçне пĕрмай сăнаса, тĕрĕслесе тăрать, никама та технологи йĕркисене пăсма памасть. Кирпĕч те тикĕс вырттăр, вĕсем хушшинчи раствор хулăнăшĕ те виçеллĕ пултăр, материал та перекетленсе пытăр. Кам кирлĕ пек тĕрĕс ĕçлемест, технологие пăсать, бригадир ăна çийĕнчех тӳрлетет...

Стройкăри каменщиксен бригадисем хушшинче социализмла ăмăрту сарăлса пынă. Степанов бригади хайхи Парамонов бригадипе — Мишшана стройкăна

пырсанах тиркесе такса ёçе илмен «Ваня пичче» бригадипе — ăмăртнă. Ăмăртма пуçласан пирвайхи кунсенчех Степанов бригади нумай маларах кайнă. Эрне вĕçĕнче, результатсене тĕрĕсленĕ чух, Михаил Степанович шӳтлесе илнĕ:

— Ну, мĕнле, Ваня пичче, ученика йышăнатăн-и халь мана?

Старик именнĕ пек пулнă:

— Кам шутланă ун чух эсĕ кун пек çивĕч пуласса?.. Тепĕр тесен, эсир, çамрăксем, малаллах каятăр ĕнтĕ, эпир, стариксем, тин сире хуса çитес çук! Халĕ ав техники те епле хăватлă та... — Вăл таврари башеннăй крансем, шахтоподъемниксем çине кăтартнă. — Эпир çамрăк чух кашни кирпĕче хамăр çурăм çине хурса йăтнă, халĕ пĕрре кнопка çине пусаççĕ те — темиçе çĕр кирпĕч пĕр самантранах тăваттăмĕш этажа хăпарса выртать...

1952 çулта Михаил Степанов Иваново хулине кайса виçĕ уйăх хушши каменщик-маçтăрсен курсĕнче вĕреннĕ. Кунта пысăк опытлă çынсем, стройкăсенче нумайранпа ĕçленĕ квалификациллĕ маçтăрсем пухăннă. Степанов маçтăр выранче шутланман, вăл бригадир, çитменнине çамрăк бригадир çеç пулнă, çапах та вĕренӳре ыттисенчен кая юлман, лайăх вĕренсе тухнă. Киле таврăнсан ăна çĕнĕ каменщиксем вĕрентсе хатĕрлекен инструктор тунă.

— Пуринчен ытла мана Мускавра ялан ĕçлекен строительство выставкине кайса килни пысăк усă панă,— тет Михаил Степанович. — Унта мана 1956 çулта ячĕç. Мĕн кăна курмарăм пулĕ эпĕ çав выставкăра! Темĕн тĕрлĕ строительство техники, темĕн тĕслĕ материал... Çĕнĕ йышши ĕç меслечĕсемпе паллашрăм. Чăн-чăн университет пулчĕ ку маншăн!

Çавăн чух Мускавра Михаил Степанович çĕршыври чи ăста каменщик Ф. Д. Шавлюгинпа тĕл пулса калаçнă. Унччен темиçе çул малтан вăл çав маçтăрăн кĕнекине вуласа унăн меслечĕпе («пиллĕкпе») ĕçлеме пуçланă-çке. Халĕ ĕнтĕ вăл унпа хăйĕнпе паллашса, вăл мĕнле ĕçленине курнă. Питĕ кăмăллă йышăннă Мускав маçтăрĕ инçетри Чăваш çĕршывĕнчен пынă çамрăк каменщике, хăйĕн ĕç меслечĕсем çинчен каласа кăтартнă ăна, ырă канашсем панă.

— Ĕç вырăнне малтанах тĕплĕ хатĕрлесе янтăла, санăн пурте ал айĕнче пултăр, хăвна пулăшакансем те хăйсен ĕçне ху пекех ăста пĕлччĕр!

Çак сăмахсене Михаил Степанов яланах асра тытнă, лайăхран лайăх ĕçлесе пыма тăрăшнă...

Ку çеç те мар. Вăл, строительствăна пĕтĕм чунĕпе парăннăскер, ăна хăй хастарлă ĕçленипе кăна мар, ытти енпе те пулăшасшăн çуннă, ăçта та пулин йĕркесĕрлĕх курсан, тÿссе тăрайман.

Ĕçленĕ чух вăл час-часах асăрханă: шоферсем стройкăна кирпĕч тиесе пыраççĕ те, самосвалсен кузовĕсене хăвăрт кăна çĕклесе, кĕмсĕр-р! тăкса хăвараççĕ. Вĕсене каллĕ-маллĕ ытларах хутлани пултăр! Анчах çавăн пек ним хĕрхенмесĕр тăкнă кирпĕчĕн виçĕ пайĕнчен пĕри юрăхсăра тухать, ванса пĕтет.

— Кирпĕчĕ ахаль те çитмест пирĕн, эпир пур, ăна перекетлес вырăнне, ним шеллемесĕр вататпăр,— тенĕ Михаил Степанович, кÿренсе. Кун пирки вăл прорабпа та, участок инженерĕпе те сăмахласа пăхнă, производствăлла канашлусенче те калаçнă.

— Пирĕн куç умĕнчех вуншар пин тенкĕлĕх стройматериал пĕтет, эпир çавна курмиш пулатпăр!

— Мĕн тума сĕнетĕн эсĕ?— ыйтнă унран.

— Мускавра кирпĕче контейнерсемпе турттараççĕ. Ун пек кирпĕчĕ те ванмасть, çĕр çинчен çÿле хăпартма та ансатрах.

Ку — питĕ вырăнлă сĕнÿ пулнă, ăна йышăннă, контейнерсемпе турттарма тытăнсан, кирпĕчсем ванса сая кайми пулнă.

Производствăна усă кÿрекен сĕнÿсем татах та панă Михаил Степанович. Çавăн пек паха сĕнÿсенчен пĕри вăл — стройкăра комплекслă бригадăсем тăвасси пулнă. Унăн хăйĕн бригадинче халь каменщиксем кăна мар, платниксем, разнорабочисем (çĕр чаваканс●м, грузчиксем) те пур. Штукатуркăсăр пуçне, çавăн пек бригада пур ĕçсене те хăех, никам пулăшмасăрах тума пултарать, унăн ĕçĕ нихçан та чарăнса лармасть.

— Иртнĕ вăхăтра, бригадăра каменщиксем кăна пулнă чух, ĕçсĕр те тăркаланă эпир,— каласа парать Михаил Степанович. — Кирпĕч пĕтет — тăратпăр, раствор пулмасть — чарăнатпăр, хамăр тăрса ĕçлекен хăмасене çÿлерех хăпартмалла пулать — каллех ĕçлейместпĕр. Халĕ ун пекки çук. Пĕр ĕçне тума май çук пулсан, теп-

рине тытӑнатпӑр. Тепӗр чух чӑрмавсем пулсан та, бригада сменӑри нормӑна 130—150 процентран кая нихҫан та тултарман.

Лайӑх ӗҫленӗшӗн, ӗҫре пултаруллӑ пулнӑшӑн, хӑйӗнпе пӗрле юлташӗсене те малалла илсе пынӑшӑн Михаил Степанович Степанова Хисеп грамотисем те, премисем те нумай хутчен панӑ. 1957 ҫулта, строительсен кунӗнче, ӑна калама та ҫук пысӑк чыс тунӑ — СССР строительство министерствин приказӗ тӑрӑх Хисеплӗ строитель ятне панӑ.

1958 ҫулта хӑйӗн ӗҫӗпе чапа тухнӑ строителе Совет правительстви Ленин орденӗпе наградӑланӑ.

Ҫав ҫултах, март уйӑхӗнче, Михаил Степанов пурнӑҫӗнче тата пысӑкрах событи пулнӑ. Шупашкарти пираваӑр комбинатӗнчи, трактор пайӗсем тӑвакан заводри тата стройтрестри рабочисемпе служащисем кандидата тӑратнипе, ӗҫҫыннисем ӑна СССР Верховнӑй Совечӗн депутатне суйланӑ.

Унччен малтан Михаил Степанова виҫӗ хутчен Шупашкар хула Совечӗн депутатне суйланӑ. Хула Совечӗн исполкомӗ хушнипе тата суйлавҫӑсем ыйтнипе вӑл ун чухне те ӗҫҫыннисемшӗн нумай усӑллӑ ӗҫсем тунӑ. Халӗ вара, халӑх хӑйне мӗн тери шаннине, чыс тунине ялан асра тытса, вӑл хӑйӗн суйлавҫисемшӗн ырми-канми ӗҫлет, вӗсем хушнисене тата ыйтнисене пурне те туса пыма тӑрӑшать.

Темӗн тӗрлӗ ӗҫсемпе те пыраҫҫӗ депутат патне. Пӗрисем хваттер пирки, теприсем ӗҫе кӗрес пирки, виҫҫӗмӗшӗсем ҫурт-йӗрсене юсас ыйтупа, хӑшӗсем ачисене яслине вырнаҫтарайман, хӑшӗсене налог тӗрӗс мар тӳлеттернӗ. Кашнинех депутат Степанов кӑмӑллӑн йышӑнса тӗплӗн итлет, унтан тӗрлӗ организацисене шӑнкӑравлать, хутсем ҫырать, вӗсене ертсе пыракансем патне хӑй кайса калаҫать, тепӗр чух темиҫе хут та ҫитме тивет, анчах ӗҫе вӗҫне ҫитерет-ҫитеретех. Пуринчен ытла, вӑл ватӑ ҫынсемшӗн, вӑрҫӑра пуҫне хунӑ ҫынсен ҫемйисемшӗн, тӑлӑха юлнӑ ачасемшӗн тӑрӑшать.

Уйрӑм ҫынсен ыйтӑвӗсем пирки кӑна мар тӑрӑшма тивет депутатӑн. Час-часах ун патне вуншар ҫын алӑ пуснӑ ҫырусем пыраҫҫӗ: ҫав урампа ҫуркунне-кӗркунне иртсе ҫӳреме ҫук, чӗркуҫҫи таран пылчӑк пулать, унта халех чул сармалла, тротуар кирлӗ; лере ҫуран ҫӳремелли кӗпер юрӑхсӑра тухнӑ, ун урлӑ каҫма та хӑра-

малла, хула Советне темиçе кайсан та усси пулмарĕ; çав-çав урамсенче водопровод кирлĕ...

Кашни çыру, кашни ыйту пиркиех тăрăшас пулать депутатăн. Епле пултăр-ха тата? Халăх ăна хăйĕн чи шанчăклă ывăлĕсенчен пĕри тесе шаннă. Халĕ вăл хăйне суйланă халăхăн тарçи; халăх мĕн хушать, мĕн ыйтать, çавна унăн тĕплĕн, чыслăн туса пымалла, суйлавçăсем шаннине тӳрре кăлармалла.

Михаил Степанов çапла тăвать те ĕнтĕ. Вăл пĕтĕм вăйне, пултарулăхне халăха парать. Тăван халăх, Тăван çĕршыв валли вăл çĕнĕрен çĕнĕ пурăнмалли çуртсем, шкулсем, больницăсем, ача-пăча учрежденийĕсем, фабрикăсем, заводсем тăвать, кунпа пĕрлех халăхăн кулленхи пурнăçĕнчи нушисемшĕн тăрăшать.

Тĕлĕнмелле лайăх çынсем ӳсеççĕ çав пирĕн ирĕклĕ Çĕршывра!

Чухăн чăваш ачи, нумай хура-шур курса ӳснĕ çамрăк, тискер тăшмана хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçнă салтак — хисеплĕ строитель. Мирлĕ, телейлĕ пурнăç строителĕ...

Ахаль рабочи, хăй тăрăшнипе çеç ăста каменщик пулса тăнă çын, çĕршыври чи пысăк наградăсене илет, вăл — государство деятелĕ, ют çĕршывсенчи пек каласан — парламент депутачĕ!

Телей мар-и ĕнтĕ çакă?




Паттăр салтак
Çăпала Иванĕ
ТĂВАТĂ ÇУЛ ХУШШИ ВĂРÇĂРА ПУЛНĂ
ХЫÇÇĂН КИЛЕ ТĔРĔС ТĔКЕЛ
ТАВРĂНСАН ЯЛЙЫШСЕНЕ
Каласа панисем

27. Л. Агаков.

## САХВИНЕПЕ «МЕССЕРШМИТТ»

ХАВАРАХ пӗлетӗр вӗт, тӑвансем, юптарас йӑла пирӗн йӑхра ҫук вӑл. Эпӗ хам та ни суякан, ни мухтанакан ҫын мар, ҫавӑнпа та сире пӗтӗмпех тӗп-тӗрӗссине каласа паратӑп...

Мӗнех мухтанас ӗнтӗ — манӑн ҫарти служба ытла ӑнӑҫлах пуҫланмарӗ. Акӑ, халь эсир манӑн кӑкӑрӑм ҫинче икӗ орден куратӑр, медальсем те шакӑриех авӑ. Анчах та малтанхи вӑхӑтра эпӗ орден илмелле пуласса шанманччӗ ҫав. Шутламан та ун пирки, мӗншӗн тесен шутлама майӗ те пулман манӑн. Ӑҫтан шутлатӑн-ха? Ордена ӑна пӗр-пӗр паттӑр ӗҫ тунӑшӑн параҫҫӗ-ҫке-ха!.. Ну, калӑпӑр, эсӗ атака вӑхӑтӗнче тӑшман траншейине никамран малтан сиксе кӗрсе темиҫе фашиста леш тӗнчене ӑсатнӑ, е хӑвӑн ҫинелле ӗрӗхсе пыракан «тигра» ПТР пӑшалӗпе ҫамкинчен шаплаттарса, ӑна спичка коробки пекех ҫунтарса янӑ, е тата ҫавӑн пекки мӗн те пулин тунӑ... Анчах эпӗ малтанхи вӑхӑтра ни ӑна, ни кӑна туман, тата... тума та пултарайман, мӗншӗн тесен эпӗ стрелок та, противотанкист та, никам та пулман, манӑн специальность повар пулнӑ...

Ҫапла ҫав, повар! Пин те ҫичҫӗр ҫитмӗл ҫиччӗмӗш полкри иккӗмӗш стрелковӑй рота поварӗ. Хама та мана Ҫӑпала Иванӗ, теҫҫӗ вӗт-ха, мӗншӗн тесен эпӗ мӗн ачаранпах кухньӑра ҫапӑҫса пурӑннӑ: паранкӑ шуратнӑ та — купӑста туранӑ, аш вакланӑ та — лапшу ҫӑрнӑ. Эпӗ вӑрҫӑччен районри чайнӑйра повар пулса пурӑннине пӗлсен, фронтра та мана ҫав кичем ӗҫех хушрӗҫ...

Эпир — ҫӗнӗ пополнени ӗнтӗ — фронтра ҫапӑҫакан

полка çитсессӗнех, старшина ман юлташсене пурне те вӗр-çӗнӗ автоматсем туянтарчӗ, гранатăсем, патронсем пачӗ, а мана... мана темӗн пысăкăш çăпала тыттарчӗ — яп-яка авăрлă пăхăр çăпала! Ме сана, терӗ, эс çакăнпа çапăç, терӗ. Паллах ӗнтӗ, стройра тăракан пӗтӗм рота ахăлтатса кулса ячӗ, хам эпӗ кӗрхи помидор пекех хӗрелсе кайрăм, çамка çине пăрçа пек тар тапса тухрӗ, чӗлхе çăвар маччи çумнех çыпăçса ларчӗ манăн... Шутласаттăм пӗрре çав çăпалана пӗтӗм строй умӗнчех çырманалла вăрас тесе, анчах юрать-ха, çарти дисциплинăна пăсма юраманнине вăхăтра аса илтӗм те, тивес мар, терӗм. Атя, мӗн хушаççӗ, çавна тăвас!

Ну, юрӗ... Тытăнтăм ӗçлеме. Тепӗр тесен, фронтра яшка пӗçерни те боевой ӗçех вӗт-ха, çавăнпа та чунтанах тăрăшрăм: епле пулсан та юлташсене лайăхрах тăрантарас, фашистсене тӳпелеме вӗсен вăй ытларах пултăр, терӗм. Тен, вăхăчӗ çитсен, мана та тав тăвӗç, манăн та савăнмалли кун çитӗ-ха, тесе шутлакалаттăм хам ăспа, кăштах ерçнӗ вăхăтсенче.

Çук вӗт! Савăнмалли вырăнне манăн тăтăшах тарăхмалли те кӳренмелли çеç тупăнса пыратчӗ. Ну... Пӗррехинче манăн чип-чипер пиççе çитнӗ, çулласа лартнă хуратул пăттине — пăтти хуран тулличчӗ! — таçтан мурӗнчен пӗр ухмах снаряд пырса лексе сывлăшалла сирпӗтни çинчен каламастăп та ӗнтӗ. Тепринче тата, вăрман хушшипе малти позицисем еннелле кайнă чух, асар-писер бомбежка тапранчӗ те манăн кухньăна туртса пыракан ула кӗсрене вӗлерсе пăрахрӗç. Кӗсри ça-ав тери ăслăччӗ, апат юлашкийӗсене пăру пекех çиетчӗ... Питӗ шалккă пулчӗ. Шӳрпене боецсем патне вăхăтра çитерейменрӗм те, капитан мана уншăн çур сехет хушши тăн кӗртрӗ...

Анчах ку тата нимех те мар-ха. Вăрçăра тӗрлӗренех пулать унта, хăвăрах пӗлетӗр.

Пуринчен ытла эпӗ виççӗмӗш рота поварне, Вася Котлеткина, медаль пани çинчен илтсен хуйха ӳкрӗм. Ман пек телейсӗр çын тӗнчере урăх çук та пулӗ, терӗм хама хам... Малти позицисенче çапăçакансем медаль мар — темиçешер орден илсен те тӗлӗнмелли çук, ăна тивӗçлӗ вӗсем, анчах та ку... ку вӗт ман пекех повар! Ман пекех паранкă шуратса, концентрат пăтти пӗçерсе пурăнать! Хăшпӗр енчен илсен, вăл манран каярах та тăрать, темелле. Сăмахран, вăл тӗрлӗ йышши «тефтелисене», «отбивнойсене», «беф-строгановсене» кутăн çаксан

та пĕçерме пултараймасть, эп ăна тĕп-тĕрĕс пĕлетĕп! Анчах хăй çапах та медаль илнĕ — «За боевые заслуги». А мĕн заслуги пулнă тетĕр унăн? Пĕррехинче передовойĕнчен çурăм хыçне пушă термос çакса таврăнатьмĕн те, вĕт вăрманлă çырма урлă каçнă чух пĕр тĕмĕ айĕнче икĕ фриц йăпшăнса ларнине курах кайнă çак. Ну... тепĕр тыловик пулсан, хăраса ӳкме пултарнă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен фрицĕсем иккĕн, ку — пĕччен пулнă, анчах та Вася çухалса кайман. Карабинне йăпăр-япăр «на-перевес» тытнă та, çав фрицсем патнерех шуса пырса, ухмаха ернĕ пекех кăшкăрса янă:

— Руки вверх! Хенде хох!..

Лешсем вара, ниçталла та тарса ӳкес çуккине кура, кĕрхи вĕрене çулçисем пек чĕтресе, аллисене пĕлĕтелле çĕкленĕ те: «Гитлер капут, Гитлер капут... плен, плен...» — тесе мăкăртатма тытăннă.

Нимĕçсем хăйне нимех те тăвас çуккине туйса, пирĕн Вася татах паттăрланса кайнă.

— Вставай! Снимай штаны! — тесе кăшкăрнă вăл.

Паллах, фрицсем вăл мĕн хушнине ăнланман, вара Вася вĕсенчен пĕрине ĕнсинчен тытса ура çине тăратнă та унăн йĕмне вĕçертсе чĕркуççи таранах антарса лартнă. Ăна кура тепри хăех çавăн пек тунă.

Асне çитернĕ вара хăй, шельмăскер! Фрицĕсем çул çинче тарасран тунă вăл çавăн пек, хăйсен йĕмĕсемпех тăлласа лартнă вĕсене... Ну, вара иккĕшне те батальон штабне хăваласа пынă та, тепĕр эрнерен полк командирĕ ăна шăнкăрт кăна медаль тыттарнă! Леш фрицĕсем пирĕн командованине пит те кирлĕ сведенисем пĕлтернĕ, тет те, çавăншăн ĕнтĕ...

Мĕн тăвас гетĕн — телей!

Çакăн çинчен пĕлсен, тупата туршăн, темиçе кун хушши темле тĕтре ăшĕнче çӳренĕ пек çӳрерĕм эпĕ. Ма-ха çав телейĕн ман тĕле пулмалла пулман? Эпĕ те передовойне каятăп-çке, эпĕ те çав çулпах çӳретĕп! Тĕмĕ айĕнче çавнашкал тăнсăр фрицсем ларнине курнă пулсан, эп вĕсене хӳтерсе килме пĕлместĕмччĕ-и? Йĕмĕсене антарса мар, эп вĕсен аллисене каялла çыхса, мăйĕсенчен вĕренпе кăкарса сĕтĕрсе килнĕ пулăттăм! Çук çав, телей çуках манăн, терĕм кăна хама хам...

Çакăн хыççăн вăхăт нумаях та иртмерĕ — ман пуç çине тепĕр хурлăх татăлса анчĕ. Пачах та кĕтмен çĕртен,

çуллахи уяр кун юр çума тытăннă пекех пулчĕ вăл. Темĕн чухлĕ асап кӳчĕ мана...

Çуллахи наступлени пуçланас умĕн пĕр виçĕ эрне малтан пирĕн ротăна çĕнĕ санинструктор ячĕç. Тĕлĕнсе хытсах каймалла, çав тери хитре тутар хĕрĕччĕ вăл — Сахвине ятлăскер. Пĕвĕпе хăй пысăках та мар, анчах калама çук илемлĕ, тăп-тăп станлăскер. Ун пек хĕр эпĕ, тупата, нихçан та курман! Питçăмартисем панулми пек, тутисем пиçнĕ хăмла çырли тĕслĕ, куçĕ — шăп та шай хура çĕмĕрт, çунса кăна тăрать: çын çине пĕрре пăхсанах çунтарса, кĕллентерсе яма пултарать. Малтанхи хут курсанах, мана та çавăн пек çунтарса ячĕ...

Ахальтен мар çав тепĕр чух: чĕрене приказ пама çук, теççĕ. Чăнах иккен! Ну, хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха эсир: таврара кунĕн-çĕрĕн вăрçă кĕрлет, унта та кунта минăсемпе снарядсем çурăлаççĕ, тул çутăлнă вăхăтран пуçласа тĕттĕм пулса ларичченех пĕлĕтре çăханла «юнкерссем» явăнса çӳреççĕ — пуç çине пĕр-пĕр йывăр бомба татăлса анасса кĕтсех тăр, пĕр сăмахпа — вилĕм сан хыççăн йĕрлесех çӳрет, анчах санăн чĕрӳ çав вăхăтрах кама та пулин ăс-тăна пăтратса ямалла, чуна вырăнтан хускатмалла юратса лартать!.. Мĕн тăвас тетĕн? Мĕнпе чаратăн ăна, мĕнле взыскани хуратăн ун çине? Тӳррипе калатăп: нимĕн те тăваймастăн! Хамăн хурлăхлă опыта шута илсе калатăп эп сире куна, мĕншĕн тесен манăн чĕре çавăн пек туса хучĕ те — нимĕнпе те чараймарăм эп ăна.

Кĕскен каласан, ман чĕре çав Сахвине пирки вут-çулăмпах çунма тапратрĕ. Ниçта кайса кĕрейместĕп: унăн сăнĕ кăнтăрла та, каç та, хуран çунă чух та, боецсем валли передовойне апат леçме хырăмпа шуса кайнă чухне те куç умĕнчех тăрать. Унăн шăпчăк юрри евĕрлĕ сасси те хăлхаран тухма пĕлмест. Ĕмĕрте те пулманччĕ манăн ун пекки! Хайхи, пирвайхи юрату тени тапранчĕ пулмалла ĕнтĕ...

Еçре те кансĕрлеме пуçларĕ мана вăл: пĕринче, ытлашши шухăша кайнипе, пĕр хуран пăтта çунтарса ятăм, тепринче купăста яшкине çăвара сыпмалла мар тăварласа лартрăм. Иккĕшĕнче те, паллах, старшинаран питĕ вирлĕ лекрĕ мана...

Пĕр кун иртет çапла, эрне те иртет... Манăн юрату вăйланнăçемĕн вăйланса, хĕрнĕçемĕн хĕрсе пырать, ăна



ёнтĕ халь тин нимĕнле вăй та чарма пултарас çук, пушар насосĕнчен шывпа сапсан та сивĕтес çукчĕ...

Анчах хам никама та нимĕн те шарламастăп-ха. Кама калатăн? Çынсем кулма тытăнасран та хăрамалла... Мĕн калĕç вĕсем кун çинчен пĕлсен?

— Ха! Повар хĕре юратса пăрахнă! Поварăн чĕри яшка пек вĕрет! Ха-ха-ха!..

Сахвинене хăйне те каламастăп, шикленетĕп: эп ăна юратни çинчен каланине хирĕç вăл хăр-хар! кăшкăрса пăрахсан, мĕн тăвас? Çĕр тĕпнех анса каяс пулать вара!.. Гўсес ѐнтĕ майлăрах самант çаврăнса çитиччен, тетĕп. Çав вăхăтрах чĕре иккĕленсе те илет: ман çине вăл нихçан та çаврăнса пăхас çук пуль çав, ун пек хитре хĕр валли лейтенантсем те, темиçешер орденлисем те темĕн чухлех тупăнма пултараççĕ... А эпĕ кам? Эпĕ пĕтĕмпе те ротнăй повар кăна, Çăпала Иванĕ, çитменнине, манăн кăкăрăм та çап-çара, орден мар — пĕр-пĕр значок та пулин çук вĕт...

Çапах та шанчăка çухатас килмест: кам пĕлет, тен, унăн кăмăлĕ ытлашши хаярах та мар пулĕ, тен, ăна чиперех çавăрма пулĕ? Майне, меслетне пĕлес пулать кăна... Анчах наступление мĕнрен, еплерех пуçлас-ши?

Шухăшларăм-шухăшларăм та, тавай-ха, куна тутлăрах çитерме тытăнас, эп хăйне юратни çавăнтан палăрма пуçлатăр, терĕм.

Тытăнтăм вара!

Кашнинчех, Сахвине ман кухньăна котелок çĕклесе пырсанах, эп ăна йăпăр-япăр, черетсĕр-мĕнсĕрех ярса паратăп. Ыттисене панă пек-и тата? Асту! Çăпалана хуран тĕпнелле аври курăнми пуличчен чиксе яратăп та чи çăрине ăсса кăларатăп, çара какай! Ăна котелок ăшнелле тўнтерсен, çăпала хĕррипе шўрпе çинче çиелтен ярăнса тăракан çăва ăсса илсе ярса партăп. Ме, çи, çи те — эпĕ хăвна епле савнине сис, тетĕп хамăн ăшăмра.

Анчах... ой, çав «анчах» сăмаха нихçан та каламăттăм!

Тăрăшни кăлăхах пулчĕ вĕт, ахалех сая кайрĕ!

Пĕрре ярса патăм çавăн пек, тепре ярса патăм, чиперех çирĕ манăн савнă хĕр, анчах виççĕмĕшĕнче скандал турĕ хучĕ çав! Хăйне котелок тулли какай, çиелтен сапсар çу ярса парсаттăм кăна, çав самантрах вăл сасартăк: «Эсĕ, прохвост, мĕн хăтлапатан, кам хушрĕ сана кун пек тума?» — терĕ. Малтанах ăнланаймарăм эпĕ, вăл мана

мар, кама та пулин урăххине вăрçнă пек туйăнчĕ, анчах та котелокне ман сăмса патне илсе пырса хаяррăн силлесен, чухларăм вара...

— Эсĕ мĕншĕн мана ыттисенчен раснах çитерме тăрăшатăн? Ытти боецсенчен мĕнрен уйрăм эпĕ? Мĕншĕн эсĕ мана боецсен тӳпине катса паратăн? — тесе кăшкăрса тăкрĕ çак мана. Хĕрсе кайсах, çиленсех кăшкăрать!— Асту, рота командирне пĕлтеретĕп те акă кун çинчен, тыткалĕ вăл сана... Эккей, тупăннă фокусник! — тет.

Алăри пăхăр çăпала шăнкăрт! тухса ӳкрĕ манăн...

Пыр та калаç эс унпа, э? Эп ăна хăйне савнипе пĕтĕм чунтан ыр тăвасшăнччĕ, анчах вăл уншăн... пăскăртма тытăнчĕ мана, рота командирне калассипе хăратма тапратрĕ. Вот вĕт тамаша! Пулать те этем çĕр çинче...

Ну ĕнтĕ, хăвăрах чухламалла, кун хыççăн манăн чĕрери пĕтĕм шанчăк пĕрхĕнсе тухса кайрĕ. Мĕн юратăвĕ пулма пултартăр ĕнтĕ çавăн хыççăн?

Шăла çыртрăм та нимĕн те чĕнмерĕм урăх.

— Çил-тăманлă кун çуратнă пуль мана анне, çавăнпа телей çук пуль манăн,— терĕм кăна.

...Анчах йăнăшнă иккен эпĕ. Çавăн пек хурлăхлă вывод тума ытлашши васканă. Ытлашшиех телейсĕр çын пулман-мĕн эпĕ, тупата.

Телей куçа курăнса килмест, теççĕ-çке. Тĕрĕс каланă çавна. Аслă çын пулнă çавна калаканни. Манăн телей те ăнсăртран, пачах та кĕтмен çĕртен йăтăнса тухрĕ. Тĕлĕнсе каймалла!

Акă епле пулчĕ вăл...

Пĕрре, август уйăхĕн вĕçĕнче, пирĕн участокра наступленилле çапăçусем пуçлансан виççĕмĕш кунĕнче, эпĕ, яланхи пекех, малти линири салтаксене апат çитерме кайсаттăм. Ну, окопсене чиперех çитрĕм ĕнтĕ, пурне те пĕрер черкке эрех ĕçтертĕм, какай яшки çитертĕм, унтан термоса çурăм çине майласа çакрăм та каялла кайма тухрăм. Пульăсем ман тавра сăпсасем пек сăрлатаççĕ, утма мар — пуçа çĕклемелли те çук.

Пĕр километр пек хырăмпа шуса кайсан, эп обстрел айĕнчен тухрăм та чиперех тăрса утрăм. Хăрамалли нимĕн те çукчĕ халь, унга-кунта снарядсемпе минăсем çеç ӳккелетчĕç...

Пыратăп ĕнтĕ утса, унталла-кунталла пăхкалатăп. Тип-тикĕс хире снарядсемпе бомбăсем сыснасем пекех чавса пĕтернĕ, кашни темиçе утăмрах воронка, шăтăк та

путăк тĕл пулать... Çапăçăвĕсем пит вăйлă пулнăччĕ çав ун чух, пирĕннисем фашистсене калама çук хытă тӳнккерĕç!

Сасартăк çав уй варринче такам хама хушаматпа чĕннине илтех кайрăм:

— Черпаков! Черпаков!

Тĕлĕннипе тăпах чарăнса тăтăм та йĕри-тавралла пăха-пăха илтĕм... Никамах та курăнмарĕ. Мĕн ку, туйăнчĕ-ши мана? — тетĕп. Унччен те пулмарĕ, хайхи сасă каллех илтĕнчĕ:

— Черпаков!..

Халĕ уççăнах уйăрса илтĕм: хĕрарăм сасси. Анчах та кам, хăш енчен чĕнет — ниепле уйăраймастăп...

— Кунта! Кунта кил! Часрах!..— тата тепĕр хут кăшкăрчĕ мана курăнман çын. Эп ăна шырама тытăнтăм, куçа чарса пăрахсах тавралăха ухтаратăп.

Ак тамаша! Пĕр воронкăран Сахвине пуçĕ курăнсах кайрĕ. Чунтанах мана кăчăк туртать — кил, кил, тет...

Чĕререн вĕри шывпа сапнă пекех туйăнса кайрĕ. Пит-куç та пĕçерсе илчĕ, çурăм тирĕ те темшĕн сăр-сăр-сăр... турĕ. Шуткă-и-мĕн: Сахвине мана хăй чĕнет! Эп ăна тинех кирлĕ пулнă!

Тăруках çунатсем шăтрĕç пулас манăн: вăшт кăна ыткăнса çитрĕм ун патне. Пăхатăп — тарăн воронка тĕпĕнче икĕ аманнă салтак выртать, вĕсем патĕнче Сахвине тăрмашать...

— Ах, сана курни питĕ аван пулчĕ-ха ку! — терĕ вăл, ман çине шăтарас пек пăхса.— Вĕсем иккĕн, пĕри те утаймаççĕ, эп — пĕччен, ниепле те илсе çитерес çук вĕсене. Пĕрине санăн çĕклесе пымалла пулать. Анлантăн-и?

— Анланатăп,— терĕм ăна хирĕç,— саншăн пулсан, эпĕ тем тума та хатĕр, эсĕ çеç мана ним вырăнне те хумастăн, калаçасшăн та мар манпа...

— Ухмах! — лаплаттарса хучĕ çак мана, ырă сăмах калас вырăнне.— Маншăн мар куна, аманнисен пурнăçне çăласшăн тăвас пулать!

Каллех вырăнлă пулмарĕ ман сăмах. Чип-чиперех, ним сăлтавсăрах ухмах ятне илтрĕм. Хăй çавăнтах мана çине-çине командăсем пама тытăнчĕ:

— Çак плащ-палаткăна часрах сарса хур! Лайăхрах сар! Ку салтакне пуçĕнчен тыт! Хуллентерех! Купăста пуçĕ мар вĕт вăл, этем пуçĕ! Вăрт-вартах çаврăнкала,

упа пек ан пул! Кай, ӑнӑҫсӑр, санӑн аллусене йывӑҫран тунӑ пуль!

Пӗтерет!

Хама ҫакӑн пек хӑтӑрнӑ пирки аптрасах ӳкрӗм, ниепле те вӑл хушнӑ пек тӑваймастӑп. Уншӑн вӑл мана тата хытӑрах хӑтӑрать...

Мӗн пулса ҫитетчӗ — пӗлместӗп, анчах ҫав вӑхӑтра пирӗн пуҫ ҫийӗпе сасартӑк фашистсен «мессершмичӗ» ҫил пек ыткӑнса иртсе кайрӗ. Аялтанах вӗҫсе иртрӗ — пӗр ҫӗр метртан та ытла мар пулӗ. Ку ҫав тери кӗтмен ҫӗртен пулнипе эпир, хамӑра такам пуҫран ҫапнӑ пек, воронка тӗпне лӑпчӑнса лартӑмӑр...

Ҫапах та «мессер» пире асӑрхама ӗлкӗрчӗ пулмалла. Ик минут та иртмерӗ-и тен, вӑл калама ҫук хӑвӑрт вӗҫсе каялла ҫаврӑнса пычӗ. Пирӗн тӗле ҫитсен, чӗпӗ тытакан хурчкалла пикировать турӗ те пулеметран шатӑртаттарчӗ. Пульӑсем воронка таврашӗнче пӑрҫа пекех тӑкӑнчӗҫ. Эпир ку вӑхӑтра каллех ҫӗр ҫумне лӑпчӑнтӑмӑр...

Анчах та ӗҫ кунпа пӗтмерӗ-ха. Темиҫе минутран фашист ҫӑханӗ каллех таврӑнчӗ. Татах пикировать турӗ, татах пулеметран сапрӗ. Кӑшт тӑрсан, виҫҫӗмӗш хут атакӑларӗ пире!

Анлантӑмӑр — ку «мессер» епле пулсан та пуҫӗпех «хупласа хурасшӑн» пире. Лектересси лектерейместь хӑй, мӗншӗн тесен эпир кашнинчех воронкӑра вӑл вӗҫсе килнӗ еннелле йӑпшӑнатпӑр, пульӑсем тепӗр енне пырса ҫапӑнаҫҫӗ, анчах шӑтӑкран тухса каясси ҫинчен шухӑшламалли те ҫук — ҫавӑнтах ҫапса антарма пултарать.

...Вӑхӑт иртет, манӑн ӗнтӗ часрах ротӑна таврӑнса каҫхи апат хатӗрлемелле, Сахвине те пӑлханать, унӑн аманнӑ салтаксене хӑвӑртрах медпункта илсе ҫитерсе тыла ӑсатас пулать, анчах шуйттан «мессерӗ» пирӗнтен ҫаплах хӑпмасть, ҫаплах пыра-пыра тапӑнать!

Мӗн тӑвас? Ниҫта кайса кӗрейми тарӑхса ҫитрӗм ӗнтӗ. Май пулнӑ пулсан, тем туса тӑкӑттӑм эсреле!

Аптранӑ енне, тавай куна персе пӑхас, терӗм... Карабин пур вӗт-ха манӑн! Пирӗн дивизире ун пеккисем пулкаланӑччӗ, ахаль винтовкӑранах ик-виҫ самолета ҫапса антарнӑччӗ. Ман карабин ыттисенчен кая-им? Е эп хам пеме пӗлместӗп-и? Хай, вырӑссем калашле, попытка — не пытка! Часрах пӑшала ҫавӑрса тытрӑм та тытӑнтӑм ҫакна пеме... Пӗтӗм чӗререн тарӑхса, шӑла ҫыртса перетӗп! Пирӗн ҫине пикировать тума тытӑнсанах, тӗллетӗп те —

перетĕп, тĕллетĕп те — перетĕп. Пĕрре петĕм, иккĕ петĕм, виççĕ, тăваттă...

Аманнă салтаксенчен пĕри мана: ан пер пустуй, патронсене сая ан яр, пурпĕр нимĕн те тăваймастăн, карабин — зенитка мар вĕт, тет. Анчах та вăл çапла каларĕ кăна, эп пиллĕкмĕш хут персе ятăм та, сасартăк ним ăнланмалла мар япала пулса тăчĕ... Пиккене кĕнĕ «мессер» пирĕн пуççем çийĕпе ши-и-и! шăхăрса иртсе кайрĕ те эпир пытаннă воронкăран пĕр çĕр аллă-икçĕр метр иртсен сăмсипе çĕре жач! пырса тăрăнчĕ. Хӳри çӳлелле çĕкленчĕ, унтан хăрах çунатти çине тайăнса мук-мукăлчак туса илчĕ те çунма тапратрĕ. Çак пĕтĕм ĕç пĕр-икĕ секунд хушшинчех пулса иртрĕ...

Ăнлантăр-и? Пире тарăхтарса çитернĕ «мессер» çĕре персе анчĕ те спичка коробки пекех çунма тытăнчĕ!

— Ваня! Мĕн турăн эсĕ! — кăшкăрса ячĕ çав самантрах Сахвине.

— Курмастăн-им, персе антартăм-çке,— терĕм эп ăна хирĕç мăнкăмăллăн.— Кур, ав епле çунать...

— Ӳкрĕ-им? Ӳкрĕ-им? — хыпăнса ыйтрĕç аманнă салтаксем, воронка тулашĕнче мĕн пулса иртнине курма пултарайманнипе.

— Ӳкрĕ çав! Чул пекех татăлса анчĕ! Ваня персе антарчĕ ăна! — хавассăн кăшкăрса ячĕ Сахвине.

— Чухлăр-ха эсир: вăл мана «Ваня» терĕ!..

Эпир воронкăран сиксе тухса çунакан самолет патнелле чупрăмăр. Анчах ыгла çывăхах пыма шиклентĕмĕр: патронсем шатăртатса çурăлма тапратрĕç, хăй те кăвайт пекехчĕ. Ну, кăштах пăхса тăркаларăмăр та Сахвинепе иксĕмĕр, унтан: «Мĕн шыранине тупрăн-и? Çав кирлĕ сана, çăхана!» тесе, хамăрăн аманнă салтаксем патне таврăнтăмăр та батальона çĕклесе кайрăмăр.

Хамăн чĕре çул таршшĕпех кăкăртан сиксе тухас пек тапса пычĕ... Пĕлетĕп-çке халь мĕн пулассине! Тинех ĕнтĕ мана орден лекет!.. Пĕр-пĕр медаль те мар — орден!

Такам систернĕ — ăна пĕлместĕп, анчах та çав кaçхинех ман патăма дивизи хаçачĕн корреспонденчĕсем хашкаса чупса çитрĕç.

— Каласа пар, Черпаков юлташ, епле турăн эсĕ ку паттăр ĕçе? — теççĕ.— Питĕ тĕлĕнмелле вĕт-ха ку...

— А мĕн пит тĕлĕнмелли пур унта,— терĕм эп вĕсене хирĕç,— петĕм те — ӳкертĕм! Ӳкрĕ те — çунса кайрĕ, пĕтĕм ĕçĕ те çавă çеç...

Унччен те пулмарӗ, хаҫатра манӑн сӑн йӑтӑнса тухрӗ. «Мессершмита» ҫапса антарнӑ гварди рядовойӗ Черпаков Иван, тесе ҫырнӑ аяла. Ҫавӑн хыҫҫӑн вара... эрне те иртрӗ, те иртмерӗ — мана дивизи штабне чӗнсе илчӗҫ те орден тыттарчӗҫ — «Отечественной Войны II степени». Генерал хӑй тытса чӑмӑртарӗ ман алла:

— Маттур, Черпаков юлташ, малашне те ҫавӑн пек паттӑр пул,— терӗ.

— Служу Советскому Союзу! — терӗм эп ӑна хирӗҫ тулли кӑмӑлпа.

Эпӗ дивизи штабӗнчен ротӑна таврӑннӑ тӗле ман кухня патне пӗр ҫирӗм ҫын ытла пухӑнса тӑнӑччӗ: ездовойсем, сапожниксем, ҫӗвӗҫсем, шорниксем, темиҫе повар — пурте мана саламлаҫҫӗ, алла тытса чӑмӑртаҫҫӗ... Вася Котлеткин, хайхи «За боевые заслуги» илни, кӑштах сыпса пынӑ пулмалла та, мана кӳпшек аллисемпе ыталаса илсе чуптумах тапратрӗ:

— Молодец, Ванька! Сӑпаҫҫипах сана, поварсен ятне манран та ытларах чапа кӑлартӑн, ӗмӗр манмӑп куншӑн! — тет хӑй.

Ыттисем пирӗн ҫине калама ҫук ӑмсанса пӑхса тӑчӗҫ...

Ҫав хушӑра Сахвине те пырса ҫитрӗ. Ӑна асӑрхасан, эпӗ хам пата пухӑннӑ тыловиксене юриех ӑс панӑ пек пултӑм:

— Ан кӳренӗр, тусӑмсем, эсир те кашниех орденлӑ пулма пултаратӑр, паттӑр пулӑр кӑна! Пирӗн Тӑван ҫӗршыв хӑйӗн паттӑрӗсене нихҫан та манмасть...

Сахвине ман ҫине ҫав тери ӑшшӑн пӑхрӗ. Иксӗмӗрӗн куҫӑмӑрсем ӑнсӑртран тӗл пулсан, вӑл ҫемҫен кӑна йӑл-л... кулса илчӗ.

Манӑн питҫӑмартисем кӑвар пек пӗҫерсе кайрӗҫ, чӗрем кӑрт-кӑрт-кӑрт тапма тытӑнчӗ.

— Юрататъ! Юрататъ халь вӑл мана! Ахаль пулсан мӗншӗн ҫавӑн пек пӑхтӑр-ха ҫын? Эх, чунӑмҫӑм!..

Эп ҫавӑнтах ун патне чупса пырса, никамран именсе тӑмасӑрах, ӑна ыталаса чуптӑвасси патне ҫитрӗм. Юрать-ха ухмахланман. Сахвине вӑрҫӑ пуҫланиччен пӗр эрне малтан качча кайнӑ пулнӑ. Фронта та вӑл упӑшкипе пӗрлех килнӗ-мӗн.

## «ТИГР ЧĔЛХИ»

СТРЕЛКОВАЙ ротăра пĕр çулталăк ытла пурăнтăм эпĕ. Унтан пĕррехинче, кĕр енне, ман пата сасартăк хамăрăн писарь хашкаса чупса пычĕ те:

— Сана батальон командирĕ чĕнет! — терĕ. Тĕлĕнсех кайрăм... Мĕн тума кирлĕ пулнă-ши эп ăна? Эпĕ... командир та мар, строевик та мар, манăн пĕтĕм ĕç — çынсене тăрантарасси кăна... Мĕн хăямачĕ! Шикленнĕ пек те пултăм: мĕншĕн те пулин айăпласшăн мар-и мана? Ун пек те пулмалла мар пек... Хамăн ĕçсене эпĕ яланах йĕркеллĕ туса пынă, орден илнĕ хыççăн пушшех примерлă пулма тăрăшнă...

Нимĕнле ответ та тупайманнипе, тӳсеймесĕр, писарьтен ыйтрăм:

— Ма чĕннине пĕлместĕн-и, тусăм?

Анчах та вăл, мана лăплантарас вырăнне, хăрах куçне хĕсрĕ те, аяккалла пăхса, хаштах сывласа ячĕ:

— Паллах ĕнтĕ, ырăшăн мар! Штаба унта пирĕн пеккисене мунча кĕртме кăна чĕнеççĕ... Жалоба панă пуль кам та пулсан.

— Ман çинчен нимĕнле жалоба та пулма пултараймасть,— пуçа пăркаласа илтĕм эпĕ.— Апат-çимĕç енчен ку таранччен никама та кӳрентермен!

— Кӳрентернĕшĕн кăна мар, тепĕр чух хăшпĕрисене ытла тутлă çитерме тăрăшнăшăн та лектерме пултараççĕ,— каллех куçне хĕссе илчĕ çак.— Илтнĕччĕ эпир кăштах...

Вăл мĕн пирки сăмах тĕкнине ăнланса, эп унпа урăх калаçса та тăмарăм. Пĕрре сиввĕн кăна пăхса илтĕм те, саппуна хывса хурса, çи-пуçа тӳрлеткелесе, батальон штабĕ вырнаçнă çырма еннелле уттартăм. Хам вара çул тăршшĕпех пуçа çемĕрсе пытăм:

— Мĕншĕн чĕннĕ? Мĕн пирки? Нихçан та чĕнменччĕçке! Тен, чăнах та кам та пулин элеклесе панă ман çинчен?

Пĕр çирĕм минутран батальон штабĕн çĕрпӳртне кĕтĕм те, замкомбат умне пырса тăрса, хăюсăртараххăн рапортларăм:

— Капитан юлташ, эсир хушнă тăрăх гварди рядовойĕ...

Анчах вăл мана каласа пĕтерме памарĕ, урайĕнчи каска-пукан çине кăтартрĕ те:

— Лар,— терĕ.

Чĕре тинех кăшт лăпланчĕ... Эппин, нимĕн те хăрамалли çук! Начальник тӳрех ларма сĕнет пулсан, ятлама чĕнмен вăл, ырă ĕçпе чĕннĕ.

— Эсĕ, Черпаков юлташ, чаплă повар,— терĕ унтан замкомбат, мана нимĕçсен сигаретне сĕнсе,— ротнăй кухньăра кăна мар, ресторансенче те ĕçленĕ, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ апат пĕçерме пĕлетĕн, теççĕ, хăвăн паттăрлăхна та çителĕклĕ кăтартрăн...

— Служу...— теме пуçланăччĕ эпĕ, анчах вăл мана пӳлчĕ:

— Эпир сана разведчиксем патне куçарасшăн, килĕшетĕн-и?

-- Так точно, килĕшетĕп! — терĕм эпĕ ăна хирĕç, ним шухăшласа тăмасăрах. Ара, хăвна çавăн пек мухтанă хыççăн епле хирĕçсе тăратăн-ха!

— Анчах та асту, вĕсене юрама пĕлес пулать вара, ун пек-кун пек пулсан, калăпăр, вĕсем заданирен таврăннă çĕре санăн апат сивĕнсе кайнă пулсан е ывăнса килнĕ çынсем валли пĕрер черкке хатĕрлесе лартман пулсан, вĕсем санăн сывлăхна пăсса хума пултараççĕ. Çакна яланах асра тытас пулать,— калаçăва хутшăнса асăрхаттарма тытăнчĕ штабри писарь.— Питĕ вĕри йĕкĕтсем вĕсем, разведчиксем...

Чухларăм: ку мана кăштах хăратма хăтланать, тăрăхласшăн манран, урăхла каласан, «на пушку» илесшĕн. Çавăнпа та тӳрех татса хутăм ăна хирĕç:

— Ничево, куркаланă хамăн пурнăçра,— терĕм.— Ытлашши хăравçă йăхранах мар, таçта ярсан та, тем хушсан та аптрассăмах çук.

Йăпăрт кăна замкомбат çине пăхса илтĕм те, вăл кулкаласа ларнине курса, каллех писаре каларăм:

— Астăватăн пулĕ, пĕлтĕр «мессершмита» карабинран...

-— Вăл санăн ăнсăртран пулнă,— парăнмарĕ писарь. Ку вара мана тарăхтармаллипех тарăхтарса ячĕ! Хăй паттăр çын пулнă пулсан, татах калаçтăрччĕ хуть, атту хăй вĕт шĕпĕн пек кăна, çитменнине суккăр тата, куçлăхсăр тĕмĕ хыçне те тухса лараймасть, çапах та шăлне йĕрет...

— Эсĕ ху çавăн пек «ăнсăртран» пĕр-пĕр самолета персе антар та — кайран калаç! — терĕм çавна, çилĕ килнипе.— Эсĕ мĕн, мана разведчиксем патĕнче ĕçлеме йывăр пуласси пе хăрататăн?

Тавлашсах каяттăм пулĕ те, замкомбат чарчĕ.

— Шанатпăр сана, шанатпăр, çавăнпа чĕнтĕмĕр...

Анчах эпĕ, хĕрсе кайнăскер, тата персе ятăм:

— Кирлĕ пулсан, эп хам та разведкăна кайса «чĕлхе» сĕтĕрсе килме пултаратăп!

Штабрисем ахăлтатсах кулса ячĕç.

— Ну, куна эс ытлашширех çавăрса хутăн вара, Черпаков юлташ... Загнул пăртак,— терĕ тахăшĕ.

Чăнах та, ку сăмахсем ман çăвартан ытла тăрук тухса кайрĕç ĕнтĕ, кăшт мухтаннă пекрех пулчĕ, анчах та манăн пĕрре каланă сăмахран каялла чакассăм килмерĕ.

— А мĕн? Пултараймастăп, тетĕр-и? Нипочем та пултаратăп!

— Курăпăр ара, курăпăр, малтанах тавлашмăпăр, туман тиха пилĕкне ан хуç, тенĕ пек,— каллех сăмах тĕкрĕ писарь.

— Кайран, тен, разведчик та пулăн, анчах халь эс вĕсене лайăхрах апат пĕçерсе çитер-ха,— терĕ замкомбат.

— Есть!

...Çак калаçу хыççăн манăн чăнах та разведчик пулас, хама шанманнисене хăçан та пулин нателă кăтартса парассăм килсе кайрĕ.

«Эккей,— терĕм ăшăмра,— эпĕ повар пулса служить тунă пирки мана чăн-чăн боец выранне те хурасшăн мар... Чимĕр акă, кăтартăп-ха сире хамăн пултарулăха!»

Çынни çавăн пек эпĕ: лăпкă чухне — питĕ лăпкă, анчах хама чĕререн пырса тивертеççĕ-тĕк — нихçан та манмастăп ăна. Çавăн чух батальон штабĕнче хамран тăрăхларах калаçнине те манмарăм вара, асра тытсах пурăнтăм...

...Разведчиксем патне куçсан, эпĕ чăн малтан вĕсем мĕнлерех çынсем иккенне сăнама тытăнтăм. Вĕсем кухньăна апат илме пырсан, кашнин çинех витĕр шăтарас пек пăхаттăм. Вĕсем хăйсем хушшинче калаçнисене пĕр сăмах сиктермесĕр итлеттĕм. Мана вĕсем пачах расна йышши çынсем, герой пулса çуралнăскерсем пек туйăннăçке-ха!

Анчах пурне те палласа çитрĕм те, тĕлĕнмелли нимех те çук иккен... Ман пек йĕкĕтсемех, темелле: вăрçăччен пĕрисем заводра ĕçленĕ, теприсем колхозра — хăшĕ конюх, хăшĕ бригадир пулнă, пĕри тата темиçе çул хушши парикмахерскинче майрасен çӳçĕсене кăтралатса пурăннă-мĕн. Халь вара кашниннех кăкăр тулли орден

та медаль, шӳлкеме пек чăнкăртатаççĕ. Чăн та, задание тухса кайнă чух вĕсене пурне те старшинана парса хăваратчĕç, анчах ахаль чухне вара йăлтăртаттарса кăна çӳретчĕç çав...

Хăйсем çав тери чапа тухнă çынсем пулнă пулин те, пĕртте мăнаçланмастчĕç, пурте калама çук уçă кăмăллăччĕ. Разведкăран таврăнса çывăрса тăнă хыççăн пĕри купăс калать, теприсем хавассăн юрă шăрантараççĕ:

> Была бы только ночка,
> Да ночка потемней...

Ку юрра вĕсем пуринчен те ытла юрататчĕç: каçĕ тĕттĕм пултăрах! Е тата хăйсем каçхине постра тăракан фрица сухари миххипе хупласа, сысна тушкине сĕтĕрсе килнĕ пек сĕтĕрсе килнине аса илсе кулаççĕ. Пĕтĕм тавралăх янăраса тăратчĕ çав вĕсем кулма тапратсан!

Пĕр уйăх хушшинче вĕсене икĕ хутчен наградăсем пачĕç. «Чĕлхе» сĕтĕрсе килеççĕ — медаль туянаççĕ, тепре тупса пыраççĕ — орден. Тĕлĕнсе кăна пурăнатăп çав. Хăйсем те пит чарусăр хăтланатчĕç те ĕнтĕ... Пĕррехинче чип-чипер кăнтăр кунĕнче, çитменнине янкăр уяр, хĕвеллĕ кун тытса килчĕç фашистсен пулеметчикне. Хăйне кăна мар, пулеметне те çĕклесе килнĕ. Ытти нимĕçсем сиссе те юлайман çавна, пирĕннисем хамăрăн траншейăсене ыткăнса çитсен тин пеме тытăннă...

Анчах та эпĕ кăшт аяккалла сулăнтăм-ха. Манăн сире хам çинчен каласа памалла-ха вĕт. Разведчиксемпе пĕрле пĕр тĕлĕнмелли ĕç туса хуни, «тигр чĕлхи» тытса килни çинчен каласа памалла.

...Çапла, пĕрре пирĕн йĕкĕтсем çавнашкал «ухутана» кайма хатĕрленнине сисрĕм. Сисрĕм те çав тери пăлханма тытăнтăм. Мĕншĕн, тетĕр-и? Мĕншĕн тесен эпĕ вĕсемпе пĕрле разведкăна кайма шутласа хунăччĕ. Пĕр енчен, манăн хайхи пĕркун штабра хама шанманнисене «сăмса шăлса» ямалла, тепĕр енчен, манăн пĕр-пĕр боевой ĕç тăвас килекен пулса çитрĕ. Пĕрмай хуран кутĕнче тăни, тĕрĕссипе каласан, йăлăхтарса çитерет вăл...

Кăнтăрлахи апат валеçнĕ чухне эпĕ пĕринчен шăппăн ыйтса пĕлтĕм:

— Кĕçĕр каятăр-и?

— Каятпăр,— терĕ вăл.

— «Чĕлхе» тытма-и?

— Точно.
— Нумаййăн каятăр-и?
— Пĕр çиччĕн-саккăрăн...
Эпĕ пĕтĕм кăкăрпа хаштах сывласа ятăм.
— Сана мĕн тума кирлĕ ку? — ыйтрĕ разведчик.
— Так, ахалех...

Хăрарăм хамăн чăн-чăн шухăшсене каласа пама. Аçтан-ха тӳрех: «Эпĕ те сирĕнпе разведкăна пыма шутлатăп», тесе калатăн? Хăвăрах пĕлетĕр, манăн должноçĕ çавăн пекрех-çке... Повар вĕт-ха эпĕ. Ене чĕлхи тĕлĕшĕпе пултаратăп ĕнтĕ, ăна тем тĕрлĕ те пĕçерсе пама пĕлетĕп: пăрçапа та, улма нимĕрĕпе те, çупа та, горчицăпа та, анчах тăшман «чĕлхи» тĕлĕшпе хамăн пултарулăха ку таранччен пĕрре те кăтартайман...

Çапах та, хăюлăх çитертĕм-çитертĕмех: апат валеçсе пĕтерсен, хурана часрах çуса тасатса лартрăм та тӳрех командир çĕрпӳртне чупрăм. Задание тухса каяс умĕн вăл тимлесех карттăна вĕренсе ларать-мĕн, ман çине çаврăнса та пăхмарĕ. Чăнах та çав, ăна çак вăхăтра мĕн тума кирлĕ пулнă повар?

Пĕр минут тăтăм алăк патĕнче, ик минут тăтăм, унтан пиллĕк те иртрĕ пулмалла... Чĕрем хамăн тăнк-тăнк-тăнк тăвать. А вăл ман çине куç хĕррипе те пăхмасть. Вара эпĕ пĕтĕм строевой формăпа юсанса тăтăм та:

— Лейтенант юлташ, ыйтма ирĕк парсамăрччĕ,— терĕм.

Тинех пуçне ман еннелле çавăрчĕ çакă.
— Мĕн сана?
— Тĕрĕссипе каласан...
— Тĕрĕссипе кала çав!

— Тĕрĕссипе каласан, лейтенант юлташ, эпĕ кĕçĕр сирĕнпе пĕрле разведкăна пыма шутлатăп,— терĕм хайхи. Хамăн чĕркуççисем çав самантрах сăр-сăр-сăр... туса кайрĕç. Акă ĕнтĕ, хăйне çак ответлă вăхăтра килсе кансĕрленĕшĕн ку мана халех пăскăртса кăларса ярать, çиелтен тата пĕр виçĕ черетсĕр наряд шаплаттарса хурать, тетĕп. Пыр та типсе ларчĕ.

Анчах лейтенанчĕ пирĕн лайăх кăмăллă çынччĕ те — ун пек тумарĕ. Ман çине чăр-р... пăхрĕ, унтан, пĕр-ик минут хушши пулĕ чĕнмесĕр ларнă хыççăн:

— Эсĕ мĕн, паян нормăран ытлашширех сыпмарăн пулĕ те? — терĕ.

— Никак нет, лейтенант юлташ, ытлашши мар, хамăн нормăна та çынна патăм. Ёненместĕр пулсан, хуть те шăршласа пăхăр. Кĕрсен те, манран ыхра шăрши кăна кĕме пултарать, мĕншĕн тесен эп ăна мĕн пĕчĕкренпех юрататăп та ялан кĕсъере чиксе çӳретĕп,— терĕм.

— Апла пулсан, епле-ха эсĕ кун пек шухăш тытрăн? — каллех ыйтрĕ лейтенант.

— Мĕншĕн тесен манăн боевой ĕç тăвас килет! — персе ятăм эпĕ.

— А-а...— лейтенант ман çине пăхса сассăр кулса илчĕ. Куна курсан, мана чун кĕрсех кайрĕ. Пулчĕ хайхискер, ман ыйтăва ахаль хăвармасть ку, тесе шухăшларăм савăнăçлăн.

Анчах та савăнма васканă иккен-ха эпĕ.

Лейтенант тата тепĕр хушă ним чĕнмесĕр пăхса ларчĕ те çапсах хуçрĕ мана...

— Шухăшу аван, çапах та вăл шухăша пуçăнтан кăларса пăрах эсĕ,— терĕ.— Разведкăна çӳресси — повар ĕçĕ мар.— Эсĕ луччă эпир «чĕлхе» тытса таврăннă çĕре пĕркунхи пек ёне чĕлхи шаритлесе хатĕрле, пĕркун мана вăл пит те кăмăла кайнăччĕ...

Ку сăмахсем мана йĕп-йĕпе тара ӳкерчĕç. Халь çеç вĕри мунчаран тухнă пекех пулса кайрăм. Пĕтĕм ĕмĕт татăлчĕ вĕт манăн! Хапха юпи пек кăнт хытса тăтăм та нимĕн те калаймастăп.

— Анлантăн-и?— тесе ыйтрĕ лейтенант кăшт тăрсан, малтанхи пекех мана куçран пăхса.— Анлансах çитеймерĕн пулсан, тепĕр хут каласа пама пултарăп, эп мăн кăмăллă çынах мар...

Сасартăк сисрĕм: манпа вăл хаяррăн калаçнă пек курăнасшăн, анчах хăйĕн куçĕсем пурпĕр кулса тăраççĕ. Çавна пула вара эпĕ тепĕр хут хăюлланса кайрăм та хам ăшра мĕн пуррине çăтăр-çатăр каласа тăкрăм:

— Лейтенант юлташ, тархасшăн ман ыйтăва хирĕç ан пулăр, ан татăр ман кăмăла! Неушлĕ вара манăн фронтри пĕтĕм пурнăç паранкă шуратсах иртсе каймалла? Эпĕ мĕн, воин мар-и? Алла пăшал тытма пĕлместĕп-и? Акă, сăмахран, пĕр виçĕ уйăх каялла эпĕ «мессершмита» персе антартăм... Кирлĕ пулсан, эп хуть те мĕнле вут ăшне те кĕрсе кайма пултаратăп! Илсе кайăр мана разведкăна, тархасласа ыйтатăп. Кайран, тен, хăвăрах тав тăвăр мана!

Питĕ витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕн каларăм пулмалла...

Лейтенант мана куçран тепĕр хут шăтарас пек пăхса илчĕ те килĕшрĕ.

— Ну, юрĕ эппин,— терĕ,— илсе кайăп сана разведкăна, анчах асту, ун пек-кун пек пулсан...

Вăл мĕн каласшăн пулнине ăнланса, эпĕ ăна каласа пĕтерме те памарăм, пӳлсе хутăм:

— Çук, çук, Черпаков çине эсир чул стена çине шаннă пекех шанма пултаратăр. Анне ячĕпе тупа туса калатăп!

— Курăпăр, тенĕ суккăр çын...— кулса илчĕ лейтенант.

— Курăпăр çав!—кăкăра каçăртсах честь патăм эпĕ.

...Тепрер ик сехетрен эпир, маскировочнăй халатсем тăхăнса, гранатăсем илсе, автоматсем валли запаслăх дисксем чиксе, разведкăна кайрăмăр.

Вăрмантан тухса, малти окопсенчен нумай мала шуса иртрĕмĕр те юр çине ним палăрми пулса выртрăмăр. Сăнатпăр. Тĕттĕм пуличчен пирĕн тăшманăн ăçта мĕн пуррине пĕлмелле-çке-ха.

Чылай вăхăт иртрĕ. Унтан сасартăк, пачах кĕтмен çĕртен, нимĕçсен артиллерийĕ ухлаттарма тапратрĕ. Малтан эпир ку вăхăтлăх артналет пулĕ тесе шутланăччĕ, анчах та вĕсем, çĕр çăтманскерсем, чăн-чăн артподготовка пуçласа ячĕç. Малти лини таврашĕнче снаряд хыççăн снаряд çурăлать, осколоксем шăхăраççĕ кăна, малалла кайма мар, пуçа çĕклемелли те çук.

— Ырра мар ку, ахăртнех наступлени тăвасшăн пулмалла,— терĕ манпа юнашар пыракан боец.— Пулмарĕ кĕçĕр разведка!

— Черпаков айăплă,— хушса хучĕ тепри,— урăх никам та мар.

— Мĕншĕн эп айăплă пулам? — тĕлĕнтерчĕ ку мана.

— Илтмен-им, тухман çын тухсан, яланах тăман тухать, теççĕ.

Ана хирĕç лайăх кăна тавăрса хурасшăнччĕ те эпĕ, вăхăт пулмарĕ, ĕçсем вĕриленсе кайрĕç. Сулахай енчен пирĕн çинелле икĕ танкпа виçĕ самоходка килни курăнчĕ. Çĕр çĕмĕрсе, тупписенчен пере-пере ыткăнса килеççĕ. Унччен те пулмарĕ, вĕсем хыççăн шур юр çине кăткă пек пехота тапса тухрĕ.

— А ну, ребята, держись! — тесе кăшкăрчĕ пирĕнтен маларах выртакан лейтенант.

Халь ку иртнĕ япала ĕнтĕ... Çавăнпа та пытармасăрах калама пулать: малтанхи самантсенчех çамка çине

ай-вай сив тар тапса тухрӗ. Хăрушă пулса кайрӗ. Епле пулсан та, хăнăхман-ҫке эпӗ. Танкӗсем те ыткăнса килеҫҫӗ, самоходкисем те килеҫҫӗ, пехоти те чупать... Пурте сан ҫинелле пыреҫҫӗ, сана таптаса лапчăтасшăн, сан кӗлеткӳне пульăсемпе шăтарса ала пек туса хурасшăн! Акă эс ҫак самантра чип-чипер пăхса, сывласа выртатăн, анчах самантранах санăн кӗлеткӳ пӗҫермен катлет пек пулса выртма пултарать...

Анчах нумая пымарӗ ку. Юлташсем тăшман еннелле ним хускалмасăр пăхса выртнине куртăм та лăпланнă пек пултăм. Ҫумри гранатăсене, унтан автоматăн затворне тӗрӗслесе илтӗм, пеме лайăхрах пултăр тесе майланса выртрăм.

Фашистсем ҫывхарсах килеҫҫӗ. Инҫе те мар ӗнтӗ вӗсем, пулсан пулӗ пӗр тăватҫӗр метр. Асăрхарăмăр: ӳсӗр вӗсем! Уҫăлса ҫӳреме тухнă пекех килеҫҫӗ, пӗшкӗнмеҫҫӗ те! Пăлхатса янă йытă кӗтӗвӗ пекех шавлаҫҫӗ тата — тем шуйттанӗ кăшкăраҫҫӗ...

— Психически тăваҫҫӗ! — кăшкăрчӗ лейтенант.— Эп команда париччен никам та ан перӗр! Ҫывăхарах килччӗр!

Эпир ӗнтӗ пӳрнесене спусковой крючоксем ҫинчех тытатпар, хуть хăш самантра та пеме пуҫлама хатӗр... Анчах пересси пулмарӗ. Сасартăк пирӗн хыҫри вăрманта «катюша» юрласа ячӗ: кӗмсӗр-р... кӗмсӗр-р... Тупăсем ухлатрӗҫ. Пӗри, тепри, вуннă, ҫирӗм! Ах, тапранчӗ, ах, тапранчӗ! Пӗр хушă хамăр умра эпир вутпа ҫулăм ҫеҫ куртăмăр. «Катюша» снарячӗсем айне пулнă фашистсем вӗри ҫатма ҫине хунă чӗрӗ кăртăшсем пекех ăшаланма тытăнчӗҫ.

Хыҫалтан тата темиҫе залп пани илтӗнчӗ.

— Ҫунать! Ҫунать, проклятtăй! — кăшкăрса ячӗ манпа юнашар выртакан боец, сулахаялла кăтартса.

Пăхрăм та курах кайрăм: пирӗн еннелле килекен пӗр танк ҫурта пек ҫунать, тепри хăяккăн, ним хускалмасăр ларать... Иккӗшӗ те пиҫнӗ! Самоходкисем каялла тараҫҫӗ, вӗсем тавра унта та кунта пирӗн снарядсем ҫурăлаҫҫӗ. Акă, малти чарăнчӗ, лекрӗ пулмалла ăна, иккӗшӗ вара, гусеницисемпе юра сирпӗнтерсе, курăнми пулчӗҫ...

— За мной! — хыттăн команда пачӗ те лейтенант, юр ăшӗнчен сиксе тăрса, танксем патнелле чупрӗ. Эпир, паллах, ун хыҫҫан...

— Пулать пирӗн «чӗлхе»! — чупнӑ ҫӗртех кӑшкӑрчӗ лейтенант.

Пӗр ҫӗр метр пек юлсан, ҫунман танкран пирӗн ҫинелле пулеметран сапрӗҫ. Пирӗн икӗ юлташ ҫавӑнтах ӳкрӗҫ. Вӗсене иккӗшне те урисенчен тивнӗ иккен.

— А-а, эсир капла-и? — тарӑхса кайрӑмӑр эпир.— Ну, тӑхтӑр!

Пирӗн телее, ҫывӑхрах пысӑк лупашка пулнӑ-мӗн, танкран тем чухлӗ персен те, пӗр пуля те лекес ҫук унта. Аманнисене часрах ҫавӑнта вырнаҫтартӑмӑр та ҫунса кайнӑ танк хӳттипе малалла шума тытӑнтӑмӑр. Перкелерӗҫ-перкелерӗҫ нимӗҫсем, анчах нимӗн те тӑваймарӗҫ пире.

— Ну, халь пӗтӗмпех пулчӗ,— терӗ лейтенант, ҫунӑк танк ҫумне пырса тӑрсан. «Тигра» йӗри-тавра 9 метр хушши — «мертвое пространство», унта нимӗнле хӑрушлӑх та ҫук. Шалта ларакансене туртса кӑларасси ҫеҫ юлчӗ. Вӗсене ҫунтарса янинчен усси ҫук, пире «чӗлхе» кирлӗ!

Пурте шухӑша кайрӑмӑр... Мӗнле тӑвас? Ахаль чӗннипе танкран тухас ҫук-ҫке-ха вӗсем, ҫывӑха пыма та кансӗр герех — пулемечӗ ӗҫлет вӗсен...

— Ничево, ҫиччас! — терӗ пӗр боец.

Ҫавӑнтах калпак пысӑкӑш юр чӑмӑркки туса хӳтлӗхрен сиксе тухрӗ те леш танкӑн пӑхмалли шӑтӑкӗнчен шаплаттарчӗ.

— Килӗр кунта-а!..

Темиҫе самантран эпир танка йӗри-тавра сырса илтӗмӗр. Автоматсем, гранатӑсем — хатӗр. Ним те чӗнместпӗр. Минут иртет, иккӗ, виҫҫӗ. Унтан танкӑн ҫӳлти люкӗ е-ерипен ҫӗкленме пуҫларӗ. Пирӗн лейтенант вӑшт танк ҫине хӑпарса тӑчӗ... Люк пӗр чышкӑ кӗмелӗх уҫӑлсанах вӑл унта йӑпӑрт ҫеҫ «Ф-1» граната чиксе хучӗ.

— Кӗмсӗ-ӗрт! турӗ те шалта, тӗтӗм палкаса тухса кайрӗ...

Халӗ эпир пурте танк ҫине хӑпарса тӑтӑмӑр. Лейтенант люка кӑшт кӑна уҫса: «Выходи!» тесе кӑшкӑрчӗ. Анчах ответ пулмарӗ. Вара эпир люка пӗтӗмпех уҫса, ҫӳлте ларакан фрица туртса кӑлартӑмӑр. «Чӗлхе» пулма юрӑхсӑр иккен вӑл — чунӗ тухнӑ. Иккӗмӗшне сӗтӗрсе кӑлартӑмӑр — вӑл та сывламасть. Пӑхатпӑр — аялта виҫҫӗмӗшӗ, водитель, тӗтӗмпе чыхӑнса, авкаланса ларать. Тумтирӗ те ҫунма тытӑннӑ унӑн. Йӑпӑр-япӑр юр ҫи-

не туртса кăларса пăрахрăмăр та çакна — тытăнтăмăр йăвалантарма, пăс кăна тухса тăрать. Шуйттан! Хăрăлтатрĕ-хăрăлтатрĕ те лăпах шăпланса выртрĕ, ним пĕлми пулчĕ. Ак инкек! Мĕнле тăна кĕртес кăна?

Аса илсех кайрăм: ман кĕсъере нашатырнăй спирт пурччĕ, кухньăра сĕрĕм тивес-тăвасран эп ăна яланах хам çумра тытнă.

— Халех! — терĕм,— калаçакан пулать вăл манăн!

Пĕрре шăршлаттартăм çак фрица, иккĕ шăршлаттартăм, пуçне юрпа сăтăркаларăм та, куçне уçрĕ хайхискер. Чĕрĕлчĕ пирĕн «чĕлхе»!..

Эпĕ çавăн пек тăрăшнă вăхăтра ыттисем танка пур енчен те пăхса, тĕрĕслесе тухнă иккен.

— Ку урапапа хамăр пата кайсан пит аванччĕ те ĕнтĕ...— терĕ тахăшĕ.— Пит чаплă пулĕччĕ те...

— А мĕн? Кайма та пултаратпăр,— терĕ лейтенант, ку шухăша тӳрех ырласа.

Нумай та шухăшласа тăмарĕ вăл. Эп чĕртнĕ нимĕçе хăйĕн вырăнне кĕрсе ларма хушрĕ, хăй те унпа пĕрле кĕчĕ. Унга вăл татăлнă темле проводсене сыптаркаланă та — танк хускалчĕ кайрĕ! Эпир савăннипе «урра» кăшкăрса ярсах хăпарса лартăмăр танк çине.

Анчах ытла савăнмаллах пулман-ха. Пирĕн вĕт хамăрăн батарейăсем çинеллех пыма тӳр килнĕ-çке. А вĕсем пĕр залп парсанах пире танкĕ-мĕнĕпе пĕрлех сывлăшалла сирпĕнтерме пултарнă. Çавăнпа та эпир тутăрсене кăларса сулма тытăнтăмăр.

— Парăнатпăр! — тетпĕр ĕнтĕ...

Унччен те пулмарĕ, çакна хыçалтан нимĕçсем асăрхарĕç пулмалла та тупăсенчен пеме тапратрĕç. Хамăрăннисем çине те шансах каймастпăр, кĕç-вĕç тӳнклеттерме тытăнма пултараççĕ. Лару-тăру, хай каларĕш, пит те кăткăкланмалла пулса тăчĕ пирĕн!

Юрать, лейтенант ăс çитерчĕ.

Малти люка уçрĕ те вăл:

— Кузькин, Черпаков, Миронов! Халех танк çинчен анса танк умĕн чупăр!

Сиксе антăмăр та, вăл хушнă пек, танк умĕн ыткăнса пыма тытăнтăмăр: çĕлĕксемпе сулатпăр, кăшкăратпăр. Танк пирĕн хыççăн чăнкăртатса пырать...

Мĕн тетĕр эсир? Чип-чиперех çитрĕмĕр вĕт хамăр пата! «Чĕлхе» те пулчĕ пирĕн, «тигр» та тытса пытăмăр. Таврара кам пулнă — пурте чупса тухрĕç пире хирĕç.

Çав тери шав-шав тапранса кайрĕ... Мĕнле кăна ырламарĕç пуль пире!

Халăх хушшинче шăпах батальон писарьне асăрхарăм та, вăл пĕркунне хамран тăрăхласа калаçни аса килсе кайрĕ. Тӳрех утса пытăм та çавăн патне:

— Куртăн-и? — терĕм мăнкăмăллăн, пĕрре танк çине, тепре вилнĕ çын тĕслĕ пулса кайнă нимĕç çине кăтартса.

— Куратăп-çке,— терĕ вăл именерех.— Маттур, маттур эсир... Ним каламалли те çук урăх...

— Тоттă çав! А эс мана: разведчика пултараймастăн, терĕн пĕркун. Çăпала Иванĕ тем тума та пултарĕ вăл, хăшпĕрисем пек мар!

Писарь тек нимĕн те калаймарĕ...

## МЫСКАРАЛЛА КУН

ПУЛАÇÇĔ тепĕр чух этем пурнăçĕнче çавăн пек мыскараллă кунсем...

Ирхине чип-чиперех, ырă кăмăлпах вăранатăн, мĕншĕн тесен кĕçĕр питĕ лайăх çывăрнă эсĕ: ни усал тĕлĕксем курман, ни пăрçа-хăнкăла таврашĕ çырта-çырта тарăхтарса пĕтермен сана çĕр каçа, анчах çапах та, тăнăçăманах кӳренмелли сиксе тухать те, вара каç пуличченех тупăнса пырать мĕн те пулин. Инкек çине синкек, йĕпе çине сапа!

Хĕрĕх виççĕмĕш çулхи сентябрь уйăхĕнче, Днепр патнелле çывхарса пынă чух, эпир кашни кунах çирĕм-вăтăр километр малалла каяттăмăр. Кăшт, темиçе сехетлĕхе, чарăнса тăратпăр, лашасене кантаратпăр, хамăр çерçи ыйхине çывăрса илетпĕр те каллех — атя! пошол! Малалла, хĕвеланăçнелле! Ĕретлĕн апат пĕçерсе илме те май килместчĕ час-часах. Пĕçерни те нумай хутчен харама кайрĕ: çиекен çук, пурте таçта малта, тăшмана хăвалаççĕ. Хуса çит-ха вĕсене! Хамăр пĕрмай вăрманпа пыратпăр тата, çулĕсем ним латти çук...

Пĕррехинче çанталăк калама та çук пăсăлса кайрĕ. Каçалапа кăвак тӳпене кивĕ салтак шинелĕ тĕслĕ пĕлĕтсем хупласа илчĕç, çил тухрĕ, çумăр кастарма тытăнчĕ. Часах вармантa пăч тĕттĕм пулса ларчĕ, çамкаран тукмакпа пырса çапсан та — çапаканне палласа юлас çук. Пирĕн обоз чарăнса ларчĕ. Çакăнтах çĕр выртатпăр, терĕç.

Ну, мĕнех ĕнтĕ, выртмалла-тăк — выртмалла, пĕччен мар, халăхпа. Эпĕ хамăн кĕсрене тăвартăм та кухня урапинчен кăларса утă патăм. Хам плащ-палаткăпа пĕркенсе хуран çумне тайăнтăм... Паллах ĕнтĕ, тĕлĕрсе кайнă. Тул çутăлма пуçланă чух вăранатăп та — манăн кухня патĕнче... кĕсре çук! Ак тамаша! Унталла пăхрăм, кунталла — ниçта та курăнмасть. Часрах сиксе тăр та — шырама. Обоз тăрăх чупса тухрăм (ман кĕсре камăнне те пулин утă вăрлама кайман-ши, тесе) — çук! Çынсенчен ыйткаласа пăхрăм — никам та курман. Апайтурух! Пĕтетĕп вĕт капла, пĕр-пĕчченех тăрса юлма пултаратăп, тетĕп, мĕншĕн тесен ыттисем лашисене кӳлме те пуçларĕç ĕнтĕ. Пĕтĕм пит-куç пĕçерсе кайрĕ. Шуткă-им çак сĕм вăрманта пĕччен юлма? Çынни эпĕ хăраканскерех мар, çапах та шикленмелле: ку таврара нимĕçсен сапаланчăк ушкăнĕсем нумай çӳреççĕ, текен хыпар пурччĕ. Аçталла та пулин тарса тухмалли май шыраççĕ, тет. Сасартăк çавăн пеккисене тĕл пулсан? Çук, çук, халăхран ним тусан та уйрăлма юрамасть...

Хашкакан пуличченех чупса шыраса çӳрерĕм кĕсрене. Хамран хама тар шăрши кĕрекен пулса çитрĕ. Сахалтан та пĕр пилĕк километр чупрăм йĕри-тавралла. Çук!.. Йĕп пекех пулнă ман кĕсре!

Обоз патне каялла пырса тухрăм та юлташсене ӳкĕтлеме тытăнтăм:

— Тархасшăн, хăшĕ те пулин ман кухньăна çаклатса кайăр!

Ӳкĕте кĕрекен никамах та пулмарĕ. Хамăрăн та йывăр, лашасем ывăннă, теççĕ. Хăвăн лашунах шыраса туп, ниçтах та кайман тăр вăл, тăрать пулĕ-ха пĕр-пĕр тĕм хыçĕнче...

Манăн лару-тăру кансĕрленсех çитрĕ. Хай каларĕш — ни туди, ни сюди. Ывăнса çитнĕскер, пĕр тунката çине лартăм та шухăша кайрăм. Мĕн те пулин шухăшласа кăларасах пулать-çке!

Çав вăхăтра обоз патне хамăрăн полк почтальонĕ, шĕвĕр сăмсаллă, хĕп-хĕрлĕ сăн-питлĕ, яланах хаваслă Вакула, юланутпа çитсе тăчĕ.

— Аçтан килетĕн, тусăм? — тесе ыйтрăм çакăнтан.

— Тылран килетĕп,— тет.

— Çул çинче, ăçта та пулин, лаша курмарăн-и?

— Лаша нумай курнă эпĕ, ак халь те обозĕпех куратăп,— кулса илчĕ Вакула.

— Çук, эпĕ хамăн лаша çинчен ыйтатăп. Çĕрле вĕçерĕнсе кайнă, эсрелĕ, хăмăчĕ-йĕнерчĕкĕпех... Аптрал халĕ...

Вакула самантлăха шухăша кайнă пек пулчĕ, сăмси вĕçне кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕ те, манран:

— Çӳренскер, хушка çамкаллăскер-и? Хăмăчĕ çĕнĕ, сар сăранпа витнĕскер... Çапла-и? — тесе ыйтрĕ.

— Тĕп-тĕрĕс! Çапла! — савăнса кайрăм эпĕ.— Хăш гĕлте куртăн эсĕ ăна? Инçе-и?

— Ытла инçех мар, пулсан пулĕ пĕр километр. Çырмара, тăрăхла уçланкăра, курăк çисе çӳрет...

Чун керсех кайрĕ мана! Вакуларан тек ыйтса та, унпа урăх калаçса та тăмарăм. «Тавтапуç, тусăм, çăлтăн эс мана, ĕмĕрне те манмăп куншăн», терĕм те тӳрех çул тăрăх тыл еннелле ярăнтартăм. Теприсем кросра та ун пек чупмаççĕ пулĕ. Хирĕç пулакансем, тĕлĕннипе, каялла çаврăна-çаврăна пăхаççĕ ман çине.

— Ухмаха ернĕ-им ку?— тенине темиçе хут та илтрĕм эпĕ.

— Дезертир мар-и, фронтран тармасть-и? — терĕ тата пĕри.

Анчах вăл маншăн халĕ пурпĕр пулнă. Хуть те мĕн калаччăр ман çинчен, çăва патне, манăн пĕр ĕмĕт: часрах хамăн кĕсрене тупса кӳлесчĕ те юлташсенчен юлас марччĕ!

Акă, çул сулахаялла пăрăнчĕ, акă вăл çырманалла анать. Акă тăрăхла уçланкă... Аçтарах çӳрет-ши ман кĕсре? Ну, тытсассăн пĕрре паратăп ĕнтĕ эп ăна, вĕрентетĕп çĕрле хуçана пăрахса тарма! Нумайччен астăвĕ паянхи куна.

— Машка! Машка!..

Унталла чупса кайрăм, кунталла, лерелле... Чĕнетĕп, шăхăратăп, кăшкăратăп. Ман сасса илтсен, вăл яланах кĕçенсе яраканччĕ. Анчах та халь нимĕнле ответ та пулмарĕ. Ниçта та çук ман лаша. Пĕр сехет пуль ухтартăм çырмара — усси пулмарĕ, тата ытларах ывăнса çитрĕм кăна. Те такам тытнă ăна, те хăй таçталла кĕрсе кайнă. Мур пĕлет-и...

Çуранах танккарăм обоз тăнă çĕрелле. Çул тăршшĕпех кухньăна камран та пулин кăкарса малалла илсе каясси çинчен шухăшласа пуçа çĕмĕрсе пытăм, анчах патне çитрĕм те — пат! — юпа пек хытса тăтăм. Обоз çук

та иккен, тапранса тухса кайнӑ, пӗр ман кухня ҫеҫ тӑрать сӗм вӑрманти шӑтӑк-путӑк ҫулҫинче.

Мӗн тумалла халь?.. Тарӑхса, кӳреннипе, пӗтӗм черепе вӗчӗхсе, макӑрса ярас патнех ҫитрӗм.

— Кӗтес пулать ӗнтӗ тылран пӗр-пӗр машина килессе... Унсӑрӑн ниҫта та хусканаяс ҫук...

Кухня ҫине хӑпарса лартӑм та, ним тума аптранӑ енне, чӗлӗм мӑкӑрлантарма тытӑнтӑм. Чыхӑна-чыхӑна, пирус хыҫҫӑн пирус туртатӑп. Паллах, эпӗ кухня ҫине те, пур продуктӑсем ҫине те ал сулса, обоза ҫуранах хӑваласа ҫитме пултарнӑ, анчах та боевой пурлӑха пӑрахни салтакшӑн каҫармалла мар ҫылӑх, чӑн-чӑн преступлени пулать-ҫке, юрамасть ун пек тума.

— Салам, Ҫӑпала! — тени хӑлхана кӗрсе кайрӗ сасартӑк. Пуҫа ҫӗклесе пахрӑм та хам уммах юланутсемпе икӗ боец ҫитсе тӑнине куртӑм. Пӗрин пуҫне бинтласа лартнӑ, тепри сулахай аллине ҫыхса мӑйӗнчен ҫакса янӑ. Малти линирен таврӑнаҫҫӗ курӑнать. Лашисем вара калама та ҫук тӗреклӗ, слонсем пекех, хӳрисем кӑна мулкачӑнни евӗр кӗске. Тӳрех тавҫӑрса илтӗм: вырӑс лашисем мар кусем.

— Мӗн эсӗ пуҫна усса ларатӑн? — ыйтрӗ манран вӗсенчен пӗри.

— Хурлӑха лекрӗм-ха,— терӗм ӑна хирӗҫ.— Хуть те, аптранӑ кӑвакал пек, кутӑн кайса чӑм.

— А мӗн пулчӗ ун пекех?

— Ларса юлтӑм ҫак вӑрманта тӑр-пӗччен, никам пурӑнман утрав ҫинчи пек...

— Робинзон Крузо евӗр-и? — кулса илчӗ пуҫне ҫыхнӑ боецӗ.

— Унтан та начартарах. Робинзонӑн хуть юлташӗ пулнӑ, Пятница, анчах мана юлашки кӗсре пӑрахса тарчӗ...

— Епле апла тата?

— Ҫаплах вӑт...

Эпӗ вӗсене хамӑн инкек ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа патӑм. Ман калава итлесе пӗтерсен, вӗсем пӗрре ман ҫине, тепре пӗр-пӗрине куҫран пӑхса илчӗҫ. Пӗр хушӑ нимӗн те чӗнмерӗҫ, унтан:

— Юлташа пулӑшас пулать пулӗ? — терӗ пӗри теприне.

— Эпӗ те ҫавӑн пекех шутлатӑп,— ответ пачӗ лешӗ.— Парас ӑна ҫак фриц лашисене, кӳлсе кайтӑр...

Ой, çак сăмахсене илтсен, манăн чĕре мĕнле тапма тытăннине илтесчĕ сирĕн! Савăннипе ним тума пĕлеймерĕм, ниçта кайса кĕреймерĕм çав!

— Чăнах-и? Чăнласах калатăр-и, юлташсем?!

— А мĕн, чăн пулмасăр тата! — терĕ аллине мăйĕнчен çакнă боец.— Эпир вĕсене çул çинче тытса утлантăмăр, пирĕн мар вĕсем. Хамăрăннисем нимĕçсен пĕр-пĕр обозне аркатсан тарнăскерсем пулмалла. Куран, хăмăтсемпех... Тыт та — кӳл! Медсанбата эпир çуран та çитме пултаратпăр, пирĕн урасем сывах вĕт.

Вĕсем пĕр харăсах лашисем çинчен сиксе анчĕç.

— Ну, тем пысăкăш спаççипă сире, тăвансем!

Çав тери тав тăвас килсе кайрĕ манăн вĕсене. Тем кăларса парăттăм!

— Хырăмсем выçă мар-и сирĕн? Манăн кăлбасси те, консерва та пур, пыра чӳхемелли те тупăп,— тесе сĕнтĕм çаксене.

— Кăшт çырткаласан кансĕрлесех каймасть пулĕ,— килĕшрĕç вĕсем.

— Халех хăналатăп!

Лашасене йăпăр-япăр кӳлсе тăратрăм та кухня çумне çыхнă ещĕкрен мĕн пуррине пурне те туртса кăлартăм.

— Çиййĕр, юлташсем, ĕçĕр, сирĕншĕн пулсан нимĕн те шел мар! Эсир мана çав тери пысăк хурлăхран хăтартăр вĕт...

Тепĕр çур сехетрен боецсем ерипен тылалла уттарчĕç, эпĕ кухня çине хăпарса лартăм та тилхепене тытса карт! туртрăм.

— Нно, пошол! — терĕм.— Ш-и! шăхăртăм тата.

Лашасем... вырăнтан та хускалмарĕç. Хăлхисене епле урлă ярса тăнă — çаплипех тăраççĕ, хăнк та тумаççĕ.

— А ну, трогай! — тесе кăшкăртăм та тепĕр хут, каллех тилхепене кăрт-карт турткаласа илтĕм.

Пурпĕр хускалмаççĕ! Мĕн хăямачĕ! Мĕнле саботаж ку? Неушлĕ гитлеровецсем хăйсен лашисене те фашистла воспитани панă — совет çыннисене хирĕç пымалла? Апла пулсан, эп сире халех ак урăхла воспитани паратăп!

Çавăнтах пĕр лайăх кăна хурама туратти хуçса илтĕм те çурăмĕсем тăрăх темиçешер хут сĕвĕнтертĕм. Тăпăрт! анчах тапса сикрĕç хайхискерсем. Вырăсла пĕлмен пирки вырăнтан хускалман иккен вĕсем. Анчах патака часах ăнланса илчĕç.

Ну, пыратăп ĕнтĕ вăрманпа... Пĕчченех. Ни малта, ни кайра никам та çук. Шăп. Çапăçу кĕрлевĕ таçта малта, питĕ инçетре илтĕнет. Тен, вунă çухрăм та пулĕ. Фрицпа Ганса хăвалатăп та хăвалатăп. (Лашасене çавăн пек ятсем патăм эпĕ.) Кайсан-кайсан пĕр уçланка тухрăм та сасартăк хамран сылтăм енче çав тери тĕлĕнмелле картина курах кайрăм...

Ман еннелле — пĕр аллипе хутаç çĕкленĕ, тепĕр аллипе мăкла пуçлă ĕне çавăтнă старик утса килет, ун хыççăн виçĕ нимĕç утаççĕ... Чăн кайри — винтовкăпа, анчах вăл ăна хулпуççинчен çакман, кĕпçинчен тытса сĕтĕрсе пырать.

Мĕн мурне пĕлтерет ку япала? Виççĕн пĕр старике конвойласа пыраççĕ-и? Ахăртнех, вăл партизан пулĕ?.. Сăмах майăн каласан, вĕсем мана та тытас, тейĕç?

— Ну, çук, шалиш... Чĕррĕнех парăнассăм çук-ха, çитменнине кунта тăшман йышăннă территори те мар!— шухăшларăм эпĕ.

Çав вăхăтрах хайхи старик, мана асăрхаса, мĕн вăйĕ çитнĕ таран кăшкăрса ячĕ:

— Боец, боец! Ывăлăм! Ан кай-ха, тăхта! Пĕр сăмах кăна...

Эп лашасене чарса тăратрăм та часрах карабина тытса нимĕçсем çинелле тĕллерĕм.

— Ха-альт! Хенде хо-ох!..

Нимĕçсем тăпах чарăнса аллисене çĕклерĕç, кайри хăйĕн винтовкине те пăрахрĕ. Старик ĕнине вĕренĕпе сĕтĕре-сĕтĕрех чупрĕ ман патăмалла.

— Хăтар мана тархасшăн çак наянсенчен! —тесе кăшкăрать хăй.

— Ăçта илсе каяççĕ вĕсем сана? — тесе ыйтрăм çакăнтан, карабинпа нимĕçсем çине тĕллесех тăрса.— Тыткăна-и?

— Çук, мана мар,— терĕ старик хашка-хашка.— Вĕсем хăйсем тыткăна лекесшĕн... Гитлер капут, где плен та где плен, теççĕ! Виçĕ кун çӳретĕп ĕнтĕ вĕсемпе вăрманта, шалт йăлăхса çитрĕм... Ниепле те хăпмаççĕ манран. Пĕр хутаç сухари пурччĕ, веç çитерсе ятăм, виçĕ хут ĕне суса сĕт патăм. Çисен уйрăлса кайĕç-ха, тесеттĕм, анчах та çук вĕт — çаплах ман хыççăн сĕтĕрĕнсе пыраççĕ...

— Эсĕ ху кам пулатăн вара? Ăçта тĕл пултăн вĕсене?

— Кам пулам-ха эпĕ? Вырăс çынни, колхозник... Эсир кунталла çитсен, хамăра фашистсем вĕлерсе пĕтересрен пурте вăрмана тухса тартăмăр. Ӳплесем туса пурăнтăмар. Унтан ман ĕне çухалчĕ. Ĕне шырама кайрăм та, çаксем тĕл пулчĕç... Плен, плен, теççĕ...

Маншăн халь ĕнтĕ пĕтĕмпех паллă пулчĕ. Ку нимĕç салтакĕсем — пирĕннисем çапса аркатнă пĕр-пĕр полк е дивизи юлашки. Тансăр сурăхсем пекех çухалса кайнă, выçса çитнĕ, тыткана парăнса вилĕмрен çăлăнасшăн...

— Илсе кай вĕсене хăвăнпа,— ӳкĕтлерĕ мана старик каллех.— Мĕн тăвес ман вĕсемпе, хăвах шухăшласа пăх-ха...

— Юрĕ,— терĕм ăна,— çак самантран вĕсем манăн пленнăйсем пулаççĕ. Штаба кайса леçетĕп.

Эп çапла каласанах, старик сăхха ячĕ.

— Тав турра, тинех çăлăнтăм эсреметсенчен!

Эп алăпа султăм та шăнса кӳтнĕ, ыйту палли пек кукăрăлса ларнă нимĕçсем ман кухня патне пычĕç.

— Форвертс! Малта пырăр! — хушрăм çаксене.— Каялла çаврăнса пăхмасăр пырăр!

Те ăнланчĕç вĕсем мана, те ăнланмарĕç, ăна пĕлместĕп, анчах та эп хушнине тĕп-тĕрĕс туса пычĕç, сăмах та чĕнмерĕç.

Пыратăп ĕнтĕ малалла. Уçланкă пĕтрĕ, каллех вăрмана кĕрсе кайрăм. Çулĕ кунта аван, сарлакаччĕ. Кайсан-кайсан, çырма хĕррине пырса тухрăм. Çакăнта вара манпа тата тепĕр мыскараллă япала пулса тăчĕ.

Сăртран анса çитесси инçе те юлманччĕ — сасартăк хамран пĕр çĕр метрта, çул хĕрринче, темиçе нимĕç салтакĕ тăнине курах кайрăм. Полнăй формăпа, мăйĕсенчен автоматсем çакнă. Ман çине шăтарас пек пăхаççĕ.

— Ак хайхи... Тинех лекрĕм пулас! — шухăш вĕçсе илчĕ те пуçра, хам сисместĕрех тилхепене кăрт-карт турткаласа илтĕм. Ман лашасем тăпăрт! тапса сикрĕç те малалла — анаталла ĕнтĕ — ыткăнтарчĕç кăна. Те хăйсен халăхне палларĕç, мур пуçĕсем,— тем пек чарма хăтлансан та чарăнмарĕç, нимĕçсем çинеллех илсе кайрĕç мана. Тепри пулсан, паллах, кухня çинчен сиксе анса вăрманалла пĕрĕхмелле, анчах эпĕ хăракан çын мар çав. Нимĕçсем патне çите пуçласанах пĕтĕм вăйран çухăрса ятăм:

— Сдава-айсь! Бросай оружие! Хенде хо-ох!

Пĕри, малти, çул варрине тухрĕ те хăрах аллине çĕклерĕ, ыттисем вырăнтах тăчĕç. Вĕсем тĕлне çитсен, лашасем те тăпах чарăнчĕç манăн.

— В чем дело? Мĕн кирлĕ сире? — тесе кăшкăртăм çакăн çине хаяррăн. Анчах тĕрĕссипе каласан, хамăн çав вăхăтра пĕтĕм çан-çурăм пĕрре сивĕнсе, тепре тарласа кайрĕ...

— Ми плен... Германьски зольдат плен... Кушайт нет... Колотно,— мăкăртатса илчĕ нимĕç.

— Аха-а, эсир те çавăн йышшисемех иккен,— шухăшларăм та вара эпĕ, хăрасси-тăвасси тӳрех иртсе кайрĕ. Çав вăхăтра манăн паçăрхи нимĕçсем те, лашасем ĕрĕхсе кайсан татăлса юлнăскерсем, çитсе тăчĕç. Тытăнчĕç кусемпе палкама, хур аçисен кĕтĕвĕ какăлтатнă пекех туйăнса кайрĕ, ним ăнланма та çук. Палкарĕç-палкарĕç те, иккĕш-виççĕшĕ вăрманалла кĕрсе кайрĕç.

— Кусем плена пыма килĕшмеççĕ эппин,— терĕм вĕсем çине пăхса. Унтан, малалла каяс тесе, тилхепене тытсаттăм, анчах çул çине малтан тухса тăраканни каллех аллине çĕклерĕ те:

— Не ходи, Иван.. Зейчас много зольдат плен...— терĕ.

Чăнах та, вăрмантан кĕçех пĕр хĕрĕхĕн тухрĕç. Апайтурух, мĕнлисем кăна çукчĕ вĕсем хушшинче! Шăлсăрри те, сухалĕ шăтманни те, хăрах куçли те, шакла пуçли те — веçех хайхи «тотальнăйсем», сывви-чирли, ватти-вĕтти çине пăхмасăр мобилизациленисем. Тата ĕмĕрне те пичĕсене çуман пулмалла, хуп-хура çав, çĕр айĕнчен тухнă шуйттансем тĕслĕ!..

Мĕн тăвас кусемпе?

Пăхса тăтăм-тăтăм та:

— Сдавай оружие!— тесе кăшкăртăм.

Вырăсла ăнланакансем пулчĕç пулмалла. Каллех пĕр-пĕринпе палкаса илчĕç те автомачĕсене ман кухня çине пыра-пыра хучĕç. Пĕр лав автомат тиерĕм вĕт! Çухатса пĕтересрен вĕренпе çыхсах лартрăм.

— А ну, теперь стройся! — команда парăм кун хыççăн.— Юлашки хут салтаксем пек пулăр хуть!

Командир пекки те тупăнчĕ, йĕркелесе тăратрĕ çак сурăх кĕтĕвне.

— Форвертс! Малалла! — каллех команда патăм эпĕ, кухня çине хăпарса тăрса.

Тапранчĕ хай манăн «войско». Ӳсĕреççĕ, сунаслаççĕ,

уксахлаççе, хыçкаланаççĕ... А эпĕ пур — тек кăшкăркалатăп:

— Йĕркеллĕрех утăр! Хăвăртрах! Марш!

Тепĕр сехетрен çаксене чип-чиперех хамăрăн дивизи штабне илсе çитертĕм. Самăй штаб патне çитеспе юриех ик-виçĕ хутчен «хенде хох!» тесе кăшкăрса, пурне те аллисене пĕлĕтелле çĕклеттертĕм — интереслĕрех тума.

Ну, кулчĕç те вара штаб таврашĕнчисем! Хырăмĕсене тыта-тыта, антăхса кайса кулаççĕ.

— Ак сана Çăпала Иванĕ! Пултарнă, шельма, пăхха ăна!..

— Яланах мĕнле те пулин номер туса кăтартать вăл,— теççĕ хăйсем.

Вĕсемпе пĕрле эпĕ хам та култăм.

Сире вара кун çипчен мухтанас-тăвас шутпа мар, ахальтен çеç каласа патăм. Хам енчен нимĕнле паттăрлăх та пулмарĕ вăл кун, анчах мыскарисене çителĕклех куртăм çав...

## МУНЧА

ГЕПРИНЧЕ тата манпа акă мĕнле истори пулса иртрĕ. Пĕр енчен — тарáхмалла, тепĕр енчен — кулмалла истори, тес пулать. Çав вăхăтрах тата савăнмалли те пулчĕ.

Днепр урлă каçсан, эпир белоруссен пĕр пысăк ялĕнче чарăнса тăтăмăр. Октябрь уйăхĕ пуçланнă пулин те, çанталăк питĕ лайăхчĕ, пĕрмай хĕвел пăхать, ăшă, çил-мĕн çук... Пĕр хушă кунта ытла вăйлă çапăçусемех пулмарĕç те, самаях лăпкăн пурăнтăмăр. Анчах пирĕн йĕкĕтсен — разведчиксен — çав-çавах ерçӳ çукчĕ, вĕсем пĕрмаях заданисене каятчĕç те тепĕр чух ик-виç кунтан тин таврăнатчĕç.

Пĕррехинче, темлерен, пурте килте пулчĕç çавсем.

— Паян, атьсемĕр, мунча хутса кĕретпĕр!— терĕ старшина ирхи апат хыççăн.— Пĕр анкартинче тĕрĕстĕкел мунча тупрăм эпĕ.

— Ăшши пама та пулать-и? — ыйтрĕ тахăшĕ.

— Хуть те антăхса кайиччен çапăн!

— О! Апла пулсан, тавай, хутас!

— Хутас!..

Разведчиксем вĕсем çав тери туслă халăх вĕт. Мĕн те пулин тума шут тытсан, карр! пухăнаççĕ те çав ĕçе нач-

часра туса хураççĕ. Халь те çавăн пекех пулчĕ: пĕрисем вутă тупса татса çурчĕç, теприсем шыв çĕклеме тапратрĕç, иккĕшĕ вăрмана милĕк хуçма кайрĕç...

Ман хурансенче кăнтăрлахи апат пиçиччен мунча пулса та çитнĕ.

— Эс те кĕретĕн пуль? — ыйтрĕ манран старшина, кухньăна пырса тухсан.— Çапăнма юрататăн вĕт-ха?

— Епле пултăр-ха тата? Паллах, юрататăп! — терĕм.— Анчах та манăн чăн юлашкинчен каймалла пулать пулĕ ĕнтĕ, ма тесессĕн каçхи апат хатĕрлемелле...

— Ничево,— терĕ вăл,— ĕлкĕретĕн, ăшши те, шывĕ те нумай, пурне те çитмелле. Таса кĕпе-йĕм хăваратăп эп кунта сан валли.

— Тавтапуç!

Унтан эпĕ пурне те апат çитерсе ятăм, шыв ăсса пырса хурансене çуса тасатрăм, каçхи апат пĕçерме вутă хатĕрлерĕм... Вăхăт самаях иртрĕ. Кайран вара хамăн трофейлă автомата хулпуççинчен çакрăм та (хĕçпăшалсăр эпир пĕр утăм та тумастăмăр) мунча еннелле уттартăм.

Мунчи хамăр чарăнса тăнă килтен чылай инçетре, ял хĕрринчи пĕр анкарти вĕçĕнче, çурта пек тӳрĕ ӳсекен çамрăк шурă хурăнсем хушшинче ларать-мĕн. Хурăн çулçисем саралнăччĕ ĕнтĕ, хĕвел çутинче вĕсем ылтăн пек йăлтăртатаççĕ. Анкарти хыçĕнчи тӳрем улăхра пысăках мар кĕтӳ çӳрет. Çав улăхваррипе пĕчĕк кăна юханшыв лăпкăн шăнкăртатса выртать, ун леш енче — пĕр çур километрта — вăрман, вăл та ылтăн тум тăхăннă ĕнтĕ, шухăша кайнă пек, ним хускалмасăр тăрать. Аçталла ан пăх — пур çĕрте те чуна çав тери йăпатакан кĕрхи илем...

Мана таван кил, хам çуралса ӳснĕ çĕршыв аса килсе кайрĕ.

— Эх! Хăçан таврăнмалла пулĕ-ши унта?.. Хăçан çакăн пек хамăр мунчара çапăнмалли вăхăт çитĕ? Нумаях юлмарĕ те-ха ĕнтĕ...

Çакнашкал шухăшсемпе эпĕ мунчана кĕрсе кайрăм. Унта никам та çук иккен, пурте çăвăнса тухса кайма ĕлкĕрнĕ.

— Çурăм çуса яракан кирлĕччĕ те... юрĕ-çке, уншăн хама ирĕк! — терĕм.

Салантăм та, чăн малтан çине-çине ăшши парса, питĕ вăйлă тарларăм. Мунча вĕри пулнине питĕ шутсăр юра-

татăп çав эпĕ, ку енчен хамăрăн асаттене хывнă пулмалла. Астăватăр та пулĕ, вăл мунчара ăшши парса тултарса çапăнма тытăнсан, никам та тӳссе тăраймастчĕ вĕт, пурте тухса таратчĕç! Эпĕ те çавăн манерлĕрех... Пĕрре çапăнтăм, иккĕ çапăнтăм, унтан пахчана тухса пĕр кана курăк çинче пăсланса выртрăм... Ах, ырă-çке! Унтан каялла кĕтĕм те тапратрăм çăвăнма... Шывĕ нумай, вĕри... Пуçа ик-виçĕ хут çурăм, унтан пĕтĕм шăмма-шакка кăпăкласа лартрăм — ниçта пĕр ӳт татки курăнмасть, мамăк кĕрĕк тăхăннă пек!.. Фронтра кун пек мунчасем ытла час-часах тĕл пулмаççĕ-çке, пĕрре май килнĕ чух ырă курас, терĕм ĕнтĕ...

Анчах çав вăхăтра маншăн пачах та кĕтмен япала пулса тăчĕ: мунча тулашĕнче сасартăк темскер кĕрс! кĕрс! кĕмсĕрт! турĕ те, мунча чӳречи чăнкăр-р! вăркăнса тухса кайрĕ...

Мĕн шуйттанĕ? Мĕне пĕлтерет ку? Ниçта та ним те çукчĕ-çке?

— Кĕрс! кĕрс! шăтăр-шарт! — турĕ каллех. Мунча сивчир тытнă пек чĕтресе илчĕ, маччаран манăн таптаса çуса гасатнă пуç çине шăпăрр! тăпрапа тусан тăкăнчĕ...

Пĕтрĕм! Ак сана мунча! Вĕри мунча вырăнне тип мунча!

Пĕррех сиксе тухрăм тулалла...

Хăлхана самолет сасси кĕрсе кайрĕ:

— Аррр... ăррр...

Пăхатăп — сывлăшра, шăп ман пуç тăрринче, нимĕçсен «хейншелĕ», хайхи, «турчка» текенни, вĕçе парать! Ху-уллен вĕçет, пĕр вырăнта тăнă пекех...

— Кĕрс! кĕрс!

Шуйттан пуçĕ, çĕр çинче никама сиен тумалли тупайманнипе улăхра çӳрекен пĕчĕк кĕтӳ çине гранатăсем ывăтать иккен. Тупнá вĕт «объект!» Пирĕн выльăхсене те пулин вĕлерсе хăварасшăн, çăхан! Анран тухса кайнă мĕскĕн ĕнесемпе пăрусем ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ, тискеррĕн мĕкĕрсе унталла та кунталла ыткăнаççĕ, виççĕшĕ-тăваттăшĕ вилнĕ е аманнă пулмалла, улăх варринче выртаççĕ.

Ы-ых, çилĕ килсе кайрĕ манăн! Чышкăсем хăйсемех чăмăртанчĕç, шăлсем шăтăртатса илчĕç... анчах мĕн тăватăн-ха ăна? Нимĕн те тăваймастăн! Тăратăп ухмах пек пăхса... Хам çаппа-çарамас, ӳт çинчи супăнь кăпăкĕ тип-

се хытса ларма пуçларĕ, тата ытла пит ăшах та мар тес пулать. Анчах мунчана кĕме шикленетĕп ĕнтĕ: паклаттарĕ те пĕрре, патĕнчех кукăрăлса выртăн!

Унччен те пулмарĕ, çак «турчка» пулеметран шатăртаттарчĕ. Темиçе пуля ман таврашрах çĕре тăрăнса тусан сирпĕтрĕ...

Аяккалла тапса сикрĕм вара, мĕн тăвас тетĕн? Чипчипер курса тăнă çĕртех вилсе выртни е аманни кама кирлĕ вăл? Ăçта та пулин пытанас пулать кунтан! Анчах ăçта пытанас-ха? Йĕри-тавра тип-тикĕс, пĕр шăтăк-путăк та çук, пĕр лакăм та! Пульăсенчен хăтăлма пулĕ-ха хуть, анчах та вăл эсремет каллех гранатăсем ывăтма тытăнсан? Тен, унăн бомбăсем те пур, кам пĕлет ăна?

Хăвăрах чухлатăр ĕнтĕ, манăн шухăшласа тăма вăхăт пулман... Эпĕ çатан карта урлă яшт! сиксе каçрăм та юханшыв еннелле вăркăнтăм кăна — çат-çат-çат-çат... Хыçалта татах кĕрслетрĕ, татах шатăртатрĕ... Кĕç малта пăтранчăк шывлă лупашка пуррине асăрхарăм. Те таран вăл, те ăшăх, ăна-кăна шутламарăм, часрах чупса çитрĕм те лап! выртрăм çавăнта... Çулларахпа, шăрăх чух, кунта ăшăпа аптранă кăвакал чĕпписем ыр курнă пулмалла та ĕнтĕ, анчах халь мана та юрарĕ. Лайăхах вырнаçрăм — çывăхрах граната мар, бомба çурăлсан та осколоксем тивес çук мана. Ку та темех тăрать ун пек чух!

Выртатăп ĕнтĕ хашкаса... Хĕрсе кайнăскер, малтан нимĕнех те сисмерĕм, анчах та шывĕ сивĕ иккен. Ал-урана çатăрах тытма пуçларĕ. Туятăп — нумаях тӳссе выртаяс çук. Ытларах выртсан, пăсăлма та пулать, мур илесшĕ!

Нимĕç тата пĕр-икĕ хутчен печĕ те шăпланчĕ... Хуллен кăна пуçа çĕклесе пăхатăп... «Хейншель» улăх çийĕн тата тепре çаврăнчĕ те хĕвеланăçнелле çул тытрĕ. Киле каять... Вылльăхсене вĕлерсе, амантса пĕтерчĕ те — чиперех, лăпкăнах каять халь! Никам та тивмест ăна, никам та кансĕрлемест! Эх, ирсĕр!..

Эп лупашкаран сиксе тухрăм. Ну... тунмасăрах калас пулать: хам çине пăхма та хăрушăччĕ çав! Тăп-тăр лапра вĕт! Лупашкинче шывран ытларах йăлмака пулнă та... Çав вăхăтра кам та пулин курас пулсан, кулсах вилмелле ĕнтĕ манран. «Ну, Çăпала-а, пи-ит лайăх çăвăннă иккен эс мунчара! Тепĕр сысна çури те кун пекех вараланаймасть!» — тейĕччĕç мана.

Анчах эп хам çинчен шухăшламарăм. Эпĕ «турчка»

çинчен куç илеймесĕр тăтăм. Темĕн тĕрлĕ те ылхантăм ăна. Вăл инçетрен инçете кайса пырать, часах куçран та çухалать акă... Епле мăшкăл! Епле тарăхмалла ку!

Ним тăвайманнипе, чунăм пӳлĕнсе çитнипе, лач! суртăм та, каялла, мунча еннелле чупрăм.

— Тепре ăшши парса лайăхрах хĕртĕнес те, тасалкаласа часрах ротăна таврăнас...

...Нумай та каяймарăм — сулахай енчен самолетсем хыттăн кĕрлени илтĕнчĕ. Камăн-ши кусем? Каллех фашист çăханĕсем-ши?.. Çук иккен, хамăрăн! Хамăрăн! Вăрман хыçĕнчен хĕрлĕ çăлтăрлă икĕ «хурчка» çиçĕм пек вăркăнса тухрĕç те тӳрех хайхи «турчка» çинелле ыткăнчĕç.

— Ёррр... кĕрр... ёрр... кĕрр...

Иккĕшĕ ик енчен пĕр харăс пырса тапăнчĕç фашиста. Пĕри çӳлерехрен, тепри аяларахран... Тапратрĕç пулеметсенчен çунтарма! Кун пек пуласса кĕтмен тăшман унталла пăрăнма тăчĕ, кунталла — çук, шалиш!

— Аха-а, лекрĕн-и, бандит! — кăшкăрса ятăм эпĕ, çав тери хĕпĕртесе кайса.— Тин вĕçерĕнеймĕн пирĕн алăран!..

Унччен те пулмарĕ, вут хыпса та илчĕ çакна. Малтан çулăм курăнчĕ, унтан хура-кăвак тĕтĕм палкаса тухрĕ... Çав самантрах ун айĕнче шурă чăмăркка курăнчĕ — летчикĕ парашютпа сикрĕ ĕнтĕ...

— Пулчĕ! Капут! — такама илттерме тăрăшнă пекех кăшкăртăм та вара эпĕ мунча еннелле тата хытăрах чупрăм...

— Тытатăпах ку çăхана! Чĕрĕллех тытса килетĕп!..

Мунчана кĕнĕ-кĕменех хам тăрăх ик-виç курка шыв ятăм, унтан, васканипе, çара ӳт çинех брюки, пурттенкке чĕркемесĕрех атă тăхăнса ятăм та, автомата çĕклесе, каялла сиксе тухрăм.

Парашютист вăрман çинелле анать... Часах йывăçсем хушшине кĕрсе куçран çухалма та пултарать. Васкас пулать манăн! Эпĕ мĕнле чупнине хăвăрах чухламалла ĕнтĕ. Пĕлместĕп, тен, эпĕ нихçан та ун пек чупман пулĕ...

Эпĕ вăрман патне çитеспе парашютист чăнах та курăнми пулчĕ. Анчах куншăн эпĕ пăшăрханмарăм: пĕлетĕп вĕт-ха, парашютран ытла тăруках вĕçерĕнсе пытанма çук. Мана урăххи тарăхтарчĕ: кунта шурлăх пуçланать иккен... урасем путма пуçларĕç! Анчах ним тума та çук, пурпĕрех малалла каймалла, тăшмана тытмаллах



манăн. Тĕмеске çинчен тĕмеске çине, тункатa çинчен тункатa çине сиксе, тепĕр чух чĕркуççи таранах кĕрсе ларса, вăрмана çитрĕм. Вăрманĕ ытла çăрах мар иккен — чылай инçетри курăнать. Маншăн ку аван пулчĕ-ха...

Вăрмана кĕрсен, пĕр икçĕр метр та чупмарăм пулас— йывăçран çакăннă сенкер парашют курăнса та кайрĕ хайхи. Йывăç çумĕнче çын мĕлки тĕрмешет: ахăртнех, парашют стропиcенчен часрах вĕçерĕнме тăрăшать-тĕр.

— Сто-ой! Ха-альт!..— кăшкăрса ятăм эпĕ.

Фашист, паллах, нимĕн те чĕнмерĕ. Йывăç хыçне пытанчĕ те ман еннелле умлăн-хыçлăн виçĕ хут печĕ. Пĕр пульли хампа юнашар йывăçах пырса тиврĕ.

— Чанк! — терĕ те йывăç хуппине вистесе кайрĕ.

«Аха-а, эс капла эппин-ха, парăнма шутламастăн пулать! — терĕм тата ытларах тарăхса.— Юрĕ апла пулсан!..»

— Шатăрр! — тутартăм автоматран.

Пĕр хушă шăп пулчĕ. Эп малаллах пыратăп: пĕр йывăç хушшинчен тепĕр йывăç патне... Унтан нимĕç татах печĕ ман çинелле. Эпĕ те хирĕç петĕм... Вăл перет — эпĕ перетĕп.

— Сдавайсь! Ха-альт!— кăшкăртăм каллех.

Анчах та çак нимĕç епле пулсан та хăтăлатăпах тенĕ пулмалла. Анăçсăр хытă тарма тапратрĕ. Йывăçсем хушшинче вĕлт те вĕлт кăна тăвать унăн кĕлетки. Эпĕ — ун хыççăн... Чухласа илтĕм: унăн пистолетĕнче патронсем пĕтнĕ, тин ĕнтĕ вăл мана нимĕн тăваяс çук та, тарса ÿкесшĕн...

Чылай хăваламалла пулчĕ çакна. Чупатăп-чупатăп та автоматран çунтарса илетĕп, унтан каллех чупатăп. Патронсем пур-ха манăн, ĕнер кăна диска туп-тулли авăрланăччĕ!

Çав вăхăтра урасем каллех путма тытăнчĕç: татах шурлăх пуçланчĕ. Куратăп — фашист шурлăха пĕçĕ кăкĕ таранах кĕрсе кайрĕ, путасран аллисемпе сывлăшран тытма хăтланнă пекех хăлаçланать. Кĕçех манăн та ун хыççăн кĕрсе кайма тивет. Каллех вараланмалла пулать! Тарăхни-мĕнĕпе вара тепре чарăнса тăтăм та лайăх кăна тĕллесе шатăртаттартăм...

Фашист аллисене тăрук çÿлелле çĕклесе илчĕ те, вăраммăн çухăрса ярса, малалла тирĕнсе кайрĕ. Пулчĕ хайхискер!

Тепӗр минутран, шӗвӗ пылчӑка пур еннелле сирпӗнтерсе, ун патне чупса ҫитсе тӑтӑм. Хам та ӗнтӗ пилӗк таранах лапра ӑшне путнӑ.

— Цурюк, эсрелӗ, цурюк!— автоматпа султӑм ун ҫинелле.

Ман тӑшман, этем сӑнне ҫухатмаллах вараланса пӗтнӗскер, ура ҫине тӑма пикенчӗ, анчах ҫавӑнтах ӳкрӗ. Аманнӑ ӗнтӗ, тӑраймасть.

— Мой нога нет...—йынӑшса ячӗ хӑй.

Уринчен тивнӗ иккен. Утаймасть. Мӗн тӑвас-ха кунпа? Тыткӑна лекнӗ чӗрӗ тӑшмана лачакара пӑрахса хӑвармастӑн ӗнтӗ! «Чӗлхе» вӗт вӑл! Епле паха «чӗлхе» тата!..

Нумай шухӑшласа тӑмасӑрах, ҫухавирен ҫавӑрса тытрӑм та ҫакна шурлӑхран типӗрех ҫӗре сӗтӗрсе кӑларса хутӑм.

— Нога...—каллех йынӑшса ячӗ вӑл.

— Кӑтарт, хӑш тӗлте? — тетӗп.

Вӑл чӗркуҫҫисенчен ҫӳлерех тӗллесе кӑтартрӗ. Ана икӗ уринчен те лекнӗ пулнӑ. Ним тума та ҫук, хӑйӗн аялти кӗпине ҫурсах суранӗсене ҫыхса ятӑм. Анчах та ку нимех те мар-ха. Манӑн ӑна ротӑна илсе ҫитермелле, унтан штаба ӑсатмалла вӗт-ха! Таврара никам та ҫук... Ирӗксӗрех ҫак ним майсӑр вараланса пӗтнӗ фашиста хамӑн йӑтса каймалла пулчӗ. Паллах, вӑл мана ҫул ҫинче кансӗрлесрен эпӗ унӑн аллисене каялла ҫыхса лартрӑм. Тӑшман мӗн шутланине ӑҫтан пӗлетӗн! Пычӗ вара ман хулпуҫҫи ҫинче сысна тушки пек силленсе. Йывӑр тата хӑй. Юрать-ха, хамӑн вӑй пур та, аптрамарӑм...

Вӑрмантан тухнӑ чух мана хирӗҫ хамӑрӑн ротӑри йӗкӗтсем чупса ҫитрӗҫ. Пирӗн «хурчкасем» «хейншеле» ҫапса антарнине вӗсем те курнӑ-мӗн, вӗсем те ҫак парашютиста тытма васканӑ пулнӑ. Анчах вӗсем кӑшт каярах юлчӗҫ, эп маларахран ӗлкӗртӗм.

Хамӑр йӗкӗтсем мана епле мухтани ҫинчен каламастӑп ӗнтӗ, вӑл ахалех паллӑ. Вӗсем ҫавӑнтах йывӑҫ тураттисенчен наҫилкке турӗҫ те нимӗҫе ун ҫине хурса йӑтса кайрӗҫ. Эпӗ вара, тепӗр хут мунчана тавӑнса, тулли кӑмӑлпа, питӗ лайӑх ҫӑвӑнса тухрӑм... Анчах эпӗ лачакара йӑваланни ҫинчен пӗлсен, юлташсем манран нумаййчен кулса пурӑнчӗҫ...

## ЧЕЧЕК ÇЫХХИ

ЮЛАШКИНЧЕН хам авланни çинчен каласа парам тата сире...

Вăрçă пĕтнĕ хыççăн эпĕ киле тăруках таврăнмарăм, виçĕ çула яхăн сверхсрочнăйра пултăм. Командирсем юрататчĕç те мана, шав ӳкĕтлетчĕç:

— Тепрер çула юл ĕнтĕ службăра! Аçта васкатăн? Килте сана арăму кĕтет-и, ачу-пăчу пур-и? — тетчĕç.

Старшина званине çитерчĕç, офицерсен столовăйĕнче начальник помощникĕ турĕç, ĕç укçи те лайăх тӳлеççĕ. Васкамарăм вара, служить турăм та турăм. Пурпĕр мар-им, хуть те ăçта ĕçлесен те — çĕршыв валли!

Анчах пĕр-ик çултан анне киле чĕнме пуçларĕ: ватăлатăп ĕнтĕ, кил-çуртăмăр пушă пек туйăнать, санпа пĕрле кайнисем тахçанах таврăнса арлă-арăмлă, ачаллă-пăчаллă пулса пĕтрĕç, манăн кăна кин те, мăнуксем те çук, çавăншăн питĕ кӳренетĕп, тет...

Шел пек туйăнчĕ карчăка. Хăçантанпа пĕччен пурăнать вĕт. Атте 1941 çултах, Мускава хӳтĕленĕ чух, пуçне хуна, аппан хăйĕн çемйи пур, эпĕ те килтен кайни нумай пулать.

Таврăнтăм вара. Çуркунне, çутçанталăк илемлĕ ешĕл тум тăхăнсан, çарансем çинче чечексем çурăлма тытăннă вăхăтра çитрĕм. Ну... паллă ĕнтĕ, анне калама та çук хытă хĕпĕртерĕ, сăра турĕ, тăвансем пыра-пыра кайрĕç, хăйсем патне те чĕнчĕç. Йăлине хăвăр пĕлетĕр.

Çапла ик-виç кун иртрĕ кăна, анне мана авлантарасси çинчен калаçма тытăнчĕ. Вăхăчĕ çитрĕ ĕнтĕ, çирĕм улттă çине пусрăн, атту тата ват хусах ячĕ тухĕ, текелет.

Ана хирĕç тăруках нимĕн те каламарăм. Кулкалатăп çеç:

— Халь те тиркеççĕ пуль ĕнтĕ мана,— тетĕп.

Çак вăхăтра, утта тухиччен, пирĕн тăрăхра «пухăсем» йышлă пулаççĕ: Ишлей пуххи, Ишек пуххи, Храути пуххи, Мамăш пуххи... Çуллахи ярмаркасем ĕнтĕ вĕсем. Хăшпĕр çĕрте вĕсене çимĕк теççĕ пулас.

— Хамăр ялта кăмăла каяканни çук пулсан, пухăсенче лайăххрах пăхса çӳре,— вĕрентет мана анне.

— Лайăххраххине тĕл пулсан, вăрласа килес-и? — каллех кулатăп эпĕ.

— Вăрлама саккун çук-ха вăл, ун пек тăвас мар, анчах пĕрре паллашсан, кайса калаçма юрамасть-им? Сан пек каччăнах тиркес çук-ха,— тет анне.

Ман хыççăн пĕр эрнерен хамăн ача чухнехи тусăм пулнă Христофор та çартан таврăнчĕ. Шкулта вĕреннĕ чух эпир ăна «Христофор Колумб» тесе чĕнеттĕмĕр, ма тесессĕн вăл çырмари пĕвере кĕпе çумалли валашкасене пухса «флот» тума юрататчĕ. Эпир пĕр çыранта индеецсем пулаттăмăр, унăн «флочĕ» çине ухăсемпе переттĕмĕр, вăл испанецсен командирĕ пулса пире тапăнатчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çак Христофор флота лекнĕ те чăнах та Америкăра пулса курнă иккен. Ик-виçĕ кун хушши каласа кăтартрĕ вăл Америка çинчен, хăй сура-сура вăрçать; пуринчен ытла унта негрсене этем выранне хуманни тарăхтарнă-мĕн ăна.

Анчах ку сăмах майĕн кăна-ха.

Çак «Колумб» та ман пекех хусахчĕ. Ана та амăшĕ авлантарасшăнччĕ. Ман аннерен те ытларах хистетчĕ:

— Ĕç çине тухиччен кин тупнă пултăр ман валли!

Хайхи, тытăнтăмăр çакăнпа пухăсене çӳреме. Ятарласа хĕрсем тупас тесех мар, халăхпа пĕрле пулма, вăл савăннине курма. Ну... хĕрсемпе калаçма та хирĕçех пулман ĕнтĕ. Каччăсем вĕт.

Чăн малтан Ишлее кайрăмăр. Христофорăн кунта аппăшĕ пур, почтăра ĕçлет. Иртерех çитнипе Христофор мана ун патне илсе кĕртрĕ. Хăна тукаларĕç пире. Эпир сĕтел хушшине ларнă чух темле икĕ хĕр пырса кĕчĕç. Пĕри — сап-сарă, пысăк кăвак куçлă, вырăсла тумланнă, тепри—хурарах сăнлă, куçĕсем те хура хурлăхан пек, пĕвĕпе сарринчен лутрарах. ялти пек тумланнă: кĕрен тутăр, шап-шур катанпир кĕпе, симĕс пурçăн саппун, уринче хура туфли. Иккĕшĕ те çав тери кăмăла каймалласкерсем...

Пире паллаштарчĕç.

— Тоня,— терĕ сарри, пире алă парса.

— Вера,— пуçĕпе сулса илчĕ хурараххи.

Вĕсене те сĕтел хушшине лартрĕç. Эпир ĕнтĕ ку хĕрсемпе сăмах-юмах пуçласа ярасшăнччĕ, анчах Христофор аппăшĕсем патне татах эпир палламан çынсем пырса кĕчĕç те, калаçасси пулмарĕ. Вара эпир ярмаркăна кайса çаврăнса çӳрес терĕмĕр.

— Атьăр пирĕнпе,— чĕнтĕмĕр хĕрсене.

Вĕсем килĕшрĕç. Урама тухсан, Христофор саррипе

юнашар утрĕ, эпĕ — хурараххипе. Хĕрсем енĕпе моряксем хăйюллăрах çав — Христофор тӳрех ыйтса пĕлме тытăнчĕ:

— Ăçтисем пулатăр эсир, хĕрсем? Пĕлме ирĕк парсамăрччĕ...

— Эп кунтисемех,— терĕ Тоня.

— Ăçта ĕçлетĕр?

— Почтăра, сирĕн аппупа пĕрлех, телефонисткăра ĕçлетĕп.

— Эсир тата? — ыйтрăм эпĕ те Вера тенинчен.

— Çĕньялсем...

— Ĕçлетĕр-и?

— Ĕçлемесĕр кам çăкăр çиет? — темшĕн Вера хăйĕн юлташĕ çине чăрр... пăхса илчĕ. Унăн илемлĕ пит-куçĕ çинче вăрттăн кулă палăрчĕ.

— Секрет эппин?

— Ним секречĕ те çук. Колхозра ĕçлетĕп.

— Мĕнле ĕçре? Сирĕн пек çамрăк пикесем ку чухне фермăсенче ĕçлекен...

— Çук, унта мар. Пожарникре ĕçлетĕп.—Вера, хăйĕн хитре тутисене тутăр вĕçĕпе хупласа, сасăпах кулса илчĕ. Тӳрех сисрĕм: улталать ку, анчах сисмĕш пултăм.

— Пур йышши пушарсене те сӳнтеретĕр-и вара? — ун куçĕнчен пахса ыйтрĕ Христофор.

— Пурне те,— терĕ Вера.

— Калăпăр, пĕр-пĕр каччăн чĕри çунма тытăнсан, ăна та сӳнтерме пултаратăр-и?

— Ун пеккинех сӳнтерсе курман та, анчах пит кирлех пулсан, сӳнтерме пулать те пулĕ.

— Пултармалла пек çав...

Чылай çӳрерĕмĕр çавăн пек каласкаласа, кăмăллăн кулкаласа. Çав хушăрах хĕрсене грецки текен мăйăр илсе çитертĕмĕр, вĕсемпе пĕрле карусель çине ларса çаврăнтамăр, цирк курса тухрăмăр, унтан тухсан крем-сода ĕçрĕмĕр.

Ун пек чух вăхăт иртни сисĕнмест вĕт: каç пулма та пуçларĕ.

— Ну, вăхăта лайăх ирттернĕшĕн тавтапуç сире, манăн каяс пулать,— терĕ Вера, аллинчи сехечĕ çине пăхса илсе.— Сывпулăр...

— Чимĕр-ха, мĕншĕн пит час?

— Ултă сехетре пирĕн колхоз машини каять. Машинран юлсан, çуран утмалла пулать...

— Анваскăр ёнтĕ! — Хам сисмесĕрех, çакна ик аллинчен те ярса тытрăм.— Çӳрер кăштах!

— Çук, çук... Ан та ӳкĕтлĕр...— ман çине çав тери ăшшăн пăхса, пуçне пăркаласа илчĕ хĕр.

— Эппин, тата хăçан курăп-ха эп сире? — чĕрем сикме тытăннине туйса ыйтрăм эпĕ.— Çитес вырсарникун Мамăш пуххине пымастăр-и?

— Пĕлместĕп... Тен, пыратăп та-и...

— Эппин, тĕл пулатпăр? Тупатăп эп сана!

— Халăх нумай пулать те унта, ăçтан шыраса тупăн?

— Эс карусель патне пыр!

— Каруселĕ пулмасан?

— Епле пулмасть? Пулать!

— Ну, сывпулăр...— Вăл мана юлашки хут куçĕпе çунтарса илчĕ те, татах сехечĕ çине пăхса, халăх хушшине кĕрсе кайса çухалчĕ.

— Тарчĕ пулать? — кулса илчĕ Тоньăна хулĕнчен тытса таракан Христофор.—Эх, эсĕ те çав... кавалер! Хам пулсан, ниепле те вĕçертессĕм çук...

— Нимех те мар,— терĕм эпĕ,— тен, вĕçернеймĕ-ха!

Сисетĕр пуль ёнтĕ, çак хура хĕр ман чĕрене хытах хускатрĕ. Киле таврăннă чух та куç умĕнчех тăчĕ вăл, çĕрле тĕлĕкре те курăнчĕ, ир тăрсан та тӳрех ăна аса илтĕм. Хам унăн ятне кăна пĕлетĕп те-ха ёнтĕ... Паллах, пожарник пирки юри каларĕ вăл. Хĕрсен йăли çавăн пек вĕт: хăйсем çинчен ытла тăруках каласа памаççĕ... Анчах, тепĕр тесен, вăл ăçта тата кам пулса ĕçлени пурпĕр мар-и? Çынни лайăх пултăр! Ытти — тарам.

Эрнипех шухăшласа пурăнтăм çак Вера çинчен. Хăçан çитĕ-ши ку вырсарникун! Тӳсме çук курас килет вĕт... Христофора кун çинчен тĕп-тĕрĕссипе, ним пытармасăрах каласа патăм. Анчах вăл кулчĕ çеç:

— Швартовать туса[1] лартрĕ эппин сан чĕрӳне! Полундра[2], старшина!..

— Ан кул, санăн хăвăн та ĕçсем çавăн пекрех-ха,— терĕм ăна хирĕç.— Çак эрне хушшинче Ишлее мĕншĕн виçĕ хут кайса килнине чухлатпăр!

— Аппа патне кайрăм...— каллех кулчĕ вăл.

— Асту, аппу патне пулмасăр!

Вырсарникун ирех тухса кайрăмăр Мамăша. Эпир

---

[1] Моряксен чĕлхипе — кăкарса лартрĕ, тени пулать.
[2] Сыхлан!

çитнĕ чух ярмарки тин çеç пуханма пусланаччĕ-ха. Тӳрех карусель патне пырса тăтăмăр. Вера куранмарĕ.

— Улталанă сана хура куç,— йĕкĕлтесе илчĕ Христофор.

— Пулма пултараймасть! — терĕм ăна хирĕç.

— Пултарать çав; пĕлетĕн-и, вырăссен çавăн пек такмак пур: не влюбляйся в черный глаз, черный глаз — обманчив...

Чăнах, мана хама та Вера улталанă пек туйăнма пуçларĕ. Вуник сехет иртрĕ, пĕрре... Темиçе хут та çаврăнса пытăмăр карусель патне — ман хура куç пурпĕр курăнмарĕ. Çиллĕм те килме пуçларĕ: мĕнле тивĕçпе кун пек турĕ вăл? Мана, гварди старшинине, хăйĕнпе çав тери ырă кăмăлпа калаçнă çынна...

Çӳресен-çӳресен, Христофорпа иксĕмĕр малтан калаçса тагăлнă вырăна тата тепĕр хут пытăмăр та, карусель тавра тăракан çамрăксем хушшинче эпĕ сасартăк Вера майлăрах хĕре асăрхарăм: çавăн пекех çаврака питлĕ, хуп-хура куçлă... Анчах ку... чăвашла мар, вырăсла тумланнăччĕ. Чечеклĕ крепдешин платьепе, çӳçне ĕнси таран кастарнă та кăтралатнă, аллинче пĕчĕкçеç ридикюль... Шăтарас пек пăхатăп. Вăл-ши, вăл мар-ши? Хĕр те ман çине темиçе хутчен пăхса кула-кула илчĕ. Кулли Верăннах! Вера ку! Ак сана... пожарник!

Вара çынсене сиркелесех ун патне пырса тăтăм та хăюллăнах алă патăм:

— Ырă кун пултăр!

Ман хыççăн Христофор та çитсе тăрса сывлăх сунчĕ ăна.

— Тупрăмăр хайхи таркăна! Ăçта çухалса пурăнтăр паян?— терĕ вăл ман хĕре.

— Нимĕнле таркăн та мар,— кулса илчĕ Вера,— çухалса та çӳремен. Сире эпĕ пaçăрах куртăм... Хăвăр паллаймастăр та, эп айăплă-им уншăн?

— Артистка пулмалла эсир, мĕн тери улшăнма пултаратăр!

— Урăх тум тăхăнни — улшăнни пулать-и вара?

Христофор, мана шелленĕ пек, ассăн сывласа ячĕ:

— Эх, Ваня, Ваня! Хăвна ху разведчик тетĕн, анчах пĕрре курнă хĕре паллаймастăн!..

Унтан вăл нумай та тăмарĕ, таçта пăрăнса çухалчĕ. Пире кансĕрлес мар, терĕ пулмалла ĕнтĕ. Паллах, тĕрĕс турĕ, ун пек чух — виççĕмĕш ытлашши, теççĕ...

Ķаçченех çӳрерӗмӗр вара Верăпа.. Питӗ уçăмлă хӗр пек туйăнчӗ вăл мана. Эп ун çинчен ытларах та ытларах ыйтса пӗлме гăрăшрăм, хам пирки те чылай каласа патăм. Пӗр-пӗринпе çывăхрах паллашас пулать-çке! Анчах хăй çинчен вăл ытлашши нимех те каламарӗ çав. Хӗрсем вӗсем — именекен халăх...

Хальхинче эпӗ ăна машинăпа ямарăм, хăйсен ялне çитиех хам ăсатрăм. Ешӗл вăрман витӗр тухрăмăр эпир, чечеклӗ улăхсем тăрăх, тинӗс пек хумханакан хирсем урлă утрăмăр... Ман чӗрем тулнăçемӗн тулса пычӗ. Юратса пăрахрăм эпӗ ку хӗре: фронтра пӗреххинче Сахвине ятлă тутар хӗрне юратнă пекех хӗрӳллӗн юратрăм...

Ял хыçне çитсен, Вера чарăнса тăчӗ:

— Урăх ан пыр... аван мар...

Вăл ман алла тытса чăмăртарӗ. Ку вара мана кăварпа тӗртнӗ пекех пулчӗ.

— Вера!..

— Мӗн? — куçран çав тери йăвашшăн пăхрӗ хӗр.

— Эпӗ... Эпӗ ыранах сирӗн пата пыратăп!

— Мӗн тума?

— Аçу-аннӳпе калаçма! Анлан эс мана...

— Çук, Ваня, ун пек пулма пултараймасть.

— Мӗншӗн? Неушлӗ эс мана ним чухлӗ те килӗштерместӗн?

— Ыран ирех эпӗ Шупашкара тухса каятăп...

— Мӗн тума?

— Эп Шупашкарта ӗçлетӗп вӗт. Отпуск пӗтрӗ манăн.

— Аçта ӗçлетӗн? — тӗлӗнсех кайрăм эпӗ.

— Ун çинчен сана пӗлме кирлех те мар.

— Мӗншӗн апла?

— Ахалех.

Пӗр хушă эпӗ ним калайми пулса тăтăм. Чӗре пăчăртанса илчӗ: эппин, ку хӗр ман валли мар, хулара унăн урăххи те пулма пултарать!

— Анчах сана Шупашкара пырса курма пулать-и? — ыйтрăм чылайран тин.

— Ма юрамасть пуль? Ӳркенмесен — пыр: Белинский урамӗ, 22. Яланах хавас пулăп сана кӗтсе илме...

— Çак кунсенчех пыратăп! Мӗншӗн тесен малашне эпӗ сансăр... пултараймастăп!..

— Юрӗ, пыр... Анчах та халь кай. Çынсем курсан, аван мар. Сывпул!

Вăл ман алла икĕ аллипех тытса чăмăртарĕ те пахчаналла вăшт кăна кĕрсе кайрĕ. Эпĕ чылайччен хама такам тухатнă пек пулса тăтăм...

— Белинский урамĕ, 22, 22...— пăшăлтатса илтĕм те унтан хамăр ял еннелле тӳрĕрен тӳрĕ утрăм. Хамăн çав тери юрлас килчĕ...

* * *

Хăвăрах чухлама тивĕç, халь ĕнтĕ эпĕ кунĕн-çĕрĕн Вера çинчен кăна шухăшласа, ăна хам майлă çавăрса çитерес ĕмĕтпе çеç пурăнтăм. Тепĕр шăматкун, вырсарнине хирĕç, каç пуласпа, Шупашкара персе те çитрĕм. Ыран— канмалли кун, хамăн савнă хĕрпе тĕл пулса калаçмалăх вăхăт çителĕклех пулать...

Автобус çинчен ансанах, Хĕрлĕ площадь варринче постра тăракан яштака милиционер патне пытăм та Белинский урамне мĕнле тупмалли çинчен ыйтрăм.

Вăл мана честь парсах ăнлантарчĕ:

— Çапла хăпармалла та çавăнталла пăрăнмалла...

— Тавтапуç! — тесе, хам та честь патăм.

Анчах эпĕ темиçе утăм тусан, вăл мана каялла чĕнсе илчĕ:

— Хăш çурт кирлĕ сире?

— 22.

— Пĕлетĕп вăл çурта. Кама курасшăн унта эсир?

— Хамăр ялсене,— терĕм те уттара патăм. Анчах хам ăшăмра: «Верăна паллаканскер мар-ши ку? Каччи аптрамасть так-тă...» тесе шухăшларăм. Анчах кĕвĕçестăвас кăмăл пулмарĕ.

— Çитрĕм çитес çĕре. Крыльца çине хăпарса шаккарăм. Мана хирĕç шап-шур çӳçлĕ, пигĕ кăмăллă карчăк тухса тăчĕ.

— Вера Петрова сирĕн патăрта пурăнать-и, асанне?

— Пирĕн патра та-ха, халь килте çук-ха вăл, ывăлăм. Вуниккĕччен дежурствăра пулать.

— Дежурствăран тӳрех киле килет-и?

— Аçта кайтăр ĕнтĕ тата?

Анмарĕ ман ĕç. Ну, юрĕ, тăхтăпăр, текелесе, крыльца çинчен хуллен кăна каялла антăм.

— Ыран ирпе килĕр эппин! — терĕ карчăк.

— Тавтапуç.

— Кам килчĕ тесе калас Верăна?



— Хăвăр ялсем, те...

Каç пулса килме пуçларĕ. Темĕн пысăкăш хĕрлĕ çатма пек хĕвел йăлăмри вăрман хыçнелле анать. Заводсен трубисенчен тухакан тĕтĕм те ун çутинче çутă-кĕрен тĕслĕн курăнать. Унта-кунта электричество хунарĕсем çутăлчĕç...

Эпĕ Хĕрлĕ площаде анса Атăл хĕрринелле утрăм. Тротуарсем çинче лăк тулли халăх — ĕç хыççăн пурте уçăлма тухнă ĕнтĕ. Çамрăк мăшăрсем питĕ нумай, ман пек салтак пулнисем те хĕрсене çавăтнă, шăкăл-шăкăл калаçса пыраççĕ. Эп кăна пĕччен...

Атăл çине тухрăм — унта та халăх тем чухлех, анчах эп палланă пĕр çын та çук. Кичем пулма пуçларĕ мана. Аптранă енне, кино кĕрсе курас терĕм. Унтан пĕр вунă сехет тĕлĕнче тухрăм та сада кайса лартăм — музыка итлес кăмăл пулчĕ. Анчах хамăн шухăш Вера çинчех, урăх ним çинчен те шухăшлама пултараймастăп.

— Вуниккĕ тĕлне вĕсен крыльци çине кайса ларатăп... Мĕнле тĕл пулăпăр-ши, мĕн калĕ вăл мана?..

Чĕре хытăран хытă тапать хамăн...

Вунпĕр сехет иртсен, садра халăх сахалланчĕ. Унта-кунта, йывăç тĕмисем айĕнчи саксем çинче, кăмăллăн пăшăлтатакан мăшăрсем çеç юлчĕç.

— Каяс ĕнтĕ,— терĕм те тăрса утрăм...

Кукăр аллея мана чечексем патне илсе тухрĕ. Пысăк, илемлĕ клумба. Электричество çутинче хĕрлĕ, кăвак, сенкер чечексем тĕлĕрсе лараççĕ. Сасартăк таçтан шухăш пырса кĕчĕ мана:

— Вера валли лайăх кăна букет туса каяс! Ăна чечек çыххипе кĕтсе илес... Питĕ лайăх пулать вĕт!..

Пĕлетĕп-ха ĕнтĕ кун пек çĕрте чечексем татма юраманнине, анчах... мĕн тăвас тетĕн? Юрату вĕт! Çав шар кăтартать çынна час-часах!

Унталла-кунталла пăхса илтĕм те, хӳтĕрех вырăна куклене ларса, çăтăр-çатăр, çăтăр-çатăр татма тытăнтăм... Сылтăм алăпа тататăп, сулахай алла пухатăп... Хитре букет пулать! Анчах...

— Мĕн тăватăр эсир кунта, гражданин? — терĕ хыçалта хулăн сасă.

Эпĕ вăшт кăна сиксе тăтăм та букета çурăм хыçне тытрăм. Ман умра милиционер тăра парать.

— Мĕн тăватăр, тетĕп!

— Нимĕн те тумастăп-çке...— тетĕп.

— Çурăм хыçне мĕн пытартăр?
— Нимĕн те мар...
— Чечек татрăр эсир! Тӳлĕр 15 тенкĕ штраф!
— Мĕншĕн? — тĕлĕннĕ пек пултăм эпĕ.— Çак курăкшăн 15 тенкĕ-и? Чипер калаçăр... Пасарта уншăн пĕр тенкĕ памаççĕ!
— А эсир чипер хăтланăр! — сассине хытарчĕ милиционер.— Тӳлеместĕр? Апла пулсан, атьăр отделенине.
— Тӳлеместĕп те, отделенине те пымастăп,— татса хутăм эпĕ. Манăн, айванăн, укçа кăлармалла та тыттармалла пулнă, ĕçĕ те пĕтетчĕ, анчах... характер вĕт! Салтак-çке, гвардеец! Кайран ӳкĕнтĕм те çав...
Милиционер пĕррех шăхăртрĕ.
— Кайрăмăр! Утăр малтан! Чечекĕсене пăрахса хăварма ан шутлăр тата! — асăрхаттарчĕ вăл мана.
Мĕн тăвас тетĕн? Власть представительне хирĕç каятăн-им? Утрăмăр. Эпĕ — малта, ман алăра чечек çыххи, вăл — ман хыçра. Каялла çаврăнса пăхма та хушмасть, чăн-чăн преступнике илсе пынă пекех илсе пырать урампа!
Çитрĕмĕр отделенине. Кĕрсенех, алăкран сулахаялла, çамрăк кăна кĕçĕн лейтенант темскер вуласа ларать. Мана илсе килекенни ун умне тăчĕ те хăвăрт кăна рапортларĕ:
— Ак çак паллă мар гражданин общество йĕркине пăсрĕ... Садра чечексем татрĕ!
— Докуменчĕсем пур-и?
— Тĕрĕслемен. Вăл штраф тӳлесшĕн пулмарĕ.
— Гражданин, паспорт кăтартăр! — терĕ дежурнăй.
Эп маларах, çутă çĕререх тухрăм та, ман чĕлхе çăвар маччи çумнех çыпăçса ларчĕ... Дежурнăй кĕçĕн лейтенант — манăн савнă Вера иккен! Вера! Çĕр çăттăр! Пулать те вĕт тĕнчере!..
Паспорта кăларса тыттартăм. Хамăн пĕтĕм пит-куç вутпах çунать, хăлхасем те пĕçерсе кайрĕç. Паллать те акă, мĕн тери намăс пулать мана!..
— Паспорчĕ тĕрĕсех,—терĕ те Вера, ман çине куçхаршши айĕн пăхса, чутах кулса яратчĕ, темле тытăнса тăчĕ кăна.— Анчах штрафне тӳлеттерес пулать.
Мана илсе килекенни хăйĕн сумкинче квитанци кĕнекине шырама пĕшкĕнчĕ, çав вăхăтра эпĕ, пĕр-ик утăм малалла ярса пусса:
— Вера, эп куна сан валли вĕт...— терĕм шăппăн.

Вăл мана пӳрнипе юнаса илчĕ:

— Вуниккĕччен кĕт!

Урăх нимĕн те каламарĕ. Ну, паллах ĕнтĕ, штрафне тӳлерĕм эпĕ, квитанци пачĕç мана...

— Кайма пултаратăр,— терĕ хама илсе килекенни. Эп алăк патне çитсен: — Букетне илсе кайăр, 15 тенкĕ тăрать вĕт, пăрахма шел,— тесе кулса илчĕ.

Эп урама тухрăм. Хам йĕп-йĕпе тарланă иккен...

Çӳрерĕм вара вуниккĕччен каллĕ-маллĕ, алăри чечексен ырă шăршипе киленсе. Унтан Вера та тухрĕ. Питĕ шутсăр хытă кулчĕ манран...

Майĕпе Атăл хĕррине тухрăмăр, кăвак çутă киличченех шăкăл-шăкăл калаçса çӳрерĕмĕр. Юлашкинчен сăмах пине çитрĕ пулмалла, сак çине лартăмăр та пĕр хушă нимĕн те чĕнмерĕмĕр...

Эп ăна пĕрремĕш хут питçăмартинчен чуптуса илтĕм.

— Каллех штраф тăвасран хăрамастăн-и? — хуллен ыйтрĕ вăл, пуçне ман кăкăр çине хурса.

— Çук, хăрамастăп, хуть те вунă квитанци çыр, çирĕм, вăтăр çыр,— терĕм те эпĕ, хĕре тутинченех чуптурăм.

...Çав ирхине вара пирĕн чĕресем ĕмĕрлĕхех пĕрлешрĕç.

1945—1954,
Шупашкар.



## ЛЕОНИД АГАКОВ

Шупашкарта 1926—1928 çулсенче тухса тăнă «Канаш», «Пирĕн ял», «Çамрăк хресчен» хаçатсенче, «Капкăн» журналта час-часах «Леон. Линч» тесе алă пуснă корреспонденцисемпе пĕчĕк очерксем, фельетонсемпе кулăшла калавсем пичетленсе пынă. Çавсен авторĕ Етĕрнери педтехникумра вĕренекен çамрăк йĕкĕт Леонид Агаков пулнă. Каярахпа вăл, псевдонимне пăрахса, хăйĕн чăн хушамачĕпе çырма тытăннă.

Леонид Яковлевич Агаков 1910 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче Етĕрне районĕнчи Çуткасси ялĕнчи учитель çемйинче çуралса ӳснĕ. Пулас писатель вунтăватта çитсен вĕсен килйышĕ Сăр тăрăхĕнчи вăрмансем çывăхне, «Канаш» поселока куçнă.

Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, 1922 çулхи кĕркунне, Л. Агаков Етĕрнери 2-мĕш сыпăклă шкула кайса кĕнĕ (кайран вăл шкултан педтехникум тунă). Çак шкулта вĕренекенсем кашни класрах алăпа çырла литература журналĕсем кăларса тăнă, Л. Агаков унта чи активлă авторсенчен пĕри пулнă, çавăн пирки ăна часах шкулти стена хаçачĕн редакторĕ пулма хушнă. Шкула пынă çулах вăл пионера кĕнĕ, 1925 çулта вара, В. И. Ленин вилнĕренпе пĕр çул талăк çитнĕ кун, ăна пионертан комсомола куçарнă.

Çав çулсенчех Л. Агаков Шупашкарти хаçатсене çырма тытăннă.

Етĕрнери педтехникумран вĕренсе тухнă хыççăнах (1928 ç.) Л. Агакова Шупашкара ĕçлеме чĕнсе илнĕ. Малтан вăл «Канаш» хаçатра, унтан «Хатĕр пул» журналта, кайран Чăваш АССР государство издательствинче илемлĕ литература тата ача-пăча литературин редакторĕ пулса ĕçленĕ. Çав вăхăтрах ачасем валли калавсем («Вĕтлĕхри отряд», «Юлашки юмах» т. ыт.) çырнă, вĕсем уйрăм кĕнекесем пулса тухнă.

1932 çулта Леонид Яковлевич Агаков Мускава, А. В. Луначарский ячĕпе хисепленекен Театр искусствин институтне, литература факультетне вĕренме кайса кĕрет. 1935 çулта унтан вĕренсе тухса Шупашкара таврăнать те писательсен союзĕнче, искусство учрежденийĕсенче ĕçлет. 1938 çулта ăна Совет Çарне илеççĕ. 1939 çулта, Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи вăрçăра пулса, Л. Агаков аманать.

Анчах ăçта пулсан та Л. Агаков творчество ĕçне пăрахмасть.

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансанах Л. Агаков фронта кайнă.

Малтанах вăл стрелковăй рота командирĕ пулнă, унтан ăна дивизи хаçачĕн редакцине ĕçлеме куçарнă. 1943 çулта ăна Коммунистсен партин ретне илнĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вăл пурĕ ултă кĕнеке çырса кăларнă, вĕсенчен паллăраххисем: «Фронтри ачасем» (1942 ç.), «Тăван юншăн» (1943 ç.), «Çапăçу хирĕнче» (1944 ç.). Кусемсĕр пуçне вăл «Вилĕмрен те вăйлăрах», «Çăпала Иванĕн калавĕсем» т. ыт. çырнă.

Вăрçăран таврăннă хыççăн та Л. Агаков вăрçă тематикипе нумай ĕçлет. Вăрçăра пухса пынă материалсемпе усă курса, вăл «Пĕр хулара» (1946 ç.) тата «Ылтăн вăчăра» (1947 ç.) повеçсем çырнă. Çак икĕ произведенире те тĕп геройсем — çамрăк патриотсем, совет ачисем. «Ылтăн вăчăрана» икĕ хутчен вырăсла пичетлесе кăларнă, вăл кĕнеке пĕтĕм Совет Союзĕпех сарăлнă.

Кусемсĕр пуçне, юлашки темиçе çул хушшинче Л. Агаковăн «Ырă кăмăллă çынсем» (калавсем), «Хастарлăх» (очерксен пуххи), «Кулас килет», «Качака такисем» (сатирăлла калавсем) пичетленсе тухнă. Кăçал Л. Агаков «Юманлăхра çапла пулнă» ятлă приключенилле повесть тата ачасем валли «Салтак ачисем» ятлă повесть пичете пама хатĕрлесе çитернĕ.

Л. Агаков вырăсларан чăвашла куçарас тĕлĕшпе те нумай ĕçленĕ. Классиксенчен вăл А. Н. Островский, А. И. Герцен, Л. Н. Толстой, А. П. Чехов, А. М. Горький кĕнекисене, вырăс совет писателĕсенчен А. Фадеев, В. Катаев, Б. Горбатов, В. Василевская, Г. Николаева т. ыт. произведенийĕсене, урăх çĕршывсенчи писательсенчен Юлиус Фучик, Ярослав Гашек (Чехословаки), Стефан Гейм (ГДР), К. Живульская (Польша), Хар Сен Я (Корея), Б. Нушич (Югослави) тата Египет, Турци писателĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарнă.

1939 çултанпа Л. Агаков СССР-ти писательсен союзĕн членĕ.

Вăрçă хыççăнхи тĕрлĕ çулсенче Л. Агаков Чăваш АССР Государство издательствин главнăй редакторĕ, Чăваш совет писателĕсен союзĕн правлени председателĕ, «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн тата «Капкăн» журналăн литература пайĕсен заведующийĕ пулса ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра творчество ĕçĕпе кăна пурăнать.

1951—1954 çулсенче писатель Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулнă.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче палăртнă хăюллăхпа хастарлăхшăн Л. Агакова Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, «За боевые заслуги», «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй вăрçăра Германие çĕнтернĕшĕн» медальсемпе, литература ĕçĕнче тунă çитĕнÿсемшĕн 1945 çулта Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Хисеп Грамотипе, «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хастарлă ĕçленĕшĕн» медальпе 1950 çулта Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

## ТУПМАЛЛИ

**Пĕрре, çуркунне** (повесть) . . . . . . 3

1. Салтак киле таврăнать . . . . . . . 5
2. Астăвать Тарас . . . . . . . . 11
3. Ялти хыпарсем . . . . . . . . 30
4. Кашкăрсем . . . . . . . . . 44
5. Варук . . . . . . . . . . 54
6. Чăнлăх çиеле тухать . . . . . . . 60
7. Çамрăксем чăмăртанаççĕ . . . . . . 69
8. Ырă ĕмĕтсем . . . . . . . . 79
9. Тӳсме çук мăшкăл . . . . . . . 86
10. Тăшмансем парăнасшăн мар . . . . . 92
11. Çăмха сӳтĕлет . . . . . . . 102
12. Сывлăш тасалать . . . . . . . 109
13. Ĕçсем ăнма пуçлаççĕ . . . . . . 112
14. Çарату . . . . . . . . . 126
15. Айăпçăр айăплисем . . . . . . . 133
16. Йĕп тăрăх . . . . . . . . . 145
17. Хурал пӳртĕнче . . . . . . . . 155
18. Хаяр тытăçу . . . . . . . . 158
19. Савăнăç . . . . . . . . . 165
20. Эпилог . . . . . . . . . 171

**Вăрçăра çырса пынисем** . . . . . . . 175

Разведчик Джунгали . . . . . . . 177
Юлташ пурнăçĕ . . . . . . . . 188
Салтак чунĕ . . . . . . . . 204
Лапкă çын . . . . . . . . . 213
Старик . . . . . . . . . 226
Хĕр юрри . . . . . . . . . 264
Вилĕмрен те вăйлăрах . . . . . . 277
Куккук . . . . . . . . . 315

**Тӗрлӗ ҫулсенчи калавсем** . . . . . . . 339

Сӗрмекупăс . . . . . . . . 341
Этем телейӗ . . . . . . . . 355
Ырă кăмăл . . . . . . . . 373
Халăх ывăлӗ . . . . . . . . 397

**Ҫăпала Иванӗ каласа панисем** . . . . . . 417

Сахвипепе «мессершмитт» . . . . . . 419
Тигр чӗлхи . . . . . . . . 430
Мыскараллă кун . . . . . . . 440
Мунча . . . . . . . . . 448
Чечек ҫыххи . . . . . . . . 456

**Леонид Агаков (биографи)** . . . . . . 467

## ЛЕОНИД АГАКОВĂН

### пичетленсе тухнă кĕнекисем

«Волонтёр» комунĕн пурнăçĕ. *Очерк.* 1930.
Вĕтлĕхри отряд. *Калав.* 1931.
Юлашки юмах. *Калавсем.* 1931.
Инкесем. *Тăвата калав* 1931.
Хăват. *Пьеса.* 1932.
Ултав. *Пьеса.* 1934.
Пĕрре, çуркунне. *Повесть.* 1940.
Манăн туссем. *Калавсем.* 1941.
Фронтри ачасем. *Калавсем.* 1943.
Тăван юншăн. *Повесть.* 1943.
Çапăçу хирĕнче. *Калавсем.* 1944.
Ялав. *Калав.* 1945.
Медаль. *Калав.* 1945.
Пĕчĕк партизансем. *Калав.* 1945.
Вăрçă ачисем. *Повесть.* 1947.
Партизан Мурат. *Калав.* 1947.
Тăвата çул юппинче. *Очерк.* 1947.
Узел четырех дорог. *Очерк.* 1947.
Салтак чунĕ. *Калавсем.* 1947.
Ылтăн вăчăра. *Повесть.* 1948.
Пĕрре, çуркунне. Тăван юншăн. *Повеçсем.* 1948.
Манăн пĕчĕк туссем. *Калавсем.* 1949.
Однажды весной. *Повесть.* 1950.
Золотая цепочка. *Повесть.* 1951.
Пĕр хулара. *Повесть.* 1952.
Ырă кăмăллă çынсем. *Калавсем.* 1954.
Кулас килет. *Сатирăлла калавсем.* 1955.
Золотая цепочка. *Повесть, 2 изд.* 1956.
Хастарлăх. *Очерксем.* 1957.
Ылтăн вăчăра. Пĕр хулара. *Повеçсем.* 1958.
Качака такисем. *Сатирăлла калавсем.* 1959.

**АГАКОВ ЛЕОНИД ЯКОВЛЕВИЧ**

***СЧАСТЬЕ ЧЕЛОВЕКА***

*Повести и рассказы*

на чувашском языке

Художник *Л. Осинский.*

Редакторы: ***И. Н. Вашки, Н. Г. Григорьев.*** Тех. редактор ***Г. П. Петров.***
Худож. ред. ***В. Ф. Солодовников.*** Корректоры: ***Л. И. Иванова, О. С. Артемьева.***

НТ 00168. Подписано к печати 11/XII-1959 г. Формат 84×108 1/32. Объем 23,89 п. л.
Уч. изд. л. 23,93. Тираж 4.000 экз. Изд. № 175. Заказ № 1589. Цена 8 руб. 70 коп.

**Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР,**

**г. Чебоксары, Володарского, 5.**

Цена 8 руб. 70 коп.